КИБЕЧ

# ПУРНĂÇ КĔНЕКИ

*Прозăлла сăвăсем*

- тĕрĕс пурăнатпăр-ши?
- чăваш пулма çăмăл-и?
- Турă суйласа илмен халăх пур-ши?
- хăвна ăслă тетĕн пулсан эппин мĕншĕн чухăн-ха?
- çитĕнӳ тăвас тесен мĕн пĕлмелле?
- телей тени мĕн тени?

Шупашкар – 2002

УДК 821.512.111
ББК 84(2 Рос – Чув) – 4
К 38

**Кибеч**
К 38 Пурнăç кĕнеки. Прозăлла сăвăсем. – Шупашкар. 2002. – 352 с.

Çĕр çинчи çыравçăсем пурте пĕрле пĕр кĕнеке çыраççĕ. Çавă пулать **Пурнăç Кĕнеки**.

Лицензия ЛР № 066552
от 12.05.1999 г.

© Кибеч, 2002

# УМӖН КАЛАНИ

*Ырӑ ҫыннӑм Кибеч тата вулакан!*

*Кӗнекене чарӑна-чарӑна, пуҫӑма ӗҫлеттерсе вуласа тухрӑм та вӗрилле тенешкел, умсӑмах вырӑнне пӗр-ик сӑмах каласа хӑварас кӑмӑл килчӗ. Шухӑшлатӑп пӗрехмай, ӗнтӗ кам алла тытӗ-ши чун-чӗре хӗрӳлӗхӗпе, ыратӑвӗпе ҫырнӑ, ырӑлӑхпа, ӗненӳпе тулса ларнӑ ҫак кӗнекене?! Тем пекех шанас килет ӑна пуҫласа вӗсне ҫитиччен нумай-нумай ҫын вуласа тухасса, шухӑша каясса, калаҫу пуҫарасса, хӑйӗн пурнӑҫ ҫулне пӗтӗмлетсе е ҫӗнӗлле хакласа ӑнӑҫлӑ утӑм тума хавхаланасса. Шанас килет ӑна пуҫласа вӗсне ҫитиччен вуласа тухасса пуҫлӑхсемпе ертӳҫӗсем, хамӑр суйласа лартнӑ депутатсемпе чиновниксем. «Пурнӑҫ кӗнеки» тесе ят панӑскере, эпӗ ӑна тасату кӗнеки тесе те калама хӑюлӑх ҫитеретӗп. Ку вӑл – чӑн сӑмах, турӑшӑн та. Асӑрхӑр-ха, авторӗ алса тулне тавӑрса кӑтартнӑ пек кӑтартать-ҫке-ха чӑваш пурнӑҫне: унӑн чӑнлӑхӗпе суялӑхне, ӗҫченлӗхӗпе (суха кассинчи) кахаллӑхне (ӑс-тӑн енчен), ҫӗр пичӗ ҫинчи халӑхсен хушшинчи чӑн-чӑн сӑн-сӑпачӗпе тивӗҫне. Хӑй халӑхӗпе мӑнаҫланни-мухтанни пысӑк вырӑн йышӑнать кӗнекере. Пур – пӑшӑрханни-кулянни. Искусствӑлла майпа урӑхлатаймастӑн иккен халӑха, ӑна тем пек юратсан-хисеплесен те. Чӑннине чӑн мар тесе калаймастӑнах. Хурана – шурӑ, шурра – хура тесен ҫырӑнмастчӗ те кӗнеке. Хамӑра тивӗҫех мар, илем кӳмен ӗҫсемпе йӑласене тӗрӗс ҫырса кӑтартнӑшӑн – чӑннине каланӑшӑн! – ятлама мар, пач урӑхла, тав тӑвӗҫ тетӗп писателе. Кибечех ҫапла ҫырса хӑварнӑ-ҫке чӑвашсем ҫинчен тейӗҫ тата-тата темиҫе-темиҫе, нумай-нумай ҫултан та. Мӗнех тӑвӑн, ҫырма-ҫатра таврашӗнче ун-кун шыраса ҫӳренипех малалла каяймӑпӑр ҫав, пулман сӑрт-тӑва та шутласа кӑлараймӑпӑр... Ҫапах ҫӳлелле пӑхар, хӗвел патнелле туртӑнар, ырӑ ӗҫ тума ӳркенер мар, ӑс-тӑна ҫивӗчлетсе пырар. Чӑваш Республикин президенчӗ Николай Федоров чӑваш та пирӗн ҫӗр айӗнчен нефть*

*йăрăлтатса юхса килменнине, ытти пуянлăхсем те çуккине кура ăс-тăна çивĕчлетсе пымалли, вĕрентӳ ĕçне вăйлатмалли пирки темиçе хутчен те асăрхаттарчĕ. Ăна ăша хывасчĕ, чĕре патне илесчĕ, пĕр тăхтамасăр ĕçе тытăнасчĕ. Ыррине, кирлине вĕренме васкасчĕ. Çĕнелесчĕ пирĕн!*

*Кĕнекере тĕл пулĕç хăшĕ-пĕрне килĕшмен вырăнсем те. Эпĕ, редактор тивĕçне пурнăçланă май, вĕсене тĕкĕнес темерĕм. Автор пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăннăскерсене, мĕншĕн кăларса пăрахас-ха вĕсене? Пĕтĕмлетӳ – кирлех. Тирпейлĕ алласа сăвăрнă тырă хушшинче те, тимлĕрех пăхсан, çӳп тавраш тупăнатех. Çавăнпа та кĕнеке пичетленсе тухсан та тасатмалли татах тупăнĕ. Ĕçе лайăхран лайăх тăвас тенĕ чух чарăну çук, паллах. Çав хушăрах тĕнче классикĕ Рабиндранат Тагор çырнисемпе те танлаштарма кирлĕ мар. Ку вăл – Кибеч ĕçĕ, Кибеч алли, Кибеч пултарулăхĕ.*

*Шанатăп, «Пурнăç кĕнекине» ун-кун уçкаласа тухса кăна мар, шарт сиксе вулакан та тупăнасса. Чăваш ĕçне ярса тытасса. Маттур эпир – чăвашсем е мĕншĕн начар-ха эпир тесе çивĕчленсе каясса.*

*Сывлăх сунатăп сана Кибеч тата вулакан!*

***ЮЛИЯ СИЛЭМ,***
***писатель,***
***Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченĕ,***
***Санкт-Петербургри Петровски наукăпа искусствăсен академийĕн действительнăй членĕ.***

19.III.2002.
Шупашкар хули

# 1987 çул

* * *

Аван-и, çыравçăсем! Илемлĕ сăмах ăстисем, сисĕм-туйăм тимĕрçисем, тăван культура вучахне кăвайт хурса тăракансем.

Аван-и, çыравçăсем, чĕлхе вăйне упракансем, кашни çыннах хăй хăш халăх ачи пулнине аса илтерсех тăракансем.

Тавах сире, çыравçăсем, хĕрӳ çынсем, хăюллисем, пурнăç йĕрки çĕнелнĕ чух тĕрĕссине калакансем, ыттисенчен мала ӳксе çул кăтартса пыракансем.

Тавах сире, çыравçăсем! Ырă çынсем, сумлă çынсем, мана хăвăр хушшăрта тăмашкăн ирĕк памăр-ши?

* * *

Çуралнине эпĕ астумастăп. Анчах анне калатчĕ: çуралтăн эсĕ çу кунĕнче, ыраш çĕмелĕ çумĕнче. Апла тӳрех кĕрсе ӳкнĕ эпĕ çутçанталăк ытамне. Сенкер кăвак тӳпе мана хăйпе чĕркенĕ, хĕвел шевли питĕм çинче сиккелесе вылянă, ăшă çилĕ лăпкăн вĕрсе ман çемçе çӳçĕме типĕтнĕ, анне юррипе пĕрле кайăк сасси хăлхана кĕнĕ. Тен, çавăнпах паян кун та килĕштеретĕп çутçанталăк юррине.

Пӳртре эпĕ выртнă пилĕк талăк. Унтан каллех уя васканă: аннепе тыră вырма. Кăчăрт-кăчăрт çурла сасси паян кун та хăлхара. Тен, çавăнпах пуç таятăп кашни кунах сар çăкăра. Тен, çавăнпах ирех тăратăп хĕвел тухнине курса киленме. Тен, çавăнпах тăрăшатăп çутçанталăкпа килĕшӳллĕ пурăнма.

* * *

Сехет шаккать, вăхăт шăвать. Ăна чарас вăй çук. Çын вырăнне çын çуралать, пурнăç сыппи ламран-лама аталанать.

Ĕмĕрваскатать, круççел пекех çаврăнать, хăйпе пĕрле мана илме кăшт та пулин чарăнмасть. Ларкăч çине ларма тăтăм, аран-аран çитсе ĕлкĕртĕм. Ал тăсакан та тупăнчĕ, анчах чунăм унта туртмарĕ.

Вăхăт васкать, пурнăç кĕрлет, умра тĕрлĕрен çул выртать. Тилĕ йĕрĕпе кайнă пулсан, тен, çу хыпнă пулăттăм, упа

хыççăн кайнă пулсан, тен, пыл хыпнă пулăттăм. Чим-ха, терĕм, васкамарăм, пуçăм тавра шутларăм. Хам çулпах утас терĕм, сукмак хывма тимлерĕм. Çулĕ çăмăл пулмарĕ, умра кавир выртмарĕ. Ыррине пит курмарăм, анчах чыса сутмарăм.

* * *

Аçу-аннӳ йăлинчен эс пит çăмăл пăрăнтăн, тăван ташă-юрăран чунна хăвăрт сивĕтрĕн. Хăвна эсĕ тăвансемпе те ют евĕр тытма пуçларăн. Шеллес килет ман сана, çеçенхирти хумхаха...

Хăш еннелле сулнăн-ши, ăçта йăва тупăн-ши; хăв халăхна сивлесен, ун чĕлхине тиркесен – йышăнĕç-ши ыттисем? Йăвасăр кайăк пулмăн-ши? Икĕ пукан хушшинче ларма йывăр пулмĕ-ши? Хĕрхенетĕп эп сана, çеçенхирти хумхаха...

* * *

Эсĕ – пур та, эсĕ çук та. Чи малтанах эсĕ çуралнă аçупала аннӳшĕн, унтан – халăхшăн. Малтанхи санран килмест, иккĕмĕшĕ – хăвăнтан. Эсĕ пуррине çынсем курĕç тăван ялшăн, халăхшăн тунă ырă ĕçсенче. Çакă пулĕ те вара çуралнине пĕлтерни. Çакă пулĕ те вара сана халăх йышăнни. Çав хушăрах ав куратпăр урăхларах çынсене те. Куллен ĕçе çӳреççĕ, ĕçленĕ пек тăваççĕ, укçине те илеççĕ. Анчах халăх пурпĕрех пит йышăнмасть вĕсене.

Пушă вырăн çыннисем теççĕ вĕсем пирки. Мĕншĕн тесен çав çынсенчен усси сахал. Мĕншĕн тесен – вĕсем иккĕмĕш хут çуралман.

Чăн-чăн çын вăл яланах икĕ хутчен çуралать: пĕрремĕш хут – аçу-аннӳшĕн, иккĕмĕш хут – тăван халăхшăн.

* * *

Ман ăс-тăнăм – ман тăшман, хĕн кăтартать, макăртать, пуçăма ыраттарать.

Мĕншĕн ман тĕле пулать-ши пурнăçра йĕрке çукки, пĕр-пĕрне улталани, тĕрĕслĕхрен пăрăнни?

Мĕншĕн куçăм час курать-ши хăшĕ-пĕри халăх суйласа лартнă вырăнпа усă курса иртĕхсе пурăннине, вăй хурса тар кăлармасăрах, тăкаксем тӳсмесĕрех ырлăхпа ашкăннине.

Мĕншĕн ман хăлхам илтет-ши черетре тăнă чухне çынсем тарăхса, чун ыратнине палăртса калаçнине?

Мĕншĕн эпĕ нимĕн те тăваймастăп-ши халăх ӳтне ытла тарăн кĕрсе ларнă çав сăвăссене? Пурпĕр вĕсемех паттăр, пурпĕр вĕсемех хуçа

* * *

Çынсем, çынсем тенĕ чух кашни çынах палăрмасть. Ĕçленĕ чух, калаçнă чух уйрăм çынсăр ĕç тухмасть.

Кашни çын вăл – уйрăм мерчен, ăс-тăн енчен, ӳт-пӳрен.

Кашни çын вăл – хăй тĕнче. Çав тĕнчере хĕвел пулса, йĕри-тавра çиçсе тăрса ăшăтать ыттисене. Хĕвел сӳнсен – пурте пĕтет, çав тĕнчери пиншер шăнăр ĕмĕрлĕхех татăлать.

Кашни çын вăл – хăй тĕнче.

* * *

Пурнăç урапи пĕр йĕрпе чупмасть. Тем сиксе тухĕ, пулĕ ăнсăртран. Е аллу аманĕ каскаланă чух, е уру сан сикĕ çул пăрланнă чух, е чĕрӳ ыратĕ йывăр сăмахпа – пурте иртсе кайĕ вăхăт шунă май, сурансем тӳрленĕç, юлĕç манăçа.

Анчах пĕр суранăм тăрать юнланса, тӳрленме пĕлмесĕр ăша çунтарса. Ачам япăх ӳсрĕ, чăн-чăн çын пулмарĕ, – пысăк манăн парăм халăх умĕнче. Çӳç кăвакарсан та, тупăка выртсан та чĕрери суранăм юлĕ манпалах, тăрĕ юнăхсах.

* * *

Тухтăр патĕнчи сехет халь те куçăм умĕнче. Кĕленче ăшне хупнă хăйăр пĕрчĕн-пĕрчĕн юха-юхах тепĕр еннелле куçать, купа пулмашкăн васкать. Çӳлти пайĕ сехетĕн юлать вара кулянса.

Кам тунă-ши çав сехете ман кăмăла пăтратма? Хăйăр юххи – пурнăç юххи, ытла уççăн курăнать, тарăн шухăша ярать. Ан ларт, тухтăр, ман ума çав сехете малашне, ан çунтар ман чĕрене.

* * *

Шупашкарăм, ватă Шупашкарăм, сан çине пăхса шухăша эп кайрăм. Пĕр сăртран пăхатăп – саншăн савăнатăп, тепринчен пăхатăп – кăштах кулянатăп. Яту инçе кайрĕ, чапу та сан пур, урамусем капăр, çыннусем маттур.

Çавăнтах сăнатăп тунсăх çынсене, вĕт хăмаран тунă пĕчĕк

çуртсене. Çакӑнта пурӑнаççӗ ӗçчен чӑвашсем: пир тӗртекенсем, çурт çӗклекенсем, хулана шӑлса, йывӑççем лартса сӑн паракансем. Çакӑнта ӳсеççӗ, уроксем тӑваççӗ пӗчӗк чӑвашсем. Çав килсенче пултӑм шкул ӗçӗпеле, калаçма пикентӗм чӗрем хушнипе. Калаçу пулмарӗ, сӑмах тупӑнмарӗ, пуçӑма çеç хыттӑн шухӑш чӑмӑртарӗ.

* * *

Савӑнмалли самантсем пурнӑçӑмра нумай мар. Çапах чуна илӗртекенни те пурах. Вӑл сӑвӑ-юрӑ тӗнчи, кӗвӗ-çемӗ асамлӑхӗ. Ялан унталла туртать. Ун ытамне лексен вара, тусӑмсем, сире мансах каятӑп, сцена çинче вылянине, ташланине, юрланине чапа хурса пӑхса ларатӑп, хама телейлӗн туятӑп. Эпӗ çав хушӑрах, сирӗнпе калаçӑва хутшӑнса, сцена çинче мӗн пулса иртнине сӳтсе явма хӑюлӑх çитерейместӗп. Çавӑншӑн каçару ыйтатӑп. Кӑштах хӗрхенӗр мана, калаçса ларса, тархасшӑн, ан шуйхатӑр телейлӗ саманта. Ӑсталӑхри пӗр тумлама та, пӗр тӗпренчӗке те туйӑм таканинчен ӳкерсе ура айне тӑвас марччӗ. Эпӗ ун чури, эпӗ ун ачи. Ӑсталӑх маншӑн – чун уççи.

* * *

Хитре, хитре тееççӗ, хитре мӗнле пулать-ши? Тен, чӑнах та ун тупсӑмне тупма çӑмӑл мар? Анчах асамлӑ вӑйне кашни туйма пултарать.

Мӗн пӗчӗкрен пуçласа пире куллен ачашлать çутçанталӑк илемӗ. Хӗвел шевли, уйӑх кулли, кайӑк юрри, чечек шӑрши, тырпул хумӗ, йӑлтӑр-йӑлтӑр юр пӗрчийӗ – пурте чуна илӗртет.

Хитри нумай кил-çуртра, çын ӗçӗнче, юрӑра, юмахра та сӑвӑра, çи-пуçра та тӗрӗре.

Пуринчен те чи пахи – çын илемӗ шутланать. Хитререн те чи хитри хӗрарӑм илемӗ пулать. Ӑна курсан тем пек ывӑнса çитнӗ чӗре те хыттӑнрах тапма пуçлать. Ӗçлес килет, пурӑнас килет, вилессе те ун ытамӗнчех вилес килет.

* * *

Кай ман умран, куçӑм ан куртӑр сана. Куриччен курас килет, курсан пӑрӑнас килет; куçран пӑхма вӑй çитерейместӗп.

Мăйăр тĕшши, çĕр çырли вырăнне хурса çисе ярăттăм сана. Илемӳ сан – мана валли мар. Кураймастăп сана. Хамран ытлашши кая юлса çуралнăшăн сивлетĕп сана. Кай ман умран. Ан çӳре ман чĕрене ыраттарса. Кайсан вара ытла нумайлăха ан çухал. Сăну сан каллех мана асаплантарма пуçлĕ.

* * *

Анне мана каларĕ: юратмасăр пĕр-пĕрне, хĕрĕм, качча ан тух терĕ. Итлемерĕм, качча тухрăм, хам туйăма шантăм. Хам юратсан пурте пулĕ, шутларăм эпĕ ун чухне. Чăнах пулчĕ, пурте ăнчĕ: пурлăх енчен, кил-çуртран; курорта та хăнана çӳретпĕр халь машинăпа, ятăм та пур, чысăм та. Анчах темшĕн пурпĕрех тем çитмест пек пурнăçра, темшĕн пушă ăшăмра, хам таврара мĕн пурри савăнăç кӳмест мана. Пĕтĕм ылтăн-кĕмĕле, яппун телевизорне тухса пеме эпĕ хатĕр – пултăрччĕ кăна пĕрле хĕмленсе тăран кăмăллă чĕре.

* * *

Чылай вăхăт иртсессĕн, пĕр ӳсĕмри ентешсем тĕл пултăмăр хăнара. Пĕрне-пĕри пӳле-пӳле пуçларăмăр пуплеме.

Пĕри калать, хăй савăнать: туянтăм тет хура тĕслĕ çĕн машина, гаражне те, чирлĕ тесе хут тупса, лартрăм тет кил-картинех.

Тепри калать, эх, савăнать: тупнă иккен ăшă вырăн, кир-лисемпе туслă пулса  пурăнать иккен вăл халăх вăйĕпе ырă курса.

Виççĕмĕшĕн савăнăçĕ – тăвата пӳлĕмлĕ хваттер. Ялта пурă-накан ватă ашшĕне çырнă иккен хăй çумне. Ашшĕ пурăнас пӳлĕмре халь усрать ав йыттине.

Черет çитрĕ ак мана. Мĕн калăп-ши вĕсене? «Эп паян та савăнсах çирĕм анне яшкине. Унран пахи, унран тутли маншăн çук та тĕнчере», – терĕм хайхи кусене. Кăн! пăхрĕç тусăмсем, шарламарĕç нимĕн те. Мĕн каласшăн пулчĕç-ши? Хаклă тусăм, итлекенĕм, эсĕ мĕскер шутлан-ши?

* * *

Пурнăç хакĕ мĕнре-ши, кам каласа парĕ-ши? Пĕри калать: пурлăхра, укçа-тенкĕ, çăкăр-тăвар çителĕклĕ пулнинче тет. Тепри калать: çирĕп сывлăхра, ĕçкĕ-çикĕпе савăнса, ташă-юрăпа киленсе çӳренинче тет. Виççĕмĕш каларĕ: çемьеллĕ

пулса халăх умне тăма тивĕçлĕ ачасем пăхса çитĕнтернинче терĕ. Хирĕçлеместĕп вĕсене, тĕрĕслĕхĕ пур унта. Анчах çавă хушăрах калас килет теприне пĕтĕм шухăш тĕшшине: пурнăçра вăл чи хакли – хăв ытти çынсене кирли.

* * *

Мĕн ĕлĕкрен-авалтан ача ӳснĕ ватăлăхпа юнашар. Çакă пулнă та ĕнтĕ çынлăха вĕрентесси. Çавăнтан пуçланнă та пĕр-пĕрне хисеплесси, ваттисене чысласси.

Паян пачах урăхла. Ачасемпе юнашар ваттисем ытла сахал. Аслашшĕсĕр ӳсеççĕ, кукамăшне курмаççĕ. Илейместпĕр тавçăрса çак йăла сиенлĕхне. Пĕр сиенĕ – ачасемшĕн, тепри вара – хамăршăн. Ăçта курччăр-ха вĕсем виçĕ сыпăк пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл пурăннине? Ăçтан пĕлччĕр-ха вĕсем ывăнса çитнĕ ватă чĕресене пулăшу парса пымаллине? Хамăр ватлăх сумлă пултăр тесен, атте-аннесемпех пĕрле пурăнасчĕ; ачасене ватăлăха кăтартса ӳстересчĕ.

* * *

Çамрăк тусăмсем, мĕншĕн-ха эсир ним те чĕнместĕр, нимĕн те ыйтмастăр? Пурте сире паллă-им çакă пурнăçра? Эпĕ сире кăшкăртăм – çавăрăнса пăхмарăр, хăлхăрсем мăкалчĕç-им рок-н-ролăн кĕввипе? Яланах васкатăр, кăшкăрашса юрлатăр, вăхăт çук халь сирĕн лăпкăн калаçса чăнлăх тĕшши шырама. Ытла вăраха каймĕ-ши капла ачалăхăр сирĕн, кайран йывăр пулмĕ-ши пурнăçăрăн уттийĕ? Пурнăç вăл асамçă, пурнăç – тĕрĕслевçĕ, хĕстерсе те пăхĕ, пăркаласа та илĕ. Ун чух паллă пулĕ чăтăмлăхăр сирĕн. Ун чух лайăх курăнĕ хăвăр мĕн тĕшне тăни. Ĕç-пуçăмăр хакĕ ял-йыш умĕнче, ял-йышăмăр – тĕнче умĕнче.

* * *

Икĕ чĕлхе – икĕ вăй, икĕ чĕлхе – ик çунат. Пулăшĕç вĕсем сана ăс-тăн вăйне хăпартма, çынлăха пуянлатма. Çине тăрсах эсĕ вĕрен аслă вырăс чĕлхине – хамăр йышлă çĕршыври ытти тăван халăхсемпе калаçма, пĕлĕве пуянлатма. Анчах юрамасть манма тăван анне чĕлхине, асаттесен вĕрентĕвне, асаннесен халалне. Аслă çынсем хушшинче халь урăхла шутлаççĕ, тăван чĕлхене сума сăвакансене ытларах чыслаççĕ.

Икĕ чĕлхе – икĕ вăй, икĕ чĕлхе – ик çунат.

* * *

Чăн-чăн пурнăç пуçланать мăшăрланнă хыççăн çеç. Ун чух чăнах та вара камшăн пурăннине те чухла пуçлăн уççăнрах, уйрăммăнах хăв çумра пěчěк пепке пур чухне. Утасса та эсě вара утма пуçлăн урăхла – паллах, тÿрě çулпала, кил еннелле васкарах.

«Кил илемě – килěнтеш», – тенě ěлěк ваттисем. Мěн çиттěр-ха пурнăçра пěрне-пěри юратса, килěштерсе пурăннине? Çакă пулмě-ши вара телей патне çывхарни? Çакă пулмě-ши вара чăн пурнăçпа пурăнни? Мана хуть те мěн калăр – чăн-чăн пурнăç пуçланать мăшăрланнă хыççăн çеç.

* * *

– Аçу хăш ялсем сан? – ыйтрăм эпě санран.

Эс каларăн хăвăрт:

– Пěлместěп.

Аçун ячě урлă аслаçу ятне тупрăн шыраса. Аннÿн ячě урлă кукаçу ятне илтěн тавçăрса. Анчах калаймарăн ыттисен ятне. Çапах та пулнă вěт-ха вěсем, несěл йывăççин сыпăкěсем, пěр тымартан тухнă çывăх тăвансем. Питех те шел, тěл пулаççě ав хăй йăхне çухатнă, ял ятне те маннă тымарсăр çынсем.

* * *

Эсě ак ларатăн хулари çуртра, вылямаллисем те пÿлěм туллиех – аçу-аннÿ саншăн ним те шеллемест. Пурпěрех ачалăху манне çитеймест.

Курнă-ши эсě хěвел тухнине, ун ирхи шевлийě çěре ÿкнине?

Курнă-ши эсě мулкач йěррине, хастар ачасем урхамах утланса çил пек вěçнине?

Курнă-ши-ха эсě каçхи пěлěте, кăтартма пултарăн-ши Алтăр çăлтăра?

Илтнě-ши-ха эсě шăнкăрч юррине, хăв туса панă вěллешěн сана тав тунине?

Туйнă-ши-ха эсě ура тупанне çурхи симěс курăк кăтăкланине, çырма тăрăх утнă чух урана пулă çапса кайнине? Çак тěлěшпе эп телейлěрех.

* * *

Тантăшăм, сан çинчен калаçнă чух аçу ятне питех асăнмаççĕ, чĕннĕ чухне те ытларах Марье Мишши тееççĕ. Телейĕмĕр çапла пулчĕ – аттесĕрех ӳсрĕмĕр, йывăрлăхне тӳсрĕмĕр. Анне пулчĕ пирĕншĕн шăпах атте вырăнне, анне пулчĕ пирĕншĕн хăш чух пичче вырăнне, анне пулчĕ пирĕншĕн аслă аппа вырăнне. Суха тытма, каскалама, юлташсемпе туслă пулма, хамăр чыса мĕн пĕчĕкрен упрама пире анне вĕрентрĕ, вăйне пачĕ, чунне пачĕ, ятне пачĕ вăл пире. Анне ăшши – хевтере, упрар ăна чĕрере. Амăшĕ пур çын – тăлăх мар. Тусăм, эсĕ ан кулян Марье Мишши тенишĕн.

* * *

Шурсухалсем, тав сире! Пире хĕвел çути кăтартнăшăн, çĕр çул хушши, пин çул хушши йăха тытса пынăшăн.

Шурсухалсем, тав сире! Лайăх вырăн тупнăшăн, Аслă Атăл тăрăхĕнчи сенкер пĕлĕт айĕнче вырăн сарса панăшăн.

Шурсухалсем, тав сире! Юмахра мар, чăннипех çăлтăр таран вĕçмешкĕн пире çунат хушнăшăн.

Шурсухалсем, тав сире, чыс та мухтав ĕмĕре! Акăш мамăкĕ пек çемçе, юман кăварĕ пек хĕмлĕ чĕлхемĕре паянхи куна çитиччен упранăшăн, пире пилленĕшĕн. Шурсухалсем, тав сире!

* * *

Усал теççĕ мана хăшĕсем, анчах тăрăшмаççĕ кăштах ăнланма. Эпĕ ялан сивлетĕп вĕçкĕн çынсене, хыттăн тустаратăп элекçĕсене. Эпĕ кураймастăп мухтанчăксене, тӳрпилĕксене, чипер çын пулса, чĕрĕ вăй хурса, сумлă ĕç тумасăрах парнешĕн çунса пуçлăхсем патне чупакансене, намăса çухатнă чыссăр чунсене.

Мана усал теççĕ, эп усал çын мар. Куçран çеç калатăп чĕрем картнине.

* * *

Çамрăк, çамрăк тееççĕ – пурте йăнăшаççĕ. Тен, ахаль калаççĕ мана йăпатса?

Тен, хăвăрт утнишĕн калатăр эсир? Çитмелли нумай – çавăнпа васкатăп, курмалли нумай – çавăнпа утатăп, пĕлмелли нумай – çавăнпа вулатăп.

Сăра-эрехпе алхасман, пирус тётёмне те эп ăша яман, хырăма та ытлашши сарман. Тен, чăнах та кăшт çамрăк курăнатăп, питĕ пĕлес килсессĕн – чĕрене уçам.

Виçеллĕрех пултăр пурте пурнăçра, ытлашши ан иртĕн эсĕ пурлăхпа, çăкăр-тăварпа. Тытăннă ĕçе юратса ту, яланах вĕçне çитер. Ĕçпе канăва ылмаштарса пыр. Спортпа туслă пул. Кашни эрнерех, мунчана кайса, асаттесен йăлипе çан-çурăма хурăн милĕкĕпе çăт-çат çатлаттар. Туслашма тăрăш илем тĕнчипе, вăй çитнĕ таран ăна хӳтĕле, пурăн яланах хавхаланупа, çутă ĕмĕтпе. Пулччăр ытларах хăв тусусене чечек памалли илемлĕ кунсем. Пулмĕ сан вара вăхăт ватăлма, туйăн ун чухне çамрăкрах хăвна.

* * *

Тусăмсем, эсир мана каçарăр. Тен, сире усăллă çынах пулаймарăм. Ытларах сирĕнтен илсе пытăм – ыррипе ăшшине, хам чуна кирлине. Хĕрхенмерĕр маншăн хăвăр вăхăта, хăвăр кăмăла. Тен, çавна пулах хама пĕччен туймастăп. Сирĕнтен инçе чухне те эсир юнашар пулнине сисетĕп. Йывăр кунсенче аллăрсен вăйне туятăп. Хăвăра пулăшма вăхăтра çитейменшĕн хама хытă ятлатăп. Каçарăр мана.

* * *

Пĕлесчĕ ман, камсем паян хисепре-ши: ăслисем-ши, чейисем-ши, элекçĕсем-ши, мĕн хушнине пурне те ним сăмах чĕнмесĕр туса пыракансем-ши? Камсем паян хисепре-ши: тахçантанпах пуçлăх пулса çĕнĕ пурнăç пирки кăшкăракансем-ши е ним шарламасăр çĕнетĕве ĕçпе вăйлатса пыракан канăçа çухатнă çынсем-ши?

Камсем паян хисепре-ши?

* * *

Çамрăк чух вăхăта пушăпа хăвалас килет. Эрне те вăрăм, уйăх та нумай. Çулталăк вара ĕмĕрпе пĕр тан.

Кун та тем тăршшех, каç пуласса кĕтсе чун тухать, хĕвел çине пăха-пăха мăй ыратакан пулать. Сулăнтăрччĕ вăхăт каç еннелле хăвăртрах, санпа тĕл пулас килет часрах.

* * *

Бетховена хăлхасăр теççĕ. Ĕненместĕп эп çакна. Вăл çырнă кĕвĕ-юрăра янрать çутçанталăк сасси, вăл çырнă кĕвĕ-юрăра янрать халăх сасси, вăл çырнă кĕвĕ-юрăра – пурнăç таппи, тĕнче сасси. Вăл çырнă кĕвĕ-юрă миçе пин çынна савăнăç кӳменши, йывăр самантсенче шанăç паман-ши? Мĕншĕн тесен ун пек çивĕч хăлхаллă та пысăк чун-чĕреллĕ çын çук та-и, тен, тĕнчере? Çук, Бетховен хăлхасăр тесе ман умра текех ан калаçăр. Эпĕ пурпĕр ĕненместĕп.

Вăл маншăн яланах чи çивĕч хăлхаллă çын.

* * *

Çын пурнăçĕ пĕтĕмпех иртсе пырать çутçанталăк йĕркипех.

Ирпе ирех вăрансан, тăватă ура çине тăрсан, çурхи симĕс курăк пек туртăнатпăр çӳлелле. Вăхăт кăштах иртсессĕн ик урапа утатпăр, чиперленсе, вăй илсе, çеçкеленсе пыратпăр. Ун чух пире кураççĕ, ун чух пире саваççĕ. Ун чух вара, чăнах та, пурнăç тути-масине, тавралăхри илеме туятпăр урăхларах. Каç еннелле сулăнсан алла туя тытатпăр, виç урапа утатпăр. Вăхăт çитсен кашниех çĕре кĕрсе выртатпăр, унтан – тăпра пулатпăр.

...Мана эсир сад пахчине пытарăр. Вилтăприйĕм çине улма йывăççи лартăр. Питĕ шăрăх вăхăтра шыв сапмашкăн ан манăр. Ахаль выртмăп ун чухне. Тăпра пулса тăрсан та çынсемшĕнех эп ĕçлĕп, кашни çулах кĕркунне тутлă улма парнелĕп.

* * *

Манпа хыттăн ан калаçăр, айăпăм пулсан та сирĕн умăрта. Сахал тунă тесе пит ан ятлăр – çисе ячĕ черет вăхăта.

Тăхăнайман çи-пуçа ăмсанмастăп нихçан та, çиеймен çимĕçе шырамастăп, тăвайман ĕçшĕн çеç кулянатăп – çисе ячĕ черет вăхăта...

Çитес тенĕ çĕре çитеймерĕм, курас тенĕ çынна кураймарăм, юрлас тенĕ юрра юрлаймарăм – çисе ячĕ черет вăхăта.

* * *

Ман юрату – асамлăх, ман юрату – тасалăх, ман юрату – çирĕплĕх, ман юрату – чăтăмлăх. Тем пек йывăр пулсан та, çав туйăмран пăрăнмăп, тем пек ырлăх курсан та, çав туйăма йӳнетмĕп.

Юратман çынпала юнашар эп утмастăп, ăна алă парса ал ăшшине сая ямастăп; хăй сăмах тапратсан та, ăна куçран пăхса калаçма чăтăмлăх çитерейместĕп.

Юратман çынран парне тавраш йышăнмастăп.

Юратман çынран, тем пек шăрăх вăхăтра эрне хушши ĕçмесĕр пурăнсан та, шыв ыйтмастăп.

Юратман çынран вилес пек чирлĕ выртсан та – эмел ыйтмастăп. Вилсен те хама пытарма чĕнместĕп. Анчах тăван халăхшăн, тăван культурăшăн пĕрле ĕçлеме чĕнекенни юратман çын пулсан та, унпа юнашар тăрса вăй хума эп хатĕр.

# 1988 çул

* * *

Çын пурăнман килте илем çук. Унта пурте тăлăх: сĕтелĕ те, пуканĕ те, чашăкĕ те, кашăкĕ те, кăмаки те, кантăкĕ те, алăкĕ те, кĕлечĕ те, мунчи те, хапхи те...

Кăмака хыçĕнчи шăрчăкĕ те чĕриклетме пăрахнă, якатнă пĕрене çинче çакăнса тăракан сехечĕ те шакками пулнă. Кушакĕн те, йыттин те, чăххи-чĕппин те савăнăçĕ пĕтнĕ.

Килтен юлашки çын тухса кайсан, пурте тăлăха тăрса юлать, алăк сасă пами пулать, выльăх-чĕрлĕхпе çын ури йĕррине сысна курăкĕ пусать. Çакă вара илем арканни пулать, пурнăç сÿннине пĕлтерет.

* * *

Эсĕ, алăк çумĕнче çакăнса тăракан çăра, мана намăс кÿрекен япала кăна.

Килĕнче çын çук çĕре эп пырса кĕрес çук, ĕçлемен лавкка алăкне эп туртса уçас çук. Сана курсан асаттесен чи çирĕп çăри – килтен тухса кайнă чух алăк хăлăпĕ çине хулă хурса хăварни – куç умне тухса тăрать.

Мĕнле-ха капла эпир хамăр чыса, йĕркене çăрапа тытса тăратпăр? Пулас ăру çыннисем çак япалана музейре курсан пирĕн пирки мĕн калĕç?

Текех çăра кирлĕ мар тенине илтсе пулĕ-ши? Кĕтсе илĕпши çав ырă куна? Ун чухне вара пĕтĕм çăрасене пуçтарса вăрăм сăнчăр тăвăттăм, инçетри туссем патне хăнана çÿреме тинĕс урлă кĕпер хывăттăм.

* * *

Сарă тулă акса эп ÿстертĕм, пахчаçимĕç, выльăх-чĕрлĕх патшалăха сахал мар ăсатрăм. Хама эпĕ çĕр ăсти, пурнăç хуçи тесе шутласа пурăнаттăмччĕ. Анчах йăнăшнă иккен...

Хулара эп пултăм, кĕтĕм лавккана, кам чăн хуçа пулнине куртăм уççăнах. Эпир пурте паян суту-илÿ çыннин аллинче.

Мĕнле мăнкăмăллăн тăрать вăл пăхса, ман пек çынсемпе

каласма ӳркенсе. Хăйне кирлĕ çынна курсан – пачах урăхла. Пурăнаççĕ вĕсем пĕрне-пĕри алă çуса, ытларах хăйсемшĕн çеç тăрăшса.

Лавккасенче япаласем çителĕклех марри, тен, вĕсемшĕн чи лайăххи. Пурте çителĕклĕ пулсан кам ытлашши пуç тайтăр-ха вĕсене? Халлĕхе вара эпир пурте вĕсен аллинче.

* * *

Çын çумĕнче виçĕ ункă çиççе тăрать.

Пĕрремĕшĕ – шухăшран, ăс-тăнран, кăмăл-туйăмран тăрать. Ăна лайăхрах пĕлес тесен çынпа каласса пăхмалла, хăйне пурнăçра, ĕçре е канура мĕнлерех тыткаланине асăрхама пĕлмелле.

Иккĕмĕшĕ – çын çумĕнчи, кил-йышри япаласен тĕнчийĕ. Урам урлă каççассăн пурнăç йĕрки урăхла. Пĕрисем ав хаклă япаласемшĕн çунса çӳреççĕ, теприсене вара нимех те кирлĕ мар. Кунта виçе пулмалла. Япала вăл çыншăн пултăр, ун пурнăçне илем кӳтĕр. Анчах хаклă япала чури пулса ларас марччĕ, пурнăç тутине çухатас марччĕ.

Виççĕмĕшĕ – пире çывăх çынсем: тăвансемпе туссем, пĕрле ĕçлекенсем... Çав ункă çывăхĕнчех ман телее ăмсанакансем, ура хума хатĕр, çăхав çырма ăста тăмписменсем тăраççĕ. Анчах темле пулсан та, ырă çынсем ытларах. Пурнăçа ăшăтса илем кӳрекенсем шăп та çавсем пулаççĕ.

Çын йĕри-тавра виçĕ ункă, виççĕшĕ те çутă ункă. Вĕсене вупăр килсе пусасран хамăр вăя шеллер мар, шухăша уççăн палăртар, чуралăх туйăмĕнчен ĕмĕрлĕхех тасалар.

* * *

Ăслăлăх çыннисем, ытлашши ан ятлăр. Эсир вĕрентнинче те хирĕçӳлĕхсем чылай иккен.

Ĕç вăл – пурнăç никĕсĕ тетпĕр эпир час-часах. Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Анчах темле пулсан та, ĕçĕн виçи пулмалла.

Кашни çыннах ăс-тăн енчен, туйăмран çӳллĕ шайра курасшăн, нумай ĕçлеттерсе пурлăх тĕнчине пуянлатасшăн çунатпăр. Канăва пĕлмесĕр кунĕн-çĕрĕн ĕçлекенĕн пурнăç валли вăй-хал сахал юлнине, таврари илем çине пуçа çĕклесе пăхма вăхăт çуккине пачах шута илместпĕр. Ĕçпе хуçăлнă çынна театр та, кино та питех аса килмест.

Мана хуть те мĕн калăр, çын ĕçлессишĕн çеç пурăнмасть, пурăнассишĕн ĕçлет.

Ӗҫлессе пурте ӗҫлетпӗр, хӑш чух пӗр ӗҫех тӑватпӑр. Пурӑнасса вара – пачах урӑхла пурӑнатпӑр. Пурнӑҫ илемлӗрех курӑнтӑр тесен ӗҫре те виҫе пулмалла.

* * *

Пултаруллӑ ҫынсем чӑвашра сахал мар. Асӑрхама, хаклама пӗлменни ҫеҫ пире чылай сиен кӳрет. Мухтава тивӗҫ сӑвӑҫсене тӗнче умне тӑратса хамӑра хамӑр ҫӗклеме тин кӑна вӗренсе пыратпӑр-ха.

Чӑвашсен Айхи пур. Ҫав сӑвӑҫӑн ун хӑйӗн академийӗ. Ӗҫлекенсем унта нумай, тӗрлӗ чӗлхепе калаҫаҫҫӗ: акӑлчанла, французла, полякла, итальянла, сербла, хорватла, венгрла, нимӗҫле, датла, испанла, яппунла... Чӑваш сӑввине куҫарса тӑваҫҫӗ питӗ сӑваплӑ ӗҫ.

Ҫапла, чӑваш сӑвӑҫин сасси янрать халь тӗрлӗ чӗлхепе. Иванов, Ҫеҫпӗл, Митта, Хусанкай, Ухсай, Шавли, Сементер, Юмарт... тухрӗҫ тӗнче уҫлӑхне. Ҫунат параканӗ пулчӗ ӗҫчен Айхи. Вӑл пӗччен пӗр академи, президенчӗ те хӑех.

* * *

Эсӗ каларӑн: кай терӗн, кирлӗ мар текех терӗн. Эпӗ ӗнентӗм, эпӗ итлерӗм, кайрӑм тухса сан ҫумран.

Тен, эсӗ каймасть терӗн пуль. Ҫук. Каланӑ сӑмаха эпӗ тӗпе хуратӑп. Саншӑн сӑмах, тен, чӗлхе вӑййи ҫеҫ.

Кай тесе каланипех пӗтӗпӗр-ши татӑлса. Юнашар тӑмасан та сан асунтах эпӗ юлӑп. Теприне килӗштерсен те, аса илӗн эсӗ мана.

Тепри, паллах, эпӗ мар. Ҫи-пуҫӗ те, утти те, сывласси те, ҫиесси те, ӗҫесси те, куласси те, юрласси те пулӗ унӑн урӑхла. Юратасса та сана, тен, юратӗ урӑхла. Анчах, темле пулсан та, пурпӗр мана манаймӑн. Эпӗ ялан сан чун-чӗрӳнте пулӑп. Ҫӗр хутчен, пин хутчен танлаштарӑн манпала ҫав ҫӗнӗ тусна. Халиччен асӑрхаман ман ырӑ енсене ун чух курма пуҫлӑн уҫҫӑнрах.

Ҫапла пулать хӑш чухне: мӗн пуррине хакламастпӑр, ҫухатсассӑн – кулянатпӑр.

* * *

Эх, Рита, Рита, Маргарита. Сана курманни вӑтӑр ҫул та иртрӗ. Анчах улма пек сӑну паян кун та канӑҫ памасть. Яштак

пĕвӳ, кăтра çӳçӳ, йăл кулнă чух палăракан савăш путăкĕ халĕ те куç умĕнчех. Ĕмĕрлĕхех вырнаçнă иккен эсĕ манăн ăшăма.

Сан умра тăрса сăмах хушма хăюлăх çитерейменшĕн хама халĕ те каçараймастăп. Мана ун чух эсĕ асăрхаймарăн. Сан илĕртӳллĕ куçу хăюллăраххисене, чăрсăртараххисене, якарах тăхăнса çӳрекеннисене ытларах килĕштерчĕ курăнать.

Аса илтĕм сана Албенăра, Будапештра, Парижра. Çук, санпа танлашма пултаракан хĕрарăма унта эпĕ курман. Юл эсĕ маншăн ĕмĕрлĕхех хитрелĕх виçи вырăнне.

Халĕ вара пĕртен-пĕр ĕмĕт – тĕл пулас марччĕ сана, аркатас килмест пĕрре асра çирĕпленсе ларнă сăна, вилсен те хампа пĕрлех илсе каяс килет.

Тĕл пулас марччĕ ман сана, ăшçунтармăш...

* * *

Тусăмсем, мана хĕрхенме кирлĕ мар. Сăлтавĕ çук. Эсир ытларах усал та кутăн хĕрарăмсене хĕрхенĕр. Çавсем чухăн, çавсем айван, хăйсен телейне хăйсемех çисе пыраççĕ.

Ун пек хĕрарăма юрасси – чĕр тамăк. Хăй çумĕнчи çынна тарçă вырăнне кăна хурать. Уншăн пурте айăплă, ун умĕнче пĕтĕм тĕнче парăмлă. Анчах пĕрне ăнланмасть: хĕрарăма телейлĕ пулма пĕтĕм тĕнче кирлех мар.

Пултăрччĕ кăна ăшра çынна хаклама пĕлни, çепĕçлĕхпе сăпайлăх. Пултăрччĕ кăна чунра ыттисен телейне ăмсанмасăр хăйĕнне упрама пĕлни.

Усал та кутăн хĕрарăмсене шеллĕр. Юрату ăшшине сисмесĕрех ватăлса пыраççĕ ун пеккисем, мăшăрĕ пулсан та пĕччен туяççĕ хăйсене. Çавсене ытларах хĕрхенĕр.

* * *

Анне пире темле уйрăм туйăмпа юратать. Сывлăхлă-и, айван-и, сăнран кăштах начар-и – анне пурпĕр юратать.

Арăм пире юратать хăйне чапа хунишĕн, куллен лайăх пăхнишĕн, вăй хурса ĕçлесе пурлăх туса панишĕн. Ырлăхĕ кăшт чаксанах юратăвĕ те чакать.

Анне пире юратать пĕтĕмĕшле хак парса. Арăм пире юратать мĕншĕн те пулин кăна, уйрăм ене суйласа. Юраттăрччĕ вăл анне пек, кĕтсе илĕттĕм çакна çурхи çутă хĕвел пек.

* * *

Таçта чикĕ леш енче миллионерсем хушнипе полицинче ĕçлекенсем тар кăларса пĕр тухтăра шыраççĕ. Мĕскер пулнă-ши вара, мĕн айăпа кĕнĕ-ши куçран çĕтнĕ çак тухтăр?

Тупнă тет вăл шыраса никам пĕлмен çĕн эмел. Çав эмеле ĕçтерсен, упăшкине улталакан хĕрарăмсен çамки çине симĕс шĕпĕн тухать тет. Курасшăн тет пуянсем çак эмелĕн уссине. Анчах тем чул шырасан та тупаймаççĕ тухтăрне. Арăмĕсем пуянсен лăх-лăх! кулса çӳреççĕ. Мĕншĕн тесен çав тухтăра упăшкисем тупасран хăйсем тытса хупнă тет. Хайхи-майхи эмелне шывпа юхтарса янă тет.

* * *

Хĕрарăмра ман хĕрарăма курас килет. Чĕрем ыйтать, куçăм шырать. Ăçта кайса кĕчĕç-ши çепĕç те çемçе кăмăллă хĕрарăмсем? Мĕншĕн нумайлансах пыраççĕ-ши сĕтел çапса хыттăн калаçаканнисем, пуçлăх вырăнне хурса хăйсене мăнкăмăллăн тытса çӳрекеннисем?

Кăштах ыйтса пĕлесчĕ: пур-ши вĕсен упăшкисем, ачисем, мĕнлерех-ши çав килсенчи йĕркесем? Пур-ши унта чун уççи, юрату ăшши?

Хĕрарăмăн чеченлĕхĕ мĕншĕн чакса пырать-ши? Тен, çакăншăн, арçынсем, эпир хамăр айăплă? Хĕрарăм туртакан лава кăштах çăмăллатасчĕ. Ăна хăй кам пулнине аса илтерекен ырă самантсене нумайлатса пырасчĕ.

* * *

Эсĕ ман пата чечекрен чечек çине вĕçсе çӳрекен сăпса пек çитсе тăтăн, çăмăллăн калаçма пуçларăн, хăюллăн тыткаларăн...

Анчах пĕрне туймарăн: эпĕ роза чечекĕ пулнине чухлаймарăн. Мана тытса хуçма пикентĕн, пĕвĕм йĕплĕ пулнине шута илмерĕн, аллуна кăна юнлантарса пĕтертĕн.

* * *

Кайăксем, кайăксем, тăван киле пысăка хурса хаклакан ыр чунсем. Таçта вĕçсе кайсан та йăва тума кунтах килетĕр, пурнăç çулне манмастăр, пире лайăх тĕслĕх парса тăратăр.

Пурнăç вăл пур çĕрте те пĕрех терĕмĕр те, алла чăматан тытрăмăр, атте килĕнчен тухса вĕçтертĕмĕр.

Çынсем пире йышăнчĕç, юлташсем те тупăнчĕç. Çăкăр-тăвартан та, çи-пуçран та ыттисенчен япăх пулмарăмăр. Анчах ăшра пурпĕрех канлĕх тупаймарăмăр.

Пире лайăххи аттепе аннене телей кӳрĕ-ши? Пирĕн сывлăхпа вăй-хал вĕсен ватлăхне кăштах та пулин çăмăллатĕ-ши? Вăхăтран вăхăта укçа ярса тăни вĕсемшĕн çителĕклĕ пулĕ-ши? Тен, вĕсемшĕн чи пахи – хамăр юнашар пулни?

Кайăксем, кайăксем, пурнăç çулĕнчен пăрăнман ырăран ырă чунсем...

* * *

Хамăрăн пурăнса юласчĕ терĕмĕр-ши? Тепĕр çĕр çултан пирĕн çинчен мĕн калĕç-ха? Вăрçса пĕтермĕç-ши, кулмĕç-ши ун чухне пирĕн кĕске ăсран, айванлăхран?

Мухтанмалăх Атăл пурччĕ. Ăна пĕтерсе хутăмăр. Текех Атăл ятлă юханшыв çук. Виçĕ пин çухрăм тăршшĕ пĕве кăна пур.

Кăкăр тулли сывламалăх уçă сывлăш пурччĕ. Ăна пĕтерсе хутăмăр. Хула варрине лартса тултарнă заводсем кунĕн-çĕрĕн тĕтĕрсе тăраççĕ, сывлăша пӳлеççĕ.

Тăрна куçĕ пек таса шыв пурччĕ. Ĕçнĕ чухне пăхса илсен сăнăм курăнатчĕ. Вăл та куçран çухалчĕ.

Ытти çĕршывсене газпа вăрман сутса укçа тунишĕн пире нихăçан каçармĕç.

Мĕн тăватпăр-ха эпир çутçанталăкпа? Мĕншĕн шутламастпăр çитес ăрусем пирки? Паян пурăнса пултăр тетпĕр-ши?

* * *

Çилпе хĕвел тавлашаççĕ тет.

– Кам вăйлăрах çĕр çинче?

Çилĕ калать:

– Эпĕ, – тет. – Ĕненмесен, пăх-ха, – тет.

Акă пырать çулпала яштак пӳллĕ сар пике.

Çил кăштах вĕрсе пăхать, пике çӳçенсе илет, вăйлăрах вĕрет, пике тутăрне çыхать, тата хытăрах вĕрсен ăшă тумтир тăхăнать.

Тĕрĕслеме хăй вăйне акă пуçлать сар хĕвел. Йăл кулса илет те ăш тумтире хывтарать, хытăрах ăшăтать те тутрине салттарать, вăйлăн хĕртме пуçлать те, пĕтĕмпех хывăнтарса, шыва кĕртсе ярать.

– Апла эппин черкке йӑтар, хӗрӳ хӗвелшӗн, хӑй ӗҫне ӑшӑ кӑмӑлпа туса пыраканшӑн, – терӗ ман юлташ.

Черет ҫитрӗ ак мана. Мӗн сӗнем-ши ыр ҫынна?

– Сана эпӗ укҫа-тенкӗ, пуянлӑх сӗнместӗп. Мӗншӗн тесен хӑв ылтӑн.

– Сана эпӗ ҫирӗп сывлӑх сунатӑп...

– Ҫапла, сывлӑх пулсан, пурте пулать, – терӗ тахӑшӗ хушса.

Хирӗҫлеместӗп, ҫирӗп сывлӑх чӑннипех те пысӑк савӑнӑҫ. Анчах сывлӑхлӑ ҫын кӑкӑрӗнче ырӑ чӗре тапмасан, телей айккинелле тармӗ-ши? Ҫирӗп сывлӑх ытларах пултӑр ырӑ ҫынсене! Усал ҫын аллинче вӑл ыттисене сиен кӳрекен вӑя куҫса кайӗ те...

Ҫирӗп сывлӑхпа ырӑ чӗре ялан туслӑ пурӑнччӑр.

* * *

Ман пурнӑҫӑм, ман телейӗм ҫунат сарса пынӑҫемӗн сан кӗвӗҫ чуну тата вӑйлӑрах тулхӑрма пуҫларӗ. Ниҫта кайса кӗрейменнипе кӑвакарса кайрӑн, ыйӑхна ҫухатрӑн.

Пытармастӑп: эпӗ телейлӗ. Пӗрне-пӗри юратакан мӑшӑрӑм пур, ачамсем те йӗркеллӗ. Ир те каҫ тӑван аннене куратӑп, вӑл пӗҫернӗ апата ҫисе савӑнатӑп. Сывлӑхӑм та аптрамасть: аллӑ урлӑ каҫсан та, пӗр кун ӗҫрен юлмарӑм. Йывӑр чухне хута кӗме хамран ӑслӑ туссем пур. Тӑвансемпе калаҫса чуна пусарма анне панӑ чӗлхем пур. Халӑх умне тӑмалӑх кӑштах ятӑм та пур, чысӑм та ҫитет.

Ман сана та хам пекех телейлӗ тӑвасчӗ. Анчах чуну ытла чухӑн-ҫке. Арҫын туйӑмне хаклама пӗлмерӗн, хӑвна юратнӑ ҫынпа йӗркеллӗ пурӑнаймарӑн, пӗччен пурнӑҫшӑн ҫунтӑн.

Халӗ ав мӗн шыранине тупрӑн. Анчах телей пулчӗ-и?

Ҫук пуль ҫав. Телейлӗ ҫын теприн телейне ӑмсанас ҫук, хура ҫӗлен пек чашкӑрса сиввӗн пӑхса ҫӳрес ҫук.

* * *

Ялтан тухса кайнӑ чух пичче мана каларӗ: йӑпӑлти пул, чее пул, пуҫлӑхсемпе ан хирӗҫ, ӗҫленипе ҫеҫ чапа тухаймӑн, орден илсе кураймӑн терӗ.

Эп тӗлӗнтӗм пиччерен.

– Пире шкулта апла вӗрентмен, – терӗм.

– Пурнӑҫ шкулӗ урӑхла вӑл, – терӗ.

Ҫук. Итлемерӗм пичче сӑмахне, пурнас терӗм хам пӗлнӗ пекех.

Вунпилӗк ҫул хушши пӗр кун сиктермесӗр ҫӳретӗп ӗҫе. Алура тикӗс, чирлесе курман.

Анчах мӗнле пурӑнатӑн-ха текен пулмарӗ. Пӗтӗмӗшле каласан, пурнӑҫ ӑнсах пымарӗ. Ман черет ҫитнӗ ҫӗре япали пӗтсе ларать, автобуса ваттисемпе хӗрарӑмсене ирттерсе янӑ хыҫҫӑн ман умра алӑкӗ хупӑнать. Хваттер пирки калаҫнӑ чух чирлисемпе тӑлӑх арӑмсене шеллеҫҫӗ. Маншӑн вара ӗҫре кӑна ҫул уҫӑ.

Тепӗр чух тата, пурнӑҫ пит хӗстернӗ самантра, аттепе аннене те ятласа илетӗп: мӗншӗн мана пӗр сурансӑр ҫуратнӑши. Тен...

Тен, ун чух ачамсем вӗт хӑмаран тунӑ пӳртрен тухса тантӑшӗсемпе танлашнӑ пулӗччӗҫ.

Тен, ун чух апат-ҫимӗҫ таврашне те черетсӗрех илнӗ пулӑттӑм.

Тен, ун чух инҫе ҫула тухсан, касса умӗнче тӗрткелешсе тӑма тивместчӗ.

Тен, ун чух путевкӑпа курорта кайса килнӗ пулӑттӑм.

Пӗр кун сиктермесӗр ӗҫе ҫӳрекен сывлӑхлӑ ҫын шӑпи пит чаплах мар иккен.

Е чӑнах та пичче хушнӑ ҫулпа каймаллаччӗ?

* * *

Ӑҫта-ха вӗсем, эпир ӗмӗтленнӗ, эпир хытӑ шаннӑ ҫамрӑксем?

Сахал мар вӑй хутӑмӑр ӑслӑ ӑру ҫитӗнтерес тесе. Мӗнле йышши шкулсем лартса памарӑмӑр пуль. Усси сахал пулчӗ. Парта хушшинче ҫеҫ вӗреннипе чӑн-чӑн ҫын пулма ҫук иккен. Пурнӑҫ шкулӗ вӑл урӑхларах пӗлтерӗшлӗ.

Хальхи ҫамрӑксем калаҫнине илтсен, тӗрткелешнине курсан чун ыратать. Вӗсем паян ытларах тутлӑ ҫиесшӗн те капӑр тӑхӑнасшӑн. Вӑй хурса, чуна парса ӗҫлекенсем сахалланса пыраҫҫӗ.

Шел, ҫамрӑк ӑрӑвӑн шухӑш-кӑмӑлне ҫийӗнчех асӑрхаймарӑмӑр, вӑхӑтра алӑ параймарӑмӑр, хамӑр чӗмсӗр пултӑмӑр, пӗр чӗлхе тупаймарӑмӑр.

Ҫамрӑксене ӳпкелеме пуҫличчен хамӑр ҫине лайӑхрах пӑхса илни вырӑнлӑ пуль тетӗп.

* * *

Атте вилсен мӗн юлать? Пурлӑх юлать, хушаматпа ырӑ ят юлать. Пуянлӑхӗ нумая пымасть, хушамачӗ – ӗмӗре.

Аттесен ырӑ ячӗпе киленсе ларнипех пурнӑҫ пулмасть. Ытларах хамӑрӑн тумалла, вӗренмелле, ӗҫлемелле, халӑх умне тӑмалла.

Ашшӗ ячӗпе мухтанса ӳсекен ачасем ашшӗ шайне ҫитей-меҫҫӗ.

Ҫамрӑклах хӑй ячӗ пирки шутлакансем ашшӗ ятне ҫӗк-леҫҫӗ, халӑх асӗнче юлаҫҫӗ.

* * *

Чӑн-чӑн пӗртанлӑх ҫӗр ҫинче пӗрре ҫеҫ, вӑл – вилӗм. Вӑл алӑк патне ҫитсе тӑрсан ӗҫри чаплӑ пукан та, михӗ тулли укҫа та, ылтӑн купи те вӑйне ҫухатать. Ним парса ҫӑлӑнса юлма ҫук. Вилӗм пурне те татса парать, ҫитменнине те ҫитерет.

Ача чух, юн вӗресе тӑнӑ чух пурнӑҫ мӗнле вӗҫленесси пирки шухӑшлама вӑхӑт ҫук. Ватӑлассӑн та туйӑнмасть. Анчах виле пытарнӑ ҫӗрте пуҫа пачах урӑхла шухӑшсем пырса кӗреҫҫӗ. Хамӑртан уйрӑлса кайнӑ ҫын пирки калаҫнӑ май ӗмӗр вӗҫӗмсӗр маррине лайӑхрах чухлама пуҫлатӑн. Пурнӑҫамӑр тӗллевӗ те кӑшт урӑхларах курӑнма тытӑнать.

Вилнӗ ҫынна тирпейлесе пытарасси ӗлӗкрен пыракан йӑла. Ҫак пархатарлӑ ӗҫе ҫамрӑксене те явӑҫтарнӑ, тупӑк хӑми савалана чух пурнӑҫ ҫинчен шухӑшлама май туса панӑ. Вилӗ пытарнӑ ҫӗрти йӗркесем ытларах чӗррисемшӗн пуль тетӗп.

* * *

Юратнӑ хӗрӗм, эсӗ ман юн пӗрчи, ытла хӑвӑрт ӳссе ҫитӗнтӗн. Халӗ ав хӑв йӑвуна ҫавӑрма шутлатӑн, мӑшӑр тума урӑх халӑх ҫыннине суйларӑн.

Пӗрне-пӗри юратса пӗрлешнӗшӗн савӑнатӑп. Аннӳ каланӑ сӑмахсем ҫумне ҫакна хушса калатӑп.

Ялан юнашар пулма тӑрӑшӑр, телее уйрӑм ҫулпа ан шырӑр.

Хӗрӗм, эсӗ – ман юрату тӗшши. Ҫав хаклӑ туйӑма упрас тесен сан упӑшкуна ҫеҫ мар, ун халӑхне, чӗлхине, юрри-ташшине юратма пӗлмелле. Хӑв тусун ватӑ асламӑшне сума суса калаҫма ун чӗлхине вӗренме тӑрӑш. Ачусене те ҫапла хуш. Ҫав хушӑрах хамӑр халӑхӑн ырӑ енӗсене ан ман, вӗсене уҫҫӑнрах кӑтартса пыр.

Сан мăшăрун парăмĕ сан умра çеç мар. Вăл – халăх ывăлĕ. Тăвансемшĕн, халăхшăн тумалли ĕçсем ун чылай. Çав тивĕçе лайăх пурнăçлама эсĕ ăна хавхалантарса пыр. Чăн-чăн юратушăн тунă ĕç саншăн йывăр пулмĕ. Ун чухне икĕ çемье пĕрлĕхĕ, икĕ халăх туслăхĕ çирĕпленсе пырĕ.

* * *

Ачаран асра юлни яланах пуçра, чул çине çырса хунипе пĕр тан.

Вăрçă вăхăтĕнче пирĕн аннесем атте вырăнне, лаша вырăнне пулнă. Кунĕн-çĕрĕн ĕçленĕ, кану мĕнне пĕлмен. Çитменнине тата патшалăхĕ налукпа чуна илнĕ. Вăхăтра парса татмасан киле пырса тустарнă, хаклă япаласене туртса илсе кайнă.

Алхасатчĕç ун чухне налук пуçтаракансем. Хирĕç калакансене хăрататчĕç тĕрмепе.

Анчах ватă асанне пурпĕр тупрĕ хăюлăх, калассине каларĕ:

– Пурнăçу сан ан ăнтăр, мăрьерен тĕтĕм тухма пăрахтăр, кил хушшине вĕлтрен пустăр, çурт тăррине мăян шăттăр, – терĕ.

Те шăпи çапла пулчĕ, те асанне ылханĕ çитрĕ – çав çын эрех ăшне путса вилчĕ, ачисем те халăха юрăхлă ĕçченсем пулаймарĕç, пурнăçне тĕрмерен тĕрмене çӳресех ирттерчĕç, ашшĕ килне вĕлтрен пусрĕ.

Ватă çын ылханĕ чăнах та çитет пуль.

* * *

Мĕн-мĕн тумастпăр-ши эпир ачасене юрас тесе. Япаларан, укçаран вĕсемшĕн халĕ чару çук. Йывăрлăхран упраса ĕçне хамăр тăватпăр, чылай ӳссе çитсен те алран тытса пыратпăр, такăнасран хăраса умне кавир саратпăр. Анчах темшĕн пур-пĕрех юратăвне вĕсенне ытла сахал куратпăр. Тав сăмахĕ вырăнне «пар!» тени çеç илтĕнет. Çакă шухăша ярать.

* * *

Пĕри çуралать те тӳрех сухапуç çине ӳкет, тепри вара – рояль çине. Çапла куçса пынă мĕн ĕлĕкрен камăн мĕн ĕç тăвасси.

Самани улшăннă май çак йăла та улшăнчĕ. Сухапуç çине ӳкнисем те рояль патне çывхарма пуçларĕç, аслă пĕлӳ илсе ăслăлăхра çитĕнӳсем тума тытăнчĕç.

Çамрăк тусăм, хăв ăçта çуралнишĕн ытлашши ан пăшăрхан. Чи пахи вăл – пурнăçу мĕнле вĕçленни.

Телейсĕр çынсем рояль çине ўкнисем хушшинче те темĕн чухлех, телейлисем – сухапуç çине ўкнисем хушшинче те нумай.

Пурте хамăртан килет. Çине тăрса вĕрен, ĕçе тĕплĕ ту, ытти çынсемшĕн усăллă пулма тăрăш. Телейĕ вара сана хăех шыраса тупĕ.

* * *

Эпир – кам? Эпир – вăрçă вăхăтĕнче çурхи хура пусăри крахмалпа ўснисем. Пире лекес çăкăра, услам çăва, çăмартана, эпир тăхăнас кĕрĕкпе алса-чăлхана анне салтака парса тăнă, аттепе çĕршыв çинчен ытларах шутланă.

Тен, çавăнтан пуçласах эпир пынă хăнăхса мĕн пуррипе çырлахма. Тутлă çимĕçшĕн, хаклă тумтиршĕн аннесене йăлăнман. Чарма пĕлнĕ чĕлхене, пусăрăнтарнă туйăма.

Анчах темле пулсан та пĕр ĕмĕтрен çăлăнма вăй çитместчĕ пулмалла.

Тăраниччен çăкăр çисе курасчĕ – шутлаттăмччĕ урокра. Пир сумкăри мăянлă çăкăра, пĕчĕккĕн хуçа-хуçа илсе, учитель куриччен чăмламасăрах çăтса яраттăмччĕ.

Хырăм ытла выçнă чух урокра мĕн калаçни хăлхана та кĕместчĕ. Тен, çавăнпах ун чухне вунă çул таран вĕренекен çамрăксем ялта ытла сахалччĕ.

Халĕ пурнăç урăхла... Пултăм эпĕ шкулти пухура, илтрĕм унта ак çакна:

– Мĕншĕн эсир ачасене темиçе кун хушши рис пăттипе кăлпасси кăна çитеретĕр?

Ачасем çисе яман апат-çимĕçе витри-витрипе тухса тăкнине курсан, кăшкăрса ярас килет. Макăрсан та, кăшкăрсан та хальхи çамрăксем мана ăнланас çук. Мĕншĕн тесен пурнăç виçи вĕсен пачах урăхла.

* * *

Ватăлса пынăçемĕн куç умне ачалăх сăнарĕсем сике-сике туха пуçларĕç. Телейлĕ самант. Ун чухне вара мĕн пĕчĕкрен пуçласа паянхи куна çити пурнăç çулĕпе чупа-чупа тухатăп та хама пачах урăхла туятăп.

Ырă вăхăтсем пурнăçра пулкаланă иккен. Çи-пуçран, çăкăр-тăвартан çителĕклех пулмасан та, вăйă-кулăран, юрă-

ташăран эпир чухăн пулман. Вăйă картине тăрса юрлани, акатуйĕнче ăмăртса ташлани халĕ те асран тухмасть.

Паянхи пек тунсăх та кичем çынсем эпĕ ӳснĕ чух сахал-тарахчĕ. Ĕçе тухнă ушкăнпа, улăх тулнă юрăпа. Кил-çурта çĕкленĕ нимепе, çăмăллатнă ĕçе шӳтлĕ сăмахпа. Çынсем пулнă ун чух туслăрах, кăмăллăрах, пулăшăва çитнĕ хăвăртрах.

Ачалăхран пачах сивĕнменни лайăх япала иккен. Тен, вăл мана çак пăтрашуллă саманара çынлăха упраса хăварма пулăшĕ.

Ачалăхăм, кашни кунах килсе кайсамччĕ, савăнăç кӳрсемччĕ эсĕ мана.

* * *

Токай хулине пырсан, кашни хăнанах авалхи эрех нӳхрепне кĕртсе кăтартаççĕ.

Нӳхреп тăршшĕ ултçĕр метр, ик енĕпе çынран çӳллĕ юман пичкесем, сакăрвунă, çĕр çул каялла тунă эрехсем...

Сĕтел хушшине лартрĕç, хăналарĕç. Эпĕ те кăмăлшăн черкке тытса патăм. Ĕçсе паманшăн каçару ыйтрăм.

– Ман çумра ик пысăк çитменлĕх пур, пирус туртма, эрех ĕçме вĕренеймерĕм, çавăншăн аннене хытă ятлатăп, – терĕм. Кулса ячĕç, алă çупрĕç.

Унтан ура çине тăтăм та чăвашла юрласа патăм. «Утса-чупса пынă чухне лартăм чĕркуççи çине», – пуçларăм питĕ шăппăн, хуллен сасса вăйлатса пытăм...

Тĕрлĕ халăх çыннисем эрех çинчен манса кайса ман çине шăтарас пек пăхса лараççĕ. Сулахай алли çине шурă алшăлли çакнă çамрăк официантсем кăт хытса тăраççĕ.

Юрă пĕтрĕ, шăплăх çаплах тăрать-ха. Ура çине Эгерти пединститут ректорĕ Ласло Сюч тăчĕ.

– Тусăмсем, çак юрă таса туйăмпа питĕ пуян пулнине пурте сисрĕр пуль. Ырă çыннăм, кала-ха, мĕн çинчен эс юрларăн? – ыйтрĕ вăл манран.

– Ку юрă çамрăклăх, пурнăç пирки шухăшлани, урăхла каласан, халăх философийĕ кунта, – терĕм.

Вара тин алă çупса ячĕç, тав турĕç, чăваш халăхĕшĕн черкке йăтрĕç.

* * *

Венгри тăрăх çӳренĕ чух Чăваш ене аса илтерекен сăнарсем темĕн чухлех.

Пултăм эпĕ Кечкеметре, гербĕ çинче качака сăнарĕ. Мадьярла «кечке» – качака тени пулать.

Мадьярсен пур Эгервар, чăвашсен пур Йĕкĕрвар.

Мадьярсен пур Капошвар, Канаш енчи Чулкăмака ялĕ çывăхĕнче Кăрмăшвар текен вырăн пур.

Мадьярсем тивĕçлипех мухтанаççĕ Сегед ятлă хулапа, эпир вара мухтанатпăр Сăкăт ятлă ялпала.

Мадьярсен çĕршывне курса çӳренĕ чух Олмар витĕр тухрăмăр, Вăрмар сăмаха аса илтĕм, Сарвар ятлă хулана çитсен Саруй сăмах пуçран тухмарĕ.

Чăваша çывăх сăмахсем апат-çимĕçре те, выльăх-чĕрлĕх, ӳсентăран ячĕсенче те чылай. Апла эппин мадьярсемпе чăвашсем çывăх пулнă ĕлĕкех, пĕрне-пĕри лайăх пĕлнĕ пин çул ытла каяллах.

* * *

Венгри хĕрĕсем, каçарăр. Ирĕк парсамăр пĕр-ик сăмах калама.

Турри сире пурне те панă, ӳт-пӳрен те, сăн-питрен те чипер эсир. Ăс-тăнран та пит çивĕч. Ал ĕçне те пит ăста, çи-пуçран та тирпейлĕ. Ташă-юрă пуçлансан-и!

Кăмăлăрсем лайăх, юратăвăр хĕрӳллĕ. Сирĕнпе аван хăнана çӳреме, вăхăт ирттерме...

Арăм тума мĕнле-ши? Начар арăм пулас çук. Лайăхран та лайăх пултăр тесен, сире пирус туртас йăларан пăрăнма ыйтас килет. Ун чух вара хитре сăнăр та нумая пырĕ. Ун чух, чăнах та, сире çитес арăм тĕнчере урăх пулас çук.

Венгри хĕрĕсем, сăмахăмшăн каçарăр мана. Сире кӳрентерес тĕллевпе мар, ытлашши юратнăран каларăм.

* * *

Хĕрарăмăн хитрелĕхĕ ялан пĕр пек курăнмасть – хăш чух пачах чакса пырать, хăш чух йăлкăшса каять. Хĕрарăм пурнăçĕнче ун илемне пур енлĕ уçса паракан самант пур. Çавă – арăм ача çуратмалли çуртран пĕчĕкçĕ пепкепе киле пырса кĕнĕ кун.

Арăм питĕнче ун чух çиçет çепĕç илемлĕх, ăшă кăмăлпа,

мамăк евĕр çемçе алăпа тытать манăн телее, ман юрату тĕшшине, тин кун курнă ывăла.

Утти акăш ишнĕ пек, чĕлхи чĕкеç чĕлхи пек. Арăм вара, чăнах та, çĕнелсе тухнăн туйăнать. Çавăнпа та çак илемлĕ вăхăта тăтăшах курас килет.

* * *

Шухăшпа шурă пӳрт лартаймăн тенĕ ĕлĕк ваттисем. Çавна пулах-и ачасене мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхтарнă, наянпа харам пыра çын вырăнне шутламан.

Асаттесен пурнăçĕ ытларах хăйсем мĕнле ĕçленинчен килнĕ. Хальхи пурнăç йĕркисем ытларах пуçлăхсем мĕнле хушнинчен килеççĕ. Тĕлĕнетĕп вĕсенчен, шухăшпа тем те тума хатĕр, коммунизм çуртне мĕнле купаламаллине те вĕрентрĕç.

Анчах пурнăç теори мар, тĕнчери мĕнпур кĕнекесенче çырса кăтартнинчен те пин хут пуянрах.

Сăмах нумай вылятрăмăр, ĕçе пуç тавра лайăх шутласа, пурнăç çулĕ кăтартнă пек тума вĕренсе çитеймерĕмĕр.

Лайăх пурăнатпăр-ха тесе кăшкăрашрăмăр, ыррине курмарăмăр.

* * *

Туй тесен выртан каска та тăрса ларать теççĕ ваттисем.

Çамрăк тусăм, чиперккем, туй вăл пĕриншĕн – савăнăç, теприншĕн – куляну, саншăн вара...

Телей тилхепине туй вăхăтĕнчех ярса тытма тăрăш – пĕр тумлам эрех ан ĕç. Çак хыпар вара упăшкун тăванĕсем хушшинче çиçĕм пек хăвăрт сарăлĕ, юратнă мăшăрна хăй çине урăхларах пăхма хушĕ.

Туйра черкке ӳпĕнтерсе пани вара сан тусушăн: «Ĕçех, мĕн чухлĕ ĕçме пултаратăн, çавăн чухлĕ ĕç», – тенипе пĕр тан.

Телейлĕ пулас килсен, çамрăк мăшăр пурнăçне ӳсĕр пуçпа ан пуçлăр.

* * *

Юратăва малтан куç асăрхать, унтан тин чĕре туйса илет. Куç вăл, сунарçă йытти евĕр, чĕрене çул кăтартса пырать. Анчах ун пĕр çитменлĕх пур – вăл ялан выçă, суйлать те суйлать. Чĕре вара ăслăрах, куç суйланине пурне те йышăнмасть.

Куçăм ак суйларĕ çамрăккине, чиперрине. Чĕрем кăрт! тапса илчĕ те тăхта терĕ, куç хыççăн кайсассăн пуçна йывăр килмĕ-и терĕ.

Çапла вара пурăнатăп куçпа чĕре хушшинчи кĕрешӳпе хĕмленсе. Чармастăп вĕсене, хирĕçчĕр, çапăçчăр, савăнмалли те, макăрмалли те парнелеччĕр, анчах юрату кăварне сӳнме ан паччăр.

* * *

Вилес умĕн çынна пĕр вăхăтлăха вăй кĕрсе каять. Калаçма пуçлать, апат ыйтать.

Пĕри калать:

– Чĕрĕлет пуль-ха, апат çиме пуçласан кĕçех ав ура çине тăрĕ-ха, – тет.

Тепри вара чирлĕ çынна сăмахпа хавхалантарать, шанчăк пурри çинчен калаçать. Çутçанталăк вăрттăнлăхне пуртех чухлаймаççĕ.

Тĕлĕнмелле самант: ывăнса çитнĕ чĕре, юлашки вăйне пухса, çынна пурнăç çине тепĕр хут тимлĕнрех пăхса илме май туса парать.

Манăн ĕмĕтĕм пур. Юрăхсăр çĕрте ӳксе вилес марччĕ, тăван килтех, çемçе вырăн çинче выртсах уйрăласчĕ, юлашки çула выçă хырăмпа тухса каяс марччĕ.

* * *

Ман пĕлӳ, хама пур çĕрте те йĕркеллĕ, сăпайлă тытма тăрăшни никамах та кирлех мар иккен. Мана ăнланмаççĕ, ман çине темле урăх планетăран килнĕ çынна курнă пек пăхаççĕ.

Столовăйне кĕрсен хывăнма пикентĕм, çĕлĕке илмерĕç. Сĕтел хушшине ларсан, пиçнĕ-пиçмен какай таткине касса çиме çĕçĕ ыйтрăм, тĕлĕнсе пăхса илчĕç, салфетка ыйтсан вара – аптрасах ӳкрĕç.

Кану çуртне кайсан, табак туртман çынпа вырнаçтарма ыйтрăм, мана сивлерĕç.

Пуйăс çине ларсан, юнашар çынна сывлăх сунтăм, нимĕн те шарламарĕ. Кăштах вăхăт иртсен, купери икĕ çамрăк калаçнине илтсен, хăлхаран чукмарпа çапнă пек туйăнса кайрĕ.

Киревсĕр сăмахсемпе ан калаçăр-ха тесен, чарăнмарĕç, мана асăрхамарĕç.

Ăçта кайса кĕрес-ха? Тен, эрех ĕççе, киревсĕр сăмахсемпе вăрçса калаçма тытăнсан çăмăлрах пулмĕ-ши? Вулаканăм, мана мĕнле ăс парăн-ши?

* * *

Чĕлхе вăл шăмăсăр, ăс-тăн хушнине пурне те туса пырать, тепĕр чух тата чăн-чăн шухăша пытарма самаях пулăшать.

Çын кам пулнине пĕлес тесен, сăмахне мар, ĕçне пăхмалла тенĕ.

Хваттер е преми укçи пайланă чух халиччен сăваплă калаçакан çынсемех пачах урăхла курăна пуçлаççĕ. Халăх умĕнчи тивĕçĕ питĕ пысăк пулни çинчен хăйсемех каласа параççĕ, мухтанса илеççĕ, ыттисенчен чаплăрах пулнине асăрхаттараççĕ.

Çапла вара пухусенче калаçнă чух, докладсем тунă чух пирĕн умра пĕр çын, пурлăх пайланă чух – пачах урăххи.

* * *

Фома Корне акăлчан, Боливири Макаранже, тĕрĕс-тĕкел пурăннă икçĕр урлă каçиччен. Çынна вăрăм ĕмĕр панă, кĕскететпĕр хамăрах. Мĕн кăна тумастпăр-ши хавшатмашкăн сывлăха. Шурă шăлсем хураличчен, ӳпке тĕпне тикĕт лариччен халь туртатпăр пирусне. Пуç мими шĕвеличчен ав ĕçетпĕр эрехне. Юлашки вăхăтра тата тупăнчĕ ак тамаша – ăс-тăна минретекен наркăмăшлă имçамсем кĕскетеççĕ самаях çамрăк çынсен кунçулне.

Апла эппин çĕр çинче çынран айванни те çук, унран ухмаххи те çук. Хăй сывлăхне хирĕçле хăех хытă çапăçать. Маларах тăна илесчĕ, пурнăçа урăхларах пурăнса ирттересчĕ.

* * *

Ырă çынсем пулăшнипе ăслăлăх тĕнчи патне çывхартăн. Анчах картине кĕреймерĕн. Хăвна ырă тунине хаклама пĕлмерĕн. Сутăнчăка тухрăн. Пурнăçри ниме тăман тĕллевшĕн такампа ыталашма хатĕр, суя сăмах вылятма ăста. Хăш-пĕр чух тăван аннӳне те сутса яма хатĕр пуль эсĕ. Палкатăн, сăмах паратăн, анчах пĕр ĕçе те тĕплĕн туса çитерейместĕн.

Калаççĕ вĕт: тусу камне пĕлтерсен, хăв кам пулнине уççăнах калăп тесе.

Санран уйрӑлнишӗн, текех хам ҫумра, туссем хушшинче эсӗ ҫуккишӗн хытӑ савӑнатӑп.

* * *

Курманни нумай пулатчӗ те, эпӗ ыйтрӑм санран:

– Мӗнле пурӑнатӑн-ха?

Эсӗ каларӑн:

– Ҫул хӗрринчи ясмӑк пек, – терӗн.

Апла-тӑк пурнӑҫу чаплах мар сан. Пуҫна ҫӗклеме памаҫҫӗ. Кашни иртен-каян таптама пикенет. Ӑҫтан ыттисемпе пӗр тан пулӑн-ха ун пек чух.

– Алла усса ларас ҫук, кӗрешӗве тӑмалла, – эпӗ пикентӗм вӗрентме.

Эсӗ каларӑн хурланса:

– Пурте ҫапла каларӗҫ, хӑйсем пӑхса ҫеҫ тӑчӗҫ. Ҫав тӗллевсӗр кӗрешӳ ҫисе ячӗ ман вӑя, чи илемлӗ вӑхӑта. Халӑх умне тӑратмалӑх ырӑ ӗҫсем тӑваймарӑм.

Усал вӑйсем пӗр-пӗринпе хӑвӑрт пӗтӗҫеҫҫӗ иккен. Ыррисем пуҫ ҫӗкличчен киревсӗр ӗҫне туса та хураҫҫӗ.

Усал вӑйпа кӗрешнӗ чух хӑюллӑрах пуласчӗ, пӗчченшерӗн ӗҫлес марччӗ.

* * *

Ӑслӑлӑхра ҫулсем нумай. Мӗскер кӑна тӗпчемеҫҫӗ-ши нумай вӗреннӗ ҫынсем!

Пӗри ав ӗмӗр тӑршшӗпех сӑнать лӗпӗш е кӑткӑ пурнӑҫне. Тепри ав тимӗр-тӑмӑр тутӑхасран сӗрмелли шӗвек шырать. Мана вара канӑҫ памасть ҫын чӗри тутӑхма пуҫлани.

Пӗлесчӗ ман мӗншӗн ырӑ кӑмӑл чакса пынине, ушкӑнлӑх туйӑмӗ хавшанине, кӗвӗҫ чунлӑ ҫынсем ӑҫтан тупӑннине, чӑваш чӑваша мӗншӗн сутнине.

Тупасчӗ ман вӑйран чакнӑ амӑшне яла пӗр-пӗччен пӑрахса хӑваракан вӑйпитти ҫамрӑксене ӗҫтермелли эмел.

Курасчӗ ман пӗр килте ватти-вӗтти пӗр-пӗринпе шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса, килӗштерсе пурӑннине.

Ҫын чӗрине сӗрмелли эмеле мӗнрен тӑваҫҫӗ-ши: юратуран-ши, туслӑхран-ши е тӑванлӑхран?..

* * *

Чӗрем – эсӗ ман тарҫӑ, эпӗ – сан хуҫу; хӑвалама та пултаратӑп, чарма та, савӑнтарма та, пӑшӑрхантарма та. Эсӗ пурне те чӑтатӑн.

Пӗр утланса ларсан сан ҫинчен анас ҫук. Чӑтма пулнӑ – чӑт. Темӗн чухлӗ йывӑр чухне те – чӑт. Каҫар мана, хуҫу сан ытла канӑҫсӑр ҫын пулчӗ. Сан ҫинчен манса кайсах ыттисемшӗн ҫунса ҫӳрет, тӗрӗслӗхшӗн вӑй хурать. Ура хуракансем те пур, суя сӑмах саракансем те тӗл пулаҫҫӗ, анчах хӑй ҫулӗнчен пӑрӑнмасть.

Чӑт, чӗрем, чӑт...

* * *

Кам-ха эпӗ? Хам ҫине пӑхса илем-ха. Тем каласан та хальхи вӑхӑт ҫынни. Манра пурте пӗр ҫӗре чӑмӑртаннӑ, манра – этемлӗх шӑпи. Манра – иртнӗ ӑрусен вӑй-хӑвачӗ, ӑс-тӑнӗ, илемӗ. Манра – асаттесен ӗмӗчӗ. Вӗсем курманнине ман курмалла, вӗсем тӑвайманнине ман тумалла. Апла, тен, ман пӑртак вӗсемшӗн те пурӑнмалла? Мӗншӗн тесессӗн манра кӑштах вӗсем те пур.

Эпӗ пӗччен мар иккен.

* * *

Раҫҫейре йӑли ҫапла – савӑнӑҫшӑн та ӗҫеҫҫӗ, кулянушӑн та сыпаҫҫӗ. Пӗр шӗвекех икӗ тӗслӗн курӑнать. Пӗр енчен пӑхсан вӑл ҫутӑ, тепӗр енчен – хура. Миҫе ҫын ӑсталӑхне, миҫе ҫын телейне ҫисе ямарӗ пуль ҫак киревсӗр йӑла.

Ҫынсем ӗҫке ярӑннишӗн пуҫлӑхсен те айӑп пур. Пурнӑҫри кӑлтӑксене ҫынсем питех ан асӑрхаччӑр тесен, эрех нумайрах лартса памалла. Пухусенче тӗрӗс калаҫакансем, хаҫат-журналта уҫӑмлӑ ҫыракансем сахалтарах пулччӑр тесен, ушкӑнпа пухӑна-пухӑна черкке йӑтмалла. Ҫапла тума тӑрӑшрӗҫ.

Ҫак йӑласем чылайӑшне килӗшеҫҫӗ курӑнать. Ҫавна пулах урӑ пурнӑҫшӑн кӗрешесси халӗ те вӑй илеймест.

Ҫырмасемпе кӳлӗсенче шыв вырӑнне эрех пулсан ҫынсем мӗнле шӗвек шырӑччӗҫ-ши? Тен, ҫӑл шывӗ ӗҫсе пуҫа ҫӑмӑллӑх кӳнишӗн хытӑ савӑннӑ пулӗччӗҫ?

* * *

Вăхăчĕ çапла пулчĕ...

Пĕр çын ĕмĕрĕнче тăвата çын пурнăçне куртăмăр.

Сталин вăхăтĕнче ял çыннинчен юлашки çăкăр таткине туртса илнине, пĕртен-пĕр сурăхне тытса тухса кайнине, «çулпуçăмăр» çинчен юрласа лауреат пулнине куртăмăр.

Хрущев вăхăтĕнче кукуруза çинчен юрласа çӳрерĕмĕр, хресчене килти хуçалăхран, выльăх-чĕрлĕхрен, çĕр-аннерен сивĕтрĕмĕр.

Брежнев вăхăтĕнче ушкăнпа пухăна-пухăна черкке йăтрăмăр, упăшкисем арăмĕсене тава тивĕçлĕ ятсем панине, ашшĕсем ывăлĕсене орденсем çака-çака янине куртăмăр. Аталанса çитнĕ социализмра та пулса куртăмăр.

Çырантан çырана çапăна-çапăна пытăмăр, сулăнкăна кайрăмăр. Карапĕ темле çăлăнса юлчĕ, çапах тăвăла çĕнтерсе тухрĕ.

Паян эпир урăхла ĕмĕтпе пурăнатпăр. Çĕнетӳ тапхăрĕ çитнишĕн савăнатпăр. Чăн-чăн пурнăçпа пурăнса курасчĕ тесе вăй хуратпăр.

* * *

«Манпа» «пирĕн» туслă пулса пĕрне-пĕри пулăшса пыма пăрахрĕç, пăтрашăнса кайрĕç. «Эпĕ» тес чух – «эпир» теме пуçларăмăр, çакна «манăн» тумалла тес чух – «пирĕн» тумалла терĕмĕр.

Чи сиенли – пурлăх çине «пирĕн» тесе пăхни пулчĕ. Вăрăм алăллисем ним вăтанса тăмасăр патшалăх кĕсйине кĕре-кĕре кайрĕçĕ, ĕççынни вăйĕпе тунă пурлăха сăптăрмашкăн пуçларĕç.

Çавна пулах пурнăç шайĕ чакса пычĕ, халăх ĕмĕчĕ хуçăлчĕ. Çавна пулах паянхи харкашуллă тапхăршăн хурав тытма тивĕç çынсене тупма питĕ йывăр. Айăпне нихăшĕ те йышăнасшăн мар. Каллех «эпир» сăмахпа çăлăнса юласшăн.

Анчах юлĕç-ши? Çĕнетӳ хумĕ вĕсене çыран хĕрне кăларса ывăттăрччĕ.

* * *

Паян пурте ав куратпăр хамăра пурнăç панă çĕр-аннемĕр хăйĕн чăн-чăн хуçи çуккишĕн пăшăрханнине. Ăçта кайса кĕчĕç-ши çĕр сывланине чухлакан, çĕр пăшăлтатнине çивĕч илтекен

хресченсем? Пĕрисем хулана тухса тарчĕç, теприсем ĕçке ярăнчĕç.

Хăшĕсене хамăр пăсса ятăмăр. Пĕрмаях вĕрентсе калаçрăмăр, нумай пĕлнине кăтартма тăрăшрăмăр. Анчах тивĕçлĕ ăс параймарăмăр, ырăнсăр йĕркесем сĕне-сĕне ял çыннине çĕртен пăрса ятăмăр. Халĕ вара хресчен ĕçлеме те, шухăшлама та ӳркенсе çитрĕ, çĕре юратми пулчĕ.

Ытла та хăрушă япала иккен хăвшăн хăв шухăшлассине ытти çынсене шанса пани.

Çĕр ĕçченĕнчен хăйĕнчен вĕренсе пымаллаччĕ, вăл каланине ырăна хурса ял пурнăçне урăхларах çулпа ямаллаччĕ. Тен, ун чухне çĕр-аннемĕр макăрмĕччĕ, хулари вăрăм черетсем манăçăччĕç тахçанах.

* * *

Иртсе кайнă кунсемшĕн мĕншĕн макăрса ларас, паянхипе ыранхишĕн ытларах шутлас.

Пурнăç пĕр пек килмерĕ. Тем те куртăмăр кĕске вăхăтрах: ыррине те, усаллине те...

Ырри ытларах пуçлăхсене тивсе пычĕ, начарри – халăха. Анчах халăх пурпĕр аптрамасть, хăйне май пурăнать, шанчăка çухатмасть. Халăх вăл таса. Çитĕнӳсĕр, ӳсĕмсĕр вăхăтра та хăй чысне çухатмарĕ.

Хĕвелĕ паян çиçет урăхла, шевли ун çитет кашнинех. Çĕннишĕн савăнса алă çĕклекенни пулать чăн ĕççынни. Ăна пулăшасчĕ, пултарулăхĕпе лайăхрах усă курса сулăмлă утăмсем тăвасчĕ. Çĕнетӳ вăхăтне шанмасăр калаçакансене, кивĕлле ĕçлекен пуçлăхсене тăрă шыв çине кăларасчĕ.

* * *

Чунăм асапланать, сулăнчăкран сулăнчăка ывтăнать, хирĕçтăру канăç памасть.

Идеал ырăнне шутланă сăнарсем паян арканаççĕ, текех ăшă памаççĕ. Анчах темшĕн чуна-юна кĕрсе ларнă ĕненӳрен уйрăлас килмест. Шаннă эпир, ытла çирĕп шаннă. Тен, çакă пулнă та ĕнтĕ пирĕн айванлăх.

Иртнĕ тапхăрти пуçлăхсен киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларни унччен хи шухăшсене савăл пек çурса пырать. Тепĕр чух тата пĕтĕмпех çуртарас та килмест пек. Кивĕ сăнарсен вăйĕ хăвăртах чакмасть, ман чуна хăй ытамĕнчен вĕçертмест. Тыткăнрах-ха эпĕ.

Кивви начар пулни çĕннинчен те хăратать иккен. Кайран каллех кулянмалли сиксе ан тухтăрччĕ тесе шухăшлаттарать.

* * *

Пур çĕрте те виçе кирлĕ.

Виçерен иртсе кайсан тем пек ырă япала та хăйне хăй хирĕçлеме пуçлать. Çитменнине – çитерĕр, ытлашшине – каçарăр тенĕ ĕлĕк халăхра.

Ваттисен хутне кĕрсе патшалăх çĕнĕ йĕркесем туса пачĕ. Чылайăшĕ çакна хĕпĕртесе йышăнчĕ. Çук, эпĕ савăнмарăм, тĕлĕнтĕм кăна.

Ветерансем пенси хучĕ кăтартса черетсĕр япала илни пачах та хавхалантармасть. Çакна курсан хама çупса янă пекех туятăп.

Ăçта кайса кĕчĕç-ши ĕлĕкхи ырă йăласем?!

Ватă çын – тăватă çын тенĕ, ăна хисепленĕ. Çĕнĕ тырăран çăкăр пĕçерсен чи малтан ваттине астивтернĕ, сăра пички пуçласан – малтан ăна ĕçтернĕ, сĕтел хушшине ларма чи малтан ăна чĕннĕ...

Туя тытнă ватă çын пенси кĕнекипе сулкалашса аван тавар шыранишĕн пит савăнмах кирлĕ мар. Ку вăл – намăс япала кăна. Тĕрĕссипе каласан, хальхи çамрăк ăрура çынлăх чакса пынине пĕлтерекен тĕслĕх çеç.

* * *

Куллен вăй хурса ĕçлеме хăнăхман çынсем хăйсене ытлашши ăслăн тыткалама пуçлаççĕ, ыттисене вĕрентме пикенеççĕ. Тепĕр чухне çавсемех пуçлăх пулса тăраççĕ. Анчах сухине пурпĕрех тарăн ярайманçĕ, çиелтен кăна шăйăрттарса пыраççĕ.

Çавăн йышши çынсем нумайланса кайсан пурнăçра пысăк йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ. Чăтаканĕ вара – халăх. Чыспа хисеп ĕçе тĕплĕ тăвакан ăстасенчен пăрăнма пуçлать. Пурлăх пайлакансемпе карма çăварсем мала ӳкеççĕ. Ĕççыннине ĕçлеме чăрмантаракансен, айккинче кашăк тытса тăракансен шучĕ хăçан чакĕ-ши?

* * *

Пӗлесчӗ ман: чӑн-чӑн пурнӑç мӗнле-ши?

Тӑраниччен çисе курман çыншӑн хура çӑкӑр чӗлли те, талонпа илнӗ сахӑр та савӑнӑç; çӗтӗк çыншӑн чӑлӑш-чалӑш çӗвӗллӗ кӗпе те савӑнӑç; килсӗр çыншӑн вӗт хӑмаран çапса тунӑ пӳрт те савӑнӑç; хӑй аллипе пахчаçимӗç туса илеймен ял çыннишӗн хуларан михӗпе йӑтса килнӗ купӑста та савӑнӑç; кану вӑхӑтне йӗркелеме пӗлмен çыншӑн ӳсӗр пуçпа кӑшкӑрашса çӳрени те савӑнӑç; театра сайра çӳрекен çыншӑн «Праски инке хӗр парать» спектакле курни те савӑнӑç...

Пурӑнатпӑр çапла пурнӑçӑн аялти виçипе çырлахса, аванах пурӑнатпӑр-ха тесе чуна лӑплантарса, хамӑра хамӑр улталаса.

* * *

«Кану кунӗ», «отпуск» тени маншӑн ниме те пӗлтермест. Яланах ӗçпе те ӗçре эпӗ. Тинӗс хӗрринче хӗртӗнсе выртнӑ чухне те чӑтӑмлӑх нумая пымасть. Пӗр çур сехет пек иртсен, алла каллех хутпа кӑранташ тытатӑп.

Вара веçех манӑçать: тинӗс те, хӗвел те, çынсем калаçни те... Маншӑн пуçланать чи асамлӑ вӑхӑт. Эпӗ хам шухӑшӑмсемпе пӗр-пӗччен тӑрса юлатӑп. Килӗшетӗп, тавлашатӑп, вӗсемпе пӗрле хӗн куратӑп.

Сасартӑк сывлӑх сунни илтӗнсе кайрӗ. Пӑхатӑп та, ман умра çутӑ сӑнлӑ, кӑвак çӳçлӗ, тӗреклӗ арçын тӑра парать.

– Эсир кам пулатӑр? – ыйтрӑм эпӗ унран.

– Хельмут Кортман, Гамбургран, – терӗ аллине парса.

Паллашрӑмӑр, калаçрӑмӑр, вӑл кӑштах вырӑсла пӗлет, эпӗ – нимӗçле. Ют чӗлхепе калаçнӑ май хама вӗрентнӗ учительсене аса илтӗм, самай çирӗп пӗлӳ панӑшӑн ӑшӑмра тав турӑм.

* * *

Тӗнче курса чылай çӳрерӗм. Эпӗ пултӑм таçти çӗршывра та. Хама тытма тӑрӑшрӑм тивӗçлипе. Пуçа усса, мӗскӗнленсе тӑмарӑм. Пӗтӗмӗшле каласан, чӑваш ятне çӗртмерӗм пуль тетӗп.

Ют çӗршыв çынни манпа калаççан, тӑван халӑх ӑс-тӑнӗ пирки те чухласа илет пуль терӗм. Эпӗ юрланине илтсен, чӑваш чунне туйса илет пуль терӗм. Манӑн ташшӑма курсан, ман сӑввӑма итлесен...

Çапла вара унта-кунта тухса çӳренӗ чух кашниех тӑван халӑхӑн пӗчӗк тӗкӗрӗ пулса тӑрать.

* * *

Урхалӑха çыхма пӗлмесен, лашана йывӑр килет. Мӗн тӑвас тен, лаша мӗскӗн, янавар, вӑл нимӗн те шарламасть.

Çапла вара тепӗр чух эпӗ те хама сӳсмен тивнӗ лаша пек туйма пуçлатӑп. Лавӗ çине тиеççӗ те тиеççӗ, кӑкӑр юнланнине шута илмеççӗ, ман сӑмаха итлемеççӗ.

Çитменнине тата мана пурте вӗрентме тӑрӑшаççӗ: ун пек ан ту, çаплах пул, апла ан кала теççӗ. Анчах пӗрне ӑнланмаççӗ – манран текех урӑхла çын тума çук ӗнтӗ. Мӗн пуласси пурте пулса çитнӗ: ыррипе усалли те, лайӑххипе япӑххи те – халӗ пурте хам çумра.

Эсир ытларах манри ырӑ енсене асӑрхама тӑрӑшӑр. Япӑх енсем усал та кӗвӗç çынсем валли юлччӑр.

Лавне тиессе тийӗр, анчах урхалӑхне тӗрӗс çыхма ан манӑр, ман кӑкӑра ытлашши ан ыраттарӑр.

* * *

Эгер пединститутӗнче ӑслӑлӑх çыннисем чылайӑн пуçтарӑннӑ. Нимӗççем, поляксем, чехсем, словаксем, венгрсем, вырӑссем, чӑвашсем çавра сӗтел хушшине ларнӑ. Вӗсен пурин те пӗр тӗллев – çамрӑк ӑрӑва лайӑх пӗхса çитӗнтерсе çирӗп çунат парасси.

Тӑхтав вӑхӑтӗнче нимӗççемпе паллашрӑм. Эпӗ Шупашкартан килнине пӗлсен, паллӑ чӑваш Геннадий Волков çинчен ыйтса пӗлчӗç, салам калама хушрӗç.

Ырӑ ят хӑварнӑ иккен ентешӗмӗр Эрфуртра.

Çав хушӑра мана асанне сӑмахӗ аса килчӗ. Вӑл калатчӗ: килтен тухсан – аçу ятне ярас мар, ялтан тухсан – ял ятне ярас мар, чӑвашран тухсан – чӑваш ятне ярас мар тетчӗ.

Хам çине тепӗр хут пӑхса илтӗм, ваттисен сӑмахне яланах пурнӑçа кӗртсе пыма тупа турӑм.

* * *

Вӗр-çӗнӗ «Икаруспа» вӗçтеретпӗр Мишкольца. Эгертан унта çитме каймалла-ха самаях. Çулӗ инçе пулсан та, вӑхӑт иртни сисӗнмест. Вӑрӑм çула кӗскетме пире юрӑ пулӑшать.

Янош Иванич проректор пулса тӑчӗ дирижер, ӗнтӗ юрӑ

пуçарать. Ик-виç çаврăм шăратсан сăмах пачĕç хăнасене. Ак юрларĕç нимĕçсем, поляксем, чехсемпе словаксем. Эпир юрланă чухне пире пурте пулăшрĕç. Мĕншĕн тесен Европăра «Катюшăна» пĕлмен çын та çук пуль.

Унтан каллех венгрсем. Ытла ăста-çке вĕсем ушкăнпала юрлама, сăмахĕсене те вĕçне çити пĕлеççĕ. Çитес вырăна çитсе килнĕ çĕре аллă юрă юрларĕç. Пурте халăх юррисем. Тен, татах та юрланă пулĕччĕç, анчах çулĕ вĕçленчĕ.

Эгер студенчĕсем вара чăннипех те телейлĕ çамрăксем. Пĕр вĕçĕмрен юрă юрлакан профессорсем япăх çынсем пулас çук.

Эпĕ шутларăм: чăвашла аллă юрă юрласа пама пултаракан профессор Шупашкарта пур-ши?

* * *

Мадьярсен ĕç йĕрки те, пурнăç йĕрки те, тирпейлĕхпе илемлĕх те пирĕннинчен урăхларах.

Уя тухсан чун савăнать, унта çумкурăк тупаймăн. Çĕре кунта юратаççĕ, ăна хӳтĕлеççĕ, уй тăрăх ятарласа тунă çулсемпе кăна çӳреççĕ.

Кашни яла, кашни киле асфальт сарнă çул пырать. Çуртсем кунта пурте чулран, пӳртсем икĕ хутлă. Выльăх-чĕрлĕх хисепре, уйрăм вырăнта тăрать. Пур çĕрте те тасалăхпа тирпейлĕх, унта-кунта выртса çӳремест пĕр кирпĕч катăкĕ те, турпас та.

Кашни кил илем ăшне путнă – улма йывăççи, иçĕм çырли, груша, слива ешерет. Пĕр çĕр татки те ахаль выртмасть: пахчаçимĕç е чечек ӳсет.

Çăкăр-тăвар тĕлĕшĕнчен мадьярсен сĕтелĕ чăннипех те пит пуян.

Мĕнле ĕçлеççĕ – çапла пурăнаççĕ.

* * *

Мадьярсем мухтава тивĕç çынсем. Ма тесессĕн вĕсем тем пек çил-тăвăллă, аслатиллĕ вăхăтра та чысне çухатман, тăван чĕлхерен, тăван юрăран пăрăнман. Çĕршыва хапсăнакан çăхансене хирĕç тăма хĕçĕ яланах çивĕч пулнă.

Мадьярсем хисепе тивĕç çынсем. Ма тесессĕн вĕсем хăйсен ачисене мĕн пĕчĕкрен тăван халăха, тăван çĕршыва, тăван яла юратма, ытти халăхсемпе туслă пулма вĕрентсе ӳстереççĕ.

Мадьярсем хăйсен историне лайăх пĕлеççĕ, пысăка хурса хакласççĕ, унпа тивĕçлипе мухтанаççĕ. Ырă ĕçпе чапа тухнă

çынсене пурне те асра тытаççĕ, истори палăкĕсене чыслаççĕ, чечекпе илемлетме манмаççĕ.

Мадьярсем – чăн-чăн патриотсем, тĕслĕх вырăнне хума тивĕç çынсем.

* * *

Пуриншĕн те хаклă иккен Хура тинĕс çыранĕ. Ăçтан кăна килмен пуль туристсем Албенăна! Çутçанталăк вара юмахри пекех хитре.

Пур çĕрте те тирпейлĕх, йĕркелĕх. Пĕлеççĕ пирĕн туссем хăнасене кăмăл тума. Каç еннелле сулăнсан пуçлаççĕ кăтартма пăлхар юрри-ташшине. Албенăра канакансем ун чух путаççĕ илем ăшне.

Мĕн тери ырă йăласем упранса юлнă пăлхарсен. Пĕлеççĕ вĕсем хаклама историпе ăсталăха...

Музыкантсем тытăнчĕç каламашкăн ташă кĕвви. Юнашарах ав выртать тикĕс сарса хунă шĕл-кăвар. Виçĕ арçын çара уран пуçларĕç ташă ташлама. Кăвар çине кĕрсе кайса тĕлĕнтереççĕ халăха.

Сасартăк курса тăракансен хушшинчен сиксе тухрĕ пĕр арçын, пуçларĕ ташлама кăвар çинче çарран. Тĕлĕнсе кайнă пăлхарсем пăхса тăраççĕ кăн та кан. Ним тума аптранипе ура! çĕклерĕç çак çынна.

– Ăçтан вара эсир? – тесе ыйтрĕç унран.

– Эп Шупашкартан, – пулчĕ хурав.

– Апла эппин, эсир Атăл тăрăхĕнчи Пăлхартан, – мухтаса илчĕç хăнана.

* * *

Албена каçĕ ăшă та лăпкă. Туристсене ярăнмашкăн уйăрса панă чĕнтĕрленĕ кӳмесем аса илтереççĕ Пушкин вăхăтне. Хурçă таканлă лашисем хĕм сирпĕтсе чупаççĕ.

Ак çитрĕм тинĕс хĕррине, такан сасси кăштах лăпланчĕ. Хум хыççăн хум ăмăртса чупнине пăхса тăратăп киленсе.

Кĕтмен çĕртен хăлхана пырса кĕчĕ чăваш юрри.

Пиç-пиç палан, пиç, палан,
Сана пиçме лартнă вĕт, –

шăратать йĕс шăнкăрав пек сасă.

Пирĕн çакăнта тăвансем пур,
Килсе кайма майĕ пур, –

тенĕ чух ушкăнпа юрласа ячĕç.

Чăтса тăраймарăм. «Хумсем, атьăр манпа пĕрле юрă итлеме», – терĕм те çыран хĕррипе васкаса уттартăм, инçетрен вĕçсе çитнĕ кĕвве ĕнĕрме пуçларăм, чăтаймасăр тулли сасăпах юрласа ятăм.

* * *

Мускавра пырать Олимпиада. Кашни пĕлесшĕн çĕннине. Албенăри хăна çуртĕнче те çавах. Каç еннелле сулăнсан васкатпăр телевизор патнелле.

Спортра, паллах, шанчăк пысăк чи вăйлисен, чи ăстисен. Савăнмалли е пăшăрханмалли тупăнать кунта кашнин валли. Паттăрсене чыс тунă чух ытларах янăрать ман çĕршывăн мăнаçлă гимнĕ.

Тĕлĕнтерчĕç тĕнчене пăлхартан пынă улăпсем. Çитĕнӳсем чылай пысăк пирĕнпе туслă нимĕçсен.

Анчах ларать ним шарламасăр Гамбургран пынă Хельмут Кортман. Пĕлесчĕ ман, мĕнле тытăçу пырать-ши ун пуçĕнче? Хăйĕн ентешĕсем Олимпиадăра çуккишĕн кама та пулин айăплать-и-мĕн?

Çук, сăмах чĕнмест, алă çупмасть, ларать вăл тарăн шухăша путса.

* * *

Гизела Кортман, нимĕç хĕрарăмĕ, упăшкинчен чылай çамрăк. Йĕрки çапла иккен вĕсен. Мăшăр тума унта суйлаççĕ ура çинче çирĕп тăракан шанчăклă арçынсене.

Ĕçлет вăл Гамбургри пĕр уйрăм хуçа шкулĕнче ташăпа ритмика учителĕ пулса. Ӳт-пӳ енчен пит кĕрнеклĕ, миçе çула çитнине пĕлме те çăмăл мар. Туслашрĕ манăн арăмпа, пĕрле çӳрерĕç кăмăлпах.

Нимĕç хĕрарăмĕ пирки каламалли сахал мар. Тасалăхпа тирпейлĕхе хурать вăл чи пысăк вырăна. Ют çĕршыва кайнă чухне мĕн кирлине пурне те илет хăйпе пĕрле. Чи нумаййи – тăхăнмалли. Çанталăк сивĕтет-и, çумăр çăвать-и – вĕсен пурте хатĕр. Ытларах килĕштереççĕ çутă тĕслĕ тумтире. Шултра та тĕксĕм чечекпе илемлетнĕ пусмаран çĕленĕ кĕпесем вĕсен пачах та çук.

Хăйăр çине сарса выртмалли, ӳте массаж тумалли, кофе вĕретсе ĕçмелли хатĕрсене, термосне, сывлăш тултарса шывра ишмелли тӳшекне, тĕрлĕ вăйăсенче кирлĕ япаласене, кĕнекисене, мечĕкне, биноклĕне – пурне те хăйпе пĕрле илсе пынă.

Кашни нимĕç хĕрарăмĕ Албенăна икшер, виçшер чăматанпа пырса çитет.

Апла пулсан вĕсем япала шырама мар, çуллахи шăрăх кунсенче лавккасем тăрăх тĕрткелешсе çӳреме мар, чăннипех канма, сывлăхне çирĕплетме пыраççĕ.

* * *

Паян мана иртенпех канăç памасть Бетховен çырнă кĕвĕ. Вулама тытăнсан та, çынсемпе калаçса илсен те, тинĕс хĕррине пырса тăрсан та çав кĕвĕ пурпĕрех пуçран тухма пĕлмест, каллех çаврăна-çаврăна килет, чунăма ыталать.

Ун пек самантсем пулаççĕ час-часах. Пĕртен-пĕр çăлăнăç кунта – рояль каласа ăша пусарни. Пĕрле чĕнтĕм хĕрĕме, васкарăмăр музыка салонне.

Малтан, паллах, янрарĕ Бетховен кĕвви. Унтан эпĕ ыйтрăм хĕрĕмрен каласа памашкăн Моцарт çеммине.

Сасартăк пĕр харăс алă çупса ячĕç. Ытти çынсем те итлесе тăнă иккен.

– Ăçтан-ха эсĕ, пĕчĕкçĕ музыкант? – ыйтать пĕри ют чĕлхепе.

Хĕрĕм кăштах аптраса тăнă хыççăн:

– Шупашкартан эпĕ, – терĕ акăлчанла.

Рояль патне унта хам пытăм, каласа патăм чăваш кĕввине. Кĕçех ак арăм пырса çитрĕ, юрласа пачĕ чăвашла. Хĕпĕртесе ӳкнĕ Хельмут Кортман чупса пычĕ чечек çыххипе.

Хăватлă иккен музыка вăйĕ, çĕклет чуна, çĕклет çынна, пĕрне-пĕри ăнланма та пулăшать вăл самаях.

* * *

Çын калаçмасăр чăтаймасть. Чĕлхе енчен йывăрлăхсем пур чухне те пурпĕрех пуплешсе чуна пусарас килет.

Ак паян пуçланчĕ калаçу нимĕçсен тĕнчипе паллă ывăлĕсем çинчен.

Шиллер, Шеллинг, Бах, Бетховен, Кантпа Гегель, Гете, Гейне, Маркспа Энгельс – каласа та пĕтерес çук. Нимĕçсем чăннипех те мухтава тивĕç.

Эпĕ каласа патăм Хельмута Наум Урхи пирки, вăл ăста тăлмач пулса Гете çырнă «Фауста» нимĕçлерен тӳрех чăвашла куçарни çинчен.

Аса илтĕмĕр Николаева, Яковлевпа Ульянова. Çав хушăра кĕтмен çĕртен эпĕ илтрĕм Хельмут ыйтăвне:

– Ленина чăваш теççĕ, тĕрĕсех-и çак сăмах?

Тĕлĕннипе ним калама аптраса тăтăм. Кăштах тавçăрса илсен çапла сăмах хушрăм:

– Ленин вăл чăваш та, вырăс та, калмăк та, нимĕç те... Ăна кашни халăх хăй ывăлĕ тесе шутлать.

Нимĕç çыннипе иртнĕ вăрçă пирки калаçмасăр мĕнле чун чăттăр-ха. Анчах сăмах нумая пымарĕ.

– Ырă çыннăм, çав хăрушă вăхăта, тархасшăн, аса ан илтер-ха. Каллех чĕрем ырата пуçлĕ. Тĕнче пуçлăхĕ пулас тĕллевпе чирлесе ӳкнĕ пуçтах фюрер пĕтĕм халăха намăс кăтартрĕ, – тесе хучĕ ман юлташăм.

– Юрĕ эппин, ăслă çынсем çинчен калаçнă чух çав лайăххăн кĕнеке вулама вĕренсе çитеймен маньяк пирки сăмах тапратса çăвар пылакне сая ярар мар, – терĕм те чĕлхеме чартăм.

Калаçу вĕçленчĕ. Анчах шухăшăм вĕçленмерĕ, чунăм лăпланмарĕ.

* * *

Çакă çутă тĕнчере асăрхама пĕлекеншĕн тĕлĕнмелли темĕн чухлĕ.

Пĕри калать: çĕр çинчи пурнăç вăл хăех пысăк тĕлĕнтермĕш тет. Килĕшетĕп. Тарăн шухăша яраканни, çĕкленӳллĕ туйăмсем çуратаканни кунта чăнах та нумай.

Тепри калать: чи пысăк тĕлĕнтермĕш – турă тет. Хирĕçлеместĕп. Турă тенине илтсен хам та тĕлĕнетĕп. Пĕлесчĕ ман, турри ăçта ларать-ши, мĕн туса пурăнать-ши? Мĕншĕн кунсерен выçăпа аптракан пин-пин çынна пулăшу памасть-ши, кăштах та пулин чухăнсен хутне кĕмест-ши, çын вĕлерекенсене пăчăртаса лартмасть-ши, халăх юнне ĕмсе пурăнакан сĕмсĕр çынсене тытамаклă туса хумасть-ши? Таса чунлă çын хутне кĕмен турă пире питех кирлĕ-ши?

Турра çын çуратнă, унтан вăлах турă чури пулса тăнă.

Çынран пысăк тĕлĕнтермĕш тĕнчере урăх нимĕн те çук. Пуççавăрмăшĕ çавах. Ун çумĕнче пурте пур – ырри те, усалли те, вăйли те, начарри те...

Çын ытларах хăйне юрататъ, пĕтĕм чĕрчуна пăхăнтарать. Юханшыва пӳлсе лартса ирĕккĕн ишсе çӳрекен кайăксемпе пулăсене чăрмав туса хурать. Чĕп тытакан хурчкана ылханать, кашкăра курсан алла пăшал ярса тытать, тарса ĕлкĕрнĕ мулкача юнаса илет.

Пĕлесчĕ ман, мĕн шутлаççĕ-ши мулкачсемпе хурчкасем,

кашкăрсемпе упасем? Тен, вĕсемшĕн çĕр çинче çынсем хăйсем ытлашши?

Чи киревсĕрри вара – çынна çын чури туни. Хăрушă иккен çын тени. Унтан тем те кĕтме пулать – ыррине те, япăххине те. Вăл турă та, усал та.

* * *

Сталин вилсен пирĕн килте макăракан тупăнмарĕ. Анне те, асанне те, асатте те куççуль кăлармарĕç. Мĕншĕн çапла пулнине ӳссе çитсен тин тавçăрса илтĕм.

Тарçă шучĕпе пурăннă ял çынни унчченех макăрса ывăннă иккен. Хăй пуççапса пурăннă пуçлăхне юлашки çула ăсатмалăх ун куççулĕ те юлман.

Макăракансем вĕсем ытларах хулара пулнă. Сталин вĕсемшĕн чăннипех те телей кӳрекен çын шутланнă. Хваттертен те, апат-çимĕçрен те, укçа-тенкĕрен те хула ялтан лайăхрах пурăннă. Çав ырлăхăн пĕр енĕ савăнăçпа çиçсе тăнă, тепĕр енĕ хресчен тарĕпе куççулĕ йĕпетсе тăнăран тутăхса пынă.

Халĕ вара Сталин вилни чылай пулсан та çав тутăх пĕтĕм халăх телейне кăшлать. Çакна чарас вăй пур-ши? Пур пулсан, мĕншĕн пурнăç кал-кал каймасть-ши?

* * *

Кĕркунне... Çу каçипе тимлесе, çине тăрса ĕçленĕ хыççăн çутçанталăк канма хатĕрленет. Кайăксен сассинче темле тунсăх пур пек. Хурт-кăпшанкă та пытанса пĕтнĕ.

Çын чĕринче кăна кану çук. Пурнăç яланхи пекех вĕресе тăрать. Унта-кунта туй юрри, уяв хыççăн уяв. Кĕр мăнтăрĕпе çын савăнăçĕ те туллинрех курăна пуçлать.

Савăнмалли вара тупăнсах тăрать... Пĕтĕм чăваш паян чыслать Тамара Чумаковăна çуралнă кун ячĕпе. Кам пĕлмест пуль çак паллă юрăçа!

Чечексем, парнесем, ăшă сăмахсем...

Акă халăх умне тухрĕ юбиляр. Хăлхана ачашлама пуçларĕ ун çепĕç сасси. Чăваш юрри, вырăс юрри, романссемпе арисем çупăрлаççĕ чунăма.

Мĕн тери хăватлă иккен вăл тухату вăйĕ! Эпĕ те акă пĕтĕмпе юрăç аллинче. Вăл ман туйăм хуçи. Савăнăçăм та, тунсăхăм та, юратăвăм та ун юрринчен килет...

Ак тамаша, юрăçă «Чио-Чио-сан» оперăри сыпăка юрлама пуçласан, сцена çине лĕпĕш вĕçсе тухрĕ. «Черченкĕ лĕпĕшĕм»

тесе юрланӑ самантра лӗпӗш Тамара Ивановна тавра вӗҫсе ҫаврӑнчӗ те ун кӑкри ҫине пырса ларчӗ.

Чӑн-чӑн тӗлӗнтермӗш мар-и ку! Епле-ха шӑпах «черченкӗ лӗпӗшӗм» тенӗ самантра юрӑҫ чӗри патне ларса ҫунаттине вылятса илчӗ?

Ӑсталӑх ҫыннисем, эсир пӗччен мар иккен. Туссем сирӗн нумай. Канма хатӗрленнӗ ҫутҫанталӑк та тепӗр хут вӑранса сире пулӑшма васкать. Ҫын илемӗпе ҫутҫанталӑк илемӗ пӗрне-пӗри пулӑшса пыраҫҫӗ. Ҫавна эпир хамӑр куҫпах куртӑмӑр. Ҫав туслӑх ӗмӗрлӗхех пытӑрччӗ, пире савӑнӑҫ кӳрсех тӑтӑрччӗ.

* * *

Иртнӗ ӗмӗр вӗҫӗнче Раҫҫейре пӗр вӑхӑтрах икӗ патша пулнӑ. Пӗри хӑй тронне хӗҫпе, пӑшалпа тытса тӑнӑ, тепри – ӑс-тӑн вӑйӗпе, ӑсталӑхпа. Пӗрремӗшӗн ятне ҫынсем маннӑ та ӗнтӗ, иккӗмӗшӗ паян та халӑх асӗнче. Ҫав ҫын вӑл – Лев Толстой.

Мӗнле шухӑшсем пуҫа пырса кӗмеҫҫӗ пуль ун вилтӑпри умӗнче тӑнӑ чухне! Мӗншӗн-ха ун тупӑкӗ масар ҫинче мар, вӑрманти пӗчӗк уҫланкӑра выртать? Мӗншӗн-ха кунта нимле палӑк та, хӗрес те ҫук? Мӗншӗн-ха вӑл хӑйне пупсӑр, турӑ юррисӗр пытарма хушса хӑварнӑ? Ыйтусем, ыйтусем...

Толстой утнӑ сукмаксемпе кун каҫа ҫӳрерӗм, вӑл лартнӑ пахчари улмана та ҫисе куртӑм.

Толстой шкулне кӗрсе курсан ман ума Яковлев сӑнарӗ тухса тӑчӗ. Пӗрьевӗрлӗхсем чылай иккен вӗсен – хресчен ачисемшӗн тӑрӑшнӑ, вӗсем валли калавсем ҫырнӑ, букварь кӑларнӑ, шкулсем уҫнӑ, учительте ӗҫленӗ... Иккӗшӗ те сакӑрвун икке ҫити пурӑннӑ, хӑй халӑхӗн аслӑ вӗрентекенӗ пулнӑ. Ахальтен мар иккӗшне те хура халӑх хисепленӗ, юратнӑ. Сумлӑхӗпе чапӗ вӗсен вӑхӑт иртнӗҫемӗн татах ӳссе пырать.

Ахальтен каламан ҫав пысӑк виҫеллӗ япала инҫетрен лайӑххрах курӑнать тесе.

* * *

Тунсӑх тӗлӗк, ӑслӑ тӗлӗк, сана курсан канӑҫа эп ҫухатрӑм...

Ирех килтӗм паян тӗп хуламӑра, Атӑл хӗрне ҫитес терӗм ҫуранах... Акӑ ума сиксе тухрӗ Чапаев, хӗҫҫин вӗҫӗ вылять хӗвелпе, таҫтаях ҫити чапӗ кайрӗ, пӗлмен ҫын та ҫук пуль ун ятне. Куҫ илмесӗр киленсе кунта тӑтӑм, ытла паха тунӑ-ҫке ун палӑкне.

Эп уттартăм хуллен малалла. Николаев тухать ман ума. Чылайччен унпала юмахларăм, сăмахпа чĕреме пусарса.

– Гагарин патне çитсен ан ман, – терĕ, – салам калама.

Утатăп каллех малалла, ав куратăп ват Яковлева. Вăл ларать шухăша кайса, аллинче – кĕнеке. Анчах çук юнашар ачасем, ун витĕмлĕ сăмахне чĕре патне илекенсем. Тунсăх мар-ши асаттемĕре пĕр-пĕччен? Парас терĕм ăна эп чечек. Çук. Илмерĕ. Çилленчĕ курăнать лартайманшăн чăн-чăн лайăх палăк...

Тунсăх тĕлĕк, ăслă тĕлĕк, мĕншĕн мана канăç памастăн?

* * *

Ăсталăх вăл министрсем хушнипе пулмасть. Ăна пултаруллă та пысăк туйăмлă çынсем тăваççĕ.

Ăсталăх вăл укçа çинчен шутланипе çеç пулмасть. Ăна хăйне канăç паман шухăша чĕре вучахĕнче шăратса витĕмлĕ сăнар çуратакансем парнелеççĕ пире.

Ăсталăх вăл ниçта тухса çӳремесĕр, сĕтел хушшинче кăштăртатса ларнипе çеç пулмасть. Ăсталăх вăл – ырми-канми ĕç, çамка тăрăх шăпăртатса юхакан тар, халăхăмăрпа куллен алла-аллăн утни, Тăван çĕршыв шăпишĕн çунни, уншăн кĕрешни.

Ăсталăх вăл – çутçанталăк парни.

* * *

Акатуйĕнче янрать çĕкленӳллĕ юрă. Кам чĕринчен шăранса тухнă-ши çак илĕртӳллĕ кĕвĕ? Мĕншĕн вăл пирĕнтен кашнинех эпир хăш халăх ывăлĕ е хĕрĕ пулнине тепĕр хут аса илме хистет-ши?

Апла пулсан унта чăвашлăх хевти вутланса-тăвăлланса тăрать, апла пулсан ку юрра халăхран çав хевтене илнĕ, чун вăйĕпе çав хевте ăрăмлăхне пăхăнтарнă патвар çын çырнă.

Апла пулсан унта чăвашлăх пысăк, апла пулсан çав юрра халăхран тухнă, халăхран вĕренсе пынă ырă çын çырнă.

Тавтапуç сана, чăваш шăпчăкĕ, пире çавăн пек илемлĕ юрăсем парнеленĕшĕн. Мухтав сана, халăх юрăçи Григорий Хирбю, таса юратăва, çутă ĕмĕте, чыспа çынлăха шантарса юрланăшăн. Эсĕ пирĕнтен уйрăлса кайрăн, сассу вара кашни кунах янăрать.

Хирбю юрри – чăваш юрри. Хирбю сасси – чăваш сасси.

* * *

Филармони залĕнче улма ӳкме вырăн çук. Хирбю пултарулăхне сума сăвакансем пуçтараннă кунта паян.

Сцена çинче – хорпа оркестр. Акă чуна çепĕç юрă ыталарĕ. Аякран килнĕ хăнасем лараççĕ тимлĕн итлесе, Хирбю сумлăхне сума суса. Чăваш шăпчăкĕн ятне ун чух эп курнăччĕ преми пама тăратнисем хушшинче.

Сасартăк... Çутă лăпах сӳнчĕ, шăпланчĕ сцена, юрă татăлчĕ.

Нӳхрепри пек тĕттĕмре ларатпăр ним тума пĕлмесĕр.

Кăштах та пулин çăмăллăх пулмĕ-ши тесе эп тытрăм композитор аллине. Эх, тĕнче! Мĕнле чăтать-ши Хирбю чĕри, ниçта кайса кĕрейми тапать, кăкăрне сирсе тухса тĕттĕм зала хăйĕн çутипе çутатса яма хатĕр. Вăхăчĕ тата ытла та ерипен шăвать.

Çапла ларсан-ларсан, шăп вунçичĕ минутран, çутă пачĕç. Нумайăшĕ ассăн сывласа ячĕ.

Хам куçăма хам ĕненместĕп, манпа юнашар – пачах та урăхла Хирбю. Ĕнтĕ ун питĕнче юлман хаваслăх, кăтра та вăрăм çӳçĕ те кайнă шурса.

Пĕлесчĕ, мĕнле Сальери хушнипе тунă-ши çав ирсĕр ĕçе? Мĕнле питпе çӳреççĕ-ши паян çав кĕвĕç те киревсĕр çынсем? Хирбю кĕвви янăранă чух кăштах та пулин хăйсем çылăхлă пулнине аса илеççĕ-ши?..

* * *

Пурнăç ăнман вăхăтра, телей валеçнĕ чухне килте пулман çав тесе пăшăрханса илетпĕр.

Хамăр телее шыраса ялтан яла, хуларан хулана сиксе çӳрес марччĕ. Телей вăл çын ăçта пурăннинчен мар, ытларах мĕнле пурăннинчен килет.

Телейсĕр çынсем Мускаврa та, Парижра та тĕл пулаççĕ, телейлисем – Елчĕкре те, Элĕкре те темĕн чухлех.

Телее сутăн илме çук. Ăна хăв аллупа хăвăн тумалла. Телейшĕн çунса çынлăха çухатас марччĕ, хамăра çывăх çынсен ĕмĕтне татас марччĕ.

Ытти çын телейне туртса илсе телейлĕ пулаймăн.

* * *

Сăвăç чĕри те çын чĕриех. Анчах кăштах ыттисенчен вĕрирех.

Сăвăç чунĕ те çын чунех. Анчах кăштах ыттисенчен пуянрах.

Сăвăç туйăмĕ те çын туйăмех. Анчах кăштах ыттисенчен пысăкрах, çын кулянăвне маларах асăрхать, хута кĕме васкать.

Сăвăç сăмахĕ те çын сăмахех. Анчах кăштах ыттисенчен витĕмлĕрех, хĕрӳллĕрех. Ăна илтсен пурнăçа çĕнĕлле пуçарса ярас килет. Сăвăç сассине пӳлсе ун чĕрине амантас марччĕ. Сăвăç туйăмĕпе çăвăнса кăмăлăма тасатасчĕ, çынлăха пуянлатасчĕ.

* * *

Темиçе çул сăнатăп пĕр хурăн ӳснине, вăл пурнăçшăн кĕрешнине. Ытла та йывăр çул суйласа илнĕ-çке хăйне валли: шăтса тухнă икĕ кирпĕч хушшине, тымар янă çĕртен тăвата метр çӳллĕшĕнче. Ăçтан тупать-ши пурнăç сĕткенне?!

Кăçал çанталăк шăрăх тăчĕ – хурăн пуçне усрĕ, çулçисем пĕтĕрĕнсе ларчĕç, анчах парăнмарĕ, çĕнтерсе тухрĕ, çурла уйăхĕнче каллех сăн илчĕ.

Мухтатăп, ырлатăп çак хурăна. Пурнăçне хаклама пĕлмен çынпа танлаштарсан вăл маншăн калама çук пысăк хисепе тивĕç. Вăл вăйлă, хăватлă, пурнăçа юратни куçкĕрет.

# 1989 çул

* * *

Пурнăçра эп хама чылай шырарăм. Кирлĕ-ши эп çынсене, кирлĕ мар-ши, çакна часах туйса илеймерĕм. Пĕр кун канмасăр ĕçлерĕм, тав сăмахĕ питех илтеймерĕм. «Мĕнле пурăнатăн, ачусене выртса тăмалăх хваттер пур-и» – текене тĕл пулмарăм. Кашниваскать, хăй çулĕпе утать, ыттин хуйхи-суйхине чĕри патне илесшĕн мар.

Тен, ĕмĕрĕм çаплах иртетчĕ тĕл пулман-тăк çыравçăсене. Ăсталăх йывăççин пĕр пĕчĕк турачĕ çинче мана валли те вырăн пуррине кăтартрĕç, пехил пачĕç.

Асаплантăм, савăнтăм, тĕрлĕ сăнарсен пурнăçĕпе пурăнса килентĕм. Тавах сана, ăсталăх, чунăма ăшăтнăшăн, чĕремри туйăма ыттисене парнелеме пулăшнăшăн.

* * *

– Тăван çĕршыва чĕререн юрататăп, – терĕм те, алă çупса ырларĕç.

– Тăван яла та юрататăп, – тесен, алă çупакансем пулмарĕç.

– Юрататăн пулсан, ентешсене мĕн туса кăтартрăн-ха? – ыйтрĕç манран ял-йышсем. Ним калама аптрарăм, вĕсене куçран пăхаймарăм, пуçăм хăвăрт усăнчĕ.

«Юрататăп» сăмахпа пит выляма юрамасть. Çак хаклă туйăма ытларах ĕçпе уçса пымалла. Тăван ялшăн, уйрăм çыншăн мĕн те пулин ырри тума тăрăшмалла.

Юратăва палăртма сăмах кăна çителĕксĕр. Ăна вĕçĕмсĕр каланипех юрату çунат сарас çук.

Çĕршыва юрататăп теме çăмăл пулчĕ, тăван яла юрататăп теме йывăртарах пулчĕ.

* * *

Юрату вăл икĕ çын туйăмĕ, икĕ çын асапĕ, икĕ çын телейĕ. Иккĕш лайăх, юратуллă, килĕштерсе пурăнсан, виççĕмĕшĕн мĕн ĕç пур?

Кĕвĕççисем элек сарса чуна илеççĕ. Ытла хамăра çывăххисем, аттесемпе аннесем, хăйсен юратăвне виçе вырăнне хурса пире вĕрентме пикенеççĕ. Вĕсем те йăнăшаççĕ. Юрату вăл пĕр пек пулмасть, пулмалла та мар. Пĕрисен çак туйăм хĕрлĕ ялав пек вĕлкĕшсе тăрать; акă курăр, эпир пĕр-пĕрне мĕнле хытă юрататпăр тесе кăшкăрашнăн туйăнать. Теприсем вара – пачах урăхла. Вăл шаларах вырнаçнă пулас. Ăна пурте асăрхаймаççĕ. Вăл мĕнлерех пулнине иккĕшĕ кăна лайăх туяççĕ. Çакă сахал-и вара? Çук, иккĕшне лайăх пулсан – пуриншĕн те лайăх. Вĕсен юрату ăшшийĕ ыттисене те тивĕ.

* * *

Шанман чечек çук, ватăлман хĕрарăм çук. Анчах пĕрле пурăнса ирттернĕ мăшăртан хакли урăх пулас çук. Çулсем чылай иртсен те, вăйăм кăштах чаксан та, ман юрату сӳнес çук. Çамрăк чухнехи илем, тусăм туйра шур акăш пек ташлани халь те куçăм умĕнче. Тен, çавна пулах пит тинкерсе пăхман чух арăм питĕнчи улшăнусене асăрхасах та каймастăп. Тусăм маншăн яланах пике евĕр курăнать.

* * *

Чăваш хĕрарăмĕ, кам эсĕ? Пĕлсе çитерме çук сана. Поэтсемпе ăслăлăх çыннисене канăç памастăн, вĕсен умне чылай кăткăс ыйтусем кăларса тăрататăн.

Ăçтан килнĕ эсĕ Атăл тăрăхне? Хĕвелтухăçĕнчен-и? Апла пулсан мĕншĕн-ха санра унти хĕрарăмсен йăлисем ытла та питĕ сахал? Ирĕклĕхе пысăка хурса хаклатăн. Кирлĕ пулсан, йăха та, ăрăва та хăвах ертсе пыма пултаратăн. Çутта туртăнатăн, вĕренме тăрăшатăн. Иртнĕ ĕмĕртех ав, çамрăклах, кутамкка çакса Чĕмпĕрелле утрăн. Сан сăмаху чăваш килĕнче пушă сăмах мар.

Шел пулин те, сана тивĕçлипе хаклама пĕлмен чăваш арçыннисем те тĕл пулаççĕ çав. Тиркем пекки тăваççĕ, хăйсен пултарулăхĕпе, укçи-тенкипе сана савăнтараймаççĕ, юратăва пысăка хурса хаклакан шанчăклă арăм мĕнлине чухлаймаççĕ. Чылайăшĕ вара арăмĕ çумĕнче тарçă вырăнне кăна пурăнса ирттерет, чăвашлăх пирки кăшкăрашать, çамрăк ăрушăн ырă тĕслĕх пулаймасть.

Ахальтен каламан пуль çав тиркекене тирĕк тĕпĕ тесе.

* * *

Ăслă çынна пурăнма нихăçан та çăмăл пулман. Нумай пĕлет, нумай курать, пурнăçри хирĕçӳсене те тарăнрах туйса илет. Мĕн пуррипе çырлахмасть, вăйне хурать, кĕрешет, пурнăçри йăла-йĕркене çĕнетме тăрăшать.

Çăмăл мар ун пек çынна – ура хуракансем те, элек саракансем те тупăнсах тăраççĕ. Хăш-пĕр чух тата пуçлăхсен кăмăлне юрамасан йывăрлăх капланса килет, капан пек ӳссе ларать. Ăçта кайса кĕрĕн ун чухне?

Ăслă çынсем чăтăмлă вĕсем. Пĕрре суйланă çулран пăрăнмаççĕ, чăнлăх тӳрре тухасса çирĕппĕн шанаççĕ. Мĕншĕн тесен çав çынсене ырă туйăм, тарăн ăс, умри çутă пуласлăх ялан хал парса тăрать.

Упрасчĕ ăслă çынсене, вĕсен тăнĕпе ытларах усă курасчĕ, сăмахне-халалне асра тытасчĕ, ăс çумне ăс хушса пырасчĕ.

* * *

Сывлăхлă чух, пурнăç сиккипе пынă вăхăтра, никам та кирлех мар пек. Йывăр кунсенче вара кăмăл хăвăрт улшăнать – пулăшу шыратпăр, хамăра çывăх çынсене аса илетпĕр.

Тепĕр чух тата вăхăтра çитнĕ пĕчĕк пулăшу та тем пекех, кая юлса çитнĕ пысăк пулăшуран самай хаклăрах.

Пурнăç урапи тикĕсрех çулпа чупма пуçласан, хамăра йывăр вăхăтра пĕчĕк те пулин пулăшу паракансене каллех манма пуçлатпăр.

Хамăра вăхăтра алă панă çынсене асра тытасчĕ, туслăх вучахне типĕ кăвайт хурсах тăрасчĕ.

* * *

Тĕнче çаврăнать хăй тĕнĕлĕ тавра. Хĕвелĕ тавра çĕрваскать, çĕрĕ тавра – уйăхĕ. Хĕвел тухать – кун килет, хĕвел анать – кун каять. Тĕнче çинчен шухăшласан, мăнаçлă туйăм çуралать. Ăçтан пулма пĕлнĕ-ши, мĕнле вăй кун-çул панă-ши çакă çутă тĕнчене?

Анчах çавă хушăрах тата тепĕр тĕлĕнтермĕш пур. Çын çинчен шухăшласан, пурнăç тĕллевне пăхсан, тĕнче хĕсĕнсе, пĕчĕкленсе пырать. Уйрăм çын телейĕпе танлаштарсан, тĕнче тытăмĕ вăл нимех те мар. Араскалăм çук чухне, çут хĕвел те ним те мар. Тĕнче пысăк пулни те, çĕршыв анлă пулни те савăнăç кӳмест мана.

Çынран асли урăх нимĕн те, никам та çук.

* * *

Кайрăн уйрăлса, мана пăрахса. Сансăр ман умра текех çутă çук. Мĕншĕн хĕвел хура курăнать-ши, мĕншĕн ман телей çапла сӳнчĕ-ши?

Кайрăн уйрăлса, мана пăрахса. Сансăр сывлăш çук, сансăр пурнăç çук. Мĕншĕн сана чĕртме май çук-ши, мĕншĕн ăраскал çапла пулчĕ-ши?

Кайрăн уйрăлса, мана пăрахса. Анчах сан чуну юлĕ манпалах. Вăл вăй парĕ йывăр кунсенче, хура пĕлĕтсем капланнă чухне.

Пурнăç вĕçленет пĕр пек яланах – уйрăлу пирĕн пымĕ нумаях. Вăхăчĕ çитерĕ сан патнах, çывăр халлĕхе канлĕ ыйхăпах.

* * *

Тăван халăхăм, юратнă аннем, эпĕ сан вĕри юнун  пĕр пĕчĕк тумламĕ. Санра пурри манра пур: хăравçăлăх та чылай, ыттисене шанманни те, чăваш пулнишĕн вăтанасси те, хама уйрăммăнрах тытасси те...

Çак йăласем сыпран-сыппа тăсăлса пыраççĕ. Япăххисенчен тасалса пĕтме пит çăмăлах мар иккен. Аçтан çăмăл пултăр ĕнтĕ: пĕр çĕре чăмăртанса, пĕр халăх пулса пурăнса кураймарăмăр. Сапса янă пăрçа пек сапаланса пĕтрĕмĕр. Тĕрлĕ çĕрте тĕрлĕн-тĕрлĕн шăта-шăта тухрăмăр, анчах тăван халăх ăшши çителĕксĕр пулнăран имшертерех ӳсрĕмĕр. Пĕрлĕх çукки пĕтерет. Хăçан та пулсан пĕрле пухăнса, вăйă картине тăрса, алран алла тытăнса харăс юрласа пулĕ-ши?

* * *

Çĕр çинчи пĕр чĕрчун та хăйне сиен ĕç тумасть. Йăва çавăрать, чĕпписене çитĕнтересшĕн тăрăшать. Ачисем ӳссе çитсен те йăвине çĕмĕрмест, тавралăха сиен кӳмест.

Çынсем пачах урăхла – уссăр ĕçпе те вăйне чылай пĕтереççĕ, укçашăн çеç тунă вырăнсенче лара-лара пурнăç сĕткенне типĕтеççĕ.

Кăкăрсене орден çакса илемлетсе пĕтертĕмĕр, пурлăх енчен пит малалла каяймарăмăр.

Ниме юрăхсăр ĕçсене, çĕр айне чава-чава хунă пушă пăрăхсене шута илсен, çав укçа вăл пĕтĕм çĕршыва витсе тухма çитĕ.

Çӗр-аннемӗр чӑтӑмлӑ. Пӗрисем, ав, пурлӑх тупса, çын пурнӑçне çӑмӑллатас тӗллевпе ӗçлеççӗ, теприсем çав пурлӑхах шывпа юхтарса е çӗр айне хупса хурса уссӑр ӗç тарçи пулса тӑраççӗ, шӗкӗ пек кӑшласа халӑх пурнӑçне хавшатаççӗ.

Мӗнле япала ку? Тулӑх пурнӑç тума паянхи кун та вӗренсе çитеймерӗмӗр.

* * *

Хӑнана кайсан тутлӑ çимӗçпе виçесӗр сӑйланни хырӑма хӗн кӑтартни çеç.

Сӗтел çинче мӗн пуррине куçӑм савать, çӑварӑм хыпать те хыпать. Кӑштах сыпсан юн выляса каять: калаçас та, юрлас та, ташлас та килет.

Пӗриншӗн пулнӑ савӑнӑç теприншӗн куляну кӑна. Çакна туять ман хырӑм, ытлашши çисе ан тултар-ха тесе аса илтерсех тӑрать. Ӑслӑскер, матькасси! Хӑйшӗн çеç мар, ман пирки те шутлать иккен.

Куç вара выçӑ, парӑнасшӑн мар, ыйтать те ыйтать. Аллӑм ирӗксӗрех тутлӑ çимӗç патне кармашать.

# 1990 çул

* * *

Этем! Ытла та айван иккен эсĕ. Мĕн тери нумай вăхăт хушши пурнăçа хатĕрленетĕн – пурпĕрех пурăнма вĕренсе çитейместĕн. Тепĕр чух тата чăн-чăн пурнăçа курмасăрах леш тĕнчене каятăн. Турру та сан пит шанчăкли пулмарĕ. Эсĕ унран пулăшу кĕтрĕн – вăл вара ним те шарламарĕ. Те хăлхасăр пулчĕ, те куççăр пулчĕ. Сан нушуна курмарĕ.

Ман туррăм пач урăхла. Вăл яланах манпа, ман ăшăмра. Туррăм ман Христос та мар, ытти те мар... Вăл – ман таса чунăм, тĕрĕс шухăшăм, ырă кăмăлăм. Çавсенче ман шанчăкăм.

Турра таçта аякра, тӳпе тĕпĕнче шырар мар. Хамăрта вăл, хамăрта, ăна ăшра шырăпăр.

* * *

Чăваш арăмĕ, ан ятла мана. Халь те чылай чăтса пурăнтăм. Чунăм та ывăнса çитрĕ. Калас тенине каласах тетĕп.

Çĕр çинчи кашни çынах ырлăх курма çуралать. Эсĕ те çавах, пурнăç çулĕ çине телей шырама тухрăн. Темшĕн çулĕ кукăр пулчĕ. Чăваш арăмне тĕнче шайне çĕклекенни пулмарĕ.

Мĕн пулчĕ-ши сана, чăваш хĕрарăмĕ? Мĕншĕн сан çумри сăпайлăхпа илем чакса пырать-ши? Мĕншĕн сан валли ĕçпе килти хуçалăхсăр пуçне чуна илĕртекенни ытла та питĕ сахал-ши?

Курăп-ши сана кану вăхăтĕнче çĕршыври чи паллă вырăнсенче, чаплă музейсене курса çӳрекенсем хушшинче? Курăп-ши сана Шупашкарти чи ăста çĕвĕçсене çĕлеттернĕ тумтирпе? Курăп-ши сана пĕр-пĕр чăваш çыравçин кĕнекине сӳтсе явнă чухне хĕрӳллĕн тухса калаçнине?

Чăваш хĕрарăмĕнче чăвашлăх чакса пырать. Чи хăрушши – черккепе ытлашши туслашни. Çав йӳçĕ шĕвек ăс-тăна шĕветрĕ, вăхăтсăр ватăлтарчĕ, илеме пăрлă çумăр пек тылласа кайрĕ.

Хаклă йăмăкăм, чăваш йăхне, чăваш ятне çĕклесси санран та чылай килет.

Ĕçлеме те ĕçме çеç çуралнă-ши вара эсĕ?

* * *

Çынна кун-çул парнелесси, ача-пăчана сывлăхлă пăхса ӳстерессине, кил-çуртри тирпейлĕхе, çемьери килĕшӳлĕхе упрасси пĕтĕмпех хĕрарăмран килет.

Ахальтен мар авалхи скульпторсем чи малтан ача амăшне сăнлама тăрăшнă, унтан тин турă кĕлеткине тума тытăннă. Ун чух хĕрарăм турăран та çӳлерех тăнă иккен.

Халĕ вара хĕрарăм кăштах йӳнелчĕ. Пĕрисем пукане вырăнне кăна хураççĕ. Хĕрарăм çамрăк та илемлĕ чухне выляççĕ-выляççĕ те пăрахаççĕ.

Теприсем хĕрарăма нумай ĕçленĕшĕн килĕштереççĕ, парнесем, орденсем парса хавхалантараççĕ. Арçын вырăнне лава кӳлĕнсе çемьене малалла туртакансен шучĕ ӳссех пырать. Илемлĕхпе çепĕçлĕх чаксах пырать.

Хĕрарăма юратупа ăшăтса, ĕçпе пулăшса, кулленхи пурнăçне çăмăллатма тăрăшакансем те пур. Анчах çакна тума пит çăмăлах мар иккен. Пурлăх шайĕнче те, ĕç йĕркисенче те хĕрарăма хирĕçли питĕ нумай.

Çук-ха, хĕрарăм пурнăçри чăн-чăн вырăнне шыраса тупайман халлĕхе.

* * *

Хăшĕсем пире çын телейĕ кĕрешӳре тесе вĕрентсе пычĕç. Çакăнта каласа пĕтерменни пур пек.

Мĕншĕн-ха пĕрмаях кĕрешмелле, çут тĕнчери вырăншăн çапăçмалла? Çакă канăç памасть, вăхăтлăха мансан та каллех асăма килет, пуçа çавăрать.

Кунсерен кĕрешӳре вăя пĕтерсен, хăçан пурăнма тытăнăпăр, пурнăç тума хăçан пуçлăпăр, ачамăрсене мĕнле Çын туса çитерĕпĕр? Тивĕçлĕ канăва тухсан-и?

Пурнăç çине тĕплĕнрех пăхса илме те, телей çуртне купалама та лăпкă вăхăт ытларах кирлĕ. Çапăçу вăл сывлăха хавшатать, чăн-чăн пурнăçран пăрса ярать. Тепĕр чух тата вăхăтсăрах тупăка кĕртсе вырттарать.

* * *

Сивĕ мана паян, сивĕ. Килте те сивĕ, ĕçре те ăшах мар. Урама тухсан та, пухура ларнă чухне те, канма кайсан тинĕс хĕрринче хĕртĕнсе выртнă вăхăтра та мана темшĕн сивĕ.

Ăшă чакса пыни пуриншĕн те япăх: ӳсентăрана та, вырьăхчĕрлĕхе те. Мамонтсем те çавна пулах вилсе пĕтнĕ иккен.

Анчах чи хăрушши, чи хытă шăнтаканни – чĕре ăшши сивĕнни. Ун чухне çамрăк ăрăва та тăм тивет, кĕвĕçӳпе курайманлăх юлташлանса каяççĕ. Чун ăшши чаксан харкашусем пуçланаççĕ, халăхсем хушшинчи туслăх та манăçа тухать...

Сивĕ мана паян, темшĕн питĕ сивĕ...

* * *

Усал çын хăйне телейлĕ туйма пултарать-ши? Пултарать. Анчах ун савăнăçĕ пачах урăхла – çынна ним сăлтавсăрах сăмахпа хăртса тăкнинче, киревсĕр ĕçпе урăххин пуласлăхне, телейне пӳлсе лартнинче, çын макăрнăшăн хĕпĕртенинче...

Усал çыннăн чунĕ ялан йӳçсе çӳрет, таврари ырăлăхпа илеме асăрхаймасть. Усал çын – чирлĕ çын. Илем тĕнчипе анлăрах усă курса, ăна çав тыткăнран çăласчĕ.

* * *

Савăнăçпа куляну юнашарах çӳреççĕ. Анчах темшĕн пĕрне ытларах савăнăç тивет, теприне – куляну. Çав самантсене кашниех хăйне май чăтса ирттерет. Пĕрин туйăмĕ пĕтĕмпех пит-куçра çиçсе тăрать, теприн – веçех шалта, чĕре тĕпĕнче.

Хальхи çамрăксен иртнĕ вăхăта сивлессипе пĕрлех ашшĕсен савăнăçне пĕчĕклетсе хак парасси те пур. Ваттисемпе калаçаççĕ-и, кино кураççĕ-и, юрă итлеççĕ-и – иртнĕ самантри савăнăçлă туйăмран тăрăхласа илеççĕ.

Çын туйăмĕнчен, çын кун-çулĕнчен кулас марччĕ. Пурнăç çине хальхи виçепе çеç пăхса аттесен савăнăçне йӳнетес марччĕ.

Хамăр мĕн туса кăтартăпăр-ши, туйăмăрсене мĕнлерех палăртăпăр-ши? Ачамăрсем кайран мĕн калĕç-ши? Кулакана кутне çыпăçать теççĕ мар-и-ха...

* * *

Пире, çамрăксене, ытлашши хăртса ан ятлăр-ха. Кăштах ăнланма тăрăшăр.

Ватасси, çĕмĕрессси, çын лайăххрах пурăннишĕн кĕвĕçесси пирĕнтен тухнă йăла мар. Асаттесем, çĕнĕ йĕрке тăватпăр тесе, пурнăç никĕсне тĕпрен силлесе аркатма пикенчĕç. Пуянсенчен

туртса илнӗ пурлӑхпа тӗрӗс усӑ курма пӗлеймерӗҫ, аттесене те вӗрентсе хӑвараймарӗҫ.

Ҫутҫанталӑкпа туслӑ пурӑнасси, халӑх тунӑ пурлӑха перекетлӗ тытасси манӑҫа тухса пычӗ.

Эпир те ҫавах. Кантӑкне ҫӗмӗрсе пӗтернӗ телефон будкине курсан, автобусра ҫӗҫӗпе чиксе шӑтарнӑ вырӑнсене тӗл пулсан, институтра темтепӗр ҫырса пӗтернӗ сӗтел-пукана асӑрхасан пире ҫеҫ ан вӑрҫӑр.

Мӗн акатӑн – ҫавӑ шӑтать.

* * *

Ача чухне айван пулнӑ. Анне пач ҫывӑрмасӑрах пурӑнать пуль тесе шутлаттӑмччӗ. Сӑлтавӗ пулнах ҫав. Эпӗ ирпе куҫа уҫнӑ чух кил-ҫуртра тирпейлӗх, сӗтел ҫинче апат-ҫимӗҫ. Эп ҫывӑрма выртнӑ чухне анне алӗҫ тӑватчӗ.

Мӗнле ҫав тери чӑтӑмлӑ пулнӑ-ха эсир, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи аннесем? Ялан ӗҫре, шӑм-шак канмалӑх ҫывӑрса та курайморӑр пуль. Тӗкӗр ҫине пӑхса илме те вӑхӑт пулман сирӗн.

Анне ҫывӑрнине эп астумастӑп.

* * *

Тӗнчере – тӗрлӗрен кӗнчеле. Темӗн тӗрлӗ ҫын та пур. Хӑшӗсем, ав, чавсапа тӗрткелешсех малалла шӑваҫҫӗ, ҫын шутне кӗреҫҫӗ, пуҫлӑха тухаҫҫӗ.

Ун пек ҫынпа ӗҫлеме турӑ ан хуштӑр. Пӗр ыйтӑва та хӑюллӑн татса параймасть. Хӑйӗнчен ӑслӑрах ҫынна чӗрӗллех ҫисе ярать. Пултаруллӑ ҫын пек курӑнас тесе хӑй ҫумӗнче йӑпӑлтипе халсӑра ҫеҫ тытать. Ӗҫрен кӑларасран чӗтресе пурӑнать. Пӗрмаях чавсипе тӗрткелешет. Вилсен те ыттисене тӗксе ярсах ҫӑтмах алӑкӗ патневаскать.

Анчах кӗртӗҫ-ши?

* * *

Пурнӑҫ ҫулне кашниех хӑйне май утса тухать. Пӗри ӑна ҫуралса ӳснӗ ҫӗртех вӗҫлет, тепри – тӑван килтен пин ҫухрӑмра.

Ӗҫрен ӗҫе куҫса пырса ҫӳлелле хӑвӑрт хӑпаракансене ырлатӑп, анчах вӗсен телейне ӑмсанмастӑп. Ун пек ҫынсем тӑван кӗтесрен хӑвӑрт сивӗнеҫҫӗ, пӗрле ӳснӗ туссене те часах паллами пулаҫҫӗ, тӑванлӑх туйӑмне хакламаҫҫӗ.

Ялти ăслă çынсене хула хăй еннелле турта-турта илнине сивлетĕп. Пултаруллă çынсем çук чух ял пурнăçĕ сĕмсĕр те каппайчăк пуçлăхсен аллине кĕрсе ӳкме пултарать.

Кашни ял вăл – хăй пĕр пĕчĕк çĕршыв. Унта такам та кирлĕ: тырпул акса ӳстерекенсем те, çамрăк ăрăва ăс паракан пултаруллă учительсемпе философсем те, ялти ырă çынсен сăнарĕсене вулакансене парнелекен çыравçăсем те, сывлăх хуралçисем те, ташă-юрă ăстисем те, историксем те, тавлашуллă ыйтусене татса паракансем те...

Ăс-тăн енчен хавшанă ялăн пуласлăхĕ те чакать. Çĕршывăмăр сăн-питне хăвăртрах улăштарас тесен ял пурнăçне çĕнетмелле, çĕр-аннемĕрпе пĕтĕçтерсе тăракан кăвапа тымарне татма памалла мар.

* * *

Хаклă тусăм, ырă çыннăм, каçару ыйтатăп. Пурте пурлăх пирки тавлашнă вăхăтра çынлăх çинчен сăмах хускатма ирĕк парсам.

Ялан укçашăн, пуянлăхшăн çунакан çынсем йышланса пынă май сăпайлă та кăмăллисен шучĕ чакма пуçларĕ.

Пурнăç, чăн та, çăмăл мар. Йĕркесем те чаплах мар. Паянхи кун пире хамăр мĕне тăнине тĕкĕр евĕр кăтартĕ – ырă çынсем-и эпир е чыса çухатнă; юлташсене вăхăтра пулăшу паракансем е хамăршăн кăна çунса пурăнакансем; туслăха ăшă чунпа, ырă ĕçпе çирĕплетекенсем-и е тăванлăх пирки пуш параппан çапакансем кăна; тăван халăх умĕнчи тивĕçе яланах асра тытакансем-и е аннемĕр чĕлхине те маннăскерсем?..

Паянхи уçăмлă вăхăт çаврăнса çитнишĕн савăнма та сăлтав пур. Кам мĕнлерех пулнине, çынлăх шайĕн виçине халĕ лайăх куратпăр.

* * *

Халăх чунĕ паян ăшши пĕтнĕ мунча чулĕ пекех туйăнать – тем чухлĕ шыв сапсан та, тем чухлĕ ĕмĕтлентерсе калаçсан та ăшши пами пулчĕ. Пĕр шанăçран тухсан ним тума та çук иккен, халăха ĕнентерме хĕн.

Анчах çăлăнăç пурах – трибуна çинчен анмалла та лавккари вăрăм черете пырса тăрса ĕççыннипе калаçма пуçламалла. Çакна тума пысăк хăюлăхпа паттăрлăх кирлĕ. Ун пек пуçлăхсем тупăнĕç-ши?

* * *

Çын çумĕнче пурте пĕрле – ырри те, усалли те. Вăл шутласа тупнă япаласенчен чи ирсĕрри – вăрçă.

Вăрçă хăрушлăхĕ пин-пин çынна тĕрĕс çулран пăрса ярать. Пĕрисем, ав, çын вĕлерес мелсене çăмăллатас енĕпе кунĕн-çĕрĕн пуçне ватаççĕ, çĕнĕрен те çĕнĕ хĕç-пăшал тăваççĕ. Теприсем – кил-çурт, апат-çимĕç тăвас вырăнне салтакра вăхăт ирттереççĕ.

Вăрçă вăл ачасене ырă çын пулма вĕрентекен учителе те, çын сывлăхне упрас енĕпе ырми-канми ĕçлекен тухтăра та, çепĕç юррипе чуна çунат паракан юрăçа та алла пăшал тыттарать.

Вăрçăри чи пысăк тĕлĕнтермĕш – çын вĕлерсе чапа тухни, герой пулни.

* * *

Самана вăл – юханшыв. Унта тем те пулать – авăр та пур, ăшăх вырăн та, шыв айĕнчи чулсем те...

Ăнăçлăн ишсе тухакансем вара пит нумаях та мар. Пĕрисене авăр туртса анса каfive, теприсем ăшăх вырăна ларса юлаççĕ. Куçа курăнман чулсене çапăнса карап турпас пулса юхса кайни те тĕл пулать.

Самана вăл асар-писер шыв юхăмĕ. Ăна ишсе тухма пысăк чăтăмлăх кирлĕ.

* * *

Лаша пуласси – тихаран паллă, çын пуласси – ачаран тенĕ ĕлĕк ваттисем. Анчах çакна манас марччĕ – ача пек айванни, çын пек вăрах ӳсекенни урăх нимле чĕрчун та çук. Ачана кулленхи пулăшу кирлĕ.

Çуралакансем нумай, чăн-чăн Çын шутне кĕрекенсем сахалтарах. Пурнăçа тĕрмере е ăсран катăккисен çуртĕнче пурăнса ирттерекенсем те чылай.

Ачасене çăвартан апат хыптарса тăни çеç çителĕксĕр. Капăр çи-пуç та нимех те мар. Ытларах ырă туйăмпа çынлăх кирлĕ. Ачана пĕчĕклех ашшĕ-амăшĕнчен уйăрас марччĕ, чĕрçи çинче вылятса, юрату ăшшипе кăмăлне пуянлатса ӳстересчĕ.

Хамăр ватăлăх ачамăрсен çынлăхĕнче. Апла пулсан тăрăшар, ачалăха пулăшар.

* * *

Сан умăнта тăма сăнăм çук. Санпа юнашар утма пĕвĕм çук. Анчах вĕсенчен пахи – чунăм пур. Пĕр сана çеç юратма – чĕрем пур.

Саншăн турă пулăттăм эпĕ яланах, телей ăсса парăттăм Алтăр çăлтăрпах.

Алра йăтса çӳреме халăм çук. Ылтăн ăшне путарма мулăм çук. Анчах вĕсенчен хакли – пурнăç пур. Пĕр саншăн çеç пурăнма – ĕмĕт пур.

Саншăн турă пулăттăм эпĕ яланах, телей ăсса парăттăм Алтăр çăлтăрпах.

Ĕмĕр санпа пуласчĕ, вилсен – пĕрле выртасчĕ.

* * *

Сивĕ мана паян, питĕ сивĕ, тем каласа илĕртсен те сивĕ. Пулĕ-ши умра ăшă сывлăш хумĕ?

«Ешерет Чăваш çĕршывĕ», – тесе юрă шăрантартăмăр, юрласан та ешернине кураймарăмăр. Ешернине кураймарăмăр, тĕнче шайне çитеймерĕмĕр.

«Тулăх пурнăçпа пурăнатпăр», – тесе хытă кăшкăрашрăмăр. Анчах тем чухлĕ кăшкăрсан та тулăх пурнăç кураймарăмăр. Тулăх пурнăç кураймарăмăр, тĕнчепе тан пулаймарăмăр.

«Тăван халăх, эс телейлĕ», – тесе ялан сăмах çапрăмăр. Анчах тем чухлĕ палкасан та телейне пит кураймарăмăр. Телейне пит кураймарăмăр, тĕнче умне тухаймарăмăр.

Сивĕ мана паян, питĕ сивĕ, тем каласа илĕртсен те сивĕ. Пулĕ-ши умра ăшă сывлăш хумĕ, пулĕ-ши умра ырă пурнăç çулĕ?

* * *

Эх, пурнăç, пурнăç! Мĕн кăна сиксе тухмасть пуль сан çулу çинче. Мĕн пулса иртмест пуль пĕр вăхăтрах: пĕри ахăрать, тепри макăрать. Пĕр енчен туй кĕрлесе килет, тепринчен – тупăк йăтса тухаççĕ. Пурнăçпа вилĕм пĕр-пĕринчен пăрăнса çӳреççĕ. Вăхăт çитсен пурпĕрех тĕл пулаççĕ.

# 1991 çул

* * *

Эпĕ чăваш. Эпĕ питĕ ватă çын. Хам пурнăçăн никĕсне хума пуçланă ыттисенчен маларах. Тен, çавна пулах пурнăçăмăн тĕп йĕрки – ĕçлесе пурлăх тăвасси. Хирĕçнине, çапăçнине, ватнине, çĕмĕрнине эпĕ хытă сивлетĕп. Мала хуратăп килĕшӳ йăлине.

Пурăнас килет ман туслă тăвансемпе, ял-йышпа, ытти халăх çыннисемпе. Килĕшӳллĕ пулас килет Çутçанталăкпа, Хĕвелпе, Уйăхпа, Çĕрпе, Шывпа, Вăрманпа...

Эпĕ чăваш, авалхи çын. Чăрсăрлăхпа пĕрне-пĕри пăхăнтарас туртăм манра сахал. Лăпкăн пурăнас килет. Хирĕçлес те килмест. Çĕмĕрес те килмест.

* * *

Тĕлĕк куртăм – савăнтăм...

Атăл тăрăхĕнчи чăвашсем пĕрлешсе пĕр çĕршыв туса хунă пек. Тĕп хулине ятарласа лартнă. Президенчĕ те пур. Институтсем те, академи те, консерватори те, кĕнеке пичетлесси те, халăха кирлĕ япаласем тăвасси те – пурте чăвашсен хăйсен. Заводсемпе кантурсен пуçлăхĕсем те чăвашсем. Пур çĕрте те чăвашла калаçаççĕ. Чăваш мар çынсем те чăвашла пĕлеççĕ. Вĕсене те мĕн пĕчĕкренех чăваш чĕлхине вĕрентсе ӳстернĕ иккен. Çамрăксем хушшинчи туслăх пысăк шайра; пĕрне-пĕри хисеплеççĕ, чăваш пулнишĕн вăтанмаççĕ.

Акă пыратăп иртсе хулари шкул патĕнчен. Уçă кантăкран чăваш юрри илтĕнет. Ăна юрлаççĕ ачасем. Сасартăк шăнкăрав сасси илтĕнсе кайрĕ. Куçа уçса ятăм...

Тĕлĕк куртăм – савăнтăм, вăраннишĕн кулянтăм.

* * *

Ман халăхăм çинчен шутлакансем нумаях мар вĕсем. Чăваш мар çынсем хушшинче çук та пуль. Чăвашра та сахал.

Пěртен-пěр тěслěх – Иван Яковлевич Яковлев. Унпа танлашма пултаракан çěр çинче урăх çук-ха.

Нумай калаçатпăр, кěнекесем çыратпăр, ěçě вара пит курăнсах каймасть. Шухăшпа тем тума та хатěр. Тытăннă ěçе вěçне çитерекенсем сахал. Чапшăн, ятшăн çунакансен шучě те ÿссех пырать.

Чи пысăк тěлěнтермěш вара пачах урăххи. Тăван халăхшăн тăрăшакансене ăнланман чăвашсем нумайланса кайни. Çак хăрушă чире пěтермелли эмеле ăçтан тупăпăр-ши?

* * *

Чăваш, чăваш, чуну сан ытлашши йăваш. Тепěр чухне хăвна хăв та хÿтěлейместěн, хăвшăн çине тăраймастăн, часах хуçăлатăн, парăнатăн, ыттисене хăвăрт çул паратăн, хăв вара айккине тăрса юлатăн.

Урăх çěрте чыспа чап тупайман çынсемех сан пуçлăху пулса тăраççě те çине тăрсах сана вěрентме пикенеççě. Анчах çакна ăнланмаççě: чăваш вăл хăй ăсне питě ěлěкрен пухса пынă. Ун чунне пěлмесěр, ун нушине чухламасăр ăна усăллă çын пулма хěн.

Чăваш чěри час уçăлмасть. Кăшт калаçса илнипех ăна лайăх пěлетпěр тесе ан мухтанăр. Чунě чăвашăн йăваш та, анчах тымарě тарăн, хавалě пуян. Хăçан çěнтерсе илě-ши вăл пěр çитменлěхе – наци туйăмě пит вăйлах маррине, хăйне хăй йÿне хурса хаклассине?

Тěрěссипе каласан, чăваш çыннин ытла именÿллě пулма сăлтав та çук. Ют çěршыва хапсăнман, çын аллинчи çăкăр чěллине туртса илмен, вăрçăпа алхасман... Тар кăларса ěçленě, пур çěрте те килěшÿлěх шыранă. Санран вěренмелли халь темěн чухлех. Анчах çакна ыттисем асăрхасшăнах мар. Те юриех курман пек тăваççě?

Чăваш чунне лайăхрах пěлни пуриншěн те усăллă.

* * *

Ÿт-пěвěмěре, пит-куçăмăра илемлетме вěренсе çитрěмěр ěнтě. Темěн тěрлě сăр та пур. Якататпăр, сăрланатпăр, ним чěнмесěр çÿренě чух çын евěрлех курăнатпăр.

Анчах чунăмăра мěнпе сăрлăпăр-ши, мěнле илемлетěпěр-ши? Çынлăх енчен чухăннине, кăмăл-туйăм сивěннине мěнле сăрпа сăрласа пытарăпăр-ши? Пытарма пулě-ши? Сăмах чěннě-чěнменех ырă çынсем пирěн çине пăшăрханса пăхса

илмĕç-ши? Ăс-тăн вăйĕ хавшаккишĕн, шухăшăмăрсем шĕвек пулнишĕн хĕрхенмĕç-ши?

Пит ытлашши пакăлтатар мар, айванлăха пур çĕрте те уçса парар мар.

* * *

Чăваш шăпи – йывăр шăпа. Шупашкарта чăвашăн ирĕклĕхĕпе пĕртанлăхĕ мĕнлерех шайра тăнине кăтартакан палăк пур. Ытла ăста тунă. Питĕ мăнă та йывăр чул айĕнче пĕчĕк чул катăкĕ выртать. Хĕсĕк ĕнтĕ ăна, мĕнле чăтать-ши? Ман халăхăм та çав чул катăкĕ майлă, пур енчен те пăчăртаса çитернĕ ăна. Ăçтан чăтăмлăхĕ тупăнать-ши?

Кайса курăр çав палăка. Ларать вăл Гагарин урамĕнче, Чапаев çуралнă кил вырăнĕнче. Пăхăр, шухăшлăр... Анчах хура чечек хурса хăварма ан манăр.

* * *

Чи хакли вăл – пурăнăç. Çак турă панă парнене кашни хăй май хак парать. Пĕри ав таврари илеме асăрхамасăрах пурăнса ирттерет, тепри – кашни куншăн савăнать, пурнăçа мухтать.

Пурнăç илемне лайăххрах чухлама урă пуç кирлĕ. Черккепе туслашнипе алли чĕтрекен çыннăн куçне часах сĕрĕм карса илет.

Ăçтан килсе лекрĕ-ха çак усал йăла чăваш таврашне? Ĕçсе юлас тетпĕр-ши? Темле сăлтавпа та: лайăххипе те, усаллипе те алла черкке тытатпăр, эрехрен пулăшу кĕтетпĕр. Кĕтсе илĕпĕр-ши? Ӳсĕр пуçпа ырă пурнăç тăвайăпăр-ши?

* * *

Тĕлĕк куртăм – савăнтăм...

Çула май лавккана кĕрсе тухас терĕм. Куратăп – черет пачах та çук. Çимелли-ĕçмелли темĕн тĕрли те пур. Илес терĕм кăштах шăрттан. Пырса тăтăм касса патне. Мана пĕр çамрăк асăрхарĕ, черетсĕрех чек çаптармашкăн ирĕк пачĕ. Шурă калпаклă хĕрачи шăрттана турттарчĕ, сийĕн-сийĕн касса çутă хутпа чĕркерĕ те йăл кулса илсе мана тыттарчĕ...

Сасартăк шăнкăрав сасси илтĕнчĕ. Вăранса кайрăм. Будильник янăрать иккен...

Тĕлĕк куртăм – савăнтăм, вăраннишĕн пăшăрхантăм.

* * *

Мунчара çăвăннă чухне пурте пĕр тан. Чи асли кунта хурăн милĕкĕ. Пурне те çапкаласа илет, чир-чĕре хăвалать.

Апла пулин те мунчара пĕр çын тарçи пулса куртăм.

Çапăннă хыççăн вăл тухрĕ юнашар пӳлĕме. Алăкне хупса хăвармарĕ. Эпĕ пырса хупрăм. Каялла кĕнĕ хыççăн та алăка уçă хăварчĕ. Каллех пырса хупрăм. Унтан çав арçын патне пытăм та çапла каларăм:

– Хаклă улпутăм, эпĕ санăн тарçу. Мĕнле мелпе тав тума пултарăн-ши мана, хăв хыççăн алăк хупса çӳрекен çынна? Тен, парне парăн, тен, мунча хыççăн хăв патна чĕнсе хăна тăвăн?

– Мĕн калаçатăн эсĕ? Сана хăна тума мар, хама валли те çăкăрăм-тăварăм хĕсĕк, холодильник те пуш-пушах. Парне пирки те çавах. Арăма та çуралнă кун ячĕпе нимĕн те илсе параймарăм. Хăнана чĕнмелĕх çуртăм çук. Пурăнатăп вĕт хăмаран тунă пĕчĕк пӳртре, Шупашкар çырми тĕпĕнче, – терĕ аптраса ӳкнĕ чăваш.

Апла эппин, эпĕ улпут тарçи мар, чухăн çын тарçи кăна пулнă иккен. Мунча хăш чух улталать те-мĕн.

* * *

Эх, чăвашсем, чăвашсем, сапса янă пăрçасем. Тĕрлĕ çĕрте шăтса тухрăмăр, пĕр-пĕрин хӳттипе ӳссе вăй илеймерĕмĕр. Тен, çавна пулах хăравçăрах пултăмăр, чăваш чăваша шанманни те сисĕнет.

Тата тепĕр сăлтав та пур. Улталанă пире, халĕ те улталаççĕ. Чăваш ĕçчен пулнипе ăна темле ĕç те хушаççĕ. Чăтать вăл теççĕ пуль. Лешĕ вара тăрăшать, çĕр чавать, кирпĕч купалать, чул кăларать, пир тĕртет, ӳсентăрансене, хурт-кăпшанкăсене çунтаракан, çын сывлăхне хавшатакан хими ĕçне те вăлах тăвать.

Ĕç правипе чăваш пек анлăн усă куракан урăх халăх çук та пуль. Анчах ăна ытларах хура ĕç лекет. Халлĕхе ун ыттисем мĕн хушнине çеç тума тивет-ха.

Мĕн тăвас тен, шăпамăр çапла пулчĕ-ши е турри çапла çырчĕ-ши? Тен, айăпĕ хамăртах. Чăмăртанаймарăмăр, пĕр халăх пулса кураймарăмăр.

* * *

Пурнăç çулĕпе йĕркеллĕ утма чăрмав кӳрекен пĕр хăрушă тăшман пур. Вăл – юлхавлăх. Çын ӳссе пынă май хăйне час-часах кăтартма пуçлать. Вĕт-шакăр ача пахчине кайнă чух вăл ăна хăй тĕллĕн тумланма чарать. Вулама-çырма ларнă шкул ачине те чăрмантарать...

Сывлăхăма упрас тесе кашни ир хуçкаланса илĕттĕм, чăтăмлăх çук. Лавккаран илнĕ нитратлă пахчаçимĕçе çисе пурăниччен хам лартса ӳстерĕттĕм, каллех кахалĕ манран мала ӳкнĕ пулас...

Мĕн тăвас-ши, çак тăшмана хамран мĕнле хăваласа ярас-ши? Пур çĕрте те ура хурать, чăрмав кӳрсе пырать. Мĕншĕн вăл манран малтан çуралнă-ши?

* * *

Ӳпкелетĕп хама, каçармастăп. Айван пулнă, куççăр пулнă. Кĕсьере парти билечĕ пурри хама хам улталаса пурăнни çеç пулчĕ курăнать. Тăрăшни, парăнса ĕçлени ниме те тăмарĕ. Мĕн ачаран пире вĕрентнĕ коммунистсен партине сума сума. Эпир шаннă ăна, ăспа чыс виçи вырăнне хурса хакланă. Анчах йăнăшнă. Парти ăсне Сталин тĕрмисенче пăчлантарнă, чыспа совеçне ертсе пыракансем сутса янă.

Парти чысне çăлас текенсем тупăнчĕç, анчах нимех те тăваймарĕç. Мĕншĕн тесен çав çынсем ахаль коммунистсем çеç пулчĕç. Вĕсен шухăш-кăмăлне никам та шута илмерĕ.

* * *

Туррăм ман – урă пурнăç. Çын вилнĕ сăлтавпа эрех ĕçнине, виле пытарнă çĕре ӳсĕр пуçпа пырса кĕнине сивлетĕп, çылăх вырăнне хуратăп.

Çын пурнăçĕ вăл вуламан кĕнеке пекех. Хăй пурăннă чухне эпир ăна пайăн-пайăн кăна вулакаласа пыратпăр. Тупăк умĕнче вара пĕтĕмĕшле тишкерсе тухатпăр, ытларах лайăххине аса илме тăрăшатпăр.

Тĕрĕсех тунă пуль çав мăн асаттемĕрсем. Ĕçкĕпе иртĕхмен. Чун тасалăхне пысăка хунă. Леш тĕнчене уйрăлса кайнă çын пурнăçне урă пуçпа хак панă. Масар çинчен таврăнсан мунча кĕрсе тасалнă.

* * *

Мĕн пĕчĕкрен пире çын пурнăçĕнчен хакли урăх нимĕн те çук тесе калатчĕç. Ача чухне çакна ĕненнĕ. Халĕ шухăшăм ман пачах урăхла.

Çын пурнăçĕ ниме те тăмасть иккен. Вăл йӳнĕ. Тепĕр чухне йытă пурнăçĕпе те танлашаймасть. Пĕрин ав йытти валли уйрăм пӳлĕм пур. Теприн вара хăйне выртса тăмалли вырăн та çук. Тутлă апат-çимĕçе тĕлĕкре çеç курать.

Çынна çын вĕлерессе те нимех те мар иккен. Класс тăшманĕ, халăх тăшманĕ тесе пере-пере пăрахнă чух алăсем чĕтресех тăман пулас. Аллинче пăшал çук çынсене вăйпах вăрçа кĕртсе яни те пулнă.

Çын вĕлерекенсене хӳтĕлени, ытла çăмăл суд туни çын пурнăçĕ пит хаклах маррине пĕлтермест-ши?

* * *

Пурнăç вăл пĕччен тумалли япала мар. Юнашар юратнă çын пулмасан пурнăç тути – армути. Ун чух тăрăшни те, тапалашни те уссăрах. Пурпĕрех эс тунă ĕçсене тивĕçлипе хак паракан çук. Сана юратман, курайман çын ырă тунине те асăрхаймасть.

Çапла вара тепĕр чух пĕр мачча айĕнче иккĕн пурăнаççĕ, пĕрне-пĕри чăрмантарса кăна пыраççĕ. Кунта вара телей валли вырăн çук.

Пурнăç вăл пĕччен тумалли япала мар иккен.

* * *

Тĕлĕк куртăм – тĕлĕнтĕм...

Мана колхоз правленине чĕннĕ пек. Унта укçа илмелли хут тыттарчĕç. Мĕнле укçа вара ку тесен, çапла ăнлантарчĕç.

Сан аçу колхоза кĕнĕ чух çĕрне, тимĕр акапуçне, икĕ лашине панă. Çулсем иртнĕçем çавсем тупăш паракан вăй пулса тăчĕç. Аçу сан вилнĕ вăрçăра. Ватă аннӳ те çĕре кĕчĕ. Çав тупăша халь эсĕ илме пултаратăн терĕç.

Ырă хыпаршăн тав турăм та кассир патне кайрăм. Вăл сейфран укçа илчĕ те аллине ман паталла тăсрĕ. Илме тесе эпĕ те хирĕç тăснăччĕ. Çав самантра такам аларан карт! туртрĕ. Вăранса кайрăм.

– Çăкăр патне черет кайса йышăн-ха, – терĕ манран маларах вăраннă арăм...

Тĕлĕк куртăм – тĕлĕнтĕм, вăратнăшăн – арăма ятларăм.

* * *

Ĕлĕк-авал апат-çимĕç, çăкăр-тăвар тутлăрах пулнă теççĕ. Килĕшетĕп, ĕненетĕп. Ун чух Çĕрпе Çын хушшинчи çыхăну çирĕпрех пулнă. Çĕр хăй вăйне тыр-пул ӳстерекене ырă кăмăлпа парса тăнă. Çынна тăрантарнă, тăхăнтарнă, вилсен те хăй патне илнĕ.

Хальхи Çĕр вăл питĕ чирлĕ. Унта вăхăтсăр вилнĕ çынсен юнĕ нумай. Тулăх пурнăç патне çул тупаймарăмăр. Умра çын шăммисем купалана-купалана выртни пурнăç урапине тикĕс кусма памарĕ.

Юнпа шăварнă Çĕр çинче апат-çимĕç тути те урăхларах иккен. Тен, çавăнпах Çын пурнăçĕ йӳнелсе пычĕ, пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕ, юратуллă пурăнасси вăй илеймерĕ.

* * *

Палăксем нумай, анчах чи кирлине лартайман-ха. Манран килет пулсассăн пĕтĕм палăксене пухса ирĕлтернĕ йăсран пĕртен-пĕр палăк лартнă пулăттăм. Çавă пулĕ ман халăхăн чăтăмлăхне сăнласа паракан палăк.

Мĕн тери йывăрлăх, мĕн тери нишлĕх, мĕн тери чуралăх, мĕн тери намăслăх тĕл пулмасть хура халăх çулĕ çинче! Тем сиксе тухсан та чăтать вăл, анчах нумайлăха-ши?..

Тĕркĕштерес марччĕ тĕнчене, улталас марччĕ халăха. Чăтăмлăхĕ ун пĕр вĕççĕр пулас çук.

Халăх çилли çĕкленсен, ăна чарма вăй çитмĕ. Çакна манас марччĕ.

* * *

Чăваш хĕрарăмĕ, мĕншĕн ытла чухăн эсĕ? Мĕншĕн сан çумăнта ылтăн-кĕмĕл сахал? Манса пытăн ахах-мерчен мĕнлине. Шăнкăртатса тăракан тенкĕсем, йăлтăртатса çиçекен хушпусем ăçта кайса кĕчĕç-ши?

Эх, самана, самана, мĕншĕн çапла пултăн-ши? Хĕрарăма çăмăллăх туса параймарăн. Йывăр ĕçе кӳлĕннипе чăваш хĕрарăмĕн илем пухма вăхăт та пулмарĕ. Тăрăшрĕ, ĕçлерĕ, анчах ун çумĕнче халь ылтăн та çук, кĕмĕл те çук, тĕнче умне тăмалăх капăр тумтирĕ те çук...

Эх, самана, самана...

* * *

Куçа курма тунă, пуçа – шухăшлама. Куç ытамĕ пит сарлаках мар. Шухăш вара таçта та çитет, çĕр тавра çаврăна-çаврăна тухать, тĕнче пăтрашнишĕн пăшăрханать.

Паян пур çĕрте те политиксем выляççĕ, халăха илĕртеççĕ. Пуçлăха тухиччен йăпăлтатаççĕ, сăмах параççĕ. Кайран пуçлаççĕ вара пурнăç тилхепине унталла-кунталла турткалама. Мĕн туса пăхмаççĕ пуль!

Нимех те туса кăтартайманнине пула хăш-пĕрисен пуканĕсем чĕриклетсе силленме тытăнаççĕ. Ун чух вĕсем каллех халăха аса илеççĕ, унтанах пулăшу ыйтаççĕ. Çапла тăсăлса пырать те ĕнтĕ хăш-пĕр пуçлăхсен ĕмĕрĕ.

* * *

Чăваш хăнана пушă алăпа каймасть, кучченеç е парне илетех. Хăнара вара ĕçесси-çиессине мар, калаçса чуна пусарассине мала хурать. Хăйне тем чухлĕ лайăх пăхаççĕ пулсан та, хăнара нумай тытăнса тăмасть. Чăваш çакна асра тытать: хăна вăл пĕрремĕш кун – ылтăн, иккĕмĕш кун – кĕмĕл, виççĕмĕш кун – тутăхнă тимĕр...

Хăнара нумай ларар мар, тутăхнă тимĕр пулар мар тетчĕ мана анне.

* * *

Çакă çутă тĕнчере чăваш пулма пит йывăр. Чунпа, юнпа чăвашах çуралнă пулсан та, чăвашлăха çунат сарма памаççĕ.

Эп кун курнă вăхăтра чăваш йăли-йĕрки тăрса юлнă пит сахал. Мана ялан калатчĕç: чăваш чĕлхи кирлех мар, вăл ыранах тухĕ манăçа, чăваш юрри хитре мар – юрлар халĕ вырăсла, чăваш тумĕ пит япăх – тăхăнар-ха урăхла... Çапла вара тăрăшсах мана чăвашлăхран сивĕтрĕç.

Халĕ ĕнтĕ эпĕ кам? Калаçăттăм чăвашла – вăтанатăп çынсенчен, юрламашкăн чăвашла пултарулăхăм çитмест, сăвăçăсем çырнисем, театрта вылянисем мана валли пулмарĕç.

Тем тăвăттăм çавсене, ачасене пĕчĕклех улталакансене, чăвашлăха йӳне хуракансене. Халĕ те пур-ха вĕсем, чăваш культурине хурлакансем. Чăваш çăкăрĕ тутлă мар, чăваш ĕнин сĕчĕ йӳçĕ, пылĕ пылак мар, сăри япăх тенине вара пачах та

астумастăп. Чăваш чĕлхине, чăваш юррине хурлакансем тупăнсах тăраççĕ.

Çук, чăваш пулма паян та çăмăл мар.

* * *

Пурнăç хĕстерсе çитерсен, çын кам айăпли пирки пуçне ватма пуçлать. Чи малтан айăплине çывăх çынсен хушшинче шырать. Унтан районти е тĕп хулари пуçлăхсене вăрçса илет. Каярах вара тĕнчипе паллă аслă çынсен йăнăшĕсене шырама пуçлать. Пĕтĕм тĕнчене айăпласа тухсан тин хăй патне çавăрăнса çитет. Айăпĕ урăх çынра та мар иккен.

Анчах хăй айăпне пачах йышăнман çынсем те пур. Ун пеккисем уйрăмах урăх çын вăйĕпе пурăнма хăнăхнисем хушшинче чылай. Ĕçпе пиçсе ӳснĕ çын ытларах хăйне шанать, ыттисем пурнăç туса парасса кĕтсе лармасть.

* * *

Тĕлĕк куртăм – тĕлĕнтĕм...

Ирпе ирех эп уçрăм алăка. Коридорта ларать пысăках мар ещĕк. Унта пушă кĕленчесене, вуласа тухнă хаçат-журналсене хурса хăварма ан манăр тесе асăрхаттарса çырнă хут çыпăçтарнă. Хушнине итлерĕм, мĕн ыйтнине хурса хăвартăм.

Каçпала килчĕ пĕр çамрăк. Студент. Укçа кĕрсе пачĕ. Вак укçине илнĕ чухне пĕр талерĕ ӳкрĕ те чăнкăр! туса хăлхана ăскарĕ. Вăранса кайрăм...

Тĕлĕк куртăм – тĕлĕнтĕм, вăраннăшăн – кулянтăм.

* * *

Мĕншĕн çапла пулать-ши? Турри пĕрисене пурне те парать: ӳт-пӳрен те, сăн-питрен те, ăс-тăнран та... Теприсене вара ытла та сахал тивет.

Пĕрисем яланах халăх куçĕ умĕнче, вĕсене асăрхаççĕ, мухтаççĕ. Теприсен шăпи пачах урăхла. Е вĕсем пирки нимех те шарламаççĕ, е ытлашши калаçаççĕ. Мĕншĕн тесен пурнăçра усал ĕçпе чапа тухакансем те тĕл пулаççĕ. Хăйне кăтартас тесе пиçсе çитнĕ ыраш уйне вут тĕртсе çунтарса яма та хатĕр вĕсем.

Турри илеме те, кăмăлпа усаллăха та пĕр пек пайламасть иккен.

* * *

Çамрăк чухне эпир пĕтĕмпех туйăм ытамĕнче. Хамăра мĕн каланине, хамăрпа мĕн пулса иртнине вăхăтра тивĕçлĕ хак параймастпăр.

Инçе çула тухнă чух анне мана калатчĕ: «Урлă çулу тăрăх пултăр», – тетчĕ. Сывпуллашса утаттăм, анчах мĕншĕн çапла калани пирки питех шутламастăмччĕ. Анне каланине сăмах ваййи вырăнне кăна хунă пулас ун чухне.

Çав сăмахсен пĕлтерĕшне халĕ тин тавçăрса илтĕм. Çитес çĕре çитме те унтан киле килме те çул такăр пултăр, урлă выртан чăрмавсем ан пулччăр тенĕ ĕнтĕ аннеçĕм.

Тен, çав сăмахсене пулах утатăп халь хам çулпах. Тем чухлĕ ансăр пулсан та, сукмакăм ман хамăнах.

* * *

Тĕрĕсех турăм-ши, тусăмсем? Аллă çула çитиччен ăс пухрăм, ваттисемпе калаçрăм, вулама тăрăшрăм, унтан тин çырма лартăм.

Эпĕ вĕреннĕ вăхăтра ыттисем вуншар кĕнеке пичетлесе кăларчĕç. Кая юлтăм пулас, каçарăр. Анчах çырмалли, хама сума сăвакансене каламалли тупăнсах тăрать.

Халĕ вара пĕртен-пĕр тĕллев – каламаллине каласчĕ, хам пуçра çеç тытса усрас марччĕ. Тен, кама та пулин пурнăçра усăллă пулĕ?

* * *

Пуçа шухăшлама, чĕлхене калаçма тунă. Калаçăттăм, анчах юнашар Çын çук. Урам тулли этем, кама сăмах чĕнем-ши? Хăш чĕлхепе калаçăва пуçлам-ши?

Çитрĕм утса ача-пăча валли тумтир сутакан лавкка патне. Тăраççĕ кунта калаçса упăшкипе арăмĕ. Çепĕç чăваш чĕлхи ачашлать ман хăлхана. Юнашарах пĕчĕк ачи тăрать. Унталла-кунталла пăхкаласа илет. Ашшĕпе амăшĕ ăна валли мĕн илесси пирки калаçаççĕ пулин те, сăмах чĕнмест, ют çĕршыв çынни пек ним шарламасăр тăрать.

Ак амăшĕ пуçларĕ ачипе калаçма, паллах, вырăсла.

Çапла халь хулари чăваш çемйинчи йăласем. Хамăр тăмсай пулнăран малтан тăван чĕлхерен, унтан хамăртан сивĕнеççĕ пирĕн ачасем.

* * *

Пĕр хăнăхса çитсен тамăкра та лайăх теççĕ. Колхозра та çавах. Малтан хресченсене колхоза вăйпа кĕртнĕ. Халĕ вара унтан тухма май та пур, тухас текенсем пурпĕрех сахал. Колхозран тухсан пур ыйтăва та хăвăн татса памалла, ĕçлессе те урăхларах ĕçлемелле.

Вăй хурса ĕçлесе шурă кулач çийиччен колхозра тĕрткеленсе çӳресех хура çăкăр çисе пурăнам теççĕ хăшĕ-пĕрисем.

* * *

Чунсăр та вăйсăр япалана шансах каймастăп. Чунăм ман тĕпелти кĕтесре çакăнса тăракан турамăш сăнне чĕрĕ вăй шутне хумасть. Тепĕр чух вăл музейре çакăнса тăракан сăнӳкерчĕк евĕр кăна курăнса каять. Музее пынă пĕр çын та ача тытса ларакан хĕрарăм сăнне чуптумасть. Чиркӳре вара ăна пуççапаççĕ, чуптуса чуна пусараççĕ.

Эпĕ хама Хĕвеле хирĕç тăрса пуç тайнă чух вăйлăрах туятăп. Çĕрпе калаçнă чух вăл мана ăнланнине сисетĕп. Вăрман та ман майлă, Уйăх та ман тус.

Ман туррăм – чĕрĕлĕх турри. Тен, çавна шаннипех пуласлăх пирки иккĕленӳ çук. Çăкăрлă-тăварлă пурăнма май пуррине уççăнах куратăп.

* * *

Патшан манпа мĕн ĕç пур? Пурăнтăр вăл хăй пурнăçĕпе. Эпĕ пурăнам хам пĕлнĕ пек. Пурнăçри тĕллевсем пирĕн пачах урăхла.

Патшан пуçлăх пулмалла, çĕршыва ертсе пымалла. Çав хушăрах хăйне çывăх çынсене те асăрхасах тăмалла. Кĕвĕç чунсем, сутăнчăксем ун çумĕнче тупăнсах тăраççĕ.

Ман ун пек хăрушлăх çук, пурнăçăм та урăхла. Мĕн тумаллине эп патша каламасăрах пĕлетĕп. Çĕр пиççе çитсен ман акана тухмалла, тырă акмалла. Вырма вăхăт çитсен пухса кĕртмелле. Ача-пăчаллă пулмалла, выльăх-чĕрлĕх тытмалла. Мĕнле пурăнмаллине эпĕ хамах пĕлетĕп.

Патша пурăнтăр хăйне май, анчах мана чăрмав ан кӳтĕр, ман çула ан пӳлтĕр, телее ан хуçтăр.

* * *

Хĕрача вăл амăшĕ каланине пысăка хурать. Качча тухсан та, хăй ача амăшĕ пулсан та ун сăмахĕнчен тухаймасть.

Хунямасем вара пулаççĕ тĕрлĕрен. Пĕрисем тӳрех кĕрӳшне пулăшма пикенеççĕ, вăл тунă ырă ĕçсене асăрхасах тăраççĕ. Хăш чух хĕрне те ятласа илеççĕ.

Теприсем вара пачах урăхла. Кашни утăмрах хĕрне мухтаççĕ. Вĕсен шучĕпе çамрăк арăма турăш вырăнне лартмалла та пуççапса кăна пурăнмалла. Çапла пурнăç тума пулĕ-ши? Мĕншĕн çакна тавçăрса илеймеççĕ-ши хăшпĕр хунямасем?

* * *

Эпĕ ĕçке ярăннă çынна хисеплеменнине пĕлетĕн вĕт-ха. Апла пулсан мĕншĕн манран ӳсĕр пуçпа пулăшу ыйтатăн? Манпа тĕл пуличчен ĕçме пăрах, хăв çине, пурнăçу çине урă куçпа пăхса ил. Тен, ун чухне сиксе тухнă йывăрлăха хăвах çĕнтерсе илĕн. Ӳсĕр пуç – кахал пуç. Унта ытларах айван та усал шухăшсем кăна çуралаççĕ. Шăпах çавсем çынна кӳрентерекеннисем пулаççĕ, ирсĕр ĕç еннелле туртаççĕ.

Санпа калаçас кăмăлăм сӳнмен-ха. Анчах эсĕ ĕçме пăрахасса кĕтсе илĕп-ши?

* * *

Çылăхăм ман ытла пысăк пулас çук. Вăйăм çитнĕ таран пурне те пулăшма тăрăшрăм – тăвансене, ентешсене, чăвашсене... Хама хам кăна пулăшаймарăм.

Ĕмĕтленни пурнăçа кĕреймерĕ. Ватлăхра çăкăрлă-тăварлă пурăнма мулăм та çук. Йывăр кунсем килсе çитсен мана аса илекенсем пулĕç-ши? Ăшă сăмах калĕç-ши? Вĕри сывлăшпа типсе ларнă çăвара йĕпетмелĕх шыв ăсса паракан тупăнĕ-ши? Çăкăр-тăвар хире-хирĕç тенине шута илĕç-ши?

* * *

Раççее пуçлăхсен çĕршывĕ тесен те юрать. Пур çĕрте те пуçлăх пуласшăн çунса çӳрекенсене куратăн. Ĕçлесшĕн мар, хăйне пăхăнтарасшăн, ыттисене вĕрентесшĕн. Министр пулма та, президент пулма та хатĕр. Анчах çакна ăнланмаççĕ, пуçлăх пулма турă пани кирлĕ.

Пăсăк та айван хуçан усси çук. Ăна пурпĕр никам та

итлемест, халăх ун хыççăн каймасть. Пуçлăх шутĕнче тĕрткелешсе çӳрени ун чух çынсене култарни çеç пулать.

* * *

Тĕлĕк куртăм – тĕлĕнтĕм...

Пыратăп пек урампа. Арçынсен питĕнче пĕр пĕрчĕ савăнăç та юлман. Ăш çуннипе пирус хыççăн пирус чĕрте-чĕрте яраççĕ, хĕрарăмĕсенчен пăрăнарах утаççĕ.

Сăлтавĕ мĕнре-ши? Шыраса тупнă тет пĕри вĕр çĕнĕ эмел. Çав эмеле арçынна парсан вăл ача çуратакан пулать тет. Çемьере вара пĕр ачине арăмĕ, теприне упăшки çуратма тытăнать тет. Хĕрарăмпа арçын хушшинчи чăн-чăн пĕртанлăх çавăнтан пуçланать тет.

Уттартăм ĕçе. Унта та çавах, тунсăх арçынсем туллиех. Ĕç кунĕ вĕçленсен те киле кайма васкамаççĕ, арăмĕсем çав эмеле апат çине ярса парасран хăраса лараççĕ. Эпĕ те ним тума аптраса тăратăп.

Сасартăк телефон янраса кайрĕ. Арăм шăнкăравлать пуль тесе чупса пытăм. Телефон мар иккен. Вăранса кайрăм...

Тĕлĕк куртм – тĕлĕнтĕм, вăраннăшăн – савăнтăм.

* * *

Юмах ятăм, юптартăм – чике тăршшĕ тыттартăм тенĕ ĕлĕк ваттисем. Юмахпа ытларах ачасене савăнтарнă. Пурăнасса вара пурнăç кăтартнă пекех пурăнма тăрăшнă.

Халĕ вара чăваш çыравçисен хушшинче пĕр пысăк юхăм пур. Юмахран истори тăвасшăн çунаççĕ, çыраççĕ те çыраççĕ, кĕнеке хыççăн кĕнеке кăлараççĕ.

Çакă вăл халăхăн ăс-тăнне пăтраштарни пулмĕ-ши? Туйăм шайĕпе çеç ĕçлени кунта, паллах, çителĕксĕр. Тĕпчев ĕçĕпе пĕлӳсĕр тĕрĕслĕх патне çывхарма хĕнтерех пуль.

Юмаха юмахшăн тунă. Истори вара чăн-чăн пурнăçран тăрать. Юмахран истори тума хăтланни хăйăртан пӳрт лартма пикенни çеç пулмĕ-ши?

* * *

Юнашар юратнă çын пулмасан пурнăç тути – армути. Тем чухлĕ пурнăçшăн тăрăшсан та усси сахал. Эс тунă ĕçсене тивĕçлипе хак паракан та çук. Ырă тунине те асăрхасах каймаççĕ.

Çапла вара юратусăр пурăнакан икĕ чĕре пĕрне-пĕри чăрмантарса кăна пырать. Пурнăç кал-кал каяймасть, телей валли вырăн хĕсĕк.

Телей чустине юратупа çăрмасан пĕр килте пурăнакан икĕ çыншăн ăшă вырăн çук.

* * *

Эх, Яковлев, Яковлев, Ватă Асаттемĕр, каçар пире. Сан ятна çĕклеймерĕмĕр, Улăп евĕр сăнарна уçса параймарăмăр, айванлăха пула хамăр шая антарса лартрăмăр.

Мĕнлерех-ши эсĕ, чăн-чăн чăваш Улăпĕ? Мĕнле автор çырать – çав çын пек курăнатăн. Юхма çырнине вуласан – Юхма пек...

Сан шая çити çĕкленĕпĕр-ши, сана тĕрĕс хак пама пултарăпăр-ши?

* * *

Хам шухăшран хам хăрап. Кĕтмен çĕртен пуçа пырса кĕрет те чуна асаплантарма тытăнать. Канăçăм вара çухалать. Кама та пулин каласа памасăр е çырса хумасăр хăй ытамĕнчен вĕçертмест.

Тепĕр чух тата пуçăм хама хăратакан шухăшсем те парнелет. Çӳретĕп вара нимĕн тума аптраса. Те хам ытлашши айван, те пуçăм ытла чăрсăр. Ăçта илсе çитерĕ-ши, мĕнле йывăрлăх кăтартĕ-ши?

Хам шухăшран хам хăрап.

* * *

Çук, текех эпĕ çук. Сирĕн умăрта эсир халиччен пĕлекен çын урăх çук. Калаçнă чух манпала иртни çинчен ан тапратăр. Маншăн унта лайăххи нимех те çук. Суккăр пулнă, ĕненнĕ. Эпĕ пурнăçшăн, çемьешĕн тăрăшнине нимĕн вырăнне те хумарĕç, улталарĕç, сутрĕç.

Юратнă хĕрĕмсем хута кĕме пикенчĕç. Пултараймарĕç. Айван-ха вĕсем. Тĕрĕссипе каласан, аслисем ухмаххишĕн ачасем пачах та айăплă мар.

Ачисен савăнăçне, телейне хуçакан ашшĕ-амăшне каçару пулас çук.

* * *

Çĕр çинчи çыравçăсем пурте пĕрле пĕр кĕнеке çыраççĕ. Вулакансем те пĕр кĕнекех вулаççĕ. Çавă пулать Пурнăç кĕнеки. Унтан пуянни, унтан пахи урăх çук, пулма та пултараймасть.

Кашни çыравçă çав кĕнекен уйрăм страницине çырать, хăйĕн ăс-тăнне, шухăш-кăмăлне палăртать. Çав ĕмĕтпе алла эпĕ те хут тытрăм, çак йĕркесене çырса вулакансене парнелес терĕм.

* * *

Таçта инçетре, çӳллĕ сăртсем хысĕнче, хура вăрман варринче çап-çутă кӳлĕ сарăлса выртать. Çав кӳлĕ варринче, кĕмĕл юпа тăрринче ылтăн сăпка çакăнса тăрать. Çав сăпкара сан телейӳ выртать терĕç мана тĕлĕкре.

Кайса пăхрăм, курмарăм. Асаннерен ыйтрăм та, телейӳ сан хăв çумрах терĕ. Çакна чылай пурăнсан тин тавçăра пуçларăм.

Телей вăл хам пуррипе, хам пурăннипе кăмăллă пулни, умри тĕллевсем пурнăçланса пыни иккен.

Телейлĕ пулма кирлех пуль тетĕп çирĕп сывлăх, хăвна килĕшекен ĕç, юратупа чăмăртаннă çемье, ыттисене усăллă пулнине яланах туйса тăни, пурлăх çителĕкли, ăс-тăнран, сисĕм-туйăмран чухăн марри.

Телей вăл çумăр пĕлĕчĕ пек капланса килсе çӳлтен ӳкмест. Ăна пĕрчĕн-пĕрчĕн пухмалла, чуна парса туптамалла. Эппин, кашни çынах – хăй телейĕн тимĕрçи.

# 1992 çул

* * *

Мана тĕл пулсан, ытлашши ырласа ан калаçăр-ха. Мухтава тивĕç ырă ĕçсем эп тăвайман-ха. Ĕçлетĕп ыттисем пекех, тен, кăшт уççăнрах; юрататăп чăвашсене, тен, кăшт ытларах...

Мана эсир сывлăх сунăр, ăс парăр, пурнăçа вĕрентĕр. Чылай пурăнсан та хама эпĕ ача евĕрех туятăп. Пĕлменни нумай, курманни чылай. Пурнăçра тунă йăнăшсене шутласа та кăлараяс çук.

Мана эсир ытларах ăс парăр.

* * *

Эпир усă куракан шухăшсем вĕсем çав тери нумаях та мар. Пĕрне манатпăр, теприне аса илетпĕр, унтан каллех манатпăр...

Çапла вара пĕр шухăшах пĕр çĕртен тепĕр çĕре, пĕр вăхăтран тепĕр вăхăта вĕçсе çӳрет.

Çакă вăл ман шухăш текен çынна çапла калас килет: ан васка-ха, тĕнче культурине пĕлменрен кăна çавăн пек туйăнать; кăштах вуласа пăхсамччĕ, авалхи кĕнекесене тытса курччĕ...

Пире халĕ те Демокрит е Сократ, Гомер е Омар Хайям, Ибн-Сина е Фирдоуси каланă шухăшсемех пулăшса пыраççĕ. Библире çырса хăварнинче те паян кирли сахал мар. Шухăш вăл иçĕм çырлинчен тунă эрех пекех; мĕн чул ватăрах, çавăн чухлĕ хаклăрах.

* * *

Чăваш йăли çапла: çын шутне кĕрес тесен этемĕн кил-çурт çавăрмалла. Хăй ĕмĕрĕнче пӳрт лартса курман çын хисепре мар.

Халăх пирки те çавах. Ирĕк халăх пулас тесен уйрăм çĕршыв кирлĕ. Хăй патшалăхне тăвайман халăх сумлă пулас çук. Вăл яланах чура шутĕнче. Ăна шеллеççĕ, хĕрхенеççĕ. Хисеплессе вара хăй тĕллĕн пурăнакан ирĕк халăхсене çеç хисеплеççĕ.

* * *

Çук, Шупашкар, чăвашлăха хӳтĕлекен хула мар. Кунта веçех вырăсла: йĕркисем те, калаçасси те, ятлаçасси те. Пуçлăхсем те вырăссем.

Чăваш юрри янрамасть парксенче. Шупашкар каччисем ташламаççĕ чăвашла. Ялтан килнĕ çамрăксем те пăсăлаççĕ, иртĕхеççĕ вырăсла.

Çук, Шупашкарта халь чăвашлăх питĕ сахал-ха.

* * *

Эх, чăвашсем, чăвашсем, мĕншĕн эпир пĕчченрех? Темшĕн инçе пăлхарсем?

Çак пăтрашуллă вăхăтра пурте ав шыраççĕ несĕл тымарĕсене. Чĕлхе тупрĕç тĕрĕксем, пĕччен мар халь çармăссем, ирçесем, пĕрлешеççĕ славянсем...

Чăваш кăна пĕр-пĕччен. Тусĕ çук ун таврара. Апла пулсан пĕр тĕллев – пирĕн халь пĕрлешмелле. Чăмăртанса вăй илмелле. Шанчăкăмăр пирĕн веçех хамăрта.

* * *

Пултăм Хусанта, куртăм туссене, унти паллă çынсене. Кĕтсе илчĕç, хăна турĕç ырă кăмăлпах.

Улшăнусем Хусанта сисĕнеççĕ самаях. Тĕп хула сăн-пичĕ курăнать аванах. Илтме пулать пур çĕрте те тутарла калаçнине, куçăм темшĕн час асăрхать тутарла çырнисене. Тутарсем пурнăçне тытса пырасшăн тутарлах.

Чăвашсем мĕнле-ши? Наци туйăмĕ вĕсен тутарсенне çитĕ-ши?

* * *

Чылай пурăнтăмăр. Анчах пурнăçран вĕренсе пыраймарăмăр. Тасамарлăхран та тасалса пĕтеймерĕмĕр. Петĕр патшаран пуçласах Европа еннелле пăхкаларăмăр, ун шайне çитеймерĕмĕр.

Ал-урана ватиччен, шăм-шака хуçиччен мекĕрленсе ĕçлеме пĕлетпĕр-ха, ăс-тăн вăйĕпе лайăххрах усă курма хăнăхаймарăмăр.

Темшĕн тата ватас, аркатас йăла ытла хăвăрт вăй илсе пычĕ. Пĕрисем пурлăх тăваççĕ, теприсем çĕмĕрсе пыраççĕ. Илем те хисепрех мар.

Илем ҫине алӑ ҫӗклекен ҫамрӑксене телейлӗ ҫынсем теме ҫук. Чирлӗ те суранлӑ чунсем ҫеҫ вӗсем.

* * *

Темшӗн ҫапла туса янӑ-ҫке мана: курмалла маррине куҫӑм часах асӑрхать.

Акӑ тухрӑм урама, хуллен уттартӑм анаталла. Ман умра пырать, ав, саплӑклӑ нускиллӗ арҫын. Те саплӑкӗ урӑхларах тӗслӗрен, те утти палланӑ ҫын утти евӗр пулнӑран куҫа илеймесӗр утса пытӑм хыҫалтан. Урасене ирӗкрех ятӑм та шайлашрӑм ҫав ҫынпа. Чӑн та, пӗрле ӗҫлекен доцент пыра парать. Сывлӑх сунтӑм та хаҫат сутакан киоск патӗнче тӑрса юлтӑм.

Чылайччен пӑхса тӑтӑм саплӑклӑ нускиллӗ доцента.

Эх, самана, самана! Хӑҫан нумай вӗреннӗ ҫынна тивӗҫлипе хак парасси йӑлана кӗрӗ-ши?

* * *

Ачамсене шкула вӑйпа хӑваламан. «Виҫҫӗ» паллӑ илсен те ятламан. «Пиллӗк» илнишӗн те парне паман. Пӗр кун сиктермесӗр шкула ҫӳрӗр те уроксене тӗплӗн хатӗрленӗр теттӗм. Ларатчӗҫ вара ҫырса, вуласа, тепӗр чух ашшӗпе ӑмӑртсах. Выляма тухса кӗрӗр тесен те васкамастчӗҫ.

Тӗрӗс турӑм-ши, пӗлместӗп. Хӑйсем ача-пӑчаллӑ пулмасӑр хӗрӗмсене хак пама иртерех пуль тетӗп-ха...

* * *

Хӗрачасене ҫамрӑклах килтен кӑларса янине ырламастӑп.

Ӑс-тӑнран, туйӑмран ҫирӗпленсех ҫитмен хӗрача умне кӗҫех йывӑрлӑхсем сике-сике тухаҫҫӗ. Вӗреннӗ ҫӗрте те, ӗҫре те, пурӑнмалли вырӑн шыранӑ чухне те юнашар тӑван амӑшӗ ҫукки самаях сисӗнет. Хута кӗрекен те сахал. Юрату туйӑмӗ хыпса илсен те пӗчченех. Ӑс паракан ҫук...

Чӑваш хӗрӗ чӑрсӑр арҫын мӑшкӑлӗ пулнине пӗлсен чунӑм ыратать. Ытларах ашшӗ-амӑшне ятлас килет. Чӑваш хӗрӗсем ҫамрӑклах сапаланса кайнине сивлетӗп.

*  *  *

Çĕр çинче чи хакли хĕрарăм ури. Тӳррĕн каласан та, вăлтса систерсен те вăл çаплах.

Килте ик-виç хĕрарăм пулсан, пушмак кĕли çаптарса ĕлкĕрме çук. Лешĕ вара, асфальт текенни, çиет те çиет, пушмак юсакансем валли ĕç тупăнсах тăрать...

Хĕрарăм ури – арçын туйăмне хускатакан вăйсенчен пĕри. Умри куçа илĕртекен ура курăнса кайсан, арçын васкарах утма пуçлать...

Хĕрарăм ури вара ăна таçта çитиех илсе кайма хатĕр. Укçатенкĕ тăккаласси те, çемье арканасси те çавăнтанах пуçланать.

Ытла та хакла ларать иккен хĕрарăм ури.

*  *  *

Эпĕ пурăнма пуçлани тахçанах. Куртăм пурăнса Сталинпа, Хрущевпа. Иртсе кайрĕ шавласа, кĕрлесе Брежнев вăхăчĕ. Пит иртĕхсе кайнисене чарма пикенчĕ хăюллă Андропов. Кăштах астуса юлтăм чирлĕ Черненко генсека. Малтан самаях килĕштернĕччĕ нумай калаçакан Горбачева. Халĕ вара кĕтсе пурăнатăп мĕн те пулин ыррине Ельцинран...

Çук, эп урăх самана сăвăçи. Мана эсир кураймăр пуçлăхсене мухтаса юрлакансем хушшинче. Тен, çавна пулах ман ятăма асăрхаймăр преми пама тăрататакансен ушкăнĕнче.

*  *  *

Çураласса та хĕнпе çуралнă пуль, кун куричченех ылханакансем тупăннă пуль.

Атте те ылханчĕ пуль, анне те ылханчĕ пуль. Тен, çавăнпах пĕччен ӳсрĕм пуль. Атте-анне юратăвĕ мĕнлине чухлаймарăм. Тен, çавăнпах хытă чунлă пултăм пуль. Çын макăрни те, кулнивыляни те чĕрене тивмест, чуна хускатмасть.

Кам пулăшĕ халь мана? Ман чĕрене юратма вĕрентекен хĕрарăм тупăнĕ-ши?

*  *  *

Эпĕ хăрама пăрахнă. Телефонпа калаçнă, лекцисенче шухăша пĕлтернĕ чухне юриех сăнаса лараканcем пулсан та хăрамастăп. Вăрттăнлăх ман çук. Каламаллине уççăнах калатăп.

Тен, çавăнпах хăш-пĕрисене пит килĕшсех каймастăп.

Тепĕр тесен, мĕншĕн ман кашнинпех килĕшмелле вара? Официантка мар, стюардесса та мар... Эпĕ хам евĕрлĕ çын. Лайăхрах пĕлес тесен, кĕрсе курăр эпĕ мĕнле пурăннине, мĕн çинине-ĕçнине, вуласа пăхăр мĕн çырнине. Хама курнипе çеç мана эсир пĕлеймĕр.

* * *

Чăваш арçынĕ камшăн лайăхрах-ши: чăваш хĕрарăмĕшĕн-ши е вырăс хĕрарăмĕшĕн-ши?

Чăвашăн арăмĕ кам пулнине пĕлме йывăрах та мар.

Арçын хăйне хĕрарăм умĕнче джентльмен евĕр тыткалаймасть, урампа пĕрне-пĕри хулран çавăтса утмаççĕ, автобусран тухнă чух арçын хĕрарăма алă памасть, киле пырса кĕнĕ чух арçын аллинче нихăçан та чечек çук пулсан, пĕлсех тăрăр – ун арăмĕ чăваш.

Арăмĕ вырăс пулсан чăваш хăйне пачах урăхла тытма пикенет. Юрама тăрăшать, алла ларасшăн çунать. Арçын ун чух урай çума та, апат пĕçерме те, кĕпе çума та хăвăрт хăнăхать.

Арăмĕ ăна вара санран çын турăм тесе аса илтерсех тăрать.

Чăваш арçынĕ пуринпе те пĕр пек мар иккен.

* * *

Чăваш хушшинче пĕрлĕх çукки ыттисемшĕн савăнăç кăна. Эпир пĕр-пĕринпе харкашса пурăннă вăхăтра вĕсем хăйсен ĕçне туса та хураççĕ. Пурлăха, суту-илӳ ĕçне хăйсен аллине ярса илеççĕ, пуçлăх пуканĕ патне çывхараççĕ. Чăвашсем аялти хутра тĕрткелешсе çӳреççĕ, лешсем çӳлте лăх-лăх кулса лараççĕ. Хăй халăхне хурлакан чăваш тупăнсан вара ăна çĕклеме пуçлаççĕ, мухтаççĕ, ырлаççĕ, ун пуçне çавăрса яраççĕ. Тен, çавна пулах чăвашсене пĕрлешме, пĕр-пĕринпе туслă пулма чăрмантаракан çынсем тупăнсах тăраççĕ.

* * *

Христос пек, халăха хăй хыççăн илсе кайма хăтланакансем тĕнчере сахал мар пулнă. Халĕ те пур-ха вĕсем. Ĕненме хушаççĕ, хăй хыççăн утма чĕнеççĕ.

Анчах халăх ывăнса çитрĕ, никама та шанми пулчĕ курăнать. «Ан турткалăр-ха пире», – текенсем те тĕл пулаççĕ.

Мĕншĕн-ха пурин те пĕр çын хыççăн утмалла, пĕр çынна çеç ĕненмелле, пĕр çын хушнă пек çеç пурăнмалла?

Кашнин хăйĕн çулĕ пултăр, кашни хăйне май пурăнтăр, ыттисене ан чăрмантартăр, çын телейне ан хапсăнтăр.

Çын хыççăн çеç утакан кĕçех урăххин мĕлки пулса тăрĕ, хăй вăйне шанми пулĕ.

* * *

Ялта пурăнакан чăваш хĕрарăмне тĕкĕр кирлех мар. Ларать тĕкĕр пысăк пӳлĕмре йăлтăртатса, пӳртре мĕн пулса иртнине асăрхаса. Тĕкĕр çине ӳкнĕ хĕвел шевлисем выляса савăнаççĕ. Пукан çинче ларакан кушак та хăйне тĕкĕр çинче курать. Уçă кантăкран вĕçсе кĕнĕ лĕпĕш те тĕкĕр çине ларса хăй илемĕпе киленет...

Чăваш хĕрарăмĕн кăна тĕкĕр çине пăхса илме вăхăт çук. Васкамалла, ĕçлемелле, пурнăçшăн тапаçланмалла. Вăл йывăрлăха хăй çине илме хăнăхнă. Сывлăхне те шеллемест. Илемне те хĕрхенмест.

* * *

Чăваша улталама йывăрах та мар иккен. Мĕншĕн тесен унăн хăйне хăй шанманни те пур. Вăл ытларах ыттисем каланине ĕненет. «Чăваш тытса пăхмасăр ĕненмест», – тесе ахалех калаççĕ курăнать. Чăваш тытса пăхмасăрах ĕненет.

Мĕн чухлĕ ултав курмарĕ-ши чăваш хăй ĕмĕрĕнче! Кам вĕрентĕвĕпе кăна пурăнмарĕ пуль. Паян та çавах. Çыраççĕ те çыраççĕ, пухусенче кăшкăрашаççĕ, чăваша ăс парасшăн çунаççĕ. Вĕсене ĕненсен чăваша уйрăм патшалăх та, тăван чĕлхе те кирлех мар. Президент та ытлашши. Чăваш ачисем чăваш пулса ӳсни те япăх иккен.

Çапла вĕрентеççĕ пире. Çапла улталаççĕ чăвашсене.

* * *

Каснă чĕлле тепĕр хут çыпăçтарма питĕ хĕн. Çемьере те çавах. Килĕшӳлĕх пĕтсен, пĕрне-пĕри ăнланми пулсан, çемье кĕçех арканса каять. Тем чухлĕ вăй хурсан та, кăштах юсасан та малтанхине çитес çук.

Çемьери йĕркесене сыхласа тытса пыраканĕ пулмалла. Çакна эпĕ анне вилсен тин тавçăрса илтĕм. Вăл пур чух пурте йĕркеллĕччĕ. Çемьере тăван чĕлхе те, чăвашлăх та пурччĕ. Халĕ

вара урăхла. Темшĕн хама ют çын пек туйма пуçларăм. Ачамсем те хамăнах, анчах вĕсенче чăвашлăх сахал. Арăм та çавах, анчах ун пуçĕнче çăмăлттай та чăрсăр хĕрарăмсен шухăшĕ йышланса пыни куçкĕрет.

Паллах, кунта хирĕçӳ пур. Канăç памасть вăл мана. Мĕншĕн çапла пулчĕ-ши, ăçта йăнăш турăм-ши? Мĕншĕн ачамсенче чăвашлăх вăй илеймест-ши? Тен, хула пурнăçĕ çапларах? Тен, хула вăл чăвашлăха аркатса пыракан вырăн кăна? Чăваш ен хулисем уйрăм çĕршыв пек курăнса тăмаççĕ-и-ха?

* * *

Мĕнех-ши ĕнтĕ вăл пурăнăç? Пытанмалла выляни кăна мар-ши? Пур çĕрте те шырав. Чи малтан çине тăрса шыратпăр анне кăкăрне. Кăштах ӳссен – тетте. Хамăр тĕллĕн апат çиме хăнăхсан – тутлăраххине. Каярах пĕрне-пĕри шырани, пĕр-пĕринчен пытанасси пуçланать. Çапла хуллен пурнăçри вăйă йĕркине хăнăхса çитетпĕр. Тепĕр чух вара суясси те, улталасси те пулать. Хамăра пачах урăхла çын пек кăтартма тăрăшни те, çук ята, çук чапа пысăклатма пикенни те вăйă йĕркипех пулса пырать.

Вăйă вăхăчĕ вара пурин те пĕр пек мар. Пĕрисене часах тăрă шыв çине кăлараççĕ. Теприсем мĕн виличченех пурнăça выляса ирттереççĕ.

Халĕ вара вылякансем политикăра çеç мар, экономикăра та самаях йышлă. Демократиллĕ çĕнĕ юхăма хутшăнса хăйсен чăн-чăн питне пытараççĕ. Каллех вăйă, каллех эксперимент. Çак тапхăра чăтса ирттерсен эпир чăннипех вилĕмсĕр çынсем пулăпăр. Пирĕн ятпа палăк лартмалла. Анчах вăйă пуçлăхĕсем пирĕн чăтăмлăха тивĕçлипе хаклĕç-ши? Е эпир малашне те вылямалли пуканесем çеç пулса юлăпăр-ши?

* * *

Кирлĕ мар, кирлĕ мар, кĕвĕçмешкĕн кирлĕ мар. Поэтсене хĕрарăмсем юратнишĕн кĕвĕçмешкĕн кирлĕ мар.

Хĕрарăм чунĕ паян хытса ларнă чуста пек. Пур çĕрте те çитменлĕх. Ырă сăмах та сахал.

Хĕрарăма ăшă сăмах каласа ырă туйăмсене хускатакан çын паян поэт кăна.

Хĕрарăмсем поэтсене юратаççĕ пулсан, поэзи пурăнать-ха.

* * *

Арçынпа хĕрарăма пĕрне-пĕри юратма тунă. Çакă вăл калама çук пысăк телей. Анчах вăл кашниншĕнех мар иккен.

Юратма пĕлмен арçын хăй арăмĕн туйăмне, ӳтне-пĕвне ытти арçынна парнелени те тĕл пулать.

Хĕрарăм та çавах. Хăшĕ-пĕри упăшки урăх хĕрарăмпа пулнă хыççăн кăшт юлнă туйăмпа кăна йăпанкаласа пурăнать.

Мĕн тăвас тен, çемьери телее çывăх çынна юратма пĕлменни пĕтерет.

* * *

Христос пек пулар мар, хамăра аннемĕрсенчен мала хурар мар. Атте-аннене вĕрентсе, вĕсене урăхлантарма пикенсе вăя пĕтерер мар. Вĕсем пур-пĕрех пирĕн пек шухăшлас çук, хăйсене пирĕн пек тыткалас çук. Пурнăç виçи те вĕсен самай урăхла.

Атте-аннемĕре хамăр çулпа утманшăн кӳренер мар, вĕсене ятласа кăмăлне хуçар мар. Ытларах вĕсем каланине итлер. Тен, тĕрĕслĕх вĕсенчех. Ватлăхра çамрăксемшĕн усăлли пурах ĕнтĕ.

* * *

Каçаратăп, пурне те каçаратăп. Ман пирки япăх шутлакансене те, сăлтавсăр айăплакансене те, суя сăмах саракансене те, ултавлă ĕçпе пăшăрхантарнисене те...

Çав çынсене эп часах паллатăп: тĕл пулсассăн куçран уççăн пăхаймаççĕ, калаçма тăрсан та чĕлхи уçăмлах мар, хирĕç пынине курсан пăрăнса утаççĕ. Ĕçĕсем те ăнсах пымаççĕ, мана усал тунишĕн хĕн кураççĕ.

Каçаратăп вĕсене. Çăмăллăх паратăп. Ман сăввăмсене вуланă чух, юррăмсене итленĕ чух сире пурсăра та çăмăллăх пултăр. Ман пирки япăх шутланине часрах манăр та усал шухăшсенчен тасалăр.

* * *

Христос пек пулар мар, çынсене Çӳлти Турăпа хăратар мар. Хăравçă пурнăç – пурнăç мар.

Çынна тĕрĕс пурăнма вĕрентнипех лăпланса ларар мар, пулăшса пырар, ырă майсем туса парар.

Хăй вăйĕпе, хăй ĕçĕпе пурăнакан çыннăн çылăхĕ пысăк мар.

Унăн Турăран хăрама сăлтав та çук.

Турă хаярлăхĕ вăрăсене, халăх вăйĕпе пуякансене, ултавçăсене, сутăнчăксене пултăрччĕ. Çапла шутлатпăр-ха та, анчах Турри темшĕн васкамасть, усал ĕç тăвакансен çулне вăхăтра пӳлеймест. Те асăрхаса ĕлкĕреймест, те вăхăтне тупаймасть.

Алхасаççĕ вара лешсем. Усалран та хăрамаççĕ, Турăран та именмеççĕ. Турă сучĕ вăл ырă çынсемшĕн кăна иккен.

* * *

Çылăхсăр çын çук. Виçи кăна пĕр пек мар. Пĕрин вăл пит пысăк, теприн – пĕчĕкрех.

Куçа уçнă-уçманах апат пирки çунатпăр, какай яшки çиетпĕр, чăх тукмакки тытатпăр.

Шывра савăнса ишсе çӳрекен хур-кăвакал ĕмĕрĕ кĕр пуçланиччен кăна. Тин çеç ӳссе çитнĕ вăкăр валли те хуçи хырăмне пула çивĕч çĕçĕ тупăнать. Каллех юн юхать, пурăнăç татăлать.

Тепĕр чух тата арçынпа хĕрарăм хушшинчи юрату та çылăхлă.

Юратăва пула тĕвĕленнĕ çĕнĕ чун хăй пурри çинчен чи малтан хĕрарăма пĕлтерет. Çав самантран пуçланать те юрату тĕшшин шăпи. Пĕрин вăл телейлĕ, теприн – ылхануллă. Чылайăшĕн пурнăçĕ çутă куричченех татăлать. Çылăхлă çынсен шучĕ те ӳссех пырать. Уйрăмах хальхи вăхăтра юрату çине çăмăллăнрах пăхма пуçланăран-ши е çылăх пирки пачах шухăшлама пăрахнăран-ши?

* * *

Ял витĕр тухнă чух кашни сана сăмах чĕнет, сывлăх сунать, çулу çăмăл пултăр тет.

Кăткă йăви евĕр йăшăлтатса тăракан хулара вара йĕркесем пач урăхла. Уйрăм çынна асăрхами пулатăн. Куç умне çын мĕлкисем кăна туха-туха тăраççĕ. Палланă çын хирĕç пырать пулсан та, асăрхамасăрах иртсе каятăн. Хăвна сăмах чĕнсен кăна куç уçăлса каять.

Эккей, хулара куç мăкалать. Çынна çеç мар, хваттер тулашĕнчи çӳп-çапа та курми пулать. Çул урлă выртакан хăма таткине те илсе пăрахакан тупăнмасть. Сывлăх сунакан та сахал.

* * *

Лайăх-и, начар-и – сăввăмсемшĕн вăтанмастăп. Унта çуккă усаллăха, хаярлăха вĕрентни, пулманнине пулнă пек кăтартса суйса çырни. Унта çуккă унтан-кунтан пухнă, ытти поэтсенчен чĕпĕте-чĕпĕте илнĕ йĕркесем. Унта çуккă Есенин, Ахматова, Цветаева сăввисенчи шухăшсене тĕпе хурса чăвашла хайлани.

Начар-и, лайăх-и – пурте хамăн, хам пултарнă таран хайланисем. Ку таранччен чăвашра вуншар кĕнеке, пиншер сăвă çыракан та пулнă. Анчах вĕсем çырнине паянхи пурнăç али витĕр кăларсан, пĕлтерĕшне çухатманнисем пит нумаях пулас çук.

* * *

Чăвашсем эпир йышлах мар çав. Пултаруллă çын вилсен, ун ĕçне малалла тăсакан пит часах тупăнмасть.

Вырăссем талантсемпе пирĕнтен пуянрах. Пĕри ют çĕршыва тухса кайсан – тепри тупăнать. Пĕри вилсен – тепри пур.

Пирĕн вара кашни çын шутра. Апла пулсан, пĕрне-пĕри упрамалла, çын такăнсан часрах алă пама тăрăшмалла.

Сахаллăн çав эпир.

* * *

Хальхи пăтрашуллă вăхăт пирки шутласан, пуçа тем те пырса кĕрет. Тен, эпир питĕ ăслă çынсем ытлашши нумайран çакăн пек пурнăçа çитсе тухрăмăр. Малтан ăслăн курăнакансем каярах вара ухмаххисен шутне тăрса юлчĕç.

Маркс, ав, ялан сĕтел хушшинче ларнăскер, хăй çырнине пурнăçра тĕрĕслесе курайман. Ленин пек ытларах теори ытамĕнче пурăнса ирттерекенсем те татах пулчĕç. Вĕсем наукăлла коммунизм пирки пакăлтатнă вăхăтра ыттисем тулăх пурнăç çулĕ çине ӳкрĕç, пирĕнтен иртсе кайрĕç.

Тупăнтăрччĕ малтан кăшт айванраххăн курăнаканни, каярах ăслисен шутне кĕрекенни. Ăслисем нумай. Çĕршыва йĕркеллĕ тытса пыма пĕлекенсем сахал.

Ăсĕ çеç мар, ĕçĕ те пултăрччĕ.

* * *

Юр витĕр шăтса тухнă чечек ман юрату чечекĕ пулмарĕши? Чарăнса тăма вăхăт пулмарĕ, иртсе кайрăм.

Чечек чӗнет, чечек кӑшкӑрать. Хӗрача та ҫавах. Ӳссе пиҫсе ҫитсен пӗтӗм кӗлеткипе хӑй патнелле илӗртет. Ҫакӑ вӑл сӑмахпа каламасӑрах паллӑ. Пике туйӑмӗ – ҫырла пек питкуҫӗнче. Анчах ҫакна ытла кая юлса ӑнлантӑм. Вӑхӑтра тавҫӑрса илеймерӗм. Юр витӗр шӑтарса тухнӑ чечеке хаклаймарӑм.

* * *

Пӗлетӗп, эсӗ – хӑрушӑ хӗрарӑм. Эсӗ – Клеопатра. Хӑвпа ҫӗр каҫнӑ кашни арҫынна шуҫӑм ҫути ҫывхарсан ярса паратӑн наркӑмӑшлӑ пылак эрех. Вара каллех ҫӗнӗ юрату пирки ҫунса пуҫӑнатӑн.

Сана курсан пурпӗрех хама кайран мӗн кӗтни пирки шутламастӑп. Санпа пӗрле пуласчӗ, сан ытамунта ҫӗр каҫасчӗ. Тен, ун чух сан кӑмӑлу кӑшт улшӑнӗ, маншӑн ҫӑлӑнӑҫ тупӑнӗ.

Хӑра-хӑрах сан алӑкна пырса шаккатӑп.

* * *

Мана пӗри сӑвӑ ҫырма вӗрентесшӗн пулчӗ. «Ӗмӗр сакки сарлака» юрӑра рифма ҫук вырӑнсем пирки асӑрхаттарчӗ те хама редакцилеме панӑ пулсан во! тӑваттӑм тесе пас пӳрнине кӑтартрӗ.

Сӑввӑн чуна пырса тивекен вӑйӗ рифмӑра ҫеҫ мар. Кунта кирлӗ тарӑн шухӑш, чӗлхе сӗтекӗ, илем туртӑмӗ.

«Шӑп тӑраҫҫӗ шӑпчӑксем», «татрӑм ҫӗмӗрт туратне», «эп чечекрен таврӑнап» тесе ҫыракан ҫурма чӑвашсем чӑн-чӑн чӑвашсене вӗрентни вырӑнлах-ши?

* * *

Усал ҫынна пулӑшакансем хушшинче ыррисем те сахал мар.

Халӑх пурлӑхне ҫаратнине куратпӑр, никама та шарламастпӑр. Ырӑ ҫын пирки суя сӑмах сарнине сисетпӗр – чармастпӑр. Урӑх ҫын шухӑшне хӑйӗн пек кӑтартса е унтан-кунтан турткаласа илсе сӑвӑ ҫыракана туятпӑр – пурпӗр пичетлетпӗр...

Ырӑ ҫын вӑл усал ҫын тӳрленессе шанма пӑрахмасть. Лешӗ унпа усӑ курать, хӑй ӗҫне тусах пырать. Усал ҫулне пӳлекенсем йышлах мар. Чылайӑшӗ айккинчен кӑна пӑхса тӑрать. «Хӑшӗ ҫӗнтерӗ-ши?» – теҫҫӗ. Пачах хутшӑнмаҫҫӗ. Ҫакӑ вара вӑл усала пулӑшнипе танах.

* * *

Кам калать-ха юрату çук, юрату пĕтнĕ тесе? Хĕрарăм пĕтмесĕр юрату пĕтес çук. Веçех çавăнтан килет.

Арçын вăл нумай çул хушши çунакан вулкан пек. Кăштах сĕрĕмленсе тăнă хыççăн йăлкăшса каять. Чĕртекенĕ вара – хĕрарăм!

Арçын вăл юратура айван. Тепĕр чух тата хăй вăйне тĕрĕс хак паманнине кура нушана кĕрсе ÿкет. Юрату уншăн пылак çырла вырăнне йÿçĕ армути кăна пулса тăрать. Çунса каять вара мăнтарăн. Хĕлхемĕ мар, тĕтĕмĕ те тухми пулать. Çавăн чух ăна хĕрхенетпĕр, калаçкаласа илетпĕр те кĕçех манса каятпăр.

Арçынна çунтарса яракан юрату çулĕнчен пурпĕрех пăрăнасшăн мар эпир. Темшĕн çав йывăр çул илĕртсех тăрать.

* * *

Хамăр мĕнле, ачамăрсем те çаплах пуль тетĕп. Çынна ятламастăп.

Çирĕм пĕр çул хушши чирлĕ аннене усрарăм хампала. Палăкĕ çине сăмах çыртăм чăвашла. Ачамсем ман курман ашшĕ ÿсĕр пулнине, ĕçсĕр ларнине...

Пурнăçăм ман усал тĕслĕх пулас çук. Апла-тăк шанчăкăм ман кăштах пур-ха. Ватлăхра та çын евĕрлех пурнасчĕ, «атте» тенине час-часах илтесчĕ.

* * *

Çĕр çинче темĕн тĕрлĕ çыравçă та пур. Чăн чăвашла çыракансемпе пĕрлех тăван чĕлхене алла илейменнисем те тĕл пулаççĕ. Çырасса вара нумай çыраççĕ. Чĕлхи чухăн, сăнарĕ шупка. Кĕнекисем хулăн, туйăм тĕнчи çÿхе.

Тата тепĕр япала. Çыравçăсене икĕ пая уйăрма пулать. Пĕрисен сăвви, калавĕ юрату витĕр сăрхăнса тухать. Тĕнче çине ăшă куçпа пăхни курăнать.

Теприсен пултарулăхĕ хаярлăхпа шăварăнса тăрать. Ялан йÿçсе çÿрекен кĕвĕç чунлă çын та сăвă е роман çырма пултарать иккен. Вĕсене те пичетлеççĕ. Тен, ытларах та. Кĕнекисене илекенсем е вулакансем пур-ши? Çакă никамах та кăсăклантармасть-шим?

* * *

Начар выльăх çумне куршанак та хăвăрт çыпçăнать.

Начар çынпа та çавах. Мĕн кăна çук пуль ун çумĕнче. Чухăнлăхпа çитменлăх юнашарах, чир-чĕрĕ те часах çыпçăнать, телейĕ те пăрăнать...

Тĕреклĕ те ăслă ăру ӳстересчĕ. Часрах урăлса çитесчĕ. Малтан хамăрăн сывлăхлă пуласчĕ. Тен, вара ачамăрсен шăпи те урăхларах пулĕччĕ.

* * *

Атте-аннесĕр çакă çутă тĕнчере эпир пулас çук, пĕрнепĕри курса савăнас та çук.

Шутлатăп та тĕлĕнетĕп: мансăрăн, хаклă тусăмсем, эсир мĕнлерех пурăнаттăр-ши? Йывăр самантра е нимере сире кам пулăшĕ, ĕçкĕ-çикĕре кам юррине итлĕр-ши?

Эпĕ пурри хамшăн çеç мар ĕнтĕ. Тавах атте-аннене. Вĕсен умĕнчи парăма нихăçан тавăрса пĕтерес çук.

Шел, хуланалла вырнаçнă хыççăн ашшĕ-амăшĕ çине урăхларах пăхакан та пур. Ваттисем çи-пуçран чаплах марришĕн, вырăсла начар калаçнишĕн вăтанакан та тĕл пулать. Шупашкара килнĕ ашшĕ-амăшĕпе юнашар мăнаçлăн утма именекен нихăçан та пархатар курас çук.

* * *

Вăй хумасăр, тăкак тӳсмесĕр ăслă та ырă кăмăллă ача ӳстерме çук.

Хăш-пĕр килте укçи-тенки çителĕклĕ пулсан та, тетте тавраш сахал, ӳкермелли сăрă, юмах кĕнекисем çукпа пĕрех. Спорт е музыка еннелле туртăнакана хавхалантаракан тупăнмасть. Чăваш хушшинче ачасене ытти хуласенчи, инçетри çĕршывсенчи илеме кăтартса çӳресси те япăх сарăлнă.

Ытла та йӳнĕ мелсемпе лайăх ача пăхса ӳстересшĕн эпир. Ун пек çул шанчăклă мар.

* * *

Ĕлĕк ялта ырă йăла пулнă, çамрăксем ваттисене итленĕ. Лешсем вара кашни çамрăка хăй ачи вырăнне хурса ăс панă, япăх ĕçрен пăрса пынă. Тĕрĕс тунă. Ача ӳстересси пĕччен тумалли ĕç мар. Ачу тĕрĕс çулпа уттăр тесен, ытти çынсен ачисем

те лайăх пулччăр тесе тăрăшмалла. Йĕри-тавра япăх ачасем нумайрах пулсан, саншăн пысăк йывăрлăх.

Пĕр ӳсĕмри ачасем пĕрлешсе кайиччен ашшĕ-амăшĕсен часрах туслашмалла.

* * *

Çĕр çинче темĕн тĕрлĕ халăх та пур: пĕрмаях ыттисене вĕрентекеннисем, вăрçăпа хăратаканнисем, ыттисене чăрмантармасăр хăйне май пурăнаканнисем...

Чăвашсен те çулĕ хăйне май – чăвашла. Чăваш чăвашла калаçтăр, юрлатăр, ташлатăр, ĕçлетĕр, чăваш туйĕпе çемьеллĕ пултăр, ачисене те чăвашла пăхса ӳстертĕр... Леш тĕнчене те чăвашлах ăсантăр.

Чăвашăн телей виçи те хăйне май. Ăна чăн-чăн чăваш кăна лайăх чухлать.

* * *

Çын вăл вылянă чух кăна чăн-чăн çын. Ĕçленĕ чух – ĕç çынни. Пĕтĕмпех ĕçе парăнать, пурлăх пирки шутлама пуçлать, укçа-тенкĕшĕн çунать.

Апат-çимĕç хатĕрленĕ чухне те çавах. Ĕне сĕтне хăй валли тесе шутлать. Тин çеç çуралнă айван пăрăва пăрса ярать те ĕне çумне хăй пырса тăрать. Мĕнле чее мелпеле чăхха çăмарта тутарса усрать тата. Пушă çăмарта хурса парать те тулли çăмарта илсе тăрать. Чăххи вара тăрăшать, чĕпписене курасшăн çунать. Çĕр çăмарта тусан та ачисене кураймасть...

Çын вăл вылянă чух кăна чăн-чăн çын. Мĕншĕн тесен вăйă тĕллевĕ пĕтĕмпех вăйăра. Ун чух çын пуçлăх та мар, министр та мар, çын кăна.

Тĕлĕнмелле япала иккен вăл вăйă.

* * *

Пасар йĕрки паллă ĕнтĕ: сутакан сутасшăн хаклăпа, илекен илесшĕн йӳнĕпе. Ман сутмалли нимех те çук. Эп яланах илекен.

Пахчаçимĕç, сĕт-çу сутакан чăваш пулсан, хакĕ пирки калаçса тăмастăп. Мĕн чухлĕ ыйтать, çавăн чухлĕ паратăп та илетĕп.

Чăвашсем хулара сутмалăх апат-çимĕç туса илнĕшĕн савăнатăп кăна. Укçана та хĕрхенместĕп. Ют çынна пани мар вĕт, тăвана пулăшни çеç.

* * *

Ман асатте начар чăваш пулман. Яппун вăрçинчен вăл килнĕ медальпе, ефрейтор шучĕпе. Хамăр яла ларма пынă хĕрачана юратса пăрахнă та... Ман пулас асаннене вунă çухрăмран вăрласа килнĕ.

Асатте ăста пулнă кĕсле калама, асанне – юрра. Тепĕр чух, чашăк-тирĕк шăкăртатнă чух, асанне ятлаçанçи тăватчĕ, хăйне ют яла илсе килнишĕн ӳпкеленçи пулатчĕ. Асаттеçĕм лăх-лăх кулса илетчĕ.

Пурăнчĕç вĕсем тăхăрвунна çывхариччен. Халь выртаççĕ юнашар.

Пурăнасчĕ вĕсем пек. Вилсен те тăвансемпе юнашар выртасчĕ.

* * *

Çĕр çинче эсĕ çеç мар. Санран маларах çуралнисем те, санпа пĕр çултисем те, санран çамрăкраххисем те темĕн чухлех.

Кашни ăрăвăн туйăм тĕнчи хăйне май. Шухăшлавĕ те, калаçăвĕ те урăхларах.

Çынсем хăвна лайăххрах ăнланччăр тесен, ваттисемпе ватăлла, çамрăксемпе çамрăкла пулмалла. Вара пĕр чĕлхе тупма та çăмăлрах.

* * *

Усал çын çăварĕнчен тухакан ырă сăмаха ĕненес килмест. Темшĕн çапла туса янă-çке мана. Сăмаха пысăка хуратăп. Ырă сăмах калакан хăй те ырă çын пулмалла пек туйăнать.

Анчах пур чухне те апла мар. Çынсем сăмахпа выляма вĕренсе çитрĕç курăнать. Тепришĕн сăмах вăл хăйĕн чăн-чăн ăс-кăмăлне пытармалли япала çеç иккен. Ĕненсе, хисеплесе пурăнатпăр вара çавăн пек çынна. Лешĕ чее, хăйĕн хура шухăшне, усал ĕçне ырă сăмахпа хупласа пыма вĕреннĕ.

Халĕ вара ытла йăпăлти е питĕ шантарса калаçаканран шикленетĕп. Иккĕленетĕп. Те манпа чунне уçсах калаçать, те сăмах кăна вылятать?

Паянхи çынна пĕлме хĕн. Уйрăмах чылай вĕреннисене, аслă пĕлӳ илнисене.

* * *

Çёртен хакли пурпĕрех ним те çук. Ылтăнĕ те çĕр парни, кĕмĕлĕ те çĕр ачи!

Çĕр вăл аннепе пĕр тан: тăрантарать, тумлантарать, илемĕпе йăпатать, вилсен те хăй ытамне илет.

Çĕр вăл чăтăмлă та ырă кăмăллă. Суранлă пулсан та пурлăхне пирех парать. Хăйне тивĕçлипе тав тăвакансем нумаях мар пулсан та, пирĕншĕнех тăрăшать, пирĕншĕнех пурăнать.

* * *

Çук, макăракан ачасене манпа хăратма кирлĕ мар.

Мана килĕштерессĕ, ман еннелле туртăнассĕ кушак çурисем, йытă çурисем. Амăшĕ аллинчи пĕчĕк ача ман паталла туртăннине те пĕрре çеç курман. Макăракан ача патне пырса тăрсан, вăл часах лăпланать.

Манпа никама та хăратма кирлĕ мар. Ырă та çылăхсăр çынсемшĕн нимле хăрушлăх та çук.

Анчах ман умра ыттисене усал тăвакан çын тăрать пулсан, сыхланăр: шеллеместĕп, касармастăп.

* * *

Хитре хĕрарăма куç хывакан тупăнсах тăрать. Ун пурнăçĕ те икĕ майлă аталанса пырать. Пĕри – çăмăллăх, тепри – йывăрлăх.

Хитре хĕрарăма килтен тухнă-тухманах ют арçынсем асăрхассĕ, ăмсанса пăхассĕ, каласу пуçарма пикенессĕ. Автобуса кĕрсен те е вырăн пама, е юнашар лартма тăрăшассĕ. Ĕçре те кăшт çăмăллăх пур. Пуçлăхсем вăл ыйтнине хăвăртах пурнăçлассĕ, хăй патне чĕнсе каласса илессĕ...

Йывăрлăхĕ мĕнре-ши? Юратма кăмăл тăвакансем нумай пулнинче-ши, йĕри-тавра кĕвĕç чунлă хĕрарăмсем пурринче-ши? Е пурнăса хитре арăмне хаклама пĕлмен упăшкапа пурăнса ирттернинче-ши? Кулянмалли хитре хĕрарăмăн та пурах ĕнтĕ. Анчах ыттисемпе танлаштарсан, унăн хуйхи-суйхи çăмăлрах пуль тетĕп. Ăна пулăшакансем пурпĕрех нумайрах.

* * *

Иртсе кайнă кунсем çаврăнса килес çук. Тен, çавна пулах ĕлĕкхи пирки тавлашса вăя пĕтерес килмест. Вăхăта та шеллетĕп. Мана паян хамăр халь кам пулни ытларах кăсăклантарать.

Кам-ха эпир? Мĕнлерех? Çунат сарса çĕкленмелĕх вăй пур-и пирĕн? Ытти йышлă халăхсем пек тĕнче шайне хăпарăпăр-ши? Упранса юлăпăр-ши? Е урăх халăха тухса пынă май пĕтсе ларăпăр-ши?

Ват асаттесем хăйсен ĕçне туса пынă чиперех, сыхласа хăварнă халăха. Ку тĕлĕшпе эпир хамăрăн тивĕçе йĕркеллĕ туса пыма пултарăпăр-ши?

* * *

Çамрăк чухне Кибеч ятпа çӳремен. Хама эпĕ тăрăшсах ăслăлăх ĕçне хатĕрленĕ, атте панă хушаматпа пичетленнĕ. Сăвă-юрă çырма ача чухнех пикеннĕ-ха, анчах çине тăман. Çуралнă ял ятне илесси сиксе тухрĕ ăнсăртран.

Пĕрре çапла каçпулттипе Ахунпа Атăл хĕрринче уçăлса çӳретпĕр. Кала та пар çавна хамăн хайлава. Вăл ăна ырларĕ, пиçсе çитнĕ япала терĕ. Унтан кĕçех мана Сементер асăрхарĕ, Георгий Ефимов алă пачĕ. Аллă çулта çапла Кибеч ята илтĕм. Эпĕ çырнисем сире кăштах килĕшрĕç пулсан, çав çынсене те тав тума ан манăр. Вĕсем асăрхаман-тăк çыравçă çулĕ çине тăрас çукчĕ, «Ĕмĕр сакки сарлака» юрă та çуралайман пулĕччĕ.

* * *

Çырасчĕ, ытларах чăвашсем валли çырасчĕ. Калас тенĕ сăмахсене шăпах çавсем патне çитересчĕ.

Вырăсла çыракансем пирĕнсĕрех нумай. Кĕнекисем те темĕн чухлех. Вырăсла сăмах вырăса çывăхрах.

Чăваш чунĕ хăйне май. Ăна кирлĕ урăхларах кăмăл-туйăм. Шухăшлавĕ ун хăйнеевĕр. Сăмах вăйне пысăка хурать, пурнăçран илсе тунă сăнарсене килĕштерет. Пуш сăмахпа суя сăнара сивлет.

Лавккара темиçе çул хушши купаланса выртакан кĕнекесене курсан, библиотекăри кĕнеке çинче пӳрне йĕррисем пачах та çуккине асăрхасан çыраканĕсене хĕрхенес килет.

Чăваш валли çырма çăмăл мар.

# 1993 çул

* * *

Çынлăх чакса пынă май выльăхлăх вăйланса каять. Çын хăйне хисеплеме пăрахать. Пурнăç ыйтăвĕсене татса панă чухне те мала ÿкеççĕ тавлашупа харкашу, ултав.

Туслăхра та, арçынпа хĕрарăм хушшинчи çыхăнура та çавах. Таса та илемлĕ юрату вырăнне чăрсăр та ирсĕр ĕç хуçаланма пуçлать.

Ун чухне чăн-чăн юрату туйăмне сывлăш çитми пулать. Ăна пылчăклă атăпа таптама хатĕррисен шучĕ те ÿссех пырать.

Çын пурнăçĕ çынлăхран пуçланать, вĕçленсен те çынлăхпах вĕçлентĕрччĕ.

* * *

Каçарăр мана, тусăмсем, эпĕ юратнă хĕрсемпе хĕрарăмсем. Ман юратăвăн ăшши кăштах чакнишĕн ан пăшăрханăр. Вăхăчĕ çавна май. Ним пытармасăр калатăп – манăн халь çĕнĕ юрату.

Ан ятлăр мана тĕл пулсан чарăнса тăманшăн. Асăрхамасăр иртсе кайсан – каçарăр.

Ман чуна халь урăххи илĕртет, урăххи чĕнет, урăххи кĕтет. Алăка уçнă-уçманах хирĕç чупса тухать. Савăнăçĕ ун сар хĕвел пекех çиçет. Туйăмсем ман веçех çав пике валли. Çавна курас килет, çавна ыталас килет, икĕ çулхи мăнукăма ачашлас килет.

Каçарăр мана, туссем. Манра халь çĕнĕ юрату хĕмленет.

* * *

Çын темле ĕçе те хăнăхса çитет иккен. Юлашки вăхăтра мана кукăр пăта тÿрлетесси килĕшме пуçларĕ.

Мĕнли кăна тĕл пулмасть: кĕвенте пек курпунни, çĕр çумĕпе шăвакан ăман пекки, вăлта вĕçĕ пек кукăрălса ларни...

Выртаççĕ халь ещĕкре тÿп-тÿрĕ пăтасем, хăйсене иккĕмĕш хут пурнăç панă хуçине кĕтсе. Каллех юрăхлă, каллех усăллă.

Кукăр-макăра тÿрлетнĕ чух хам чăтăмлăха уççăнрах туйма пуçларăм. Ĕçĕ вара тупăнсах тăрать.

Темшĕн-çке ман алла ытларах «кукăр пăта» лекет. Камăн та пулсан тӳрлетмеллех ăна.

* * *

Шурă тĕс – юратнă тĕс. Мĕн ачаран çавăн пек. Яш чухне те шурă тĕс, халĕ те çавах.

Мĕншĕн маншăн çак тĕс питĕ хаклă-ши? Ытларах тасалăхпа йĕркелĕхе юратнăран-ши? Е темле урăхла сăлтав та пур-ши?

Шурă тĕс – асамлă тĕс. Шурă тумпа çӳренĕ чух утма та çăмăлрах, ыратни те иртсе каять. Ахальтен мар асаттесем шурă тумпа çӳренĕ, шурă тĕсе мухтанă.

Шурă тĕсе вулатăп. Унта эпĕ иртнĕ ĕмĕрсен çулне куратăп, хама та асăрхатăп, пулас ăрусен кун-çулне те тĕшмĕртетĕп.

Шурă тĕсре эпĕ шуррине çеç курмастăп.

* * *

«Мĕн çитмест-ши пирĕн пурнăçра?» – тесе юрлать Светлана Азамат.

Тӳрех калатăп, чăваша паян тарăн пĕлӳпе çӳллĕ шайра тăракан культура çитмест. Çакă вăл кашни утăмрах сисĕнет: калаçура та, çи-пуçра та, кил-йышра та, хăйне çын хушшинче тыткаланинче те, искусствăри пулăмсене хак панă çĕрте те...

Пурнăçра килĕшӳлĕх çукки курăнать. Кăмăл-туйăмран пуяннисем пурлăхран чухăн, пурлăхран пуяннисем – кăмăл-туйăмран.

Ырă çынсем ирпеле чупма тухаççĕ урама, каçпала васкаççĕ концерта, кану вăхăтĕнче турист шучĕпе курса çӳреççĕ тĕнче илемне. Пĕлесчĕ ман: миçе чăваш кĕрсе курнă-ши Третьяковкăна, Эрмитажа? Лувр пирки калаçмăпăр ĕнтĕ. Кĕнеке вулама пăрахнисен, «Нарспи» оперăна курманнисен йышĕ те пинĕ-пинĕпех.

Мĕн вулатпăр-ши, мĕн куратпăр-ши, мĕн итлетпĕр-ши, мĕн юрлатпăр-ши?

Чи пысăк çитменлĕх – культура çитменни.

* * *

Шанмастăп, ĕненместĕп.

Хăй килĕнче пахчаçимĕç туса илеймен çын бригадир е колхоз председателĕ пулса ыттисене çĕр ĕçне вĕрентнине шанмастăп.

Кăварлă шĕвеке килĕштернине пула мухмăртан тасалса пĕтеймен, вĕçĕмсĕр пирус мăкăрлантаракан тухтăр эрех ĕçни, пирус туртни сывлăхшăн сиенлĕ тенине ĕненместĕп.

Ача çуратса курман хĕрарăм ыттисене пĕчĕк ачана мĕнле пăхса çитĕнтермеллине çине тăрсах вĕрентнине ĕненместĕп, шанмастăп.

Усал та ирсĕр çынсем ман чыса, таса ята таптама пикеннĕ вăхăтра шăп çӳрекен «туссене» питех шанмастăп. Ун пек чухне сана хисеплетĕп, юрататăп тенине те ĕненес килмест.

«Юрататăп» тенипех çырлахма текех вунçиччĕри ача мар. Сăмахĕнчен маларах ĕçне курасчĕ.

Сăмахĕ те аптрамасть-ха, анчах пулăшни, хута кĕни хаклăрах.

* * *

Хĕрарăмăн ӳт-пĕвне, урисене, питне-куçне асăрхакан, ăмсанакан темĕн чухлех. Чун илемне курас текен сахалрах. Çакна тума чылайăшне ăшри чухăнлăх чăрмав кӳрет.

Чун илемне хаклама пĕлекен телейлĕрех пуль тетĕп.

* * *

Чăваш чунĕ питĕ хĕсĕк те тарăн çĕрте вырнаçнă курăнать. Час уçăлмасть.

Мĕншĕн çапла-ши? Хĕсĕк пурнăç хĕстерсе лартмарĕ-ши?

Чăваш вăл тахçанах хăй ирĕклĕхне çухатнă. Çĕрĕ те сахал, çаврăнмалăх та çук. Çырма-çатрасенче вырнаçнă ялсенче ăçтан-ха сарлака чунлă пулайăн?

Хĕсĕк тĕнче чуна та хĕстерет, вĕтетет. Чăваш çĕрĕ хăш таран сарăлса выртнине лайăхрах пĕлсен, чунăмăрсем кăштах сарăлмĕç-ши?

* * *

Çын вăл тĕрлĕрен пулать. Пĕри ав ыттисен хӳттинче пурăнма килĕштерет, пулăшу ыйтма юратать. Тепри вара хăй прави пирки кăшкăрашать.

Манăн шăпам пулчĕ пачах урăхла. Пĕчĕкренех хăнăхрăм ыттисене пулăшма, хута кĕме. Малтан вĕренӳреччĕ. Шăнăрсем кăштах çирĕпленсен, вăрçа пула упăшкасăр тăрса юлнă хĕрарăмсене сухапуç тытса параттăмччĕ, пулăшаттăмччĕ.

Халĕ вара манран тата пысăкрах пулăшу кĕтеççĕ. Тăрăшатăп-ха вăй çитнĕ таран. Анчах ытла та нумайăн-çке эсир, телейсĕр чăвашсем. Ăçтан ĕлкĕрес?

Тепĕр тесен, пĕччен çынсен пулăшăвĕпех чăваш хăпарĕ-ши? Чăваш тĕнчине тĕпрен улăштармалла мар-ши?

* * *

Чăваша хисеплемелле теççĕ.

Мĕншĕнне шарламаççĕ. Чăнах та, мĕншĕн хисеплемелле вара ăна, чăваша?

Пултăм Петербургра, куртăм икĕ ўсĕре. Иккĕшĕ те чăваш пулчĕç. Сăмах хушрăм, шарламарĕç.

Чăвашăн çула ўсĕр пуçпа тухас йăла пурах çав. Çакна Шупашкарта та асăрханă. Ялтан килнĕ хăнасем калаçайми пуличчен ĕçсе лартаççĕ те вокзалалла танкăшаççĕ. Хăналаннин шайне черккепе виçеççĕ.

Мĕншĕн хисеплемелле-ха чăваша? Ял витĕр тухнă чух тăптăрă çынна тĕл пулаймарăм. Пĕри мухмăрпа асапланать, тепри ĕçсе лартма ĕлкĕрнĕ. Хĕрарăмсем те юлсах каймаççĕ.

Чăвашăн пурнăçĕ йывăр, çавăнпа ĕçет текенсем те пулĕç. Пурпĕрех kaçару çук. Пурнăç вăл нихăш халăхăн та çăмăл мар. Кăштах культура кирлĕ, пуç та вырăнта пулмалла.

* * *

Ĕç вăл – пурнăç шăнăрĕ. Анчах темшĕн ĕç вырăнне хисеплеми пултăмăр. Ячĕшĕн кăна тĕрткелешсе çўретпĕр.

Апла пулсан пурнăç айккăн-майккăн кайнишĕн тĕлĕнмелли çук. Мĕнлерех ĕçлетпĕр – çапларах пурăнатпăр.

Мухмăрпа ĕçе тухнă çынран мĕн ыррине кĕтмелле? Алли чĕтрет, пуçĕ кашлать, ăшĕ вăркать. Ун пек çынна ырă ĕç шанса пама çук. Вăл ĕç çинчен шутламасть. Кăварлă шĕвек тупса ĕçессишĕн тем тума та хатĕр. Май килсен хăй умĕнчи станока та сутса ярĕ. Çав чире пулах çурт купаламалли цемент та шĕвĕрех пулать, çул тумалли асфальт та çўхерех выртать...

Пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе сиккелесе çўрекенсем те темĕн чухлех. Чăн-чăн ăста пулса курмасăрах ватăлаççĕ. Ячĕ те çухалнă, чысĕ те юлман. Халăх асĕнче юлмалăх ĕçĕ çук.

* * *

Кăткăсем пирĕнтен ăсларах. Йăвине хускатсанах шурă çăмартисене çăлма васкаççĕ, пуласлăха çăлаççĕ.

Эпир вара... Паян пирĕн ачамăрсем пирки ытларах шутламалла. Пĕтĕм пуласлăх çавсенче.

Урă пуҫпа ҫуратасчĕ, урă пуҫпа пăхса ӳстересчĕ. Ачамăрсене хамăртан вăйлăрах тăвасчĕ. Патшалăха ҫеҫ шанса ларас марччĕ.

Ача вăл ӳчĕпе патшалăхшăн пулсан та, чунĕпе хамăршăн пултăрччĕ.

Ачасене ҫăласчĕ. Упрасчĕ.

* * *

Паттăр пуҫ хăварать теҫҫĕ. Такам пулсан та пуҫ касакан паттăра тухас марччĕ.

Пуҫ касакансем пирĕн ҫĕршывра пулнă сахал мар. Пуҫĕ камăннине, мĕн хак тăнине шута илмесĕрех каснă та каснă, ҫĕршывăмăрăн ăс-тăн шайне хавшатнă.

Халĕ вара эпир кам? Пуҫсăр юланутҫă мар-и? Ăҫталла каймаллине те тавҫăрса илейместпĕр. Пуҫлăха лартмалăх ҫын ҫук, шухăшламалăх пуҫ ҫук.

Айван эпир. Тĕнче умĕнче кулăшла кăна курăнатпăр. Чура шутĕнчи ҫынсем ҫеҫ мар-ши эпир?

* * *

Ҫĕр ҫинче темле юрату та пур. Пĕрисем пĕр-пĕринпе тĕл пулмасăрах юратса пурăнаҫҫĕ. Теприсем харкашса, хирĕҫсе пурăннă пек курăнаҫҫĕ, анчах пĕрне-пĕри пурпĕрех килĕштереҫҫĕ.

Кашни хутĕнчех темле ҫĕнĕлле курăнакан юрату та пур иккен. Юратнă ҫынна вăхăтран вăхăта ҫеҫ тĕл пулнă чухне туйăмсем пачах урăхла. Кашни тĕлпулу пĕрремĕш тĕлпулу евĕр туйăнма пуҫлать. Сăлтавĕ те пур. Кашни кунах тĕл пулман чухне юрату ытамне кĕрсе ӳкнĕ ҫынсем пĕр-пĕрин ҫитменлĕхне асăрхама та ĕлкĕреймеҫҫĕ, лайăххине ҫеҫ кураҫҫĕ.

Юрату вăл тĕрлĕрен пулать.

* * *

Ҫук ĕнтĕ, эпĕ телейлĕ ҫын пулаяс ҫук. Пурнăҫ ҫинчен шутлама пуҫласанах хам мĕнле айваннине, пулăшусăррине туятăп. Вара каллех хам тунă йăнăшсем, пурнăҫа тӳрлетмелли, сапламалли вырăнсем тата уҫҫăнрах курăнма пуҫлаҫҫĕ.

Тĕлĕнетĕп тепĕр чух. Хăшĕ-пĕрисем хуть те мĕнле ыйту парсан та хуравне часах тупаҫҫĕ. Вĕсемшĕн пурте паллă. Пурне те пĕлеҫҫĕ. Ыттисене вĕрентме те хатĕр.

Тĕнче культури пирки кăштах вуласа курман ҫын та чăваш

культури мĕнле пулмалли çинчен кăшкăрашать. Хăй ĕмĕрĕнче пĕр йĕркеллĕ сăвă çырса курман çын та теприне сăвă мĕнле çырмаллине вĕрентет. Тĕлĕнетĕп.

Шухăшăмсем, эпĕ вулани, пĕлни хама хĕн кăтартакансем çеç пулчĕç курăнать. Канăç памаççĕ, чуна çунтараççĕ. Кам пĕлет, нумай пĕлессишĕн питех тăрăшман çынсене пурăнма çăмăлрах та-и, тен.

* * *

Пĕри вăйлă, пултаруллă. Тепри айван. Анчах пурте çынсемех вĕт-ха.

Пĕри пуян, тепри чухăн. Анчах пурте пурнăçа тивĕç вĕт-ха.

Пĕри телейлĕ, тепри телейсĕр... Туйăмсем те пĕр пек мар. Вăйли савăннă чухне вăйсăррин куççуль юхать.

* * *

Мĕн хаклă-ши? Çынпа курса калаçни пит хаклă. Кашни тĕлпулу, кашни калаçу асра юлать, ăс-тăна, туйăма пуянлатать. Паллах ĕнтĕ, хамран ăслăрах çынпа, хамран пултаруллăрах çынпа калаçни питĕ усăллă.

Савăнатăп: Хирбюпе пĕрле пулнишĕн, Ухсайпа калаçса ларнишĕн. Ваçанкка патĕнче хăнара пулнишĕн, Кабалевскипе пĕр сĕтел хушшинче ларнишĕн...

Тусăмсем, тĕл пулса калаçар-ха, ырă та ăслă сăмахпа чуна ăшплантарар-ха. Çынран пахи, интересли пурпĕр нимĕн те çук. Кашнин хăйĕн шухăш-кăмăлĕ. Пĕлӳ тĕнчи те хăйне май. Кашни çын вăл Космосăн уйрăм мерченĕ.

Пултаруллă çынпа курса калаçассишĕн таçта çити кайма та хатĕр.

* * *

Мана хуть те мĕн калăр, чухăн çын телейлĕ тенине ĕненместĕп. Пулма пултараймасть.

Тен, савăнăçлă самантсем ун валли те пур. Юрланă, ташланă вăхăтра хăйне телейлĕн те туйма пултарать. Анчах савăнăçĕ ун нумая пымасть, часах пĕтет. Вара... Каллех çитменлĕх, каллех чухăнлăх.

Пурлăх енчен пуяннисем пурте телейлĕ тенипе те килĕшместĕп. Пур çĕрте те килĕшӳлĕх, виçе пулмалла. Чун пуянлăхĕ вĕсене те кирлех ĕнтĕ. Анчах пурлăх, укçа-тенкĕ çителĕклин

çулĕ пурпĕрех çăмăлрах, телее çывăхрах. Пĕлĕве ӳстерме те, тĕнче курса çӳреме те, ачасене пур енлĕ аталану пама та майсем ытларах.

Чухăн çын телейĕ чăн-чăн телеех мар ĕнтĕ. Виçи ун ытла та пĕчĕк шайра.

Чухăн çын та телейлĕ тенипе пурпĕрех килĕшместĕп.

* * *

Пирĕн ачасем камсем-ши вĕсем? Чăваша юрăхлă çынсем пулаймарĕç курăнать. Тĕнче касса çӳреççĕ. Чăвашра вырăн тупаймаççĕ. Чулхулара чăваш, Челябинскра та чăваш, Чукоткăра та чылай...

Тепĕр чух тата чуна эрехпе хĕртсе ярсан ачасемпе мухтанкаласа илетпĕр. Вĕсем Мускаврa е Петербургра пурăннине пысăка хуратпăр. Тĕнчене юрăхлă ачасем ӳстертĕмĕр-ха тесе хамăра лăплантаратпăр.

Вăйран хавшама пуçласан вара мухтанасси самаях чакать. Ватлăхшăн чи хакли – чăваша юрăхлă ачасем ытлараххи. Темшĕн-çке çакна каярах тин тавçăрса илетпĕр.

* * *

Чăваш тĕнчи хăйне май. Ырă çынсен шутĕнче çĕр ĕçченĕ пит сăпай. Çавна пулах чăвашсем пит мухтаççĕ Улăпа.

Чăваш хăйне çĕр çинче кăна чăн-чăн çын пек туять. Тен, çавăнпах хăйне çутçанталăкран ытлашши уйăрмасть, пур çĕрте те килĕшӳлĕх шырать.

Çĕрне туртса илсессĕн чăвашăн çынлăх туйăмĕ чакать. Вăл вара çын та мар.

* * *

Шупашкарти пĕр лавккара пĕчĕк ача макăрать, витринăри шоколада кăтартса «нямня!» тесе кăшкăрать.

Аптраса ӳкнĕ амăшĕ ниçта кайса кĕреймест, ачине лăплантарма пикенет. Шоколад еннелле алă сулса «нямня мар вăл, какка!» тесе макăракан ачине вăйпа çавăтса тухса каять.

Мĕн тăвас тен, пурнăç халь никама та шеллемест: ваттине те, вĕттине те.

* * *

Эпĕ сана юратнине сисиччен эсĕ пачах урăхлаччĕ. Вылят-тăнччĕ, кулаттăнччĕ, мана асăрхаса ăшă сăмах калаттăнччĕ. Ун чухне мана лайăхчĕ, пурăнма та çăмăлччĕ. Йĕри-тавра ытларах ыррине асăрхаттăмччĕ, ăшра ялан çĕкленӳччĕ.

Эпĕ сана юратнине туйсан – асăрхами пултăн, хăв туйăм-на пытарма тăрăшрăн, ыттисем курасран хăрарăн. Малтан пултăн вылявлăрах, кайран – хăравçăрах.

Юратуран хăракан та пур иккен.

* * *

Эх, шăрпăк, пуçна çухатнă шăрпăк, выртатăн халь ура-йĕнче шăлса илсе тухса пересе кĕтсе.

Кама эс пулăшрăн-ши пирус чĕртме? Арçынна пулсан, питех ятламăп. Енчен хĕрарăма пулăшрăн пулсан...

Пĕлетĕн-ши эсĕ ун ача амăшĕ пулса тĕнчене сывлăхлă çын ӳстерсе памаллине?

Эсĕ вара пуриншĕн те пĕр пек йăлкăшса çунатăн. Манран килсен, хĕрарăм алла пирус тытсанах хĕмне пытаракан шăр-пăк шутласа тупăттăм.

Выртатăн халь, пуçна çухатнă шăрпăк. Санпа усă кураççĕ те çавăнтах çĕрелле ывăтаççĕ. Анчах та пĕр пĕчĕк савăнăç пур иккен – веçех çунса пĕтменни. Юрать-ха, эсĕ вут тĕртес çĕре хутшăнман. Атту пĕтĕмпех çунса кайнă пулăттăн.

Эх, шăрпăк, шăрпăк, пуçна çухатнă шăрпăк... Ăмсанмастăп санăн шăпуна.

* * *

Шĕкĕр турра, тавах атте-аннене мана сасă тĕнчине кĕме кăштах алăк уçса панăшăн.

Халĕ вара филармони залĕнче ларнă чух килĕшӳллĕ те илемлĕ сасăсен ытамне кĕрсе ӳксен, хампа мĕн пулса иртнине те манса каятăп. Сасă хумĕсем пĕтĕм ӳт-пӳ тăрăх чупа-чупа иртеççĕ, чун хĕлĕхĕсене пыра-пыра тивеççĕ. Ăшра хирĕçӳ, килĕшӳ е çĕкленӳ...

Тасалса тухнăн туятăп хама филармони залĕнчен. Утма та çăмăл, калаçма та аван. Пурне те сывлăх сунас килет.

Ахальтен мар ĕнтĕ театртан е концертран тин çеç тухнă çын урăхларах курăнать. Вăл пурин çине те ăшă куçпа пăхать, калаçăвĕ çепĕç, кăмăлĕ çемçе. Вăл – телейлĕ.

* * *

Килти юрату вăл вăй хумасăр çирĕпленмест. Кăвайтне çунтарсах тăмалла.

Чи пахи – хĕрарăм хăй илемне упрама тăрăшни, çипуçран, сăн-питрен тирпейлĕ те таса пулни. Арçын вăл пурпĕрех куçпа юратать. Тепĕр чух тата вуласа пĕтермен кĕнеке евĕрлĕ пулни те питĕ вырăнлă. Упăшки арăмĕн халиччен палăрман енĕсене асăрхама пултартăр, кашни тĕлпулура, çывхарура çĕнĕлĕх туйтăр.

Чи хăрушши вара – килти юратăва айккинчен тупнă юратупа улăштарни. Çакă вăл кил ăшшине чакарать, тĕксĕмлетет, çемьери ырă енсене асăрхами тăвать.

Килти юратăва упрама çăмăл мар.

* * *

Тусăмсем, тăванăмсем, ырă ĕçшĕн пĕрне-пĕри саламлама, тав тума манас марччĕ.

Пурччĕ пирĕн Анатолий Миттов, пурччĕ Александр Сергеев. Вăхăтсăр çĕре кĕчĕ Зоя Андреева...

Çак талантсем çукки паян та сисĕнет. Мĕншĕн тесен искусствăра кашни хăйне май ĕçлет, сăнарсем шырать. Пĕри тăвайман ĕçе тепри тăвĕ теме çук. Сергеев кĕвĕленĕ пек никам та кĕвĕлес çук. Миттов пек ӳкерекен те урăх пулас çук. Зоя Андреевăна кам улăштарайĕ! Никам та.

Пултаруллă çынсем халĕ те чылай. Ĕçлеççĕ вĕсем, тăрăшаççĕ, чăваш искусствине çĕклеççĕ, пире савăнтараççĕ. Анчах вăхăтра тав тума манар мар. Пĕрне-пĕри хавхалантарар.

* * *

Кашни хăйне май асамлă вăй шырать, çынсене пулăшма ĕмĕтленет. Кашпировский – хăйне май. Чумак, ав, тĕрлĕрен шĕвексене асамлă вăй парать теççĕ. Кибечĕн мĕн пур-ши? Унăн асамлă вăйĕ чăваш сăмахĕнче, вулаканпа уççăн калаçнинче. Тен, çавна пулах юррăмсене юрлаççĕ, сăввăмсене вулаççĕ. Тав сăмахĕ те илтсе куртăм.

Апла пулсан эп пурăннин усси халăхшăн та кăштах пур. Чăваш çăкăрне ахаль çиместĕп.

Тавах сире, вулакансем, юррăмсене юрлакансем, мана çăкăр çитерекенсем. Эп çырнине вуланă чух е юррăмсене итленĕ чух ăшăр кăштах лăш кайни маншăн, чăнах та, чи

пысăк савăнăç. Çакă мар-и сăвăç сăмахĕнче темле асамлă вăй пуррине пĕлтерни!

* * *

Сĕтел çинчи таса юр пек шурă хут кама кĕтсе выртать-ши?

Çыраканĕ юрату туйăмĕпе хĕмленсе пурăнаканскер пулсан, унта ӳкĕç ăшă та çепĕç сăмахсем.

Наука çынни çырса пĕлтерĕ хăйĕн çĕнĕ шухăшне, тĕплĕнрех уçса парĕ тĕнче тытăмне.

Çăхавçă çырма ларсан юхса тухĕç ыттисене сиен кӳрекен суя сăмахсем, хут çине ӳкĕç кĕвĕçлĕх, курайманлăх мĕлкисем.

Поэт пире парнелĕ çĕнĕ сăвă, çĕнĕ юрă, туйăм тĕнчине пуянлатĕ.

Çырасчĕ ытларах ыррине, çынсене кирлине, пурнăçшăн усăллине. Çăхавçă çырма пуçланă сăмахсене хăй çине илмен хут шутласа тупсан тем пекехчĕ. Çавăн пек ăслă çынна пĕтĕм тĕнче тав тăвăччĕ.

* * *

Ватăлмастпăр-ха, тăван, ватăлмастпăр. Çамрăк та илемлĕ хĕрарăмсем хамăртан пăрăнман чухне ватăлмастпăр-ха.

Веçех хамăртан килет. Çынна ăна хавхалантармалла, ватăлни пирки аса илтерме васкамалла мар. Уйрăмах çакă арçынсемшĕн усăллă.

Арçын вăл ӳссе çитнĕ ача кăна. Кăшт ырласанах, эсĕ маттур, пултаруллă тесе мухтасанах улшăнса каять, хăй миçерине манать.

Ăслă хĕрарăмсем шăпах çак мелпе усă кураççĕ те ĕнтĕ. Тен, çавăнпах арçын чунĕпе яланах çамрăк?! Хамăр çумра тавçăруллă та хитре хĕрарăмсем пур чухне ватăлмастпăр-ха, тăван, ватăлмастпăр.

* * *

Ахалех çутçанталăка вăрçатпăр. Вăл вара çынна пачах та асăрхамасть. Хăй йĕркипе пурăнать. Мĕн пулса иртмелли унта пулса иртетех.

Анчах çакă пĕлтермест айккинче пăхса лармаллине. Кунта кирлĕ килĕшӳ, тавралăха пулăшни, ăнланни.

Çакна лайăх пĕлнĕ ваттисем, пирĕн мăн асаттесем. Вĕсем

пултарнӑ калаҫма ҫӗрпе. Пирӗн пек чӑрсӑр пулман, ҫутҫанталӑка амантман.

Эпир халь мухтанатпӑр пӗлӳпе. Иккен, тӗнчемӗр пирӗн алӑра. Никама та пуҫ таймастпӑр, никамран та хӑрамастпӑр, мӗн тӑвас тенине тӑватпӑр.

Кайран... Ҫутҫанталӑк хамӑра лайӑхрах тӑн кӗртсе илсен тин чӑн-чӑн хуҫа кам пулнине сисетпӗр.

Ҫутҫанталӑка ӑна ҫыннӑн хӑйӗн асӑрхама пӗлмелле.

* * *

Эппин, эпир кунта халь хӑнара. Вӑхӑтлӑха кӑна пурӑнатпӑр ҫӗр ҫинче. Апла кирлех мар пит кулянма. Чӑтар, чӑтар, пурне те чӑтар – йывӑрлӑха, выҫлӑха, чухӑнлӑха, чуралӑха... Пире валли леш тӗнчере кӗтсе тӑрать иккен ҫӑтмах.

Лешсем валли, ӗмӗр тӑршшӗпех пылпа ҫу ҫинче ярӑнакансем валли, унта пур тет тамӑк.

Пире чӑтма хушаҫҫӗ. Турри ҫапла ҫырнӑ тет. Чӑтӑттӑмччӗ леш тӗнчерен килнӗ ҫынна курнӑ пулсан. Ҫӑтмахӗ те пур, те ҫук та! Кунти пурнӑҫа вара хамӑр куҫпа куратпӑр. Ҫак тӗнчерех ҫын евӗрлӗ пурӑнасчӗ.

* * *

Телей. Ӑҫта кӑна шырамаҫҫӗ ӑна! Пӗрисем – ӗҫре, теприсем – стадионра, виҫҫӗмӗшӗсем – кану ҫуртӗнче...

Анчах килти телее ҫитекенни пурпӗрех ниҫта та ҫук. Ҫавӑ чи пахи, ҫавӑ чи хакли. Вӑл ҫителӗксӗр пулсан, телей тулли мар.

Мӗнех-ши вара вӑл министр пулни, президент пулни? Мӗнех-ши вара вӑл Ленин телейӗ, Сталин телейӗ?

Пӗри хӑй ачисене кураймарӗ, теприн ҫемйинче килӗшӳлӗх пулмарӗ. Ун пек телей мана кирлӗ мар.

* * *

Ытла та шӑрӑх кун паян. Ӗҫес килет пӗр вӗҫӗм. Уттартӑм тарӑн ҫырмана, йӑлтӑртатса тӑракан ҫӑлкуҫӗ патне. Ӗҫсе тӑрантӑм, тав турӑм, калаҫас тесе сӑмах хушрӑм. Эпӗ мӗн ыйтнине ӑнланмарӗ.

– Пӗлместӗп эсӗ мӗн ыйтнине, ҫынсем мӗнле пурӑннине. Пин ҫул тапса тӑрап пулсан та, эп яланах пӗчӗк ача. Мӗн те пулин пӗлес тесессӗн, ыйтса пӑхсам эс ватӑ Атӑлран. Пӗлет вӑл лайӑх чӑваша, ун хуйхине, ун нушине, – теейрӗ ҫеҫ.

Ак çитрĕм Атăл хĕррине. Итлерĕм унăн шăв-шавне. Уйăрса илтĕм иртнĕ ĕмĕрсен сассине, пире вĕсем мĕн каланине, чăвашлăха упрама хушса хăварнине...

* * *

Хăй пайтишĕн кăна çунакан çынсем ыттисене асăрхамаççĕ. Асăрхасан та хăйсене кирлисене кăна суйлаççĕ. Туслăхĕ те вĕсен хăйне май. Çынлăх шайĕ унта сахал. Кунта хуçа пурлăх, укçа, пĕрне-пĕри мĕн парса-илме пултарасси.

Лекрĕм ăнсăртран çавсем патне хăнана. Лартăм итлесе, ывăнтарса хăлхана. Ĕçки-çики сĕтел тулли. Чухăнтарах сăвви-юрри. Илтеймерĕм илем çинчен калаçнине. Ыйтакан пулмарĕ чăваш искусствинчи лару-тăру паян мĕнлереххине.

Сăмах тапратрăм – шарламарĕç, хăйсене çеç усăллă калаçуран пăрăнмарĕç. Вĕсем мана ăнланмарĕç, эпĕ – вĕсене.

* * *

Ĕçчен пуç пĕр самант та шухăшсăр лармасть. Унта яланах канăçсăрлăх вĕреме кĕнĕ хуранти пекех.

Сасартăк пĕр пĕчĕк тумламĕ çиççе илет те ыттисене хуплаca хурать. Шăп çавăн чух пуçланать те чăн-чăн шухăшлав. Çын тӳрех çĕнĕ шухăш ытамне кĕрсе ӳкет, хăйне чĕннине те илтмест, утса пынă çĕртех чарăнать те ним шарламасăр хытса тăрать.

Хура шыв витрине урама йăтса тухсан, шывне тăкмасăрах каялла кĕме те пултарать.

Архимед пек, шыва кĕнĕ çĕртен çатта-çарамас урама сиксе тухасси те ним те мар...

Çĕнĕ шухăш – çĕнĕ вăй. Савăнăç кӳрет, телей пиллет. Тен, çавăнпах кахал пуça питĕ хĕрхенес килет.

* * *

Халăх куçне уçакансем, ăна çывăрса каясран чĕпĕтсех тăракансем икĕ тĕрлĕ пулаççĕ. Пĕрисем – ăслисем, шухăшпа вăйлисем, теприсем – усаллисем.

Усал çынсем те ăнсăртран пулмаççĕ. Вĕсене те пурнăç хăех тупса пырать. Кирлĕренех ĕнтĕ.

Усал çыннăн та тĕллев çук мар. Хăй тунă ĕçпе вăл савăнать, хавхаланать. Мĕн чухлĕ ыттисене ыраттармалларах тăвать, çа-

вăн чухлĕ ытларах хĕпĕртет, çĕнĕ тĕллев лартать. Пĕрре йăлана кĕрсен, чарăнма пĕлмест. Тупăкра та сиввĕн пăхса выртать.

* * *

Поэтсем ытларах ĕмĕте мала хураççĕ. Мĕнле пулмалли пирки çыраççĕ. Вулакансем вара çакна чăн пулнă пек кураççĕ.

Кăнтăр енчи сăвăçсем ăмăртсах мухтаççĕ хĕрарăма, çĕклеççĕ çӳл тупе таранах. Анчах пурнăç аллинче хĕрарăм шăпи урăхларах: ирĕклĕх те, хăюлăх та унта паян сахалтарах.

Чăвашсем те çапларах. Пирĕн сăвă-юрăра атте-анне пит паха. Унта пирĕн юрату, унта пирĕн пулăшу. Анчах пурнăç аллинче ватлăх шăпи урăхла. Вăйлă çынсен çумĕнче ытла сахал ваттисем. Курăнмаççĕ хулара, хальхи хăтлă хваттерте. Пурăнаççĕ ялсенче, ачисем килсе курасса кĕтсе.

Поэтсем çакна туяççĕ, юрă урлă систереççĕ.

* * *

Сасă тĕнчи мĕн калать, пире мĕскер пĕлтерет? Çивĕч хăлхаллă çын çеç çакна лайăхрах туять.

Ним пĕлтерĕшсĕр сасă çук. Çил улать-и, вăрман кашлать-и, кайăк юрлать-и, йытă вĕрет-и, çын кăшкăрать-и, кĕвĕ янăрать-и – пурте пирĕн хăлхара. Кашни сассăн янăравĕ пырса тивет чĕрене. Ыттисенчен ытларах – музыкăна юратакансене.

Шăпах кĕвĕ-юрăра якалаççĕ хăлхасем, çивĕчленсе пынăçем пулăшаççĕ хуçине.

Çивĕч хăлхаллисем шанчăклăрах. Калаçури сăмаха çеç мар, унти туйăм-сисĕме те чухлаççĕ аванрах. Пулăшу ыйтса кăшкăрнă çĕре те чупса çитеççĕ маларах.

* * *

Кашни çыннăн çутçанталăк панă тивĕçĕ пур. Çавна манас марччĕ.

Ĕçлесси, çиесси, çурт-йĕр лартасси пире аса илтерсех тăрать-ха. Анчах вĕсенчен хакли те пур. Çакă пулать йăхтымара малалла аталантарасси, турă хушнă тĕп тивĕçе йĕркеллĕ туса пырасси.

Юратупа кăна ăнлантарни кунта каллех çителĕксĕр. Юрату ĕçне ăна ача-пăчана питех килĕштермен çынсем те ăнăçлах туса пыраççĕ-ха. Ун пек юрату тути вăхăтлăха кăна.

Ача пăхса ӳстересси пачах урăхла. Кунти юрату пырать нумая. Вăл пире пулăшать чăн-чăн çын пулма. Уçса парать туйăма, чăтăмлăха, çынлăха.

Манас марччĕ çутçанталăк шанса панă тивĕçе, парас марччĕ этемлĕхе начарланма.

* * *

Ăçтан пулас-ха манăн çепĕç туйăмлă, ачаш чунлă?

Мĕнле ӳснине, вăрçă вăхăтĕнчи тата хыççăнхи йывăрлăха аса илсен, ачалăхра мĕн тӳснине шута илсен, маншăн кун пек пулни те тем пекех. Çын шутĕнчех çӳретĕп-ха.

Мĕншĕн ман тĕллĕн ачашлăхпа илемлĕх сахалрах лекнĕши? Мĕншĕн ман валли килмен-ши искусство тĕнчи?

Тен, ман туйăмсем илемпе якалса аталаннă пулсан, урăхларах çитĕнеттĕм. Аллăм та ĕçлет, пуçăм та ĕçлет, анчах туйăм енчен эпĕ пурпĕрех чухăн. Çавăншăн кăна пăшăрханатăп, ахăрсаманана ятлатăп.

* * *

Чăваш поэчĕсене хурлама ан васкăр-ха. Малтан кăштах вуласа пăхăр. Шырасан, сирĕн чуна тивĕçтерекен йĕркесем те тупăнĕç.

Тĕрĕссипе каласан, паянхи саманара вăйлă поэтсем вырăссен те нумаях мар. Ваттисем çырайми пулчĕç, çамрăккисем пиççе çитеймен-ха.

Камсем паян вăйлăрах-ши, камсем хисепре-ши?

Паллах, иртнĕ тапхăр юррине юрласа пултарулăхне пĕтернисем мар. Ывăннă сасăпа юрлакансем мар.

Вăйлăраххисем – шăпах çĕнĕ юхăм хумĕпе хавхаланса çыракансем, хальхи пурнăçа витĕмлĕ сăнарсемпе уçса паракансем.

Пур вĕсем. Поэзи пирĕн чухăн мар. Вулама кăна ан ӳркенĕр. Ун чух хăвăрах тавçăрса илĕр: кам чунне парса çырать, кам ячĕшĕн кăна паянхи манерлĕ çырам пекки тукалать.

* * *

Мĕн вăл ачалăх?

Кĕçенсе иртсе кайнă тихалăх. Пурте пулнă пуль, тăраниччен çиейменни те, çын евĕрлĕ тăхăнайманни те, макăрмалли те, савăнмалли те...

Пурнӑҫа пурпӗрех ачалӑхпа виҫмеҫҫӗ. Ӑна ватӑлӑх пӗтӗмлетет. Ҫавӑ ытларах шухӑша ярать. Пулӗ-ши пире валли те лӑпкӑ та телейлӗ ватӑлӑх? Ыттине вара пурне те каҫарма пулать, чухӑн ачалӑха та, хальхи йывӑрлӑха та...

Пурнӑҫ вӑл ватлӑхпа вӗҫленет.

* * *

Утса пынӑ ҫӗртех ҫул пӗтсе ларчӗ. Халь ӑҫталла каймаллаха? Мӗнле тухмалла-ши ҫак тӗттӗм вӑрмантан?

Пӗри чӗнет ав каялла, кӑшкӑрсах мухтать иртнӗ пурнӑҫа.

Тепри чӗнет сылтӑмалла. Утма пулать иккен тата сулахаялла.

Темшӗн-ҫке утас килет ман малаллах. Утӑм турӑм хӑрамасӑрах.

Урасем утнӑ чухне утар-ха, тӑвалла пулсан та малаллах.

* * *

Хӑмпӑ пурнӑҫӗ ҫапларах: мӗн чухлӗ хӑпарса пысӑкланса пырать, ҫавӑн чухлӗ хӑвӑртрах хӑрушлӑх патне ҫывхарать.

Хӑйне пысӑклатса кӑтартма юратакансен шӑпи те ҫавах. Мӗн кӑна каламаҫҫӗ, мӗн кӑна ҫырмаҫҫӗ! Хӑйсене хӑйсем президент ятне параҫҫӗ, хӑйсемех шутласа тупнӑ преми лауреачӗ пулаҫҫӗ. Тӗнчипе паллӑ писатель тесе сӑмах сараҫҫӗ. Ҫав хушӑрах кӗнекисем лавккасенче тусанланса выртаҫҫӗ. Илекен те ҫук, вулакан та ҫук. Хӑйсен ятне Яковлевпа юнашар лартма та именмеҫҫӗ...

Пӗлесчӗ вӗсен ҫав тери тулса ҫитнӗ хӑмпӑн шӑпи мӗнле вӗҫленнине. Пӗр пӗчӗк йӗп вӗҫӗ тупӑнать те, хӑмпӑ пӑш! туса ӗмӗрне вӗҫлет.

* * *

Пӗрин сӑввисене вуларӑм та...

Ялан ҫын хыҫҫӑн каякан хӑй ҫулне часах тупайман. Ҫухалса кайнисем те пулнӑ.

Сисетӗп-ха, ман евӗрлӗ ҫырма пикенекенсем те ҫук мар. Йӗрки-йӗркипе хӑйсен сӑввине кӗртсе лартакансем те тӗл пулаҫҫӗ.

Ҫук, ятламастӑп вӗсене, савӑнатӑп кӑна. Апла вӗсем ман пултарулӑх картине ҫакланнӑ. Ман шухӑш вӑйӗ – вӗсен хуҫи. Вӗсем пурте ман алӑра. Унтан вӗҫерӗнес тесен ҫырма пуҫламалла урӑхларах, кашнин хӑйӗн ҫулне тупма тӑрӑшмалла хӑвӑртрах.

* * *

Енчен те эсӗ тӗнчене тӗлӗнтермелли паха япала тӑвас тесен, чунна парса ӗҫле. Унсӑрӑн ӑсталӑх ӳсмест. Ӑсталӑхсӑр илем ҫук. Вӑхӑта усӑсӑр ҫисе яракан вак-тӗвек ӗҫсене пӑрахӑҫлама пӗлни те самай вырӑнлӑ.

Вӑл ҫеҫ те мар-ха. Пӗр ӗҫкӗрен юлмасӑр якӑлтатса ҫӳрекен ҫынран ыррине кӗтме ҫук. Мухмӑрпа чӗтрекен алӑпа ырӑ ӗҫ тӑваймӑн.

Колхозри пек паян пӗр ӗҫе, ыран теприне тытӑнни те ӑсталӑхшӑн сиенлӗ. Хӑвна пӗтӗмпех юратнӑ ӗҫе памасӑр халӑх асӗнче ырӑпа юлма ҫук.

* * *

Истори – иртнӗ япала. Тӑрать веҫех мӗнле пулса иртнинчен. Ӑна улӑштарма ҫук. Анчах ун пирки каласа парасси урӑхларах та пулма пултарать. Суя истори те пур иккен. Кунта вара пытару мелӗ хуҫа. Хушаканӗсем – чи пысӑк пуҫлӑхсем. Ӗҫне тӑваканӗсем – тӗпчевҫӗсем, ҫыравҫӑсем, вӗрентекенсем...

Нумай халь пирӗн пӗлмелли, тӗрӗслӗхпе виҫсе пӑхмалли, чӑн-чӑн историе уҫса памалли.

Суя историрен часрах тасалса пӗтесчӗ те хамӑр ҫине урӑхларах пӑхма пуҫласчӗ.

* * *

Ӗлӗк-авал Раҫҫейре чи йышлӑ халӑхсем иккӗ кӑна пулнӑ: вырӑссем тата чӑвашсем. Шӑпи вӗсен иксе тухнӑ пачах урӑхла. Пӗри ҫулран-ҫул вӑй илсе пынӑ, тепри – хавшанӑ. Пӗри йышланса пынӑ, тепри – сахалланнӑ, чакнӑ. Пӗри пӗрмаях илекенни пулнӑ, тепри – параканни.

Паллӑ ӗнтӗ, илекен вӑл ниме те тиркемест. Хырӑмӗ ун ялан выҫӑ. Пурлӑх ҫитмест, ҫӗрӗ сахал, ытти патшалӑхпа ҫапӑҫма вӑйпитти арҫынсем кирлӗ, вӑрман касма, хула лартма ӗҫлекен кирлӗ...

Вырӑс тӗнчи сарӑлса пынӑ, чӑваш тӗнчи – хӗсӗнсе. Чӑваш Раҫҫейшӑн мӗн кирлине ним шеллемесӗр парса тӑнӑ. Халӗ те ҫавах. Анчах тав сӑмахӗ нихӑҫан та илтмен. Илтес те ҫук. Пире паян асӑрхами те, паллами те пулчӗҫ. Сывлӑх та сунмаҫҫӗ.

Сӑнне ҫухатнӑ халӑхсен шӑпи ҫапларах ҫав.

* * *

Тӗрӗслӗх вăл пӗрре çеç. Темиçе тӗрӗслӗх пулмасть. Пурпӗрех пăтрашатпăр, тӗрӗслӗхрен инçе тăратпăр.

Пӗрисем тӗрӗслӗхе пытараççӗ, ун патне çывхарма памаççӗ, йăнăш çулпа пăрса яраççӗ. Çынсем тӗрӗслӗхе пӗлменни вӗсемшӗн чи кирли.

Çӗршывра киревсӗр ӗçсем пулса иртнине, вăрçăсăрах миçе миллион çын пӗтнине пирӗнтен пытарнă. Пӗлмен эпир ытти çӗршывсенчи пурнăç шайне, Сталин мӗнлерех пуçлăх пулнине...

Теприсене чăрмав кӳрет пӗлӳ çителӗксӗрри, вуласа пӗлме хăнăхманни, ӳркенни. Кахал пуçа ниçта та çăмăл мар. Тӗрӗслӗх патне çывхарма та хӗнтерех.

Тӗрӗслӗх çук мар. Пур вăл. Анчах унпа тӗл пуласси пурин те пӗр пек мар. Тăрăшмасăр, вăй хумасăр пулмасть.

* * *

Çук. Турри сана пултарулăх паман. Мӗн кăна туса пăхмарăн-ши ырă ят илес тесе. Юрласа та, ташласа та, тăм шăхличӗ каласа та, çырам пекки тукаласа та...

Çук ӗнтӗ, ӗç тухмарӗ.

Сан урăххи лайăх пулать – элек сарасси, çăхав çырасси, çынна сутасси... Çак енӗпе санпа танлашакан çӗр çинче урăх çук.

Ытах халăх асӗнче пит юлас килсен, пиççе çитнӗ тырă пуссине вут тӗксе çунтар эппин.

Саншăн пурпӗрех. Яту кăна юлтăр.

* * *

Манăн ыттисене айăплас йăла çук. Веçех хам айăплă.

Пурнăç ăнманнишӗн кама ӳпкелес-ха? Паллах, хама. Эпӗ пӗлӳ илессишӗн çунса çӳренӗ вăхăтра ыттисем пурлăх пухрӗç, хваттерне те темиçе хут улăштарчӗç. Эпӗ çул хӗрринче автобус кӗтсе тăнă чух вӗсем çăмăл машинăпа чаш! кăна иртсе каяççӗ. Шалу та вӗсен пысăкрах.

Çемье ăнманнишӗн кам айăплă-ха? Паллах, хамах. Çамрăк пулнă. Ашшӗ-амăшӗ мӗнлереххине пăхса мăшăрланман. Ачамсене тăван чӗлхене параймарăм, пулăшакан тупăнмарӗ.

Хам пурнăçшăн, хам телейшӗн веçех хам айăплă. Çавă кирлӗ те мана, ухмаха. Хӗрхенместӗп хама. Вăрçасса та хама кăна вăрçатăп. Никама та айăпламастăп.

* * *

Бах е Вагнер музыкипе пурӑнмасть чӑваш. Скрябин е Прокофьев ҫырнисем те чӑваш чунне ҫӗнсе илеес ҫук. Концертсенче ларнӑ чух вӗсене те итлет пуль те-ха. Анчах...

Пурнӑҫ ҫинчен шутланӑ чух, ӑраскал пирки пуҫ ватнӑ чух чӑваш тӳрех тӑван кӗвве аса илет. Ытларах тарӑн шухӑша яракан ӑслӑ юрӑсене килӗштерет. Тен, ҫавӑнпах юрлама пуҫличчен чӑваш хӑйӗнчен хӑй «мӗн каласа юрлам-ши?» – тесе ыйтать. Ун канӑҫсӑр чунне лӑплантарма, илем туртӑмне тивӗҫтерме чӑваш кӗввиех меллӗ иккен.

* * *

Юрату вӑл тӗлӗнтермӗш, ыттисене асӑрхами тӑвать. Тӗнчере иккӗн кӑна пур пек. Тепӗр чух тата юратакан ҫын хӑй тусне япала вырӑнне хурса хаклать. Вӑл манӑн тет. Никама та ҫывӑха ямасть. Унпа пӗр-пӗччен киленесшӗн, хӑйне ҫеҫ юраттарасшӑн.

Анчах мӑшӑрланса ача-пӑчаллӑ пулсан, йӑла кӑштах улшӑнать. Юрату туйӑмӗ мӑшӑр валли чакса пырать. Пӗчӗк пепкесене ытларах тивет. Каярах – ачан ачисене.

Пӗр хӑнӑхса ҫитсен, пӗрне-пӗри лайӑх ӑнланни те тем пекех. Теприсен ав юрату ҫеҫ мар, пӗрне-пӗри хисеплесси те пӗтсе ларать.

Ӑҫта кайса кӗрет-ши малтанхи туйӑм? Тен, юрату вӑл ҫамрӑклӑх парни кӑна?

* * *

Паян вӑрҫаҫҫӗ монголсене, ӗлӗк вырӑссене пӑхӑнтарнӑ вӑйлӑ йӑхсене. Темшӗн ҫакӑнта кураҫҫӗ шак та усаллине. Каласшӑн эпӗ урӑххине, халиччен никамах та шарламаннине.

Килмен пулсассӑн монголсем, тен, ҫуралмастчӗ вӑйлӑ Руҫ. Тӑшмана хирӗҫ ҫӗкленсен тин вырӑс тупнӑ хӑй сӑнне. Тутанса курнӑ пӗрлӗх вӑйне. Усаллӑхпа хаярлӑха вӗренсе юлнӑ монголсенчен. Ҫавна пулах пӗчӗкҫӗ Руҫ пуҫланӑ хӑвӑрт сарӑлма. Тавӑру туйӑмӗ ун чухне йӳҫсе тӑнӑ пӗтӗм халӑхра. Вара ҫул тытнӑ вырӑссем Атӑлпа Урал еннелле, Ҫӗпӗр таран, Памир таран, Амур таран...

Раҫҫей халь пысӑк пулнинче монголсен тӳпи те ҫук мар.

* * *

Тĕнче йĕркеленсе çитеймен-ха. Этемлĕх тени те ачалăхра кăна. Хăйне ытла та айван тыткалать.

Мĕншĕн-ха çапла? Пĕрремĕш кун кăна пурăнмастпăр-çке. Пурпĕрех пурнăçа этеме тивĕçлĕ йĕркелесе яраймастпăр-ха.

Ваттисем, тен, çакна пĕлеççĕ, анчах вĕсен вăйĕ сахал.

Çамрăккисем чăрсăртарах. Темшĕн хăйсене пурнăç вĕсенчен кăна пуçланса кайнă пек тыткалаççĕ. Ытти ĕмĕрсен, ватă ăрусен пурнăçне шута илесшĕнех мар.

Этемлĕх курманни юлман та пуль: ырри те, усалли те. Анчах пурпĕр ăсланса çитеймест. Айван-ха вăл.

Пăтрашуллă тĕнчере çынсем те çухалсах кайрĕç.

* * *

Кĕвĕç чунсем пурте тенĕ пекех пĕр майлă. Вĕсен чĕрине ыттисем маларах ӳкни вĕчĕхтерет. Пуçлаççĕ вара суя сăмах сарма, тепри тунă паха ĕçе пĕчĕклетсе кăтартма, ырă ята варалама.

Тата тепĕр йăла пур. Хăйсем кӳрентернĕ çынна курайми пулаççĕ, тăшман вырăнне хурса тапăнаççĕ. Мĕншĕн тесен унтан хăраççĕ, хăйсене тăрă шыв çине кăларасран шикленеççĕ.

Кĕвĕç чунсен хăюлăхĕ те вăрттăн. Çăхавĕсене те хăй ячĕпе уçăмлăн çыраймаççĕ. Пичетре те пытараççĕ.

Хăравçă вĕсем.

* * *

Пĕлетĕп пĕр çынна. Хутшăнмасть вăл çыравçăсене çуралнă кун ячĕпе чысланă çĕре. Курман эп ăна туссене, ентешсене юлашки çула ăсатса янă çĕрте.

Мĕншĕн çапла-ши? Хăйне нихăçан ватăлми çын тесе шутлать-ши?

Çук. Сăлтавĕ пачах урăхла. Чăтма пултараймасть тепĕр çын çинчен лайăх калаçнине, ырă сăмахпа асăннине. Теприне мухтанине илтсенех ун чĕри ыратма пуçлать. Чирлесе ӳкет. Ун умĕнче нихăçан та пултаруллă çын çинчен калаçма юрамасть.

Вăл хăй кăна. Çумĕнчи çынсен те уншăн кăна ĕçлемелле. Хăйне те вăл хăйпе кăна виçет.

* * *

Чăвашсем хăйсене ывăннă халăх евĕр тыткалаççĕ. Те нумай пурăннăран, те – урăх сăлтавпа.

Ăсчахĕсем те çавах. Ытларах ĕлĕкхи пирки, пурăнса irttернĕ ĕмĕрсем пирки калаçаççĕ. Ырри, лайăххи веçех кая юлнă пек кăтартма тăрăшаççĕ.

Çук ĕнтĕ, чăваш пурнăçĕ ĕлĕк те çăмăл пулман. Патшалăхсăр халăхăн шăпи ăçтан телейлĕ пултăр-ха? Вăл яланах тарçă, вăл ĕмĕрех чура. Хуçа туййăмĕ ун çумĕнче çук. Хăй шăпипе килĕшет те лăпланать. Вара кайран тем чухлĕ вăратас тесен те хускалмасть, хуçа тăвас тесен те килĕшмест.

Çавна пулах тилхепине тытса пыракансем тахçантанпах урăххисем. Суйласа лартнă чăвашсем те вĕсен тарçисем кăна.

* * *

Пире аннесем вĕрентнĕ çынна усăллă пулма, тăван ялшăн ĕçлеме. Укçа-тенкĕшĕн çунман, хура ĕçрен хăраман.

Мĕн ачаран хăнăхнă çĕр ĕçне: сухаланă, тислĕк тăкнă, сухапуçпе пахча лартнă.

Халь кашласа ав лараççĕ эпир шăварнă йывăçсем, йăлйăл кулса ав илеççĕ эпир пĕвенĕ пĕвесем.

Юлман эпир пĕр нимерен, çук, пăрăнман нимле ĕçрен.

Ĕçпе пиçсе ӳсмен çынсем паян макраççĕ кăшкăрсах. Вĕсем калаçнине илтсен, тĕнче пĕтет паян-ыран.

Тĕрĕс тунă атте-анне пире ĕçе явăçтарса. Самани темле улшăнсан та пирĕн шанăç – ик аллăмри ĕçре.

* * *

Хăçан вĕренсе çитĕпĕр-ши хамăра хамăр хак пама, усал йăласене асăрхама?

Пирĕн пек ухмах кам пур-ши пурлăх сутса, ăса сутса, чыса сутса, халăха сутса ĕçекен?

Эпир ĕçсе пĕтернĕ укçана пурнăç тунă çĕре янă пулсан...

Ăс-тăн пулатчĕ пачах урăхла, кашни пурнатчĕ капăр килçуртра. Çăкăр-тăвар пулатчĕ пуянрах, кашни çӳретчĕ лайăх çи-пуçпа, çăмăл машинăсем чупатчĕç ытларах, тухтăр патне каятчĕç сахалрах...

Урăлса çитесчĕ хăвăртрах, пурăнма пуçласчĕ урăхларах.

* * *

Пире ертсе пыракансем пулнă иккен пултаруллă ӳнер ăстисем. Меллĕ усă курнă сăрăпа. Икĕ тĕсе юратнă ытларах: йăлтăркка çутăпа хурине.

Сăрланă та сăрланă, чăн пурнăçа пытарнă. Çынсем вара ĕненнĕ сăрласа кăтартнă пурнăçа.

Ăна мухтанă сăвă-юрăра, хитрелетсе кăтартнă кинора, сцена çинче выляса...

Тикĕтпе сăрланă киввине, мăн асаттесен пурнăçне, урăхларах шухăшлакансен ятне, тĕп тунă ăслă çынсене.

Çак ултавлă тĕссенчен тасалмасăр пирĕн куçсем уçăлас çук.

* * *

Турă вăл яланах пĕр пек мар. Хăйне пысăка хурса пуççапнă чухне кăна аван.

Енчен те çын турăпа шайлашма шут тытсан, ун хаярлăхĕ хăвăрт сисĕнет. Ун чух турă никама та шеллемест. Хăйĕнчен иртме хăйнисен шăпи пирки вара калаçмалли те çук.

Çавсенчен пĕри – хăюллă Прометей. Çынсем валли кăвар тупнăшăн ăна айăпланă, асап кăтартнă.

Çав енчен турăпа туслашман çынсен шăпи çăмăлрах та-и, тен. Хăйсене тытаççĕ ирĕклĕрех, тунă ĕçе хак параççĕ хăйсемех.

* * *

Вăраннăччĕ-ха эпир те. Халăх пулас тесех тапраннăччĕ. Анчах сăнăмăра коммунизм çисе ячĕ.

Уйрăм халăх кирлех мар терĕç. Хамăр кам пулнине мантаракан эмел кунсеренех пачĕç те çывăратса ячĕç. Пурăнтăмăр çапла мухмăрпа ыйхă хушшинче. Хамăра хамăр паллами пулса çитрĕмĕр. Тăван чĕлхерен сивĕнсе пытăмăр. Чăваш пулнишĕн те вăтанма пуçларăмăр...

Вăраннисем те, урă пуçлисем те тĕл пулаççĕ-ха. Питĕ йышлах мар та, çапах вĕсем пурри савăнтарать, шанăç çуратать. Чăваш упранса юлни çеç çителĕксĕр. Халăх пулса çитесчĕ.

* * *

Хӗрача хӑй хитрине часах туять. Ӑна ун пирки аса илтерекенсем тупӑнсах тӑраççӗ.

Пӗр хӑнӑхсан хитрин вара яланах пӗрремӗш пулас килет. Тен, çавӑнпах хитре те чее хӗрачасем хитрех мар тантӑшпа туслашма юратаççӗ.

Юнашар сӑнран чиперех мар юлташ пурри хӑйне май çӑмӑллӑх. Тӳрех сана асӑрхаççӗ, сана ташша чӗнеççӗ, санпа паллашма кӑмӑл тӑваççӗ. Хитрене куç маларах курать.

Анчах кунта хӑрушши те пур. Хӑйне питӗ хитре тесе шутлакан хӗрачан пӑсӑласси те юнашарах. Пурнӑçра телей тупма сӑнпа хитри çеç çителӗксӗр.

* * *

Пурнӑç хакӗ пуриншӗн те пӗр пек мар. Пӗриншӗн нимле йывӑрлӑх та çук, пурте хатӗр. Уншӑн пурнӑç пыл та çу.

Тепри такӑна-такӑна утать, ӳкет те тӑрать, пурпӗрех малалла талпӑнать. Йывӑрлӑхпа кӗрешет, çитӗнӳсем тӑвать. Пурнӑç тути-масине шӑпах çаксем лайӑххрах чухлаççӗ те ӗнтӗ. Телейлӗрех вӗсем. Савӑнмалли те тупӑнсах тӑрать.

Пӗр çухату курманнин шӑпи пачах урӑхла. Савӑнмалли самантсем те уншӑн кӑштах сахалрах. Тен, çавна пулах туйӑм тӗнчи те чухӑнрах.

Йывӑрлӑха çӗнтерни çынна чӑтӑмлӑх парать, ыттисен нушине те лайӑххрах ӑнланса илме пулӑшать.

Пурнӑçӑм çулӗ такӑрах пулмарӗ.

Анчах уншӑн пӑшӑрханмастӑп.

* * *

Манасчӗ, асра мӗн юлнисенчен хӑшне-пӗрне манасчӗ. Анчах манма çук. Чуна ыраттарса тӑраççӗ. Чарма çук. Ачалӑха аса илсен халӗ те куççуль тухать.

Манасчӗ, ниме юрӑхсӑр шухӑшсене пуçра тытса çӳрес марччӗ. Манасчӗ те çӗнӗ шухӑшсем валли ирӗк вырӑн тупасчӗ.

Унччен хи кивӗ шухӑшсем паян кирлисене йышӑнасшӑн мар, пуçра вырӑн парасшӑн мар. Ман пуçра пырать вӑйлӑ тытӑçу.

* * *

Влаç тути самай пылак иккен. Çавăнпа ăна юратаççĕ, уншăн çапăçаççĕ. Влаçа ăна унпа йĕркеллĕ усă курма пĕлмен чухне те ыттисене парас килмест.

Влаçра лараканран пурте ырлăх кĕтеççĕ. Ăна пуç таяççĕ, сывлăх сунаççĕ.

Влаç вăл çынна çĕклет, вăйлатать, пуçлăх туйăмĕ парнелет.

Влаçран тухса ӳксенех вăл никамах та мар. Пирĕн пек çынах.

Пĕрре çӳлте ларса курнă çыншăн кайран пирĕн хушăра çӳресси пит çăмăлах мар. Влаç чирĕ кайран та канăç памасть.

* * *

Судра айăпа кĕнĕ çынна хӳтĕленĕ чухне вырăнлă сăмах тупма питĕ хĕн. Камăн кулăшла курăнас килтĕр-ха.

Укçа тӳлесе тытнă адвокатăн пăркаланма тивет. Айăп пуррине пĕлсе тăнă çĕртех урăххине каламалла.

Шухăшпа чĕлхе хушшинче тытăçу пуçланать. Пуçĕ шухăшлать айăплă тесе. Чĕлхи калаçать айăплă мар тесе.

Çавăн пек ĕçпе пурăнакансен кулленхи çăкăрĕ мĕн тути калать-ши, пылак-ши, йӳçĕ-ши?

Укçи пирки шарламăп. Укçан тути те, шăрши те çук тесе ахальтен каламан.

* * *

Чăваш мĕншĕн вăй илеймест-ха? Ирĕклĕхшĕн те çĕкленеймест. Сăлтавĕ çук мар.

Кĕрешĕве хутшăнмасăр чăваш вăйланас çук. Мĕн чухлĕ лăпкăрах пурăнать, çавăн чухлĕ хăвăртрах чăвашлăха çухатса пырать. Лăпкăлăх вăл вăй памасть.

Кун пекех пулсан, чăваш кĕçех истори урапинчен ӳксе юлĕ те вилтăпри умне çитсе тăрĕ. Ун чух вара мĕншĕн кĕрешмелли те, камшăн кĕрешмелли те пĕтсе ларĕ. Пире шырĕç, тупаймĕç. Пирĕн çинчен кĕнекесем тăрăх кăна пĕлĕç. Чăваш ятлă халăх та пулнă иккен тесе калаçкаласа илĕç.

Паянхи чăваш вăл хăй мĕн тери пысăк хăрушлăх умĕнче тăнине чухлаймасть-ха. Хăйĕн ĕмĕрĕ хăвăрт кĕскелсе пынине те асăрхамасть.

* * *

Юратнă ĕçе нимĕнпе те улăштарас килмест. Вăл маншăн савăнăç та, куляну та, хавхалану та, çĕнтерӳ те...

Ĕçре кăна хама хам лайăххрах туятăп. Ун чух вăйлă та, сывă та, хăватлă та. Эпĕ кам пулни, мĕнлерех пулни веçех çавăнта. Мана лайăххрах пĕлес тесен, пырса курсамăр эпĕ мĕнлерех ĕçленине.

Манăнне пĕтĕм пурлăха туртса илес пулсан та чăтса ирттерĕп. Пĕртен-пĕр юратнă ĕçе кăна хăварăр.

Çамрăк ăру умĕнче тухса калаçма чарсан е хутпа кăранташа туртса илсен вара текех эпĕ çук. Вилĕ вырăнне кăна тăрса юлăп.

* * *

Хам тунă ĕçсемпе эп пит кăмăллах мар. Паллах, тума пултарнă лайăххрах. Çырасса та çавах. Анчах турри панинчен иртме çук.

Эсĕ вара хăвна ху мухтатăн, хăвпа ху киленсе çӳретĕн. «Эпĕ поэт пулма çуралнă, эпĕ – гений», – тетĕн.

Чĕлхе шăмăсăр теççĕ. Калама пулĕ-ха. Ĕçӳсем мĕнлерех? Пур-и эсĕ çырнинче мĕн те пулин çĕнни, ытти сăвăçсем каламанни? Пур-и эсĕ çырнинче пурнăç çине тарăнрах пăхма чĕнни, тĕнче тытăмне уçса пани?..

Пĕрчĕн-пĕрчĕн пухнă ăс пулмасан, «эпĕ гений» тенипех поэт пулаймăн, чапа тухаймăн.

* * *

Чухăн та çĕтĕк çын ташланă чухне чун ыратать. Хăйне тем чухлĕ савăнăçлăн тыткалама пикенсен те ун çĕкленĕвĕ мана хавхалантармасть. Çакă вăл куççуль витĕр сăрхăнса тухакан савăнăç кăна.

Укçи те çук, çи-пуçĕ те начар, пăхма та ырхан, анчах унăн та чунĕ пур. Ыттисенчен юласшăн мар, савăнасшăн, вăхăтлăха та пулин хăй нушине манасшăн. Мĕн тăвас тен, кăштах кăварлă шĕвек сыпсан капланса çитнĕ туйăма чарма çук, чармалла та мар.

Тĕрĕссипе каласан, ун савăнăçĕ маншăн мар. Савăнтăр. Хăйне килĕшет пулсан ташлатăр, юрлатăр; вăхăтлăха улпут пек туять пулсан – туйтăр.

* * *

Хура халăх шăпи ĕлĕкренпех пĕр майлă. Вăл яланах чура. Пуçлăхсем улшăнсах пыраççĕ, анчах уншăн пурпĕрех. Улшăну сахал.

Пуçлăхăн кăна хăй хуçа пулнине уççăнрах кăтартса памалла. Вара веçех унчченхи пекех каять. Ĕçлесси, пăхăнасси, хăрасси, çав хушăрах шанасси, ырлăх кĕтесси... Пурте пĕрле.

Халăх вăл чăтăмлă. Пурнăç тем чухлĕ йывăр пулсан та, халăх хăйне пурăнмалли мел тупатех. Пĕр япаларан кăна çăлăнăç çук. Пĕри каять, тепри килет – хура халăхăн чуралăхĕ çаплипех юлать.

* * *

Çын вăл хăй пирки пит япăхах шутламасть. Çакна хăвах курăн. Эсĕ начар, эпĕ лайăхрах тесе кала-ха. Вăл сана çав самантрах вирлĕ сăмахсемпе çапса хуçĕ. Эсĕ хăв унтан çĕр хут начаррине кăтартса парĕ.

Енчен те эсĕ çӳллĕрех кĕлеткеллĕ пулсан, хăмла шалчи тейĕ. Хурарах сăн-питлĕ пулсан, хăй çутăрах сăнлипе мухтанса илĕ. Пачах та эрех ĕçмен çын пулсан, эрех ĕçмелĕх сывлăху та çук тесе хăртса хурĕ...

Тавлашнă чухне ыррине те усал пек кăтартма май пур иккен.

Çын вăл хăйпе яланах кăмăллă. Ыттисем хак панипе çеç кăмăлсăртарах.

* * *

Нимĕçсем ав мухтанаççĕ хăйсен ăслă ывăлĕсемпе. Сăлтавĕ пурах. Вĕсен уйрăм çынсен ăс-тăнĕпе вăй илсе пуянланнă философи пур.

Пирĕн пачах урăхла. Мухтава тивĕç шухăш ăстисем сахалрах. Пуç вăйĕ ытларах халăх ăсĕнче. Те вата халăх пулнăран, те çырулăх ĕçĕ кăшт каярах тапранса кайнăран халăх сăмахлăхĕн хăвачĕ пĕтмен-ха.

Унти ăс такама та çитет: ăсчахсене те, сăвăçсене те, вĕрентекенсене те...

Уйрăм çын ăсĕ халăх ăсне çитес çук теççĕ те-ха. Анчах асаттесен ăсĕпе çеç пурăнас марччĕ. Хамăр пуçа та ĕçлеттересчĕ.

* * *

Юхса кӗчӗ Шупашкар варрине Атӑл шывӗ. Ват хуламӑр текех ҫук. Пулчӗ шыв айне. Тимлӗрех пӑхсан куратӑн ун илемлӗ сӑнне.

Акӑ Атӑл хӗрне ҫитерекен йывӑҫ кӗпер, кивӗ почта ҫурчӗ, пасар. Речӗ-речӗпе лавккасем. Кунтах курӑнаҫҫӗ йывӑҫ мӗлкисем, ман юратӑва сыхланӑ, эпир ташша ҫӳренӗ вырӑнсем.

Ватӑ хуламӑр выртать халь залив тӗпӗнче. Кирлех пулнӑши ҫавна ҫӗмӗрме? Мӗншӗн ытла ҫӑмӑллӑн алӑ ҫӗклетпӗрши асаттесем тунӑ илем ҫине?

* * *

Кам вӗҫкӗн-ха? Кам ҫӑмӑлттай? Турри панӑ пултарулӑх ҫуккисем пит вӗҫкӗн. Ҫавсем суя чапшӑн ҫунаҫҫӗ. Пӗр тенкӗлӗх ӗҫе пин тенкӗлӗх кӑтартма тӑрӑшаҫҫӗ. Ыттисен ҫитӗнӗвӗсене пӗчӗклетме юратаҫҫӗ.

Кам вӗҫкӗн-ха? Ҫынлӑх енчен аталану ҫуккисем пит вӗҫкӗн. Хӑйсене хӑйсем мухтаса калаҫаҫҫӗ, ҫыраҫҫӗ. Ӑслӑ ҫынсем ҫакна часах сисеҫҫӗ. Вӗҫкӗнӗн чапӗ ухмахсем валли ҫеҫ.

Ҫын тени вӑл лӑпкӑ та сӑпай пултӑрччӗ.

* * *

Патшан та, султанӑн та чӑн-чӑн туссем ҫукпа пӗрех. Ҫывӑххисем, ӗҫре кирлисем чылай, туссем сахал.

Пӗрисем, ӑс-тӑнран кӑшт айвантараххисем, патшана вӗсемпе танлаштарсан пит ухмахах маррине кӑтартма кирлӗ.

Теприсем, сӑн-питрен хитрех маррисем, патшана хӑй пит илемсӗрех маррине кӑтартма кирлӗ.

Ҫав хушӑрах патша тӑвас ӗҫе тӑвакансем те, уншӑн шухӑшласа пуҫне ватакансем те пур. Анчах вӗсене ыттисене питех кӑтартмаҫҫӗ, пытарарах усраҫҫӗ...

Эппин, кашни пысӑк пуҫлӑх вӑл режиссер та, актер та. Хӑйне камитри пек тыткалать. Пурнӑҫӗ те ун – камит. Вылявлӑ самантсем нумай.

* * *

Ҫын ҫумӗнче чи чухӑнни паян – ун чунӗ. Ҫав ҫара, ҫав тӑлӑх. Хӑйӗн никӗсне тупаймасть. Сывлӑшра ҫакӑнса тӑнӑ пекех

туйӑнать. Ҫил кӑшт хытӑрах вӗрсенех урӑх вырӑналла куҫать.

Мӗншӗн тесен хальхи ҫыннӑн чунӗ те хӑйӗн мар. Вӑл яланах парти идеологийӗн ытамӗнче пулнӑ. Пирӗн пуҫ ҫӳлтисен вӗрентӗвӗпе тулса ларнӑ. Хамӑр шухӑш валли вырӑн сахал юлнӑ. Кахала хӑнӑхнӑ пуҫ чуна вӑй параймасть.

Чун шӑнӑрне хытарма хӑв тӗллӗн шухӑшлама пӗлни кирлӗ.

* * *

Куҫ хитрене юрататать, унпа киленет. Пӗр тӗл пулсан курса тӑранайми пӑхать.

Хитре ҫынна тӗл пулсан та ҫавах. Палламан ҫын пулсан та курни теме тӑрать, савӑнӑҫ кӳрет.

Ҫын сӑнӗпе хитри, паллах, ашшӗ-амӗшӗн парни. Кӑмӑлтуйӑм илемӗ вара – хамӑр тупни, хамӑр туптаса якатни.

Ман ытларах ҫак илемсем хушшинчи килӗшӳлӗхе курас килет. Сӑнпа мухтанакана, турӑ панӑ хитрелӗхпе усӑ курса ҫынлӑха хирӗҫле ӗҫсем тӑвакана сивлес килет.

Хитрелӗхпе юнашар пултӑр ялан чунри тасалӑх.

* * *

Кулянмалли вӑл тупӑнсах тӑрать.

Пӗри ав кулянать пурлӑх енчен чухӑннишӗн, апат-ҫимӗҫ ҫитменнишӗн. Тепри – пуррине ниҫта хума пӗлменнишӗн, пысӑк услам тӑвайманнишӗн.

Пӗри ав кулянать хӑй ӗҫе тухса кайсан ватӑ та чирлӗ амӑшӗ пӗччен вырӑнса юлнишӗн. Тепри – уйрӑм пӳлӗмре пурӑнакан йытти пӗччен пулнишӗн.

Пӗри ав кулянать ӑшӑ та ҫемҫе пиншак туянайманнишӗн. Тепри – тин ҫеҫ ҫӗлеттернӗ сӑсар кӗрӗк валли тӗспе килӗшӳллӗ тӳме тупса илейменнишӗн.

Пӗри ав кулянать сӗтел ҫинче хӗрлӗ пулӑ вӑлчи ҫуккишӗн, тепри – какай яшки ҫисе курайманнишӗн.

Куляну вӑл кашнин хӑйне майлӑ.

* * *

Хӗрарӑм эрех ӗҫнине чӑтма пултараймастӑп, сивлетӗп. Ҫакӑ вӑл тӗнче пӗтнин малтанхи палли.

Малашне мӗн курӑпӑр-ши? Ҫынсем йышлӑ ҫуралӗҫ, пурнӑҫа малалла аталантаракансем сахал пулӗҫ. Ӑслисен, ҫирӗп

сывлăхлисен шучĕ чакса пырĕ. Ăс-тăн енчен айван çынсен тĕнчи кăна тăрса юлĕ. Ун пек çĕрте çуралас та килмест, пурăнас та килмест. Хĕн курни çеç. Йĕри-тавра телейсĕр çынсем йышлă чухне хăвна ăçтан телейлĕ туйăн-ха.

* * *

Кашни çулах кĕркунне Çеçпĕл палăкĕ патĕнче пуçтарăнаççĕ кăвар чĕреллĕ сăвăçăмăра сума сăвакансем. Янрать кунта чăваш сăмахĕ, чăваш кĕвви. Поэтсем вулаççĕ сăввисене, ваттисем калаçаççĕ вĕрентсе çамрăккисене. Çурта çутаççĕ палăк умĕнче, чечек хураççĕ пуçсене тайса.

Кăçал та иртрĕ çак ĕç йĕркеллех. Килчĕç хăнасем чылай инçетрен. Сăмах ăстисем парнелерĕç çĕнĕ сăвăсем. Анчах пĕри калать кашни çулах пĕр сăввах. «Поэтсем вилсессĕн те вилмеççĕ», – тет. (Çак сăмахсене Урдаш тахçанах каланăччĕ.)

Темшĕн-çке унтан илтес килет ман çĕннине, паянхи кун таппине асăрхаса çырнине. Ĕненес килмест вăл çырайми пулнă тенине.

* * *

Вăтанма пĕлмен хĕрарăм вăл хĕрарăм та мар. Калаçура е çын умĕнче хăйне тыткаланă чухне виçе кирлех ĕнтĕ. Халăх йăли çапла хушать.

Хĕрарăм вăйлă илемĕпе, кăмăлĕпе, çепĕçлĕхĕпе, арçынра çук енсемпе. Турри ăна пахарах чустаран çăрса тунă.

Эрех ĕçекен, табак туртакан, киревсĕр сăмахсемпе хăртакан хĕрарăмсене те юратаççĕ-ши вара? Сăнчăрти усал йытă евĕр хĕрарăмсем те юратăва тивĕç-ши?

Юратаççĕ пулсан, мĕнлерех арçынсем-ши вĕсем?

* * *

Тепĕр чух вăхăтлăха хăв кам пулнине манни те питĕ усăллă. Ун чухне эсĕ ăсчах та мар, сăвăç та мар, депутат та мар. Çын кăна. Шăп çавăн чух пуçланать те ĕнтĕ чăн-чăн кану, умри тĕллевсене пурнăça кĕртме кирлĕ вăйсене пухасси.

Чăнах та, çак мелпе усă куракансем ăнăçлăрах ĕçлеççĕ, пысăкрах çитĕнӳ тăваççĕ.

Хăй пуçлăх пулнине пĕр самантлăха та манайман çынсене хĕрхенес килет. Вĕсем маншăн ĕç пуканĕ çумне çыпăçса ларнă чурасем пек курăнаççĕ.

Тен, вĕсем хăйсем те мар, инструкципе ĕçлекен роботсем кăна.

* * *

Пултăм пĕр скульптор патĕнче. Куртăм халиччен курманнине. Аманнă лаша çинче ларать пĕр паттăр. Юнлă çапăçура çухатнă алли-урине, пуçĕ те аманнă. Анчах пурпĕр çĕре ӳкмен, тăшмана парăнман.

Чылай вăхăт пăхса тăрсан палласа илтĕм. Çакă вăл ман тăван халăхăм. Аманнă, суранланнă, анчах пĕтмен, упранса юлнă. Чĕри пур, чунĕ пур. Урăх... Пуçне çапса амантнăран-ши хăй ăсĕпе пурнаймасть.

Суранланнă лашара куртăм эпĕ Чăваш çĕрне. Ăна касакаса вакланă, пайланă. Унпа пĕрле чăвашсене те пĕр-пĕринчен уйăрса янă...

Скульптор патĕнче пулни чуна ыраттарчĕ.

* * *

Эх, тăвансем, хăçан çын пек пурăнма вĕренсе çитĕпĕрши? Хырăма лайăхрах тултарассишĕн çапăçсах ĕмĕр иртсе каять-ши вара? Мĕншĕн тĕллевсем çав шайра çеç-ши?

Пурнăçăн çӳлти шайĕ вăл илемпе киленсе пурăнасси. Хăçан çавăнталла туртăнма пуçлăпăр-ши?

Ĕлĕкрех çак тĕллеве хаклакансем грексем пулнă. Ун пек халăхсем халĕ те пĕтмен-ха. Уйрăмах Европăра чылай.

Вĕсем тупаççĕ вăхăт тĕнче илемне курса çӳреме.

Пĕр-пĕр пĕчĕк хуларах юрлама юратакансен ушкăнĕсем йышлă, театрсем, оркестрсем, музейсем, выставкăсем пур.

Кашнин пултарулăхĕ халăх умĕнче. Илемпе туслă çынсем унта яланах хисепре.

* * *

Чăваш темшĕн хăйне пĕр майлăрах çеç тыткалать. Таврари лару-тăрăва хăйне пăхăнтарасшăн. Пурнăçа çăмăллатмалли мелсене час тупаймасть. Йывăр çулран пăрăнаймасть.

Еврейсем вара пачах урăхла. Ытларах хăйсене мĕнлерех тыткаламаллине мала хураççĕ. Лару-тăрăва пур енлĕ тишкерсе тухмасăр утăм тумаççĕ. Ĕçе пуçăниччен вĕçне курма тăрăшаççĕ. Тен, çавна пулах йывăрлăхсене хăвăртрах çĕнсе илеççĕ, пурнăç çулĕпе ăнăçлăрах утаççĕ.

* * *

Хăйне хăй хисеплемен çынсенчен тем те кĕтме пулать. Вĕсене пирус тĕпне сӳнтернĕ чухнехи пек таптаççĕ, вĕсемпе пылчăклă урисене шăлса тасатаççĕ. Пурпĕрех нимĕн те шарламаççĕ. Çын кулли пулса пурăнаççĕ, чыс мĕнне пĕлмеççĕ.

Чи япăххи – çавăн пек çынсем хăй чысне пысăка хурса хаклакан çынна ăнланманни, ун хыççăн утма шикленни. Вăйлăраххи пулăшас тĕллевпе ал парсан та унпа усă курма пĕлмеççĕ.

Хăйне хăй хисеплемен çынна кам хисеплетĕр-ха?

* * *

Чура маррисем çукпа пĕрех. Пурлăхшăн çеç çунса çӳрекенсем, паллах, чура. Влаçшăн çунакан та – чура. Апла пулсан лавкка хуçи те, хула пуçлăхĕ те – чура.

Пурлăхпа çеç виçекен телей те тулли телеех мар ĕнтĕ. Унта çук чарăну, унта çук лăплану, унта хуçа ăмăрту, тавлашу.

Чура маррисем те тĕл пулкалаççĕ-ха. Вĕсем – шухăшпа, ăс-тăнпа çӳлти шайра тăракансем.

Хăш-пĕрисем манпала тĕл пулсан пурлăх шайне мала хурса калаçма тăрăшаççĕ. Çăмăл машина пур-и, хваттер икĕ хутлă-и, Хура тинĕс хĕрринче кану çурчĕ пур-и – пĕлтерме васкаççĕ. Эпĕ кăшт та тĕлĕнменнине асăрхасан вара аптраса ӳкеççĕ. Пĕлмеççĕ вĕсем: пурнăçа ăна пурлăхпа çеç виçмеççĕ вĕт-ха.

Эпĕ пурлăхпа япала тарçи мар, шухăш тарçи. Çавăнпа та-и, тен, хама хам кăшт ирĕклĕрех туятăп. Тен, эпĕ чура та мар.

* * *

Ытла та ырă пурнăçпа ӳснĕ хĕрсене качча илме ан васкăрха. Вĕсенчен чăн-чăн арăм пулса çитиччен çӳç те кăвакарĕ, ĕмĕр те иртсе кайĕ.

Качча тухсан та хăйсене хăнари пек çеç тыткалаççĕ. Упăшки тăрăшса тунă ырлăх-пурлăха та тивĕçлипе хаклама пĕлмеççĕ. Енчен те пурнăçĕ хĕр чухнехинчен хĕсĕкрех пулсан, айăпне веçех упăшки çине йăвантараççĕ.

Мĕн пĕчĕкрен ĕçпе пиççе ӳснĕ хĕрсем апла пулас çук. Савăнмалли те, хĕпĕртемелли те, ырлăхшăн тав тăвасси те вĕсен ытларах.

Апла эппин, çамрăклах тем те курса, тем те çисе, тăхăнса ӳснĕ арăмпа пурăнакансен шăпи пит çăмăлах мар.

* * *

Сан пурнăçу аса илтерет çумăр ӳкмен анана. Типĕ унта, питĕ типĕ. Ырри нимех те шăтса тухмасть.

Веçех аçу-аннӳ мĕнле чĕре лартса панинчен килет.

Ӳсрĕн хулара пĕртен-пĕр ача пулса. Курман эсĕ премĕке е шоколада хуçса шăллуна е йăмăкна парса. Курман эсĕ аслаçу е кукаму чĕрçи çинче сиксе, вĕсем каланă юмаха çăвара карса итлесе ларса. Палламастăн ялта пурăнакан пиччӳсене, аппусене. Хăв куçупа курман эсĕ аçу-аннӳ хăй ашшĕ-амăшне мĕнлерех юратнине.

Ăçтан-ха сан пултăр тăванлăх туйăмĕ, хăвна çуратнă çынсен ватлăхне çăмăллăх кӳресси? Чĕрӳ те, аллу та сан ыттисене ырлăх пама хăнăхман.

Чĕрӳ типĕ пулсан, ăçтан пурнăçу сĕтеклĕ пултăр-ха?

* * *

Çынна хăвăрт утма икĕ ура туса панă. Ăçта кăна илсе çитермеççĕ вĕсем! Ырри патне те, усалли патне те.

Çитмесен Шупашкара, тусăмсем, сире курас çукчĕ. Пĕлес çукчĕ çакăн пек ырă çынсем пуррине. Пурăнаттăмччĕ таçти тинĕс хĕрринче, урăх çынсем хушшинче.

Халĕ вара тĕлĕнетĕп, ик урана тав тăватăп. Тĕрĕс çулпа утнăшăн, сирĕн пата çитернĕшĕн. Мана лайăх сирĕнпе, шанчăклăрах çӳреме.

Икĕ урана туса панă пурнăç çулĕпе утма, çĕр çинче çирĕп тăма. Пĕр ура çинче çеç тăракан нумаях чăтаяс çук.

* * *

Хальхи актерсене кăштах хĕрхенес те килет. Уйрăмах пуян çынсен рольне вылянă чухне. Чухăнлăхпа чуралăх туйăмĕнчен уйрăлаймаççĕ. Çакă вăл уттинче те, аллисене мĕнлерех тыткаланинче те, калаçура та паллă. Капăр тумтир курăнать ĕне çинчи ашăк пек.

Чура рольне вылянă чух вĕсем пачах урăхла. Сăнарсем те пулаççĕ лайăхрах, ĕненӳллĕрех. Çывăх сăнара калăплама çăмăлрах çав.

* * *

Юратушăн чи хăрушши – мăшăрланни пирки паспорт çине çырса хуни. Ултавлă япала. Юрату вучахне кăвайт хума мантарать. Çак ырă туйăм вара саккунпа палăртнă тивĕç вырăнне кăна тăрса юлать.

Тепри тата пĕрле пурăнакан чипер хĕрарăма та асăрхами пулать. Çумри арăм ниçтах та каяс çук тенĕ пек тыткалать. Арçын куçĕ мăкалса пырать. Çумри илем çине тепри куç хывсан тин уçăлса каять.

Ун чух вара кĕвĕçӳ, ун чух вара харкашу.

Паспортпа çеç çирĕплетнĕ юрату нумаях пымасть иккен. Ăшши часах сӳнет.

* * *

Шавлă вăхăтра пурăнатпăр. Ĕçре те шав, урамра та, пухура та. Манса пыратпăр лăпкăн калаçма, тепри каланине итлеме.

Пуçра та шав. Кам сасси кăна илтĕнмест унта!

Халь те янăрать-ха Сталин сасси. Хрущевпа Брежневăн та илтĕнет. Горбачевăн та пур. Ельцин, Собчак, Жириновский...

Шăв-шава хăнăхса çитрĕмĕр. Шавлă вăхăт çыннине шăплăх кăштах хăратать, шиклентерет.

* * *

Революци вăл питĕ интереслĕ япала. Теме те вĕрентет. Чи малтан чăрсăрланма, унтан – ыттисем пухнă пурлăха туртса илме. Хатĕррине куç куратех çав. Унтан вара, туртса илмелли пĕтсен, тытăнаççĕ вăрлама. Патшалăхăн-и, колхозăн-и – пуçлаççĕ чĕпĕте-чĕпĕте илме.

Кун пек хăтланаççĕ алли пĕчĕккисем. Мăннисем, çӳлерех лараканнисем, чĕпĕтсе илнипех çырлахмаççĕ. Вĕсен виçи урăхла, машинпа та вагонпа.

Çапла пурăнатпăр ĕнтĕ революци вĕрентнĕ йĕлапа килĕшсе. Шалт тĕлĕнетĕп, мĕнле тытăнса тăрать-ши ман çĕршывăн пурлăх тĕнчи? Кам аллинче-ши вăл? Хуçи кам-ши?

* * *

Çынсем пурте хăйсем пек мар çав. Çын хыççăн каясси, хăй шухăшне пăрахса тепринне итлесси самай йĕлана кĕнĕ.

Каласшăн мар эпĕ ыттисене итлемелле мар тесе. Çук, итле. Анчах ыттисен шухăшĕ саншăн пултăр хăвăнне тĕрĕслемелли виçе. Суйла, танлаштар, мĕн кирлине ил, хăв шухăшна вăйлат.

Пурнăçра та çавах. Ыттисенчен те вĕренсе пыр: лайăххинчен те, начарринчен те. Пурăнасса вара хăвна май пурăн. Асра тыт: сан пек çын çĕр çинче çук. Эппин, сан пурнăçу пек пурнăç та урăх пулма пултараймасть. Вăл та пĕрре çеç.

* * *

Маншăн пĕчĕк ĕç çук. Пурте кирлĕ пек туйăнать. Пурне те тăрăшсах тăвас килет. Тĕплĕ тунă ĕç хăй хакне çухатас çук.

Пысăк ĕç вăл кĕтмен çĕртен сиксе тухмасть. Ăна пĕчĕк ĕçе хăнăхман çын тăваймасть те. Ма тесессĕн пысăк ĕç вăл – пĕчĕк ĕç ачи.

* * *

Вуласа курнă-ши эсĕ темиçе çул хушши чирлĕ выртакан поэт сăввине? Асăрханă-ши куççăр çын ĕçленине, юрланине? Курнă-ши алли кăранташ тытайманнин шăлпа çыртса ÿкернĕ ÿкерчĕкне?..

Пирĕн ав пурте сывах, ал-ура та вырăнтах. Куç умĕнче тĕнче илемĕ, хăлхара çутçанталăк кĕвви. Анчах темшĕн хамăр алăпа тунă илем пирĕн çумра сахалрах.

Турри панă сывлăхпа усă курма пĕлейместпĕр, хамăра хамăр хаклама та вĕренсе çитеймерĕмĕр.

* * *

Чăваш арçыннисем, ман пĕр тĕллев пур. Хамăр арăмсене лайăх тумлантарасчĕ те ют çĕршывсем тăрăх ярăнтарса çÿресчĕ. Курччăр пулса Швейцарире, Францире, Германире, Данире, пĕчĕкçеççĕ Люксембургра...

Хул хушши тарличчен, халран кайиччен лавккасем тăрăх чупса çÿреме мар, илем курма илсе каясчĕ. Кĕртсе кăтартасчĕ чи паллă музейсене, чаплă парксене, апатне çитересчĕ чи паха ресторансенче, хăнара пуласчĕ хамăр евĕр çĕр ĕçĕпе пурăнакансем патĕнче...

Чăваш арçыннисем, мĕн калăр-ши? Ман тĕллеве пурнăçа кĕртме пулăшăр-ши? Тĕнче илемĕ пирĕн арăмсен куçĕнче курăнĕ-ши?

* * *

Пурнăçа килсен – пурăнмаллах. Тăрăшсах, чăнласах. Ячĕшĕн кăна, вăйăн-шайăн пурăнассишĕн çуралмалла та мар, пурнăçа пуçламалла та мар. Хатĕрленмелле, авланиччен маларах ăс илмелле.

Тытса кур эс сухапуç, выляса тăтăр аллунта мăлатук. Ĕçлесе кур пуртăпа, савапа, пăхăнтар хăвна тимĕр-тăмăра...

Тытма пĕлес пулать пурлăха, сыхлама сывлăха, иртĕхме юрамасть ĕçкĕпе. Чирлĕ çын яланах телейрен инçерех.

Кашни савăнар сывă та ăслă ача-пăчапа, лайăхрах пулăшар çамрăк ăрăва. Çапла çул хывар канлĕ ватлăха.

* * *

Калаçма тÿр килчĕ пĕр ватă çынпа, çĕр те пилĕк пин илекен пенсионерпа. Кĕтнĕччĕ унтан тав сăмахĕ. Çук, пурпĕрех вăрçать патшалăха, хальхи йĕркешĕн тăрăшакансене. Хваттер туса пачĕ ачисене, пулăшрĕ илме çăмăл машина, холодильник те туянчĕ черетсĕрех... Пенси укçи хăйĕн профессор шалăвĕнчен пысăкрах. Анчах пурпĕр кăмăлсăр, мала хурать иртнĕ вăхăта.

Ăнланма пултараймасть халăх мĕншĕн чухăннине, çитмĕл çул хушши халăха улталаса ĕçлеттернине.

Тÿлессе те сахалрах тÿленĕ, ĕçлесе илме те паман. Халăх вăйне янă ытларах хĕç-пăшал туптанă çĕре. Тĕнчипех коммунизм тăвас тесе пулăшнă ыттисене.

Тем пек йывăр вăхăтра та патшалăх манмасть ваттисене, укçи сахал пулсан та пулăшатех вĕсене. Анчах темшĕн тав сăмахĕ калакансем сахалрах. Ман шалуран нумайрах пенси илекен пенсионер та шарламасть.

* * *

Пурте вăтам. Шкулĕ вăтам, учителĕсем вăтам, ачисем те вăтам, пĕлĕвĕ те вăтам...

Енчен те Пушкин паянхи шкулта вĕреннĕ пулсан, çитĕнетчĕ-ши çавăн пек чаплă сăвăç? Юрать-ха, ăна валли лицей тупăннă.

Мĕн чухлĕ вăйне пĕтермерĕç учительсем начар ăс-тăнлă ачасемпе ĕçлесе, ÿсĕрпе тунă ачасенчен ăслă çын тăвас тесе. Пултаруллисем вара анасласа пăхса ларчĕç. Вĕсем патне учительсем çитеймерĕç.

Начар ăс-тăнлă ачасемпе çеç ĕçлесе вĕрентекенсем хăйсем те чакса пычĕç.

Кама вĕрентетĕн, кампала ĕçлетĕн – хăв та çавсене май аталанса пыратăн.

Шкулăн пур енĕпе те вăтам çеç пулмалла мар.

* * *

Эпир патшасене те, президентсене те хамăр пек тăвасшăн, хамăр хушăри йăласемпе пурăнтарасшăн.

Çук çав. Апла пулмасть. Вĕсен тĕнчи урăхла. Хăйюллă ĕçсем те питĕ кирлĕ. Унсăрăн çĕнни шăтарса тухаймасть. Кивĕ йăла-йĕркесемпе хирĕçесси те сиксе тухать.

Енчен те Петĕр патша кивĕ моральпе кăна пурăннă пулсан, Раççей Европа çулĕпе утма пуçлас та çукчĕ.

Пуçласса пуçланăччĕ те...

Ленинпа Сталин та хăйсен тĕллевĕсене пурнăça кĕртнĕ чух кăмăл-сипете таптамасăр иртсе каяйман.

Халăх моралĕ хулленрех улшăнса пырать, пуçлăхсен – хăвăртрах. Пĕрне-пĕри ăнланманнин сăлтавĕ шăпах çакăнта.

* * *

Темшĕн-çке чăвашсем ыттисенчен вĕренесшĕнех мар. Тутарсенчен те вĕренмелли нумай. Вырăссен те пур лайăххи. Еврейсенчен илмелли тĕслĕхсем вара темĕн чухлех.

Пăх-ха вĕсене: мĕнле мăнаçлăн тытаççĕ хăйсене, таçтан палласа илеççĕ, пĕрне-пĕри алă параççĕ, пулăшаççĕ. Туслă вĕсем. Пĕри мала тухсан, туртать ыттисене. Ĕçкĕпе сӳпĕлтетсе пурăнакан çемьепе тăванлашса чакармаççĕ йăх вăйне. Çавăнпа вĕсем тавçăруллă, çавăнпа вĕсем пултаруллă, ăс-тăн вăйĕпе ыттисене пăхăнтараççĕ, тĕнчери лару-тăрăва та çавсемех йĕркелесе пыраççĕ, ăру ятне çĕклеççĕ.

Кăштах ăмсанатăп та, кĕвĕçетĕп те. Хамăр айвантараххишĕн пăшăрханатăп.

* * *

Хамшăн мар, çăхавçăсене тăрă шыв çине кăларасси те хамшăн мар. Вĕсен суя сăмахĕ ман çула пӳлес çук, кĕвĕç сурчăкĕ ман çума çыпçăнас çук. Анчах ыттисенчен кулнине чăтма пултараймастăп.

Çамрăксене улталаççĕ, пăсаççĕ, илĕрте-илĕрте ирсĕр ĕçе

явăçтараççĕ, çăхав çырма, суя сăмах сарма вĕрентеççĕ.

Аста вĕсем айван çынна мухта-мухта ун аллипе кăвар туртма. Лешĕ вара чăнах та ĕненме пуçлать. Хăйне хăй эпĕ гений теме те именмест.

Çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ пултарулăх хĕлхемĕ сӳнме тытăнасси, çынлăх шайĕ анса ларасси.

* * *

Усал тĕнчере пурăнакан çын хăй усалланса пынине те сисмест. Пурнăç тилхепине унти йĕркесене пăхăнса тытса пынăçем веçех хăнăхса çитет вăрçма та, хăратма та, кăкăртан тытса силлеме те...

Усалли нумайрах чухне ыркăмăллăх, çепĕçлĕх, çын хуйхине чĕре патне илсе пулăшăва васкасси чакса пырать. Пурлăх тунă, мул пухнă çĕрте те усал мелсем вăй илеççĕ. Çавăн чух вара çынсем усаллăх усăллă пулнине туйма пуçлаççĕ. Хаяр та куштан çынсен çулĕ уçăлса пырать, ырă кăмăллисен шăпи йывăрланса çитет.

Усал тĕнчен тытăмĕ çапла. Урăх çĕрелле тухкаласа çӳресен тин хамăр мĕнлереххине асăрхатпăр.

* * *

Пĕр пек тырă пĕрчи çук, пĕр пек шыв тумламĕ çук, пĕр пек çын та çук.

Йĕкĕреш çуралнисем те пĕр пек мар. Пурнăç çулĕ вĕсене те пĕр-пĕринчен пăрса ярать. Кашни хăй сукмакĕпе утма пуçлать. Çын хăйĕн уйрăм сăн-питне илсе пырать.

Тен, çапла кирлĕ те. Паллах, çапла кирлĕ.

Мана пĕревĕрлĕх шиклентерет те. Сăн-питрен кăна мар, шухăшлав енĕпе те тĕрлĕ енлĕ аталанасчĕ.

Пур çĕрте те пĕр евĕрлĕ çынсем çеç пурăнсан, пурнăç ытла та кичем пулмĕ-ши?

* * *

Эпир те çамрăк пулнă. Пире те юратнă. Хитре хĕрсемпе чипер хĕрарăмсем пирĕн çумра та пулнă.

Ман ватлăхăн ĕмĕчĕ çапларах. Енчен те леш тĕнчене каяс умĕн йывăр выртнă вăхăтра ман ума чипер хĕрарăм пырса тăрас-тăк...

Савăнмалăх вăй тупăттăм. Тен, пăшăрханса та илĕттĕм.

Мĕншĕн тесен икĕ туйăмĕ те – пурнăç парни. Пĕри пулмасан – тепри çук. Пĕри нумай чух – тепри сахалрах. Анчах пĕри те пачах пĕтмест. Çынпалах вĕсем. Юлашки самантченех.

Куçăмра юлакан юлашки сăнар пултăрччĕ илемлĕ хĕрарăм. Ăна хампа пĕрле илсе каясчĕ.

Нимĕншĕн те пăшăрханмастăп, леш тĕнчере илем сахалрах пуласран кăна шикленетĕп. Унта та усал çынсем нумайăн пухăнсан вара...

Ăçта кайса кĕрес? Каялла килме çук. Çавă хăратать.

* * *

Коммунизм та коммунизм теççĕ, вăл мĕнлине каламаççĕ. Мĕншĕн тесен ун пирки ытларах коммунизмра пачах та пурăнса курманнисем çеç пакăлтатаççĕ. Пурăнса курнисем вара лайăх пĕлсен те шарламаççĕ.

Коммунизм вăл яланах пулнă. Общество икĕ ушкăна пайланса кайсанах пуçланнă. Вăл пуçлăхсем хăйсене валли тунă япала. Чурасен хуçисем, феодалсем, улпутсем, патшасем, парти пуçлăхĕсем – пурте коммунизмра пурăнса курнă çынсем.

Коммунизм вăл пурне те тивекен çимĕç мар. Ун ырлăхне куракансене йышлăн теме çук. Унта пурăнма тивĕçлисене питĕ вĕтĕ алапа суйласа илеççĕ. Витĕр тухайманнисене нимех те тивмест.

Коммунизм вăл пачах та ĕççынни валли мар. Ăна айван кăна ĕненет.

* * *

Ĕненместĕп. Эпир яланах çакăн пек шайра çӳремен ĕнтĕ. Кам пăсса янă-ши пире?

Пулман теççĕ чăваш хушшинче пĕр-пĕрин пурлăхне вăрласси.

Ватă çын вара вăйĕ чаксан та юлнă тет асли шутĕнчех. Ăна итленĕ, ăна хисепленĕ.

Чăваш иртĕхмен тет ĕçкĕ-çикĕпе, çапкаланса çӳремен тет ӳсĕрпе.

Пĕрре çемье çавăрсан пурăннă тет мăшăрпах, кăларса яман тет ачисене ют çĕрелле çамрăклах...

Апла эпир хамăрах-ши? Пăсăлнă чăвашсем кăна мар-ши? Çавăн пек улшăнма пире кам вĕрентрĕ-ши?

* * *

Эпир паян пӳрне вӗçне тӑрӑннӑ шӑрпӑк пек пӗчӗкçӗ ыйтуран та проблема текеннине тума юрататпӑр. Шӑрпӑка хӗртнӗ йӗп вӗçӗпе хиркелесе кӑларса ывӑт та, ӗçӗ те пӗтрӗ. Çук çав. Ыйтӑва пысӑклатса кӑтартакан тупӑнатех. Мӗншӗн тесен çавӑн пек мелӗн усси те пур иккен. Паллах, пуçлӑх шутӗнче çӳрекеншӗн.

Йӑли çапларах: çав тери кӑткӑс ыйтусене те татса паракан çын пек курӑнма пӗлмесен, пуçлӑх çулӗ нумая пымасть. Ячӗ те сарӑлмасть.

Пӗчӗк ӗçех пысӑклатса кӑтарт та, вара веçех майлашса каять. Халӑх вӑл ӗненет. Сана ырлама, санпа мухтанма пуçлать. Ун чухне вара эсӗ кӳлӗри кимӗ пек аякранах курӑнма тытӑнатӑн. Чеелӗхпе шанӑç пӗрлешеççӗ те сана сыхлама пуçлаççӗ.

Çак асӑннӑ меле алла илсен пуçлӑхра ӗмӗр тӑршшӗпех ларма пулать.

* * *

Ырӑ çыннӑм, тӑхта-ха. Хӑв мӗнлерех çулпа пынине чухласа ил-ха. Хальхи пурнӑçа хак паракансен шутӗнче çеç тӑрса юлмарӑн-ши? Çитменлӗхсене çивӗч куратӑн. Мускава та, Шупашкара та ятласа илетӗн. Анчах çӗнӗлле ӗçлесси пирки нимӗн те шарламастӑн. Унчченхи пекех çӳлтен ырлӑх ярса парасса кӗтетӗн-и вара?

Кӗтрӗмӗр, кӗтрӗмӗр, ырлӑх пирӗн пата çитеймерӗ. Хӑй аллипе тӑвас текенсем валли те çул уçӑлмарӗ.

Йӗркесем паян урӑхларах. Ӗçлемелле, çӗнӗ мелсемпе майсем шырамалла.

Пурнӑçӗ паян чӑнах та чаплах мар. Ӑна сансӑрах куратпӑр. Анчах кӑшкӑрашса çӳреместпӗр. Çӗр илетпӗр те ӗçлетпӗр, пахчаçимӗç туса илетпӗр, выльӑх-чӗрлӗх пӑхса çитӗнтеретпӗр...

Пурӑнатпӑр-ха. Çӗр пулсан, чӑваш выçӑ вилес çук.

* * *

Курнӑ-ши эсӗ çын вилӗм ыйтнине? Эпӗ курнӑ хам куçпах.

Ытла та йывӑр самант. Калаçу та такӑнать, кирлӗ сӑмах та тупӑнмасть.

Кӑштах тӑрӑшсан, вилӗм ыйтакана та ӑнланса илетӗн.

Пĕри ыйтать вăйлă чирпе нумай вăхăт хушши асапланса пурăннипе. Шанчăкĕ сÿннĕ, савăнăçĕ пĕтнĕ.

Тепри ыйтать ĕмĕрĕ ытла вăрăма кайнипе. Вăйĕ чакнă, хăйне хăй пăхаймасть. Кĕскен каласан, пурăнса та ывăннă. Пĕччен вăл. Çумра ватлăха çăмăллатакан çамрăксем çук.

Анчах вилĕм çын ыйтнипе килмест çав. Хăй вăхăтне хăй пĕлет.

Вилĕм ыйтасси патне çитес марччĕ. Хам килтех, хам вырăн çинчех куçа хупасчĕ. Нумай вăхăт хушши чирлесе выртса ыттисене чăрмав кÿрес марччĕ.

* * *

Çынсем шутласа тупнă япаласенчен чылайăшĕ мана кирлех те мар.

Кирлех мар мана милици, судпа прокурор. Ман ĕçе, ман пурнăçа асăрхаса тăракан пуçлăхсем те ытлашши.

Эпĕ пăсас çук пурнăç йĕркине. Ман кĕсьере çук хам вăйпа ĕçлесе илмен укçа. Михĕпе лартса парсан та пĕр пус та ытлашши илес çук. Мĕн тумалла маррине тăвас çук. Эпĕ веçех хам: ĕçлекенĕ те, тĕрĕслесе тăраканĕ те, хак параканĕ те. Эпĕ ирĕклĕ çын, анчах чун хушнинчен иртейместĕп, ыттисене йывăрлăх кÿресшĕн мар. Тен, çавăнпах законсем те кирлех мар. Маншăн ытлашши вĕсем. Çырлахатăп эпĕ мораль йĕркипех, асаттесен йăлипех.

* * *

Пурччĕ шăллăм, пĕрле выляса, юнашар çывăрса ÿснĕ шăллăм. Вĕренÿре те, спортра та хампа пĕрлеччĕ. Ăру ятне çĕклекен çын çитĕнет тенĕччĕ.

Çук, шанăçа тÿре кăлармарĕ. Ĕçке ярăнчĕ. Вăл халь тăвансем валли мар. Ĕçре те, савăнăçра та, кулянуллă самантра та пирĕн çумра çук. Ун пĕлтерĕшĕ питĕ пĕчĕкленсе кайрĕ, эрех черкки тĕпне те вырнаçать-тĕр.

Текех шăллăм çук.

* * *

Раççейре пурăнма çăмăлрах. Мĕнле пурăнас тетĕн, çапла пурăн. Мĕнле тыткалас тетĕн, çапла тыткала хăвна. Çула пăхăнмасăр тÿрремĕн утма та юрать. Ĕç вăхăтĕнче сăра-эрех ĕçесси те ним те мар. Вăрлама та чармаççĕ. Хăв патналла турт та турт.

Чӗлхесем пӗлни кирлех мар. Клубсене, стадионсене, театрсене пачах ҫӳремесен те никам ним шарламасть. Хам ӗмӗрте пӗр йывӑҫ, пӗр чечек лартса ӳстермесен те ҫын шутӗнчех ҫӳретӗп.

Ачасене ҫитӗнтерессипе те ним те мар. Кӑштах апатне ҫитер те тумлантар. Ыттине веҫех учительсем туса пырассӗ.

Намӑса пӗлменни ҫеҫ кирлӗ. Вара веҫех – йӗркеллӗ, имӗш. Усал сӑмахсем каласа черет умне пырса тӑр та мӗн кирлине ыйтса ил...

Мана нимле Европа та, Америка та кирлӗ мар. Маншӑн Раҫҫейрех питӗ лайӑх. Ниҫта та нимле чару та ҫук.

Йӗрке тумалла, кӑштах хытармалла текелеҫҫӗ. Йӗрке пулсан, пурӑнма пит кӑмӑллах та мар. Вара вӑл Раҫҫей те мар.

* * *

Чӑваш юрри вӑл калама ҫук пысӑк пуянлӑх. Унта халӑх чунӗ, унта илем туйӑмӗ, туртӑмӗ.

Чӑваш юрринче пиншер ҫул хушши пухнӑ ӑс-тӑн вӑйӗ. Унта авалхи несӗлсемпе хальхи ӑру хушшинчи сыхӑнӑва ҫирӗплетекен шухӑш шӑнӑрӗ. Шӑпах ҫавӑн пек юрӑсем чӑваш чунне вӑратаҫҫӗ те ӗнтӗ. Вӑратаҫҫӗ ҫеҫ мар, ыраттараҫҫӗ те. Шӑпах ҫавӑн пек юрӑсем халӑх асӗнче нумайлӑха ҫирӗпленсе юлаҫҫӗ. Шӑпах ҫавӑн пек юрӑ ҫыракансене ытларах тав тӑваҫҫӗ.

Юрра ӑна халӑх суйласа илет. Сӑвӑҫ пултарулӑхӗ мӗнле шайра тӑнине халӑх татса паратъ.

* * *

Пурне те ҫисе куртӑм. Ача чухне ҫиейменнишӗн тутанса пӑхас терӗм. Пурӑнасса вара чӑваш апачӗпех пурӑнатӑп.

Чӑваш апачӗ ҳӑйне май: кӑшт йӳнӗрех, пӗр майлӑрах.

Чӑваш вӑл ҫиессине пит малти вырӑнах хумасть. Тепӗр чухне ним мар апатпах тутӑ пулатъ. Ҫи-пуҫ енчен те ҫавнашкал.

Ҫаксем веҫех ӗлӗкрен пыракан хӗсӗк пурнӑҫ паллисем. Мӗн ҫиес тенине ҫимелӗх пурнӑҫ тӑваймарӑмӑр. Шел.

* * *

Мĕн-ши вăл кану? Мĕн тути калать-ши?

Ыйтрăм асаттерен, ыйтрăм асаннерен. Пĕлмеççĕ вĕсем. Анне те нимех те калаймарĕ.

Ĕçе кайман кун е отпуск маншăн чи хаклă вăхăт. Шăп çавăн чух пуçланать те чăн-чăн ĕç. Алă та ĕçлет, пуç та ĕçлет. Палăртса хунисем пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Кану çуртĕнче те çавах. Çынсем хăйăр çинче хĕртĕнсе выртнă чух ман хĕрӳ ĕç пырать.

Ĕçлетĕп çапла пĕр кун сиктермесĕр. Маншăн кану та – ĕç.

Тем каланине те чăтса ирттеретĕп, кахал тенине илтес марччĕ.

* * *

Шупашкар паян икĕ пурнăçпа пурăнать. Пĕри чăваш мар çынсен, тепри – чăвашсен. Уйрăмлăхĕ самаях палăрăмлă.

Пĕрисемшĕн Шупашкар пурăнмалли, пурлăх пухмалли, пуймалли вырăн çеç. Теприсемшĕн – тăван тĕп хула.

Пĕрисемшĕн Шупашкарта чăваш сăмахĕ янăрать-и, янăрамасть-и, чăваш ялавĕ вĕлкĕшет-и, вĕлкĕшмест-и – пурпĕрех.

Теприсемшĕн кашни чăвашлăх палли чуна çывăх япала, кашни пĕчĕк утăм – савăнăç. Чăвашлăх юхăмĕ хĕнпе вăй илет. Каярах та юлтăмăр. Анчах алла усса ларас марччĕ. Çулĕ тăвалла – çапах малаллах утасчĕ.

* * *

Паян пурте Раççее ура çине тăратасси пирки калаçаççĕ, тавлашаççĕ, пĕрне-пĕри вĕрентеççĕ.

Сăмахĕ çителĕклĕ, ĕçĕ сахал. Мĕншĕн тесен сутăнчăксем ытла нумай. Кашни хăйшĕн тăрăшать. Çĕршыв çинчен, халăх çинчен шутлакан нумай мар.

Пĕри Раççей ирĕклĕхне сутать, тепри – ăс-тăнне. Çĕрне сутас текен те пур. Ачалăх шăпи те сутăнчăксен аллинчех пуль тетĕп. Вĕрентӳ ĕçне хисеплеменни малашлăха пăчăртани мар-ши?

Ытла та чее мел тупнă: Раççее çĕклетпĕр тесе калаççах усал ĕç тăваççĕ, çĕршыв хăватне хавшатаççĕ.

* * *

Чăвашлăхшăн çунакансене хĕрхенетĕп те, ăмсанатăп та. Вăхăтне те, сывлăхне те, укçине те шеллемеççĕ. Килти ĕççене пăрахсах халăхшăн тапалашаççĕ. Арăмĕсем мĕнлерех-ши вĕсен? Мĕнле чăтаççĕ-ши?

Пурăнасчĕ пурлăх пуçлăхĕ пулса, ĕççе-çисе савăнса. Çук çав, ытла та йывăр çул суйласа илнĕ вĕсем. Çитменнине тата тем те илтме тивет, чăваш маррисем те сăхаççĕ, чăвашĕсем те сăхаççĕ. Анчах чăтăмлă иккен вĕсем. Кам вăй парса тăрать-ши? Чăваш турри мар-ши?

* * *

Ырă çыннăмсем, эсир маншăн мĕн тери хаклине каласа пама сăмах та çитерес çук. Мана эсир пурри çеç тытса пырать, çырма хистет, хавхалантарать.

Апла эппин, ман яланах сывлăхлă çӳремелле, ăсăма ĕçкĕ-çикĕпе шĕветсе ямалла мар. Эсир ывăнсан е чирлесе ӳксен те, мухмăрпа асапланнă чухне те манăн урă та сывлăхлă пулмалла.

Эпĕ те аптраса ӳксен, кам тăпăртатса чупса çӳрĕ? Сире хăвăр мĕнлереххи пирки тĕрĕссине калакан та кирлĕ вĕт-ха. Эпĕ сăнарласа панисенче пĕри е тепри хăйне палласан, çырни усăсăр та мар.

* * *

Пултăм концертра, лартăм хурланса.

Тухрĕç малтан пушкăртсем. Капăр тумлă йĕкĕтсем тĕлĕнтерчĕç ташшипе. Пит мăнаçлăн та хăюллă курăнчĕç ав калмăксем.

Унтан тухрĕç ташлама мĕскĕн чăвашсем. Каллех çăпата, тарăн резин калуш, каллех нишлĕх. Чăваш хĕрĕ валли çĕлеймен пушмак. Каччисен уринче курăнмасть сăран атă.

Пур-ши çĕр çинче пирĕн пек айван, чухăнлăха илем вырăнне хурса кăтартакан? Пур-ши пирĕн пекки, ытти халăхсен те йăлана кĕнĕ çăпатана хамăрăнни пек кăтартса улталанакан? Пур-ши пирĕн пекки, хамăртан хамăр вăтанса ташлакан?..

Чĕрем ыратнипе чăтса лараймарăм, тухса кайрăм. Мĕншĕн çапла-ши чăваш шăпи? Савăнăçĕ те ун куççуль витĕр кăна сăрхăнса тухать.

* * *

Кирлĕ мар, çук япалана пур пек кăтартма кирлĕ мар.

Пĕри ав çырать чăваш хĕрарăмне мухтаса, акăлчан хĕрарăмĕнчен мала хурса.

Çук ĕнтĕ, чăваш арăмĕ акăлчан е француз хĕрарăмĕпе танлашаяс çук. Вĕсем пурăнакан кил-çуртра пурăнса курас çук, вĕсем тăхăнакан çи-пуçа тăхăнса курас çук, вĕсем çиекен апат-çимĕçе çисе курас çук, вĕсем çитсе курнă çĕршывсене çитеес çук, вĕсем çуратнă пек ача çуратаяс çук...

Чăваш хĕрарăмĕ тĕнчери чи чухăн хĕрарăмсенчен пĕри. Чикан майри те унран пуянрах, ирĕклĕрех. Вăл паян йывăр лава кӳлĕннĕ лаша пек çеç курăнать. Мĕншĕн тесен Чăваш çĕршывĕнче арçыннисем пит айван.

Çук, пит вĕçкĕнленсе çырас марччĕ. Ытларах тĕрĕссине каласчĕ.

* * *

Эп çиçĕм, тĕттĕмлĕхе касса уçакан çиçĕм. Эп çиçнĕ чухне курса юлăр хăвăр çумра камсем тăнине.

Унта эс курăн такама та: ырă сунакана та, кĕвĕç чуна та, йăпăлти çынна та...

Унтах пур эсĕ такăнасса кĕтсе тăракансем, ура хума хатĕррисем. Пĕрлех вĕсем. Алă та параççĕ, сăмах та хушаççĕ. Хура чунне пытараççĕ. Такăнмалли тумхахсене шăп çавсем туса пыраççĕ. Вăрттăн сăхаççĕ, хăйсене палăртма хăраççĕ.

Анчах çак вăрттăнлăх тăрă шыв çине тухатех. Каярах пулсан та. Ун чух вара тĕлĕнетпĕр.

Çăхав çыракансем санпа юнашар тăраканнисемех иккен.

* * *

Халăхсем те çынсем пекех – тĕрлĕрен. Шăпи те пĕр пек мар.

Пĕрисем ĕçлеме юратаççĕ. Пуç çĕклемесĕр, таврара мĕн пулса иртнине асăрхамасăр тар юхтаракан халăхсем пур.

Пит вĕрентме юратаканнисем те тĕл пулаççĕ. Кусем вара ăсĕпе мухтанаççĕ, хăйсене ыттисенчен çӳлерех хураççĕ. Вĕрентеççĕ те вĕрентеççĕ...

Пĕтĕм тĕнчене алăра тытма ĕмĕтленекеннисем те пур. Кусем вара таçта та ĕлкĕреççĕ, пур çĕре те сăмсине чикеççĕ, вăйпа хăратаççĕ.

Чăвашсем мĕнлерехскерсем-ши? Хăш ушкăна кĕреççĕ-ши?

* * *

Эпĕ хама хам пачах та хĕрхенместĕп. Хĕрхенекенсене те тав тумастăп. Сивлетĕп вĕсене. Çук, мана хĕрхенме кирлĕ мар.

Эпĕ ирĕклĕ çын. Çĕр çинче çирĕп тăратăп. Канлĕ çывăракан çын. Ĕçрен хăвалама, судсем тăрăх сĕтĕрсе çӳреме тусан пĕрчи пысăкăш та айăпăм çук. Канăçсăр çывăрма – çылăх çук. Аттеанне умĕнче, тăвансемпе юлташсем умĕнче эпĕ таса. Усал туман вĕсене.

Пĕртен-пĕр канăçсăрлăх – тăван халăх умĕнчи парăма татасси. Çавна ырă тăвасчĕ, çавна вăй парасчĕ, çавăншăн пурăнасчĕ. Вилсен те çавăншăн кăна вилесчĕ.

* * *

Чăваш ытларах хăйне шанать. Хваттер парăр-ха тесе ыйткаласа пăхать те çӳреме пăрахать. Тытать те вĕт хăмасенчен саплаштарса пӳрт туса лартать. Хăйне ирĕклĕрех туйма пуçлать.

Эпĕ те çавах. Пăхса тăратăп ак тин çеç тольпе витнĕ хула хĕрринчи пĕчĕк пӳрт тăррине.

Сасартăк вĕçсе пырса ларчĕ пĕр чакак. Пĕр-ик хутчен кăшкăрса илчĕ те уткалама пуçларĕ. Урисем типсех çитеймен сăмала çумне çыпçăна пуçларĕç курăнать. Сăхса пăхрĕ, сăмси çыпçăнса ларчĕ. Пуçне хыттăн çĕклерĕ те хӳри сăмала çине лекрĕ, çыпçăнса ларчĕ. Унтан кайăк мĕнпур вăйне пухрĕ те йывăррăн çĕкленсе вĕçсе кайрĕ.

Эпĕ те çав чакак пекех иккен. Пурнăçăма пĕр енчен саплакаланă çĕре тепĕр енчен çурăлса пырать. Пĕр урине йывăрлăхран туртса кăларнă çĕре тепри кĕрсе те ларать. Вĕçсе кайăттăм, кайăк мар. Пурăнатăп çапла уксахласа.

* * *

Ман умра выртать Мăн Чăваш çĕршывĕ. Утрăм, утрăм, утса тухаймарăм. Чупрăм, чупрăм, чупса тухаймарăм. Кун каçа çăмăл машинăпа васкарăм, вĕçне тухаймарăм. Сарлака иккен вăл Чăваш çĕрĕ. Анчах пире ун пирки ача чухне каламан.

Çĕршыв картти çине пăхсан пăшăрханса тăраттăм. Ытла та пĕчĕк-çке тăван республика. Халĕ вара пĕлтĕмĕр: Чăваш çĕрĕ пĕчĕк мар. Касса вакланăран кăна курăннă вăл çавăн пек.

Самана яланах паянхи пек тăмĕ-ха. Тĕнчери ырă йĕркесем кунталла та çитĕç-ха. Чăвашсен пĕрлешмеллех. Пĕр халăха чăмăртанса тĕнче умне тухмаллах.

* * *

Юратнă çын умĕнче япăх курăнас килмест. Пĕлетĕп-ха, çитменлĕх сахал мар. Анчах пурпĕр тытас килет хама çирĕп сывлăхлă та вăйлă çын пекех. Вĕренсе çитрĕм кăшт ăслăрах курăнма, калаçура сыхланулларах пулма. Палăртма тивет çепĕç кăмăл-туйăма. Юрату çапла ыйтать.

Апла эппин, юрату вăл çынлăх шкулĕ. Çынна ырри енне туртать, халиччен палăрман чун-чĕре вăйне уçса парать. Тен, çавăнпах юратакансем курăнаççĕ урăхларах, кăмăллăрах та илемлĕрех.

* * *

Чăвашлăхшăн çунакансем, мĕнле-ха эсир çав тери канăçсăр, хытă шăнăрлă тата чăтăмлă. «Эсир пирĕн тăвансем мар-им вара?» – теççĕ пире айккинчен пăхса тăракансем.

Чăвашлăхшăн тăрăшайманнисем, мĕншĕн-ха эсир ытла та халсăр, суккăр? «Эсир те пирĕн тăвансем мар-им вара?» – тесшĕн эпир вĕсене.

Умри тумхахсене вăйлисем тикĕслесе пымасан, сирĕн çулăр мĕнлерех çаврăнĕ-ши? Çакна манас марччĕ.

Çĕннине вăй паракансем вĕсем пурте ыттисенчен çирĕпрех: йывăç касакан пуртă та, шăтăк шăтаракан пăра та, савалакан сава та, çĕр чавакан кĕреçе те...

Халăха çул кăтартса пыракансен те çавăн пек пулмалла мар-и вара?

* * *

Пĕр тан маррисене танлаштарма пикенни вырăнлах-ши? Сиен япала çеç мар-ши?

Кашни çыннăн хăйĕн шайĕ, пахалăхĕ пур. Çавна шута илмесен пĕртанлăхпа хăпартланни нимех те памасть. Усси сахал.

Пĕртанлăх туйăмĕ малтан ăмăрту çуратать. Унта çĕнтереймесен кĕвĕçӳ патне илсе пырать. Пуçланать вара ултавлă мелсемпе усă курса хăвна хаклăрах кăтартма тăрăшасси, суясси, чыса сутасси... Манăн никампа та танлашас килмест, хам пек çеç пулас килет.

# 1994 çул

* * *

Эй, чăваш хĕрарăмĕсем! Кирпĕч купалакан, вăрман касакан, торф кăларакан, Шупашкар урамĕсене шăлса çӳрекен ачасем çеç çуратса çитет. Паян кирлĕ урăххисем, ас-тăн енчен вăйлăраххисем, аслă пĕлӳ илнисем.

Пире кирлĕ тавçăруллă çамрăксем, тулăх пурнăç тăвас ĕçре тĕслĕх кăтартакансем.

Пире кирлĕ ялти йĕркелĕхе тытса пыракансем, тăван кĕтес илемне пуянлатакансем.

Пире кирлĕ Чăваш çĕршывне çĕклекенсем, министра, президента суйланма тивĕçлисем.

Сисетĕп-ха эсир мĕн калассине:

– Вăйлă ăру ӳстерме вăйлă арçынсем кирлĕ. Çавăн пек упăшкасем чăваш хушшинче сахалрах çав, – тетĕр эсир.

Килĕшетĕп сирĕнпе.

Ăçта кайса пĕтрĕç-ши Улăп евĕр арçынсем?

* * *

Савăнма, кану каçĕ ирттерме чăвашсемпех пит аван.

– Ĕçкĕ-çикĕ килте те пур, калаçма килнĕ эпир, – тесе юрлаççĕ чăвашсем. Тăраниччен калаçса савăнаççĕ хăнара.

Кунта пурте хамăр пек. Юрласа яр чăвашла – пурте санпала пĕрле. Чăваш ташши пуçлансан – алă çупса ташлаççĕ. Туйăм тĕнчи пĕтĕмпех йăлтăртатать чăвашла.

Вырăссем чылай пулсан туйăм шайĕ урăхла – ни чăвашла, ни вырăсла. Ни качака, ни сурăх теме пулать урăхла.

Ушкăнпала савăнма чăвашсемпех меллĕрех.

* * *

Пирĕн паян мĕн тумалла? Алăксене лайăх питĕрмелле те Раççейре йĕрке тумалла. Çакна веçех хамăр çине илмелле. Никама та шанса памалла мар. Ыттисем каланине итлемелле, ĕçне пурпĕрех хамăр майлă туса пымалла.

Пире пулăшма пĕтĕм тĕнче хатĕр текенсем – айван

çынсем. Вăйлă Раççей вăл никама та кирлех мар. Ячĕшĕн кăшт пулăшам пекки тукалаççĕ, анчах çакă вăл Раççейшĕн йĕп вĕçĕ пек çеç.

Пурлăх тăвас ĕçе çĕнĕлле йĕркелесе ярассине патшалăх хăй çине илмесен, Раççей лачакаран тухаяс çук.

Манас марччĕ пĕр тĕрĕс шухăша: Раççейĕн тусĕсем çуккă тенине.

* * *

Пуян иккен халăх ӳнерĕ пире паян та çывăх сăнарсемпе. Унта чăваш паттăрĕсем, чиперккисем. Унтах атте килĕ, тăван ял, тăван кĕтес... Çапла кайсассăн малалла патшалăх сăнарĕ çуталмалла. Анчах та темшĕн çак сăнар чăвашсемшĕн пит уçăмлах мар. Тĕтреллĕн çеç курăнать. Те пĕтĕм тĕнче чăваш çĕршывĕ пек шутланнăран, те нумай вăхăт хушши чуралăхра пурăннăран патшалăх сăнарĕ тухса ӳкнĕ пирĕн асăмран.

Кирлĕ пире çав тери çак ырă та пархатарлă сăнар. Унсăр шухăш та халсăр, çунатсăр. Унсăр чăмăртану та çук, малашлăх та çук.

Патшалăх сăнарĕ пек хăватлă сăнар урăх çук.

* * *

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт, чечекрен чечек çине вĕççе çӳресе пĕрчĕн-пĕрчĕн пылак сĕткен пуçтарать, пуласлăх пирки шутлать. Ырми-канми ĕçлеме ăна юрату хавхалантарать, хурт ами пурри илĕртет.

Арçын шăпи те çавах. Юратнă хĕрарăм пурри çунат парать, çĕкленӳ пиллет. Ун чух чăнах та ĕçленин, тăрăшнин, пурăннин тĕллевĕ уççăнрах курăнать. Çакна веçех юрату тăвать.

Вĕлле хурчĕ, ылтăн хурт, – юратушăн ĕçлекен.

* * *

Мĕнле-ха капла? Хирĕçӳллĕ шухăшсем пуçа канăç памаççĕ. Эпĕ ырă тунă, ман умра хăйне кăштах парăмлă туякан çынсен шучĕ ӳссе пынăçемĕн пурнăç çăмăлланмалла пек. Анчах çакна темшĕн сиссех каймастăп.

Сахалăн мар вĕт-ха вĕсем. Пурне те пĕр çĕре пухсан хам хваттерте ура çинче тăма та вырăн çитес çук. Манчĕç-ши вара? Е вĕсем мана ĕлĕкхи пекех вăйлă тесе шутлаççĕ. «Мĕнле пурă-

натӑн?» – тесе шӑнкӑравласа пӑхинччӗҫ. Кирлӗ чухне эпӗ те кирлех пулнӑ ӗнтӗ. Халӗ вара...

Ҫапах та ытлашши пӑшӑрханмастӑп, ӳпкелешместӗп. Пӗлетӗп эпӗ. Йӑли ҫапла. Ҫын вӑл ырӑ тунине манать, усал тунине ҫеҫ ӗмӗр тӑршшӗпе асра тытать.

* * *

Вырӑс пулнишӗн мухтанасси паян ӗлӗкхи пекех мар. Самаях чакрӗ. Сӑлтавӗ те ҫук мар.

Аслӑ пиччемӗр пит шанчӑклах пулмарӗ. Хӑй килӗнче йӗрке тумасӑрах ыттисене вӗрентме тӑрӑшрӗ. Раҫҫей юхӑнса пычӗ.

Вырӑсра курас килет тӑван кӗтесе юратнине, вӑйлӑ тырпул туса илнине, вырӑс ялӗ ҫӗкленнине...

Вырӑсра курас килет Раҫҫей чысне ҫӗкленине, ун пурлӑхне ют ҫӗре вӑрттӑн ӑсатманнине...

Вырӑсра курас килет Раҫҫей президенчӗ пулма тивӗҫ ҫынна пӑхса ҫитӗнтернине...

Вырӑсра курас килет хӑй вырӑс пулнипе каппайланманнине, ыттисемпе пӗр шай тытнине, халӑхсен ирӗклӗхне пысӑка хунине.

Вырӑсра курас килет ырӑ тӗслӗх кӑтартакан ҫынна.

* * *

Тигр нумай вӑхӑт хушши сунара тухмасан ун шӑлӗсем тӗпренме, катӑлма пуҫлаҫҫӗ.

Чӑваша ман шӑпах ҫавӑн пек тигрпа танлаштарас килет. Нумайччен лӑпкӑн кӑна пӑхса ларчӗ. Чӑвашлӑха хӳтӗлес ӗҫе хӑй аллине илеймерӗ. Йӑвашланса пычӗ.

Чӑваш хӑюлӑхӗ чӑвашпа чӑваш харкашнӑ ҫӗрте кӑна лайӑх палӑрать. Ӑрӑва, тӑван халӑха хӳтӗлес ҫӗрте шӑлсӑртарах ҫав.

* * *

Ырантан йӗрке улшӑнать. Киревсӗр сӑмах каласа ыттисен хӑлхине йӳҫӗ сӗрӗмпе пӑклакансен чӗлхи шыҫма тытӑнать.

Ырантан йӗрке улшӑнать. Ыттисен ырӑ ӗҫне, пултарулӑхне курсан кӗвӗҫӳ капланса ҫитнипе ниҫта кайса кӗреймен ҫынсен ҫӳҫӗ тӑкӑнма пуҫлать.

Ырантан йӗрке улшӑнать. Усал ӗҫ туса ыттисене хуйхӑ кӳрекенсен шӑлӗ силленме пуҫлать. Кашни усал ӗҫшӗн пӗрер шӑл ӳксе пырать.

Ырантан йӗрке улшӑнать. Çынлӑха çухатнӑ çын илемсӗр вилӗмпе вилет.

Ырантан йӗрке улшӑнать. Пирӗн пурнӑçра ырлӑхпа илем çеç хуçаланма тытӑнать...

Çаплах-ши?

* * *

Илем вӑл пурне те ӑшӑтмасть. Курма, асӑрхама пӗлмен çыншӑн илем тӗнчи çук. Уншӑн пурпӗрех: пур-и йӗрке килçуртра, пур-и илем çи-пуçра, ӗçленӗ чух, канура...

Илем вӑл ытла та черчен япала иккен. Вӑл пӗр вӑхӑтрах ачаш та, вӑйлӑ та. Ун тути-масине лайӑх туякан, паллах, телейлӗрех. Тӑван кил, тӑван ял, тӑван тавралӑх уншӑн урӑхларах курӑнма пуçлать. Çын аллипе тунӑ илеме хакласси те улшӑнать. Ун пек çын укçашӑн çеç çунса çӳремест. Илемпе киленессине пысӑка хурать. Кирлӗ пулсан ӑна хӳтӗлес ӗçе те харсӑр хутшӑнать.

Илем туйӑмӗ çук арçынна суккӑр тесен те юрать. Вӑл хӑйпе юнашар хитре хӗрарӑм пурӑннине те асӑрхамасть.

* * *

Ӗлӗк-авал чӑвашсен те пӗр япӑх йӑла пулнӑ. Чи ӑслине, чи пултаруллине суйласа илнӗ те турра паратпӑр тесе вӗлернӗ. Хӑйсем вара йӗркеллӗ пуçлӑхсӑр тӑрса юлнӑ. Хитре çын шӑпи те çавӑн пек вӗçленнӗ. Ялти чи илемлӗ пикене арман пӗви тӗпне хунӑ...

Каялла çавӑрӑнса пӑхатӑп та тӳрех Христос сӑнарне асӑрхатӑп. Вӑл çынсене пулӑшма тӑрӑшнӑ, ырра вӗрентнӗ. Ӑна нушалантарса вӗлерекенсем вара çынсемех пулнӑ.

Еврейсем паян çак хӑрушӑ йӑларан пӑрӑнчӗç. Пӗрне-пӗри упраççӗ, ӑслисене сыхлаççӗ. Чӑвашсем вара ӗлӗкхи пекех пурӑнаççӗ. Ӑслисен ӗçне хакламаççӗ, пултаруллӑраххисен çулне усал вӑй пӳлнишӗн хӗпӗртеççӗ. Тен, çавна пулах пӗр вырӑнта тӑпӑртатса тӑраççӗ, тӗнче умне тухаймаççӗ.

* * *

Кашни çын вӑл хӑйне евӗрлӗ кӗнеке.

Çак кӗнекере нумай эпӗ пӗлменни, халиччен пачах илтменни, ман ӑс-тӑншӑн усӑлли, чун-кӑмӑла çывӑххи. Вуласси вара веçех каласуран пуçланать.

Анчах çакна асра тыт, калаçу вăл пĕр пек мар. Пĕри акă тăрăшать чăнлăха уçса пама, тепри – ăна пытарма. Пĕри пире пулăшать çывхарма тĕрĕслĕх патне, тепри сăмах купипе пăрса ярать айккине. Апла эппин калаçура кирлĕ итлеме пĕлни, сăмах çулне ăнкарни, çын шухăшне вулани, ăна хаклама пĕлни.

Итлеме пĕлекеншĕн кашни çын вăл – сасăллă кĕнеке.

* * *

Нар пек хитре тееççĕ, Нар кам пулнине пĕлмеççĕ. Апла пулин те хĕрачана, хĕрарăма Нарпа танлаштарнине хапăл туса йышăнаççĕ. Çапла калани çыншăн чи паха хак пулнине кашни чăваш ăнланать. Нар тени чăвашсемшĕн илемлĕх турри пулать. Шăпах çавă кашни çынна сăн парать, таврари илеме упрама пулăшса пырать.

Нар тени эрменсен шыв турри тени пулать. Монголсен – Хĕвел тени.

Нар пирĕншĕн сăваплă ят. Илем тĕнчипе киленме май пурришĕн пурте Нара тав тăвар.

* * *

Чăваш пек усăллă халăх Раççейшĕн урăх пулас çук. Çĕршер çул хушши тар юхтарса ĕçлерĕ, хăйĕн чи пултаруллă ывăлĕсене Раççей чысне сыхлас çĕре парса пурăнчĕ, хăйне валли вара нимĕн те ыйтмарĕ: пурлăх та, ирĕклĕх те, пĕртанлăх та...

Ăçта-ха вĕсем иртнĕ ĕмĕрте вăй илнĕ чăваш хулисем, чăвашсем хăйсем валли лартнă капăр çуртсем, керменсем?

Çук вĕсем. Пулман. Чăваш валли ятарласа чиркӳсемпе тĕрмесем çеç лартнă.

Чăваш хăйшĕн пурăнса кураймарĕ. Ĕçлерĕ, хуçăлчĕ, пурлăхĕ хăйне тивĕçмерĕ. Хăйшĕн пурăнма пуçланине курса пулĕ-ши?

* * *

Илтнĕччĕ-ха хĕрарăмăн хăвачĕ ун çепĕçлĕхĕнче, ачашлăхĕнче тенине. Çак сăмахсем чăн пулнине халĕ вара хам куçпала хам куртăм.

Арçын кăмăлне тивĕçтерме нумаях те кирлĕ мар. Пултăрччĕ кăна ăшшăн кĕтсе илни, йăл кулни, çи-пуçран илĕртӳллĕ пулни.

Юратнă çын çумĕнче пурте вырăнлă иккен. Пĕчĕкçĕ кăна ырă ĕç те хаклăн курăнать. Акă паян та эпĕ кăшт каярах кĕрсе выртсассăн, эсĕ айккинерех куçрăн та хăв ăшăтнă вырăна мана патăн.

Тен, çакна пулах таçта тухса çӳресен те эсĕ ăшăтса хунă тӳшек аса килет, хăй патнелле чĕнет, магнит пекех туртать.

Эсĕ ман çумра хӳтлĕх шырани те мана самай вăй парать. Кирлĕ иккен эп сана.

Саншăн лайăх пулни мана савăнăç кӳрет.

* * *

Эпĕ Раççейрен ниçта та тухса каймастăп. Мĕншĕн тесен вăл пĕтĕмпех – манăн. Унта ман несĕлсен ĕçĕ, тарĕ, юнĕ, вил тăприйĕ. Ăсталла кăна пăхмастăп, пур çĕрте те чăваш йĕрĕ.

Чăваш лашманĕсем касса турттарнă юмансем Раççей флотне çирĕплетнĕ. Питербург валли шурлăх типĕтнĕ çĕрте пиншер чăваш пуçне хунă. Мускаври чаплă çуртсем ман халăхран сăтăрса илнĕ пурлăхпа çĕкленнĕ. Чăваш улăпĕсем Раççей çарĕнче çапăçнă, такама та хӳтĕленĕ, такамшăн та пуçне хунă...

Раççейĕн тĕнчипе паллă искусствинче те ман халăх тӳпи пур. Унти илем веçех халăх тарĕ çинче çунат сарнă...

Çук, хăваласан та Раççейрен тухса каймастăп. Кунта ман асаттесен çĕрĕ: сарăлса выртать Саратовпа Шупашкар таран. Пур çĕрте те мана хапăл туса кĕтсе илеççĕ, сывлăх, телей сунаççĕ. Паллах, чăвашсем.

* * *

Шупашкар пасарне пырса кĕрсен чун савăнать. Мĕн тери паха апат-çимĕçпе, аш-какайпа сутă тăваççĕ чăвашсем.

Выльăха пĕчĕкрен пысăк тăвасси начар çынран пулмасть вăл. Кирлĕ кунта чĕрчуна юратни, ăшă кăмăлпа пăхни. Вăл çеç те мар. Пихампар пулăшни те кирлĕ. Чăваш килкартинче çав хуçа. Вăл пулмасан ăратлă выльăх ĕрчес çук, чăххисем те çăмарта тăвас çук.

Сĕтел çинчи какай шӳрпишĕн, тин çеç кăмакаран кăларнă шăрттаншăн, лупас хыçĕнче кĕçенсе тăракан лашашăн Пихампара тав тăвар, çавна пуççапар.

* * *

Мĕншĕн ытлашши васкать-ши этемлĕх? Айккинелле пăх-масăр, ури ăçта пуснине асăрхамасăр вирхĕнет малалла. Ăç-талла васканине чухлать-ши? Çук пуль. Этемлĕх паян ачалăхра кăна-ха. Ăсланса çитеймен. Яланах темскер шырать. Лăпкă пурăнăç ăна тивĕçтерме пăрахнă.

Çĕр çинчи халăхсене çупăрласа илчĕ тавлашупа ăмăрту туйăмĕ. Этемлĕх пурнăçĕ хытă чупас енĕпе irttерекен ăмăрту пекех. Пĕрисем маларах иртсе кайрĕç, теприсем – каярах, аран-аран ĕлкĕрсе пыраканнисем те пур. Çакăн пек тĕнче тытăмĕ ырри патне илсе çитерес çук. Мĕншĕн тесен кунта йышлах мар халăхсене пачах та асăрхамаççĕ.

Тепĕр тесен, мĕншĕн-ха пур халăхăн та пĕр евĕрлĕ пурăн-малла? Мĕншĕн-ха чăвашăн чăваш пек, тутарăн тутар пек пурăнмалла мар?

* * *

«Тĕнче пики» конкурс irttерекенсем пуçне ватаççĕ. Тавлашаççĕ, кама пĕрремĕш вырăн панаmallиne татса парай-маççĕ.

Мĕншĕн манран ыйтмаççĕ-ши? Хам пĕлекен чăваш хĕрне илсе пырса тăратăттăм та вĕсен ĕçне хăвăрт татса парăттăм.

Чăваш пикине курсан тавлашу та чарăнĕ, ытти çĕршыв-сенчен пынă пикесем те хыçаларах чакса тăрĕç.

Тĕнче пикине ăна чăваш хушшинче шырамалла. Мĕн-шĕнни те паллă: чăваш хĕрарăмĕнче тĕнче сăнĕ. Европа виçипе пăхсан та хитре, Ази хаклавĕпе те хитре, Америка шайĕпе те хитре... Чăваш пикинче пĕтĕм тĕнчене тивĕçтерме пултаракан хитрелĕх пур.

Анчах çакă вăл асăрхаман хитрелĕх. Тĕнче мар, халлĕхе ăна чăваш арçыннисем хăйсем те питех асăрхамаççĕ-ха. Асăр-хаймаççĕ.

Енчен те чăваш хĕрĕсене кăштах çи-пуçран пулăшсан, татах та хитреленмелли мелсемпе усă курма вĕрентсен вĕсене ытти халăх каччисем пĕр-пĕринпе ăмăртсах арăм тунă пулĕччĕç. Чăваш каччисен вара ирĕксĕрех вырăс хĕрĕсене илмелле пулса тухĕ. Чылайăшĕ çапла тăваççĕ те. Мĕншĕн тесен чăваш хĕрарăмĕ вăл чăваш арçыннишĕн ытлашшипех лайăх-и, тен.

Чăваш хĕрне тивĕçлĕ пуласчĕ тесе тăрăшасчĕ.

* * *

Ыттисенчен кăштах лайăхрах пуласчĕ тесе мĕн пĕчĕкрен тăрăшрăм. Вĕренессине, ăс пухассине мала хутăм. Кӳршĕ ачисем шкултан килнĕ-килменех ушкăнпа пырса урама илĕртсе тухса каясран хапхана питĕрсе кĕнеке вуларăм. Анне сăмахне итлерĕм. Вăл мана çапла ăс паратчĕ: «Вĕрен, ывăлăм. Çын пул. Учитель каланине тимлĕн итлесе лар. Шкул çывăхĕнче туй кĕрлесе пырсан та пуçна унталла ан пăр, вĕрентекенрен куçна ан ил».

Вăйлăрах, чăтăмлăрах пулас тесе спортпа туслашрăм, ӳтпĕвĕме çирĕплетрĕм, чемпион та пулса куртăм. Халĕ ĕнтĕ ман çумра икĕ пысăк «çитменлĕх» – табак туртма тата эрех ĕçме вĕренеймерĕм.

Аннене, тăвансене усăллăрах пулас тесе çамрăклах ĕçе кӳлĕнтĕм. Аттесĕр ӳснине пула çăпата тума, сухапуç тытма, пуртăпа каскалама хам юлташсенчен маларах вĕрентĕм. Халĕ вара хуçалăхра эпĕ туман ĕç çук.

Ыттисенчен сăпайлăрах пуласчĕ тесе хама йĕркеллĕрех тытма тăрăшрăм. Чĕлхе-çăвартан усал сăмах тухмарĕ. Ваттисемпе ватă пек, çамрăксемпе çамрăк пек тытрăм хама.

Ыттисенчен лайăхрах, тен, пулаймарăм. Анчах пурнăçăм йăли çаплараххишĕн кулянмастăп. Çакă мана сиен кӳмерĕ, мĕн тесен те.

* * *

Туятăп, чăвашла пĕлменнисемшĕн эпĕ никамах та мар. Сăввăм-юррăмсем те вĕсемшĕн нимех те мар. Ятăма, тен, кăштах илткеленĕ, анчах шухăшăмсем мĕнлереххине нихăçан та пĕлес çук.

Чăвашла çыраканăн шăпи çапларах çав. Чăн вырăссем, тутарсем, еврейсем пĕлменнишĕн пăшăрханмастăп. Чун ытларах ыратать чăваш чăваша палламаннишĕн, суйлавра чăваш чăваша чĕрсе хунишĕн, хăй чăваш иккенне маннишĕн, эпĕ вырăс тесе çӳреккеннишĕн.

Сăмахăм ман çапла: эсир чăваш çыравçисене пĕлменнишĕн, чăвашла вуламаннишĕн сăмах искусстви пĕтсе ларас çук. Чăн-чăн чăвашсем пур чухне пурăнать вăл. Хăвăр кăна çухату тӳсетĕр.

Тепĕр тесен, айăпăр хăвăрта кăна та мар. Икĕ чăваш вырăс çуратнă чух урăхла пулас та çук. Тăванлăх тымарне татакансем ашшĕ-амăшĕсем хăйсемех мар-ши?

Çак чиртен чăваш тасалса пĕтĕ-ши?

* * *

Чăвашсем! Хамăр сывă юлнишĕн савăнар. Пире таптанă, каснă, ваклană, пурпĕрех пĕтереймен. Эппин, вăйлă-ха эпир.

Чĕлхемĕр те хамăрăн. Çакă та пысăк савăнăç. Лайăхрах тишкерсе пăхсан куратăн чăвашра этемлĕх ачалăхне.

Ĕлĕк-авал пĕр çĕрте, Тигрпа Ефрат хушшинче, вăй илнĕ тет калама çук илемлĕ çĕршыв. Пулнă тет вăл чăннипех çĕр çинчи çăтмах. Çав çăтмахăн пахчине сыхлама хушнă тет чи малтанхи çынна, çылăха кĕме ĕлкĕреймен Адама. Çав пуян та илемлĕ çĕршыв Эдем ятлă пулнă тет.

Пурнăç çулĕ тикĕс мар. Ыррипеле юнашар усалли те вăй илет. Вилĕм турри Эсрел те, тен, çавăнтах вăйланнă. Вăтаçĕр тинĕс тăрăхĕнчи халăхсен те вилĕм турри Азраэль теççĕ. Эсрелпе Азраэль – пĕр евĕрлĕ сăмахсем.

Чăвашлăхăн тымарĕ пит тарăнни сисĕнет. Кĕçех пире çакăншăн пĕтĕм тĕнче тав тăвĕ.

Веçех хамăртан килет. Мăнаçлăха манар мар, хамăра хамăр хисеплер. Вара ыттисем те хисеплĕç.

* * *

Мĕншĕн сăвă çыратăп-ха?

Шупка, айван сăвăсем йăлăхтарса çитерчĕç. Сăмахĕ нумай, рифми те янтă, анчах шухăшĕ пушă. Шĕвĕ сăвăсен купи кăмăлăма хавшатрĕ, туйăма та мăкатрĕ.

Пилешĕсем те, паланĕсем те, çĕмĕрчĕпе сиренĕ те поэтсем турткаланипе хуçăлчĕç те пĕтрĕçĕ. Чĕкеçĕсем те, саркайăкпа шăпчăк та юрăран юрра вĕçсе çӳренипе сассисене çухатрĕç. Куккукĕ пĕрмаях юрлаттарнипе авăтма та манса кайрĕ. Кашни юрату юрринче тенĕ пекех «чĕрене вут хыпнипе» юратăвĕ те çунса каймĕ-ши?

Ман чуна шухăш сăвви çывăхрах. Çавна хӳтĕлес килет, çавна пулăшас килет. Çавăнпа çыратăп.

* * *

Чĕлхепе çеç мар, чунпа чăваш пулар. Вара веçех ăнса пырĕ чăвашла – ĕçлесси те, ĕçесси те, савăнасси те, юратасси те, çитĕнӳ тăвасси...

Этюк Витти аллинче, ав, темле пăрăх-шăхлич те чăвашла шăрантарать.

Чунра чăвашлăх çук чухне чăваша юрама çăмăл мар. Таçта

такам пулса ҫӳресен те, темле премисем илсен те, чăвашлăх тĕлĕшĕнчен чухăннине халăх йышăнмасть.

Чăвашлăх вăл мĕн авалтан пыракан пурнăҫ йĕрки, пурнăҫ виҫи, тĕнче курăмĕ...

«Чăвашсем мĕнле сыхланса юлнă-ха вĕсем?» – тесе ыйтсан, калăттăм ҫапла: «Чăваша ҫăлса хăвараканĕ вăл шăпах чăвашлăх».

Чăваш пурришĕн хĕпĕртер, чăвашшăн савăнар.

* * *

Тĕлĕнмелли юратура та сахал мар. Мĕншĕн тесен ҫак туйăм вăл никама та, ниме те пăхăнмасть. Веҫех хăй хуҫа.

Акă пырать урампала пĕчĕк те ырхан хĕрарăм. Юнашар – Улăп пек кĕрнеклĕ арҫын. Шăкăл-шăкăл калаçнăҫемĕн илеççĕ ав йăл-йăл кулса, пĕрне-пĕри кăмăлласа.

Ҫав хушăрах пулать ав урăхла. Нар пек чипер хĕрарăм валли те арҫын ҫук. Пĕччenex вăл пурнăҫра. Кăштах та пулин тайăнма ҫумра ҫук нимле юман. Мĕн тăвас тен, шăпи ҫапла. Май ҫук кунта канаш пама.

Те юратма пĕлменни, те идеал пуянни, те юрату ҫине ăс-тăн вăйĕпе ҫеҫ пăхни – калама хĕн сăлтавне.

Юрату вăл юрату. Ăна нимĕнпе те улăштарма ҫук. Вăл вăйлă та, айван та, вăл пурнăҫ та, вилĕм те.

* * *

Кĕтмен ҫĕртен тĕл пултăм ҫамрăк чухнехи хĕр тусăма. Вăтам ҫулалла ҫитнĕ пулсан та илемлĕ, пит-куҫĕ илĕртӳллĕ ҫиҫет. Чылай лартăмăр калаҫса, яшлăха аса илсе.

Тусăм ман хаш! сывласа илчĕ те ҫапла каласа хучĕ: «Ҫук, упăшкам йĕркеллĕскер пулмарĕ. Ман чысăма хаклама пĕлмерĕ. Хăй маншăн пĕртен-пĕр арҫын пулнине ним вырăнне те хумарĕ. Ҫакна пĕлнĕ пулсан... санах парнеленĕ пулăттăм».

Ҫак сăмахсене илтсен пачах аптраса ӳкрĕм. Мĕн каламалла, савăнмалла-и, тав тумалла-и? Пĕлместĕп. Ку ҫеҫ те мар-ха.

«Ҫитменнине тата ачамсем те веҫех ашшĕне пăхрĕҫ, лайăх вĕренекенскерсем пулмарĕҫ. Миҫе хутчен сана аса илмен пуль ҫак ҫулсенче. Пĕр ачине те пулин санран ҫуратасчĕ тесе тĕлпулу шыранă самант та пулнăччĕ. Эсĕ ĕҫленĕ вырăна та, телефонна та тупрăм. Анчах хăяймарăм», – тесе каласа хурсан вара аптрасах ӳкрĕм.

«Кăмăлу пулсан ҫак ĕмĕте, тен, пурнăҫлăпăр та», – тесен

вăл çапла хуравларĕ: «Кая юлтăмăр пуль çав. Сывлăхăм та ĕлĕкхи мар...»

Тавах сана, ырă çыннăм, кая юлса пулин те мана çавăн пек пысăка хурса хакланăшăн, юрату туйăмне яланах чĕрӳ çумĕнче упранăшăн.

Мĕн тума пултарăп-ши эпĕ халĕ саншăн?!.

* * *

Эпĕ нимĕн шарламасăр выртнишĕн ан ӳпкелеш-ха. Ан калаçтар-ха. Сан хăлхусене ачашлакан сăмахсене, тен, каярах калăп...

Ман савăнас килет сан çине пăхса. Шурă мрамор пек яка ӳтӳнтен куçăма илмĕттĕм. Тархасшăн, сăмах ан ыйт-ха. Куçран пăх. Унта мĕн çиçнине асăрха. Чĕрем таппине тăнла, тикĕс сывламаннине чухла.

Нивушлĕ эпĕ сана сăмахсăр пусне урăх нимех те параймăп вара? Е эсĕ манран пурне те сăтăрса илесшĕн: сăмах та, юрату та.

Тӳрех калатăп, эп сан патна сăмах çаптарма килмен.

* * *

«Юрату çук вăл, юрату пĕтнĕ вăл», – теççĕ хăшĕ-пĕрисем. Апла мар пуль. Ыйтса пăхар-ха çакна тĕттĕм каçран. Вăл курманни, вăл пĕлменни пулас çук. Урамри шăв-шав лăпланнă май каçхи хăлха çивĕчленсех пырать. Нумай енлĕ пурнăç кĕввине уçăмлăрах туйма пуçлать.

Ĕнер кăна юнашарсем хăнисене кĕтсе илчĕç. Шăкăл-шăкăл калаçупа, илемлĕ юрăпа пире те савăнтарчĕç. Хăйсене курмасан та вĕсемшĕн чун хĕпĕртет.

Акă тата каççерен çӳлти хутран мачча витĕр юрату таппи сăрхăнса кĕрет. Апла пулсан пурнăç вĕрет-ха. Ачисем те çуралĕç, çемье те пĕтмĕ. Этемлĕх те аталанĕ. Шăпах çавăншăн ĕçлет те ĕнтĕ çын чĕринчи Юрату. Вăл пулмасан пурăннин те тути çук. Килсĕр выльăх пек сулланса çӳрени кăна.

Юрату çук тенине ĕненместĕп. Вăл пур, малашне те пулĕ. Юрату пулмасан çынна çын пек пулма мĕн вĕрентĕ тата!

* * *

О Гагра, Гагра, каçхи Гагра! Ĕмĕрлĕхех кĕрсе вырнаçнă эсĕ асăма.

Ун чух эпĕ çамрăкчĕ, ун чух эпĕ вăйлăччĕ...

Хум çапнăçем пĕрчĕн-пĕрчĕн хĕм сирпĕтекен Хура тинĕс, тĕм хушшинче лăпкăн калаçса ларни, тута хăпарса тухиччен чуптуни, эрехсĕрех ӳсĕрĕлни, мана çĕр каçиччен ăшă парса тăракан хĕвел çинче хытă хĕртĕннĕ Любашăн ӳчĕ...

Тинĕс, çутă Уйăх, Дон шывĕ хĕрринчи станицăра ӳссе хитреленнĕ Любаша тата Эпĕ... Ыттисем-и? Çук, урăх никама та астумастăп.

Хальхи Гагра мĕнлине пĕлместĕп. Ун чухнехи – куç умĕнчех. Паллах, унта Любаша пулнăран.

* * *

Енчен те хĕрарăм хăйне упăшкинчен маларах хума хăнăхрĕ пулсан, çакна вăл кашни утăмрах кăтартма тăрăшать. Калаçура та çавах. Хирĕçле сăмахпа арçынна пăчăртаса лартма пикенет. Чĕлхе шăмăсăррине пула çаптарать те çаптарать, мĕн калани пирки шутламасть.

Амăшĕ киле таврăнсан ачисем вăл вĕр-çĕнĕ пальтопа пулнине асăрхаса:

– Анне, ку илемлĕ пальтона атте илсе пачĕ-им? – тесе ыйтрĕç тет.

– Аçуна шансан пальто мар, эсир те çуралас çукчĕ, – тесе хучĕ тет амăшĕ...

Тепĕр килте килес хăнасем валли пурте хатĕр тет. Капăр тумланнă арăмĕ тĕкĕр умĕнче сăрланса тăрать тет. Упăшки, кăшт хытканрахскер, майкăпа труссипех калла-малла уткаласа çӳрет тет. Арăмĕ:

– Мĕншĕн халь те тумланмастăн çак, кĕçех хăнасем çитесçĕ вĕт-ха, – терĕ тет.

– Тăхăнмастăп, курччăр-ха эсĕ мана мĕнле çитерсе усранине, – тесе çинçешке урисем çине тĕллесе кăтартрĕ тет.

– Апла пулсан веçех хывăн эппин, сана мĕншĕн çитерме юранипе юраманнине те курччăр, – тесе хучĕ тет арăмĕ.

Пыр та калаç. Хĕрарăма сăмахпа çĕнтерме çук тесе ахальтен каламан çав.

* * *

Эпĕ вилĕ пытарма пуçлани тахçанах. Тăватă çул çурăрах аттене ĕмĕрлĕхе ăсатрăм. Çакă пулнă 1942 çулта, çерçисене вĕçсе пынă çĕртех юр çине çапса ӳкерекен сивĕ кăрлачра.

Атте тупăкне йăтса тухса кайсан чăтса тăраймарăм. Хампа пĕрле хăварнă асанне аллинчен вĕçерĕнтĕм те нуски вĕççĕнех урама чупса тухрăм.

Инçетре, вăрăм урамăн тепĕр вĕçĕнче, аттене пытарма каякансен ушкăнне асăрхарăм. «Атте, ăçта каятăн!» – тесе кăшкăра-кăшкăра чупрăм. Анчах çитеймерĕм. Мана тахăшĕ тытса чарчĕ те пĕр киле кĕртсе ячĕ. Унта манăн шăнса кӳтнĕ ал-урана сăтăрса ăшăтрĕç...

Тăван ял ăшшине пĕрремĕш хут çавăн чухне куртăм. Çав ăшă мана паян кун та вăй парса тăрать.

* * *

Эй, тусăмсем, тантăшсем! Пурнăç лавне пĕр вăхăтра кӳлĕнтĕмĕр, вăй çитнĕ таран туртрăмăр. Халĕ хамăр мĕн тунине хак пама вăхăт çитмерĕ-ши?

Нумай-и, сахал-и, лайăх-и, начар-и – ĕçĕмĕрсем пирĕн чăннипех те чунпа тунăскерсем. Ĕненсе ĕçленĕ. Пире хамăр вăхăт хамăр пек тунă, пил панă, пурнăçа вĕрентнĕ. Пирĕн савăнăç – хамăр савăнăç. Куляну та, юрату та пирĕн хамăр евĕрлĕ.

Тен, çавна пулах пĕрне-пĕри паян кун та лайăх ăнланатпăр, çывăхрах пулма тăрăшатпăр. Ыттисем хушшинче пире темшĕн сулхăнрах та. Апла пулсан пурнăçăмăра хамăр пекех утса тухар пуль. Вĕçне çитиччене пĕрле пулар.

* * *

Мĕн тери çепĕç те илемлĕ сăмахсемпе кăна усă курмаççĕ пуль поэтсем, çын ӳтне-пĕвне, питне-куçне ырласа юрлакансем. Темшĕн-çке-ха манарах параççĕ çын аллине мухтама.

Çĕр çинче мĕн пуррине – пĕр йышшине çутçанталăк хăй тунă, ыттине – веçех çын алли. Урăх никам та, нимĕн те туса паман.

Алă вăл пăхма çеç пĕр пекреххĕн курăнать. Ĕçе тытăнсан – пачах урăхла. Кирпĕч вăл пуриншĕн те кирпĕч – кăмакисем пулаççĕ урăхларах, хăма вăл пуриншĕн те хăма – арчисем пулаççĕ урăхларах, пусма-тавар та çавах: пĕр пекинченех тумтирĕ çĕленет урăхларах. Сĕрме купăс вăл пуриншĕн те пĕр пек – кĕвви янăрать урăхларах...

Ку çеç те мар-ха. Акă, пĕри ӳпкелешет хăйне алă паманшăн. Пĕр япалана ăнланмасть. Алă пани вăл тепĕр çын аллине чăмăртани çеç мар вĕт-ха. Чи пахи кунта ал ăшшине пани, чĕрери туйăма палăртни, тепĕр çынна пĕтĕм ӳт-пĕврен тапса тăракан ырă вăйпа пуянлатни.

Тен, çавна пулах юратман çынна пĕртте алă парас килмест.

* * *

Тавлашу та, харкашу та вырӑнсӑр сӑмахран пуҫланать. Темшӗн-ҫке ҫакна шута илместпӗр. Нумай пуплешетпӗр, шутламасӑрах сӑмах ҫине сӑмах купалатпӑр. Шӑп ҫавӑн чух тепӗр ҫынна кӳрентерекенни сиксе тухать. Пуҫланать вара харкашу.

– Мӗншӗн ҫапла каларӑн?! – кӑшкӑрать пӗри.

– Эпӗ сана кӳрентерес тесе каламанччӗ, – хуравлать сӑмах хуҫи.

Лешӗ хӑйӗннех перет. Чӗлхе вӗҫӗнчен вӗҫерӗнсе кайнӑ сӑмах хӑй ӗҫне тӑватех.

Апла эппин кашни сӑмахӑн хӑйӗн вырӑнӗ пур. Вӑл ҫеҫ те мар, вӑхӑчӗ те пур. Ӑнсӑртран сиксе тухнӑ сӑмахӑн та, маларах е ытлашши кая юлса каланин те усси сахал. Тепӗр чух сиен те кӳрет.

Каланӑ сӑмах яланах вырӑнлӑ пултӑр.

* * *

Пасарта ларать пӗр ыйткалакан. Утайманскер, ачаранах сывмар ӳснӗскер.

Укҫи пуҫтарӑннӑ самаях, эпӗ те хурса патӑм кӑштах...

Сасартӑк илтрӗм кӑшкӑрса янине. Ҫавӑрӑнса пӑхрӑм. Ыйткалакан ура ҫине тӑнӑ, анчах утаймасть. Аллисемпе хӑлаҫланса: «Тытӑр ӑна, тытӑр! Укҫана веҫех туртса илчӗ!» – тесе кӑшкӑрать.

Куратӑп, пӗр арҫын ҫынсем хушшипе хӗсӗне-хӗсӗне пасар алӑкӗ патнелле васкарӗ. Чупса пытӑм, пасар тулашӗнче хӑваласа ҫитсе аллинчен ярса тытрӑм. Хӑраса ӳкрӗ. Чӗтрет. Ҫавӑтса ыйткалакан патне илсе пытӑм. Сылтӑм аллипе тытнӑ пӗр ывӑҫ укҫана тавӑрса пама хушрӑм. Укҫине хайскер ыйткалакан ҫӗлӗкӗ ҫине пӑрахрӗ те карт! туртӑнса айккинелле тапса сикрӗ.

Вӑхӑтра ярса тытнӑ вӑрӑ хӑравҫӑ иккен. Хамран ҫамрӑк, хамран ҫӳллӗ, хамран вӑйлӑ арҫын та тӗрӗслӗхе парӑнчӗ.

* * *

Тӗкӗр умӗнче тӑрать пӗр ватӑ. «Эпех-ши ку?» – тет. Тӗкӗрӗ вара ҫине тӑрсах ӗнентерет. «Эсех, эсех. Сана лайӑх астӑватӑп, – тет. – Ҫамрӑк чухне, яш чухне яка питлӗччӗ эсӗ, кӑтра ҫӳҫлӗччӗ эсӗ. Астӑватӑп яка тӑхӑнса вӑйя васканине,

авланас умĕн çĕнĕ костюмпа ман умра тăнине, вăрçă хирне тухса кайсан арăмупа ачусем макăрса юлнине, каярах, ав, аманнишĕн панă медаль çакнă симĕс тумпа уткаласа çӳренине, хăв çук чухне кӳршĕ арçынни арăму çумне çулăхнишĕн çапăçса кайсан кăвак куçпа çӳренине...

Астăватăп сана колхоз председательне суйласан утту кăштах улшăннине, çĕнĕ тырра ытларах патшалăха парас вырăнне колхозниксене те самай валеçсе панăшăн райкомра хытă пĕçертсен ăшу хыпса çуннине, ывăлу-хĕрӳсене туй туса авлантарнине, качча панине...

Халь куратăп арăмупа иксĕр тăрса юлнине, вăйсем чакса пынине...

Ан хĕрхен мана. Çапса ват. Курас килмест тупăк йăтса тухнине».

* * *

Савăнатăп. Пурĕ çутçанталăкшăн кăна савăнатăп. Хăй йĕркипе пурăнать.

Акана тухма хатĕр-и е хатĕр мар, халăх суйлава йышлăн хутшăннă-и е хутшăнман, президент сывах-и е кăштах чирленĕ, арман чулĕ çаврăнать-и е çаврăнмасть, çăкăр лавкки ĕçлет-и е ĕçлемест – çутçанталăкшăн пурпĕрех. Кун хыççăн кун килет, хĕл хыççăн çу çитет. Мĕн пулса иртмелли пулса иртетех. Каллех чĕрĕлӳ, каллех çĕнетӳ. Çакна эпир асăрхатпăр, уншăн хĕпĕртетпĕр.

Савăнатăп, çутçанталăкшăн савăнатăп. Ирĕклĕ вăл. Вăйлă вăл. Хăйне пăхăнтарма çине тăракансене часах тăн кĕртсе илет.

Çутçанталăкран асли çук. Этем – унăн ачи. Ачи çеç.

* * *

Хĕрарăм илемĕ маншăн кăна теттĕм. Урăххисен ытамĕнче пулнине пĕлсенех пăрăнаттăм. Анчах сана курсан пачах пăтрашăнса кайрăм. Хама хам та ĕненми пултăм.

Сисетĕп-ха, санпа киленнĕ арçынсен шучĕ ӳссех пырать. Апла пулин те санранах юрату ыйтас килет, вăхăтлăха та пулин санпа юлас килет. Енчен те эсĕ маншăн хăв туйăмна шеллесен, çакна чăтса ирттерме çăмăл пулас çук. Санран тӳрех: «Мĕншĕн-ха эсĕ ыттисемшĕн пур, маншăн çук. Эпĕ ыттисенчен начар-им, сана тивĕç мар-им», – тесе ыйтăттăм.

Арçын туйăмĕ вăл çапларах. Унта яланах ăмăрту туртăмĕ пур.

* * *

Çыравçă ĕçĕ те çăмăл мар. Паллах, мĕн те пулин çĕннине калас тесен, вулакансене халиччен тĕл пулман сăнарсемпе паллаштарас тесен.

Чи кăткăсси – сăмахсене ала витĕр кăларасси. Çӳпĕ-çапăран уйрăлса чуна кирлĕ илемлĕ сăнара куçаççĕ вĕсем.

Ак ĕнер те асапланса çӳрерĕм. Çĕнĕ сăввăмри пĕр йĕрке канăç памасть кунĕпех. Лекци вуланă чухне те пуçран тухмасть.

Каç та пулчĕ. Çывăрма та вăхăт. Шухăшласа выртатăп тĕттĕм пӳлĕмре. Ыйхă килмест. Вуншар вариант пуçра çаврăнать. Акă кантăкран тул çути те сăрхăнса кĕме пуçларĕ. Ĕçе кайма вăхăт...

Урампа васкаса утса пынă чухне сасартăк пуçа пырса кĕчĕ пĕр йĕрке: «Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар!» Çапла икĕ йĕрке тупрĕç пĕр-пĕрне:

Çĕрпе Хĕвел пире вăй пар,
Çĕнĕ куна Нар пек сăн пар, –

юрлатпăр халĕ юрăра.

Вулаканшăн, юрлаканшăн, тен, нимех те мар. Анчах, мĕнле çуралнине шута илсен, çакă йĕрке маншăн питĕ хаклă.

* * *

Ваттисен хорĕнче пикесем юрлаççĕ. Сассисем уçах мар пулсан та, эп илтетĕп вĕсен çамрăклăхне. Сăнран чакни палăрсан та, эп куратăп вĕсен илемне...

Çакна туйма, çакна курма хальхи çамрăксене хĕнтерех те-и, тен. Маншăн вара йывăрлăх çук. Мĕншĕн тесен вĕсем пурте ман тантăшсем. Эпĕ вĕсен илемĕпе киленсе ӳснĕ. Вĕсен çепĕçлĕхĕ, сăпайлăхĕ мана ăшă парса тăнă...

Юрлăр, юрлăр, пикесем. Эпĕ каллех сирĕнпе. Сирĕн сассăртан хакли маншăн урăх нимĕн те çук.

* * *

Хĕрхенетĕп сана, питĕ хĕрхенетĕп.

Илем тути-масине пĕлменни кашни утăмрах сисĕнет. Çук туйăма кивçен илеймĕн çав. Мĕн кăна тăхăнса пăхмарăн пуль, мĕн кăна çакса çӳремерĕн пуль – илемлĕ чăваш хĕрарăмĕ пулаймарăн. Чăваш пулма чăвашранах çуралмалла пуль çав.

Чăваш пек тыткалама та, калаçма та вĕренсе çитеймерĕн.

Çирĕп пĕлӳпе культура çукки сисĕнет. Çакна ан ман: хаярлăхпа сăпайлăх нихăçан та туслă пулман.

Поэзире те ыттисенчен тăрса юлтăн шăхăрса. Мĕнле илемлĕ те витĕмлĕ сăнарсем парнелеççĕ паян халăха хĕрарăм çыравçăсем! Азамат кăна мĕне тăрать.

Кĕвĕç чуна кĕве кăшлать, шĕкĕ пекех шăтарать. Чуна çеç мар, сывлăха та пĕтерет. Çынна çӳççĕр, шăлсăр хăварать, илеме çисе ярать.

Хĕрхенетĕп сана. Пулăшу кирлĕ мар-ши сана?

* * *

Тунтикунри ирхи троллейбус мухмăрпала хĕн курать. Хĕсĕнсе кĕрсе тăрсан часах сывлăш пӳлĕнет, тухса утассăм, чупса каяссăм килет.

Çук, курмастăп çак çынсене спортзалра, стадионра, паркра, йĕлтĕрпе ăмăртса чупнă çĕрте...

Çук, курмастăп çак çынсене театрта, концертра, музейре...

Çук вĕсем библиотекăра, пĕр-пĕр паллă çыравçăпа ирттернĕ тĕлпулура. Асăрхамастăп ют çĕршыври илемлĕ вырăнсене курса çӳрекенсем хушшинче...

Ăçта вăхăтне ирттереççĕ-ши? Сăра пички кутĕнче-ши? Пурнăç тĕллевĕ вĕсен мĕнре-ши? Черкке ӳпĕнтересси çеç-ши?

* * *

Темшĕн çапла туса янă-çке-ха: сăнран начартарах, имшертерех хĕрарăмсем ача хыççăн ача çуратса параççĕ, илемлĕ те сывлăхлисем вара йăкăртатса çӳреççĕ, вăхăта ытларах киленӳпе пурăнса ирттереççĕ.

Çакă вăл пурнăç илемĕшĕн калама çук пысăк çухату.

Халăха сывлăхлă та илемлĕ ачасем парнелекен хĕрарăм чăннипех те мухтава тивĕç. Унпа никам та танлашма пултараймасть – кирпĕч хуракан та, асфальт саракан та, чугун çул юсакан та, космоса вĕçекен те... Тепĕр тесен тата ачисене йĕркеллĕ, тĕрĕс-тĕкел çуратакан хĕрарăмăн сывлăхĕ те çирĕпрех, хитрелĕхĕ те нумая пырать. Тухтăр патне чупарах параканнин илемĕ кĕске вăхăтрах шанать.

Хитре хĕрарăм час ан ватăлтăр тесен, ăна ытларах ача çураттармалла, пепкисене çитĕнтерме пысăк пулăшу парса тăмалла. Ача çуратассине чи паха ĕç вырăнне хумалла. Йĕритавра хитре çынсем ытларах чухне пурнăç та илемлĕрех курăнма пуçлĕ.

* * *

Ун чух йăласем урăхларахчĕ. Салтакра пулман каччă сумлисен хушшинче марччĕ. Енчен те флота лексен вара, ун çумĕнче чи чаплă хĕрсемччĕ. Салтака каяс килетчĕ. Анчах ӳссе çитес вăхăчĕ ытла та хуллен шăватчĕ...

Çул çитсен пĕр ӳсĕмсем тухса утрăмăр комиссие. Шур халатлă тухтăрсем тĕрĕслеççĕ сывлăха. Йывăрăшне, çӳллĕшне виçсе пăхаççĕ кашниннне.

Ак, манран маларах çӳллĕшне виçнĕ çĕре кĕрсе тăчĕ Микулай, тантăшсенчен чи пĕчĕкки. Асăрхарăм кăштах чĕввĕн тăнине. Юрăхлă пулчĕ салтака. Юрласа çӳрерĕ тутăр сулласах...

Кайран салтакран килсен савăнтарчĕ туй туса. Яштак пӳллĕ арăмпа, хăйĕнчен самай çӳллĕ ачисемпе халь пурăнать савăнса.

* * *

Мĕн-ши вăл искусство? Тепĕр чух ултав пек те туйăнать. Унта çук тӳрĕлĕх, унта çук уçăмлăх. Акă тухрĕç сцена çине хĕрĕх çын. Çине тăрсах турă юрри юрлаççĕ. Анчах туррине ĕненеççĕ-ши? Çакна чиркĕве пынă çынсен юррипе танлаштарма пулĕ-ши? Çук пуль.

Театр та çавах. Мĕнле сăнарсем калăпласа кăтартмаççĕ пуль пире! Сцена çинче пулса иртни сисĕм-туйăма хускатать – савăнтарать те, тарăхтарать те, кулянтарать те, макăртать те...

Театрта ĕçлекенĕ уншăн хытă хĕпĕртет, тепĕр чух тата мухтанса та илет. Анчах пĕр япала шиклентерет. Ырă сăнар тăвакансем пурте ырă çынсем-ши? Пире ырра вĕрентекенсем хăйсем мĕнлерех-ши? Темшĕн-çке-ха ыррине ыр çынран илесчĕ тетпĕр. Театрти вылява ĕненетпĕр. Ăна ултав вырăнне хурас килмест.

Апла пулин те ытлашши пăшăрханар мар-ха. Искусствăри ултав саманчĕ вăл чăн-чăн ултавах пулас çук, вылявлă ултав çеç. Сиенĕ ун ытлашши пысăк мар. Пăтраштарса кăна ярас марччĕ. Пурнăç вăл пĕр япала, искусство – урăххи. Пурнăç тĕкĕрĕ кăна, пĕр тесен.

* * *

Ырă пурăнăç... Камшăн та пулин пулнă та-и тен. Маншăн пулман. Çĕтĕк те выçă ачалăха аса илсен, юратнă аннем кол-

хозра мёнле тертленнине шута илсен, Совет влаçне питё мухтакана кăштах чарнă пулăттăм.

Пёри ав калать: сана коммунистсен партийё вёрентсе çын турё тет. Юрать, вёреннё тейёпёр (вёренессе ăна Финляндире те, Японире те вёренеççё-ха). Аслă шкулта ёçлемелёх те пёлӳ илнё ёнтё.

Анчах... Кам-ха эпё? Ман мён пур? Пур-и-ха ман ылтăнăм хăтлă хваттер илмелёх, Олимп вăййисене е Лувра çитсе курмалăх? Пур-и-ха ман укçам мён çиес тенине, мён тăхăнас тенине илмелёх, кăмăл туртакан пикесене хаклă парне памалăх?..

Кам-ха эпё? Ятăм та пур, ăсран та пит катăках мар. Анчах тăван шкулăма, тăван ялăма пулăшмалăх вăйăм çук. Мёншён тесен, эп астăвасса, вёреннё çын нихăçан та сумра пулман. Выçă вилесрен тенё пек укçине паркаласа пынă та мухтав хучёсемпе хавхалантарнă...

Кивё Раççейри ăсчахсемпе танлашасси пирки калаçу та пулас çук.

Совет влаçне, коммунистсене тем чуль ырласан та мана пурпёр ёнентереймёр. Пурне те хам курнă, пурне те хам тӳснё.

* * *

Вăрçă та пулман, нимле мур та килсе силлесе кайман, çапах манпа пёр çултисем ялта питё сахаллăн тăрса юлчёç. Кăштах ашшёсемшён те пурăнмаллаччё те...

Халь тёл пулчёç пуль ёнтё леш тёнчере. Анчах пултарёçши пёрне-пёри ăнланма?

Ашшёсем пуçне хунă Тăван çёршыва сыхласа, ачисем куçне хупрёç ёçкёпе иртёхсе.

Ашшёсем пуçне хунă тăшманпа çапăçса, ачисем вилём тупрёç пёр-пёрин çине алă çёклесе.

Ашшёсем пуçне хунă çут пуласлăхшăн ёçре хуçăлса, ачисем çамрăклах вилсе пётрёç тёрмери патака пула...

Кайса пётрёç пёр класра вёреннё туссем, аллă çула та çитеймерёç вёсем. Мёншён васкарёç-ши манран уйăрăлса кайма? Ачалăха аса илсе халё кампа чуна пусарăп?!

Вăрçă та пулман, нимле мур та килсе силлесе кайман...

* * *

Пултăм хăнара.

Эпĕ хуларан çитнĕ çĕре выльăх пусса шӳрпе лартса янă, сăра тунă, мунча хутнă – пурте чăвашла. Çине тăрса ĕçлекенĕн ĕçмелли те, çимелли те çителĕклех. Уншăн питĕ савăнтăм.

Киле таврăннă чухне аслă çул çине çитиех ăсатса ячĕç. Çул тăршшĕпех пирĕн умра тин çеç сăнчăртан ирĕке тухнă çамрăк йытă сăлтавсăрах вĕркелесе, ниçта кайса кĕреймесĕр сиккелесе пычĕ.

Асфальт çине тухрăмăр та калаçса тăратпăр. Автобус килессе кĕтетпĕр. Акă çулпала прицеп кăкарнă трактор вĕçтерсе пырать. Хайхи йытă тапса сикрĕ те трактора тытса чарас пек хирĕç тăрса вĕрме пуçларĕ. Трактор айне кĕрсе ӳкрĕ. Прицеп урапи ун малти ури урлă каçса кайрĕ. Йытă çухăрса ячĕ, тăнне çухатрĕ. Трактор чарăнмарĕ, малалла хăшăлтатрĕ. Чупса пытăмăр. Йытă хурлăхлăн нăйкăшать, пуçне асфальт çине çапать. Кăштах выртсан мĕнпур вăйне пухса сывăрах урисемпе тапалашса юнашар тăракан хуçи патне шуса пычĕ те пуçне ун ури çине хучĕ. Лешĕ вара йыттине ятла-ятла тирĕ сĕвĕнсе кайнипе юнланнă урине сăмса тутрипе çыхма пуçларĕ...

Ман шутпа вара айăпли кунта пачах та йытти мар, хуçи хăй, пăхса çитĕнтерекенĕ, алла вĕрентекенĕ. Çамрăк йытă пĕрремĕш хут мăн çул çине тухса курчĕ те тӳрех çĕр чĕтретсе пыракан трактор айне пулса аманчĕ.

Хăш-пĕр чухне хăй тĕллĕн пĕрремĕш утăм тăвакан çамрăксен шăпи те çавăн пекрех. Пурнăç вĕсене силлесе тăкать, амантать. Айăпĕ çакăнта пăхса, вĕрентсе ӳстерекенсен те пур пуль тетĕп.

* * *

Ыттисем çырнине çеç вуласа пухнă ăс нумая пымасть, час сĕвĕрлет.

Вуламалла мар теместĕп. Вуламалла. Анчах хăв пуçупа ĕçлеме ӳркенмелле мар.

Акă, пĕри хăйне философ текелесе кăшкăрашса çӳрет. Вулакалать те пуль. Ыттисем çырнисене пăхмасăр калама та юрататать. Анчах çакă пурпĕрех çителĕксĕр. Философ пулма ăс çуратакан пуç кирлĕ. Турри пани çук пулсан, тем чул вуласан та çĕнĕ шухăш хуçи пулаймăн. Тарăн шухăшсăр философ çук.

* * *

Шкулта та, институтра та хĕрачасем хастартарах. Пурнăçра вара пачах урăхла. Пуçлăхсем, хуçасем кунта пурте тенĕ пекех арçынсем. Анчах çакă хĕрарăм айккинче тăнине пачах та пĕлтермест.

Арçын ĕçре çĕкленесси те, чылай вăхăт хушши пуçлăх шутĕнче тытăнса тăрасси те, çӳллĕ вырăнтан ӳкесси те – веçех хĕрарăмран килет. Çĕклеме те пултарать, намăспа вĕçлесси патне те илсе çитерет.

Тепĕр хĕрарăм арçынпа тутă кушак шăшипе вылянă пекех вылять.

Пысăк пуçлăхсен арăмĕсем пирки иккĕленмелли çук. Раисамаксимовщина текенни кăштах пур вăл кашнинчех. Тепĕр тесен, çакă вăл хĕрарăм хăй кам пулнине пĕлтерниех. Пур кунта тавăру туйăмĕ те. Паллах, матриархатри влаçа çухатнишĕн, хăйне ыттисене ертсе пырас ĕçрен пăрса янишĕн.

Тĕрĕссипе каласан, çак ĕçре хĕрарăмсен опычĕ пысăкрах та, пуянрах та. Хĕрарăм пирĕн çĕршывра президент е çар министрĕ пулнине хăçан та пулин курăпăр-ши.

* * *

Хура халăх ытларах хура ĕçпе пурăнать: çĕр сухалать, выльăх пăхать, вăрман касать, хурçă шăрататать... Ертсе пырас ĕçе ыттисене шанса парать.

Çамрăк чухне шутлаттăмччĕ патшалăха ертсе пыма питĕ пысăк ăс кирлĕ пуль тесе. Халĕ шухăш – урăхларах.

Ăсĕ, паллах, пурне те кирлĕ ĕнтĕ. Анчах пуçлăх пулма вăл çеç çителĕксĕр. Ăслă çынсем сахал мар, пурпĕрех пурте пуçлăх пулаймаççĕ. Ăслă та таса чунлă çынна патшалăх тилхепине тытса пыма йывăртарах та-и, тен? Çăмăлрах пуль чеереххисене, чăрсăртараххисене, хаяртараххисене...

Тĕрĕссипе каласан, хирĕçӳлĕх, пăтрашулăх халăхра та сахал мар. Вăл ытларах хăйне хытăрах хĕстерекенсене ырлать. Хăйне сума сăвакансене, юратакансене пит асăрхасах каймасть.

Пуçлăхсемпе халăх хушшинчи çыхăнăва ниепле те ăнланса çитерме çук.

* * *

Камсем хытăрах кăшкăраççĕ-ха? Паллах, хăйшĕн нимле хăрушлăх та çуккине лайăх туякансем. Кăшкăруллă сăмах влаç шухăшĕпе пĕр майлă пулсан вара пырне хĕрхенмесĕр шăвшав тăваççĕ.

Иртнĕ саманара та çаплахчĕ. «Вăл халăх тăшманĕ! Персе пăрахмалла ăна!» – тесе ĕççынни кăшкăрни влаçра ларакансемшĕн чи кирли пулнă. Çак сăмахсем вĕсемшĕн: «Малашне те çаплах иртĕхĕр», – тенĕ пекех илтĕннĕ. Кам килĕшмен, урăхларах шухăшланă, çавсене тĕп тунă.

Ăслă та йĕркеллĕ çынсемсĕр ăçтан ырă пурăнăç тăвăпăрха? Патшалăх укçине тыткалама пĕлекен те çук, Раççей пурлăхĕпе тĕрĕс усă куракансем те çук. Чавса тавăрса ĕçлекенсем те сахал. Кăшкăрашакансемпе влаçшăн çапăçакансем вара нумайлансах пыраççĕ.

* * *

Мĕн вăл патшалăх? Хура халăха хўтĕлемелли япала-и е пĕрне-пĕри пăхăнтармалли аппарат?

Ĕççыннине хўтĕлес тĕллевпе тунă патшалăх çук та пуль. Çак ĕçе вăл ячĕшĕн кăна туса пырать. Пăхăнтару туртăмĕ вара кашни патшалăхăн пур. Пĕрисен пĕчĕкрех, теприсен пысăкрах. Раççейре мĕнлерех-ши?

Пирĕнни пек «ырă» патшалăх урăх пулас та çук. Вăл кашни çынна ĕçлеттерчĕ, укçине çителĕклĕ парасси пирки шутламарĕ. Кашнине çапăçтарчĕ, класс тăшманĕсем шыраттарчĕ, айăпсăр çынсене, халăхсене килĕнчен хăвала-хăвала кăларса ячĕ, каçару ыйтмарĕ. Кашни çын утăмне асăрхаса тăчĕ, кама тата мĕнле юратмалли таран вĕрентсе пычĕ, халăха хăй тĕллĕн шухăшлама мантарсах ячĕ.

Халăх вăл стадионра ларакан пекех: алă çупать, кăшкăрашать, ятлаçса илме те пултарать. Урăх нимех те тăваймасть. Çўлтисем вара выляççĕ, çапăçаççĕ, мирлешеççĕ, халăх пĕçернĕ кукăле пайлаççĕ. Хăйсенчен юлнине пĕçерекенĕсене таварса параççĕ. Çакă вара арăслан çисе тăраннă хыççăн вĕтĕрех кайăксем шăмă кăшласа савăнни пек çеç курăнать.

Патшалăх вăл чи малтан хăйшĕн пурăнать, халăх тарĕпе, сывлăхĕпе, юнĕпе тытăнса тăрать. Çак ĕçе веçех пăхăнтару мелĕпе туса пырать.

* * *

Вырăс чунĕ мĕнлине паян пĕлме çăмăл мар. Вырăсла калаçакан нумай, чăн-чăн вырăссем сахал.

Такам вăл, пĕлме çук. Раççей пирки калаçать, вырăссене ырлать, чăвашсене, тутарсене хурлать. Пурнăç чакса пынишĕн вырăс мар халăхсене айăплать, кĕпĕрнесем тăвас шухăша ырлать...

Такам вăл. Вырăсах-ши? Тен, юриех вырăс мар халăхсемпе вырăссене хирĕçтерсе ярас тĕллевпе палкамасть-ши?

Йышлă та вăйлă халăх çынни ыттисене хĕстерес тĕллевпе пурăнас çук. Чăн-чăн вырăс шухăшĕ паян мĕнлерех-ши? Çакна кам уçса парĕ-ши?

Ман питĕ чăн-чăн вырăса тĕл пулас килет.

* * *

Пĕр-пĕр импери е чаплă çĕршыв арканса каясси пуçланать пуçлăхсем влаçпа иртĕхме тытăннинчен. Çакна лайăх курнă ĕлĕкхи грексем, римлянсем. Çакна хамăр та куртăмăр.

Влаçа пула пăсăлнă çынна ватлăх та тытса чараймасть иккен. Вăл калаçнинче, хăйне мĕнле тытнинче темĕн чухлех тĕл пулать камитри пек кулăшли. Пурнăç таппинчен тăрса юлнă пулсан та, çӳрет пуçне каçăртса ĕçлекенсен ырлăхĕ веçех унтан килес пек. Енчен те çакă пуçлăхăн «хĕрарăм чирĕ» пулсан, унпа усă куракансен шучĕ хутшăнсах пырать. Пуçланать вара ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхесси, çемьери çирĕп йăласене пăхăнма пăрахасси. Ун пек пуçлăхшăн наци шайĕнче тăракан тĕллевсем ним те мар, хĕрарăм ытамĕ кăна пултăр...

Çапла вара пысăк пуçлăх пĕчĕкреххисемшĕн влаçпа иртĕхсе пурăнмаллине кăтартакан тĕслĕх пулса тăрать. Çакăншăн ăна ырлаççĕ, мухтаççĕ, хӳтĕлеççĕ, татах та нумайрах пурăнтăр тесе час-часах черкке çĕклеççĕ.

Ватă пуçлăхăн тымарĕсем самай тарăн иккен.

* * *

Çула тухни вăл пачах та çĕнĕ япала. Унта нумай халиччен курманни, халиччен пулманни.

Пыратăп акă вĕçтерсе тин çеç туяннă çăмăл машинăпа. Пĕлсех каймастăп-ха унăн кăмăлне. Тин çеç паллашнă чиперкке пекех тыткалать вăл хăйне. Çул тăршшĕпех пыратăп тимлĕн асăрхаса, мотор шавне тăнласа...

Сасартăк çул çине чупса тухрĕ пĕр пысăк пăши. Инçе те мар тăрать пăрушĕ. Çулăн тепĕр енне каçнă-каçманах пăлт! çавăрăнчĕ те тапса сикрĕ каялла, хăй ачи патнелле. Аран пусса ĕлкĕртĕм тормоза. Чутах сиксе тухатчĕ тамаша.

Шуршăл патне çитсен куратăп – çул хĕрринче тăрать пĕр çамрăк хĕрарăм. Пĕр аллипе вăл чăмăртанă пĕчĕк ачине, тепринпеле – ыйтать лартма. Чартăм. Тархаслать Çĕнĕ Шупашкара çитерме. Лартрăм. Ачи çине пăхса шăла-шăла илет хăй куççульне. Пепки ним те шарламасть.

Мĕн пулчĕ вара, пикеçĕм, тесен вăл хуравларĕ чĕтренӳллĕ сасăпа: «Ачам сывмар çуралчĕ. Таçта çитсен те усси çук. Халь ав килетпĕр ватă карчăк патĕнчен...»

Çак сăмахсене илтсен калаçас кăмăлăм хуçăлчĕ. Хам куçпалах курма тӳр килчĕ ытла телейсĕр çынсене. Тӳрех пуçа пĕр шухăш çапрĕ: те упăшки ĕçекенскер, те хими сĕрĕмĕ тискер...

* * *

Чăваш хушшинчен полковник, генерал йышлăн тухнипе ытлашши ан мухтанăр-ха. Ĕçчен те сăпайлă халăхăмăршăн ун чухлĕ генерал кирлех те мар. Веçех Раççей çарĕшĕн, веçех Раççей чапĕшĕн.

Раççейшĕн, вырăссемшĕн чăваш шанчăклă çын пулни çакăнта та курăнать. Тен, çавна пулах чăвашсене çапăçăва кĕртсе яраççĕ чи малтан. Çакна аван кăтартрĕ вут-çулăмлă Афганистан.

Çын вĕлерсе чапа тухнă чăвашсем халăх чысне çĕклес çук.

Кирлĕ пире паян ăсчахсем, ĕçе тĕплĕ тăвакан ăстасем, Чăваш çĕрне илем кӳрекенсем.

Кирлĕ пире ытларах хамăр пĕчĕк çĕршывра йĕрке тăвакансем, чăвашлăха упракансем, çамрăк ăрăва вăйлатакансем.

Кирлĕ пире паян халăхăмăра тĕнче умне тухма пулăшакансем.

Полковниксемпе ытлашши мухтанар мар-ха.

* * *

«Мĕншĕн пурăнатăп-ха çакă çутă тĕнчере?» – тесе хăйĕнчен ыйтман çын çук та пуль.

Çăмăлттайсем, вĕçкĕнсем пакăлтатаççĕ, пурнăç тĕллевне эпир ăна вунçиччĕрех лайăх пĕлнĕ теççĕ. Ĕненместĕп. Уйрăмах юлташĕсем пĕр кун сиктермесĕр вĕреннĕ вăхăтра таçта

йӑкӑлтатса ҫӳрекене, кайран шӑпа йывӑр сиксе тухрӗ тесе пӗтӗм тӗнчене айӑплакана.

Пурнӑҫ тӗллевне ӑна кашни ҫын хӑй палӑртать те ун патне ҫывхармалли ҫулсем шырать, вӑй хурать. Тӗллевне, паллах, темлине те лартма пулать. Анчах чи пысӑк тӗллев пӗрре ҫеҫ. Ҫакӑ вӑл чӑн-чӑн ҫын пуласси, ҫемьеллӗ, йӗркеллӗ, ҫӑкӑрлӑ-тӑварлӑ пурӑнасси.

Апла пулсан пурнӑҫ тӗллевӗ – пурнӑҫра хӑйӗнчех. Пурӑннинчен хакли нимӗн те ҫук.

* * *

Халӑхӑмӑра вӑрҫар мар. Ытларах уйрӑм ҫынсене, халӑх сӑнне пӑсакансене ятлар.

Халӑх пулмасан эпир те пулас ҫук. Чӑваш чӗлхи те, чӑваш юрри те, чӑваш тӗрри те пирӗн чуна илӗртес ҫук.

Ытти халӑх ҫыннисен пурнӑҫне ӑмсанмастӑп. Вырӑссен телейӗ хӑйне май, еврейсен те ҫавах. Чӑваш телейӗ – чӑвашла. Ӑна ыттисем ӑнланас та ҫук.

Чӑваш ытларах хӑйне шанать. Тума пултарнӑ таран веҫех хӑй тӑвать. Вӗт-шакӑр ӗҫпе ҫынна чӑрмантармасть. Тӗплӗн хатӗрленнӗ хыҫҫӑн ҫеҫ нимене чӗнет, пысӑк ӗҫе тытӑнать. Анчах ҫак пӗрлӗх туйӑмӗ ӗҫ вӗҫленсен сӗврӗлет, малалла анлӑн сарӑлса каяймасть, ял виҫипех ҫырлахать, пӗтӗм чӑваш шайне тухаймасть.

Чӑваш хӑй тӗнчине куҫӗ курнӑ таран ҫеҫ ӑнланни, ял шайӗпе ҫеҫ виҫни паянхи кун та сисӗнет. Телейне те пӗччен-рехех туптать, халӑх телейӗпе явӑҫтармасть.

Вӗҫлес сӑмахӑм ҫапла: халӑхӑмӑр ирӗклӗ те телейлӗ пулмасан, уйрӑм ҫын телейӗ тулли пулас ҫук.

* * *

Кашни кун вӑл ҫӗнӗ пурнӑҫ. Унта ҫук ӗнерхи. Лайӑххи те, япӑххи те тӑрса юлнӑ хыҫала. Паянхи вӑл – малалла. Умра веҫех урӑххи.

Ҫӗнӗ куна парнелет ҫуталса тухакан Хӗвел. Ҫавна пулах асаттесем пуҫҫапнӑ пысӑка хурса ӑна, мухтанӑ кӗлӗре. Вӑл пулнӑ Турӑ та, юлташ та, вӑхӑт виҫи те...

Кунпа виҫнӗ инҫе ҫула. Пысӑк ӗҫе вӗҫлессине те палӑртса хунӑ кунпала. «Ӗмӗр иртет, кун юлать», – тесе юрланӑ юрӑра.

Хӗвеле кӗтсе илме чӑваш васканӑ ир-ирех. Ахальтен каламан чӑваш пирки нумай ҫывӑрмасть тесе.

Çĕнĕ куна чăваш кĕтсе илнĕ çĕнĕ ĕмĕтпе, пуççапнă ылтăн Хĕвеле.

* * *

Алăри пӳрнесем те пĕр пек мар. Пĕри вăрăм, тепри кĕске. Тăванра та çавах. Пĕри телейлĕ, тепри телейсĕртерех, пĕри пуян, тепри чухăнрах. Шăпах çакă тепĕр чух тăванлăха хавшатать, кĕвĕç туйăм çуратать, юратăва сивĕтет.

Апла ан пултăр тесен пулăшма тăрăшмалла, тăван хуйхи-суйхине йышпа çăмăллатмалла.

Тăлăх тăван, чухăн тăван ăрăва илем кӳмест. Çакна темшĕн хăш чухне пачах манса каятпăр. Тулăх пурнăç ырлăхне кăшт та пулин чĕпĕтсе тăвансене памастпăр. Хамăршăн çеç пурнатпăр.

Мала ӳкрĕмĕр пулсассăн, хыçалтине ал парар. Такăннине курсан, тикĕс çула кăларар. Пĕрне-пĕри пулăшса ăру ятне хăпартар. Тата тепĕр сăмахăм: сапаланса пĕтер мар. Ытла инçе тăвана пулăшма та çăмăл мар.

Тăванпа тăван ăмăртнине ытлашшиех ырламастăп. Ялпа ял ăмăртнишĕн савăнатăп.

* * *

Чиркӳри ĕç театрти пекех. Унта пур режиссерĕ, унта пур дирижерĕ. Актерĕсем те çителĕклех.

Веçех туйăмпа сăнар çине тайăнса туса пыраççĕ. Пĕлӳ те, шухăшлав та кунта кирлех мар. Ĕнен те пуççап.

Тата тепĕр тĕлĕнтермĕш. Мĕншĕн-ха чиркӳ ылтăн-кĕмĕле çав тери килĕштерет? Пĕр ĕçне те укçасăр тумасть. Мĕншĕн-ха чиркӳ ыттисенчен пуянрах пулассишĕн çунать?

Çакăншăн Турра пачах та айăпламастăп. Кунта ун çылăхĕ çук. Турă ячĕпе пурлăх пухакансен вара нимле имен̆ӳ те çук. Чухăн укçишĕн те савăнаççĕ. Нумайрах паракана вара мухтаса юрлаççĕ. Пĕрисем парса тăраççĕ, теприсем пуйса пыраççĕ.

Туррине, тен, ĕненме те пулать-и. Анчах чиркĕве – çук. Вăл маншăн Турра айванлатса, начарлатса кăтартакан вырăн кăна.

Чăваш турри чиркӳсĕрех хăватлă.

* * *

Кашни ӳсен-тăранах çеçке çурса, чечекленсе вăрлăх тума тăрăшать, хăй йăхне малалла тăсассишĕн пурăнать. Пулăшаканĕсем вара çук мар – хура тăпра вăрлăха хăй çине илет, çумăрĕ те шăварсах тăрать, хĕвелĕ те ăшшине шеллемест.

Халăх та çавах, ăру хыççăн ăру ӳстерсе хăй йышне хушасси пирки ĕмĕтленет. Чăрмав кӳрекен вăйсем пулмалла мар пек. Ара, пур çĕрте те çынсем вĕт-ха, ăс-тăн енчен пуянскерсем, пĕрне пĕри ăнланма пултараканскерсем...

Çук çав. Ăнлану кунта сахал. Хуçаланать харкашу, темле вăрттăн тытăçу. Ура хума хатĕррисем, ав, тăраççĕ тупăнсах.

Чăваша чăваш пулма чăрмав кӳрекенсем темĕн чухлех. Кĕрсе пăхăр лавккана, мĕнле кăна кĕнеке сутмаççĕ пуль унта. Чăвашли çукпа пĕрех. Çутса ярăр телевизор, мĕн тери ирсĕр те хăрушă, наркăмăшлă япаласене курма тивмест пуль чăвашсен. Тăван сăмах, тăван кĕвĕ ытла сахал радиора...

Кунта пире Мускав та, Вашингтон та, Токио та пулăшаяс çук. Мĕнпур шанăç Шупашкарта. Анчах вăл халь айван-ха. Пурăнаймасть чăвашла. Халлĕхе кунта чăвашлăх хăнара кăна-ха.

* * *

Мэр патне, президент патне хамшăн çӳреместĕп. Вĕсенчен хама валли нимĕн те ыйтмастăп. Манран начар пурăнакан та темĕн чухлех. Çавсен шăпи канăç памасть.

Пиншер чăваш пурăнать хула айккинче, вăхăтлăха туса лартнă пĕчĕк пӳртсенче. Пырса кĕме çулсем çук, тăраниччен ĕçмелĕх шыв та çук. Анчах пурпĕр пурăнаççĕ, çут хĕвелпе киленеççĕ. Кăнтăрла ыттисем пекех асфальт тăрăх утса çӳреççĕ, вăй хурса ĕçлеççĕ, çуртсем лартаççĕ, приборсем тăваççĕ. Çывăрма вара çырманалла утаççĕ.

Ачисем те çавах. Кăнтăрла – ыттисемпе пĕрле, каçа хирĕç – çырманалла.

Чăваш шăпи çапларах. Капăр хваттер кама кăна лартса памарĕ? Хăйне валли çеç çук. Çурт лартнă çĕрте пĕтĕмпех чăвашла, хваттер пайланă чух – шак та вырăсла.

Ытла та хытă юрататпăр иккен эпир ниçта витменнине пула хамăр пата куçса килекенсене. Кавир сарсах кĕтсе илетпĕр. Хамăр ентешсем вара урăх çĕрте ĕç шыраса çӳреççĕ. Асаттесен çĕрĕнче чăвашсене хĕсĕкрех.

Пуçлăхсем патне çӳрекелерĕм. Усси ытла та сахал.

* * *

Троллейбуссем Шупашкарти пек йӗркеллӗ ҫӳренине урӑх ҫӗрте асӑрхаман. Кам ытти хуласене кайкаласа курман, ҫакна пӗлмест-ха хаклама.

Кӑштах кӗтсе тӑрсан троллейбус вӗҫтерсе те ҫитрӗ. Лартӑмӑр. Шалта ҫын нумаях мар. Пушӑ вырӑнсем те пур. Ман умри арҫын чӳрече ҫывӑхнерехри вырӑна йышӑнчӗ те пӗчӗкҫӗ ывӑлне чӗрҫи ҫине илчӗ. Лешӗ ларнӑ-ларманах калаҫма пуҫларӗ. Чӑвашла шакӑртаттарать, ашшӗне ыйту хыҫҫӑн ыйту парать. Ачан шӑнкрав пек сасси аякранах илтӗнет, троллейбуса илем кӳрет...

Ак тамаша, манпа юнашар вырӑсла калаҫса пыракан икӗ хӗрарӑм та чӑвашла калаҫма тытӑнчӗҫ. Тепӗр темиҫе ҫӗрте те чӑваш чӗлхи илтӗнсе кайрӗ. Пурте тенӗ пекех чӑвашсем иккен. Калаҫасса кӑна вырӑсла перкелешсе пынӑ.

Чӑтса тӑраймарӑм: «Мӗн ятлӑ-ха эсӗ, маттур каччӑ», – терӗм. «Ваня Ягудин эпӗ», – терӗ уҫӑмлӑ сасӑпа.

Троллейбус чарӑнчӗ. Анса юлтӑм. Ыттисем вара чӑвашла шӑкӑл-шӑкӑл калаҫса малалла ҫӗмӗрттерчӗҫ. Пӗчӗк Ваня урокӗ усӑллӑ пулчӗ иккен. Вӑтанчӑк та именӳллӗ чӑвашсене аванах вӗрентсе илчӗ. Тавах ӑна, таса та хӑюллӑ Чӑваша.

# 1995 çул

* * *

Ӳсĕр чăваш пек вĕçкĕн çын урăх çуках. Палламалла мар улшăнса каять. Чĕлхи ниçта çакланмасть. Унтан ăсли те, вăйли те, хăюлли те, пуянни те çук. Ачисемпе мухтанма пуçласан вара...

Ӳсĕр чăваш – суя чăваш. Ун савăнăçĕнче тĕрĕслĕх çук. Ĕмĕтленни, чăнах та, пурнăçа кĕнĕ пек курăнса кайнă суя самантсăр пуçне кунта урăх нимĕн те çук. Вăхăтлăх пулăм. Урăлса пынăçемĕн веçех куçран çухалать. Каллех йывăрлăхсем капланса килеççĕ. Чăваш пурнăçĕ пуçланать.

* * *

Вăхăт çитсен пурте çĕр çине ӳкет. Ав çӳлте-çӳлте ăмăрткайăк ирĕккĕн вĕçсе çӳрет. Тытас тенĕ чĕрчуна курсан чул пек персе анать те çивĕч чĕрнисемпе тирсе илет. Хăйне пĕлĕт хуçи пек туять. Анчах  вăхăт çитсен вăл та çĕр çине ӳкет.

Çурта пек тӳрĕ хыр та çĕр туртăмне çĕнсе илме çӳлелле кармашать. Йĕпписем тăкăна-тăкăна ӳксен те яланах симĕссĕн курăнать. Вăхăт çитсен вăл та тӳнсе каять, выртсан-выртсан çĕрпе пĕрлешет.

Çын та çавах: çĕр çинех ӳкет. Çĕр вăл пуриншĕн те тăван кил.

* * *

Сире кам тесе чĕнмелле-ши:  ĕлĕкхи нимĕç вăрçинче Раççей парăнтăр тесе тăрăшакансене, пролетарин хăйĕн çĕршывĕ çук тесе вĕрентекенсене?

Сире кам тесе чĕнмелле-ши: ăслă çынсене пинĕ-пинĕпе чикĕ леш енне хăваласа яракансене, илемлĕ çуртсене, чиркӳсене çапса çĕмĕрекенсене?

Сире кам тесе чĕнмелле-ши: лайăхрах пурăнакан çын туприне тытса илме хушакансене, ют çĕршывсене сутмалăх тырă туса илекен çĕрĕçченĕсене Çĕпĕрелле ăсатакансене, ашшĕпе ывăлне, пиччĕшпе  шăллĕне класс тăшманĕ  тесе çапăçтаракансене?

Сире кам тесе чӗнмелле-ши: пултаруллӑ ҫыравҫӑсене, командирсене Сталин лагерӗсенче пӑчлантаракансене, авалтан мӑн аслашшӗсен ҫӗрӗ ҫинче пурӑнакан халӑхсене тӑван килӗнчен кутран тапса кӑларса яракансене?

Сире кам тесе чӗнмелле-ши: пӗтӗм тӗнчене хамӑра хирӗҫ тӑратакансене, ялсене ҫӗклес вырӑнне танксем, тупӑсем, ракетӑсем тӑвассине мала хуракансене?

Сире кам тесе чӗнмелле-ши? Ун пек сӑмах пур-ши? Чӑваш чӗлхинче тупӑнӗ-ши?

Сире кам тесе чӗнмелле-ши?..

* * *

Влаҫ тытӑмӗнчи йӑласем юрлакансен ушкӑнӗнчи пекех. Енчен те пӗри ыттисемпе пит килӗшӳллех юрламасан, хӑй сассине палӑртсан, йывӑрлӑхсем пуҫланаҫҫӗ. Пӗр майлӑ юрлама тытӑнмасан хӑваласа яраҫҫӗ.

Влаҫ вӑл шак та таса ҫынсенчен ҫеҫ тӑмасть. Апла пулма та пултараймасть. Влаҫри пӗрлӗхе тытса тӑракан пӗр питӗ ҫирӗп ҫилӗм пур. Ҫакӑ вӑл пӗр-пӗрин вӑрттӑнлӑхӗсене лайӑх пӗлсе тӑни.

Пӗрле ӗҫлекен хӑвна пӑхӑннисӗр пуҫне тата кӑштах хӑраса та тӑтӑр тесен, вӑл тунӑ киревсӗр ӗҫсене пӗлмелле. Ун пек туни курӑнмасан ҫав ӗҫе ятарласа тутармалла. Вара вӑл веҫех сан алла кӗрсе ӳкӗ, тем хушсан та пурнӑҫлӗ.

Шӑпах ҫак мелпе ӗҫлесе пурӑннӑ та ӗнтӗ иртнӗ тапхӑрти пуҫлӑхсем, ҫирӗмшер, вӑтӑршар ҫул хуҫара ларнисем.

Енчен те ҫын ҫак ушкӑна лекрӗ пулсан, ӑна кӑларса яман, вырӑнтан вырӑна ҫеҫ куҫарса пынӑ. Пӗр-пӗрин вӑрттӑнлӑхне пӗлни ҫак картаран тухма паман.

Ҫакна вӗсем паянхи кун та туслӑх вырӑнне хурса хаклаҫҫӗ. Ун чух эпир питӗ килӗшӳллӗ ӗҫлеттӗмӗр тесе хӑйсене хӑйсем лӑплантараҫҫӗ. Чӑн-чӑн туслӑх пулнах-ши вӗсен?

* * *

Ӗненместӗп. Мускаврисене пачах ӗненместӗп. Шупашкартисем пирки те шикленетӗп. Чӑваш арҫыннисене те шанмастӑп. Пӗр сана ҫеҫ шанатӑп, чӑваш хӗрарӑмӗ. Эсӗ пулмасан паян эпир те пулас ҫук. Чӑваш арҫыннисен шӑммисем Атӑл тӗпӗнче, Дон тӗпӗнче, Висла тӗпӗнче купи-купипе выртаҫҫӗ пулсан та, эсӗ ҫине тӑнипе Чӑваш тӗнчи

пӗтмерӗ. Эсӗ уншӑн кӗлрен чӗрӗлсе тӑракан Феникс кайӑкӗ пултӑн. Эсӗ Чӑваш тӗнчин ӗмӗрлӗхӗ, вӗҫӗмсӗрлӗхӗ.

Тавах сана, чӑваш хӗрарӑмӗ, ҫӗр ҫинче пурришӗн. Шанчӑклӑраххи пурпӗрех – эсӗ.

* * *

Ытарайми Чӑваш Енӗм, тӳрленме пӗлми суранӑм!

Асаттесен ҫӗрӗнче пурӑнатпӑр авалтан. Пирӗн лӑпкӑ пурнӑҫа сахал мар куҫ хывакан.

Усал вӑйсем хӑмсарсан пур-ши пирӗн паттӑрсем, Улӑп евӗр чӑвашсем, ҫӗр ҫыртса тупа туса хӗҫ тытма хатӗррисем? Пур-ши хирӗҫ тӑмалли, тӑшман ҫулне пӳлмелли? Апла пулсан шухӑшлар, мӗн ҫуккине пур тӑвар, ҫитменнине ҫитерер.

Енчен чӑрсӑр чунлисем ирсӗр ӗҫе тытӑнсан, ҫӗр ҫинчи мӗн пур чӑваш, хамӑр чысшӑн кар! тӑрар! Несӗлсем пин ҫул хушши тарпа шӑварнӑ ҫӗре ҫичӗ юта парар мар, тӗнче кулли пулар мар.

# 1996 çул

* * *

Çуркунне çитсен пурнăç çĕнелет, ешĕл сăнĕпе кăмăла çĕклет. Улăха тухсан хитре чечек пит нумай. Нумай пулсан та татас килет саррине. Юрату çинчен çепĕç юрă пит нумай. Сана тĕл пулсан юрлас килет çĕннине.

Çуллахи илем çимĕçпе пуян, çут çанталăка тав тăвар ялан. Вăрмана кĕрсен çырла пит нумай. Нумай пулсан та татас килет тутлине. Юрату çинчен çепĕç юрă пит нумай. Сана тĕл пулсан юрлас килет çĕннине.

Хĕр чух хĕрĕх тус тетчĕç аннесем, каччăн аллă тус тетчĕç аттесем. Яшлăх яка чух çывăх туссем пит нумай. Нумай пулсан та савас килет савнине. Юрату çинчен çепĕç юрă пит нумай. Сана тĕл пулсан юрлас килет çĕннине...

* * *

Эй, эйпеçсем, эльпуçсем, элĕксем – экологи енчен таса хĕрсем! Сирĕн ума тăрса куçран пăхса калаçма пит аван. Ыталаса чуп тума тата та кăмăллă. Паллах, хăвăр хирĕç мар пулсан, пире тивĕç каччăсем шутне хурсан.

Эй, чăваш хĕрĕсем, таса шывпа çăвăнса, уçă сывлăшпа кăкăр тулли сывласа ӳснĕскерсем, арăм тума лайăххисем, çирĕп сывлăхлă ача çуратма хатĕррисем! Сире никампа та улăштарма çук. Çакна ыттисем тахçанах сиснĕ, чи лайăххисене суйланă та суйланă, пире шăхăрта-шăхăрта хăварнă.

Эй, чăваш каччисем, авланаймасăр çӳрекеннисем. Чăваш хĕрне тивĕç пуласси хăвăртан килет.

* * *

Асăрхарăм эп сана. Куçăмпа чуптуса илтĕм. Эсĕ сисрĕн пулмалла. Пăхса илтĕн те, питӳ пиçнĕ пĕрлĕхен пек хĕрелсе кайрĕ. Шухăшăмпа çитес чарăнура тухма ыйтрăм. Эсĕ тухрăн. Эп те тухрăм. Пĕр-пĕрин патнелле туртăнтăмăр. Мĕнле вăй пулчĕ-ши, мĕнле туйăм туртрĕ-ши?

Тахçанах палланă çынсем пек утса кайрăмăр пĕрле...

* * *

Юратупа ӳслӗке пытарма çук теççӗ. Пурпӗрех асăрхаççӗ. Ӳслӗкӗ пирки калаçмăпăр. Вăл килет те каять, манăçа юлать.

Юратăвӗ вара... Унтан тарса пытанма çук. Пӗр хуçаланма пуçласан никама та канăç памасть, хăй ӗçне тăватех – юраттарать те, ыраттарать те.

Тепри туртса илесрен хăранипе ăш вăркама пуçлать. Кӗвӗçӳ туйăмӗ кăкăра хирет, чӗреме хӗртет. Йывăрлăхӗ хама тивет.

Тепри ав пачах урăхла. Кӗвӗçӳ хӗмне веçех хăй юратнă çын çине сапать. Вырăнсăр ыйтусемпе чыхăнтарать, хыççăн кайса вăрттăн сăнама та именмест...

Виççӗмӗшӗн вара вылявлă кӗвӗçӳ. Ăна вăл хăйне юратнипе юратманнине тӗрӗслемелли мел вырăнне хурать. Анчах йăнăшать. Нимле кӗвӗçӳ те юрату тусӗ мар. Ун çунатне хуçакан ултавлă вăй çеç.

Кӗвӗçме сăлтав çуккине, пӗрне-пӗри шаннине нимӗн те çитмест.

* * *

Юрату çинчен шутласан тӳрех арбуз çинӗ чухнехи аса килет.

Малтанхи çыртăмсем пулчӗç ытлашши пылак. Çыртнă хыççăн çыртас килсе тăчӗ. Юлашкисем, хуппи патне çывăххисем, пулчӗç пачах урăхла. Унта сахал пылакки. Тӗсӗпе те шупкарах.

Юрату та çавăн пекех. Ăçтан ӗнтӗ танлаштарăн малтанхипе хальхине!

Анчах пурпӗр кулянмастăп тути самай улшăннишӗн. Çамрăк чухнехине аса илни те теме тăрать, халь те чуна савăнтарать.

* * *

Кӗтрӗм, кӗтрӗм, эсӗ шăнкăравласса кӗтрӗм. Чупса пытăм телефон патне, сан сассу илтӗнмерӗ. Кăмăлăма хуçни çеç пулчӗ.

Мӗншӗн ытла паха-ши сан сассу? Ăна илтсенех хама пачах урăхла туйма пуçлатăп. Темле лăпкăлăх, шанчăклăх çуралать. Ăш вăркани лăпланать. Калаçнă чух вара хăвна курнă пекех туйăнать, сăну куç умӗнче выляса тăрать.

Курсан, ыталаса чуп тусан вара пӗрле таçта çити вӗçсе

каяс килет. Пурнăç тути-маси те урăхларах туйăнма пуçлать. Пурăнас килет. Сан ытамунтан вĕçерĕнмĕттĕм нихăçан. Ялан пĕрле пулăттăм.

Кĕтетĕп, эсĕ шăнкăравласса кĕтетĕп.

* * *

Эп юратнă хĕрсемпе хĕрарăмсем, чи хитрисем, чи кăмăллисем!

Мĕнле-ха капла: аллă урлă каçсан та пăрăнмарăр, утмăла çитсен те пăрахмарăр.

Мĕне пула-ши çавăн пек пысăк парнене тивĕçрĕм? Сирĕнсĕр пурнăçăм çапла ăнăçлă иртес çук. Сирĕнсĕр сăвă-юрă та шăранса тухас çук. Чирлемерĕм, нăйкăшса çӳремерĕм, ыттисене йывăрлăх кӳмерĕм. Ĕçлерĕм те ĕçлерĕм.

Каçарăр. Тен, ман çумри ырăлăх хумĕ кашнин патнех пĕр пек çитеймерĕ. Анчах эпĕ сире пурсăра та юратнă, усал тĕллев тытман. Халĕ те çавах.

Енчен те пурнăçра эпĕ маларах уйăрălса каяс-тăк, ытлашши ан кулянăр. Эпĕ выртнă çĕре пырса тăрăр та ыррине аса илĕр. Çакă вăл сире çăмăллăх парĕ. Чăннипе каласан, эпĕ кăштах сирĕнте те пурăнатăп вĕт-ха. Веçех кайса çухалман. Эппин, эпир яланах пĕрле.

* * *

Килĕшместĕп, чăвашсене ытти халăх çыннисем юратмаççĕ тенипе килĕшместĕп. Йĕри-тавра пăхкаласа илетĕп те куратăп, чăваш арçынни çумĕнче кам кăна çук пуль. Мĕнле хĕрарăм кăна усă курмасть пуль унпала, вăл тунă пурлăхпа. Авлантараççĕ те авлантараççĕ. Уйрăмах вырăс е еврей хĕрĕсем. Суйласса вара хытă суйлаççĕ. Чи пултаруллисене, аслă пĕлӳ илнисене, пулас профессорсене, министрсене, президентсене...

Чăваш хĕрĕсем валли иккĕмĕш сортлисем çеç тăрса юлаççĕ. Шăхăртса хăвараççĕ çав вĕсене. Шăпах çакăнта чăваш хĕрĕн юратури сăпайлăхĕ ытти халăх хĕрĕсене пулăшса пырать те ĕнтĕ.

Мĕн тăвас тен, йăли çапларах. Ятласшăн мар эп хĕрсене. Каччисене кăна кăштах хăлхаран пăрасшăн. Чăваша илмен чăваш арçынĕ ирĕклĕ çын мар тесе каласшăн. Тăванĕсене те чăвашла хăналаса яраймасть.

* * *

Эх, Раççей, Раççей, юратусăр çĕршыв. Мĕншĕн çав тери нумай-ши сана сутакансем, сан чысна варалакансем?

Хамăр çынсемех вĕт-ха, Уйăх çинчен килмен. Хамăр шкултан вĕренсе тухнисемех, комсомолра, партире тăнисемех. Кама ятламалла-ши?

Раççей юратăвне кашниех ăмсанать. Вăл чаксанах ятлаçма пуçлатпăр. Хамăр тивĕçе вара манса каятпăр.

Раççей пуянлăхĕ унăн ылтăн-кĕмĕлĕнче мар, çыннисенче. Çавсене хаклами пулчĕç. Пуçлăхсене çилленнин ăншăрчĕ вара Раççей çине ӳксе пырать.

Çĕршыв вăл яланах пĕрре. Шăпи темле пулсан та пирĕн юратăва тивĕçлĕ. Кунта эпир çуралнă, кунта пурăнатпăр. Тухса каяс кăмăл çук. Йăва пирĕн çакăнтах.

Юратусăр ӳснĕ ача телейсĕр. Çĕршыв та çавах. Ура çине тăраймасть, вăйланаймасть. Раççее паян пирĕн юрату çитмест.

* * *

Тепри ав хăйне ытла мăнна хурать. Ун пек чапли те, ун пек ăсли те, ун пек пултарулли те çук пек тыткалать. Сăмсине каçăртать те ури çĕре тивми çӳрет.

Анчах çак çынна пĕр япала канăç памасть: хăйне ыттисем хак пани тивĕçтермест. Темшĕн çке-ха çыннисем урăхларах шутлаççĕ, кăшт йӳнĕрех хаклаççĕ.

Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ. Ячĕ те пур, тава тивĕçлĕ ятсем те, премисем те илсех тăрать. Анчах чысĕ çук. Вăл ăна çамрăклах çухатнă. Халь, тен, кулянать те пуль, каялла тавăрма çук. Укçа парса илĕччĕ. Илĕнмест.

Чыса ăна упрама пĕлмелле.

* * *

Яковлев, Çеçпĕл, Урдаш, Ухсай... Вĕсем мĕнлерех çынсем пулни – хăй вăхăтĕнчи çынсем валли. Темлине те курнă пуль, тĕлĕнни те, савăнни те пулнă пуль.

Пирĕн вĕсемпе пурăнас çук, ачасене шыва кĕртсе куммаллă пулас çук.

Пирĕншĕн чи хакли – еткерлĕхĕ пахи. Темле элек сарсассăн та, юриех усалтарах кăтартма тăрăшсан та çын пахалăхне эпир ун ĕçĕнче куратпăр.

Усаллине вӗсем тахҫанах хӑйсемпе илсе кайнӑ, пире валли вара ыррине кӑна хӑварнӑ.

* * *

Акӑ пӗри хаваслансах телевизорпа пуш параппан ҫаптарать. Вӑл тахҫан ӗлӗк пулнӑ иккен Нефертити. Ун пекех маттур, ун пекех хитре.

Камӑн пулас килмест тӗнчипе паллӑ хӗрарӑм пек?

Анчах чи пысӑк тӗлӗнтермӗшӗ пачах урӑххи. Вӑлах пулнӑ иккен Лермонтов та.

Ак тамаша, хӗрарӑмран та арҫын пулса тӑнӑ. Кайран каллех Ахматова, Цветаева... Вӑл такам та пулнӑ, хӑй кӑна пулайман.

Мӗн тери шел. Курасчӗ ӑна хӑй пек пулнине, хӑй пуҫӗпе шухӑшланине, хӑй чӗлхипе калаҫнине, ҫырнине.

* * *

Айдаш калашле, пурнӑҫ вӑл пӑтранчӑк юхӑм ҫеҫ. Пӗлместӗп, пуриншӗн те ҫапла-ши? Пӑтраштараканӗсем вара чӑннипех те ҫителӗклӗ. Пӗри кунталла туртать, тепри – тепӗр еннелле. Пӗри каланине илтетӗн – тӗрӗс пек. Теприне итлетӗн – вӑл та йӑнӑшмасть пек. Анчах ӑшра усӑмлӑх ҫук. Калаҫӑва ӑна, чӑнах та, тӗп шухӑша пытарма ҫеҫ тунӑ пулас. Калаҫма юратаканнин чӗлхи яланах яка, ӗнентерӳллӗ.

Юрать-ха, ҫӗр ҫинче ӗҫ пур. Пуҫри пӑтрашӑва, шикленӗве шӑпах ҫавӑ татса парать. Илтнӗ сӑмахпа ҫеҫ ан ҫырлахӑр, ӗҫне тӗплӗнрех тишкерӗр.

Сӑмах вӑл – сӑмах. Ӗҫ вӑл – ӗҫ, куҫа усӑмлӑн курӑнакан пулӑм. Унта сӑмахӗ те, чӑнлӑхӗ те пӗр ҫӗрте, пӗр тӗвӗре.

* * *

Чунӑм чухӑн, тӑлӑх. Унта ырӑлӑх ҫук. Ӑна хӑй килӗнчен хаярлӑхпа кӗвӗҫӳ хӑваласа кӑларса янӑ. Халӗ унта ҫавсем хуҫаланаҫҫӗ. Мана унталла-кунталла турткалаҫҫӗ, хӑйсемпе пӗр майлӑ пулма хистеҫҫӗ.

Ырӑ чух, хама лайӑх туйнӑ чух эпӗ ун пек марччӗ. Ыттисене те ырӑ тӑвас килетчӗ.

Халӗ пачах урӑхла. Япӑх туятӑп хама. Чунӑм тӑвӑлать, тӗл пулакансен савӑнӑҫӗ тата хытӑрах ыраттарать. Тен, ҫавна пулах ыттисене те усал тӑвас кӑмӑл хускалать.

Тепĕр тесен, мĕншĕн ман çеç асапланмалла вара? Йӳçĕ çимĕçе ыттисем те тутанса пăхчăр...

* * *

Çĕр çинчи чи пысăк тавлашу пĕрре çеç: Турă пур е çук? Татăклăн никам та калаймасть.

Турра таçта инçетре, çӳлти тĕнчере пурăнакан çын пек кăтартма тăрăшни айванлăх çеç. Кулăшла та курăнать. Ун пек ăнланупа ниепле те килĕшме май çук.

Маншăн турă – çын ăшĕнче вырнаçнă ырă сăнар. Çын сăнарĕ. Урăхла пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен турра ăна çынсем хăйсем шыраса тупнă, хăйсем шухăшласа кăларнă. (Арăслансем пулсан, паллах, арăслан пек курăннă пулĕччĕ). Кирлĕренех тупнă пуль.

Турă ятпа çирĕпленнĕ сăнар кашниййĕнех пултăр, эппин. Идеал вырăнне илĕртсе тăтăр, пире пулăшса пытăр. Турăпа танлашаймăпăр, анчах тĕслĕх вырăнне хурса ун патнелле туртăнни çынна пăсас çук.

Турăпа никама та ан хăратăр. Ун сăнарĕ ырăпа çеç ялкăшса çиçсе тăтăр.

Пире пурсăмăра та ырă турă çеç кирлĕ.

* * *

Ачалăх вăл айванлăх, парăма кĕнĕ тапхăр. Çуралнă-çуралманах хатĕр пурнăç ытамне кĕрсе ӳкетпĕр те «пар» сăмаха çеç юрататарах паратпăр. Кĕçех, ав, парăмсене тавăрса памалли вăхăт та çĕмĕрттерсе çитет. Кашниййĕн çынлăхĕ мĕнле шайра тăнине шăпах çакăнта куратпăр та ĕнтĕ.

Пĕри хăй тивĕçне кăмăлпах пурнăçлать. Тепри вара...

Акă ваттисен çуртĕнче ларать пĕр карчăк. Хăйпе пĕрле пурăнакансене çине тăрсах ачисем çинчен каласа парать. Паллă та сумлă çынсемех иккен. Анчах...

Амăшне пĕрле усрама ăшă вырăн тупăнман, кăмăлĕсем хытса ларнă, сивĕннĕ.

Тепри, ав, ялта пĕччен пурăнакан амăшне хĕл каçма та пулин Шупашкара илсе килесшĕн. Арăмĕ вара яхăнне те ямасть. Аннӳ сан япăх тумланать, вырăсла та ăстах мар тесе сивĕлет. Ачисем те çавнашкал, асламăшне курассишĕн çунмаççĕ.

Амăшĕ умĕнчи тивĕçе ывăлĕ пурнăçлаймасть, ачисемшĕн ырă тĕслĕх пулаймасть.

Пуçăмăрсем çине атте-анне ырлăхĕ çуса тăнă чухне эпир

пурте телейлĕ. Парăмсене тавăрмалли вăхăт çитсен вара пăтăрмахсем сике-сике тухаççĕ. Ытларахăшĕ – хамăра пулах.

Илме яланах аван, тавăрса пама йывăр.

* * *

Тĕлĕнтермĕш япала. Шупашкарти пĕр кĕвĕç çăхав çырнă Мускава, хăй юлташне хурласа, хура тĕспе сăрласа. Пит хăравçă çын пулас. Алă пуснă ман ятпа. Те алли чĕтренĕрен, картне лартнă кăшт кăна.

Ман ятăмпа çырнă-ха, анчах пĕрне чухлайман. Кибеч вăрттăн ĕç тумасть, хăй ятне те пытармасть. Мĕскер калас тенине халăх умĕнче калать. Мĕскер çырас тенине хăй ячĕпех пичетлет. Çакна пĕтĕм тĕнче пĕлет.

Калас кăмăлăм çапла. Усал ĕçсем тунă чух ман ятăма ан тĕкĕн. Ырлăх патне талпăнсан, манран вара чару çук.

* * *

Çын вăл пĕрре хăнăхнă йăларан пăрăнмасть. Шухăшланине тăвать, пурнăçлас тенине пурнăçлать. Чарма çук. Паракан паратех, илекен илетех. Веçех совесть йĕркелет. Пăсăлнин, намăса çухатнин чаракĕ çук. Тасин ĕçĕ те таса.

Эпĕ хама яланах икĕ çын пек туятăп. Пĕри ĕçлекенни, мĕн те пулсан тăваканни. Тепри айккинчен пăхса, сăнаса тăраканни. Хама çапла тытнин усси пурах. Хама хам вăрçма та вĕренсе çитрĕм. Йăнăшсем те кăшт сахалланса пычĕç.

Çын шанчăклăхĕ совеçрен килет. Совеçлĕ çын – ирĕклĕ çын. Тĕнче çине уççăн та хăюллăн пăхать.

Ĕмĕре совесть хушнă пек пурăнса ирттерекенсем чăннипех те телейлĕ. Таса.

* * *

Чыса ăна таптама памалла мар. Варалас текенсем тупăнсах тăрĕç, хамăр харсăр пулмасан.

Теприне, ав, асфальт çине пăрахнă пирус тĕпĕ пек таптаса иртсе каяççĕ, сураççĕ, кулаççĕ. Анчах вăл нимĕн те шарламасть, чысне хӳтĕлеме хăюлăх çитерейместь.

Ун пек çынна хĕрхенес те килмест. Шеллени кăна.

Чыса ăна упрама çеç мар, хӳтĕлеме те пĕлмелле. Уйрăмах паян, ыттисем лайăх пурăннăшăн, пултаруллăрах пулнăшăн кĕвĕçекенсем йышланса пынă чухне.

Чыса таптама памалла мар.

* * *

Çын çумӗнче яланах икӗ тӗрлӗ хитрелӗх. Пӗри вӑл сӑн-питрен, ӳт-пӳрен килӗшӳллӗ пулни. Çакӑ, паллах, ашшӗ-амӑшӗн парни. Турӑ пани тесен те ытлашшиех мар.

Тепри вара – çын хӑй тӑрӑшса пуянлатнӑ хитрелӗх. Кунта пур тӑхӑнма пӗлни, ыттисен умӗнче сӑпайлӑ тытни, таврари илеме хаклама пултарни. Чун илемӗ тейӗпӗр. Çакӑ веçех хамӑртан килет.

Сӑнран хитре çуралнисем пур-ха, чун илемӗ чухӑнрах. Тепри, ав, сӑн-питрен ыттисенчен уйрӑлсах та тӑмасть, чун илемне пула питӗ хитрен курӑнать.

Пурнӑçра пурпӗрех чун илемӗ пахарах. Ыттисене ӑшӑ парса тӑрать, нумая пырать.

* * *

Шултра чӑваш сахалтарах. Ӑна куратпӑр хамӑрах. Куратпӑр кӑна мар, мӗншӗннине те чухлатпӑр.

Эпир те шултрисен, вӑйлисен шутӗнчехчӗ. Пӑлхар патшалӑхӗ арканни пӗтерчӗ.

Тыта-тыта кайрӗç чи хитре хӗрарӑмсене. Улӑп пек тӗреклӗ арçынсем ют çӗрти йывӑр ӗçпе хуçӑлчӗç, салтакра пӗтрӗç. Вӑрлӑх пахалӑхӗ чакса пычӗ. Нишлӗ пурнӑç, начар апат халӑх сывлӑхне те, илемне те хавшатрӗ.

Çук, эпир ялан кун пек пулман. Хӑш чух тата славянсемпе хазарсенчен те маттуртарах. Патшисем те хамӑрӑннисемех пулнӑ. Варягсем мар.

Юрӗ. Йӑх шултралӑхӗ пирки пуçа пит ватар мар. Телей вӑл ӑна пӑхмасть. Сывлӑхлӑ пулар. Çирӗп ӑру ӳстерер. Вӗренӳпе, пӗлӳпе мала ӳкер. Вара йӑлтах вырӑна ларӗ. Пысӑк çын та пӗчӗкреххин тарçи пулӗ. Ытларах ӳтпе чун хушшинчи килӗшӳлӗх пирки шутлар.

* * *

Çакӑ ялта пур-ши арçынсем? Кӗперӗ ишӗлсе аннӑ. Ура йӗпетмесӗр çырман тепӗр енне каçма çук. Униче карти те тӳнсе кайнӑ. Ӑна вырӑна лартма арçын алли çук.

Çакӑ ялта пур-ши арçынсем? Çӑл пурисем чалӑшса кайнӑ. Урамӗсен латти çук. Ял витӗр тухнӑ чух ура хуçас хӑрушлӑх пур.

Çакӑ ялта пур-ши арçынсем? Каçхи урам сӗм тӗттӗм. Юпа çинчи хунарсем те çунма пӑрахнӑ тахçанах.

Сывă та илемлĕ ачасем çураттармашкăн çакă ялта чăн-чăн арçынсем пур-ши?

* * *

Çук, ўнер тĕнчи вăл урăхла. Кунта кашни çунатлă, пултаруллă, талантлă. Турри пани пысăк-и е пысăках та мар-и, ятне халăхра хăварасси пирки шутлатех. Пушкин та кун пирки уççăнах каланă.

Тен, çакă вăл пит япăх япалах та мар. Çын ĕненсе пурăнать. Çырать те çырать, купи-купипе сăрă пĕтерет, кĕвĕ кĕвĕлет... Тен, мана каярах ăнланĕç, юратĕç тесех çĕре кĕрет.

Вăхăчĕ вара... Али ун ытла та вĕтĕ. Витĕр тухма çăмăл мар. Чи пултаруллисем, чи талантлисем кăна тухма тивĕç илеççĕ.

Хăв пирки тем шутласан та, пĕтĕмпех вăхăт татса парать.

* * *

Çамрăк чухне кун пекех марччĕ, кăмăлăм самай хытăрахчĕ. Чунăма веçех музыка сухаласа тухрĕ, сисĕм-туйăм çимĕçĕ шăтса ўсме пултаракан хура тăпрана çемçетрĕ, кăпкалатрĕ. Халĕ вара халăхăма мĕнле çимĕç парнелесси хамран килет. Вăрлăхне пăрахаканĕ пурнăçĕ хăех. Малтан чун ыратăвĕ е савăнăçĕ, унтан хайлавĕсем шăранса тухаççĕ. Паллах, пурте пĕр пек мар. Ыттисен чунне хускатаканнисем çуралсан тем пекехчĕ.

Çыравçă ятне çĕнсе илмелли пĕртен-пĕр мел çавă çеç – ĕç. Урăххи пулас та çук.

* * *

Вулакан çыракана шанать, ĕненет. Пичетленĕ сăмаха пысăка хурать. Уншăн пур çыравçă та вулакан валли çеç çырассăн туйăнать. Паллах, йăнăшать.

Хăйшĕн çеç çыракансем те çук мар. Акă, пĕри хăйне Александр Македонский ăрăвĕнчен тесе ĕнентересшĕн, патша йăхĕнчен тухнине кăтартасшăн çунать. Ку автора тĕрĕслĕх ним тума та кирлĕ мар. Çырса пултăр.

Тепри тата кăçал çырнă сăввисене çирĕм çул каяллах çырнă тесе пичетлеме юратать. Пăхăр, эп ун чухнех мĕнле хăюллă пулнă тесшĕн ĕнтĕ.

Демократи, паллах, çыравçăна уçăмлăх, ирĕклĕх парать. Çав хушăрах тата тĕрĕслĕх тилхепине çирĕп тытса пыма та хушать.

Халăха тĕрĕссине çеç каласчĕ, çыравçă тивĕçне таса чунпа, ырă кăмăлпа пурнăçласа пырасчĕ.

* * *

Çĕнĕ тапхăр пуçланмасан çĕнĕлле çыракан çыравçăсем те пулас çукчĕ. Пĕр майлă, шак та хамăра хамăр ырласа çырнипех çырлахма тиветчĕ. Пурнăçăн тӳнтерле енĕсене уçса паракан та пулмастчĕ.

Халĕ ĕнтĕ куратпăр, кивĕ самана хăйпе пĕрле рупорĕсене те илсе кайрĕ. Вĕсене паян вуламаççĕ, вĕсене паян пичетлемеççĕ. Ятне каласан та хыпăнса ӳкмеççĕ.

Пĕрисем каяççĕ, теприсем килеççĕ. Пăшăрханма кирлĕ мар. Килнисем хушшинче хама та куратăп. Демократи юхăмĕ тапранмасан, Кибеч те пулас çукчĕ. Тарăн шухăша яракан юрăсен хумĕ те çĕкленес çукчĕ.

Çĕнĕ вăхăт çĕнĕ юрăç çуратать.

* * *

Пире паян Швеци поэчĕсен айван сăввисене чăвашла пичетлесе чыхăнтараççĕ. Те юри начар поэтсене суйласа илеççĕ, те тăлмачăсем пултарусăр. Калама хĕн.

Вулакана ăнланмалла мар мелсемпе çыракансем пирки шăналăк пек статьясем кăлараççĕ. Халăх юратса вулакан çыравçăсене асăрхамаççĕ.

Çук ĕнтĕ. Вылявлă та пăтранчăк поэзи пире валли мар. Вăл халăхлăх тымарĕ типнисем валли кăна.

Сисетĕп, туятăп: чăваш поэзийĕн сăпки – кăнтăраллах. Тен, çавна пулах Гильгамăш çинчен вулама юрататăп, Тагор умĕнче пуçăма таятăп.

* * *

Пур çĕрте те виçмелли мелсем, виçесем. Шĕвеке виçетпĕр куркапа, кĕлетри тырра – пăтавккапа, ялпа ял хушшине – çухрăмпа...

Укçапа виçмелли те тупăнсах тăрать. Уйрăмах çын ĕçне, лавккари тавар хакне. Анчах....

Мана паян шиклентерет пур çĕрте те укçа пуçа çĕклени, хуçаланма тăрăшни.

Мана паян хăратать çын чысне ылтăн чĕпĕтсе тăни, хамăра совесть хушнă пек тыткалама кунран-кун йывăрланса пыни.

Ирĕксĕрех куç умне тухса тăрать çамрăклăх.

Пĕр пекрехчĕ ун чухне. Хамăр пеккисем, укçасăррисем, темĕн чухлехчĕ. Апла пулин те Нар пек чипер хĕрсемех ун чух пирĕн çумраччĕ. Кĕсье çӳхе пулсан та чунсем пирĕн тасаччĕ...

Халĕ ĕнтĕ пĕр тĕллев. Тем чухлĕ укçа илĕртсен те чысăма сутас марччĕ. Шанчăклă çын шутĕнчен тухса ӳкес марччĕ.

* * *

«Нумай енлĕ ĕçлетĕн, сăввусене хăçан çырма ĕлкĕретĕн?», – текенсем те тĕл пулаççĕ.

Мĕнле хуравлам-ши? Хам та пĕлсе çитерейместĕп. Анчах кăштах чухлатăп. Сăвă çырма уйрăм вăхăт кирлех мар. Вăл хăех майлашăнса пырать. Веçех таврари пулăмсенчен, пурнăçран илнинчен шăтса тухать. Асăрхама кăна пĕлмелле, унччен-хине лайăххрах аса илмелле. Вара сăнарĕ те курăнса каять, хут çине те час ӳкет. Сăвва ăна пурнăç çуратать. Ăсталăхĕ – пурăннăçем туптанать.

Пахалăхĕ ыттисем çырман йĕркесенче. Çак çĕнĕлĕх çук пулсан – хăвна çыравçă теме ан васка. «Поэт» сăмахпа та ан выля. Çыракансем нумай, поэтсем вара питĕ сахал.

* * *

Çĕре улталаймăн, вăл хăй ĕçне тăватех. Лайăх çыншăн – лайăх, япăххишĕн – япăх.

Çĕр ытларах хăй хуçине, хăйне хисеплекене килĕштерет. Çапла пулмалла та ĕнтĕ. Çĕр вăл çын пекех: чĕрĕ, чунлă, веçех туять. Унсăрăн кашни çулах çĕнĕ çимĕç çуратса пире ырлăх кӳрес çук.

Çĕр пĕтĕ вăхăтра хамăра лăпкăрах тытмалла. Ăна ача амăшĕ пулма хатĕрленекен хĕрарăма пăхнă пекех пăхмалла. Апатне те вăхăтра çитермелле, шывне те ĕçтермелле. Вара вăл пархатарне те çителĕклех кăтартĕ.

Çĕрпе пĕр шухăшлă пулар, ун илемне упрар.

* * *

Шекспир калашле, пĕтĕм тĕнче вăл – театр. Кашниех хăй рольне вылять. Унта тем хăтланакан та пур.

Пултăм пĕр çĕрте, ӳнерçĕсен куравĕнче. Савăнмалли сахал мар. Тĕлĕнмелли те çук мар. Акă тамаша...

Çара пакка çын ларать. Хăйне сăнчăрпа кăкарнă. Юнашар – хăмаран çапса тунă йытă йăви. Çынни йытă пек вĕрет, улать, шăлĕсемпе шаккать, çыртма та пикенет.

Сасартăк пĕр çынна шăлĕсемпе ураран ярса тытрĕ. Ямасть. Леш турткалашать, кăшкăрать. Хуралçăсем пырсан тин ячĕ.

Çапла вара ӳнер çынна çыртнине хам куçпала хам куртăм. Авангард сĕрĕмĕпе тăнран тухнăскерĕнчен тем те кĕтме пулать иккен. Виçи çук.

Акă тата тепри, пăтрашуллă сăвăсем çыраканни. Хăй çуралнă кун тăван ялне пырсан иртенпе кĕтсе тăракан шкул ачисем патне кĕрсе тухма ӳркеннĕ. Тăван шкула çитерекен çĕр утăма çĕнсе илмелĕх мехел тупайман.

Авангард текенни халăхлăха çеç мар, çынлăха та типĕтет иккен.

* * *

Эсĕ хитрине хам куçпа хам куртăм. Килентĕм. Ĕнентĕм. Çырса сăнарлама тăрсан йывăрлăха кĕрсе ӳкрĕм. Чĕлхем чухăн, сăмахăм çитмест.

Сăрăпа сăрласа сан сăнна уçса парăттăм, анчах чун илемĕ патне çывхарайман, кăтартаймăп. Юлĕ пытанса.

Мĕн тăвам-ши? Çырни те, ӳкерни те çителĕксĕр; мана çырлахтарас çук. Кашни кун курса калаçнине, санра çиçсе тăракан илемпе киленнине пурпĕрех ним те çитес çук.

Вилес пулсан та пĕртен-пĕр çухату – эсĕ пулăн. Мĕншĕн тесен пĕтĕм пурнăç вăл – эсĕ. Вилĕм маншăн санран уйăрăлни кăна. Ыттишĕн кулянмастăп.

* * *

Мĕнлерех-ши эпир, мĕн енĕпе вăйлăрах? Пурлăхпа-ши, политикăри шăв-шавпа-ши, кăмăл-сипет шайĕпе-ши – калама хĕн. Мĕншĕн тесен эпир ытларах чухне пач та хамăр пек мар. Ыттисем вăй хуни, çич ют алли сисĕнет. Тĕнчери пăтăрмахсем пире те çавăтса кĕрсе каяççĕ те урăхлатса яраççĕ.

Эпир ӳнерпе вăйлă. Çавăнта кăна хамăра хамăр пек туятпăр. Хамăр пек ташлатпăр, юрлатпăр, тĕрлетпĕр, ӳкеретпĕр. Хамăр туйăмпа хамăр хуçа. Малашне те çаплах пултăрччĕ. Ӳнер пире çынлăх шайне упраса хăварма пулăшса пытăрччĕ.

* * *

Курасчĕ сан художник ĕçленĕ чух хăйне мĕнле тыткаланине. Эпĕ куртăм та тĕлĕнтĕм.

Аллипе çеç мар, пĕтĕм ӳчĕ-пĕвĕпе ĕçлет. Пит-куçĕ те улшăнса каять, пĕрре çуталса, тепре тĕксĕмреххĕн курăнса илет.

Сасартăк çĕкленет те Страдивари тунă купăс хĕлĕхĕ пек туртăнса илет. Кĕç-вĕç çын ӳчĕ янăраса каяссăн туйăнать. Тен, çав самантра ун ăшĕнче, чăнах та, кĕвĕ янăрать? Пĕлме çук.

Ӳнер çынни ĕçленине курсан ывăнни те иртсе каять, шăмшакран йывăрлăх тухса ӳкнĕн туйăнать, юнра çĕнĕ вăй хускалса илет, пурăнас килет.

* * *

Паянхи пурнăç тытăмĕ пачах тӳнтерле. Урапи малта сиксе пырать, лаши – хыçалта. Урăхларах каласан, укçа мурĕ мала ӳкрĕ, тавар тăвасси юлса пырать. Пур çĕрте те укçа хуçаланма пуçларĕ. Укçаран укçа тăвакансем йышланса кайрĕç. Çакă нумая пырĕ-ши? Лашине мала ямасăр халăх пурнăçĕ лайăхланĕ-ши?

Çук пуль. Тыр-пул туса илмесĕр, çурт лартмасăр, вăрман касмасăр, хурçă шăратмасăр – пурлăх тăвакана çăмăллăх памасăр пурнăç урапи тикĕс кусас çук.

Ĕççыннине пуç таяр. Çавна хисеплер. Ĕçпе хăпарса тухнă аллисемпе патшалăха атлант евĕр тытса тăраканни шăпах çавă пулать те ĕнтĕ.

Урапине тĕрĕс кӳлесчĕ.

* * *

Ăçта кайса кĕрем-ши? Хыçран хуйхă хăвалать, умра шухăш çул памасть.

Каялла çавăрăнса пăхрăм та тунсăх куçлă аннесем, тăлăх ӳсекен ачасем ушкăнпала тăраççĕ. Шăпи йывăр пулнăран савăнăçĕ пит сахал. Тăраниччен çименрен сывлăхран та чаплах мар.

Акă, пĕри кантăкран ыттисем çунашкапа ярăннине пăхса ларать. Тухĕччĕ, тумтирĕ çук. Пиччĕшĕ кĕрессе кĕтет. Ун тумтирне тăхăнса кайран вара хăй тухать.

Çын евĕрлĕ ӳсчĕр тесе аннесем пире хăйсем çиессине, хăйсем тăхăнассине парса пычĕç. Вĕсен чăн-чăн юратăвĕ шăпах çавă пулчĕ те ĕнтĕ.

Малалла пăхатăп та ачамсемпе мăнукăмсем курăнса каяççĕ. Мĕн кĕтет-ши вĕсене?

Тунсăх шухăш пуçа хĕсет.

* * *

Хăш-пĕрисем ытла кăнттам. Ялан çӳреççĕ йӳçĕхсе, сăлтавсăрах ав хирĕççе. Ниçта та çуккă килĕшӳлĕх, ăшă куçпа саламлани. Пулмасть-ши çакă чăннипех телейлисен çулне пӳлни, хăйне хăех сиен кӳни, юн таппине йывăрлатни.

Мĕн тăвас тен, шăпи çапла. Ёмĕр иртет ун тунсăхра, ыттисене айăпласа. Пăхса илмешкĕн хăй çине пачах та маннă курăнать.

Калас килет ман çав çынна тахçан çуралнă шухăша. Килĕшӳ вăл чи малтан пулмалла хамăр ăшра. Ун чух вара çумри çынсем, чăнах та, пулĕç урăхла, килĕшӳ тупмалли çулсем те хуллен-çке пырĕç уçăлса.

* * *

Тусăмçăм, ытлашши ан васка-ха. Чарăнмалли çĕрте чарăнма ан ман.

Тем умĕнчен хăвăрттăн иртсе пырсан та вил тăпри умĕнче уттуна чакар. Самантлăха та пулин чарăнса тăр та пурнăçу пирки шухăшласа ил.

Кунта выртать сан пек çынах, ачалăхран чупса тухса юрату ытамне лекнĕскер, туй туса, йăва çавăрса ачасене ӳстерсе курнăскер, тăвансемшĕн усăллă пулнăскер.

Кунта выртать сан пек çынах, çемье чысне, ял-йыш ятне, тăван халăхăмăр мухтавне çирĕп упраса пурăннăскер.

Кунта выртать чăн-чăн çынах.

* * *

Çĕр çинче такам та пур: тухтăр та, хурçă шăратакан та, çăкăр пĕçерекен те, юрă-ташăпа чуна илĕртекен те...

Анчах пур тепĕр çын – çаксене пурне те çунат параканĕ. Вăл Вĕрентекен. Пĕр сăмахпа ăна учитель тетпĕр. Ун умĕнче пуç таятпăр.

Тĕлĕнмелле çын. Ырми-канми ĕçлет, çамрăк ăрăва çĕклесшĕн çунать. Хăйне пачах та шеллемест; вăйне те, сывлăхне те, илемне те ыттисене парса пурăнать.

Тен, çавăнпах савăнăçĕ те ун пачах урăхла. Мулпа мухтанассинче мар, хăй вĕрентнĕ ачасен телейлĕ шăпинче.

Манас марччĕ вĕсене, хамăра вĕрентсе ӳстернĕ çынсене. Нумай та кирлĕ мар. Тен, чĕререн тухакан тав сăмахĕ кăна.

* * *

Пурнăçа лайăх пĕлетĕп теме пултараймастăп. Асăрхаса ĕлкĕрейменни чăрмав кӳрет. Эпĕ ун пĕр сыпăкне е самантне тишкерсе пĕтĕмлетӳ тунă вăхăтра вăл тата малалла тапса сикме ĕлкĕрнĕ те ĕнтĕ. Ăна нимĕнпе те танлаштарма çук: кайăкпа та, ухă йĕппипе те...

Кайăк вăл тем чухлĕ вĕçсессĕн те турат çине ларатех. Ухă йĕппи те çавах, ăçта та пулин пырса тăрăнать те вĕçевне чарать. Вара ăна тытса пăхма та пулать.

Пурнăç вара пачах урăхла. Ун канмалли вăхăчĕ çук. Пĕр чарăнмасăр – малалла. Эпир ун çинчен паян пĕлни ыран кивелме те пултарать. Кашни кун çĕнĕлĕх парнелет.

Пурнăçа лайăх пĕлетĕп текенсене ĕненместĕп.

* * *

Пулмаллин – пулмаллах, арканмаллин – арканмаллах. Пирĕнтен сахал килет. Тĕнче таппи те çавах. Вăл яланах хăйне май. Тĕнчене тĕпрен улăштарас тесе çунса çӳрерĕмĕр, усси пулмарĕ. Халĕ ĕнтĕ ывăнса та çитрĕмĕр. Сăлтавĕ паллă ĕнтĕ: хамăрăн хăвăртрах улшăнса пымалла иккен. Ытлашши кая юлтăмăр. Тĕнчи вăл тахçанах малалла тапса сикнĕ ĕнтĕ. Унта халь пач урăхла ĕçлеççĕ. Пурăнасса та çавах. Паллах, тулăхлăрах, савăнăçлăрах.

Тĕнче пирки шутла-шутла хамăр пурнăçа ним вырăнне хуми пулса çитрĕмĕр. Унччен хамăртан юлса пынă финсем те мала ӳкрĕç, пирĕншĕнех тĕслĕх пулса тăчĕç.

Çĕр ĕçĕнчен риснĕ, суту-илӳрен йĕрĕнсе ӳснĕ, пĕлĕвне çĕнетсе пыма ӳркеннĕ ăруран сулăмлă утăм кĕтме çук.

Пирĕн шанчăк – çĕнĕ ăрура.

* * *

Этемлĕх яланах пĕр майлăн курăнать. Пиçнĕ-пиçмен çырла пек. Йӳçĕпе пылак хушшинче. Ăсран та çавах. Ма тесен хыçалтан ачалăх кăшкăрашса пырать. Ваттисен ăсĕ ун пуçне вырнаçиччен вăхăчĕ чылая каять. Каллех хирĕçӳ, каллех пăтрашу, такăна-такăна ӳксе суранланни.

Çапла вара пĕрисем икĕ урапа хăюллăн утма пуçланă вă-

хăтрах хыçалта тăватă уран тапалашакансем курăнса каяççĕ. Шăпах çакă этемлĕхе ачалăхра тытса тăрать те ĕнтĕ.

Лайăх-и çакă, начар-и – тавлашма пултараймастăп. Пирĕнтен тухнă йăла мар.

Эппин, этемлĕх ачалăхран нихăçан та тухса пĕтес çук. Тухса та ан пĕттĕр. Пурнăç çапла хистет.

* * *

Раççей çыннин – вырăс çыннин чăрсăрлăхĕ пурах ĕнтĕ.

Хăй килĕ те уншăн тăвăр. Урăх çĕре çитмелле те хăйне кирлĕ йĕрке тумалла. Ыттисене вăйпалах хăй пек шутлама, ĕçме-çиме, алхасма вĕрентмелле. Лайăххи те çук мар, усалли те сахал мар.

Ют çĕрте хуçаланма пикенни, унти халăх чĕлхине, культурине ним вырăнне хуманни халĕ хăйне пырса тиврĕ. Ăна хисеплеми пулчĕç. Юрату пирки вара калаçмалли те çук.

Таçта çити тĕнче касса çӳрерĕ, хăй çуралнă çĕрĕ, тахçан «Руç» текенни, юхăнса пычĕ, çум-курăк ăшне путрĕ. Чӳречи хупăннă вырăс ялĕсем халĕ çĕрĕ-çĕрĕпе.

Вырăс çыннин чунĕнче лăпкăлăх хуçаланма пуçламасăр Раççей чечекленессе шанма çук.

* * *

Çын теме те пултарать. Вăл туман ĕç çук. Паллах, пĕр чăрмава çĕнсе илсен – хăв мĕнле ĕç валли çуралнине ăнланса илсен.

Вара веçех урăхла. Ĕçлеме те йывăр мар, ывăнни те сисĕнмест. Савăнмалли те тупăнсах тăрать.

Анчах... Пурин те ун пек мар çав. Акă, пĕри сцена çинче хĕн курать – юрлаймасть те, выляймасть те, ăсталăхĕ вăй илеймест. Тен, шкулта ĕçленĕ пулсан, паллă учителе тухатчĕ.

Тепри, ав, тухтăр шутĕнче çӳрет. Дипломĕ те пур. Анчах ун патне лекессишĕн çунса çӳрекенсем çукпа пĕрех. Черет тăмаççĕ. Паллă ĕнтĕ, пултарулăхĕ начартан.

Çапла вара чылай çын хăйне уçса параймасăрах пурăнса ирттерет. Турри панă талантне уçаймасть, пĕрлех илсе каять. Çакă вара хăйшĕн те, ыттисемшĕн те калама çук пысăк çухату.

* * *

Тĕнче вăл пысăк. Унта тем те пулса иртет. Тӳрлетсе пĕтерме çук ăна. Пĕр çĕрте йĕрке тунă вăхăтра тепĕр кĕтесре мĕн те пулин сиксе тухатех: е кивелет, е ишĕлсе анать. Çĕмĕрекенсем те тупăнсах тăраççĕ.

Çыннисем те икĕ тĕрлĕ. Пĕрисен яланах алли кĕçĕтет, аркату туйăмĕ канăç памасть. Теприсем ĕмĕр тăршшĕпех юсавçă шутĕнче. Çанă тавăрса ĕçлеççĕ. Пурнăç тĕллевне çавăнта кураççĕ.

Пĕрисем хăй аллипе пурлăх тăваççĕ, пухаççĕ, теприсем – пайлаççĕ. Ĕçлекене сахалрах та лекме пултарать.

Пурлăх пайлакансен те куляну çук мар. Кунта тытăçу. Пĕрне – нумайрах, теприне – сахалрах.

Пур çĕрте те хирĕçӳлĕх. Çын пурнăçĕ иртсе пырать хурапа шурă хушшинче. Пач йывăрлăхсăр пурăнакан вара çук та пуль.

* * *

Çĕр çинче темле çын та пур. Пĕри, ав, пĕчĕклех хăй аллипе мĕн те пулин тума юратать. Тепри – пĕлӳ пухма, вĕренме. Пурте кирлĕ. Пĕлӳ пухма, тен, алăпа ĕçлениничен те йывăртарах. Ахальтен мар чылайăшĕ пуçпа ĕçлессинчен пăрăнаççĕ.

Тепĕр йышшисем тата шак та ыттисем пулăшасса, мĕн те пулин туса парасса кăна кĕтсе лараççĕ. Ĕçри пуçарулăхĕ, хастарлăхĕ сахал. Кахалтараххисем тейĕпĕр вĕсене.

Пакăлтатма ăстисем те тупăнсах тăраççĕ. Сăмахпа тем тума та хатĕр. Ĕçĕ вара курăнсах каймасть.

Теприсем тата пуçлăх пулассишĕн çеç çунса çӳреççĕ. Тĕллевĕ паллă ĕнтĕ: пурлăх кукăльне пайлакансен шутне кĕрес килет.

Çын вăл тĕрлĕрен пулать. Пĕр пекки пачах та çук.

* * *

Тепĕр чиновник çине пăхсан тӳрех чуман лаша аса килет. Чăпăрккапа хăмсарса пымасан лавĕ малалла каясшăнах мар.

Йăли çапла-ши? Пуçласса пурте харсăр пуçлаççĕ, çĕнĕ шăпăр пек çĕнĕлле шăлаççĕ. Анчах çакă нумая пымасть. Лăпкăн ĕçлесех лайăх пурăнма май пуррине сиссенех чиновник хăйне пачах урăхла тыткалама тытăнать.

Лаша çывăрса каясран пăван пур. Чиновник валли вара... Кам-ши? Прокурор-ши? Президент-ши?

Нивушлĕ чиновниксене вĕлтренпе юнаса тăракан çук? Пур пулсан мĕншĕн-ха вĕсене халăха кирлĕ пек ĕçлеттермеççĕ?

Чиновник чиновнике аякранах асăрхать. Хура халăх нуши айккине тăрса юлать.

* * *

Пĕлӳ шайне палăртса калаçăттăмччĕ, анчах шикленетĕп. Ăнланĕç-ши? Ним шарламасăр итлесе лартăм та шухăша путрăм.

Нивушлĕ çак çынсем те вăтам шкул пĕтернĕскерсемех, хаçат-журнал вулаканскерсемех, кĕнекепе туслăскерсемех?..

Нивушлĕ çак çынсем те пуçпа шутлаканскерсемех? Çаплах пулсан мĕншĕн-ха шухăшлав шайĕ пыртан çӳлерех хăпарай-масть. Çиессипе ĕçесси çеç хуçаланать. Чун çимĕçĕ пирки пĕр сăмах та çук.

Мĕнле-ха капла, çиессишĕн çеç пурăнатпăр-ши? Кампа калаçса чуна пусарам-ши?

* * *

Парнелем-ха сире сутмалли юмах.

Çĕрне те, лашине те, урапине те, суха пуçне те, сӳрине те, ĕнине те унне туртса илнĕ. Кĕлечĕ те пуш-пушах. Ĕçе те çын хушнипе çеç çӳрет. Паян сухалама, ыран çул тума, тепĕр кун вăрман касма... Пĕр лав вутă илсе килес тесен та лаша пăхакана, урапа паракана пуç çапмалла. Пурнăç тилхепине ун аллинчен туртса илнĕ. Кил хуçи пулмалăх хăвачĕ те çук. Арăмне те тумлантараймасть, ачисене те çын евĕрлĕ пăхай-масть, мĕн кирлине илсе параймасть. Тем чухлĕ тăрăшсан та, кăкăрне çапсан та чăн хуçа пулаймасть. Хăй телейне хăй ку-палаймасть, веçех çын аллинче.

Çак çын кам пулать-ши? Кам тупсăмне тупать, çавă коммунистсене мухтама пăрахать.

* * *

Йăлкăшса çунакан кăвайт çине пăхнăçемĕн пăхас килет. Унта темле асамлă илĕртӳ пур. Кашни çулăмĕ, кашни саманчĕ çĕнĕлле çуталса илет те тавралăха урăхла сăн кӳрет. Çак таçтан авалтан килекен туртăм нихăçан та чакас çук.

Акă пĕр çулăмĕ ыттисенчен вăйлăрах йăлкăшса илчĕ те сывлăшра ирĕлсе çухалчĕ. Ĕмĕрĕ ун питĕ кĕске пулчĕ. Апла пулин те çын куçĕнче çутă сăн хăварчĕ, асра юлчĕ.

Этем пурнăçĕ те çавах, йăлкăшса илет те сӳнет. Йĕрĕ вара юлатех. Пĕрин – çутăрах, теприн – тĕксĕмрех.

Аса илтĕм тӳрех Çеçпĕле. Темле асамлă вăйпа вăл туртать хăй патне. Вуланăçемĕн вулас килсе тăрать. Çеçпĕл çутнă çăлтăр çути нихăçан та сӳнес çук.

* * *

Эпир пĕтĕм тĕнче тавне тивĕç. Кама кăна пулăшмарăмăр пуль. Пуяннисене татах пуянлатрăмăр, чухăннисене те манмарăмăр.

Ăçта кăна пулмарăм, пур çĕрте те Раççей çыннин пултарулăхне, ăсталăхне асăрхарăм.

Большевиксем хăваласа янă çынсем ахаль ларман иккен. Ĕçленĕ вĕсем. Пĕри наукăра, тепри искусствăра. Пĕри техникăра, тепри ертсе пырас çĕрте.

Эппин, Америка пуянлăхĕнче Раççей çыннин тӳпи те çук мар. Паян та çавах. Çамрăк талантсем унталлах туртăнаççĕ. Укçапа та аванах пулăшатпăр. Паллах, унтан турттарса килнĕ тавара туянса, унти çынсем валли ĕç вырăнĕ туса парса.

Эпир питĕ ырă çынсем, такама та пулăшатпăр. Хамăра хамăр çеç пулăшаймастпăр.

* * *

Тĕнче тилхепи – этем аллинче. Пурнăç йĕрки мĕнлерех пулмаллине çынсем хăйсем татса параççĕ. Ырри те, усалли те, илемли те, ирсĕрри те – пурте çын çумĕнче. Çав хуçаланать, çутçанталăка та хăйне майлă ĕçлеттерет.

Тепри, ав, калĕ урăхла, куçа курăнман вăйсене шанса. Ĕненĕ. Туррине те манмĕ. Ăна вăл хурĕ пысăка.

Калас килет кăшт урăхла. Тем чуль шансан та туррине, манса ан кайтăр çын хăйне. Вăл хăй те вăйлă, хăват çук мар. Пĕлместпĕр хамăр мĕнлине. Кашнин хăй майлă пархатарĕ. Ăсĕ çитет кил-çурт лартма, çăкăр-тăварлă пурăнма. Паллах, ĕçрен хăрамасан.

Тĕнче вăл çынсемпе илемлĕ. Ытти вара нимех те мар.

* * *

Мана нимех те кирлĕ мар. Чăваш кăна пурăнтăрччĕ. Паллах, йĕркеллĕ, çăкăрлă-тăварлă, ачаллă-пăчаллă.

Чи пысăк парне вара – чăваш сывлăхлă пулни, ăс-тăн

енчен çĕкленни, вырăсланса пырас йăларан сивĕнни, хăй килĕнче хăй хуçаланни.

Мана нимех те кирлĕ мар. Чăваш кăна пурăнтăрччĕ, паллах, хăй чăваш пулнишĕн мухтанса та савăнса.

Çак туйăма вăйлатма пуçламалла ачаран, анне панă чĕлхерен. Ачасене тăван культурăна явăçтаракан çынран сумли маншăн паян урăх никам та çук.

Эй, чăваш çыравçисем! Мĕншĕн пĕрисем килте кăшăртатса ларатăр, теприсем митингсем тăрăх хĕрлĕ ялавпа сулкалашса çӳресе вăхăта сая яратăр. Шкула васкăр, шкула!

* * *

Çимелли, ĕçмелли кунта та çителĕклĕ-ха. Чун çимĕçĕ сахалли канăç памасть-ха мана. Мĕн чуль нумайрах çиетĕн, çавăн чуль сахалрах пек туйăнать.

Пултăм Ереванра, кĕрсе тухрăм Матенадарана, тытса куртăм чи авалхи кĕнекесене. Луврта тĕл пултăм чăваш тухйине. Пулма май килчĕ Олимп вăййинче. Савăнтăм кашниншĕн, тĕнче умне тухма пултарнишĕн, хăй çĕршывĕн чысне хӳтĕленишĕн.

Чим-ха, мĕншĕн пурте ман пек мар. Эпĕ алă çупнă чух шыв сыпнă пек лараççĕ. Камсем-ха çаксем? Америка çыннисем иккен.

Чăваш хĕрĕ чупса тухрĕ марафон. Алă çупмарĕç. Медаль илчĕ Пăлхар каччи. Шарламарĕç. Çакă пулмĕ-ши вара чункăмăлран чухăнни? Укçипе пуян пуль те-ха...

Эпир пуян урăххипе, ытти çынсен хуйхи-суйхине, савăнăçне ăнланма пултарнипе, теприне хĕрхенме пĕлнипе, тăванлăхпа, ентешлĕхпе. Истори те хамăрăн, культура та тахçанхиех.

Апла эпир çав териех чухăн мар-ха. Пĕтмен-ха эпир. Пурăнатпăр. Чун хавалĕ те иксĕлмен, хамăрпах.

* * *

Мунча шутласа тупнă чăваша халалласа палăк лартнă пулăттăм. Мĕн тери паха япала парнеленĕ вăл пире. Ӳт-пĕвĕме кăна мар, чунăма та тасатать. Çамрăклатсах ярать, чир-чĕртен сыватать.

Çав хушăрах куратăп, пиншер вырăс çынни мунча мĕнне пĕлмест. Кăмакара хĕртĕнсе çăвăнкаласа илет те тасалтăм тет. Хурăн милĕке хĕртнĕ чул çинче пĕçернĕ чух сарă-

лакан тутлă шăршăпа киленеймест. Мĕн тери пысăк çухату!

Виçĕ мунчаллă чăваша та куртăм. Хура мунча, шурă мунча тата пĕве çывăхĕнчи çулла кĕмелли мунча. Кун пекки вара çĕр çинче урăх çук та пуль. Чăвашăн çеç пулма пултарать. Мĕншĕн тесен ăна çак ĕçре мунча турри пулăшса пырать.

Чăваш мунчасăр пурăнаймасть.

* * *

Тутар сакки çине саваламасăр ларма хушман. Ӳте шăрпăк кĕрет.

Мĕн тăвас тен, саваламасăрах лартăмăр пулас. Халĕ вара унтан-кунтан чикекен вырăнсем сарăлсах пыраççĕ. Ниепле те чарма çук. Метастаза текенни пуçланчĕ курăнать.

Веçех хамăра пула. Хуть те мĕнле ĕçе тытăнсан та пайланса каятпăр. Пĕр тĕллевпе, пĕр мелпе ĕçлеме пĕлместпĕр. Суйлавсенче те çавах. Шăпах çакăнпа усă курса юлаççĕ те ĕнтĕ пуçлăх пуканне юратакан çич ютсем. Пĕр йышăнсан кайрĕ вара, пĕри лексен, тепри те чыхăнать.

Çапла вара пĕр пуканах çĕршер, пиншер чăваш çулне пӳлсе лартать. Чăваш такăнма пуçлать. Ахаль те пĕшкĕнерех утаканскер чĕркуçленсех ларать. Вăл ура çине тăриччен ыттисем вăшт та вăшт! кăна иртсе каяççĕ, мала ӳкеççĕ.

* * *

Наци чĕлхи пирки çеç калаçнине ырламастăп. Ирĕклĕ пулма çакă вăл, паллах, сахалрах.

Çĕр çинчи çĕршер халăх хăй чĕлхипе çеç калаçать. Анчах ирĕклĕхĕ, телейĕ кашниййĕнех пур-ши? Çук пуль çав. Чылайăшне пачах та пĕлместпĕр. Мĕншĕн тесен влаçĕ çук, çĕршывĕ çук.

Пирĕн шăпамăр та çавах. Тĕп хуламăра Шупашкара та çĕнсе илейместпĕр. Хамăр алăра мар. Ун пуянлăхĕпе усă куракансем те эпир мар.

Тăван чĕлхепе калаçнипех çырлахас марччĕ. Пире паян пурлăх тытăмĕнчи ирĕклĕх кирлĕ. Çав шанчăклăрах. Шăпах çак тĕллеврен хăраççĕ те ĕнтĕ пирĕн «туссем». Суйлавра та, пуçлăх уйăрса лартнă чухне те ура хурса пыраççĕ.

Çук, вĕсене чĕлхе ирĕклĕхĕ мар, пурлăхри ирĕклĕх ытларах хăратать. Çавăнпа влаçшăн çапăçаççĕ те ĕнтĕ улталаннă чăвашсем çине тайăнса.

* * *

Вата çын вăл лăпкăрах çын. Уттинчен те паллă, каласăвĕнче те çавах. Сăмахĕ вырăнлăрах, шухăшĕ тарăнрах, пурнăçа çывăхрах.

Çамрăк чух шутлаттăм урăхла. Каланă ырă шухăша пурте хапăл туса йышăнаççĕ пуль тесе. Йăнăшнă иккен.

Мĕн чухлĕ тăрăшмарăм пуль пуçлăхсен пуçне халăха усăллă шухăшсемпе пуянлатас тесе. Илтрĕç те пуль, вуларĕç те пуль, анчах хăлхана чикнине питех туймастăп.

Влаç тытăмĕнчи çын хăвăрт улшăнассине кĕтни кăлăхах. Вăл унччен мĕнле пулнă, çав манерлех юлать. Шухăшласса та çавах, ĕçлесси те кивĕллех.

Чăвашлăхшăн хыпманскере унталла пăрма хĕн. Хăйне чăваш культури кирлĕ мар пулсан, ун нушине чĕре патне илес çук.

Темшĕн-çке-ха суйлав вăхăтĕнче тимлĕхе çухататпăр. Кайран вара çав пуçлăхсенченех чăвашлăха пĕтме парас марччĕ-ха тесе укçа-тенкĕ ыйткаласа çӳретпĕр. Пирĕн пек тăмсайсем урăх пур-ши?

* * *

Тăван халăхшăн ĕçлекенсем те ывăнма пуçларĕç курăнать. Уйрăмах – политика лавне кӳлĕннисем. Депутат пулса халăха хӳтĕлессине хăй çине илес текенсем те сахаллансах пыраççĕ.

Чылайăшĕ укçа хыççăн кайрĕç. Чăваш шăпине чун ыратăвĕпе виçми пулчĕç.

Юрать-ха, чăтăмлисем, хăюллисем пур. Кусем парăнмаççĕ, суйласа илнĕ çулран пăрăнмаççĕ. Вĕсене чĕркуççи çине лартма пултаракан вăй çук. Ылтăн та айван, доллар та хавшак. Ĕçрен хĕссе кăларса ярассипе хăратни те ним те мар кăмăллисемшĕн.

Кун пеккисем пулмасан вара кам чăваш хутне кĕрĕ-ха? Чăваш ĕнси çине улăхса ларнисене кам турта-турта антарĕ?

Тавах сире, пире ырă тĕслĕх кăтартакансене, халăх умĕнчи тивĕçе мĕнле пурнăçламаллине вĕрентекенсене.

* * *

Парти, парти теессĕ, вăл мĕн иккенне пĕлмессĕ.

Хуть те мĕнле парти те вăрттăн тĕллев лартнă çынсен ушкăнĕ. Халăх хăлхине йăпатакан сăмахсемпе витĕнсе влаçа алла илесси, хуçаланса пурăнасси.

Парти вăл – айван çынсен ушкăнĕ кăна. Вăйлă çынна, пултаруллă, талантлă çынна нимле парти те кирлĕ мар.

Тĕрĕссипе каласан, çĕр çинче пурĕ те икĕ парти кăна: хĕрарăмсем тата арçынсем. Çавсем хушшинче килĕшӳлĕх пулсан, пур çĕрте те йĕрке вара. Ытти партисем вĕсем пурте тĕнчене пăтраштарас тĕллевпе тунисем кăна.

Чăвашсем тĕрлĕ партисене пайланса кайнине ырламастăп. Ахаль те сахалăн вĕт-ха эпир. Чăваш пулар та чăвашлăх ячĕпе пĕр ушкăна чăмăртанар. «Чăваш» тени хăех пĕр партире тăнине пĕлтертĕр. Вара, тен, хамăр çĕршыва та çĕнсе илĕпĕр.

* * *

Тăван килтех ытти халăх çыннисен аллине ларассишĕн çунса çӳрер мар-ха. Ытларах хамăр пирки шутлар, чăвашсене пулăшар.

Тем тесен те чăваш тĕнчине тытса пырас ĕçре чăвашсемех шанчăклă.

Чăваш çĕрĕ чăваша юратать, тыррине те ытларах парать. Хуçа пулма килнисене хапăлах мар.

Чăваш вăрманĕ чăваша юратать, кăмпи-çырлине те ытларах парать.

Çакна чăваш ăнланать, тавралăха упрама тăрăшать. Çавăнпа чăваш шанчăклăрах.

Чăваш министр – вăл ман министр. Ун халăх умĕнчи яваплăхĕ пур. Енчĕкне ылтăн-кĕмĕл тултарса ют çĕре тухса тарас хăрушлăх аякра.

Чăвашшăн чăвашах шанчăклă.

# 1997 çул

* * *

Куçне курма тунă-ха. Сăмсине – сывлама. Те мăкăрălса тăнăран сăмса тепĕр чух чăрмав та кӳрет. Калăпăр, кĕпе е çăтăрах свитер тăхăннă е хывнă чух...

Тутине тата мĕн тума тунă-ши? Паллах, чуптума, пĕрпĕрне юратнине палăртма.

Ак тамаша. Чуптунă чух сăмса чăрмантарнине пачах та астумастăп. Ăçта кайса кĕрет-ши вăл юратуллă самантра? Пĕлместĕп. Астумастăп.

* * *

Паянтан пач урăхла пурăнма пуçлатăп. Çӳлти хутран анатăп та хура халăх хушшинче çухалатăп. Никам та ан паллатăр. Çӳрем-ха çулне çухатнă комета пек çурт купалакансене, асфальт саракансене, суха тăвакансене сĕртĕне-сĕртĕне илсе. Раççей пирки, Чăваш Ен пирки шутланисем манăçа юлччăр. Текех ватмастăп пуçăма, ыраттармастăп чĕреме.

Паянтан эпĕ кахал çын пурнăçĕпе пурăнма пуçлатăп. Нимĕн те тумастăп. Ĕçетĕп те çиетĕп, тăраничченчен çывăратăп. Атăл хĕрринче кăштах уткаласа çӳретĕп те каллех...

Паянтан эпĕ пач урăхла çын. Çакна шута илĕр те текех ан чăрмантарăр. Манăр мана. Хăçан та пулсан хамах аса илтерĕп. Уйăрălса каяс умĕн кăшт йăлкăшса илĕп те ĕмĕрлĕхех сӳнĕп.

* * *

Каçар мана, Кашкăр Хуначи, хăвăн хăватсăр шăллуна. Сулăмлă пулăшу параймарăм. Курни, калаçни сахал пулман, анчах пĕри тухмасть асран.

Хуса ярсассăн Мускава хăв укçупа лартнă хваттере пырса кĕтĕмĕр пĕрле. Манран малтан кунта Шупашкар çынни пулман. Сĕтел-пуканран малтанах эсĕ илнĕччĕ ун чух кĕнеке хумалли çӳлĕк те шкап. Ним тума аптранипе лартса патăм çав шкапсен алăк хăлăпĕсене. «Халĕ ĕнтĕ çакăнта эс хăвартăн ĕмĕрлĕхе хăв аллусен ăшшине», – тесе тав тунине нихăçан та манас çук.

Пĕчĕк ĕçех çапла пысăк хак панине унччен курманччĕ.

Халĕ ĕнтĕ хам та çапларах. Мĕншĕн тесен тем пек пысăк ĕç те пĕчĕккинчен пуçланать. Пысăк ĕç вăл пĕчĕк ĕç ачи кăна.

Каçар мана, йывăр чух пысăк пулăшу параймарăм. Хам та айван пулнă. Халĕ те пулин ман ырлăхăм сан пуçу çине çусах тăтăр.

* * *

Астăватăп. Вăрçă мĕнле вĕçленнине астăватăп.

Çĕнтерӳçĕ салтаксем яла паттăрăн килсе кĕчĕç. Анчах кĕске вăхăтрах вĕсен паттăрлăхĕ чакса ларчĕ. Пур çĕрте те юхăннă хуçалăх, нишлĕх, выçлăх... Колхозсем те ячĕшĕн кăна.

Чунра хирĕçӳлĕх. Мĕнле-ха капла? Халь те куç умĕнче тăракан нимĕç ялĕнчи йĕркесем тата чăваш хушшинчи пурнăç шайĕ. Вĕсен хушши çĕрпе пĕлĕт пек тесен те тĕрĕсех пуль. Унччен пире калатчĕç: эпир чи пуяннисем, ăслисем, телейлисем...

Çĕнтерӳçĕ салтаксем ниçта кайса кĕрейменнипе черккене ытларах чуптума пуçларĕç, колхоз ĕçкине те хапăл тусах йышăнчĕç.

Чăваш ялĕ вăрçăччен самай урăрах пулнă.

* * *

Мĕнле-ха капла: шăпа ман килчĕ урăхла. Ытти халăх çыннисенни пек мар. Тĕнче мана палласшăнах пулмарĕ.

Хам вара çине тăрсах тăрăшрăм. Германи çыннисемпе нимĕç культури, Греци çыннипе грексен авалхи мифĕсем, эрменсемпе вĕсен ĕлĕкхи çырулăхĕ пирки шутларăм, Ирак çыннипе унта тăвата пин çул каялла пурăннă шумерсем çинчен пуплеме хăюлăх çитертĕм. Калаçмалли ман çук мар итальянсемпе, акăлчансемпе, французсемпе, китаецсемпе. Вырăссем пирки вара шарлама та кирлĕ мар. Раççей историйĕпе культури çинчен каласа парса миçе пин çын куçне уçман! Вырăссем хăйсем пĕлменнине те сахал мар ăнлантарнă.

Хама чăвашсем çинчен йĕркеллĕ каласа паракан çынна урăх халăхсем хушшинче тĕл пулмарăм. Апла-тăк мана вĕсем пачах та пĕлмеççĕ. Эпĕ сутмалли юмах вырăнĕнче çеç. Тулашĕнчен пăхсан, тен, ытти çынсем пекех. Анчах ман сисĕмтуйăмпа ăс-тăн тĕнчи те пур вĕт-ха. Эпĕ – çын. Чăваш. Унăн культурин пĕр пĕчĕк тĕпренчĕкĕ, эппин!

Шел, эп ыттисене палларăм, вĕсем мана асăрхамарĕç. Тен,

çавна пулах тăлăх çын туйăмĕнчен паян та тасалса пĕтейместĕп. Ачамăрсен шăпи мĕнлерех пулĕ-ши?

* * *

Хĕвел анаçнелле пăхрăм та пĕр пулăма асăрхарăм. Унтан сăрхăнса килекен поэзи пачах та пирĕнни пек мар иккен. Вăл темшĕн типшĕрекен курăка аса илтерет. Сĕткенĕ ăçта кайса кĕнĕ-ши? Тен, çавна пулах чăваш чунне хытах хускатаймасть. Паллах, çакă сăлтавсăр мар.

Унта самай сисĕнет çут çанталăка шанманни, çынна хăйне айванлатса кăтартни. «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен», – темелĕх унта паян хăюлăх çук. Çапла калама пултарнă чăваш кăна! Тен, çавна пулах çынлăха манман-ха, чыса çухатман-ха.

* * *

Пăшăрханмалли, кулянмалли тупăнсах тăрать. Пĕри, ав, кулянать кушакки япăх çывăрнишĕн, тепри – хваттер тăвăрришĕн, ачисене лайăх тумлантараймannишĕн, апат-çимĕçрен хĕсĕкреххишĕн...

Мана халь пăшăрхантарать ыттисем çырнисене вуламашкăн вăхăт сахалли. Кун-çул иртсе пырать парта хушшинче ларакансен умĕнче тăрсах. Чи паха вăхăтсене, вăйпитти çулсене парса пытăм çавсене. Çырасса та çывăрас вăхăтран чĕпĕткелесе илнĕ самантсенче çеç çыркаларăм. Вуласса та çаплах. Тăраниччен вулаймарăм.

Пĕлетĕп-ха, çыракансем йышлă. Пурне те вулас пулсан... Чунăм халь ытларах чипер ăс-тăнлă, сывлăхлă çын çырнисемпе кăсăкланать. Чирлисен хайлавĕсем илĕртмеççĕ. Чирлĕ çыравçăн чирлĕ туйăмĕсене хам çине илес килмест. Ун пек поэтсен сăввисене çине тăрсах чăвашсене сĕнекенсене сивĕлетĕп. Халăха паян сывлăхлă поэзи кирлĕ.

* * *

Поэзи анинче кашниййĕнех хăйĕн каçалăкĕ, хăйĕн кĕлти, çĕмелĕ.

Пĕри, ав, пĕрмаях хăй ăш-чиккинче чакаланать. Те сывлăхĕ хавшакран, те пурнăçĕ ăнманран вулакансене йӳçĕ çимĕççĕр пуçне нимĕн те параймасть.

Тепри тата шак та юрату çинчен çеç çырать. Ыталаса чуп

тунисĕр пуçне ниме те мухтамасть. Утиял айĕнчи поэзипех поэт шутĕнче çӳрет.

Çав хушăрах куратпăр урăхла çыракансене те. Кусене ытларах халăх шăпи кăсăклантарать. Вĕсен хайлавĕсенче сисĕнет хальхи самана таппине лайăхрах туйни, халăх нушине чĕре патне илсе çырни. Çакă, паллах, çăмăл мар. Пурнăçри пулăмсене пур енлĕ тишкермелле, пĕлессе те нумай пĕлмелле.

Поэзи ани сарлака. Унта такам та, темле çыракан та пур.

* * *

Этем паянхи пек нумай калаçман. Мĕн чуль нумай калаçатпăр, çавăн чухлĕ хăвăртрах çухалса каятпăр. Паян калаçмастăп. Никампа та. Паян ман калаçмалли кун мар.

Мĕн тери ырă вăхăт. Хампа хам калаçма та май пур. Мĕн палăртса хунине тума та çăмăлрах. Ĕçĕ те пырать ӳсĕмлĕрех.

Шăпах çакăн пек кунсенче чăмăртанать те ĕнтĕ çĕнĕ шухăш тĕшши. Атьăр-ха, эрнере пĕр кун калаçмасăр пурăнса пăхар. Тен, çакă пире кăштах ăсланма пулăшĕ.

* * *

Пуçлăх пулассишĕн çеç çунса çурекен ыттисене асăрхамасть, хăй çинчен çеç шутласа пурăнать. Тав туйăмĕ те мăкалать. Хăйне вĕрентсе çын шайне кĕртнĕ ăсчаха та асăрхами пулать, ун чĕрине ыраттаракан ирсĕр ĕçсем тунине те сисмест. Совеçĕ ун çук.

Ун пеккисем чее. Малтан куçран пăхса йăпăлтатаççĕ, кайран вара, ăслă çын вăйĕпе çĕкленсен, вăрттăн çыртаççĕ, чăвашлăха сутма та именмеççĕ.

Тӳрех калатăп: карьера тума Кашкăр Хуначисĕр те пулать. Чăн-чăн наука лавне кӳлĕнме вара унсăр йывăртарах.

* * *

Эпĕ ватă артист. Нумай çӳрерĕм концертпа. Çитмен ял та юлмарĕ пуль.

Вулаттăм кĕске калавсем пурнăçри пăтăрмахсене питлесе, шӳтлесе, кулса. Алă çупатчĕç куракансем култарнишĕн тав туса.

Анчах пурччĕ пĕр йышши çынсем, парти пленумне пуçтарăннисем. Йывăрччĕ вĕсен умĕнче тăма. Çитменлĕхсене

сӑнарласа уçса парсан та шӑп лараççӗ. Кулма та хӑраççӗ, алӑ çупни те саралса çитнӗ çулçӑ татӑлса ӳкни пек çеç.

Пӗр çимӗçпе çеç пурӑнакан кӗçех чирлеме пуçлать тенӗ пек, пӗр идеологипе çеç пурӑнакан çын та çителӗклӗ таран аталану илеймест иккен. Туйӑмран та, шухӑшран та чухӑн. Тӗрӗслӗхпе чӑнлӑх та уншӑн парти пуçлӑхӗсем каланӑ пек çеç. Вӑл пӗтӗмпех çыхӑнса ларнӑ. Ун ниçта та ирӗклӗх çук. Вӑл парти чури.

* * *

Демократи вӑл малтанлӑха утма вӗренекен ача пекех: тӑрать те алӑкран кӗрейместӗр нушаланать. Ун чухне ун çулне пӗр çынах пӳлсе лартма пултарать. Çакна хам куçпа хам куртӑм.

Мӗн кӑна тумарӗ пуль çак хӑямат, обком хуçаланнӑ чухнех пуçлӑх пуканне йышӑннӑскер.

Малтан пуçтарчӗ хӑй тавра айванккасене, элекçӗсене, çылӑхлисене, çӑмӑллипе тула тухнӑ чухне те хӗрлӗ тӗс сирпӗтекенсене, сыпкалама юратакансене. Ясарлӑ пурнӑçа килӗштерекенсем те çул тупрӗç ун патне.

Пуçларӗç вара хӗсме çӗнӗлле шухӑшлакансене, демократи мелӗсене сарассишӗн çунакансене.

Кунта халь çук пуçлӑха ирӗклӗ майпа, пӗтӗм ушкӑнпа суйласси. Пурте пӗрле пухӑнса калаçманни те вунӑ çул.

Пулса тухать, ара, çапла. Президента суйлама та, суйланма та ман право пур. Хамӑра ертсе пыракан пуçлӑха суйлама е суйланма – çук. Апла пулсан кунта демократие кӗртмен.

Иртнӗ самана çынни пуçлӑх пуканне хальхи пурнӑç çыннине ирӗкпе парасшӑн мар.

* * *

Ӑс-тӑнран хавшакраххисемпе, калтуринсемпе пакӑлтатса ларса вӑхӑта ытлашши ан иртттерӗр-ха. Ӑслӑраххисем патнелле туртӑнӑр.

Айвансем хушшинче айванланса пыратӑн, ӑслисем хушшинче – ӑсланса. Енчен те тусу хӑвӑнтан ӑслӑраххи тупӑнсан, çакна пысӑк парне вырӑнне хурсах хакла. Туслӑха упра.

Тепӗр çӗрте, ав, ялӗпе шырасан та ӑс ыйтмалӑх çын çук. Пурте пӗр майлӑ, пурте айван. Пурнӑç шайӗ те çавах. Пуласлӑх та тӗксӗм.

* * *

Шухăшăм, ăмăрт кайăкăм, çĕкле мана çӳлерех. Пăхса илем хамăн пурăнăç çулĕ çине.

Шухăшăм, урхамахăм, кĕрсе тăрсам икĕ турта хушшине. Кӳлем сана сӳсмен пăявне шăла çыртса туртса, парăнасшăнах мар хурама пĕкке тата хытăрах авса.

Шухăшăм, хам çуратнă ачам, пулăшсам пурăнăç урапине малалла тикĕс кустарма.

* * *

Пирĕн ăсчахсене тепĕр чух ытлашши нумай вулани те чăрмав кӳрет. Чăваш шăпи çинчен калаçнă чух тӳрех ют çĕршыв çыннисем каланисене тĕпе хурса тавлашма тытăнаççĕ.

Акăлчансем, нимĕççем, еврейсем каланисене айван шухăшсем тесшĕн мар эпĕ. Ăслă çынсемех вĕсем. Анчах мĕн пулса иртнине кашни хăй куçĕпе курать, хăй ăсĕпе хаклать. Темиçе ĕмĕр хушши ытти халăхсене пăхăнтарса, ĕçлеттерсе пурăннă акăлчансен шухăшлавĕ, паллах, пирĕнни пек пулас çук. Уйрăмлăх пур ытти халăхсен те.

Чăваш тĕнче çине те урăхларах пăхать. Тен, çавна пулах ыттисем асăрхаманнине те курать, хăйне кирлине те тупать.

Тĕнче çине чăваш куçĕпе пăхар.

* * *

«Улма» сăмах мĕне пĕлтерни паллă ĕнтĕ, тавлашма та кирлĕ мар. Кунталла çитнĕ çимĕçе те чăваш каланă «çĕрулми» тесе. Улми, чăнах та, çĕрĕнех ĕнтĕ. Çĕртенех тесен аванрах та. Ун пек тĕрĕс ыттисем калаяс та çук.

Анчах та пур тепĕр сăмах. Ун тупсăмне ăнкарма йывăртарах. Çакă пулать вăл «пан улми». Улми паллă терĕмĕр, панĕ мĕне пĕлтерет-ши?

Аваллăха кĕрсе кайсан тупма пулать çак сăмаха та. Çутçанталăк тĕнĕпе пурăнакан грексен вăрман турри шăпах та пулнă Пан. Эппин, Пан панă улмапа чăваш паян та савăнать. «Пан» тени вара «этем» тени пекех пулать чи ĕлĕкхи сăмах. Пирĕн чĕлхене вырнаçнă тахçанах, пин-пин çул каяллах.

Калатăп сире тепĕр хут: чăваш чĕлхинче – пĕтĕм этемлĕхĕн ачалăхĕ.

* * *

Наци туйăмне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухса вăйлатса пыракан çемьесем пирĕн паян та питĕ сахал. Пĕр çурта хыççăн тепри йăлкăшма пуçласси йăлана хĕнпе кĕрсе пырать.

Кашни вĕреннĕ чăвашрах кăштах та пулин Яковлев тĕслĕхĕ пурах. Пĕри унта курать паллă педагога, тепри – Христос тĕнне чапа хуракана, виççĕмĕшĕ вара çемьери йĕркесене – вырăс хĕрне качча илессине, ачисене вырăсла çитĕнтерессине.

Çак Яковлев мешехи паян та чылай çирĕп ларать-ха. Апла пулин те улшăну çук мар. Çамрăксем тĕслĕх параççĕ. Тургай, Смолин, Лукиянов, Михайлов, Дворников ачисемпе чăвашла шăкăл-шăкăл калаçма май пурришĕн питĕ савăнатăп.

Тавах ашшĕ-амăшне ачисене чăвашлăх парнелекенсене.

* * *

Чăваш куçĕпе пăхсан Мускав яланах иккĕллĕ курăнать. Пĕри – нуша хуçи, тăван халăхăмăра чура вырăнне хурса тăрăнса кайиччен ĕçлеттерекенни, вăл тунă пурлăха хăйне пуйма турттарса тăраканни. Тепри – пачах урăххи, ытти халăх çыннисене те асăрхаса хӳтлĕх параканни. Çакă ырлăх кăштах чăвашсене те лекрĕ.

Иван Яковлева хăй вĕрентсе ӳстернисемех, паллах, хĕрлĕ тĕспе сăрланнисем, политика хĕскĕчĕпе хĕстерме тытăнсан, ăна çăлса хăвараканĕ пулнă Мускав. Кашкăр Хуначине те çавах – йывăр кунсенче, обком алхаснă вăхăтра, ăна Мускав ăнланчĕ, алă пачĕ.

Чăннипе Мускавĕ пĕрре кăна ĕнтĕ. Унти вăйсем вара ĕлĕкренпех иккĕллĕ.

* * *

Тавтапуç сана, ырă çыннăм Кашкăр Хуначи, чăваш ятне тĕнче шайне çĕклекенсенчен пĕри. Чи хаклине, чăваш хăй ачинчен çын тума пĕлнине уçса патăн пурне те.

Çĕршывĕ те пулнă, кĕмĕлĕ те пулнă, анчах вĕсене туртса илнĕ. Асĕпе ăсталăхне илеймен, чăвашлăха пĕтерейме. Çавăнпа сыхланса юлтăмăр та ĕнтĕ. Чăвашлăхра çынлăх пур.

Хаклă тăванăм, халĕ Эсĕ пĕччен мар. Хăв çул кăтартса панисем хушшинче пурпĕрех шанчăклисем ытларах.

* * *

Кашкăр, кашкăр теессĕ, кашкăр чăвашсемшĕн хăрушă маррине пĕлмеççĕ. Тахçан ĕлĕк çухалса кайнă чăвашсене Атăл патне тухма шăпах кашкăр ами пулăшнă тет.

Эпир пурте кашкăр ачисем. Ун сăнарĕ – ырă сăнар.

Хальхи çамрăксене чăвашлăх çулĕ çине тăма хавхалантараканĕ, пулăшаканĕ, вара шăпах Кашкăр Хуначи пулчĕ. Çавна тав тăвар. Малтан ăна Иван Яковлев çулне çитиччен пурăнма çирĕп сывлăх сунар, унтан Василий Егоров ăсчах çулне çитиччен, каярах – Альтук аппа çулне çитиччен...

Пире кашкăрпа хăратма кирлĕ мар.

* * *

Чăваш хăйне паян хăвăрт типсе пыракан кӳлĕри пулă пекех туя пуçларĕ. Ниçта кайса кĕме çук. Сывлăшĕ те пӳлĕнет. Ывăнса çитсен тайăнса тăмалăх пĕр тĕреклĕ Юман та çук.

Халăх, халăх текелетпĕр те-ха, халăхĕ пит курăнсах каймасть çав. Ăçта кайса кĕнĕ-ши вара вăл?

Халăхах пулсан ун пĕрлĕхĕ те, пĕрне-пĕри кар! тăрса хӳтĕлесси те, ирĕклĕ чĕлхипе çĕршывĕ те пулмалла пек-çке. Ăçта-ха вĕсем?

Ĕçкĕпе çеç чунне пусаракансене, вĕсем йышлăн пулсан та, халăх теме çук. Ĕçекен çын вăл чунне çеç мар, ӳтне те эрехе сутать, сăн-питне çухатать, халăх вăйне хавшатать. Тен, çавна пулах чăваш ятпа çӳрекенсем чылайăн-ха, чăвашĕсем – сахал.

* * *

Кантăк умĕнче ларать касса кайнă чăрăш тункати. Юлнă аялти тăлăх туратсем. Симĕс курăнсан та тунсăхлă вĕсем.

Хăш турачĕ çĕнсе тухĕ-ши? Ытти йывăççем пек тĕнче çине çӳлтен пăхса савăнаканни тупăнĕ-ши? Е пурте вĕсем çĕр çинчи çум курăксемпе çапăççсах хуллен типсе пырĕç? Йывăç пурнăçне малалла тăсакан пулĕ-ши?

Мĕн çинчен шутлать-ши пуçне касса кайнă чăрăш?

* * *

Юлнă ĕç çине юр çăвать теççĕ. Екки килессе çеç кĕтсе ларар мар-ха. Ĕçлер. Пуçа кахалланма парар мар. Лешне,

хыҫалтан туртсах тăракан наянлăха, ĕҫпе ҫĕнтерсе пырар.

Акă пĕри калать: нумай вуласан, нумай ҫырса ларсан ухмаха тухан тет. Йăнăшать. Ĕҫлеме хăнăхнă пуҫшăн ун пек хăрушлăх ҫук. Паллах, пурнăҫа, ĕҫ йĕркине тĕрĕс тытса пырсан, сывлăха упрама пĕлсен.

Пуҫ хăвачĕ вăл иксĕлми пуянлăх. Тем пек вăйлă ĕҫлекен пуҫ та унпа пĕрре ҫирĕммĕш пайĕнчен ытла усă кураймасть. Ытти вара веҫех леш тĕнчене ăсанать.

Вĕреннипе ухмаха тухассинчен ан шикленĕр, екки килессине ҫеҫ кĕтсе ан ларăр. Хăвăра хăвăр хăвалăр. Ҫырмаллиĕҫлемелли вара... Тинĕс пек анлă, океан пек сарлака вăл.

Тĕрĕссипе каласан, чăваш тĕнчине, чăваш чунне уҫса парас ĕҫре эпир халь малтанхи кĕске утăмсене кăна тунă-ха. Вăйсем сахал, вĕреннĕ ҫынсем ҫитмеҫҫĕ.

* * *

Президента хытă вăрҫнипе мухтанса кăкăра ҫапса ҫӳрени паян пысăк хăюлăхах мар ĕнтĕ. Ҫакна халь кашниех тума пултарать. Нимле чару та ҫук. Вăрҫ та вăрҫ.

Обком хуҫаланнă вăхăтра ҫак ҫынсем ăҫта пулнă-ши? Шкулсенче тăван чĕлхемĕре хĕссе пынă чух мĕншĕн ун хутне кĕме хăранă-ши? Кăткă йăви пек йышлă Чăваш Енре виҫĕ хими завочĕ лартнă чух, унта чăваш хĕрарăмĕсене противогазпа ĕҫлеттернĕ чух мĕншĕн шăп ҫӳренĕ-ши? Нуски, супăнь, сахăр, эрех таврашне талонпа пайланă чух сассăр ăҫта пулнăши? Чăваш халăхĕн пултаруллă ывăлĕсене тăван килтен хăвалахăвала янă чух, кивĕ Шупашкара динамитпа сирпĕтнĕ чух мĕншĕн ҫăвара шыв сыпнă эсир?

Паян пурте хăюллă. Ҫак хăюлăха кам панине асра тытасчĕ. Астăвăр, митингсенче Сталин портречĕпе сулкалашса ҫӳрекенсем халĕ те самай йышлăн-ха.

* * *

Чăваш чĕри Чĕмпĕрте теҫҫĕ. Ҫапла ахальтен каламан пуль ҫав.

Малтан Чĕмпĕре Яковлев ҫĕнсе илнĕ, унтан ытти чăвашсене ҫул уҫса панă. Ялта пурăнакан пиншер чăваш ҫак хулара тĕрĕслĕхпе хӳтĕлĕх шыранă. Чылайăшĕ – тупнă. Паллах, Яковлев хута кĕнипе. Ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсем ҫак хулана сăвăюрăра мухтанă.

Тĕп хула тума пикеннинчен те тĕлĕнме кирлех мар. Кунта

та тĕрĕслĕх пурах. Чĕмпĕр вăл юрăра çеç мар, Чăваш тĕнчи варринче.

Чăваш чĕри паян ăçта-ши?

* * *

Патăрьелсем вĕсем самай урăхла çынсем. Паллах, маттуртарах, хăюллăрах. Те кӳршисем тутар пулнăран, парăнманлăх та аванах сисĕнет. Кăштах куштанлăхĕ те, вĕçкĕнлĕхĕ те пур. Чирĕсем те хăйне май. Уççăнах курăнать хăйне хăй ытларах юратни, хăй ячĕпе киленни, чапшăн çунни (Айхи, Сарби, Юхма...). Сисĕнет пĕчĕк ĕçех пысăклатса кăтартни. Кунта – кашни хăй патша тейĕн.

Чăваш вăйлă чăмăртанупа, килĕшӳлĕхпе. Патăрьелсенчен вĕренер. Анчах вĕсен йăлисене пурне те тĕслĕх вырăнне хурар мар. Ыррине – илер, сиенлине – сивлер.

Юрать-ха патăрьелсем пур, савăнмалли те, тĕлĕнмелли те, пăшăрханмалли те тупсах тăраççĕ.

* * *

Вăрçа хатĕрленекен ăна пуçарса ямалли сăлтавне тупатех.

Иртнĕ вăрçа та пуçлăхсемех пуçларĕç, нушине тӳсекенĕ вара хура халăх пулчĕ.

Вăрçи вăл нимĕçсем пирĕн çине тапăнicченех пуçланнăччĕ-ха. Анчах хамăр ертӳçĕсене пула малтан Гитлера хăйне пулăшса пытăмăр. Сăмахпа фашизма хирĕçле пултăмăр, ĕçпе – ăна майлах. Вăрттăн та суя килĕшӳсем туса хамăра хамăр улталаса пурăнтăмăр. Сталин суккăрлăхĕпе коммунистсен чĕмсĕрлĕхне пула халăх юнне шыв пекех юхтартăмăр, çын пурнăçне шеллемерĕмĕр. Чи лайăх çынсене пĕтертĕмĕр. Халăх сывлăхĕ те, ăс-тăнĕ те хавшаса юлчĕ. Халĕ те вăй илейместпĕр-ха.

Иртнĕ вăрçă ахрăмĕ паян кун та сисĕнет.

* * *

Темле майпа ялти акатуйне лекнĕ пĕр Мускав хĕрарăмĕ. Ăна пурте асăрхаççĕ, хисеплеççĕ. Кăмăлне çĕклес тесе ун умĕнче юрлаççĕ, ташлаççĕ. Лешĕ ӳсрет сăмсине каçăртса, хăйне патша майри вырăнне хурса.

Акă ăна ман пата чĕнсе пычĕç. Паллашрăмăр. Сăвăласа ăшă сăмах каларăм. Унтан сĕнтĕм пĕрле юрлама вырăсла. Юрлаймарĕ. Ыйтрăм ташласа пама – ташлаймарĕ. Черкке тытса сăмах

калама ыйтсан та хӑйне кӑтартаймарӗ. Сӑнӗпе те, ӳт-пӗвӗпе те арҫын туйӑмне хускатмалӑх пахалӑхӗ ҫук.

Анчах... Мускавран-ҫке. Пултарулӑхӗ пӗр пуслӑх ҫук, мӑнаҫлӑхӗ вара вунӑ лава та вырнаҫмасть пуль.

* * *

Ухсай Яккӑвӗ калашле, чӑваш искусстви ют чунпа ӳсме пултараймасть.

Питӗ тӗрӗс сӑмахсем. Кам кӑна чӑвашла юрласа, ташласа кӑтартмарӗ пуль. Тава тивӗҫлӗ ят илнисем те темӗн чухлех. Анчах вӗсен ӳнерӗнче чӑваш чунӗ ҫук. Ӑшши ҫук, сивӗннӗ мунча чулӗ пек ҫеҫ. Чӗлхепе чун пӗр-пӗринпе килӗшӳллӗ пулмасан ӗҫ тухмасть, илем те ҫунатне сараймасть.

Тӑван чӗлхе вӑйне ӗненмен чӑвашсемпе е ют ҫӗртен килнисемпе малалла каясси пирки ӗмӗтленни кӑлӑхах. Хамӑра хамӑр улталани ҫеҫ.

* * *

Большевиксен шкулӗ питӗ ӑнӑҫлӑ ӗҫлерӗ. Вӗренекенӗсем те пултаруллӑ пулчӗҫ. Ҫын аллинчи пурлӑха туртса илесси, ҫӑра ҫӗмӗрсе кӗресси, суд тумасӑрах халӑх тӑшманӗ тесе персе пӑрахасси веҫех ҫавсенчен пуҫланчӗ. Ҫак ирсӗр ӗҫе халӑх ячӗпе туса пычӗҫ, ӑна ҫылӑха кӗртрӗҫ.

Калама ҫук пысӑк влаҫпа усӑ курса ял ҫыннине чура вырӑнне хурса ӗҫлеттерчӗҫ. Хула умӗнче ыррӑн курӑнас тесе кӗлетри тырра вӑрлӑх юлми тасатса тӑчӗҫ, ҫӗр ӗҫченне выҫҫа хӑварчӗҫ. Лайӑххрах вӗреннисем, ӑслӑраххисем, пултаруллӑраххисем хулана тапса сикрӗҫ. Ял хавшаса юлчӗ. Унпа пӗрле ҫӗршывӑмӑр та чакса пычӗ.

Большевиксенчен вӗреннисем паян та чылайӑн-ха. Ӗмӗчӗ те вӗсен ӗлӗкхи пекех. Влаҫ тилхепине ярса тытсан кӑтартӗҫха тепре.

* * *

Пӗри ав ҫухалса кайнӑ сурӑх пекех танкӑлтатса ҫӳрет. Ӑҫта кӑна ҫитмест пуль. Анчах пур ҫӗрте те пӗччен. Малтан пӗрле пулнӑ ырӑ ҫынсем унтан пӑрӑнчӗҫ, алӑ пами пулчӗҫ. Пӗлсе ҫитрӗҫ-ши?

Халӗ ӗнтӗ хӑй ятне ӳкме парас мар тесе кампа кӑна ыталашмасть пуль. Чӑвашлӑха сивӗлекенсене те тиркемест. Унччен хӑйне пулӑшса пынӑ ҫынсене каяш шӗвекӗпе сӗрсе «тав тума» та манмасть. Сутӑнчӑк. Чӑн-чӑн сутӑнчӑк.

Çыравçă ячĕпе пурăнать пулсан та тăван чĕлхемĕре хӳтĕленĕ çĕрте çук. Митингра та, пикетра та курмарăм. Чăваш чĕлхине суд тунă чухне те сас памарĕ.

Сăмахпа яланах халăхшăн, ĕçĕсем вара – хăйшĕн çеç.

* * *

Тапса тăракан çăл шывĕн хăй çулне тупмаллах. Ун чухне вăл çутă, таса, ĕçме те тутлă. Юхма пăрахсанах ун тĕсĕ улшăнать, шурлăх шăрши çапать.

Çын та çавах. Хăй çулне тупаймасан, халăх ĕçне хутшăнаймасан сăн-питне те çухатать.

Çын хăйшĕн çеç пурăнмасть тетпĕр те-ха, анчах пурте ун пек мар çав. Акă пĕри икĕ ĕмĕр пурăнас пек халăх пурлăхне туртать те туртать, ыттисене шалу памалли укçаран та тăпăлтарать, хăй енчĕкне тултарать. Çакна çынсем кураççĕ, куç умĕнчех ылханмасан та иртсе кайсан сураççĕ, ырăпа асăнмаççĕ.

Халăх чунĕ патне çул тупаймасан çынран пăнтăхнă шыв шăрши кĕме пуçлать.

* * *

Тĕввик-тĕввик текерлĕк, мĕншĕн тунсăхлăн юрлан?

«Йăва тума вырăн çук», – илтрĕм кайăк сассине.

Пурччĕ улăх, пурччĕ шурлăх, халь курмарăм вĕсене. Тырă акса пуяс пек тăнсăр пуçлăх хушнипе сухаласа пĕтернĕ. Çăрттан ишнĕ çырмара чăх ĕçмелĕх шывĕ çук.

Çутçанталăкра унта пурте хăй вырăнĕнче. Килĕшӳлĕх тупăнать пирĕнтен ыйтмасăрах. Улăхăн улăх пулмалла, шурлăхăн – шурлăх. Вăрман вăйлăн кашлатăр, шывра пулă вылятăр. Ун чух вара кайăксем юрла пуçлĕç урăхла.

Тĕввик-тĕввик текерлĕк...

* * *

Эсир мана ытлашши ан ятлăр-ха. Тен, чăнах та, чăн-чăн çын пулса çитеймерĕм. Сывлăхăм та чаплах мар, ăс-тăн вăйĕ те хавшак. Пуçăм часах ывăнать.

Вăрçăран эрех ĕçме вĕренсе килнĕ атте мана анне варĕнче выртнă чухнех хĕнеме пуçланă. Çураласса та вăхăтсăр çуралнă. Утма та, калаçма та ытти ачасенчен каярах тытăннă. Тăраниччен апат çимесĕрех çитĕнкеленĕ. Премĕк, канфет тутине

пĕлмен. Ӳсĕр атте аннепе иксĕмĕре ăшă пӳртрен хăваласа кăларса янипе витере те çĕр каçнă.

Ăçтан вăйлă пулăн-ха: аттепеле аннеçĕм иккĕшĕ те чухăн пурнăçпа ӳснĕ, ачи-пăчи валли те тулăх пурнăç тăвайман. Ăçтан вăйлă пулăн-ха: начар вăрлăхран шăтса тухнăскер пулсан. Ăçтан вăйлă пулăн-ха: ачалăх ман кĕнекесĕр килте иртрĕ çав.

Вăйлă пулма май та çук. Ăнланăр та каçарăр. Ытлашшиех ан ятлăр. Юрать, хам ĕçлесе илнĕ çăкăрах çиетĕп-ха. Ыттисенчен ыйтса чăрмав кӳрес теместĕп.

* * *

«Пĕтĕм тĕнче – театр», – тенĕ Шекспир. Япăх каламан. Тен, кăштах мухтарах та пуль.

Эппин, унта пулмалла куçа илĕртекен илемлĕ сăнар, чуна вăй паракан ыра тĕслĕх. Юнашарах вара япăххи, çынна усал тăваканни, телей патне çывхарма чăрмав кӳрекенни. Кунта курма пулать кампа кам тытăçнине, кĕрешнине. Шел те, пурнăçра театрти пек уçăмлăх çукрах çав. Йăлтах пăтрашăнса пĕтнĕ. Уйрăмах çакă паллă хальхи вăхăтра, вĕреннĕ çынсен хутшăнăвĕсенче, сăмахпа ĕç хушшинчи çыхăнусем çирĕпех мар чухне. Ĕлĕкрех, тен, чăнах та, пурнăç уçăмлăрах курăннă.

Тĕрĕссипе каласан, паянхи пурнăç вăл хĕвĕшӳ кăна.

* * *

Чĕнтĕм сана тăван яла пĕрле кайса килме. Эсĕ пымарăн. Ĕç пирки тĕл пулса калаçмалли пур терĕн.

Ăнланатăп. Ĕçлĕ çыннăн йăли çапла, кирлĕ çĕре çитмелле, тенкĕ çумне тенкĕ хушмалла, пурлăх пухмалла. Пуйма май пуррине алăран вĕçертес килмест.

Анчах манас марччĕ ыттисене ырă тума, пухнă пурлăхпа хăв ятна çĕклеме. Мĕнпур укçа-тенке тупăка хурса каяс çук. Илсе кайсан та лере кирлĕ пулас çук.

Халăхшăн ырă ĕçсем туни вара пачах урăхла туйăм çуратать, çынлăха упрама пулăшать. Çавна çухатас марччĕ. Никам та икĕ ĕмĕр пурăнмасть. Пурнăçа ырăпах пурăнса ирттересчĕ.

* * *

Пёри пӗрмаях хӑй турӑпа калаҫни ҫинчен сӳпӗлтетсе ҫӳрет. Анчах турри унпа калаҫма кӑмӑл тунӑ-ши?

Турӑ вӑл кампа калаҫмаллине хӑй суйласа илет. Капан пысӑкӑш ҫылӑх купиллӗ ҫынна турӑ сӑмах чӗнес ҫук. Хӑйне мӑнна хуракан кӗвӗҫ чуна, ыттисене улталаса, сутса пурӑнакана турӑ алӑ парас ҫук, калаҫма кӑмӑл тӑвас ҫук.

Апла пулсан, турӑпа калаҫрӑм тенине илтсен, ҫынни мӗнлереххине пӑхар. Вара вӑл турӑпа калаҫма тивӗҫ е тивӗҫ маррине асӑрхама та йывӑрах мар.

Чӗлхе вӑл шӑмӑсӑр. Тем те калӗ. Усалпа калаҫнине турӑпа калаҫни теме те именмӗ. Сӑпайлӑха ҫухатнӑ ҫынран тем те кӗтме пулать.

* * *

Ҫук, паян Шупашкарта пӗр ирӗклӗ чӑваш та ҫук. Эпӗ те ҫавах. Шухӑшӑмпа хама ирӗклӗн туятӑп пулсан та, калаҫма пуҫласанах иккӗленӳ ҫуралать.

Тухса тӑрӑттӑм кафедра умне, лекци вулӑттӑм тӑван чӗлхемпе. Май ҫук. Чӑваш маррисем чылайӑн.

Калаҫма пуҫларӑм кантуртисемпе – ӑнланмастпӑр терӗҫ. Пӗри тата: калаҫӑр йӗркеллӗ чӗлхепе тесе татса хучӗ.

Ирӗксӗрех ҫавсен аллине ларма тивет. Ман тӑван чӗлхе ыттисемпе пӗр тан чӗлхе иккенне курса пулӗ-ши?

* * *

Арҫынна килӗшмен хӗрарӑм ҫук. Кашнин валлиех ҫӳпҫи май хупӑлчи тупӑнать. Сӑлтавӗ паллӑ ӗнтӗ. Хӗрарӑм ҫумӗнче арҫын туйӑмне чӗртме пултаракан вырӑн сахал мар, ҫӳҫрен пуҫласа ура тупанӗ таранах.

Пӗри, ав, киленет ун сӑн-питне мала хурса, тути, кулли, калаҫӑвӗ килӗшнӗшӗн савӑнса. Тепри тупать илӗртӳ кӑкӑр шайӗпе пӑхса. Виҫҫӗмӗшне канӑҫ памасть кӑвапаран аяларах вырнаҫнӑ вырӑн...

Кашни хӗрарӑм – хӑйне майлӑ магнит. Вӑйлӑрах туртакан вырӑнӗсем вӗсен пӗр пек мар. Апла пулин те ҫӳпҫипе хупӑлчи пӗр-пӗрне тупаҫҫех.

* * *

Çынна ĕç Çын тăвать, туптать, якатать, хăй сăнне парать.

Суту-илӳпе пурăнакансене çи-пуçранах, хăлха çаккинченех пĕлме пулать. Калаçăвĕ те вĕсен ыттисенни пек мар, ытларах сутмалли таварпа тупăш пирки.

Икĕ учитель тĕл пулсан вара... Сăмах кану çуртĕнче те шак шкул çинчен, çамрăк ăру пирки. Учитель тивĕçĕ кашни юн пĕрчине кĕрсе вырнаçнăн туйăнать. Эрне калаççан та, уйăх калаççан та ывăнас çук.

Хăрушсăрлăх пайĕнчисем вара пачах урăхла. Ыттисемпе питех хутшăнмаççĕ. Вĕсен ĕç мелĕ вăрттăнлăхпа чеелĕх, çакă хытă сисĕнет.

Нумай çул хушши туса пыракан ĕç çынна хăйне май çавăрать, хăй сăнне парнелет.

* * *

Хăшĕ-пĕрисем иртнĕ самана ырлăхне кашни кунах аса илеççĕ. Çакна эп куртăм ашшĕсем пысăк ертӳçĕ пулнă тантăшсен калаçăвĕнче.

Аçтан манччăр-ха вĕсем эпир çăпатапа çӳренĕ чух йăлтăртатса тăракан сăран атăпа ташланине, эпир крахмал икерчипе хырăма улталанă чух хăйсен сĕтелне сарă тулă кулачи илем кӳнине, эпир çĕрулми йăтса хулана тухса кайнă чух ашшĕ вĕсене кĕсье тулли укçапа кăларса янине, лайăх вĕренме май туса панине.

Вĕсен виçипе пăхсан иртнĕ самана чăнах та япăх пулман. Тен, çавăнпах хальхи йĕркесене хурлаççĕ, унччenхипе – мухтанаççĕ.

* * *

Ман чăваш хутне кĕрсе ăна кăштах та пулин пулăшу парас килет.

Ытла та хӳтĕлевсĕр халăх вĕт-ха. Ача пекех. Пурне те шанать, ĕненет. Ытти халăх çынни хăйпе кăштах калаçнине те парне вырăнне хурса хаклать. Сăпайлăхне, çемçе кăмăлне пула хăех йывăрлăха кĕрсе ӳкет. Темшĕн çке-ха уншăн влаç хӳтĕлевĕ питĕ сахал. Суйласа лартнисем те ун валли мар.

Пурăнать вара чăваш шăлне çыртса, ытти халăх çыннине юрама тăрăшни те хăйне хирĕçле çавăрăнса тухнине чăтса. Пурпĕрех вăл тарçă. Ĕçре те, килте те.

* * *

Темшĕн çке-ха пĕчĕк савăнăçа хаклама пĕлместпĕр. Пысăккишĕн çеç çунса çӳретпĕр. Лешĕ вара çывхарасшăнах мар, таçта тарса çухалать.

Кулленхи пурнăç вăл ытларах пĕчĕк савăнăçсенчен тăрать. Пĕчĕкки йышланмасăр пысăкки пулаймасть.

Пĕчĕк савăнăçпа киленме пĕлмен çын пысăккине кĕтсе илеймест.

* * *

Пит шăрăх кун антилопăсем шыв хĕрне пыни крокодилсемшĕн калама çук пысăк савăнăç. Тăраниччен чĕрĕ юн, какай, ара. Ан ӳркен кăна: хып та çăт.

Шывсăр антăхса çитнĕ чĕрчун вара юнашар тăракан тусне крокодил шăлĕсем çаклатса кайнине курсан та ăна çăласси пирки шутламасть. Пĕртен-пĕр тĕллев – ĕçсе тăранасси.

Чăваш та çавах. Хăйне пĕрерĕн-пĕрерĕн туртса путарнине асăрхамасть. Хуйхă хăй хапхи умне пырса тăриччен чăвашлăхшăн кар! тăрас ĕçе хутшăнасшăн мар. Пĕччен телейлĕ пулас пек тыткалать. Калама çук пысăк йăнăш тăвать.

Тусăмсем, тăванăмсем! Пирĕн паян никам туртса татайми, никам туртса илейми хурçă сăнчăр çыххи пулма тăрăшмалла. Ун чух вара нимĕнле крокодил та чăваша çăтса яраймĕ.

# 1998 çул

* * *

Телейлӗ самантра çын хăйне питӗ çӳллӗ шайра тытать. Хăйне хăй кăмăл-сипет тӗлӗшӗнчен туллинрех туять, пур еннелле те ырă та ăшă хумсем кăна ярать, кулленхи йывăрлăха манать.

Мӗн тери паха самант. Мӗншӗн çурални те, мӗншӗн пурăнни те уçăмлăрах курăнма пуçлать.

Телейлӗ çынсем нумайрах чухне ыттисене те аван, пурнăç та илемлӗреххӗн туйăнать. Кашниех çӗр çине телей курма килет. Апла-тăк, çыннăн хăй телейне тупмаллах, ун тутине астивсе пăхмаллах.

* * *

Мана халь ытлашши шавлă, янăравлă пурнăç кирлех те мар. Мана халь кирлӗ лăпкăлăх. Виçелӗх. Хама асăрхасах кайманшăн та пăшăрханмастăп. Халь ман кăмăлăм çапла – ыттисемшӗн чăрмав пулас марччӗ. Хам пӗлнӗ пек, хам вăйпа тунă ырлăхпа çырлахса пурăнасчӗ.

Пурте асăрхаса тăракан пурнăçăн тути-маси урăхла. Унта нумай вылявлă сăмах-юмах. Унта ялан хуçаланать ăмсану, кӗвӗçӳ.

Ытлашши палăрса тăракан пурнăçăн йывăрлăхӗ нумай.

* * *

Ыйтрăм эпӗ хамран хам. Мӗн е кам хавхалану кӳнипе канăçа пӗлмесӗр, пӗр кун сиктермесӗр, пӗртте чирлемесӗр ӗçлесе пурăнатăп-ха? Мӗн сăлтавпа ӳнерпе ăслăлăх ӗçӗнче кунран-кун хавхаланса пытăм, çӗнӗрен те çӗнӗ хайлав çыртăм? Кур-ха, юрату туйăмӗ те утмăл урлă каçсан та чакмарӗ.

Эй-й, эмелӗ пурах çав. Пӗртен-пӗр эмел. Çак эмел вăл – ытти çынсен çитӗнӗвӗшӗн савăнма пӗлни. Хамшăн мар, ытларах ыттисемшӗн хӗпӗртени. Пӗри спортра çитӗнӳ тăвать-и, тепри çӗнӗ кӗнеке кăларать-и, виççӗмӗшӗ диссертаци хӳтӗлет-и, тăваттăмӗшӗ çӗнӗ çурт лартать-и, – маншăн пурте калама

çук пысăк савăнăç. Хам тунă çитĕнӳ вырăнне хурсах мăнаçланатăп, киленетĕп. Ĕçĕ вĕсен малашне те çаплах ăнса пытăр тесе ырă хăват яратăп, сывлăх сунатăп.

Эмелĕ манăн, чăнах та, шанчăклăскер ку. Çак тарана çити аванах пулăшса пычĕ. Малашне те çаплах пултăрччĕ. Пытармастăп: вăл эмеле никамшăн та хĕрхенместĕп. Сире кирлĕ пулсан, тархасшăн, парнелеме хатĕр.

* * *

Тарăн тарасаран ăсакан шыв яланах тăрă та сивĕ. Пултарулăх тараси те çавах.

Анчах, шел, пĕрисен вăл ытла та ăшăх. Шывĕ лĕпленнĕрен тутине çухатнă. Хурт-кăпшанкă та ĕрчесе кайнă, çӳп-çап çакланнă. Курсанах ĕçес кăмăл пĕтет.

Теприсен тарасине тарăн чавнă. Пурине майлаштарнă чухне аялти сийне, никĕслĕх, çирĕп пĕлӳ хунă. Шывĕ яланах уçă, ĕçмессерен ĕçес килсе тăрать, йăлăхтармасть.

Ăшăх пура хăвăрт пураланать, тарăннишĕн вара самаях тарлама тивет. Вăйне кура пахалăхĕ, уçă шывăн техĕмĕ.

* * *

Чылай япалана е пулăма хак панă чухне пĕр енлĕ çеç пăхни пачах та çителĕксĕр. Вĕсен тепĕр енĕ те пур. Хыçалалла çаврăнса пăхса илни те самаях куçа уçать.

Паян пурте тенĕ пекех вăрçаççĕ Чечня вăрçине, ылханаççĕ ăна пуçарса яракансене. Эпĕ те çавсем хушшинчех. Çав хушăрах куратăп урăххине те, çак вăрçă уçса панă хăш-пĕр вăрттăнлăха.

Куртăм эпĕ Раççей çарĕ мĕнле шайра тăнине, генералсен вĕçкĕнлĕхне, «пултарулăхне», çамрăк салтаксен айванлăхне.

Куртăм эпĕ çар çыннисем укçа хыççăн кайса Раççее сутнине.

Куртăм эпĕ чеченсен паттăрлăхне, хăйсен тăван çĕрне мĕнле хӳтĕленине, ирĕке юратакан халăха пăшалпа хăратса чĕркуççи çине лартма май çуккине.

Куртăм эпĕ çын пурнăçĕ ниме те тăманнине, вăл айăпсăр вилнишĕн никам та явап тытманнине.

Чечня вăрçи куçăмăрсене самаях уçрĕ, вĕрентсе те илчĕ.

* * *

Раççей паян çатма çинчи çĕлен пек: авкаланать, хуçкаланать, хăй çулне тупаймасть, вăрă-хураха, тăшмана сăхаймасть; сăхсан та вĕсене хăратмалăх наркăмăшĕ çук.

Çулне пĕлекенсем пулнă-ха. Пĕрисене хăваласа ятăмăр, теприсене тĕрмере çĕртрĕмĕр. Халĕ вара веçех çĕнĕрен вĕренме тивет. Камран тетĕр-и? Хамăр унччен тăшман вырăнне хунисенченех. Çавсемех ăслă, çавсемех пултаруллă. Ма тесен, коммунизм мĕлкипе вылямарĕç, тулăх пурнăç тăвассине мала хучĕç.

Эпир хĕç-пăшал туптанă вăхăтра такăр çул, пурăнмалли çурт, шкул, больница, паха тракторпа çăмăл машина турĕç, пурнăç шайне çĕклерĕç, ĕçлеме вĕренсе çитрĕç.

Пирĕн вара паян пурин те пĕрремĕш класа çырăнмалла та парта хушшине лармалла.

* * *

Тĕнче мĕнпе интереслĕ? Тĕрлĕ çынсемпе.

Акă, троллейбусра ларса пырать пĕр ватă çын. Кĕмĕл сухалĕ вăрăм та сарлака, кĕреçе пек тесен те юрать. Ун пек сухала чылай арçын ăмсанать.

Пединститут коридорĕпе вăтам çулсенчен иртнĕ кĕрнеклĕ арçын матрос уттипе пынине курсан çынни кам пулни тӳрех паллă. Çакă вăл Меркурий Енисеев профессор.

Валем Ахун урама тухсан малтан çăра та вăрăм куç харшийĕсем курăнса каяççĕ, унтан вара тин хăй курăнать.

Праски Виттине те çур çухрăмранах паллама пулать...

Кашни çыннăн хăйĕн палли пур.

* * *

Хальхи çамрăксем чылай япалана ăнланмаççĕ, тепĕр чух чĕререн каласа панине те ĕненмеççĕ.

Ун чух Шупашкарта хĕллехи вăхăтра чечек тупма çăмăл марччĕ. Лавккасенче пĕрер сехет хушши сутатчĕç те пĕтнĕ тесе пĕлтеретчĕç.

Çапла пĕрре ниçта чечек тупайманнипе вĕçтертĕм Кӳкеç еннелле. Автобусран анса юлтăм та сивĕ юра чĕриклеттерсе утрăм теплица патнелле. Çитрĕм. Икĕ хĕрарăм кăна курăнчĕç. Пуçлăхĕ çук. Чечекне касса парасшăн мар. Пурте шутра иккен. Тархасласан, укçине ытларах парсан, тен, май килмĕ-ши? Йӳнеçтертĕм.

Халĕ Шупашкара мĕнле илсе çитермелле-ха: шăнса аманасран чун çук. Майне вара тупрăмăрах: кивĕ халат аркипе чĕркесе хĕве чикрĕм те килелле вĕçтертĕм.

Тепĕр сехетрен çав чечек çеçки юратнă хĕрарăм аллине лекрĕ.

Ун чух хальхи пек мар, чечек те дефицит пулнă.

* * *

Канаш, Канаш... Пĕртен-пĕр чăваш хули. Пур чĕлхепе те – Канаш. Чăваш Енĕн çул-йĕр хапхи. Тăватă енчи тăватă чугун çул тăваткăл тĕнчене çул уçса парать. Канаш витĕр тухсан пысăк тĕнче пуçланать, тĕрлĕ çĕрте пулса куратпăр. Каярах вара, çамрăклăха таçта инçетре ирттерсен те, вăйсем чакнине пăхмасăрах Канаш витĕр тăван ене çавăрăнса çитетпĕр. Канаш малтан ырă сунса ăсатать, килнĕ чухне те кăмăлпах кĕтсе илет. Тен, çавна пулах Канаша çитсен киле çитнĕ пекех туйăнса каять. Тен, çавна пулах Канаш тесен кашни чăваш ăна пĕлет, ырăпа асăнать.

Шупашкар – республика пуçĕ, Канаш вара – ун чĕри.

* * *

Улталаннă хĕрарăмсем, Андреевасемпе Сютруковасем... Хĕрхенетĕп сире. Çамрăклăхпа хитрелĕхе коммунизм мĕлки хыççăн танкăлтатса çӳресех пĕтертĕр. Çынлăха, юратăва тĕпе хурса телейлĕ пурнăç тăвас вырăнне партишĕн çунса çӳрени чунăрсене канăç пачĕ-ши? Çывăх çыннăрсене савăнăç кӳчĕ-ши?

Нивушлĕ тавракурăмăрпа сисĕм-туйăмăра пĕр йышши идеологи кăшланине, кĕрхи çулçă пек чуна саратнине сисеймесĕрех юлтăр? Çавна пулах-и, тен, пĕтĕм тĕнче савăннă чухне те сирĕн куçăрта тунсăх кăна хуçаланать. Пур еннелле те парти куçлăхĕпе пăхатăр çав. Тусăрсене те, килĕштерекен арçынсене те çав мелпех суйлатăр-ши?

* * *

Çук, эпĕ туслăха нихăçан та укçапа виçмен. Ку кирлĕ çын, ку кирлех мар тесе туссене пайламан. Пурне те сума сунă, пурне те хисепленĕ, çынлăха мала хунă.

Ман çумра халь темле çын та пур: пуянни те, чухăнни те, ĕçченни те, кăшт кахалтараххи те, ĕçерех параканни те, пач ĕçменни те, турра çеç шанаканни те, çын вăйне мала хуракан-

ни те... Алăкăм ман пуриншĕн те уçă. Кăмăлпа килнĕ çынсем пуçтарăнсан калаçмалли те, шӳтлемелли те, савăнмалли те тупăнать. Хваттер ырă туйăмпа тулать. Туслăх ăшши вара хăнасем кайсан та нумайччен упранать.

Туслăха эпĕ нихăçан та укçапа виçмен.

* * *

Укçа çук тесе нăйкăшса çӳрекен çыравçăсен хайлавĕсем те хăйсем пекех нăйкăш. Йӳçĕрехскерсем, айван сăнарсемпе тулса ларнăскерсем. Хăйсем вăйсăррипе ыттисене те çавăн пек тесе шутланăран çапла ĕнтĕ. Кĕнекисене те пит хапăл тусах пичетлемеççĕ, пичетлесен те туянакан сайра.

Мĕн сĕнĕттĕм-ши макăрса çӳрекен чăваш поэчĕсене? Ĕç вырăнĕсем вĕсем валли çук мар. Сăмахран, шкула кай та ачасене тăван чĕлхемĕр илемне уçса пар. Çын пулма вĕрент.

Çук çав, нăйкăшшисем ун пек ĕçрен вăтанаççĕ. Хăнăхман вĕсем. Вĕсен нишлĕхĕпе мĕскĕнлĕхĕ веçех хăйсенчен килет. Тен, çавна курах вĕсене пит хĕрхенес кăмăл та çук. Çӳреччĕр çапла кĕлмĕçленсе.

* * *

Вăйпитти арçыннăн хăйне килĕшекен чипер хĕрарăма хывăнтарас кăмăл çуралатех ĕнтĕ. Çутçанталăк парнеленĕ туртăма хирĕç мĕнле кайăн-ха?

Апла пулин те пит васкама кирлех мар. Сăнĕпе, çи-пуçĕпе илĕртӳллĕн курăнаканнисем чылайăн-ха вĕсем. Капăрланма та ăста. Ӳт-пӳрен хитри вара сахалтарах. Уйрăмах – ача амăшĕ пулнисем хушшинче. Пĕтĕмпех хывăнтарсан малтанхи илем туйăмĕ арканас хăрушлăх пур.

Тен, ваттисем асăрхаттарнине шута илни те вырăнлă? Юрату вăл тĕттĕмрех вырăна килĕштерет тесе ахальтен каламан вĕсем.

* * *

Каçарăр та, тусăмсем, каллех хамăра вăрçас килет. Чăваш калаçайманни пăшăрхантарать. Пакăлтисем, чуххăммисем темĕн чухлех-ха. Халăх умне тухса шухăша уçăмлăн та ăслăн калакан депутатсем хушшинче те, министрсем хушшинче те, профессорсем хушшинче те, çыравçăсем хушшинче те питĕ сахал. Калаçаймастпăр, тăванăмсем, калаçаймастпăр. Çавăнпах

трибуна патне çывхарма хăратпăр, тавлашусенче выляса яратпăр.

Халь вара çакăн сăлтавне калам. Пĕчĕк ачан шухăшлавĕ пĕтĕмпех тăван чĕлхе пулăшнипе аталанса пырать, шкула кайиччене çунатне сарать. Класа кĕрсе ларсан вара... Пуçра «çĕнйĕркелӳ» пуçланать. Чăвашла шухăшлавпа вырăсла шухăшлав йĕркисем хирĕçме тытăнаççĕ. «Эс мана ан çиллен» текен ачах тепĕр темиçе çултан «ман çине ан çиллен» теме пуçлать.

Шухăшлаври йывăрлăха çĕнсе илекен сахал. Каласайман халăх пулса лартăмăр. Çавă пăшăрхантарать. Ăна мĕнле тӳрлетмеллине кам каласа парĕ-ши?

* * *

Çырнă чух питех сисĕнместь. Кайран, пичетленсе тухсан, вуласа пăхатăн та, пачах урăхла туйăм çуралать. Веçех хамăр çинчен, хамăр хушăра пулса иртни. Веçех чăваш пурнăçĕ иккен.

Юрать-ха, хăй вăхăтĕнче урăх çĕрелле илĕртекенсем хыççăн каймарăм. Тăван ене пăрахнă пулсан, мĕн курса лармаллаччĕ кутемĕн.

Халь хамăрах куратпăр: тухса кайнисем килкелесе çӳреççĕ-ха, анчах витĕмлĕ сăмах калаймаççĕ. Тăван енри тымарĕсем типнипе сĕтеклĕ çимĕç параймаççĕ.

Чăваш çыравçин чăвашрах пурăнмалла ĕнтĕ. Унсăрăн халăх чунне тивекен хайлав çырма хĕн. Тĕрĕслĕхĕ те тарать, туйăм урăхланать.

Чăваш пурнăçĕпе пурăнмасăр чăваша пĕлме çук.

* * *

Мухтанмалли çукрах. Паллах, тăрăшрăмăр-ха, самай тухăçлă ĕçлерĕмĕр, чăвашлăха кăштах çĕклерĕмĕр, мĕскĕнлĕхрен тухса пыратпăр. Анчах ачамăрсене хамăр çул çине тăратаймарăмăр. Урăх еннелле туртăнчĕç вĕсем. Пирĕн çумра халь хамăр каланисене, хамăр çырнисене тивĕçлĕ хак пама пултаракан ачасем çукпа пĕрех.

Ыттисемшĕн çунса çӳресех ачамăрсене çухатрăмăр-ши? Пурри пур-ха вĕсем. Вĕренӳре те, ĕçре те маттуррисемех. Анчах хамăр пуçарнă юхăма вăйлатма хатĕррисем мар. Вĕсемшĕн чăваш идейи чĕре варринче мар.

Çакă пире чыс тумасть.

* * *

Ырать-ха хырăм пур. Çавă канăç памасть. Çавă пуçа ĕçлеттерет.

Çынна çын пулма ĕç пулăшнă теççĕ. Тен, чăнах та çаплах. Ĕççĕр пурлăх тăваймăн. Анчах... Авалхи çын ĕçе мĕншĕн пуçăннă-ши, мĕн хистенĕ-ши? Паллах, хырăм ыйтнипе, сывлăха, пурнăçа упраса хăварас тĕллевпе.

Çак йăла вара паян та сисĕнет. Хырăм ыйтнипе алла кĕреçе тытатпăр, йăран тăватпăр, çимĕç лартатпăр, выльăх-чĕрлĕх ӳстеретпĕр. Пасарта та чи малтан апат-çимĕç туянатпăр, унтан тин – ыттисене. Суйлава кайнă чухне те çак шухăш пуçрах. Пуçпа мар, хырăмпа сасăланă тенинче тĕрĕслĕх çук мар.

Ыр та хырăм пур. Вăл ыйтмасан ĕçлекен те пулас çук.

* * *

Юрату вăл ниçта та ытлашши мар. Политикăра та çаплах.

Тен, паянхи политиксем шăпах юрату çителĕксĕррипе усăмлă ĕçсем тăваймаççĕ? Раççее, халăха, ĕççыннине юратни пит сисĕнсех каймасть. Сивĕлĕх, хаярлăх нумай, курайманлăх та пур.

Политикăра юрату çук, унта вăрттăн пайта çеç тенипе ниепле те килĕшместĕп.

Юрату – вăл хăех политика. Унта пысăк яваплăх, теприне пулăшма тăрăшни, ыттисен ыратăвне чĕре патне илни...

Юратусăр политика вăл пит шанчăксăр.

* * *

Шупашкарти пĕр çурт патĕнчен иртсе пынă чух шартах сикрĕм, чарăнса тăтăм.

– Если сейчас же не зайдешь, мозги вышибу! – кăшкăрать балконран пĕр çамрăк хĕрарăм хăйăр купи çинче выляса ларакан ачине. Лешĕ пĕчĕк кĕреçине илчĕ те подъезд патнелле уттарчĕ.

– Мĕн ятлă-ха эсĕ? – ыйтрăм ачаран чăвашла.

– Эдик, – терĕ кăмăлсăррăн.

Апла-тăк, балконран кăшкăраканни чăваш хĕрарăмех пулнă. Ăçта çуралса ӳснĕ-ши вăл? Çавăн пек хаярлăха кам панă-ши ăна? Те ачалăхĕ ун юратусăр, телейсĕр пулнă ĕнтĕ, те ăна хула пурнăçĕ пăсса янă – калама хĕн. Хăйĕн çак ачи

мĕнле ӳсĕ-ши, мĕнлерех çын пулĕ-ши? Çакăн пирки кăшт та пулин шутлать-ши?

* * *

Ахалех хăйсене ним пĕлмен пек тыткалаççĕ. Пурте пĕлеççĕ: арçын хĕрарăм пирки шутлать, хĕрарăм – арçын пирки. Çутçанталăкĕ хăй çапла туса янă.

Çак туртăм пек вăйли, тен, урăх çук та. Палăртасси кăна тĕрлĕрен йĕркеленсе пырать. Пĕрисен вăл уçăмлă та хĕрӳллĕ, тепĕр чух тавлашуллă та шăв-шавлă. Теприсем вара лăпкăлăха, сăпайлăха пула именеççĕ, ĕмĕр тăршшĕпе пытарса усраççĕ. Вăхăтра хăйса калаймаççĕ те çак туйăма хăйсемпе пĕрлех илсе каяççĕ.

Арçынсем! Атьăр-ха, патшалăхшăн, партишĕн ĕçлемелле тесе пĕрне-пĕри улталар мар. Хĕрарăмшăн ĕçлер, хĕрарăмшăн пурăнар. Çапла туни тĕрĕсрех мар-ши. Хĕрарăм пурнăçĕ савăк чухне ыттисене те лайăхрах.

* * *

Историйĕ чăвашсен пур-ха вăл. Анчах патшалăхсăр истори. Çавă чухăнлатать, çавă вăйсăрлатать.

Халăха пĕр çĕре пухса ертсе пыма пултаракан çынни тупăнман. Тепĕр чух Яковлева аса илкелетпĕр-ха, анчах вăл урăхларах çын пулнă. Çул пусĕ картне ларайман. Вăл – пĕлӳ патне туртакан, вăл – Вĕрентекен.

Юхма пек юмахçăсем хăш-пĕр ятсене аса илкелеççĕ-ха. Анчах унта тĕрĕслĕх сахал, чăнни çук. Çырса хăварни, хут çине ӳкни çукран тахçан пулнине ăнлантарма питĕ йывăр. Юмахçă шайĕпе çеç шутлани çителĕксĕр. Чăн-чăн историксем кирлĕ. Вĕсем вара пирĕн питĕ сахал. Ытларахăшĕ партие мухтаса ят илнĕ доцентсемпе профессорсем çеç.

Историллĕ халăх пулас тесен чăн-чăн историкĕсем те кирлĕ. Дилетантсем çырни вăл чăн истори мар. Çамрăксен ăс-тăнне пăтраштаракан юмах кăна.

* * *

Халăх халсăр, çавна пулăшасчĕ. Ăна пит нумаях та кирлĕ мар. Тулăх пурнăç тума май паракан ĕç мелĕсене кăна уçса парасчĕ. Ыттине вăл хăех тăвĕ. Ĕçченлĕхĕ çук мар.

Халăхăмăр чухăн та телейсĕр чухне хырăм сарса, kaçăрăлса

çӳрекенсене сивлетӗп, укçа-тенкӗпе, пурлăхпа иртӗхсе пурăннине ырламастăп, сыхлануллăрах пулма сӗнетӗп. Халăх ылханӗ вăл çитетех. Тӗслӗх çук мар.

* * *

Раççей пуçлăхӗсем пурте пӗр евӗрлӗ, пурин те пӗр чир. Мускавра пӗрре тымар яраççӗ те ниçта тухмасăр пурăнаççӗ. Унталла-кунталла ик-виç кунлăха кайса килнипе те мухтанаççӗ.

Раççей вăл Мускав çеç мар. Ăна ăнланас, ăна ăнăçлă ертсе пырас тесен ватă Урал урлă каçмалла, аслă Атăл шывӗпе ишмелле – паянхи кăткăс ыйтусене вырăнта татса памалла.

Эпӗ президент пулас-тăк министрсемпе ытти пысăк чиновниксем валли Çӗпӗрте правительство çурчӗ лартса парăттăм. Пурăнччăр ӗçлесе, Раççейре чăн-чăн йӗрке туса. Тӗслӗхне хамах кăтартăттăм: çур çулне Мускавра, çур çулне Çӗпӗрте вăй хурса пурăнăттăм. Хальхи пек çеç ӗçлекенсен Инçет Хӗвелтухăçне çухатас хăрушлăх та пур.

Раççее ура çине тăратас тесен ӗç мелне çеç мар, ӗç вырăнне те улăштармалла, Мускавра кăна чакалашса лармалла мар.

* * *

Чăвашăн тӗп апачӗ мӗн авалранпах яшка шутланнă. Çавна çисех тутă тытнă, ватăличчен пурăннă.

Какай яшки, сӗт яшки, çăмах яшки, салма яшки, купăста яшки, серте яшки, пултран яшки, кăмпа яшки, пăрçа яшки, пулă яшки, автан яшки, какай шӳрпи, кӗрпе шӳрпи... Каласа та пӗтереес çук.

Тавçăруллă пулнă ӗлӗкхи чăвашсем; кашни çимӗçӗн пахалăхне усă курас тесе пурне те хурана янă. Çавăнпа та ӗнтӗ яшки тутлă та техӗмлӗ пиçнӗ. Ку ырă йăлана паян кун та килӗштереççӗ. Яшка çимесен апат çинӗ пек те мар теççӗ.

* * *

Ясарлăх ытамне лекнӗ çын тепӗр чух тапак туртма е эрех ӗçме хăнăхнă çын пекех: чупкăнланма пăрахса та пăхать, анчах кăшт вăхăт иртсенех каллех çавна тытăнать. Мăшăрне е çывăх çыннине сăмах панине те манать. Тата вăрттăнрах мел-меслет шырама пуçлать.

Ясарлăх вăл вăрăма кайнă чир пекех, аса илтерсех тăрать

хӑй ҫинчен. Чирлӗ ҫын, ав, хӑнара та хӑй чирӗ ҫинчен каласмасӑр чӑтаймасть. Енчен те унта тухтӑра тӗл пулсан, пӗтрӗ пуҫ вара... Ясар ҫын та ҫавах, меллӗ саманта алӑран вӗҫертмест.

Халлӗхе Раҫҫейре ҫак чир пирки питех шарламаҫҫӗ-ха. Америкӑра вара пачах урӑхла. Пысӑкрах пуҫлӑхсене, губернаторсене, президентсене ренгенпа пӑхнӑ пекех тӗрӗслесе тӑраҫҫӗ. Мораль тӗлӗшӗнчен тасах маррисене часах тӑрӑ шыв ҫине кӑлараҫҫӗ. Ҫакна Клинтон та самаях тутанса пӑхрӗ.

– Эпӗ президент мар, маншӑн чару ҫук, – текенсен те шӑпи тулатех. Халӑх пӗлмесен те килтисем туяҫҫех. Е пачах урӑхла: килтисем сисмесен те ыттисем пӗлеҫҫӗ.

* * *

Чысне ҫухатнӑ ҫынран темӗн те кӗтме пулать. Ӑна шанма ҫук. Ҫакна хамӑр куртӑмӑр. Укҫашӑнах чӑвашсене сутрӗ. Хамӑрӑн хӗнпе чӑмӑртаннӑ пӗчӗкҫӗ патшалӑхӑмӑра пӗтерес тӗллевпе пурӑнакан жириновецсемпе пӗр сӗтел хушшине ларчӗ ҫав ҫын. Лешсем ӗҫсе-ҫинӗ хыҫҫӑн юлнӑ шӑмма кӑшланипе савӑнса юрӑ ӗнӗрлерӗ. Ӗненӳ пуртан мар ӗнтӗ, веҫех укҫа шӑршине сиссе.

Мӗн тӑвас тен, чыс ҫук ҫӗрте намӑс та ҫук.

* * *

Ӑҫтан тухнӑ йӑла вӑл – король е президент ҫине пач урӑхла пӑхасси. Вӗсем те ҫынсемех вӗт-ха. Вӗсем те ачалӑх витӗр тухнӑ, вылянӑ, юрланӑ, ташланӑ, шкула ҫӳренӗ, ӑс пухнӑ, пуҫлӑха каярах тин ларнӑ. Вӗсен те ӗҫлемелле, канмалла, ҫимелле, ӗҫмелле, юратмалла, ачисене пӑхса ҫитӗнтермелле...

Патшана е президента ӑна влаҫ хӑй тӑвать. Ытти вара веҫех кам ҫав влаҫпа мӗнлерех усӑ курма пултарнинчен, тилхепине тытса пыма пӗлнинчен килет.

Тепӗр чух тата пачах хирӗҫле килсе тухать. Хамӑр чирленинчен тӗлӗнместпӗр, президент чирленинчен тӗлӗнетпӗр. Хамӑр ташланине асӑрхамастпӑр, президент халӑх умӗнче ташланинчен тӗлӗнетпӗр...

Вӗсем те ҫынсемех. Пурнӑҫӗ кӑна халӑх куҫӗ умӗнче.

* * *

Раççей вăл калама çук пысăк çĕршыв. Унти пулăмсем те урăхла, хăйне евĕрлĕ, çанталăкĕ те ытти çĕрти пек мар. Мускавăн пысăках мар йăнăшĕ те миллионшар çынна пыра-пыра çапать. Пысăкраххисем пирки калаçмăпăр та. Хресчен çĕрне туртса илсе колхоз туни, Раççее çăкăрсăр тăратса хăварни, кашни ялта халăх тăшманĕ шырани... Астăватпăр кусене, манаймастпăр.

Раççей пысăк. Унăн çав тери сасартăк пысăк хускану тума юрамасть. Хулленрех, йĕри-тавра пăхарах утмалла. Шак та эксперимент таврашпе кăна аппаланса пурăнмалла мар. Халăха лăпкăлăх, ирĕклĕх кирлĕ. Унăн ĕçлемелле, хăйне пурăнмалăх пурлăх тумалла.

* * *

Чухăн та выçă çын пур еннелле те пĕр майлă пăхать. Кăшт кăна апат-çимĕç тупмалла, хырăмне тăрантмалла.

Ун пек çыншăн нимĕнле илемлĕ япала та савăнăç мар, юрă-ташă та, паха кĕнеке те, аллине тыттарнă чечек те чунне хускатмасть. Спорт вăййи пирки вара калаçни те усăсăр.

Пурнăç шайĕ начар пулсан, культура витĕмĕ те, сисĕмтуйăмпа сывлăх та анса ларать. Ниепле вăй илеймест.

Халлĕхе эпир аран-аран çунакан вучах евĕрлĕ халăх кăнаха. Сăлтавĕ вара – чухăнсем нумайăи.

* * *

Телефон кĕпçине тытнă-тытманах хуйху-суйху пирки калаçма пуçлатăн. Каллех макрашатăн, пулăшу ыйтатăн.

Мĕнле-ха капла, пĕрре тунă йăнăшах тепĕр хутчен тăватăн. Пĕр йывăрлăхран тухнă çĕре тепри тупăнсах тăрать. Мĕншĕнха кăштах та пулин пурнăçран хăйĕнчен вĕренсе пымастăн? Нивушлĕ сан ĕмĕрӳ хăв тунă йăнăшсене тӳрлетсех иртсе пырать вара? Ирĕклĕ те савăнăçлă пурнăç патне утса тухăн-ши?

* * *

Ача çуралсанах çамрăк мăшăр урăх ят илет – ашшĕпе амăшĕ. Кукаçипе кукамай, асаттепе асанне ятсем те ачапа пĕрлех çуралаççĕ.

Пĕчĕк ачашăн пурте пĕр тан, пурте çын, урăх никам та

мар. Ашшĕ, ав, тĕнче чемпионĕ, кукамăшĕ – шкул директорĕ, аслашшĕ – министр, ачашăн çакă – пурпĕрех.

Вăл пурне те çĕнтерет. Ăна пăхмалла, унпа вылямалла, вăл ыйтнине тивĕçтермелле.

Сăпка ачинчен асли çук.

* * *

Пĕри Мускавран радио хумĕ çинче «дорогие мои москвичи» тесе юрлать.

Питĕ тĕрĕс сăмахсем. Мускавсем пек хаклă çынсем, чăнах та, çук. Пĕтĕм çĕршывĕпе тумлантаратпăр, çитеретпĕр, хăтлă хваттерсем, чиркӳсем лартса паратпăр. Ĕлĕк те çаплах, паян та. Кремль çывăхĕнче йăлкăшса ларакан чиркӳ тăрринче, сăмахран, ман мăн асаттен те ал лаппи пысăкăш ылтăнĕ пурах ĕнтĕ.

Укçи-тенки те пĕтĕмпех тĕп хуланалла юхать. Çавăнпа хаклă та ĕнтĕ мускавсем. Вĕсем нихăçан та япăх пурăнман: ĕлĕк те, халĕ те.

* * *

Иртнĕ самана йĕрки ватă çыннăн çемьери вырăнне самаях улăштарчĕ.

Пĕтĕм вăйне, сывлăхне, илемне колхоза е завода парса ватăлнă çын çемьере ытлашширех пек курăнма пуçларĕ. Сăлтавне уçăпăр. Килшĕн тунă ĕçĕ ун пит курăнуллах мар. Теприсен çукпа пĕрех.

Тата тепĕр кăлтăк пур. Ачасене мĕн пĕчĕкрен пĕтĕм ырлăх партирен, патшалăхран килет тесе вĕрентсе ӳстертĕмĕр. «Пире парти ӳстерет, кунран-кун телей кӳрет», – тесе юрлаттартăмăр. Ашшĕ-амăшĕн пĕлтерĕшĕ пирки шарламарăмăр.

«Халĕ вара мĕншĕн-ха çамрăксем ваттисене хисеплеми пулчĕç?» – тесе тĕлĕнетпĕр.

Чăваш хушшинче ĕлĕк-авал кун пекки хуçаланман. Ахальтен мар «ват çын – тăват çын» тенĕ. Ăна хисепленĕ, ун сăмахне итленĕ. Ватă çын чăваш килĕнче – мĕн виличченех асли шутĕнче. Çапла пулинччĕ яланах. Таврăнинччĕ çак ырă йăла.

* * *

Хěрӳ туйăмлă хěрарăм ыратнине чухламасть. Уйрăмах – юратăва парăннă вăхăтра. Веçех манса каять, çупса янине те туймасть, айне чěрěп пăрахсан та сисместь, ӳчě ыратмасть.

Чăтăмлă вăл, арçын пек мар. Юратура пуянрах, илемлěрех. Тем тесен те хěрарăм вăл чи чаплă та пархатарлă упăтерен пулса кайнă. Арçын валли вара япăхраххи кăна тăрса юлнă. Çавăнпа вăл туйăмран  чухăнрах та, кăнттамрах та.

* * *

Арăм вилсен хам ятăма та, хам камне те манма пуçларăм. Куçма текен те çук, атте сăмаха та сайра кăна илтетěп.

Веçех ывăлăм авлансан, киле кин кěртсен пуçланчě. Ман сăмахăм, эпě сěнни никама та кирлě мар: пěтěмпех вырăнсăр иккен. Кинěм мана: «Эсě мěн пěлен?» – теме тытăнчě. Халě ěнтě çак сăмах кашни кунах хăлхара.

Эпě хама Куçма пек мар, Мěнпěлен ятлă пек туйма пуçларăм. Арăм пур чух Куçмахчě те-ха, халь вара Мěнпěлен пулса тăтăм.

* * *

Хěрарăмпа арçын хушшинчи çыхăнăва никам та тěплěн ăнлантарса параяс çук. Кунта философ та, çыравçă та вăйсăр.

Вăрăм ěмěрлě юратупа, шăкăл-шăкăл калаçупа, савăнăçлă кăмăлпа пурăннинчен тěлěнмех кирлě мар. Вăл çапла пулмалла та ěнтě.

Арăмлă, ача-пăчаллă чухнех айккинелле чупни вара... «Пěрмаях пěр çимěç йăлăхтарса çитерчě тет-ши?» – çавнаш-калли.

Теприсем, ав, кашни кун тенě пекех харкашаççě, çапă-çаççě, çывăрма выртсан кăна лăпланаççě. Хирěçěвне вěсенне пěтěмпех тěттěм каç татса парать.

Мěнле пурăнакан кăна çук çěр çинче!

* * *

Талантлă çын вăл ача пекех: чеелěхě пěр пěрчě те çук. Айван вăл. Пурне те шанать. Çынра ыррине çеç курать. Хăйне хăш енчен усал пырса çыртассине чухламасть. Ěçлет те ěçлет,

пултарулăхĕпе ыттисене савăнтарать. Тен, çав хушăрах пурнăçри йывăрлăха çĕнтерме те пулăшать.

Талантлă çын вăл ыттисемшĕн нимĕн хĕрхенмест. Ырлăхĕ ун пурин валли те çитет. Пĕрин валли çĕнĕ шухăш, теприн валли паха сăнар, виççĕмĕшне ав хайлавне якатса парать...

Талантлă çыннăн кĕвĕçӳ çук. Ют çын çитĕнĕвĕшĕн те хăйĕнни пекех савăнать, ăна саламлать, ырлăх-сывлăх сунать. Теприн хайлавĕнче хăйĕнчен çырса илнĕ вырăна асăрхасан та нимĕн шарламасть, кулкаласа кăна илет.

Талант вăл пурин валли те çитет.

* * *

Çĕр чăмăрĕ çурмалла çурăлса Саратовран Шупашкар таран сарăлса выртакан Чăваш çĕршывне çăтсах ямарĕ пулсан, çав тери кулянар мар-ха. Пурăнар-ха пурнăçа кулленхи ĕçпе аталантарса пыма вăйлă алă пур чухне, ăçталла утмаллине тавçăрса илме урă пуç пур чухне, чун ыратăвне е юрату туйăмне палăртма тăван чĕлхемĕр пур чухне. Пуçа усса çӳрер мар. Пирĕнтен чухăнни, пирĕнтен телейсĕрри те çук мар. Анчах пурте хăй халăхĕн кун-çулĕ пирки шутлаççĕ. Эпир те лăпланса ларар мар, хамăр телейĕмĕре хамăрах туптар.

* * *

Пире мĕн чăрмав кӳрет? Ачисем ашшĕ-амăшĕн пурнăçне ăнланманни, тивĕçлипе хаклама пĕлменни.

Аттесен пурнăçĕ те чăн-чăн пурнăçах. Унта та пулнă ачалăх, юрату, савăнăçлă самантсем. Вĕсем те хăйсене телейлĕ туйнă. Вĕсем курнине, савăннине эпир вара курас çук. Тен, вĕсем паянхи çамрăксем асăрхаман пулăмсенех савăнăç вырăнне, телей вырăнне хурса хакланă. Тен, вĕсем кăмăл-сипетрен пуянрах та пулнă. Хăйсен пурнăçне пачах та хурламан.

Ашшĕ-амăшĕн пурнăçне ăнланман ачасем тĕрĕс çулпах кайĕç-ши, телейлĕ пулĕç-ши?

* * *

Мĕнле-ха капла, пĕчченех тăрса юлмарăм пуль те.

Пĕрисем чăвашсен чи авалхи несĕл тымарĕсене шырас ĕçе парăнчĕç. Паянхи кун çине пăхса илме те вăхăчĕ çук, мăнтарăнсен.

Теприсем чĕлхе вăййи пуçларĕç. Урăх чĕлхере чăваш сăмахĕ

евёрлĕ янăрав тупаççĕ те пĕчĕк ача пек хĕпĕртесе сиккелеççĕ.

Виççĕмĕшĕсем халăх педагогикипе киленсе ĕмĕр ирттереççĕ. Ĕçĕсем вара пит курăнсах каймаççĕ. Мĕншĕнни паллă: çав паха педагогикăна калăпланă халăхĕ хăй паян нишлĕ, çук пекех. Вăл çухалнă. Шел! Паянхи чăвашсенчен ытларахăшĕ пачах урăхла педагогика хуранĕнчен вĕресе тухнă.

Тем пек ырă вăрлăх валли те лайăх сухаласа çемçетнĕ хура тăпра кирлĕ. Тем пек лайăх шухăш валли те çавах. Компьютерпа синтезатор, бизнес урокĕсем мала ӳкнĕ чух сухапуç педагогики çунат сараяс çук.

Ĕлĕкхи ырă йăла-йĕркене хурламастăп-ха. Анчах пурпĕрех малалла çивĕчреххĕн пăхасчĕ. Тĕнче таппипе тан пулăмсене асăрхаса чăвашăн паянхипе ыранхи çулне курас килет.

Иртнине çеç тĕпчес тĕллевпе пурăнакансен шухăшлав шайĕ те ĕлĕхи майлă пулса каяс хăрушлăх пур.

Пире паян ытларах хальхи пек шухăшлакансем, умри çула уçăмлăрах куракансем кирлĕ.

* * *

Пĕри кашни докладрах Ленина ырăпа асăнать, педагогикăри тĕслĕх выранне хурать.

Çук ĕнтĕ. Педагогика вăл çĕмĕрнинчен, вĕлернинчен мар, ырă туйăмран, çынна юратнинчен пуçланать. Пĕрне-пĕри е тус-тăвана сутни те педагогикăна хирĕçле ĕç. Тепĕр сăлтав та пур. Ленинпа Крупская ача мĕнле ӳснине хăйсен куçĕпе пачах курман. Пĕлмеççĕ. Вĕрентсе çырма вара ӳркенмен.

Çак енĕпе илсен Микулай патшан çемйери педагогикипе сипетлĕхĕ темиçе хут пысăкрах. Тем пек хăрушă самантра та кил-йышĕпе пĕрле, ачисене пăрахман, сутăнчăк çулĕ çине тăман, хăй ĕненĕвне улăштарман.

Ленин, Сталин, Калинин, Молотов, Ежов, Берия... Кунта педагогика шăрши те çук. Вĕсене ырă тĕслĕх вырăнне хунипе ниепле те килĕшейместĕп. Унта ултавпа хăрату, тискерлĕхпе ирсĕрлĕх кăна.

* * *

Ачаран спортпа туслашни сывлăха çирĕплетрĕ, чăтăмлăх парнелерĕ. Çакă вăл пĕлӳ пухнă чухне те питĕ хӳтĕлерĕ. Çапла тума Платон сăнарĕ хавхалантарчĕ. Платон пулнă философ, сăвăç, музыкант, спортсмен. Киленсех вуларăм Аристотель çырнине, чунăма çывăх Демокрит калани. Килĕштертĕм Гегель

эстетикине, Ушинский педагогикине, Пушкин поэзине, Тургенев чĕлхине, Тагор çырнине, Çеçпĕл хăюллăхне...

Тен, çавăнпах пуçра шухăш хуçаланать, ăс-тăна хускатать, туйăма астарать. Эпĕ вĕсенчен çивĕчленнĕ. Çавăнпах сăввăмра шухăша мала хуратăп.

Пуçăмран мĕнле шăранса тухать – çапла çырăнать.

* * *

Пултăм Патшалăх çуртĕнче, хам паллакан çын ĕçлесе ларакан пӳлĕмре. Калаçăвĕ шыв пек юхрĕ, çапах чун-чĕрере пăчăлăх та пушăлăх. Канлĕх килмерĕ. Чаплă сĕтел-пуканлă пӳлĕм стенисенчен сивĕ çапать. Мĕншĕн çапла-ши?

Тен, ку пӳлĕмре хăй вăхăтĕнче халăха хирĕçле ĕç тăвакан çынсем ларман-ши? Чăн-чăн хресчене Çĕпĕре хăваласа ямалли хутсене çакăнта алă пусман-ши? Чăвашсен чи пултаруллă ӳнерçисене Сталин лагерьне ăсатас шухăш çакăнта çуралманши? Чăваш чĕлхине шкултан тапса кăларса ярас тĕллевпе ĕçленĕ çыннăн усалĕсем çак киревсĕр юхăм тепĕр хут вăй илессе шанса кирпĕч çурăкĕнчен вăрттăн пăхса лармаççĕ-ши? Сивви çакă пулмасан юрĕччĕ.

* * *

Çулсем иртсе пынăçемĕн ах! темесĕр сывлăш тухмасть. Вара тин ывăнса çитнĕ кăкăра уçă сывлăш хумĕ пырса кĕрет. Каллех çăмăллăн сывласа яратăн та вăхăтлăха канса илетĕн.

Çав хушăрах ах! тенинче пĕтĕм пурнăç сасси, вăрăм ĕмĕр палли. Кашни хутĕнчех мĕнле те пулин шухăш йăлкăшса илет. Ытларах пăшăрхануллă самантсене аса илтерекенни, пурнăçăм хам тăвас тенĕ пек пулманнишĕн кулянни.

Ах! тенĕ чух никама та мар, хама кăна ятласа илетĕп. Халĕ ĕнтĕ мĕнлерех çулпа утмаллине те, мĕн тумаллине те пĕлетĕп, анчах вăй чакса пырать, ах! темесĕр сывлăш та тухмасть.

* * *

Тавăру çулĕ çине тăрсан икĕ тупăк хатĕрлеме хушнă. Пĕри тăшману валли, тепри – хăвна валли.

Çак сăмахсене сана темиçе çул каяллах каланăччĕ. Итлемерĕн. Ырă вăхăта ырă ĕçпе ирттермерĕн, çăхав хыççăн çăхав çыртăн, хăвна судпа вĕрентсе илсен те тăна кĕмерĕн. Пĕрмаях йӳççе çӳренипе, кăкăрунта кĕвĕçӳпе курайманлăх тăвăлнипе

чире кайрăн. Халĕ ĕнтĕ тухтăр патĕнчен тухма пĕлместĕн. Хăвна мĕн кĕтнине чухласа илейĕн-ши? Е унчченхи пекех курайман çынна пĕтерессишĕн тапаланса çӳретĕн? Нивушлĕ тупăк умĕнче тăнă чухне те çав шухăша пăрахаймăн? Ниушлĕ сан юлашки çулсенче те пулин пурнăçăн чăн-чăн тути-масине курса юлас килмест.

Тавăру çулĕ – хăрушă çул. Çитмĕл çичĕ хутчен шутласа пăхмасăр ун çине ура пусма ан васка.

* * *

Чĕрем, ыратакан чĕрем! Сана сыватас тесе мĕнле эмел хыпмарăм. Усси пулмарĕ, ыратни чакмарĕ. Тухтăр тăрăшни те кăлăхах.

Темле чиртен сыватсан та чĕре чирĕнчен сыватма йывăр-тарах. Темле паха эмел те вăйсăр. Килте канлĕх çук чухне ăçтан чĕре тикĕс таптăр-ха!

Чĕре вăл – çемье барометрĕ. Ăшшипе сиввине те, тăвăл çывхарнине те питĕ тĕрĕс кăтартать. Чĕре чирĕ – çемье чирĕ. Эмелпех тӳрленес çук.

* * *

Тем тăвăттăм, тем парăттăм, каялла çавăрса килĕттĕм сире. Тухса кайнă чух чармарăм, ялшăн мĕнле çухату пулнине сисмерĕм. Халĕ пачах урăхла. Эсир куçса кайрăр та урам илемĕ юлмарĕ. Пăхса киленмелĕх, калаçса чуна пусармалăх çын юлмарĕ. Ял чысĕ те чакрĕ.

Хăна тавраш килсессĕн сире чĕнсе пыраттăм, пĕрле туслă пурăннипе савăнаттăм, мухтанаттăм. Эсир çукки кашни кунах сисĕнет. Мĕн тăвам-ши, мĕнле сире тăван яла çавăрса килем-ши?

* * *

Чăваш турри пурне те курать, пурне те асăрхать, хăйне сума суман çынсене тăн кĕртсе илме те манмасть. Çапла пулмалла та, чăвашран кулма памалла мар.

Акă пĕрисем ӳстерчĕç ачисене чăвашлăха ним вырăнне хумасăр, килте чăвашла калаçмасăр. Ялти тăванĕсем те хăнара пулса курайманĕç, чăваш юрри янрамарĕ.

Авлантарчĕç ывăлне, кин турĕç таçтан куçса килнĕ хĕре. (Тиркерĕç чăваш хĕрне). Кĕçех çак çемьере пуçланчĕ тамăк. Кинĕ

яранса ҫӳрет халь тӗнче касса, пӗчӗкҫӗ хӗрне киле хӑварса. Ывӑлӗ вара пысӑк укҫана хапсӑннипе лекрӗ милици аллине.

Темле хура кушак чупса иртрӗ ашшӗпе амӑшӗ хушшипе, кайрӗҫ уйрӑлса. Ватӑ кукамайӗ тем чухлӗ кӗл тусан та касӑлнӑ чӗлӗ ҫыпҫӑнмарӗ.

Мӗншӗн ҫапла килсе тухрӗ-ши? Малтан чӑваш туррине кӳрентеретпӗр иккен, каярах пулӑшу ыйтатпӑр. Унпала малтанах килӗштерсе пурӑннӑ пулсан, пурнӑҫ йӗрки сыпӑнатчех.

* * *

Ҫыракансем те, ӳкерекенсем те паян темӗн чухлех. Юррисене те кӗрлеттереҫҫӗ, куравсем те ирттереҫҫӗ. Мухтакансем те савӑнаҫҫӗ пуль. Анчах ҫакӑ вӑл вӑхӑтлӑха кӑна.

Мӗншӗн тетӗр-и? Хуравӗ паллӑ. Вӗсем ҫырнинче, ӳкернинче пысӑк ӑсталӑх ҫук, ыттисенчен уйрӑлса тӑракан сӑнарсем курӑнмаҫҫӗ. Пултарулӑхӗнче ҫӗнӗ сӑмах калани сисӗнмест.

Ытти авторсен хайлавӗсене аса илтерекен сӑвӑсен, кӗвӗюрӑсен, ӳкерчӗксен шӑпи вӑрӑм мар. Лӗпӗш пек: ирхине ҫуралаҫҫӗ те – каҫпала ҫухалаҫҫӗ.

* * *

– Партие кам валли тӑваҫҫӗ? – ыйтрӑм эпӗ.

– Халӑх валли, – хуравларӗҫ хӑшӗ-пӗрисем.

Ҫук ҫав. Партие ӑна парти валли кӑна тӑваҫҫӗ. Тӗшшине катса пӑхсан тата уҫӑмлӑрах каласан, парти вӑл – унта тӑракансем валли те мар, пуҫлӑхӗсем валли ҫеҫ. Ҫавсем влаҫшӑн ҫунаҫҫӗ. Ахаль ҫынна ӑна влаҫ кирлех те мар.

Хура халӑх ҫавнашкаллисемшӗн влаҫ пуканӗ ҫине хӑпарса лармалли вӑй ҫеҫ.

Ҫӗр ҫинче партисем темӗн чухлех, анчах ӗҫ ҫыннишӗн тунӑ парти пулман та, пулас та ҫук. Хресчен партийӗсем те пуҫлӑхӗсем валли ҫеҫ.

* * *

Ҫутҫанталӑка ятлар мар, вӑл хӑй йӗркипе пурӑнать. Ҫын йӗркине вара – ҫынни хӑй тӑвать. Нимле турӑ та мар, кашкӑр та мар, хӗвел те мар.

Леш эгоизм текенни çын çумĕнче пурах ĕнтĕ: пур çĕрелле те хăй виçипе пăхать. Хăйне лайăх пултăр. Ыттисен йывăрлăхне, хуйхи-суйхине чĕре патнех илмест. Этемлĕх шăпи те хумхантармасть.

Çутçанталăка сиен кӳрекен те çавах. Хитре чечеке курсанах аллине тăсать, чечекĕн пуласлăхне татать. Пакша хатĕрленĕ мăйăра та, йывăç хăвăлĕнчи пыла та хăйĕн тесе шутлать...

Сĕмсĕрлĕхпе çăткăнлăха чармасан çынлăх пĕтет. Çынлăх пĕтсен – тĕнче пĕтет.

* * *

Çын тени вăл тĕрлĕрен: пур тепĕр çынна хисеплекенни, сума сăваканни е хăйне çеç юратаканни; тĕрĕслĕхе, совеçе мала хураканни е суеçтерме, улталама хăнăхни; чысне таса тытаканни е ăна сутаканни; халăха юратаканни е тăван халăх пуррипе çуккине пачах та асăрхаманни; тăвансемпе туссем умĕнчи, тăван ялпа тăван çĕршывăмăр умĕнчи парăмсене тивĕçлипе пурнăçласа пыраканни е вĕсене пачах манса каяканни; пурнăç çине савăнăçлăн пăхаканни е пĕрмаях çĕпре пек йӳçсе çӳрекенни, ун умĕнче пĕтĕм тĕнче парăмра тесе шутлаканни...

Çын вăл темли те пулать. Тĕнчере тĕрлĕрен кĕнчеле.

* * *

Эпир питĕ тарават çынсем. Хуть те кама та çăкăр-тăварпа, сăрапа кĕтсе илетпĕр. Шупашкара куçса килнĕ кашни çын – пирĕншĕн чи чаплă çын. Ăна тӳрех хваттер тата пуçлăх пуканĕ лартса паратпăр.

Лешĕ вара хăйне тӳрех патша пек тыткалама пуçлать. Кĕçех тăванĕсене, тусĕсене, еркĕнĕсене сĕтĕрсе килет, хваттерсем туса парать. Чăваш çулĕ пӳлĕнсе пырать.

Эпир ырă кăмăллине тĕнче пĕлет. Çавăнпа ĕнтĕ пурте тенĕ пекех Шупашкаралла сĕкĕнеççĕ.

Эпир питĕ тарават çынсем... Ыттисемшĕн.

* * *

Эй, тĕнче! Курас килет-и сирĕн чăн-чăн çăпата? Килĕр Шупашкара. Унта çăпата театрĕ пур.

Акă килчĕç тĕрĕксем, тĕнче шайĕпе ирттерекен фестивале хутшăнакансем. Кашни хăйĕн юрри-ташшипе савăнтарчĕ, хăй

халăхне, хăй çĕршывне мухтарĕ, мăнаçлăхне палăртрĕ. Çипуçран та, капăрлăхран та илемлĕн курăнма тăрăшрĕç. Пĕр чăвашсем кăна сцена çине çăпатапа сиксе тухрĕç, халăх мĕскĕнлĕхне, нишлĕхне кăтартрĕç, ыттисен шайне çĕкленеймерĕç.

Ташшине кам суйласа илнĕ-ши? Çăпата театрĕн режиссерĕ мар-ши?

* * *

Юратас та килет, хама та юраттарас килет. Анчах çакна мĕнрен пуçламалла-ши? «Сана юрататăп», – теме хăюлăх çитерĕп-ши? Çак асамлă сăмаха илтсе пулĕ-ши?

Эппин çыннăн юратма та пĕлмелле. Шкулĕ вара варта выртнă чухнех пуçланать. Вĕрентекенĕ – тăван анне.

Юратса çуратнă ачан юрату туйăмĕ чухăн пулмĕ, ашшĕ-амăшне те, туссене те, каярах вара хăй ачисене те савăнăç кӳрĕ. Шăпах çапла ламран-лама куçса пырать те ĕнтĕ нихăçан сӳнми юрату шкулĕ.

Юрату шкулĕ вăл çураличченех пуçланать.

* * *

Ятларăм та пуль, вăрçрăм та пуль. Каçарăр. Çакна веçех сире юратнипе, чунăм ыратнипе туса пытăм. Халĕ те çавах.

Чăваш кулленхи апата япăххине çинишĕн пăшăрханатăп. Тăрăнса кайиччен ĕçлет – апатĕнче вара хăйне хисеплени курăнсах каймасть.

Пурнăç вăл çинипе пĕтмест. Паха çăкăр-тăварпа пурăнни, вăхăтра апатланни – веçех сывлăхшăн, çын илемĕшĕн, хамăр ăрушăн. Апатне те лайăх çимесен тата мĕншĕн пурăнмалла?

Пурнăç вăл çинипе пĕтмест, ĕçнипе пĕтет.

* * *

Эпĕ текех айван çын мар, эпĕ вăйлă. Йывăрлăхсем сахал пулмарĕç, анчах çĕнтерӳсем пурпĕр нумайрах. Хам вăя, хам чăтăмлăха йывăрлăхпа тĕрĕслерĕм. Алла усмарăм. Мĕн чухлĕ йывăртарах, çавăн чухлĕ çине тăтăм, урă пуçпа çӳрерĕм, ăстăнăма вăйлăрах ĕçлеттерме тăрăшрăм. Кашни çĕнтерӳ хыççăн вăйланса пытăм, хама хам шанакан пултăм. Ума сиксе тухнă йывăрлăха хăраса та чĕтресе мар, хама тĕрĕслесе пăхма май

пурришӗн ним кулянмасӑр кӗтсе илтӗм, ҫитӗнӳ ҫулне ҫӑмӑллатрӑм.

Ҫук, ҫын вӑл вӑйлӑ. Хӑй шӑпине хӑех татса пама пултарать. Ҫине тӑни, тӑрӑшни кирлӗ.

* * *

Искусство ҫыннипе калаҫнӑ чух асӑрханулларах пулӑрха. Вӑл ыттисем пек мар, сисӗм-туйӑм тӗлӗшӗнчен ҫивӗчрех. Татах нумай ҫырмаллаччӗ, кӑна тумаллаччӗ, ҫапларах хайламаллаччӗ тесе ан йӑлӑхтарӑр-ха.

Эсир малтан вӑл мӗн ҫырнине хак парӑр, тав тума ан манӑр. Искусство вӑл яланах ҫӗнни, унччен ҫукки. Пахалӑхӗ – шутӗнче мар. Тепри, ав, кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке кӑларать, вуласа киленмелли ҫук. «Нарспи» поэма вара – ӗмӗрлӗхе.

* * *

Паян эпир мӗнпе пуян? Паян эпир кампа пуян?

Мӗнпе пуяннине чухлаймастӑп, кампа пуяннине вара курсах тӑратӑп.

Эпир паян ҫухалса кайнӑ ҫынсемпе пуян. Ҫавсем йышлӑ. Ҫавсене шел.

Пӗри ав кил еннелле ҫул тупаймасӑр тӗнче касса ҫӳрет. Несӗл тымарӗсем татӑлса кайнипе тӑванӗсене те астумасть, хыпар-хӑнар та ямасть.

Тепри кунтах тӗпленнӗ пулсан та пурнӑҫри вырӑнне тупаймасть. Темле ӗҫе те тытӑнса пӑхать – хӑйне кӑтартаймасть, ҫӑкӑрлӑ-тӑварлӑ пурнӑҫ тӑваймасть.

Виҫҫӗмӗшӗн пуҫӗнче паян кун та коммунизм сӗрӗмӗ явӑнать. Пуҫа тивнӗ ҫын пекех тыткалать хӑйне. Хальхи пурнӑҫа хурланипех ырра тухасшӑн кӑшкӑрашса ҫӳрет. Куҫӗсем те урӑхла, шак та япӑххине ҫеҫ шыраҫҫӗ, лайӑххине асӑрхамаҫҫӗ.

Шел, ытла та шел ҫак ҫухалса кайнӑ ҫынсене. Хӑҫан тӳрӗ ҫул ҫине тухӗҫ-ши.

* * *

– Ҫӗр вӑл аннепе пӗр тан. Пире тӑрантарать, вӑй парать. Аннене сутмаҫҫӗ. Ҫӗре те сутмалла мар, – вӗрентеҫҫӗ пире.

Ҫӗр-анне тенипе килӗшетӗп. Анчах аннен сывлӑхӗ яланах пӗр пек мар вӗт-ха. Чир-чӗрӗ те ҫакланать, ватлӑх та ҫывхарать. Ун чух пулӑшакан тупӑнмасан вӑл йывӑрлӑха кӗрсе ӳкет.

Çĕр те çавах. Ăна юратса пăхмалла, ватăлма памалла мар. Çакна вара чăн-чăн хуçа çеç туса пыма пултарать.

Анне паракан ырлăха сăптăрса пурăнар мар. Ăна тав туса кирлĕ чухне хамăр хӳтте илер.

* * *

Халĕ темле вăй пирки те калаçаççĕ. Пĕри турă хăватне ĕненет. Тепри таçтан вĕçсе килекен турилккесемпе пуçне минретет. Хуçисем килте çук чухне савăт-сапа ватакан е сĕтелпукана вырăнтан куçарса лартакан вăй та пур иккен...

Пулĕ, тем те пулĕ. Темле вăя шута илсен те, темле вăя мухтасан та çынна манар мар. Эпĕ çын ăсне, çын аллине шанатăп. Урăх ниме те, никама та шанмастăп. Ма тесен ырри те, усалли те веçех çынран килет.

* * *

Пурнăç улшăнса пынăçемĕн илем те уçăмлăрах курăнма пуçларĕ. Çынсен çи-пуçĕ, лавккасенчи йĕрке-тирпей, урамри тасалăхпа капăрлăх, хальхи çăмăл машинăсемпе троллейбуссем...

Çакă улшăну, паллах, хăй тĕллĕн килмест. Акă, пĕри тротуар çинчи юра асфальт тухиччен тасатнăшăн хула пуçлăхне вăрçать. Ача ларса пыракан çунашкине туртма йывăр иккен, шумасть. Çакă та тасалăх палли.

Пултăм хăнара, хваттерне мĕнле хитрелетнине курсан пĕр тĕлĕнтĕм, пĕр хĕпĕртерĕм. Юмахри патша керменĕ пекех. Ялти çĕнĕ çуртсем тата... Пурне те çын алли тăвать.

Ĕçпе илем туслашнăшăн савăнмалли кăна юлать.

* * *

Ырă çыннăм, идеал вырăнне хурса пурăннă аслă пиччем! Чылай вăхăт хушши Мускавра пурăннă хыççăн мĕншĕн улшăнтăн-ши? Нивушлĕ тĕп хулари пурнăç йĕрки сана та парăнтарчĕ?

Шупашкарта чухне эсĕ ирĕклĕ шухăшлакан мăнаçлă çынччĕ. Пуçлăхсен юррине юрлаканран йĕрĕнеттĕнччĕ. Пире те çапла пулма вĕрентеттĕнччĕ.

Халĕ вара... Кашни килмессерен кунти пуçлăхсене тата ниме тăман çыравçăсене мухтаса, çĕклесе хăваратăн, вĕсен аллине ларма тăрăшатăн. Мĕнле майпа вĕсен умĕнче парăмлă

вĕсен умĕнче парăмлă пулса тăтăн-ха эсĕ, ырă çыннăм?

Кăнтăрла Яковлев палăкĕ умĕнче чăвашсене пĕр-пĕринпе чăвашла калаçма кăшкăрсах чĕнтĕн. Каçпала театрта пуçлăхсем вырăсла калаçнине курса хăв та вĕсем хыççăн кайрăн, докладра пĕр чăваш сăмахне те аса илмерĕн. Çакă вара театрта ларакан çĕр те пин чăваша самаях пăшăрхантарчĕ. Ан ятла. Хам шухăша çеç мар, халăх шухăшне пĕлтерес терĕм.

Хамшăн вара çапла пĕтĕмлетӳ турăм. Вылявлă пулас марччĕ, пурнăçа пĕрре суйласа илнĕ çулпах утса тухасчĕ.

* * *

Чăвашăн чун шăнăрĕ çав тери çемçе пулнине кăтартакан хăрушă паллă пур. Çакă вăл – хăй çине хăй алă хурасси.

Хуйхи-суйхи хĕснине, тепĕр çын кӳрентернине чĕре патне çывăх илнĕрен çапла пулса тухать те ĕнтĕ. Ăшра кӳренӳ хĕвĕшнĕ чухне чăваш хăйне алăран вĕçертет те усал ытамне кĕрсе ӳкет. Лешĕ вара хăй ĕçне тăватех.

Нарспирен тĕслĕх илекенсем те сахал мар. Шел, питĕ шел, «Нарспи» поэма чăвашсемшĕн юрату шкулĕ пулса çитеймерĕ. Пач урăхла, вилĕм шкулне çаврăнчĕ. Курăр-ха, тĕп геройсем пурте вилсе пĕтеççĕ. Пурнăç сыппи татăлать, пуласлăх сӳнет.

Кун пек хăрушă шăпа никама та тивĕçтерес çук. Анчах автор çакна чухлайман, чăваш чунĕ валли хӳтлĕх тупайман. Ытла çамрăк пулнă çав вăл; тем тесен те, пурăннинчен пахи çуккине ăнкарса илеймен, йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ çынсем валли çăлăнăç шырасси пирки шутламан. Усал вăя, вилĕме ытлашши ирĕке янă.

# 2000 çул

Кама та пулин ĕненмеллех ĕнтĕ, шанмалла, туя тытнă суккăр пек çӳремелле мар. Акă, пĕрне тĕрĕслĕх патнелле хăш çулпа каймаллине кăтартрăм – курмарĕ, йышăнмарĕ, хăй пĕлнĕ пек çӳресе урине амантрĕ. Унтан тин уксахласа ман пата пычĕ, пăшăрханса калаçрĕ. Кăштах ăсланчĕ-ши?

Пылаккипе пĕрлех йӳççи те, тăварли те кирлех. Савăнăçпа юнашар кулянмалли те хатĕрех тăрать. Çын куçне шăпах çавă лайăххрах уçать, пурнăçа хаклама вĕрентет.

Чи пахи, чи ăсли – пурнăç шкулĕ; вĕрентекенĕсем – шурсухалсем, ыррине те, япăххине те самаях тутанса курнăскерсем. Кĕнекерен пухнă ăспах пурнăç тума çук. Ĕмĕрӳ хуйхă пусмăрĕнче ан иртчĕр тесен, ваттисене итле; нишлĕхрен тухас тесен, таврара мĕн пулса иртнине кура хăв та улшăнса пыма ан ӳркен.

* * *

Халăх чăннипех те чирлĕ. Апла пулин те больница лартнипе мухтанма васкар мар-ха. Тухтăр ĕçĕпех халăха сыватса çитерееç çук. Ма тесен чир вăл чун ыратăвĕнчен пуçланакан япала. Ăшра йĕркелĕх пулмасан ӳтре те пулмасть. Сывлăха усал сывлăш кăшлать, кĕвĕçӳ хавшатать. Ун чух вара тухтăр тӳрлетни те нумая пымасть. Кунта пачах урăхла эмел кирлĕ: ырă ĕçпе ыттисене савăнтарни. Хăв пухнă ăса, хăв тунă пурлăха хĕрхенме кирлĕ мар, леш тĕнчене пĕрле илсе каяс çук. Хăв пурнăçупа ыттисене чăрмав кӳрес марччĕ. Çавăн чухне вара чир-чĕр те çыпçăнмĕ, ăшри килĕшӳлĕх асамлă эмел вырăнне шутланĕ.

Чирлĕ халăхăмăра сыватассине чунран пуçламалла.

* * *

Ухмаха вĕрентнин, тăнсăр çынна ăс панин усси питĕ сахал, çукпа пĕрех. Ал пама тăрăшаканĕн пултарулăхне пĕтерни çеç. Пурне те лайăх пĕлӳ парас тесе ĕçлесе миçе çын хăйĕн сывлăхне хавшатмарĕ-ши? Вăхăтсăр çĕре кĕни те са-

хал мар. Вĕрентекенĕн ĕçĕ çапла – мĕн пуррине ыттисене памалла.

Айван çын вара ăс панине хаклама пĕлмест. Пурпĕрех хăйне май аппаланать, йăнăш хыççăн йăнăш тăвать.

Пĕлĕве ăна пултаруллă çынна памалла. Çакă каярах ыттисемшĕн ырăпа çавăрăнса килĕ, пĕр ăслă çын ĕçĕ пин çыншăн пулĕ.

Пултаруллă çын ĕмĕтленни, тăрăшни пурнăçа кĕрсе пыратех. Киревсĕр çын вара хăй мĕнрен хăраса пурăнать, çав капкăнах çакланать.

* * *

Эпир пухăнса калаçнă çĕрте сăмах купи кăна тăрса юлать. Сăмах ăшне путрăмăр ĕнтĕ. Енчен те тавлашу тапранса кайсан, чарăнма та пĕлместпĕр. Пурин те хутшăнас килет: ним пĕлменни те, пĕр ăслă кĕнеке вуласа курманни те сурчăк сирпĕтсех палкать. Уншăн калаçса пултăр: тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и? – çакă ниме те пĕлтермест. Ăслă çын вара сăмах чĕнме аптраса тăрать. Хăй пĕлĕвне кăтартăччĕ – ăнланакан çук. Ун пек чух пăрăнса утмалли кăна юлать. Айванккапа тавлашни çăвар пылакне сая яни çеç. Ăслă калаçу валли йĕркеллĕ çын кирлĕ, пĕлӳ кирлĕ.

* * *

Ыттисенни пекех савăнăçăм манăн та пур.

Пĕрремĕшĕ – эпĕ çак тĕнчене килни, сирĕн хушăра пурăнма тивĕçси, çутçанталăк илемĕпе киленни. Пурнăçра тем те сиксе тухĕ, çапах та пурăннинчен пахи нимĕн те çук.

Иккĕмĕшĕ – килĕштернĕ, юратнă хĕрарăмсем пурри. Чи хитрисем, илĕртӳллисем, çĕршер арçын чунне хускатаканнисем, анчах урăххисен аллинче мар, ман ытамра ачашланса йăпаннисем. Илемлĕ хĕрарăма курас килсен, эсир ман еннелле çаврăнса пăхăр.

Виççĕмĕшĕ – юратнă ĕç, çамрăк ăрăва ура çине тăма пулăшасчĕ тесе пĕр кун сиктермесĕр вăй хуни; палăртнă ĕçе хамăнах тăвасчĕ тесе ăнтăлни, кунтан та ытларах: çын хушнипе мар, чун ыйтнипе.

Тăваттăмĕшĕ – ӳнер тĕнчи, çисе тăранайми чун çимĕçĕ. Паллах, хырăм савăнăçĕпе танлаштарсан пин хут пахараххи; вăл ман туйăма саваларĕ, якатрĕ, ыттисен савăнăçне, хуйхи-

суйхине асăрхама вĕрентрĕ.

Пиллĕкмĕшĕ – сывлăхлă çӳрени. Чĕлĕм-пирус çăвара хыпман, эрех ĕçмен, ытлашши çисе хырăма сарман. Пулнă туслă спортпала, кахал пусман пахчара.

Ыттисенне пĕлместĕп, ман савăнăç çапларах.

* * *

«Коммунист» сăмахран халь хăрама кирлĕ мар. Ун паян ячĕ кăна çапла, пурăнăçри вырăнĕ пачах урăхла: сутă тăвать, лавкка тытать, укçа пухса кермен лартать; коммунистчĕ капиталист пулсан та, демократсене хурлать.

Унчченхи коммунистсем – хăрушă саманан хăрушă тарçисем вĕсем. Пĕчĕк ача аллинчи çăкăр чĕллине туртса илме хушсан – илнĕ, ĕçчен хресчене ялтан хăваласа яма хушсан – янă, персе пăрахма хушсан – пенĕ, вилме хушсан – вилнĕ...

Парти вăл улталаннă çынсен ушкăнĕ кăна тепĕр чухне. Паллах, пуçлăхсем валли шутласа кăларнăскерсем. Унпа вĕсем юнлă чăпăркка вырăнне усă курнă: халăха пусмăрланă, тӳлевсĕр ĕçлеттернĕ, Туррăма çиллентернĕ, Раççее çылăха кĕртнĕ. Пирĕн нуша чылай енчен шăпах çавăнтан пуçланнă та ĕнтĕ.

Сталин вилнĕ кун парти вилме выртнă кун пулса тăчĕ. Ун суя хăвачĕ чакса пычĕ, Ельцин пӳрнепе тĕксенех тӳнсе арканчĕ.

Çук, паян коммунистран хăрама кирлĕ мар. Малашне те хăрас мар тесен, влаç тилхепине ун аллине парар мар.

* * *

Çак тĕнчере пĕр вăхăтрах тем те пулса иртет: савăнмалли те, тĕлĕнмелли те, кулянмалли те...

Чи пысăк савăнăç вара пĕрре çеç – çын çурални. Унтан пахи, унтан хакли урăх нимĕн те çук. Унпа танлаштарсан тин çеç туса лартнă кермен те кирпĕч купи çеç, космосра вĕçекен карап та тимĕр чăмăркки кăна.

Çын. Ун чунĕ пур, ăс-тăнĕ пуян. Вăл юратма пĕлет.

Кашни пĕчĕк ачарах – этемлĕх пуласлăхĕ. Вăл ăрупа ăру хушшинчи çыхăнăва çирĕплетекен çилĕм, ватлăх хуçи. Ачамăрсем мĕнлерех, ваттисен пурнăçĕ те çапла.

* * *

Çыравçи мĕнлескер – кĕнеки те çавăн пекскер. Ма тесен: мĕн акатăн – çавă шăтать. Вĕçкĕн те çăмăлттай çынран тарăн

шухăшлă хайлав кĕтсе илеймĕн. Яланах йӳçсе çӳрекен кăмăлсăр сăвăç кĕнекинчен сулхăн тапса тăрать, çынлăх сахаллин – вулакана пистерет.

Халăх пĕлмен халăх поэчĕ те пулать. Çавскер ырă шухăша пăтраштарса типĕтнĕ çулçă евĕрлĕ чунсăр, юнсăр сăвă çырнипе киленсе пурăнать. Кам валли çырать-ши? Хăйне майлă темиçе çыншăн çеç пулĕ.

Паллă ĕнтĕ типĕ çулçă çăмăлли. Çилĕ кăштах вĕрнипех пĕлĕтелле çĕкленет. Симĕсси вара нимле çилрен хăрамасть, тарăн тымарлă йывăçран сĕткен илсе тăнăран тавралăха илем кӳрсе çынсене савăнтарать.

Сăвăç та çавах, пурнăçран, халăхран сĕткен илеймесен вулакан чĕри патне çул тупаймасть.

Айванăн хайлавĕ те айван, ыррин – ырă. Çынни мĕнле – кĕнеки те çапла.

* * *

Мĕн тăвасшăн вара эсир манпала? Мĕншĕн унталла-кунталла туртатăр, мĕнле пурăнмаллине çине тăрсах вĕрентетĕр?

Эпĕ Мускав çынни мар, сирĕн пек пурăнма пĕлни мана кирлĕ мар. Эпĕ сире ырлăх кӳрессишĕн ĕçлесе пурăнакан тарçă кăна. Эпĕ кăларнă ылтăнпа алмаз сирĕн çумра ялкăшать; эпĕ хатĕрленĕ апат-çимĕç сирĕн сĕтелĕр çинче капланса ларать; эпĕ çурса тиесе янă юман паркет сирĕн хваттере хăтлăх кӳрет...

Сирĕн пек пурăнма вĕренес тесессĕн, манăн хама Раççей пурлăхĕн хуçи вырăнне хумалла, парнесĕр-укçасăр пĕр хут çине те алă пусмалла мар, ытти çĕртен килекенсем умĕнче кунтан мĕн сăптăрса илме пулать-ши тесе чееленмелле.

Çук, манăн ун пек йăла çук. Эпĕ чăвашран çуралнă çын, ĕçпе, тĕрĕслĕхпе пурăнма вĕреннĕ халăх ачи. Мана хам пĕлнĕ пек пурăнма ан чăрмантарăр. Ман чăвашлах пурăнас килет.

* * *

Хамшăн мар, сирĕншĕн пăшăрханатăп. Пĕлетĕп, каярах эпĕ сире татах та çывăхрах курăнăп-ха. Сăмахăм та ун чухне хальхинчен хаклăрах пулĕ. «Мĕншĕн Кибече маларах вуламанха эпĕ» текенсем те тупăнĕç. Ма тесен пур япала та хăй

вырънĕнче, хăй вăхăтĕнче меллĕ, шухăш та – çавах.
Ман сирĕн пата паян çитес килет, ман сире паян пулăшас килет. Сире кирли – ман хайлавсенче. Сахалах мар пулĕ тетĕп. Вулакан, шухăшлакан тупатех. «Кая юлсан – каю шăтать» тенине манас марччĕ. Кая юлнă пулăшăвăн усси сахал, чуна ыраттарни кăна.

* * *

Шупашкарта пĕр ушкăн пур. Чĕнмен çĕре пырса кĕрсе сăмах çаптарма юратакансем. Уявра та, çынна çуралнă кун ячĕпе саламланă чухне те, вилĕ пытарнă çĕрте те çавсен сасси.
Сăмахĕ яланах пĕр майлă: çынсем унччен çăтмахри пек пурăннă, савăнăçлă та телейлĕ пулнă; кусем, турăран та тасаскерсем, халăх ырлăхĕшĕн çунса çӳренĕ. Пĕр çылăхсăр иккен вĕсем, парти обкомĕн секретарĕсем, хăйсен айăпне пытарас шутпа калаçса çӳрекенсем. Суд умне тăратасран хăраççĕ-ши?

* * *

Мĕн кăна тумасть пуль çын хăй пуррине тĕнчене пĕлтерес тесе: сăмах çине сăмах хушать, çи-пуçне капăрлатать, пит-куçне хитрелетет, ахах-мерченĕ те, ылтăн-кĕмĕлĕ те йăлкăшса тăрать. Анчах çакă çителĕксĕр, çыннăн янăрас килет.
Ăшра çуралнă шухăш малтан чун хĕлĕхне хускатать. Ăшри янăрав вăйланса пынăçемĕн вырънĕ тăвăрланса çитет. Вара вăл читлĕхри кайăк пек алăк шырама тытăнать, сасă чĕлĕхне пырса çапăнсан тин ирĕке тухать. Çын юрласа ярать те янăрама пуçлать. Сасси кăна мар, чунĕ янăрать; чунĕ çеç мар – пĕтĕм ӳт-пĕвĕ, урараң пуçласа çӳç таранах.
Çак туртăм таврана илем кӳрет, çĕнĕрен те çĕнĕ кĕвĕ парнелет, туйăм тĕнчине пуянлатать.
Çыннăн янăрас та килет.

* * *

Чирлĕ çынна сыватма эмел кăна çителĕксĕр. Уншăн ăшă сăмах та, юрату та тем пекех, тен, эмелрен те хаклăрах.
Сывлăха тӳрлетме чунран пуçламаллине чăвашсем пĕлеççĕ авалтанпах. Çавăнпах тухаççĕ ăста тухтăра, сиплевçĕ ĕçĕпе тĕлĕнтереççĕ таврана. Ăçтан пырать-ха çак йăла?
Турри чăваша чĕм кĕртнĕ чухне çын хуйхине, çын ыратăв-

не хăй çине илме хушнă тет. Урăхла пĕлместпĕр пурăнма. Ыттисене ырă тăвассине хамăр çинчен манса кайсах хуратпăр пит мала.

Чăваш вăл сиплевçĕ пулма çуралнă.

* * *

Еврейсем калама çук пысăк йăнăш турĕç – Турă сăнарне пăсрĕç, айванлатрĕç, Христос шайне антарса лартрĕç. Çынна Турă вырăнне хуни ĕненĕве хавшатрĕ.

Çын вăй-халĕ еплине, вăл мĕн тума пултарнине пĕлет халь кашни вĕренекен. Христоса тем пек вăйлă кăтартсан та – иккĕленӳ çуралать. Тен, çавăнпах вăл тепĕр чух юмахри сăнар евĕр курăнать. Шел, шанчăк паракан ĕненӳ символĕ шайне çĕкленмерĕ çак сăнар.

Турă пек пурăнма сĕнни ултав çеç. Этемшĕн çын пурнăçех пит меллĕ: арлă-арăмлă пулса ача-пăча ӳстерни, çурт çавăрни, йывăç лартни, ваттисене пăхни, ĕçлеме те савăнма пĕлни. Туррăн – турă пурнăçĕ, çыннăн – çын пурнăçĕ. Пире çакă çутă тĕнчере çын пек пурăнса телейлĕ пулма çул кăтартса хавхалантарса пыракан Турă кирлĕ.

## ӲКĔНӲПЕ ЙĂЛĂНУ ЮРРИСЕМ

**1**

Эй, Çӳлти Турă, Аслă Турă, Чăваш Турри! Çĕр çинче пĕр пек курăк çук, пĕр пек йывăç çук, пĕр пек çын çук, пĕр пек халăх çук. Кашнин хăйĕн сăн-сăпачĕ, чунĕ, хăйне сыхлакан Турри. Чăваш çыннин те çавах.

Эй, ман Туррăм! Сана кӳрентерекен сахал мар тупăнчĕ; эсĕ пĕртен-пĕрре пулса пирĕн пата тĕрлĕ ятпа килнинчен, Хĕвел турринчен, Уйăх турринчен, Çĕр турринчен, Шыв турринчен кулчĕç, хăйсен турри çын евĕрлĕ пулнипе мухтанчĕç. Чăваш шутлать урăхла: çын вăл нихăçан та Турă шайне çĕкленеймест. Çынран Турă туни кирлĕ те мар. Чăваш Турри урăхла – кашнине пурнăç парса пулăшса пыракан, усалран сыхлакан хăват, хăй халăхĕн хӳтлĕхĕ, тĕрекĕ. Чăваш валли Чăваш Турри пур.

**2**

Эй, Чăваш Турри, камсем-ха вĕсем Сана кӳрентерекен йĕксĕксем?

Сана тиркеççĕ, Сана сивĕлеççĕ чăвашлăхран пăрăннисем, тăван халăхне маннисем, усал ĕçпе çылăха кĕнисем, урăх халăх туррине пуççапакансем. Çын вăл çапла: мĕн чухлĕ çылăхĕ нумайрах, çавăн чухлĕ Турăран аяккарах. Ăна Турă кирлĕ мар. Эсĕ çук пулсан яваплăх та çук, иртĕхсе пурăнма ирĕклĕ. Ăшра усал сывлăш хуçаланать, çынлăх манăçа юлать. Сана ĕненмен çын кĕçех Эсрел чурине çаврăнать.

## 3

Эй, Турă, эпир Сан умра айăплă пулсан та Сан ырлăхна, юратăвна тивĕç. Пирĕн урăх Турă çук, Санăн та урăх халăх çук. Эпир те, Эсĕ те пĕр хуйхăпа, пĕр асаппа, пĕр савăнăçпа пурăнатпăр. Тивĕçех мар пулсан та Сан çумра хӳтлĕх шыратпăр. Каçар пире, айван ачусене. Хăв хăватна ан шелле, хаярлăхна ан пусар, халăха сиенлекен сутăнчăксене ан хĕрхен, çунтар вĕсене, пĕтер вĕсене, пурлăх сăптăрса пирĕнтен кулса пурăнакансене. Çавсене пулах пĕрлĕх çук. Тĕп ту вĕсене, ӳтне те чăваш çĕрĕ ан йышăнтăр, выçă çăхансем, шакалсем çисе яччăр. Сан хаярлăху ытларах усал вăйсем валли пултăр.

## 4

Эй, Чăваш Турри, эпир кунта пурте чурасем, урăх Турă тарçисем. Пирĕн пурнăçăмăр хамăршăн мар, пĕтĕмпех ют çыншăн. Пире касрĕç, вакларĕç, пайласа пĕтерчĕç. Эпир халĕ сапса янă пăрça кăна. Пирĕн сурансем паян та юнăхса тăраççĕ. Чулман, Çарăмсан, Сĕве, Çавал, Атăл тăрăх шыв мар, пирĕн куççулĕ юхать.

Эй, Турăçăм, хăçан пире пĕрлештерсе пĕр халăх тăвăнши, пĕр тĕллевпе, пĕр ĕмĕтпе пурăнма вĕрентĕн-ши? Хĕрхенсем пире, айвансене, чуралăх туйăмĕнчен хăтăлма пĕлменскерсене. Ан пăрах пире, пулăш пире, тĕрек пар пире. Сансăр пуçне хута кĕрекен пулас çук.

## 5

Эй, Чăваш Турри, каçар пире. Улталаннă эпир, хамăра пăхăнтарнă халăх хыççăн кайса телейлĕ пулатпăр тесе шутланă. Шаннă кайăк йăвара пулмарĕ, ырлăх çулĕ çине ӳкеймерĕмĕр. Йышлă халăх ăслă пуль тенĕччĕ. Çук, хăй те арпашăнса кайрĕ; ыттисене хĕстерекен халăх телейлĕ мар иккен. Ăна хисеплеми, курайми пулчĕç. Хăвна пусмăрлакана ăçтан юратма хал çитерĕн.

Эй, Чăваш Турри, ан пăрах пире. Çын хыççăн кайса хамăр çула çухатрăмăр, Сана кӳрентертĕмĕр. Каçар пире, мĕскĕнсене. Эсĕ хăвăн айван ачусем çине хаярлăх ярсан та эпир ăна юратса çапни вырăнне кăна йышăнăпăр. Ашшĕ ачисене тăна кĕртсе илни япăх япала мар.

## 6

Эй, Аслă Турă, пирĕн çылăх çӳпçи калама çук пысăк. Ма тесен аттемĕрсен çылăхĕ те пирĕн çине капланса ӳкрĕ. Тӳсмелле ĕнтĕ. Санран çăмăллăх ыйтмастпăр, тĕрĕслĕхе тĕпе хурса суд ту пире, тăна кĕрт, урăлтар. Эпир пурне те чăтса ирттерме хатĕр. Пирĕн халĕ пĕртен-пĕр тĕллев – нумай çул хушши пухăннă çылăха ачамăрсене парса хăварса вĕсен пурнăçне йывăрлатас марччĕ.

Эй, Аслă Турă, тасалăва пирĕнтен пуçласам, кăвар çинче çарран ташлаттарса чунăмăрти усал сывлăша силлесе кăларсам. Енчен те тасалу çумĕнчен пăрăнакан чăвашсем тупăнсан, вĕсене ан хĕрхен. Сана хирĕçле çын нихăçан та телейлĕ пулаймĕ, упăшкасăр е арăмсăр тăрса юлĕ, ачисем тарса çӳрĕç, ячĕ те пĕр сыпăкранах çĕр çинчен çухалĕ.

## 7

Эй, Турă, тем чухлĕ çине тăрса аксассăн та вырмалли сахал, чăвашлăх анинче ытларах пуш пучах кăна. Начарланса çитнĕ эпĕр, ĕлĕкхи улăплăх та сĕвĕрĕлсе пĕтнĕ, хĕç тытма та маннă. Кун пекех пулсан умри çутă пачах сӳнес хăрушлăх пур: таврана хура пĕлĕт хупласа илĕ те пĕрне-пĕри паллайми пулăпăр, чăваш камне манăпăр.

Эй, Турăçăм, Сан пулăшу пире паян кирлĕ, ыранхи – кая юлни пулĕ. Вăхăтра панă пулăшу пĕчĕкçĕ кăна та, çапах юлса панă пысăк пулăшуран пахарах. Çав тери йывăр пире. Шăтăксене те алтса хунă, хамăрах чавтарчĕç; тĕксе ярас текен те кĕтӳпех. Тӳнсе кайсан тăпрапа витме хатĕррисем те чăвашсемех, тăшман çумĕнче йăпăлтатса тăраççĕ. Эй, Туррăм, эсĕ малтан çавсене асăрха, шалкăм çаптарса аллисене кĕреçе тытайми ту. Мана вара çав шăтăка тăшмана тĕксе яма пулăш.

## 8

Эй, Чăваш Турри, эпир, Сана пăхăнма маннă çынсем, çак ырă ĕçе мĕнле тумаллине те пĕлместпĕр вĕт-ха; ăс пар пире, вĕрент пире. Сан умăнта эпир упаленсе çӳренĕ хыççăн тин çеç ура çине тăнă ача пек кăна. Чунăмăр та пирĕн хамăрăн мар, урăх турă вĕрсе кĕртнĕскер анчах. Мĕнле пурăнмаллине те вăлах вĕрентсе пычĕ. Çи-пуçăма якатрăмăр, капăр çуртсем лартрăмăр, чун тасалăхĕ пирки шутламарăмăр, пĕрпĕринпе çапăçса, ĕçкĕпеле иртĕхсе чăваш йăхне хавшатрăмăр, шуйттан чури пулса тăтăмăр.

Эй, Туррăм, чăваш чунне таварса парса хăвна пăхăнма вĕрент пире, сапаланса кайнă сурăхсене. Пире паян Аслă Кĕтӳçĕ кирлĕ.

## 9

Эй, Чăваш Турри, Сана хурлакан, Санран кулакан нихăçан та мана çывăх çын пулас çук. Эпĕ вĕсенчен йĕрĕнсе кăна иртсе каятăп. Хăрушă вĕсем, ӳтĕнчен сивĕ тапса тăрать, куçĕнче – хаярлăх, чĕлхинче – наркăмăш. Савăнăçĕ те вĕсен пĕрре кăна – чăваша сăхса суранлатасси. Вăйлисенчен вара ая ярасла хăраççĕ. Вĕсемшĕн чи лайăххи – айван та сутăнчăк чăваш; çавна мухтаççĕ, çĕклеççĕ, чаплă пукан çине лартса хăйсен юррине юрлаттараççĕ; чăваш чăвашпа хирĕçнине курсан çапăçу çулăмĕнче çунса кайччăр тесе юман вутти пыра-пыра пăрахаççĕ. Урăхлараххисем те çук мар: йăл-йăл кулса калаççĕ, чăваш хутне кĕрем пекки тăваççĕ, халăх тунă пурлăха Мускава е Хусана сутса пурăнаççĕ. Укçи ăçта кайнине эпир нихăçан та пĕлес çук. Çак çынсене, паллах, Чăваш Турри кирлĕ мар. Вĕсен чунĕ тахçанах çичĕ юта сутăннă. Ан хĕрхен Эс вĕсене, пуянлăхпа чыхăнма укçа мурĕ ярса пар.

## 10

Эй, пурне те курса тăракан Туррăмăр! Сана хисеплемен, Санран хăраман çынран тем те кĕтме пулать. Вăл хăйне пăхса çитĕнтернĕ çынна та тытса силлеме хатĕр. Çакăнтан япăххи, çакăнтан ирсĕрри пулас та çук.

Çынсем, паллах, кураççĕ, чыс çуккине пĕлеççĕ; кашни ăшра суд тăвать, тĕлĕннине пĕлтерет. Анчах çын сăмаххи çынна тӳрлетеймест. Сан тĕрĕслĕхӳ, Сан хăвату кăна пурне те вырăна лартма пултарать. Эсĕ аслă, Эсĕ вăйлă, пĕр Сана кăна шанатпăр.

## 11

Чăваш Турри – тĕрĕс Турă. Эпир çапла çынлăха çухатнăшăн, намăса манса вăрăпа, ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн Туррăмăр айăплă мар. Хамăр япăх çынсем пултăмăр: чĕремĕрсем – усал йăви, пуçăмăрсем – тăшман чури. Пире пулăшма та май çук, хамăра ырă сунакансене те ăнланмастпăр, йышăнмастпăр. Аслă та сăпайлă çынран пăрăнатпăр. Пире усалли, хаярри, хамăра нухайккапа хĕртсе тăраканни çывăх. Ма тесен эпир ырă та

ирĕклĕ пурнăçа курман. Пирĕнпе паян пуканелле выляççĕ, пĕр-пĕринпе хирĕçтереççĕ, чăвашсене хăйсен ăслă ывăлĕ-хĕрĕнчен пăра-пăра яраççĕ.

Хăйĕнчен хăй ютшăнакан чăваша Турă та пулăшаяс çук. Ырлăха пархатарлăн йышăнма çынлăх кирлĕ.

## 12

Эй, Турăçăм, мĕншĕн пирĕн ăраскалăмăр çапла пулчĕ-ши? Нивушлĕ Сан умăнти çылăхăмăр çав тери пысăк вара? Мĕншĕн вăхăтра хута кĕреймерĕн?

Халĕ эпир кам? Ытти халăхсене йышланма пулăшакансем кăна. Кашни çулах вырăссене пиншер ывăл-хĕр парат-пăр; тав сăмахĕ вырăнне вара чăвашлăхшăн çунакансене чукмарпа тăрслаттарнине кăна куратпăр. Ислам енне туртăнса тутарсене те самаях пулăшрăмăр, пĕтесрен çăлса хăвартăмăр.

Пирĕн пурнăç сĕткенне ыттисем ĕмсен те типсе лармарăмăр, ята çухатмарăмăр. Тĕлĕнмелле халăх эпир, донор шутĕнче пулсан та тытăнса тăратпăр. Нумайлăха-ши? Санпа килĕшӳллĕ пурăнсан ĕмĕр вăрăм пулассине пĕлетĕп-ха. Çакна ыттисем тавçăрса илейĕç-ши?

## 13

Эй, Турă, пулăш пире, ертӳçĕсĕр, патшасăр тăрса юлнă халăха. Сапаланса кайнă кĕтӳри пек кашни утать хăй çулĕпе, анчах телейне тупĕ-ши?

Пур-ха йăх пуçлăхĕ Улăп, анчах паян пирĕнпе мар. Вăл вилĕмсĕр, амансан та ӳчĕ хăвăрт тӳрленет. Таçта вăрттăн çĕрте пирĕн тăшмансем Улăп çумне çывăрттаракан курăк хурса тăраççĕ. Çавăнпа вăл тăраймасть, пире пулăшма килеймест. Вăл пур чухне эпир ирĕклĕччĕ, сывлăхлăччĕ, илемлĕччĕ; эрехпе те иртĕхмен, вăрă ĕçне те пĕлмен. Эпир пулнă хамăр пек.

Эй, ырă Аттемĕр, вăрат хăвăн чи паттăр ывăлна, çĕршер çул хушши çывăракан Улăпа. Эпир ăна итлĕпĕр, кар! тăрса ун хыççăн утăпăр.

## 14

Эй, Туррăм, Эсĕ мана мĕн пуррипе çырлахма вĕрентрĕн, ырă туйăм парнелерĕн.

Ыттисен пуянлăхне, чапне ăмсанмарăм. Хам пурнăça хамах

йёркелесе пытӑм: сухаларӑм, акрӑм, кёркунне вырса пуҫтартӑм. Вырнӑ чухне савӑнтӑм, хам ӗҫӗмре хам сӑнӑма куртӑм. Ытларах чун ҫимӗҫӗ ӳстертӗм, ҫынсене парнелерӗм. Ырӑ кӑмӑллисем савӑнчӗҫ, тав сӑмахӗ каларӗҫ. Пӗрисем вара куҫ умӗнче ырларӗҫ, иртсе кайсан – хурларӗҫ, кӗвӗҫрӗҫ. Камсем ҫапла тетӗн-и? Хӑйсене хӑйсем мухтаса калаҫакансем.

Эй, Туррӑм, тӗрӗслӗх Хуҫи, чӑнлӑха та Санра ҫеҫ куратӑп, ӗҫӗме кура хакласса шанатӑп.

## 15

Эй, Турӑ, каҫар пире. Пурӑнма пӗлеймерӗмӗр, пӗрне-пӗри сивлесе сиен туса пурӑнтӑмӑр. Пире хамӑртан ыйтмасӑрах ҫапӑҫӑва кӗртсе ячӗҫ, пурлӑх туртса илме, ҫын вӗлерме вӗрентрӗҫ. Турӑсӑр ҫӗршыв тӑватпӑр тесе таса чунсене хӗн кӑтартрӗҫ, ашшӗпе ывӑлне, пиччӗшпе шӑллӗне хирӗҫтерсе ячӗҫ, ҫын пурнӑҫӗ йӳнелсе пычӗ, ниме тӑман япала пек кӑна тӑрса юлчӗ. Хура халӑх валли ниҫта та хӳтлӗх ҫук. Патшалӑх ырлӑхӗ чӑваша ӗҫлеттерсе пуякансем валли кӑна пулчӗ. Эпир паян хамӑр килте те хуҫа мар, кӑкӑр туллин сывлама та, ҫӑвар туллин калаҫма та ирӗк ҫук. Эй, Туррӑм, пуҫӑмӑра ҫӗклеме, хамӑрӑн патшалӑха туса хума вӑй пар пире.

## 16

Эй, Турӑ, ирсӗр ҫынна суд тума Сан хӑвату ҫитетех. Ҫакна куртӑм хам куҫпах, ҫывӑх ҫыннӑн шӑпинчех.

Итлемерӗ вӑл мана, пит ҫӑмӑллӑн пӑрӑнчӗ хамӑр халӑх йӑлинчен. Чӑваш юрри янрамарӗ, чӑваш ташши курӑнмарӗ унӑн шавлӑ туйӗнче. Амӑшӗ чӑвашла пил панине кинӗ ӑнланмарӗ, ватӑ ҫыннӑн сӑмахне итлекен те пулмарӗ. Шӑпах ҫавӑ самантра ывӑлне вӑл ҫухатрӗ, чӗри хытӑ ыратнипе куҫне шӑла-шӑла тухса утрӗ килнелле. «Асанне» текен мӑнуксем ҫав ҫемьере курӑнмарӗҫ. Пурӑннӑҫем ашшӗ те тухса пычӗ хисепрен. Тем пек ҫине тӑрсан та чӑрсӑр ӳсрӗҫ ачисем, ҫурма вырӑс пулнишӗн пӑшӑрханчӗҫ кунсерен, ашшӗ панӑ ырлӑха пӗлеймерӗҫ хаклама, час вӗренчӗҫ усала. Пӗри ларать тӗрмере, тепри ялан ӗҫкӗре. Пурнӑҫ ҫапла такӑннишӗн арӑмӗ айӑплать упӑшкине, начар йӑхран пултӑн тесе хурлантарать кашни кун. Ҫапла кирлӗ те ӑна, йӑхне маннӑ чӑваша.

## 17

Эй, Турăçăм, хăв халăхна чăтăмлăх пар. Чăвашăн тĕнче умĕнче парăм çук: çын аллинчи çăкăра туртса илмен, вутпа-хĕçпе пусмăрласа ыттисене нуша кăтартман, хăй килĕнчен хăваласа яман, вăрçассине мар, ĕçлĕ пурнăçа мала хунă. Çавăн пек пулма пире Эсĕ туса янă. Анчах темшĕн тĕнчере чăваша ăнланас текен сахал, унăн ырă кăмăлне асăрхамарĕç, пурăнма вĕрентрĕç урăхла, чăрсăр халăх йăлипе. Усалланса пытăмăр, эрех ăшне путрăмăр, ярса паракансене ырласа мухтав юрри юрларăмăр. Хăй халăхне эрехпе шăваракан патшалăх пире валли мар, вăрçăпа алхасакан халăх пирĕн тус мар.

Эй, Турă, çавăн пек кӳршĕсене пирĕнтен пăрса яр, пĕтер вĕсене, пире хамăр пек пурăнма пулăш, хамăршăн кĕрешме вăй-хал пар.

## 18

Эй, Чăваш Турри, Сан умăнта сăмах чĕнме хăюлăх çитернĕшĕн каçар мана. Чăтаймарăм, никам каламаннине калас терĕм. Турăсене, халăхсене хирĕçтерсе яракансем эпир мар. Пирĕн ун пек йăла çук.

Хăй Туррине мала хуракансем пулчĕç еврейсем. Урăх çĕртен куçса килсе вырăнти халăха хĕсрĕç, çĕрне туртса илчĕç. Мĕншĕн çапла тăватăр тесен, эпир Турă суйласа илнĕ халăх çыннисем терĕç. Çак сăмах ыттисене килĕшмерĕ. Ма тесен Турă суйласа илмен халăх çук. Кашни халăхăн хăй Турри пур. Пире вара Эсĕ суйласа илнĕ. Санран асли, Санран ырри пирĕншĕн урăх никам та çук. Чăваша сыхлать Чăваш Турри. Эпир Сана шанатпăр, Санран хӳтлĕх кĕтетпĕр. Йăнăш утăм тусассăн, Эсĕ пире ан хĕрхен, хăватна ярса вĕрентсе ил.

## 19

Чăваш Турри, каçар мана. Çамрăк пулнă, айван ӳснĕ, ултавçăсен сăмахне те ĕненнĕ.

Ман умра ют халăх туррине мухтарĕç, хăйсемпе пĕрле ăна кĕлтума чĕнчĕç. Эпĕ васкамарăм, иккĕленсе пурăнтăм. Эсĕ пуррине вара пĕлтĕм каярах. Сăнарăм халăх пурнăçне, ун хуйхипе-суйхине, уйрăм çынсен асапне, чăн-чăн чăвашсем телейлине, ĕнентĕм пирĕн хамăр Турă пуррине, чăваша Чăваш Турри кăна хӳтĕлеме пултарнине.

Нуши чăвашăн пит нумай. Анчах айăпĕ Санра мар. Вăл пăсăк чăвашсем сана хирĕçле ĕçсем тунинче.

## 20

Ман çăвартан киревсĕр сăмах тухман, калама та пĕлместĕп. Ярса панă эрехе те тута патне тытмарăм. Манран кулчĕç, айван вырăнне хучĕç. Пирус туртманни те, эрех ĕçменни те пысăк çитменлĕх иккен. Пĕр кун сиктермесĕр çӳрерĕм ĕçе, ырра, илеме вĕрентрĕм çамрăксене. Мана сивĕлерĕç, хăваласа ячĕç, усалпа тав турĕç. Таса çынран хăрарĕç, суя сăмахпа варалама тăрăшрĕç.

Куртăм эпĕ пуçлăхсем иртĕхнине, ултавпа пурăннине, миххи-миххипе укçа сăптăрнине, тарçисене выçă тытнине. Çакна каларăм хăйсене, уççăн пĕлтертĕм çынсене. Каллех, ав, кулчĕç пĕрисем, ылханчĕç пулĕ теприсем. Анчах чĕрем ман ыратмарĕ, тасалтăм эпĕ йăх-яхран, хама вĕçертрĕм капкăнран.

Эй, Турăçăм, Эсĕ çакна куртăн, ман хута кĕтĕн, тăшман çулне пӳлсе утайми турăн. Çук, эпĕ çакăншăн хĕпĕртеместĕп, хĕрхенетĕп кăна хура юнлă усалсене.

## 21

Эй, Турă, йышланма пулăш пире, ĕрчевлĕх пар. Хĕсĕр хĕрарăм ан пултăр, арсем сывлăхлă та хастар çитĕнччĕр.

Ачамăрсене патшалăхшăн çеç мар, хамăра валли çуратар, ырлăхпа, юратупа ӳстерер. Пĕр ача вăл ача мар, икĕ ача – çур ача, виçĕ ача – чăн ача. Пирĕншĕн паян кашни ача хаклă, кашни вилĕм пысăк çухату. Ача амăшне мухтар, тав сăмахĕ калар, чăн-чăн чăваш çитĕнтерме пулăшар.

Ырлăхне Санран ыйтрăм-ха, анчах ăшра канлĕх çук. Пĕрле савăнса пурăнма пирĕн хамăр Çĕршыв та çук. Чăваш çĕрне касса ваклană, халăха пайланă. Пĕр Турăпа, пĕр тĕллевпе пурăнмасăр эпир телейлĕ пулас çук.

Çĕнĕ ăру ӳстерме пире Эсĕ вăй-хал пар, ачамăрсем çине хăюллăх, хастарлăх яр.

## 22

Эй, Турă, мана тĕрĕс çулпа утма çав тери йывăррине куратăн пулĕ. Пур çĕрте те кĕвĕç чунсем, ура хума хăтланакансем. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Мĕншĕн хаярлăхăм çав тери сахал-ши? Тен, ăна Эсĕ хушса парăн? Тен, хаяр пулма кирлех те мар? Пĕлместĕп. Ман пĕртте харкашас килмест, çапăçас килмест. Ман ĕçлесчĕ, çут тĕнче илемĕпе, юрату ăшшипе киленсе пурăнасчĕ.

Эсĕ ман хаярлăха вăйлатсан, эпĕ ăна хам тăшмансемпе çапăçнă çĕре мар, халăх тăшманĕсене тĕп тунă çĕре ярăттăм. Халăхăмăр телейсĕр чухне уйрăм чăваш телейĕ ниме те тăмасть.

**23**

Эй, Турă, мăйăр, йĕкел паракан йывăççене касса тăксан урăх вăрман пулас çук; ачамăрсене сумсăр вăрçа кĕртсе яни те çавах мар-и-ха? Унта вилеççĕ вăйпиттисем, чи сывлăхлисем, чи илемлисем, ача ашшĕ пулса ăрăва вăйлатма хатĕррисем. Вăрçăран таврăнаççĕ аманнисем, хăрушлăхра чунне сусăрлантарнисем. Тăшман кулли темшĕн-çке ытларах чăваша тивет. Пĕртен-пĕр салтак вилсен те – вăл та пулин чăвашах, ыттисем хушнипеле пуçне хурать инçетре.

Пирĕн пурнăç йĕркипе вăрçă пачах кирлĕ мар. Чăваш Турри хушнипе пирĕн паттăрлăх ĕçре, пурнăç çуртне купаланă çĕрте. Анчах пăтранчăк тĕнче ĕçлет пире хирĕçле. Çурт лартакан чăвашăн мĕншĕн пăшал тытмалла? Манăн ырă халăхăм çын вĕлерме çуралман. Каçар пире, Туррăмăр, çакă чи ирсĕр ĕçе хамăр ирĕкпе туман эпир.

**24**

Çын вăл хăйпе хăй самай кăмăллă иккен. Пĕр кахал та хăйне кахал çын вырăнне хумасть, улталакан та, усал тăвакан та çавах: япăх ĕç тăватăп темест. Ĕçке ярăннă çын та хăйне черкке тĕпне путнисен шутне кĕртмест, çынна усал сăмахпа кӳрентерекен те хăйне аванах туять, уншăн намăс-симĕс çук. Тепĕр чухне çак çынсемех Турă пирки пуплешеççĕ, анчах мĕнле Турра аса илеççĕ-ши? Чăваш Туррине мар пуль çав. Хамăр Турра ĕненсен çак çынсем тахçанах тĕрĕс çул çине тăрăччĕç. Ун ырлăхĕ пурне те çитет, темле йывăрлăхран та çăлать.

**25**

Эй, Турă, Сан ятна кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте асăнса çылăха кĕрес марччĕ. Улталаса е вăрласа тупнă укçапа лартнă пӳртре кĕлтуни, варти пĕчĕк пепкене тухтăр пулăшнипе вĕлернĕ хыççăн сывлăх ыйтни, çын вĕлернĕшĕн суда çаклансан çăлăнăç шыраса тархаслани, тепĕр халăха пăхăнтарса чура тăвас тĕллевпе вăрçă пуçланă патша çĕнтерӳ ыйтни «турă» сăмахпа вылявлă усă курни çеç мар-ши?

Турă ятне пур çĕрте те асăнса хамăрăн ырă Сыхлавçăна кӳрентерес марччĕ.

## 26

Такама та куртăм, такампа та калаçрăм. Çын вăл хăй пирки япăх шутламасть, хăйпе хăй кăмăллă. Ыттисем ăна мĕнлерех хак пани кăна канăç памасть, яланах çителĕксĕр пек туйăнать, ырланине, мухтанине илтес килет. Анчах халăх пĕтĕмпех курать: хăй патне ырă кăмăлпа çывхарнă çынсенчен мĕн кирлине săптăрса илнĕ хыççăн вĕсенчен хăвăрт пăрăнса утнине те, тăван пиччĕшне пытарма пыманнине те, пĕрмаях çăхав çырса çынсене тертлентернине те, килĕнче килĕшӳлĕх çуккине те, укçашăн амăшне сутма хатĕррине те...

Çавнашкал çын та, юрату туйăмĕ мĕнлине пĕлменскер, пулать иккен. Мĕншĕн чунĕ çав тери чухăн-ши, сивĕ-ши? Мĕншĕн пурнăçра хăйне çеç курать-ши? Турра пачах маннăран мар-ши?

## 27

Эй, Турăçăм, тавах сана кăштах мана та пултарулăх панăшăн. Эпĕ унпа усă курма пĕлтĕм-ши, пĕлеймерĕм-ши? Анчах тăрăшрăм, пĕр канмасăр ĕçлерĕм, ывăннине те астумастăп. Тăван ялăма, юратнă халăхăма, Чăваш Çĕрне мухтаса юрларăм, пиншер çамрăка пурнăç çулĕ çине кăлартăм. Юрларăм юрату çинчен, ирĕклĕх çинчен, аса илтертĕм çынсене ĕмĕр сакки сарлака пулсан та, ĕмĕрĕ пит кĕскине, телей алă çупса тăнă чух, пурнăç çулĕ такăр чух туссене, тăвансене тав тума манмалла маррине, хамăр Улăп йăхĕнчен пулнине, чăваш чысне алла хĕç тытса хӳтĕленĕ паттăрсене яланах асра тытмаллине.

Ырă çынсем çакна йышăнчĕç, тав сăмахне тивĕçрĕм. Тăшмансем вĕчĕхсе çӳрерĕç, ура хума хăтланчĕç, ĕç тухмарĕ. Эсĕ пулăшнипех ĕнтĕ. Тавах сана, ырă Туррăмăр!

## 28

Эй, Çӳлти Турă, пĕтĕмпех Эсĕ пулăшнипе пулса пычĕ. Эпĕ тĕрĕссине каларăм, ултавлă ĕç туса чап шыракансене питлерĕм, ылтăн-кĕмĕлшĕн сутăнмарăм. Чăн сăмах килĕшмерĕ. Вĕсем выçă çăхан пек пĕр çĕре пухăнса кавар турĕç, ятăма тикĕтпе варалама хăтланчĕç. Анчах ĕçĕ тухмарĕ, хăйсемех çын

кулли пулчӗҫ: пӗрисем тӗрмере ҫӗрчӗҫ, теприсене шалкӑм ҫапрӗ, виҫҫӗмӗшсем катӑка тухса сӳпӗлтетсе ҫӳреҫҫӗ-асапланаҫҫӗ. Эх, мӗскӗнсем. Мӗншӗннине чухлаҫҫӗ-ши? Чӑваш Турри курать ҫав, таса ҫынна тапӑнаканшӑн хаярлӑхне хӗрхенмест. Ҫапла пулмалла та.

## 29

Эй, Турӑҫӑм, ман халӑхӑма сыхла, ун юнне сӑвӑс пек ӗмсе пурӑнакансене аҫа ҫапса ҫунтар. Ӗҫлемен ҫын сӗтелӗ ҫинче ҫӑкӑр ан пултӑр. Чӑваш хӗрарӑмне имҫам тунӑ ҫӗре кӗрте-кӗрте яраканӑн ачи чирлӗ ҫуралтӑр, чӑваш аллинчен туртса илнӗ чӗлӗ пырне лартӑр, ултавпа пухнӑ пурлӑх такӑнтарса пытӑр, хуҫисене пӗр-пӗринпе хирӗҫтерсе ятӑр та тамӑка ӑсаттӑр.

Эй, Чӑваш Турри, ҫакна Сансӑр пуҫне урӑх никам та тӑваяс ҫук. Эпир хамӑр халсӑр, чирлӗ ҫын шайӗнче кӑна. Пире кашни кунах алӑран ҫапса тӑраҫҫӗ, тепӗр чух – йӑхташсем ҫине тӑнипех. Пулӑш пире. Санпа пӗрле вӑйлӑрах пуласса шанатпӑр. Тӑшманшӑн хӑв хӑватна ан хӗрхен.

## 30

Эй, Турӑ, мӗншӗн лекрӗм-ши усал ӗҫ тума пухӑннисем хушшине; мӗншӗн алӑ ҫӗклерӗм-ши пултаруллӑ качча Турра ӗненекен хӗре юратнӑшӑн институтран кӑларса янӑ чухне; мӗншӗн хирӗҫ тӑмарӑм-ши сывлӑх япӑххипе колхоз ӗҫне тухайманшӑн виҫӗ ачаллӑ хӗрарӑмӑн пахчине касса илнӗ чухне, мӗншӗн нимӗн те шарламарӑм-ши ача амӑшӗ пулма хатӗр ҫамрӑк арӑмсене противогаз тӑхӑнтарса наркӑмӑшлӑ цеха кӗртсе янӑ чухне? Ҫилентертӗм эпӗ ҫакна курса тӑракан Таррӑмӑра.

Усал ӗҫе ушкӑнпа туса пырасси нимех те мар иккен. Чун ыратӑвӗ те сисӗнмест; йӑлана кӗрсе пынӑҫемӗн усал ӗҫ пек те туйӑнмасть.

Эй, Турӑҫӑм, мӗншӗн мана чармарӑн-ши, алӑран ҫапмарӑн-ши? Пӗр аллине татсан та нимех марччӗ, чунӑм таса юлатчӗ.

## 31

Эй, Турăçăм, Сана яланах асра тытмалла иккен: хаярлăх капланса килнĕ чухне усал ĕç туса çылăха кĕресрен, савăнăçлă вăхăтра ытлашши иртĕхсе каясран. Çук çав, пурнăç сиккипе пынă чухне Сана часах манатпăр, хамăра Турă вырăнне хума та хатĕр. Кунтан пысăк çылăх çук та пуль. Юрать-ха, хуйхă-суйхă Сана аса илтерсех тăрать, çынна хăй вырăнне лартать.

## 32

Эй, Турă, нивушлĕ ман пурнăçăм малашне те хальхи пекех картран тухнă çынсем хушшинче иртсе пырĕ? Халăхĕ йышлă, йĕркеллĕ çын сахал: пĕри ĕçкĕпе иртĕхет, тепри чавса тавăрса ĕçлес вырăнне вăрра çӳрет; пĕри ултавпа пуять, тепри пĕр тенкĕшĕн çын вĕлерме хатĕр; пĕри ачи-пăчине маннă, тепри – ашшĕ-амăшне; пĕри чăваш килĕнче хăй урăх халăх çынни пулнишĕн каппайланса çӳрет, тепри Чăваш Туррине аса илтерсен куçне чарса тавлашать, чăвашăн хăй Турри пулма пултараймасть тет. Пире чухăнлатасшăн, Турăсăр халăх тăвасшăн, урăх турра пăхăнтарса ĕмĕрлĕхех чура шутĕнче усрасшăн.

Ăçта пурăнатăп-ши вара эпĕ? Чăваш çĕршывĕнчех-ши? Çук, Чăваш Ене паллайми пултăм. Çĕрĕ те, шывĕ те çавах, çыннисем вара пачах урăхласкерсем.

## 33

Эй, Турă, хамăра хисеплеме, юратма вĕрент пире. Ют турă хыççăн кайнипе эпир хамăра хамăр çиекен пулса тăтăмăр, йăхташăмăрсене пинĕ-пинĕпе пĕтертĕмĕр: сутрăмăр, тĕрмере пăчлантартăмăр, пере-пере вĕлертĕмĕр. Пирĕн хаярлăх тăшман валли мар, чăваш валли кăна пулчĕ. Ачамăрсене те пăсăк çулпа ятăмăр, ӳссе çитичченех эрех-сăра лартса патăмăр. Ăçтан сывлăхлă пулччăр-ха вĕсем! Чăвашăн халĕ пурĕ те пĕр чир кăна – ĕçкĕпе иртĕхни. Çавна тӳрлетсен пиртен çирĕп, пиртен ăслă халăх та пулас çук.

Эй, Аслă Аттемĕр, пулăш пире сывалма, пурнăç çине урă куçпа пăхма. Ӳсĕр халăхăн пуласлăхĕ çук.

## 34

Эй, Туррӑм, каллех Сана йӑлӑнатӑп, урӑхла май ҫук. Чӑрмантартӑм пулсан – каҫар.

Эпӗ кӑшкӑртӑм – илтмерӗҫ, эпӗ каларӑм – итлемерӗҫ. Ман сӑмах никама та кирлӗ пулмарӗ: пӗрле утакансене те, пӗрле пурӑнакансене те, пӗрле мӑшкӑл куракансене те... Пӗлӳ те вӗсем валли пулмарӗ. Ма ҫыртӑм-ши, ма вӗрентрӗм-ши? Пурпӗрех ӑссӑрсем хуҫаланаҫҫӗ, халӑха улталаҫҫӗ, айккинелле сӗтӗреҫҫӗ. Манӑн вара халӗ куҫҫуль витӗр пӑхса хурлӑхлӑ кӗвӗ каламалли кӑна юлать. Чӑваш пӗтсе пынине курмастӑр вӗт-ха эсир! Ҫын шучӗ пур-ха, анчах халӑхӗ ҫук. Каярах, тен, мана аса илӗр, анчах вилме выртнӑ чуна чӗртме пулмӗ.

Эй, Турӑ, ҫавӑн пек хӑрушӑ инкекрен хӑтар пире, сыхланса юлма хӑват пар. Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере эпир ытлашши пулас ҫук, ыттисене чӑрмав кӳрес ҫук.

## 35

Эй, Туррӑм, Санран ырлӑх ыйтакан мансӑрах нумай. Ку таранччен парса тӑни те маншӑн пысӑк савӑнӑҫ. Ура утать, алӑ ӗҫлет, куҫӑм курать, хӑлхам илтет, пуҫӑм шухӑшлать, чӗрем кӑна ыратать, чӑваш шӑпишӗн ӑш вӑркать. Енчен те ҫылӑха кӗтӗм пулсан – усал шухӑшпа мар, пурӑнма пӗлменрен. Хам тӑрӑшсан, Эсӗ пулӑшсан ҫылӑхран тасалӑп-ха, кая юлса та пулин тӗрӗс ҫул ҫине тӑрӑп-ха.

Эй, Туррӑм, манӑн пӗртен-пӗр йӑлӑну кӑна: канлӗ ватлӑх пар, вилсен тӑшмана ман тупӑк умӗнче хӗпӗртесе тӑмалла ан ту.

## 36

Эй, Туррӑм, тӗрӗсех турӑм-ши? Хама усал тӑвакансем валли тавӑру шырамарӑм, пурне те каҫартӑм, ырлӑх-сывлӑх сунтӑм. Алӑ пама та хатӗр, анчах хӑйсем пӑрӑнса утаҫҫӗ, куҫран пӑхма хӑяймаҫҫӗ. Пӗр чӑваша та сутмарӑм, сиен кӳмерӗм, халӑм ҫитнӗ таран пулӑшма тӑрӑшрӑм. Панӑ ҫӑкӑршӑн выҫҫа тӑрса юлмарӑм, панӑ тумтиршӗн ҫӗтӗке юлмарӑм, панӑ укҫашӑн чухӑна юлмарӑм. Чӑваш хутне кӗнӗшӗн ятӑм-сумӑм чакмарӗ. Асӑрхакан пулчӗ, ятлакан та тупӑнчӗ, пурпӗр хам ҫулран пӑрӑнмарӑм. Ҫапла пурӑнма мана Чӑваш Турри вӗрентсе пычӗ.

# МАН ПУРНĂÇĂН ТЫТĂМĚ

## 1. ÇУРАЛНĂ ВĂХĂТ

Пурнăçра пĕтĕмпех çын çуралнинчен пуçланать. Çуралмасан нимĕн те çук: çĕр те, хĕвел те, çынсем те, чечексем те... Тĕнчере мĕн пурри хăй хакне, пахалăхне, пĕлтерĕшне çын пурнăçĕ витĕр пăхсан кăна тупать.

Çын тени вăл çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ сăмах, «винтик» кăна мар, уйрăм тĕнче, тата тĕрĕсрех каласан, ятне хунă планета. Çав планетăн хăйĕн çулĕ, орбити пур. Унта вара тем те пулса иртет, утасси те, чупасси те, такăнса тӳнсе каясси те, савăнмалли те, кулянмалли те. Пурăнма пĕлнинчен килет ĕнтĕ. Çутçанталăка ăна ятламăпăр, вăл пуриншĕн те пĕрре, хăй йĕркипе пурăнать. Унăн пирĕнпе нимĕн ĕç те çук. Тен, уншăн эпир чăрмав кӳрекенсем кăна, уйрăмах, пурлăхне ытлашши выçăхса сăптăрнă чухне. Çынпа çын вара пĕр-пĕрне ăнланма пултаратех, паллах, кăмăл пулсан.

Кашни çыннăн – планетăн хăйĕн спутникĕсем пур. Малтанлăха аттепе анне тата çемьери çывăх çынсем кăна-ха. Пысăкланнăçемĕн спутниксен йышĕ те ӳссе пырать, уйрăмах шкула çӳреме тытăнсан, каярах – ĕçленĕ çĕрте. Юнашар мĕнлерех çынсем пулассине чылайăшĕ хăех татса парать. Мĕншĕн чылайăшĕ тетĕп-ха? Хам пурнăçран илсе калатăп ĕнтĕ. Эпир ӳснĕ вăхăтра (вăрçă ачисен шăпи çапларах пулнă çав) аннесен шкула пырса пăхма вăхăт та пулман. Ĕçленĕ вĕсем, атте вырăнне те, лаша вырăнне те хăйсемех тапалашнă. Çав хушăрах урăхла ӳсекенсем те пур. Вĕсен çулне ашшĕ-амăшĕ кăтартса пырать: кампа туслашмаллине, хăш шкулта е институтра вĕренмеллине, камсемпе ĕçлемеллине. Теприсене тата кампа пĕрлешсе çемье çавăрмаллине те татса параççĕ. Апла-и, капла-и, çын çумĕнче яланах çынсем пур. Ăслă та йĕркеллисем хушшинче пурнăç пĕр майлă, киревсĕррисемпе туслă чухне – тепĕр майлă çаврăнса пырать.

Çын çумĕнче тепĕр йышши ушкăн та пур. Çакă вăл япала тĕнчи. Мĕн кăна кирлĕ мар çынна, шутласа та пĕтереес çук. Хăш-пĕр япалисем ача çураличченех хатĕр, теприсене каярах тупаççĕ. Çавăнтан пуçланса каять те ĕнтĕ уйрăм çыннăн япала тĕнчи. Тепри тата япала вăл нимех те мар теме те пултарĕ. Çук çав, савăт-сапа, сĕтел-пукан, кĕпе-тумтир, ĕç хатĕрĕсем, кил-çурт – çаксем пурте ача-пăча аталанăвĕнче самай пысăк витĕм кӳреççĕ. Çын хуллен япала хуçи пулса тăрать, ăна пăхăнма пуçлать.

Çапах та чи пысăк пĕлтерĕшли вăл ăс-хакăлпа сисĕм-туйăм тĕнчи. Çын çуралнă самантра пурнăç кĕрлесе тăрать, мĕн тĕрлĕ шухăшсем хĕвĕшмеççĕ пулĕ, кĕске вăхăтрах темĕн те пулса иртет. Кашниех хатĕр пурнăçа килетпĕр вĕт-ха. Тĕнче пухнă ăс-тăн вара хуллен уйрăм çын пурлăхĕ, вăйĕ пулса тăрать. Туйăм тĕнчи те çавах. Çуралнă-çуралманах ача çирĕпленсе çитнĕ йĕркесен ытамне кĕрсе ӳкет. Хăш-пĕр йăласен вăйне, тен, кун çути куричченех сисет, калăпăр, амăшĕпе ашшĕ килĕштерсе е харкашса пурăннине, варти ачана юратупа кĕтнине е çие юлнишĕн куляннине.

Ача çуралнинчен паха япала çĕр çинче урăх çуках ĕнтĕ. Унпа танлаштарсан çын космосра вĕçни те, çĕр хĕвел тавра çаврăнни те нимех те мар. Çын çурални вара...

Кашни çын вăл тĕнче савăнăçĕ е хуйхи. Пĕр пекки çук, пулма та пултараймасть. Йĕкĕреш çуралнисем те пĕр пек мар, калăпăр, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен, ăс-тăнран. Ытларах çакă тĕлĕнтерет.

Кашни ачан амăшĕпе ашшĕ пур. Телей курма, чăн-чăн çын пулма çуралать пепке. Саккунсăр çуралнă ача çук. Çын пурнăçĕ вăл яланах саккунлă. Аслисем йĕркеллех марришĕн, ăссăрришĕн ача айăплă мар. Çăкăрлă-тăварлă килте çуралать-и, çемьере килĕштерсе пурăнаççĕ-и е йĕри-тавра вăрçă кĕрлет-и – ачан тĕнче умĕнче  нимĕнле айăп та çук. Пурнăçĕ вара ача шăпине хăй майлă татса парать.

Çуралнă кун – чи паллă кун. Пурнăç çулĕ çавăнтан пуçланать те ĕнтĕ. Маншăн çакă кун – 1937 çулхи çурла уйăхĕн 10-мĕшĕ.

Тĕнче шайĕпе пăхсан мĕнлерехскер пулнă-ши çакă кун, ăçта тата мĕн пулса иртнĕ-ши?

Историрен çакă паллă: Испанире хĕрӳ çапăçусем пынă. Фашизма хирĕç çĕкленнĕ халăх фронтне пирĕн çĕршыв пулăшса тăнă, салтаксем те янă. Франко генерала вара Германипе Итали пулăшнă. Пăтранчăк тĕнчере фашизм вăй илсе пыни çынсене канăç паман, Германи, Итали ертӳçисем пĕр чĕлхе

тупни ытти халăхсене хăратнă. Тĕнчен тепĕр вĕçĕнче вара Япони салтакĕсем чăрсăрланнă, Китай çĕрĕ çине кĕрсе кайнă. Унта та вăрçă пуçланнă.

Хамăр çĕршыври хыпарсене илсен хаçатсем çакна пĕлтернĕ: Совет Союзĕн геройĕсене В. П. Чкалова, Г. Ф. Байдукова, А. В. Белякова Мускавран Америкăна пĕр чарăнмасăр вĕçсе çитнĕшĕн Хĕрлĕ Çăлтăр орденĕ парса чысланине; пăр çинчи «Çурçĕр полюс-1» станци мĕнле ĕçленине; Владимир Ульянов Хусан университетне вĕренме кĕни 50 çул çитнине уявлассине; 80 альпинист Кавказ сăрчĕ çине 3 пин те 600 метр таран хăпарса В. И. Ленин бюстне вырнаçтарнине; совет спортсменĕсем Парижра пулнă сăлтавпа ирттернĕ савăнăçлă апатланура СССР полпречĕ Суриц халăхсен генилле çулпуçĕ Сталин юлташ ячĕпе тост каланине; çĕршывра халăх тăшманĕсем йышланса пынине пула вĕсемпе кĕрешес ĕçе вăйлатма кирлине; лайăх ӳснĕ тыр-пула пухса кĕртесси мĕнле пынине те асăрхаттарсах тăнă хаçатсем.

Çулĕ вара Чăваш республикишĕн те ăнăçлă пулнă, уйра вăйлă тыр-пул ешернĕ. Çурлан 10-мĕшĕнче республикăри хаçатсем пурте Парти обкомĕн секретарĕпе Совнарком председателĕ колхозниксене хавхалантарас тĕллевпе янă радиотелеграммăна пичетленĕ, «Красная Чувашия» хаçат вара республикăра Октябрьти Аслă революци 20 çул тултарнине халалланă радиофестиваль пуçланни çинчен пĕлтернĕ. Çав кунах Шупашкарта спорт уявĕ иртнĕ, «Спартак» обществăра тăракансем шывра ишес енĕпе ăмăртнă. Сакăр спортсмен кимĕсемпе Шупашкар – Сĕнтĕрвăрри – Шупашкар маршрутпа тухса кайнă. Ялсенче тыр-пулă пухас ĕç вĕресе тăнă.

Шăхасан районне кĕрекен Чулкăмака ялĕнче (халĕ Канаш районĕ) вара çурлан 10-мĕшĕнче, ытларикун, эпĕ çуралнă. Атте, Ефимов Илья Ефимович, ун чухне бригадирта ĕçленĕ, анне, Васса Павловна, колхозра вăй хунă, йывăр çын пулнине пăхмасăрах тырă вырнă, ытти хĕрарăмсене ырă тĕслĕх кăтартнă. Мана çуратсан тепĕр пилĕк кунтанах уя тухнă. Эпĕ вара кӳмере анне мана тутлă кăкăр сĕчĕпе хăналасса кĕтсе выртнă...

Эпĕ çуралсан ятăм пирки вара самай хĕрӳ тавлашу сиксе тухнă. Вăл вăхăтра ят хунă чухне те политика шайĕпе пăхасси йăлара пулнă, ачасене Рево, Люция, Октябрина, Автоном, Трактор, Сталина ятсем парса тухнă. Патшалăха ертсе пыракансен ячĕсем пысăк хисепре пулнă. Пирĕн ялта Вячеслав Михайлович (анчах Молотов мар), Климент Ефремович (анчах

Ворошилов мар) пурччĕ. Аттен юлташĕсем мана Владимир Ильич тесе чĕнесшĕн пулнă, анчах лешĕ килĕшмен, Анатолий ята суйласа илнĕ. Тĕрĕс тунă вăл. Çакăншăн халĕ те савăнатăп. Ма тесен, ятăма Ульянов-Ленинпа явăçтарнинче нимĕн те лайăххине курмастăп. Тĕнчене пăтраштарса янă Владимир Ильича хĕрхенетĕп кăна. Ниçта ĕçлемесĕр унта-кунта ярăнкаласа çӳренĕскер, Раççейри пурнăç йĕркисене ăнланса илеймесĕрех ку тĕнчерен уйăрăлса кайрĕ. Ӳтне те çĕр йышăнасшăн мар пулас. Чунĕ те асапланать ĕнтĕ унăн. Хĕрлĕ террора кура вĕлернĕ миллионшар çын чунĕ хушшинче нихăçан та канăç тупас çук. Телейсĕр çын пулнă вăл, Владимир Ульянов. Çын евĕрлĕ юратса та, ача-пăчаллă пулса та курайман. Ăмсанмалли ун çумĕнче нимĕн те çук.

Эпĕ çуралнă вăхăтăн тепĕр палли вăл пур çĕрте те репресси алхасни. Пĕр çын та хăй шухăшне уçăмлăн калама пултарайман. Парти, Мускав политики пирки кăшт иккĕленсе калаçсанах çынна тĕрмене хупнă, качакана Сталин ĕни тенĕ çынна та айăпланă. Кĕскен каласан, Сталин режимĕ хĕсĕрлесе çитернĕ хăрушă вăхăтра çуралнă эпĕ. Ун чухне, паллах, чиркӳ çыннисем те пысăк йывăрлăха лекнĕ, хытă хĕстернĕ вĕсене. Апла пулин те чиркӳсем унта-кунта сыхланса юлнă. Тĕн йĕркине пăхсан çурлан 10-мĕшĕ вăл чи паллă кунсенчен пĕри шутланать. Çакă кун чиркӳсенче çирĕм ултă турăша чысласа кĕлĕ ирттереççĕ. Ытларахăшĕ Турă Амăшĕ ячĕпе явăçса тăраканскерсем. Мана Энĕшпуç чиркĕвĕнче шыва кĕртнĕ, хреснатте – Калиновский Александр Андреевич пулнă. Хĕвелтухăç календарĕпе эпĕ вăкăр çулĕнче çуралнă, гороскоппа – арăслан.

## 2. ÇУРАЛНĂ ВЫРĂН

Халĕ вара кăштах тăван енĕм пирки каласа парам. Эпĕ çуралнă вырăна Кипеч тăрăхĕ теççĕ. Кунта юнашарах Ăвăспӳрт, Вăтакас (пирĕн ялсем ăна тепĕр чухне Лешкас теççĕ), Анаткас Кипечсем, вĕсем хушшинче ман тăван ялăм Чулкăмака вырнаçнă. Малтан вăл та Кипечех пулнă. Çак ялсем пĕр-пĕринпе ĕлĕкренпех питĕ туслă, тăванла пурăннă, пĕр çĕр пĕрлешĕвĕнче тăнă. Чулкăмакаран инçех мар Лепенсер сăртĕнче «Ял вырăнĕ» текен лаптăк пур. Шурсухалсем каланă тăрăх, ăвăспӳртсен малтанхи килĕсем çавăнта пулнă. Каярах вĕсем тепĕр çухрăм çура яхăн айккинерех куçса ларнă. Кантур кĕнекисенче вара

çав яла Малые Кибечи тесе çырма пуçланă, лешсене виççĕшне пĕрле – Большие Кибечи (Аслă Кипеч). Кипечсем килĕштерсе пурăннине кăтартакан паллăсем темĕн чухлех. Кашни ялтах тăвансем пур, ĕлĕкрех вилнĕ çынсене те пĕр çĕре пытарнă, масарĕ Чулкăмака çумĕнчи Танюк варĕ вĕçĕнче пулнă.

Кипечсем пирĕн республикăра татах та пур: Канаш районĕнчех тата иккĕ, пĕри – Мăкăрпа юнашар, тепри – Чакаç патĕнче; Елчĕк районĕнче – Кипеç, Комсомольски районĕнче – Çĕнĕ Кипеç, Шупашкар районĕнче – Кипечкасси. Кунсăр пуçне тата Хусан леш енче Кипеч, Аслă Кипеч, Кĕçĕн Кипеч пур. Чăвашсене питĕ хĕстернĕ вăхăтра шăпах çавăнтан куçса килнĕ те ĕнтĕ пирĕн мăн асаттесем. Атăл урлă сулăпа ишсе каçса. Чулкăмака ячĕ те ăнсăртран мар. Тутарстанри Аслă Кипечпе Кĕçĕн Кипеч патĕнче Ташлияр текен вырăн пур. Чăвашла вăл Чуллă çыран тени пулать. Чулĕ вара пирĕн яла икĕ пая уйăрса тăракан тарăн çырмара та питĕ нумай. Канашри кирпĕч çуртсен никĕсĕ валли тата Шупашкара çитерекен аслă çул çине сарма пирĕн ялтан турттаратчĕç, аллăшар лавпа илсе каятчĕç. Мăн чулсене ватса купаласа хурасси вара пирĕн ял çыннисен тивĕçĕ пулнă. Ним тӳлевсĕр ĕçлеттеретчĕç. Аннене пулăшас тесе хам та пайтах мекĕрленнĕ. Пирĕн ялта нӳхрепсем те чулран, тен, ĕлĕкрех кăмакине те çавăнтанах купаланă. Ахальтен Чулкăмака темеççĕ ĕнтĕ.

Ваттисем каланă тăрăх йĕри-тавра сĕм вăрман пулнă. Пирĕн мăн асаттесем йывăç касса кăкласа уй тунă, ăна вĕсем хăртни тенĕ. Çапла вара çĕнĕ çĕре куçса килнĕ кипечсене хăюллă та ĕçчен çынсем теме пулать. Ку çеç те мар-ха, вĕсем сăнран та самай урăхларах, ӳт-пĕврен те станлăрах, çӳллĕрех, тĕреклĕрех. Чулкăмака хĕрĕ Инна Семенова «Чăваш Ен пики» конкурсра пĕрремĕш вырăн йышăнни те ахальтен мар ĕнтĕ. Пĕр сăмахпа каласан, кипечсем – чăн-чăн пăлхар-чăвашсем.

Атте енчен эпĕ Сименук йăхĕнчен пулатăп. Ман асаттен мăн аслашшĕне çапла чĕннĕ. Вăл 18-мĕш ĕмĕр вĕçнелле çуралнă. Сименук ывăлĕ Петĕр ял пуçлăхĕ шутланнă, çĕр валеçнĕ çĕре хутшăннă. Унăн ывăлĕ Трифон Петрович вара кăштах вулама та, çырма та, шутлама та пĕлнĕ, çĕр пайланă чухне чи хисеплисенчен пĕри шутланнă. Трифонăн виçĕ ывăл пулнă: Хĕлип, Ехим, Макçăм. Мана чи çывăххи, паллах, Ехим. Вăл ман аттен ашшĕ, юратнă асатте, чи хаклă çыннăм ĕнтĕ.

Ефим Трифонович ялта сумлă çын шутланнине эпĕ пĕчĕклех сиснĕ. Вăл Япун вăрçинче те пулнă, Микулай патшана та курнă, яла ефрейтор званипе таврăннă. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче вара Польшăра çапăçнă. Тепĕр чухне шӳтлесе полякла

та перкелешетчӗ, вырӑсла салтак юррисем юрлатчӗ. Тӗреклӗ те хӑюллӑ ҫынччӗ вӑл. Сӑнӗпе каснӑ-лартнӑ кӗнекесенче курнӑ И. Н. Ульянов пекчӗ.

Ӗлӗк ӳссе ҫитнӗ хӗрсен ют ялти тӑванӗсем патне ларма ҫӳрес йӑла пулнӑ. Пӗррехинче пирӗн яла вун тӑватӑ ҫухрӑмри Урнартан Пӑлаки ятлӑ хӗр хӑнана пынӑ. Манӑн пулас асаттем ҫавна куҫ хывнӑ. Юратнӑ ӗнтӗ. Ун пуҫне самай хӑюллӑ шухӑш пырса кӗрет: ҫав хӗре вӑрласа илсе килмелле. Вара вӗсем юлташӗсемпе вӑйлӑ лашасем кӳлеҫҫӗ те каҫа хирӗҫ Урнара вӗҫтереҫҫӗ, ҫамрӑксем вӑйӑран саланасса сӑнаса тӑраҫҫӗ.

Ехим юратнӑ хӗрне хапха умӗнче пӗчченех кӗтсе илет. Калаҫаҫҫӗ, кӑштах уткаласа ҫӳреҫҫӗ. Тӑван килтен кӑшт инҫерех кайсан вӗсен умне ҫатан урапапа сиксе тухаҫҫӗ. Ытти вара пӗтӗмпех малтан шухӑшласа хунӑ пек пулса иртнӗ. Урхамахсем пирӗн ялалла тапса сикнӗ. Малта леш ҫатан урапа вӗҫтерсе пынӑ. Ыттисем юриех кая юлса чуптарнӑ. Енчен те хӑвалама тытӑнсан тытса чармалла е йӑнӑш ҫулпа илсе каймалла. Хӑвалакансем пулман. Ҫапах та куракансем тупӑннӑ ҫав, тепӗр кунне Пӑлаки тӑванӗсем персе те ҫитеҫҫӗ. Анчах пулас кӗрӗве курсан лӑпланаҫҫӗ. Шанчӑклӑ ҫын иккенне туйса илнӗ ӗнтӗ вӗсем. Пӑлаки ашшӗпе амӑшӗн Ермолай Ефремовичпа Анна Макаровнӑн ҫамрӑксене пил памалли кӑна юлнӑ.

Асаттепе асанне тӑватӑ ача пӑхса ҫитӗнтернӗ: Уҫтине, Ҫтаппан, Илле, Кирук. Пурте ҫирӗп сывлӑхлӑ ӳснӗ, 1921-мӗш ҫулхи выҫлӑха та чӑтса ирттернӗ, сӑн-питрен те, ӑс-тӑнран та маттурскерсем пулнӑ. Тӳрех каламалла, кунта асанне питӗ тӑрӑшни сисӗнет. Пултаруллӑ хӗрарӑм асатте салтакра чухне те хуҫалӑха йӗркеллех тытса пынӑ, ачисене вӗрентессине те тимлӗ пӑхнӑ. Пӗчӗк чухне тӑватӑ ҫул шкула ҫӳренӗскер ватлӑхра та кӗнекепе туслӑччӗ, чӑвашла пичетленсе тухнӑ тӗн кӗнекисене вулатчӗ. И. Я. Яковлев ятне те пӗрремӗш хут асаннерен илтнӗччӗ. Те хӗр чухне Пӑртас чиркӗвӗнче юрланӑран, темӗн чухлӗ кӗлӗ асра тытатчӗ, юрлама ӑстаччӗ. Асатте те юлсах кайман, ӗҫкӗ-ҫикӗре хӑнасене кӗсле каласа савӑнтарнӑ. Улми йывӑҫҫинчен аякка ӳкмест тенӗ пек, ачисем те аптрасах кайман. Атте хут купӑс калама юратнӑ, «Нарспи» поэмӑна та пӑхмасӑр калама пултарнӑ, Кирук пичче вара сӗрме купӑса килӗштернӗ.

Ҫтаппан пичче Чулхулари милици шкулӗнчен вӗренсе тухнӑ хыҫҫӑн следстви органӗсенче ӗҫленӗ, совет влаҫне, колхоз йӗркине ҫирӗплетес енӗпе вӑй хунӑ, шӑллӗсене те явӑҫтарнӑ. Асатте вара колхоза кӗнӗ чухне икӗ лаша, пӗр лав тырӑ тата тимӗр акапуҫ панӑ. Питӗ тӑрӑшса ӗҫлетчӗ, кӗлте туртта-

ратчӗ, капан тӑватчӗ, вӑрман касатчӗ, колхоз ура ҫине тӑрайманшӑн кулянатчӗ. Юратнӑ лаши те пурччӗ унӑн. Пӗррехинче асатте мана: «Ҫакӑ вӑл хамӑр лаша тихи. Амӑшне фронта илсе кайрӗҫ. Атя ӑна иксӗмӗр хыркӑчласа тасатар», – терӗ. Вара лупасайӗнчен килти выльӑхсем валли хатӗрленӗ курӑка пӗр ытам илчӗ те лашана пачӗ. Лешӗ ним хускалмасӑр ҫисе тӑчӗ. Хӑйне хырса якатни килӗшрӗ ӑна. Хырӑм айне тасатнӑ чухне эпӗ те хыркӑчпа ӗҫлесе пӑхрӑм. Кайран вара асатте лаша йӑптахӗнчен мечӗк йӑваласа пачӗ.

Анне пирӗн хамӑр ялтан ҫичӗ ҫухрӑмри Энтриялӗнчен. Пиллӗкӗн ӳснӗ вӗсем. Анне – чи кӗҫӗнни. Кукамай вара вӑл пӗчӗккӗ чухнех чирлесе вилнӗ. Кукаҫи Павел Петрович тепре авланма шутламан, кӗҫӗн хӗрӗпе иккӗшех пурӑннӑ. Вӗсен ялӗнче ӗлӗкрех вулӑс кантурӗ пулнӑ. Паха шкулпа чиркӳллӗ яла начар теме ҫук ӗнтӗ. Колхозсем йӗркеленӗ хыҫҫӑн кунта бригадирсем хатӗрлекен шкул уҫӑлать. Манӑн атте ҫавӑнта вӗреннӗ чухне хваттере вырнаҫать, хуҫа хӗрне юратса пӑрахать те 1936 ҫулта авланать.

Кукаҫи самай тавҫӑруллӑ ҫын пулнӑ. Иртнӗ ӗмӗрти 20-мӗш ҫулсенче Энтриялӗнче лавкка тытнӑ, хурт-хӑмӑр та ӗрчетнӗ. Юрать-ха аслӑ ывӑлӗ Йӑкӑнат кукка вулӑс комиссарӗнче ӗҫленӗ. Атту кукаҫине Ҫӗпӗрелле те ӑсатма пултарнӑ. Ачисем социализм йӗркине йышӑнсан та кукаҫи колхоза кӗмен.

Йӑх пултарулӑхӗ куккасемпе аппасен ачисенче лайӑх палӑрать. Кам кӑна ҫук пуль вӗсем хушшинче – купӑсҫӑсем, юрӑҫсем, поэт та, балерина та, художник те, ӑста ҫӗвӗҫӗ те...

Тавах аттепе аннене пӗрне-пӗри юратса мӑшӑрланнӑшӑн, мана пурнӑҫ пилленӗшӗн, ҫут тӗнчепе савӑнма май туса панӑшӑн.

## 3. ПИРВАЙХИ ҪУХАТУСЕМ

Ҫӗр ҫинче темӗн те пур, анчах вӑрҫӑран хӑрушши, ирсӗрри пурпӗрех нимӗн те ҫук. Вӑл пӗтӗм пурнӑҫ йӗркине пӑтраштарса ярать, хуйхӑ-суйхӑ, вилӗм акать. Вӑрҫӑ суранӗ питӗ нумая пырать. Ҫакна эпӗ хам куҫпа куртӑм, хам чӑтса ирттертӗм.

Чи пирвайхи асра юлнӑ пулӑм вӑл 1940 ҫулта Кирук пиччене салтака ӑсатни. Ун чухне эпӗ виҫҫӗре кӑна пулнӑ-ха. Ҫапах та атте шӑллӗ килтен тухса каяс умӗн мана та унпа юнашар сӗтел хушшине лартнине астӑватӑп. Эпӗ вара ун чухне ҫапла каланӑ тет: «Кирукки, пӑтӑ ҫи. Салтакра пӑтӑ памаҫҫӗ».

Ҫӳллӗ те тӗреклӗ Кирук пичче ҫӗршывӑн хӗвеланӑҫ

чиккине сыхланӑ ҫӗре лекет. Вӑрҫӑ пуҫланнӑ каҫ вӑл шӑпах пострa тӑнӑ. Заставӑран тухса кайнӑ чухне чӑваш кӗвви шӑхӑрса куҫран ҫухалчӗ тет. Ҫакна мана темле майпа ӑнсӑртран чӗрӗ юлнӑ халӗ Ҫӗрпӳ районӗнчи Тукайра пурӑнакан Петр Павлов каласа панӑччӗ. Унтанпа Кирук пиччене куракан пулман. Вилнӗ ӗнтӗ вӑл. Асанне вара пӗрмаях кӗтетчӗ, хапха сасси илтӗнсенех Кирук мар-ши тесе кантӑкран пӑхса илетчӗ. Мӗн виличченех кӗтрӗ. Асанне 88 ҫула, Ҫтаппан пичче вара Сталинград патӗнче аманнӑ пулсан та 90 ҫула ҫити пурӑнчӗ. Урӑ пурнӑҫа килӗштерни те пулӑшрӗ курӑнать. Ялти сумлӑ ҫын тесен те юрать. Ялсовет секретарӗнче, колхоз председателӗнче ӗҫлерӗ, чылай ҫул хушши ревизи комиссине ертсе пычӗ.

Вӑрҫӑ йӑли, паллӑ ӗнтӗ, тӑшмана тӗп тӑвасси. Енчен те эсӗ тӗл пеме ӗлкӗреймесен, тӑшман пульли хӑвна тивет. Вӑрҫӑра унта вилӗм те сумлӑрах, килте вилни мар. Арҫын шӑпи ҫапларах ҫав.

Кипечсен хӑйевӗрлӗхӗ пирки кӑштах каланӑччӗ ӗнтӗ. Ҫакна тепӗр тӗслӗх те самаях уҫса парать. Пурнӑҫ хӗсӗнсе ҫитнине пула 1921-мӗш ҫулта хресчен пӑлхавӗсем пуҫланаҫҫӗ. Кипечсем те ҫӗкленеҫҫӗ, Энтриялӗнчи вулӑс кантурне ҫӗмӗрме тесе ытти ял ҫыннисене те пӗрле илсе каяҫҫӗ. Ҫул ҫинче совет влаҫӗшӗн агитаци туса ҫӳрекен ҫынпа икӗ салтака тӗл пулаҫҫӗ, пӑшалӗсене туртса илеҫҫӗ те – кантуралла. Лере вӗсене салтаксем кӗтсе тӑнӑ, чиркӳ тӑррине пулемӗт лартсах. Пӑлхавҫӑсене тытса чараҫҫӗ, пирӗн ял ҫыннисене тӑваттӑшне ҫавӑнтах персе пӑрахаҫҫӗ. Пӑлхава пусараҫҫӗ, анчах ҫынсен чунӗнчи хаярлӑх юлатех. Тен, ҫавна пулах колхоз тунӑ чухне те пысӑк чӑрмавсем сике-сике тухаҫҫӗ, председателе вӗлерни те пулнӑ. Ытти ҫӗрте мӗнлине пӗлсех каймастӑп, пирӗн ялта вара колхоза кӗменнисен шучӗ самай йышлӑччӗ. Влаҫ тем пек хытӑ хӗссен те парӑнма шутламастчӗҫ, пӗрне-пӗри пулӑшса пыратчӗҫ. Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче вара, ҫакӑ вӑл каярах паллӑ пулчӗ, вӑрттӑн пухӑнса канашлусем те ирттернӗ, хӑйсен пуҫлӑхне те суйланӑ. Шӑпах ҫак тапхӑрта пирӗн ҫемьешӗн калама ҫук хӑрушӑ инкек сиксе тухрӗ, ман аттене наркӑмӑш парса вӗлерчӗҫ.

Нимӗҫсем Мускав патнех ҫитнине пурте пӗр пек ӑнланман ҫав. Пирӗн атте финанс агенчӗ шучӗпе Хӗрлӗ Ҫара пулӑшас тесе налук пухса ҫӳренӗ. Теприсем коммунистсен влаҫӗ арканасса кӗтсе пурӑннӑ, май килнӗ чухне ура хума та манман. Шӑпах ҫавсенчен пӗри хӑй патне налук парса татасси пирки калаҫма кӗнӗ аттене сӑрапа хӑналать.

Атте мӗнле вилнине паянхи пекех астӑватӑп. Ун чухне ҫав тери сивӗччӗ. Апла пулин те атте ӗҫрен килнӗ ҫӗре анне

мунча хутса хунӑччӗ. Кӑшарни мунчи ӗнтӗ. Малтан аттепе иксӗмӗр кайрӑмӑр. Анчах атте нумай тӑмарӗ, вар ыратать тесе тухрӗ. Кӗҫех анне васкаса пычӗ, мана кӑштах ҫукаласа илчӗ те темле япалапа чӗркесе йӑтса тухрӗ. Эпир кӗнӗ ҫӗре атте урайӗнче йӑваланать, ахлатса сывлать, аллисемпе кӑкӑрне сӑтӑра-сӑтӑра илет, ҫӑварӗнчен кӑпӑклӑ хӑсӑк тухать...

Ҫакӑ вӑл 1942 ҫулхи кӑрлачӑн 18-мӗшӗнче пулса иртрӗ. Икӗ ҫулхи йӑмӑкӑмпа аттесӗр тӑрса юлтӑмӑр. Ӑна юлашки ҫула ӑсатас умӗн пире иксӗмӗре те тупӑк урлӑ йӑтса каҫарчӗҫ. Унтан асанне мана ҫапла каларӗ:

– Халӗ сирӗн хута кам кӗрӗ-ши ӗнтӗ. Хапха айӗнчен пӑхса выртакан йытӑ та вӗрсе ирттерсе ярӗ, автанӗ те сӑхма пикенӗ.

– Автаннех сӑхтармӑпӑр-ха ӑна, – терӗм эпӗ куҫҫуль витӗр калаҫакан асаннене.

Ҫак сӑмахсене ялти ватӑсем халӗ те астӑваҫҫӗ.

Аттене йӑтса тухса кайсан пӳрт пушанса юлчӗ. Эпӗ те пытарма каясшӑнччӗ, ямарӗҫ. Кӑшт вӑхӑт иртсен чӑтса тӑрайманӑм, тумланмасӑрах тухса чупрӑм, самай ватӑ асанне чараймарӗ. Хытӑ чупрӑм, такӑна-такӑна ӳкрӗм, тарӑн юра нуски вӗҫҫӗнех ишрӗм, хӗрӗх градус сивӗ те нимех та мар иккен, юр кӑвар пек пӗҫертет. Тахӑшӗ мана вӑйлӑ алӑпа тытса чарчӗ те пӗр киле йӑтса кӗчӗ...

Самаях шӑннӑ пулмалла ҫав, ҫапах та ҫӑлӑнса юлтӑм. Атте хыҫҫӑнах Волчок ятлӑ йытӑпа чӑхсем вилсе пӗтрӗҫ. Килкартине тухса тӑкнӑ наркӑмӑшлӑ хӑсӑка тутаннӑ ӗнтӗ вӗсем.

Анне каланӑ тӑрӑх, аттене пытарнӑ кун ун ячӗпе фронта каймалли повестка ҫитнӗ. Унччен ӑна ялсоветӗнче ӗҫленӗрен кӑштах броньпа тытса тӑнӑ иккен. Каярах вара анне: «Аҫу мӗншӗн вӑрҫа каймарӗ-ши, тен, сывӑ юлатчӗ», – тетчӗ. Наркӑмӑш параканӗ те паллӑ пулчӗ. Вилес умӗн кӳршӗ хӗрарӑмне каласа хӑварнӑ. Шӑпах совет влаҫне, колхоз йӗркине хирӗҫле ҫын арӑмӗ пулнӑ иккен. Класс кӗрешӗвне пула аттесӗр ӳсрӗмӗр. Вӑл ҫеҫ те мар-ха, атте килте вилнине пула влаҫ енчен нимӗнле ҫӑмӑллӑх та тивмерӗ, налук шучӗпе укҫа-тенкӗне ҫеҫ мар, хамӑр ҫиес апат-ҫимӗҫе те патшалӑха парса пурӑнтӑмӑр. Ачаш ачалӑхӑм пурӗ те тӑватӑ ҫул ҫурӑ кӑна пычӗ. Аттене пытарнӑ кунтан пурнӑҫшӑн кӗрешме тытӑннӑ тапхӑр пуҫланчӗ. Ӑна ачалӑх теме май та ҫук.

Хуйхӑ пӗччен ҫӳремест теҫҫӗ. Пирӗншӗн те ҫапла пулса тухрӗ. Сивӗ те хӑрушӑ хӗле чӑтса ирттернӗ хыҫҫӑн анне мана тата тепӗр йӑмӑк парнеленӗччӗ. Кӑн-кӑвак куҫлӑ пӗчӗк Люҫҫа пӗр ҫултан ытла пурӑнаймарӗ, чирлесе выртнӑ хыҫҫӑн вилчӗ. Ӑна аттепе юнашар пытартӑмӑр. Ҫапла вара эпӗ вилӗ пытарнӑ

çĕре тăватă çултанпах хутшăнма пуçларăм. Çавăнтанпа хам тивĕçе йĕркеллех пурнăçласа пыратăп-ха, тăвансемпе юлташсене юлашки çула йĕркеллĕ ăсатассине сăваплă ĕç вырăнне хуратăп, пулăшма тăрăшатăп.

Вилнĕ çынна пытарасси вăл питĕ пысăк пĕлтерĕшлĕ пурнăç шкулĕ. Ман шутпа çак ĕçе çамрăксене те явăçтарасси пирки нимĕнле иккĕленӳ те пулма пултараймасть. Пĕчĕклех курса ӳсчĕр, пурнăçа хисеплеме, юратма вĕренччĕр вĕсем. Çын ĕмĕрĕ вăрăм мар. Апла пулсан ăна йĕркеллĕ пурăнса ирттермелле.

## 4. ПĔЛӲ ПУХНИ

Çын пек нумай вăхăт хушши пурнăçа хатĕрленекен чĕрчун çĕр çинче урăх çук. Мĕншĕнни те паллă: этемĕн тем тума та пĕлмелле, пурнăçĕ те çав тери нумай енлĕ. Пĕлӳ лавĕ вара икĕ çулпа кусса пырать: пĕри – атте-анне, халăх вĕрентĕвĕ, тепри – шкул.

Халĕ ĕнтĕ пурнăç тути-масине кăштах чухланă хыççăн çапла калас килет: шкулăн чи малтанхи пĕлтерĕшĕ вăл çамрăксене пурнăçа вĕрентесси; паллах, этемлĕх пухнă ăстăнпа усă курса ĕнтĕ; кахал пуçа пĕлӳ çакланасшăн мар, апла пулсан çын хăй тăрăшни кирлĕ.

Çичĕ çул тултарсан саккăртисемпе пĕрле эпĕ те шкула кайрăм.

Чулкăмака шкулĕ 1895 çулта уçăлнă. Малтан ачасене уйрăм çынсен килĕнче вĕрентнĕ ик-виçĕ класа пĕрле лартсах. 1923 çулта тин уйрăм çурт лартма май килнĕ. Вăл та пулин ятарлăскер мар, Высоковка салинчи чиркӳрен куçарса килнĕ улткĕтеслĕ пӳрт кăна. Унччен унта чиркӳ дьяконĕ пурăннă теççĕ. Шкулĕ вара ял варринче, тарăн çырма хĕрринче вырнаçнăччĕ. Пĕрремĕш класра пире Перасковья Родионовна Родионова вĕрентрĕ. Иккĕмĕшĕнче вара пĕртăван Мария Димитриевнăпа Анна Димитриевна ылмашăнса ĕçлерĕç. Калама çук йывăр самана вăхăтĕнче вĕренме тытăннă иккен эпĕ. Атте кĕнекисенчен çĕлекелесе хатĕрленĕ тетрадьсем çине хăрăмран тунă чернилпа çыраттăмăр. Таса тетрадь сайра-хутра кăна леккелетчĕ.

Чи кĕтнĕ уяв ун чухне маншăн Çĕнĕ çулччĕ. Хĕл мучи умĕнче сăвă каласа, юрласа, ташласа тетрадь е премĕк илме май пурччĕ. Хăюллăрах пулни пулăшатчĕ. Ĕлкăран пушă алăпа килместĕмччĕ. Пĕр премĕк лексен те ăна хуçса аннепе йăмăка параттăмччĕ. Чи хакли маншăн, паллах, таса тетрадьчĕ.

1935–36 çулсенче Чулкăмакапа Вăтакас Кипеч хушшинчи уйра чăн-чăн шкул çурчĕ ÿссе ларать. Ăна ниме мелĕпе тăваççĕ. Виççĕмĕш класа куççан çавăнта çÿреме пуçларăм. Васса Ивановна вĕрентетчĕ. Хаваспах çÿреттĕмччĕ, уроксене сиктерес килместчĕ. Анне сăмахне яланах асра тытнă. Вăл мана çапла калатчĕ: «Урокра тимлĕ тăнласа лар. Шкул кантăкĕ патĕнчен туй кĕрлесе иртсе кайсан та учитель çинчен куçна ан ил». Анне педагогикин тĕшши ĕнтĕ. Шкула пырса çÿреме вăхăчĕ пулман, пĕр кун сиктермесĕр колхозра ĕçлеме тивнĕ. Эпир ун чухне пурте тенĕ пекех хамăр тĕллĕн вĕренекен ачасем пулнă. Тăваттăмĕш класран пуçласа класран класа экзамен тыттарса куçарнă. 1951 çулта Чулкăмакари çичĕ çул вĕренмелли шкула пĕтернĕ хыççăн хамăртан виçĕ çухрăмра ларакан Ăвăспÿрт Кипечри вăтам шкула кайрăм. Виçĕ çул хушши укçа тÿлесе вĕрентĕм.

Укçа тесенех çамрăк чухнехи виçĕ ултава аса илетĕп.

*Пĕрремĕшĕ*. Саккăрмĕш класс хыççăн кăштах та пулин укçа тупасчĕ тесе Семенов Яковпа чугун çул юсанă çĕре кайрăмăр. Канашпа Шупашкар хушшинчи çул çине çÿремеллеччĕ, кашни ирех – çичĕ çухрăма яхăн çурран танккамаллаччĕ. Çитĕннисемпе пĕр танах хăйăр, шпал, рельса йăтрăмăр! Укçа илмелли кун казармăри касса патне пытăмăр та пире ведомоçа кĕртмен те. Маçтăр патне пырсан вăл пире пĕр виçĕ буханкă çăкăр илмелĕх хăй кĕсйинчен кăларса пачĕ те çитес уйăхра çырса паратăп тесе лăплантарчĕ. Виктор ятлă вырăсчĕ вăл. Кайран та çырса памарĕ. Аптранипе Канаша кайса пăхрăмăр, ĕç тухмарĕ, укçа илесси пулмарĕ. Каччă шутне кĕнĕ вăхăт вĕт-ха, тумланас та килет. Анчах ĕмĕтленни пурнăçа кĕмерĕ. Каллех анне куçĕнчен пăхма тиврĕ.

*Иккĕмĕшĕ*. Ку хутĕнче укçа ыйтăвне урăхларах татса пама шутларăм. Ун чухне пирĕн ялтан çăвĕпех чул турттаратчĕç. Чулне кăларакансене кăштах укçа та тиветчĕ. Кам миçе кубла метр кăларнине шута илекен çынни те пурччĕ. Укçине çавăнтан илмеллеччĕ. Хамран кăшт аслăрах Гаврилпа ĕçе пуçăнтăмăр, иртен пуçласа каçчен мăн чулсене чавса кăларса лумпа, зубилăпа ватрăмăр. Йывăр кувалдăпа çапнă чухне хĕм сирпĕнсе тăратчĕ. Пĕр вунпилĕк куба яхăн купаласа хунăччĕ. Анчах леш арçын пире каламасăрах такамсене тиеттерсе янă. Укçине тем чуль тархасласа ыйтсан та памарĕ. Каллех ĕç тухмарĕ. Ĕçлени, тапаçланни уссăрах пулчĕ.

*Виççĕмĕшĕ*. 1954 çулхи çуркунне вăтам шкултан вĕренсе тухрăм. Аттестат çине пăхсан аванах вĕреннĕ теме пулать. Пĕр виççĕ кăна, СССР конституцийĕпе. Тĕрĕсех лартса панă пуль

ёнтӗ. Темшӗн ҫак предмета килӗштерсех каймастӑмччӗ, чун туртмастчӗ. Те конституцире ҫырнипе пурнӑҫри чӑнлӑх хушшинчи хирӗҫӳ пурри чӑрмав кӳнӗ мана. Калама пултараймастӑп.

Аттестат илнӗ хыҫҫӑн вунӑ ҫул юнашар ларса вӗреннӗ Сорокин Толяпа Хусана тухса кайрӑмӑр института кӗрес тӗллевпе. (Ун чухне пирӗн тӑрӑхра Шупашкар сумлӑ хула шутӗнчех пулман. Хусана мала хунӑ). Юлташӑм ветеринари институтне заявлени пачӗ, эпӗ – хими технологине вӗрентекен уйрӑма. Химипе аттестатра пиллӗк пулнине шута илсех ёнтӗ.

Экзамен пама кайсан общежитие вырнаҫрӑм. Халиччен хулара пурӑнса курманскер, кунти йӗркесене пӗлсех кайман ҫав эпӗ. Пӗтӗм пурнӑҫ укҫапа тытӑнса тӑрать иккен. Анне парса янӑ укҫа часах пӗтрӗ. Ҫиес килет, вулани те пуҫа кӗмест. Общежити алӑкӗ ҫине баржа пушатма ҫынсем кирлӗ тесе ҫырса ҫапнине аса илтӗм те Атӑл хӗрриневаскарӑм. Аялти трюмран самай чӑнкӑ вырнаҫтарнӑ ансӑр хӑма тӑрӑх кунӗпех ҫӑнӑх миххи йӑтрӑм, вӑйпитти арҫынсемпе танах. Каҫа хирӗҫ пушатса пӗтертӗмӗр. Асли укҫа салатса пачӗ. Тӳрех столовӑйне чупрӑм, тӑраниччен ҫирӗм. Укҫи вара тепре ҫимелӗх кӑна юлчӗ. Нивушлӗ кунӗпе тапаланса та иккӗ ҫимелӗх ҫеҫ ӗҫлесе илнӗ вара эпӗ?

Йывӑр ӗҫе пула картлатса тапакан чӗрем кӑштах лӑпланнӑ хыҫҫӑн Атӑл хӗрне ҫывхартӑм та хывӑнса кӗпе-йӗме силлесе тасатрӑм. Ӳтӗме канӑҫ пултӑр тесе шыва кӗме шутларӑм, Атӑлта пӗрремӗш хут. Ҫапла кӑштах ишкелесе ҫӳренӗ чух асӑрхаман та, шыв юххи мана анаталла сӗтӗрет иккен. Ялти пӗвесенче кӑна ишкелесе ӳснӗскер Атӑла хирӗҫ кӗрешейместӗп, ывӑнниччен ӗҫленӗрен вӑйӑм та сахал. Акӑ ҫыран хӗрринче ларакан баржӑсем пӗрин хыҫҫӑн тепри юла пуҫларӗҫ. Портра ӗҫлекенсем те килӗсене саланса пӗтнӗ пулас. Пӗтӗм вӑя пухса пӗр баржи патне ҫывхартӑм, анчах питӗ ҫӳллӗскер, ниҫтан та ҫакланма ҫук. Юнашар тепри ларать. Ман телее унта пӗр ҫын курӑнса кайрӗ. Пулӑшма ыйтса кӑшкӑрсанах вӑл мана вӑрӑм пакур тыттарчӗ...

Калаҫакан ҫынсен сассипе вӑранса кайрӑм. Ман умра виҫҫӗн тӑраҫҫӗ. Эпӗ вара тумтирсӗрех ҫыран хӗрринче выртатӑп. Тӑна ҫухатнӑ иккен. Пӗри мана ура ҫине тӑма пулӑшрӗ. Эпӗ вӗсене тав турӑм та кӗпе-йӗме тупасчӗ тесе ҫыран хӗррипе тӑвалла утрӑм. Общежитие тӗттӗм пулсан тин ҫитрӗм. Ытти ачасем ҫаплипех кӗнеке вуласа лараҫҫӗ. Тепӗр кунне экзамена кайрӑм, аттестатри пиллӗке ҫирӗплетеймерӗм, химипе «виҫҫӗ» кӑна лартса пачӗҫ. Кун пек паллӑпа институт пирки ӗмӗтленмелли

те çук, документсене илтĕм те килелле çул тытрăм. Вагонра мана хирĕç ларакан икĕ каччă калаçса пыни хăлхана çакланчĕ. Васильевăри вăрман техникумне заявлени парас пирки пуплешеççĕ. Ман пек телейсĕрсем татах пур иккен. Эпĕ те калаçăва хутшăнтăм, çавсемпе пĕрле поездран анса юлтăм. Техникумĕ ăçтине ыйтса пĕлтĕмĕр те поселокăн тепĕр вĕçнелле пĕр виçĕ çухрăма яхăн утрăмăр. Калаçса пынăçемĕн çывăхрах паллашрăмăр, кусем Тĕрлемес ачисем иккен.

Кĕркунне техникума тухса кайрăм. Çапла вара вунçиччĕрен пуçласа хам тĕллĕнех пурăнма тытăнтăм. Яла пырсан анне çимелли парса яратчĕ, укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен ăна чăрмав кӳрес темен. Стипенди илеттĕм. Общежитишĕн, заемшăн тӳлесен укçи кăшт кăна юлатчĕ. Техникумран инçех мар вăрман комбиначĕ пурччĕ, çавăнта тин çеç çурса кăларнă чĕрĕ хăмасене вагона тиеме çӳреттĕмĕр, тепĕр чухне çĕрĕпех ĕçлеттĕмĕр. Маншăн чăн-чăн пурнăç шкулĕ пуçланчĕ. Туслăх мĕнле хаклă япала пулнине те çавăнта туйса илтĕм. Пĕр ушкăнрах вырăссем, тутарсем, чăвашсем, çармăссем, удмуртсем пĕрле вĕренеттĕмĕр. Еврей хĕрачи те пурччĕ. Чи çывăххисем, паллах, чăвашсемччĕ. Уйрăмах Вăрмар районĕнчи Кавал каччипе Александр Михайловпа туслашса кайрăмăр, вĕренӳре те, ĕçре те, спортра та пĕрлеччĕ. Техникум пĕтерсен те ĕçлеме пĕрле кайрăмăр, Свердловск облаçĕнче вăрман хуçалăхĕнче вăй хутăмăр. Студент пурнăçĕ паллă ĕнтĕ, апат-çимĕç хĕсĕкки чăрмантарать. Вăрманти пурнăç пачах урăхла. Хваттер хуçисен сĕтелĕ çинче сĕт-çу яланах çителĕклĕччĕ. Кĕске вăхăтрах ӳт хутшăна пуçларĕ, вăйланса, сăнран та улшăнса пытăм. Каярах вара юлташпа иксĕмĕр те Тинĕс-Çар Флотне юрăхлă пултăмăр, Владивостока çитсен пире уйăрса ячĕç. Вырăс утравĕ çине лекрĕм, унтан – каллех Владивостока.

Шăп çав вăхăтра Н. С. Хрущев çине тăнипе «сокращени» текенни пуçланчĕ. Мана икĕ хутчен те Тинĕс-Çар офицерне вĕренме кайма сĕнсе пăхрĕç. Эпĕ килĕшмерĕм. Вăрман хуçалăхĕнче десятникре ĕçлесе курнăран-ши мана флотри пăхăну йĕрки кăмăла каймарĕ. Тепĕр чухне ăнланма май çук приказа та пурнăçлама тивет.

Акă пĕрре йĕлтĕрпе чупса ăмăртма тесе хула хĕррине илсе кайрĕç. Палăртнă вырăна çитрĕмĕр те ярăнмалăх юрĕ те çук. Вара командирсем пире сăрт хушшинчи юра плащ-палаткăпа сĕтĕрттерсе йĕлтĕр çулĕ тутарчĕç. Çур куна яхăн тапалашнă хыççăн ăмăрту ирттертĕмĕр. Ячĕшĕн кăна пулчĕ ĕнтĕ вăл. Нивушлĕ юр çуса парасса кĕтме юраман вара. Хĕл тăршшĕ вăрăм вĕт-ха вăл. Е тата тепĕр тĕслĕх. Ку хутĕнче вара пачах

урăхла. Эпир çывăрса тăнă çĕре Владивосток юр айне путнă тесен те юрать. Поездсем те çӳреймеççĕ иккен. Ирхи апат хыççăн пире вокзала юр хырма илсе кайрĕç. Эх,васкатаççĕ, канма та памаççĕ. Ак тамаша, пĕлĕт яр уçăлса кайрĕ те хĕвел хĕртме пуçларĕ, кăнтăр енчен ăшă çил вĕрни сисĕнчĕ. Кĕске вăхăтрах юр ирĕлсе пынăçемĕн шыв юхма тытăнчĕ. Синоптик текеннисем хулара пулнах ĕнтĕ, анчах вĕсенчен ыйтса пĕлес текен командир тупăнман. Кусем вĕсем пĕчĕк пăтăрмахсем кăна-ха. Кăмăла чăннипех хуçаканни вара урăххи пулчĕ. Вĕрентӳ отрядĕнче чухне апат-çимĕç упранакан нӳхрепре пулма тӳр килчĕ, сăрта икçĕр метра яхăн шăтарса тунăскерĕнче. Икĕ енĕпе те ултшар пăт туртакан сысна тушкисем çакăнса тăраççĕ. Вĕсен айĕнчи вăрăм сĕтелсем çинче икшер ретĕн услам çу коробкисем. Пĕрре кĕрсе кайса пин те пилĕкçĕр матроса çитермелĕх йăтса тухрăмăр. Халăх пурлăхĕ, аттепе аннесем хăйсем çимесĕр панă çимĕç вĕт-ха çакă.

Тепрехинче пире карапсем çинчен илнĕ кивĕ тупăсем упранакан арсенала илсе кайрĕç. Тин çеç пушатса хăварнă тупăсене ретĕн-ретĕн лартса тухрăмăр. Эх тĕнче! Мĕн кăна çук унта. Хаклă металран тунă пиншер япала юхăнса выртать. Çав хушăрах вăрман касакансем валли лайăх пуртă туса параймастпăр, çур кун ĕçлесенех хăйрама тивет. Халăх ĕнси çинче ларакан Çар пек хакли урăх нимĕн те çук иккен. Çак шухăшсемпе киле таврăнтăм. Каллех вĕренесси пирки шутлама пуçларăм. Ленинградри вăрман академине каяс кăмăл та пурччĕ. Анчах пурнăç шăпи урăх еннелле туртса илчĕ. 1958 çулхи кĕркунне Канашри педагогика училищине музыка уйрăмне вĕренме кĕтĕм. Пачах урăхла тĕнчене лекрĕм. Пĕрремĕш класс ачи саспаллисене уйăрма хăнăхнă пек нотăсем вулама вĕренме тиврĕ. Ку çеç те мар-ха, çак ĕçе ытлашши кая юлса пуçăннăран баян каланă чухне те йывăрлăхсем сиксе тухрĕç, кире пуканĕпе, бокспа аппаланса çирĕплетнĕ вăйлă алăсем пăхăнасшăнах пулмарĕç. Çапах та çине тăни сая каймарĕ, иккĕмĕш çул ыттисемпе шаях ĕлкĕрсе пытăм. Виççĕмĕшĕнче хам вăтам пĕлӳ илнĕ Ăвăспӳрт Кипеч шкулĕнче уроксем пама тытăнтăм. 1961 çулта диплом илсен мана Йĕпреçри интернат-шкула ячĕç. Унта икĕ çул ĕçленĕ хыççăн Канашри педагогика училищине куçрăм. Çакăнта пĕр çул ĕçлени мана малалла вĕренме хистерĕ. 1964 çулта И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче музыка факультечĕ уçăлчĕ. Çавăнта çул тытрăм. Канашра та музыка уйрăмне уçнă çулах вĕренме кĕнĕччĕ, кунта та çавах, пĕрремĕшсен шутĕнче пултăм.

Шупашкара куçнине эпĕ пурнăçри чи паллă пулăмсен

шутне кĕртетĕп. Тавракурăмра пысăк улшăнусем пулса иртрĕç, чăваш культури, наци аталанăвĕ пирки урăхларах шухăшлама пуçларăм. Паллах, çакă вăл вĕрентекенсем тăрăшмасăр пулман ёнтĕ. Эпĕ вĕреннĕ чухне факультетра чи паллă композиторсем, музыкантсем, юрăçсем ĕçлетчĕç, калăпăр, В. А. Ходяшев, А. В. Асламас, Т. И. Фандеев, А. А. Петров, М. И. Денисов, В. И. Елфимов, Л. Г. Романенко, А. В. Чернов, Л. Д. Разумов, Г. С. Максимов. Пире педагогикăна вĕрентнĕ Ю. П. Сокольников, М. К. Енисеев, И. П. Прокопьев доцентсем каярах виççĕшĕ те наука докторĕсем, профессорсем пулса тăчĕç. Çавсем хавхалантарнипех институтра вĕреннĕ чухнех аспирантура пирки ĕмĕтленме тытăнтăм. М. К. Енисеев ертсе пынипе диплом ĕçĕ çырса хӳтĕлерĕм. Дирижированипе те экзамена ыттисем пек тытмарăм. Кӳкеçри культура çуртĕнчи хам йĕркеленĕ хорпа мĕнле ĕçленине кăтартрăм, хам вĕрентнĕ юрăсене юрлаттартăм. Ытти студентсем вара педагогикăпа билет илсе хуравларĕç, юррисене факультет хорĕ юрласа пачĕ. Ыттисенчен кăштах аслăрах пулнăран-ши, хам çула шырама тăрăшрăм. Çапла ĕçлеме хăнăхни кайран аспирантурăна кĕрсен те самай усăллă пулчĕ.

## 5. ĂСЛĂЛĂХ ÇУЛĔ

Йĕпреçри интернатра ĕçленĕ чухне хам шухăшсене çыркаласа пынăччĕ. Институтра çавна Ю. П. Сокольникова кăтартса пăхрăм. Вулама илсе юлчĕ те тепĕр куннех тавăрса пачĕ. Алла тытсассăнах пит пĕçерсе кайрĕ, йăнăшсем нумай иккен. Çапах та хама вĕрентекен доцент вăхăтне шеллемесĕрех пĕтĕмпех тӳрлетсе тухнă. Грамматикăри кăлтăксем пирки нимех те шарламарĕ, ачасем музыка тĕлĕшĕнчен мĕнле аталанса пынине асăрхаса çырнисене ырларĕ. Енчен те Юрген Петрович хавхалантарман пулсассăн наука çулĕ çине тăрас та çукчĕ. Ун хыççăн М. К. Енисеев аллине лекрĕм. Вăл мана шкулта мĕнле экспериментсем ирттерме май пуррине кăтартса пачĕ. Хаваспах диплом ĕçне кӳлĕнтĕм, наука чĕлхине хăнăхса çите пуçларăм. Шухăшлав та кунта искусствăри пек мар иккен, ытларах диалектикăпа логика çине тайăнса ĕçлемелле.

Юлашки курсра вĕреннĕ чухне кăрлачăн 21-мĕшĕнче «Советская Чувашия» хаçатра манăн «Пути ведут в школу» ятлă статья пичетленсе тухрĕ. Кунта эпĕ шкул ачисене музыкăна вĕрентес ĕçе мĕнле майсемпе вăйлатасси пирки сăмах хускатрăм. Кăшт каярах пуш уйăхăн вĕçĕнче Мускавра пĕтĕм Союз шайĕпе ирттерекен наука конференцине хутшăнма май килчĕ. Çĕршывĕпе паллă ученăйсене пĕрремĕш хут куртăм, ют

çĕршывран килнисем те йышлăнччĕ. Чунăм пăлхарсем еннелле туртрĕ, паллашрăмăр. Кайран пĕр вăхăт хушши çырусем те çыркаларăмăр.

Çав конференци вăхăтĕнче тĕнчери пĕрремĕш космонавт Юрий Гагарин вилнине пĕлтĕмĕр. Калама çук пысăк куляну. Ăна пытарнă çĕре хутшăнтăм, пилĕк сехете яхăн черетре тăрса сывпуллашрăм.

Алла диплом иличченех кандидат экзаменĕ пама хатĕрлекен курса çӳреме тытăнтăм. Философипе йывăрах марччĕ. Вăл маншăн институтра чи юратнă предметсенчен пĕри шутланнă. Ют чĕлхепе вара самаях тар юхтарма тиврĕ. Институтра итали чĕлхине алла илме тăрăшрăм, аванах калаçма хăнăхса çитнĕччĕ. Анчах ку чĕлхепе кандидат экзаменĕ йышăнакансем Шупашкарта тупăнмарĕç. Ирĕксĕрех шкулта вĕренкеленĕ нимĕç чĕлхине аса илме тиврĕ. Словарьпе нимĕçле хаçатсене кĕсьерех чиксе çӳрерĕм, кашни пушă вăхăтпа усă курма тăрăшрăм.

Институт пĕтерсен Кӳкеç шкулне янăччĕ. Унта пĕр çул ĕçленĕ хыççăн 1969 çулхи кĕркунне мана учительсен пĕлĕвне ӳстерекен института чĕнсе илчĕç, музыка кабинетне шанса пачĕç. Урăхла каласан, республикăри шкулсенчи музыка учителĕсене методика тĕлĕшĕнчен пулăшса пырас ĕçе. Çакă мана наука çулĕпе хăюллăнрах утма май пачĕ: шкулсене тухса çӳренĕ чухне пулас статьясемпе кĕнекесем валли материал пухрăм, Мускава кайсан ученăйсене хам тунă сăнав ĕçĕсемпе паллаштартăм.

Наука кандидачĕ пулма хатĕрленекен çыншăн чи йывăр ыйту вăл диссертаци валли ăнăçлă тема тупасси. Кун пирки сахал мар пуçа ватма тиврĕ. Мускаврисемпе те калаçса пăхрăм. Кашни профессорăн хăйĕн наука шкулĕ иккен. Çамрăк тĕпчевçĕсене те çавăнталлах туртаççĕ. Манăн вара хам юратнă темăран пăрăнас килмерĕ, шкул ачисене эстетикăлла воспитани парас енĕпе ĕçлекен ăсчаха шырарăм. Çавăн пек çын тупăнчĕ. Пĕррехинче учительсен пĕлĕвне ӳстерекен Мускаври тĕп института лекци вулама И. Л. Любинский профессор пынăччĕ. Вăл ун чухне пире ачасен тĕнчекурăмне аталантарас ĕçре искусствăпа мĕнле усă курмалли çинчен каласа пачĕ. Тăхтав вăхăтĕнче ун патне пытăм та хампа паллаштартăм, мĕнле проблемăпа ĕçленине пĕлтертĕм, пичетлеме хатĕрленĕ статьясене кăтартса пăхрăм. Вăл ман шухăшсене ырларĕ, хăй адресне пачĕ. Каярах çыру çӳретме тытăнтăмăр, вăл çине тăнипе СССР Педагогика наукисен академийĕнчи конференцисене хутшăнма пуçларăм, статьясем те пичетленсе тухрĕç. Педагогикăпа кандидат экза-

менне панă хыççăн умри çул тата уçăмлăрах курăнма пуçларĕ.

Сăмах май çакна каласа хăварас килет. Чылайăшĕ вунвиççĕ числона пачах та килĕштермеççĕ, хăш-пĕр çĕршывсенче вунвиççĕмĕш номерлĕ хваттерсем те çук теççĕ. Маншăн вара пачах урăхла. Философипе кандидат экзаменне 1969 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче питĕ лайăх паллăпа тытнăччĕ, пиллĕклĕх. Педагогикăна та çавах, тĕпчев институтне кĕрсен гардеробра 13-мĕш номерлĕ жетон тыттарчĕç, билечĕ те вунвиççĕмĕш лекрĕ. Н. И. Болдырев профессор ертсе пыракан комисси ман хуравпа кăмăллă пулчĕ.

Кун хыççăн ман ума тепĕр тĕллев тухса тăчĕ – аспирантура алăкне уçасси. Ĕçĕ вара çапла пулса иртрĕ.Ун чухне аспирантурăна кĕме питĕ йывăрччĕ. Ма тесен, пурте Мускавалла туртăнатчĕç, союзлă республикăсенчен кăна мар, ют çĕршывсенчен те. Кирлĕ хутсене хатĕрлесе çитернĕ хыççăн аспирантура ыйтăвне 1971 çулхи юпа уйăхĕнче татса пама май пурччĕ. Анчах... Шăп çав вăхăтра пире, аспирантурăна кĕме Мускава пухăннăскерсене, пач кĕтмен хыпар пĕлтерчĕç. Аспирантурăри темиçе вырăна Чехословакирен килекенсене параççĕ иккен. Мана тата темиçе çынна тепĕр çул илетпĕр тесе лăплантарса ячĕç. Шупашкара таврăнтăм та халиччензи пекех ĕçе пикентĕм.

Тепĕр виçĕ уйăхран И. Л. Любинскирен çыру илтĕм. Ун патĕнче 1972 çулхи кăрлачăн 15-мĕшĕнче мана аспирантурăна илнине пĕлтерекен приказ копийĕ выртать иккен. Савăнтăм ĕнтĕ. Каярах вара çакă паллă пулчĕ. Манăн пулас наука ертӳçи РСФСР çутĕç министерствинче ятарлă хут тутарса СССР педагогика наукисен Академийĕн президиумне çитнĕ, мана валли аспирантурăра вĕренме планран ирттерсе пĕр вырăн уйăрса пама ыйтнă. Академи вице-президенчĕ А. И. Маркушевич хута кĕнипе çакна тивĕçтернĕ. Вара эпĕ заочнă йĕркепе аспирантурăра вĕренме тытăнтăм. Диссертаци çырса хатĕрлеме тăватă çул пачĕç. Çакă маншăн лайăхрах та пулчĕ. Ача та çулталăк çурăра кăначчĕ, анне те йывăр чирпе аптратчĕ, Шупашкарти архивсемпе музейсенчи хутсене те тĕплĕн тишкерсе тухмалла. Чавса тавăрсах тĕпчев ĕçне кӳлĕнтĕм. Кун йĕркине те улшăнусем кĕртрĕм. Учительсен пĕлĕвне ӳстерекен института ирех çитсе ларса ыттисем пыриччен самай ăнăçлă ĕçлеттĕм. Каçпала та ларса юлма тиветчĕ. Кашни çулах икшер уйăха яхăн Мускавра пулаттăмччĕ. Библиотекăсем, музейсем, театрсем ман юратнă вырăнсем пулса тăчĕç. Пурĕ вунă театрпа паллашрăм. И. Л. Любинский ачасем валли кăларакан кинофильмсене йышăнакан комиссире тăратчĕ, хăш чухне мана та пĕрле илсе каятчĕ. «Чучело» фильм пирки çур куна яхăн тавлашнине нихăçан та манас çук, Ролан Быков режиссер сăнарĕ халĕ те куç умĕнчех.

Академире яланах мĕн те пулин интересли пурччĕ: докладсем, диссертаци хӳтĕлени, симпозиумсем. Д. Б. Кабалевский композитор-педагогпа паллашни, ун урокĕнче сăнаса ларни хăех мĕне тăрать. Хамăр ентешсемпе Г. Н. Волковпа Ю. П. Сокольников наука докторĕсемпе канашласа пăхни те питĕ усăллăччĕ. Çак ăслă çынсен килĕсенче темиçе хут та пулса куртăм, яланах ырă кăмăлпа йышăнатчĕç. Геннадий Никандровичăн вара Шупашкар пирки тунсăхлани сисĕнетчĕ. Чăваш Енрен тухса каяс килмен ĕнтĕ унăн. Кунта эпĕ çак пултаруллă чăвашпа кун ирттернĕ пĕр тĕслĕх пирки тĕплĕнрех чарăнса тăрасшăн. Тĕлпулу 1975 çулхи çу уйăхĕн 28-мĕш кунĕнче пулса иртнĕччĕ.

Ун чухне Г. Н. Волков Шупашкара кайнăччĕ. Вăл Мускава таврăнасса пĕлсен ирхине ирех Хусан вокзалне васкарăм, перрон çине тухса улттăмĕш вагон чарăннă тĕле пытăм. Кĕтнĕ поезд вăхăтрах çитрĕ. Акă Шупашкар хăни те вагонран тухрĕ. Мана курсан кăштах тĕлĕннĕ пек пăхса илчĕ. Эпĕ хирĕç тухасса кĕтмен ĕнтĕ вăл. Унăн самай пысăк сумкине йăтрăм та вокзал патнелле уттартăмăр. Профессор тӳрех ман ĕçсем пирки ыйтса пĕлме тытăнчĕ. Эпĕ ăна хам диссертацие ĕнер мĕнле сӳтсе явни çинчен каласа патăм. Вокзал умне тухсан такси çине лартăмăр та Тёплый Стан текен вырăналла вĕçтертĕмĕр. Кăшт кайсанах водитель чарăна-чарăна ыттисенчен çул ыйтма пуçларĕ, тинтерех çеç ĕçлеме тытăннă пулас. Малалла вара çула Геннадий Никандрович хăй кăтартса пычĕ. Мускава лайăх пĕлет иккен. Акă çĕнĕ çуртсем курăна пуçларĕç. Чарăнтăмăр. Таксишĕн тӳлеме тытăнсан мана вăйпах пӳлсе Г. Н. Волков хăй укçине пачĕ.

Кĕçех виçĕ пӳлĕмлĕ пушă хваттере кĕрсе тăтăмăр. Тӳрех çакна асăрхарăм: пукан та, сĕтел те, диван та çук, кĕнеке хумалли шкапсене вара турттарса та килнĕ. Пĕрремĕш вырăнта кĕнекесем иккен.

Кил хуçи пĕр кĕтесре выртакан хута илчĕ те хĕпĕртесех кайрĕ. Хĕрĕ çырса хăварнă пĕчĕк çыру иккен. Çавă килсе йĕрке тунă, урайне те çуса тасатнă. Кăштах пӳлĕмрен пӳлĕме утса çӳрерĕмĕр. Çурчĕ вара питĕ илемлĕ вырăнта ларать: юнашарах канмалли вырăн, вăрман, пысăк пĕве. Эпĕ вара хуçана: «Мускавра çакăн пек паха хваттерлĕ пулни хăех мĕне тăрать», – терĕм. Хуравĕ вара çапла пулчĕ: «Мускава куçса килни маншăн пысăк савăнăçах мар. Эпĕ нихăçан та кунталла туртăнман, Шупашкартах пурăнса ирттеретĕп пуль тенĕччĕ. Халĕ мĕн тăвăн ĕнтĕ, кунта та ĕçлеме пулать. Мускавра мана лайăххрах ăнланаççĕ. Йывăр самантра Мускав пулăшрĕ».

Тăван чĕлхепе тăван культура пирки сăмах тапратнă май

калаçу шкул ачисене эстетикăлла воспитани парас ыйту çинелле куçрĕ. Эпĕ ăна юлашки вăхăтра çамрăксем тăван чĕлхепе тăван искусство еннелле туртăнни çинчен каларăм, тĕслĕхсем илсе патăм. Вăл вара çакна хăйне майлă Ренессанс пуçламăшĕ тесе хак пачĕ. Унтан кантăк сакки çинче выртакан пĕр папкăна илчĕ те унти хутсене уçа-уçа кăтартрĕ. Ачасем валли çырнă кĕнекен алçырăвĕ иккен, юмахсемпе халапсенчен йĕркеленĕскер. Пĕр юмахне вара сасăпах вуласа пачĕ.

Çĕнĕ хваттерпе паллашасси малалла пычĕ. Кухньăри крансене пăркаласа пăхрăмăр, алăк хăлăпĕсене мĕнле çирĕплетнине тĕрĕслерĕмĕр. Çурт тăвакансем мĕнле те пулин шăйрăк хăварнине курсан ятлаçса илчĕ. Тарăхса калаçнă самантсем те пулчĕç. (Мĕншĕннине вара каярах тин пĕлтĕм. Çакă вăл хăй укçипе лартнă хваттер пулнă иккен). Тĕрлĕрен пайсенчен тăракан кĕнеке шкапĕсем патне пырсан кил хуçи вĕсене пуçтарасси пирки сăмах хускатрĕ, тĕрткелесе пăхрĕ. Эпĕ ăна ĕçлеме чартăм, нумаях пулмасть чылай йывăр операцие чăтса ирттернине шута илсе ĕнтĕ. Вара эпир алăк хăлăпĕсене вырнаçтарса лартнипех çырлахрăмăр. Ĕç хатĕрĕсем те пит меллĕскерсемех маррипе чылайччен тăрмашрăмăр. «Механизаципе автоматизаци тапхăрĕнче çак ĕç вăл темиçе минутлăх кăначчĕ те-ха», – терĕм эпĕ юлашки хăлăпа çирĕплетнĕ май. Вăл вара çапла каласа хучĕ: «Ку тĕрĕс ĕнтĕ. Анчах машина вăл тимĕр купи çеç. Çын хăй ĕçленĕ чухне япала çине аллисен ăшшине хăварать. Çакă вăл кайран та сисĕнет», – терĕ.

Эпĕ ăна Шупашкарти, Мускаври архивсенче тупнă халиччен никам пĕлмен документсем пирки каласа патăм. Сăмах Ф. П. Павлов çине куçсан тĕплĕнрех калама ыйтрĕ. Вăл ăна хальхи чăваш культуринчи чи сумлă та чăн-чăн мухтава тивĕç ят тесе хакларĕ. Парижра вĕреннĕ А. Наумов питĕ талантлă художник пулни пирки, анчах вăл 1921 çулхи выçлăха пула çамрăклах вилни çинчен илтсен тĕлĕнмеллипех тĕлĕнчĕ, пăшăрханса та илчĕ. Чăваш ĕçченлĕхне, ӳнерти пултарулăхне лайăх кăтартса паракан пулăмсене аса илнĕ чухне Геннадий Никандрович питĕнчен савăнăç каймарĕ. «Вăйсăр халăхăн Андриян Григорьевич Николаев пек паттăр ывăлсем çуралас çук. Пирĕн халăхăн ырă енĕсем темĕн чухлех, анчах эпир вĕсемпе тивĕçлипе мухтанма вĕренсе çитеймен-ха», – терĕ профессор. Тата çакна асăрхарăм, ун шучĕпе кашни çыннăн хăй совеçне пăхăнса ĕçлемелле, сăмахпа ĕç тачă çыхăнса тăмалла. Шăп çак самантра вăл хăй арăмне Александра Дмитриевнăна ырăпа асăнчĕ: «Хам тунă ĕçсенче пуринче те арăм пулăшăвĕ пур, – терĕ. – Савăнăçлă самантра та, йывăр минутсенче те мана унтан

лайăх ăнланакан çын урăх çук. Ухмах арçынсем кăна арăмне хаклама пĕлмеççĕ. Арăм çинчен яланах ырăпа, ăшă кăмăлпа калаçма тăрăшмалла».

Кăнтăрла тĕлне апат çиме столовăйне кайрăмăр, çурт тăвакансем валли вăхăтлăха лартнăскер курăнать. Каллех Геннадий Никандрович тӳлерĕ. Унтан çурт тавра пăхкаласа çӳрерĕмĕр, парк евĕрлĕ канмалли вырăн витĕр утса тухрăмăр та автобус чарăнăвĕ патне çитсе тăтăмăр. Кĕçех автобус çитсе чарăнчĕ, кĕрсе лартăмăр. Калаçу малалла пычĕ, вăл çырнă кĕнекесене аса илтĕмĕр. «Кашни авторăн хăйĕншĕн чи хаклă хайлав пур. Маншăн çавăн пекки «Этнопедагогика» кĕнеке хыççăмахĕ пулать. Пĕтĕм чун вăйне, çамрăк ăрăва мĕнлерех пăхса ӳстермелли тĕп шухăшсене çавăнта палăртма тăрăшрăм. Чи пахи кунта çынпа çын хушшинчи хутшăнусемпе воспитатель хăй кăтартнă ырă тĕслĕхсем. Вĕренӳ ĕçĕнче унта тĕрлĕрен модельсемпе, техника хатĕрĕсемпе усă курса самай пысăк çитĕнӳ тума пулать. Воспитани ĕçĕнче кун пек мелсен вăйĕ пысăках мар. Кунта çынсем хушшинчи хутшăнусене, çыхăнусене пуянлатни кирлĕ».

Автобусран тухсан метрона кĕтĕмĕр, чылай вăхăт хушши ярăнса çӳрерĕмĕр, тăраничченкалаçрăмăр. Эпĕ «Кировская» ятлă станцире анса юлтăм, вăл килнелле вĕçтерчĕ. Çапла вара эпĕ Г. Н. Волковăн çĕнĕ хваттерĕнчи пĕрремĕш хăна пултăм курăнать. Мĕн калăн ĕнтĕ, ун пек çынпа кун ирттерни вăл хăех пысăк парне. Юнашар мар, кăшт хыçаларах утса пыни те питĕ паха самант. Тăван халăха çав тери юратни, республикăра пулса иртекен пăтăрмахсене чĕре патне илсе кулянни, çамрăк тĕпчевçĕсене хăй шухăшне, пĕлĕвне ырă кăмăлпа уçса пани ман ăшра пысăк хавхалану çуратрĕ. Эпĕ тӳрех хамăрăн паллă драматург Н. Терентьев каланине аса илтĕм. Чăнах та, карьера тăвасси вăл Г. Н. Волковсăр та пулать, чăн-чăн наука тăвас тесен унсăрăн ĕç тухмасть.

Çапах та аспирантшăн чи хаклă çын вăл наука ертӳçи. Çавă пулăшса пымасан ишсе тухма йывăр. Диссертацие вăхăтра çырса хатĕрлеймен тĕслĕхсем те сахал мар. Маншăн вара пурте ăнăçлă майлашăнса пычĕ. И. Л. Любинский яланах ырă кăмăлпа кĕтсе илетчĕ, мана питĕ сумлă конференцисене явăçтаратчĕ. Вăл шаннине тивĕçтерме тăрăшаттăм ĕнтĕ. Мускавсем вĕсем самай урăхла çынсем, урăх çĕртен килнисем умĕнче хăйсене мăнкăмăллăрах тытас йăла та пур. Тен, çакна шута илсех хама хам аса илтерсех тăраттăм: эсĕ тунă ĕçĕн пахалăхĕ ыттисенчен лайăхрах пулмалла; айванкка вырăнне хурса калаçтарма сăлтав туса памалла мар; вуламалла, çырмалла, нумайрах пĕлме тăрăшмалла. Наука ертӳçи вара наянрах аспирантсене асăрхат-

тарса ятлаçнă чухне ман еннелле тĕллесе: «Эсир ĕçлеме Шупашкар каччинчен вĕренĕр-ха», – тетчĕ. Чăнах та, диссертаци ĕçне планпа палăртнинчен пĕр çул маларах çырса пĕтертĕм. Хӳтĕлеме те хатĕрччĕ, анчах академире пысăк улшăнусем пуçланчĕç, учĕнăй советсене те урăхлатрĕç. Çулталăк ытла кĕтме тиврĕ.

Аспирантăн диссертацисĕр пуçне тата пичетленнĕ ĕçсем те пулмалла, калăпăр, виçĕ статьяран кая мар. Вара тин хӳтĕлеве тухма юрать. Эпĕ вара виçĕ кĕнекепе вуникĕ статья тăратрăм. 1976 çулхи авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнче «Чăваш совет шкулĕнче ачасене эстетикăлла воспитани парас ĕç йĕркеленни» темăпа кандидат диссертацине хӳтĕлерĕм.

Темиçе çул хушши кĕтнĕ саманта тивĕçлипе чăтса ирттересси çăмăл ĕç мар. Нервăсем те вăйпа туртса карăнтарнă рояль струнисем пек нăйлаççĕ. Сассине вара хăвсăр пуçне никам та илтмест. Темле ыйту парсан та çухалса каймa юрамасть, хăвна тытма пĕлмелле. Пуç мимин те питĕ сыхă тăмалла. Каярах вара академиксемпе профессорсем ырă хак парса сасăланине пĕлсен шăмшак лаштах пулать, савăнăçлă самант кĕрлесе каять: саламлаççĕ, ыталаççĕ, чуп тăваççĕ, чечек те параççĕ. Сан вара хăнана чĕнесси кăна юлать. Банкетне самай капăр ресторантах ирттертĕм, хĕрĕх çынна яхăн пычĕç. Вĕсем хушшинче хамăрăн сумлă профессорсемпе пĕрле Мускавра вĕренекен аспирантсем те пулчĕç.

Ĕмĕр пурăн – ĕмĕр вĕрен тенĕ пек пĕлӳ пухас ĕçре чарăнма юрамасть. Кахалĕ кĕтсех тăрать. Ун аллине лекни вара пурнăç уттинчен юлнипе танах. Алла диплом илнипе лăпланнă çынсем калама çук пысăк йăнăш тăваççĕ. Институтра илнĕ пĕлӳ вăл малтанхи утăм кăна, хăшĕ-пĕришĕн зачет е экзамен парассишĕн тăрăшни çеç. Чи усăлли кунта хăв тĕллĕн вĕренес шая çĕкленни. Çавăнпа та аспирантурăна эпĕ вĕренме вĕренсе çитнĕ тапхăр кăна тесе шутлатăп.

Иртнĕ ĕмĕрсенче пурăннă паллă философсемпе педагогсен ĕçĕсене тепĕр хут тишкерсе тухнă хыççăн хамшăн çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăм: эпир халĕ те ĕлĕкхи ăслă çынсем каласа хăварнă шухăшсен ытамĕнчех пурăнатпăр иккен; çĕнĕ шухăшсем питĕ сайра çуралаççĕ, кахал пуçа вара пачах та çакланмаççĕ.

## 6. ИЛЕМ ТĔНЧИ

Çын пурнăçĕ юратупа илемрен пуçланать. Çак ырăсене пире малтан анне парнелет. Унăн çепĕç алли, ăшă та çемçе кăкăрĕ, юратса пăхакан куçĕсем, лăпкăн янăракан сăпка юрри –

пурте çын пулма пулăшакан вăйсем. Теттесем те çак ĕçех тăваççĕ. Анчах чи малтанхи утăмсем асра юлмаççĕ. Тăваттă çурти вара маншăн халĕ те куç умĕнче, халĕ те хăлхара. Çакă вăл аттене оркестрпа пытарнă чухнехи вĕрсе каламалли инструментсен сасси. Тем пысăкăш параппана тăрслаттарсан пĕтĕм тĕнче кисреннĕ пек туйăнчĕ. Апла эппин музыка тĕнчи маншăн чăн-чăн оркестртан пуçланнă тесен те юрать. Кăштах ӳссен купăс сасси канăç памастчĕ. Питĕ калама вĕренес килетчĕ, анчах анне илсе параймарĕ. Кĕркунне çиттĕр-ха, вара качака е сурăх сутса илсе парăп тесе «улталаса» пурăнчĕ. Ачисене мĕнле те пулин сĕт е какай яшки çитерсех ӳстересчĕ тенĕ чухне купăс шухăшĕ пулман ĕнтĕ унăн. Улттăмĕшпе çиччĕмĕш классенче вара сăвă çырассипе аппаланаттăмăр, учитель ертсе пынипе «Çĕнĕ хунав» журнал кăлараттăмăр.

Эпĕ ӳснĕ чухне ялти ырă йăласем, илемлĕ уявсем пĕтменччĕ-ха. Вăйăра карталанса юрлани, акатуйĕнче ăмăртса ташлани, çимĕке е мăнкуна савăнăçлă ирттерни, уйрăмах халăх опери евĕрлĕ чăваш туйĕ, чуна хускатмасăр хăварман. Илем туйăмĕпе туртăмĕ аталансах пынă хулари пек ятарлă шкулсем пулмасан та. Ялти клубра та юрă-ташă илĕртсех тăнă. Юрлас кăмăлăм ăшран тухмастчĕ. Çак туртăм пурнăçăма музыка еннелле пăрса ячĕ.

Музыка чунăма урăхлатса пычĕ, нихăçан хускалман туйăмсене вăратрĕ. Вăл çеç те мар-ха, таврари сас-чĕве те, çын кăшкăрнине, ача макăрнине те чĕрем хăйне çывăхрах йышăнма тытăнчĕ. Пĕр-пĕр кĕвве вăтăршар, хĕрĕхшер хут каласа ăсталăха туптани вара чăтăмлăха çирĕплетрĕ, вăхăта хаклама вĕрентрĕ. Музыка хăй те вăхăтлăх искусствăсен шутне кĕрет, янăранă чухне кăна чĕрĕ те илемлĕ. Унччен эпĕ сăнарлă шухăшлав мĕнне те пĕлмен. Музыкăра вара унсăр пачах та ĕç тухмасть. Çивĕч хăлхасăр, тавçăрупа ăнкарусăр музыка чĕлхине пĕлме çук. Çапла вара эпĕ кĕске вăхăтрах ялти юрăран пуçласа опера, балет, симфони музыкине ăнланакан пулса çитрĕм. Çĕр çинче, паллах, тĕлĕнмелли темĕн чухлех. Камшăн мĕнле, пĕлместĕп, маншăн чи пысăк тĕлĕнтермĕш – симфони оркестрĕ. Тепĕр чухне чĕрĕ япала пекех туйăнса каять, чунĕ те, чĕлхи те пур пек.

Музыка ани çав тери анлă. Унта такам валли те вырăн пур. Пĕрисем çĕнĕрен те çĕнĕ произведенисем кĕвĕлеççĕ, теприсем тĕрлĕрен инструментпа калаççĕ е юрлаççĕ, музыка çинчен çыраççĕ е ăна вĕрентеççĕ. Музыка учителĕ пек пархатарлă ĕç çук та пулĕ.

Камăн хăш енĕпе пултарулăхĕ вăйлăрах – çавăнталла

туртӑнать. Мана ытларах хорпа юрлама вӗрентесси килӗшетчӗ. Йӗпреҫри интернат шкулта виҫӗ хор йӗркелерӗм: арҫын ачасен, пионерсен тата комсомолецсен. Районти культура ҫуртӗнчи паллӑ уявсене, концертсене хутшӑнаттӑмӑр. 1963 ҫулхи акатуйӗнче вара районти пӗрлештернӗ хор дирижерӗ пултӑм. Кӳкеҫре ӗҫленӗ чухне те ҫав ҫулпах утрӑм. Шкулта виҫӗ хор йӗркелерӗм, районти культура ҫуртӗнчи хора ертсе пытӑм, акатуйӗнчи пӗрлештернӗ хора та хамах юрлаттартӑм. Студент чухне вара Шупашкарти кооператив техникумӗнче тата Чӑвашгражданпроект институтӗнче хорсем йӗркеленӗччӗ. Учительсен пӗлӗвне ӳстерекен институтра ӗҫленӗ чухне мана Шупашкар хула хор обществине шанса пачӗҫ. 1970 ҫултан пуҫласа вунӑ ҫула яхӑн ертсе пытӑм, культура пайӗпе пӗрле тӗп хулара та акатуй ирттерессине чӗртсе ятӑмӑр. Халӗ ав кашни ҫулах хула кунне ирттереҫҫӗ, ҫак уявӑн малтанхи никӗсне хывнӑ ҫӗрте кӑштах ман тӳпе те пур ӗнтӗ.

Музыка кабинечӗ ӗҫӗнче те улшӑнусем чылай пулчӗҫ, музыка урокӗсӗр пуҫне класс тулашӗнчи ӗҫе вӑйлатасси пирки тӑрӑшрӑмӑр. Ҫавна шута илсе шкул ачисен фестивальне ирттерессине пуҫарса ятӑмӑр. Чи пултаруллӑ ачасене, хорсене, оркестрсене, ташӑ ушкӑнӗсене Шупашкара чӗнсе илсе хула ҫыннисене кӑтартаттӑмӑр. Концертне чи пысӑк залсенче ирттерсен те пур-пӗрех ларма-тӑма вырӑн ҫукчӗ, ачасен искусствине килӗштеретчӗҫ. Режиссерӗпе тӗп дирижерӗ пулма хамӑнах тиветчӗ. Кашнинчех 200-250 ачаран тӑракан пӗрлештернӗ хор юрлатчӗ.

Искусствӑра такам валли те вырӑн пур терӗмӗр. Ҫапах та чи сумлисем – чӑн-чӑн талантсем. Ҫавсене тупса палӑртасси хӑех калама ҫук пархатарлӑ ӗҫ. Ача чухне асӑрхаманнипе вуншар, ҫӗршер ҫын тӗрӗс ҫул ҫине тӑраймасть, талантсем ҫухалаҫҫӗ. Ҫак йӗркесене ҫырнӑ чухне каллех хам ачалӑха аса илтӗм. Ытла кая юлса вӗренме тытӑннӑран музыкӑра пысӑк ҫитӗнӳсем тӑваймарӑм. Баян е фортепьяно калассипе вӑтам шайри музыкант кӑна пултӑм. Шкулта, фестивальсенче асӑрханӑ ачасене сӑмахпа та пулин пулӑшма тӑрӑшаттӑм. Икӗ тӗслӗх кӑна илсе кӑтартам.

Чӑваш тӑрӑхӗнче халӗ Николай Карлина пӗлмен ҫын та ҫук. Вӑл паллӑ музыкант, композитор, халӑха илемлӗ юрӑ-кӗвӗпе савӑнтарать. Унӑн пултарулӑхне эпӗ Канашра темиҫе районпа пӗрле ирттерекен смотрта асӑрханӑччӗ, хӑй тӗллӗн вӗренсех самай пысӑк ҫитӗнӳ тунӑскерне ятарлӑ пӗлӳ илме сӗннӗччӗ. Каярах вӑл музыка училищинче вӗреннине курсан питӗ хӗпӗртерӗм.

Тепӗр паллӑ ят вӑл чӑваш халӑх артистки Валентина

Смирнова, оперăпа балет театрĕн солистки. Чăваш сценине илем кӳрекен çак юрăçăн телейлĕ çулĕ çапла пуçланчĕ.

1975 çулта Нурăсри вăтам шкула çитрĕм. Уроксенче пултăм, класс тулашĕнчи ĕç пирки ыйтса пĕлтĕм. Шкултан тухса каяс умĕн музыка учителĕ пĕр хĕрача юрланине итлесе пăхма сĕнчĕ. Килĕшрĕм. Пушă пысăк класра пĕчченех ларатăп. Акă хĕрачи те кĕрсе тăчĕ. Питĕ чиперскер. Мана курсан пичĕ пиçнĕ çырла пекех хĕрелсе кайрĕ. Учителĕ баяна тăсса ярсан Г. Ефимов сăввипе Г. Хирбю çырнă «Савнă Шупашкарăм» юрра юрлама пуçларĕ. Илемлĕ сасси хăйĕн питĕ уççăн янăрать. Çӳлти нотăсене те çăмăллăн илет. Пысăк туйăмпа юрлать. Юрă вĕçленсен ятне тата миçемĕш класра вĕреннине ыйтса пĕлтĕм, кĕçех аттестат илет иккен, пединститута вырăс чĕлхи уйрăмне кĕме хатĕрленет. Эпĕ вара ăна музыка училищине кайма сĕнӳ патăм. Тепĕр темиçе çултан училище пĕтерсе Саратоври консерваторире ăсталăхне туптанă хыççăн професси тĕлĕшĕнчен чи çӳллĕ шайра тăракан юрăçсен шутне кĕчĕ. Халĕ вăл Шупашкарта кăна мар, ытти театрсенче те юрлать.

Искусство вăл илеме килĕштерет. Апла пулин те унта пач тӳнтерле ĕçсем те тĕл пулаççĕ. Юрламалăх сасси çук, сцена çинче пĕччен тăмалăх ӳчĕ те, сăнĕ те çук, пурпĕрех сике-сике тухса хуçкаланаççĕ. Кĕпи-тумĕ хăйсен темиçе пин тенкĕлĕх, пултарулăхĕ вара пĕр пуслăх та çук. Сăмах кунта чăн-чăн талантсене çул парасси пирки пырать.

Пурнăç яланах çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем кăларса тăратать. Музыка урокĕсенче чăваш юрри-кĕвви валли вырăн пулмаллах ĕнтĕ. Унсăрăн чăваш ачин чунĕ хытсах ларать, çынлăх та аталанаймасть. Çакна асра тытса виçĕ программа çырса хатĕрлерĕм: шкула кайма хатĕрленекен ачасем, I-III классем тата IV-VII классем валли. Çав программăсемпе килĕшӳллĕн фонохрестомати йĕркелеме тытăнтăм. Шупашкарти радио фондĕнчи пленкăсене çырса илнĕ хыççăн Мускава кайрăм, виçĕ эрне хушши Радио Çуртне çӳрерĕм, иртен пуçласа каçчен музыка итлерĕм, пластинка тума юрăхлисене суйларăм, 1976 çул тĕлне çырнă произведенисене пурне те хам хăлха витĕр кăлартăм. Пулăшаканĕ вара операторта ĕçлекен Мускав вырăсĕ пулчĕ. Вăл мана паллă юрăçсемпе, музыкантсемпе мĕнле ĕçленине каласа пачĕ, Сталина пытарнă чухнехи репортажа та вăлах çырнă иккен. Ĕмĕрлĕхех асра юлни вара пачах урăххи пулчĕ. «Нарспи» оперăри Тăхтаман арине итлесе пĕтернĕ хыççăн оператор: «Ох! Злодей!» – тесе хучĕ. Чăвашла пĕр сăмах пĕлменскер музыка чĕлхине тĕрĕс ăнланчĕ. Çакă вăл маншăн питĕ хаклă самант. Г. Я. Хирбю пултаруллă композитор иккенне тепĕр хут туйса илтĕм. Юрла-

канĕ те ăстаскер, чăваш халăх артисчĕ М. И. Денисов. Пысăк ăсталăхпа çырнă музыка такам чунне те хускатать иккен.

Тепĕр çур çултан «Мелодия» фирма пирĕн заказа пурнăçларĕ. Сакăр пластинкăран тăракан чăваш музыкин пĕрремĕш фонохрестоматийĕ пичетленсе тухрĕ. Çакна учительсемпе пĕрлех композиторсем те, музыкантсем те питĕ ырă кăмăлпа йышăнчĕç. Унпала паян кун та усă кураççĕ.

Çынсене искусство еннелле туртас шухăш ĕмĕрлĕхех вырнаçрĕ курăнать. Каярах университетри философи кафедринче ĕçленĕ чухне те çав ĕç патнех çитсе тухрăм. Профсоюзăн вырăнти комитетне суйласан культура комиссине ертсе пытăм. Пĕр шухăшлă çынсем пулăшнипе чылай курăмлă ĕçсем турăмăр. Чи малтан кашни факультетрах студентсен хорне йĕркелерĕмĕр, смотрсем ирттерес çĕре те улшăнусем кĕртрĕмĕр. Унтан çак ĕçе преподавательсем хушшинче туса ирттертĕмĕр. Сцена çине профессорсемпе доцентсене кăлартăмăр. Каярах вара преподавательсем илемлетсе тунă япаласен выставкине ирттерме тытăнтăмăр. Кун пекки вăл вăхăтра хулари ытти аслă шкулсенче пачах та çукчĕ. Çак енĕпе университет ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăчĕ. Чи пултаруллă юрăçсенчен академи хорĕ йĕркелеме май килчĕ. Ертсе пыма музыка училищинче ĕçлекен В. С. Михайлов дирижера чĕнтĕмĕр.

Ĕç çыннисен художество пултарулăхне аталантарас тĕлĕшпе тунă ĕçсемшĕн 1977 çулхи раштавăн 30-мĕшĕнче мана «Чăваш АССР культурăн тава тивĕçлĕ работникĕ» хисеплĕ ят пачĕç. Çакна çирĕплетекен хута С. М. Ислюков аллинчен илтĕм.

Эпĕ тăрăшнине çӳлтисем те асăрхарĕç курăнать. Анчах çакна эпĕ пĕччен тунă ĕç тесе шутлама хăяймастăп. Мана пулăшакансем темĕн чухлех пулнă: учительсем, хор ертӳçисем, композиторсем. Чăваш республикин Хор обществине вăл вăхăтра Г. Я. Хирбю ертсе пыратчĕ. Пĕр-пĕринпе килĕштерсе, пысăк хавхаланупа ĕçлеттĕмĕр. Юрă уявĕнче те, смотрта та яланах пĕрлеччĕ. Пĕтĕм Раççейри Хор обществин съездне те пĕрле кайса килтĕмĕр. Иртнĕ ĕмĕрти 70–80-мĕш çулсенче эпир Раççей шайĕпе пăхсан чи юрлакан республика пулса тăтăмăр. Хорсен шучĕ ӳссе пычĕ, республикăри ĕçпе юрă уявĕсем 10–15 пин юрăçран тăракан пĕрлештернĕ хорпа пуçланатчĕç. Çак уявсене Шупашкарти хорсене анлăрах явăçтарассине манăн туса пыма тиветчĕ.

Çав çулсенчи тепĕр пысăк хисеплĕ çын вăл, паллах, Ф. М. Лукин композиторччĕ. Нумай çул хушши композиторсен союзне ертсе пынăскер республикăри лару-тăрăва лайăх пĕлетчĕ, районсене тухса çӳретчĕ, смотрсенче жюри ĕçне йĕркелесе

пыратчĕ. Çак сумлă çынпа тĕл пулса калаçнисем, вăл панă сĕнӳсем питĕ усăллăччĕ. Енчен те пĕр-пĕр чиновник патне Ф. М. Лукин шăнкăравласан ыйтăва татса пама çăмăлрахчĕ.

Юлташлă е туслă пулнă теме хăяймастăп. Ма тесен çак композиторсем вĕсем манран чылай аслăскерсем, аттепе пĕр ӳсĕмре. Çапах та вĕсен хисепне тивĕç пулнишĕн савăнатăп. Ф. М. Лукин мана хăй 60, 70, 80 çул тултарнă ятпа йĕркеленĕ концертпа капăр сĕтел хушшине ятарласа йыхрав хучĕ ярса чĕнни хăех мĕне тăрать.

Вĕсем пурнăçран уйăрălса кайни маншăн çав тери пысăк çухату пулчĕ. Г. Я. Хирбю вилни çинчен радиопа пĕлтерсен алăри кĕреçе шалт! тухса ӳкрĕ. (Ун чухне эпĕ пахчара чакаланаттăмччĕ). Темиçе кун хушши нимĕн тума пĕлмесĕр, аптраса çӳрерĕм, ĕçлес кăмăлăм хуçăлчĕ. Вăл чирлесе ӳкнине пĕлмен эпĕ. Çапах та ун патне больницăна пырса çӳременшĕн хама паян кун та аван мар туятăп, ӳпкелешетĕп. Филипп Миронович чирлесен вара пĕрлерех пулма тăрăшрăм. Вилес умĕн ăна реанимаци уйрăмне вырттарсан унта та çитрĕм. Ф. М. Лукина юлашки хут чĕрĕлле курса юлнă çын эпĕ пултăм курăнать. Каçпала вăл манран пĕчченех выртса юлчĕ, ирпеле пирĕнтен уйрăлса кайни çинчен пĕлтерчĕç.

Сăмах май çакна каласа хăварас тетĕп. Юлташсем, тăвансем, хам лайăх пĕлнĕ çынсем вилсен вĕсене юлашки çула ăсатса ярассине эпĕ яланах хам тивĕçĕм тесе шутланă, пур çĕре те çитме тăрăшнă. Халĕ те çаплах.

Аслă шкулта ĕçлекентен çулсеренех çĕнĕрен те çĕнĕ наука ĕçĕсем кĕтеççĕ, статьясем, кĕнекесем çырмалла. Йĕрки çапла. Искусствăри пекех унта та хăйне майлă ăмăрту пырать, пĕрисене ырлаççĕ, теприсене асăрхаттараççĕ, ятлаççĕ. Ыттисем пекех эпĕ те тăрăшрăм, статьясемпе кĕнекесем чылай пичетлесе кăлартăм, ытларахăшĕ, паллах, эстетика ыйтăвĕпе.

1976 çулта «Капкăнра» манăн пĕрремĕш калав тухнăччĕ. Çавăнтан пуçласа литература еннелли туртăм аса илтерсех тăчĕ. Аллă çула çитнĕ тĕлелле сăмах искусстви мала ӳкрĕ. Шухăша илемлетсе çырнă прозăлла сăвăсене Валем Ахуна кăтартса пăхрăм. Вăл вĕсене ырларĕ, пичете те юрăхлă терĕ. Вара тӳрех «Ялава» кайса патăм. Каярах редакци шухăшне пĕлес тесе Юрий Сементер патне кĕтĕм. Вулама Г. А. Ефимова панă иккен. Юрий Семенович ăна эпĕ килнине телефонпа пĕлтерчĕ. Кĕçех пӳлĕме Георгий Ефимов кĕрсе тăчĕ, аллинче ман сăвăсем. «Кун пекки пулманччĕ-ха. Халĕ ĕнтĕ чăвашсен те хăй Тагорĕ тупăнчĕ», – терĕ савăннине пытармасăр. Тĕлĕнсех кайрăм, ăçтан пĕлнĕ-ха вăл Р. Тагор манăн чи килĕштернĕ

çыравçă иккенне. Паллă поэтăн – редакторăн каламалли тупăнатех ĕнтĕ. Вăл мана хăш-пĕр вырăнсене тӳрлетме сĕнчĕ. Эпĕ килĕшрĕм. «Ялавăн» 1989 çулхи иккĕмĕш номерĕнче çирĕм сăвă пичетленсе тухрĕ, 55000 тиражпа. Пĕр сăввине, «ĕмĕр сакки сарлака» сăмахсенчен пуçланаканнине, Юрий Григорьев композитор юрра хывать те Юрий Васильева кăтартса пăхать. Лешĕ юрра Людмила Семеновăна сĕнет. 1989 çулхи юпа уйăхĕн 27-мĕшĕнче ăна пĕрремĕш хут радиопа параççĕ. Тепĕр кунне ирхине виççĕмĕр те паллă çынсен шутĕнче вăранса кайрăмăр тесен те юрать. Юрă кашни кун тенĕ пекех янрама тытăнчĕ. Халăха килĕшрĕ вăл, кам вăл Кибеч теме пуçларĕç. Çакна шута илсех-и тен Светлана Азамат мана телевидение чĕнсе илчĕ те юрă мĕнле çурални пирки ятарлă передача йĕркелерĕ.

Ун чухне радиори музыка редакцийĕ кашни çулах чи лайăх юрăсен конкурсне ирттеретчĕ. 1989 çулхи юрăсенчен «Ĕмĕр сакки сарлака» мала тухрĕ, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Юрă пуçличчен чăваш хăй ăшĕнче: «Мĕн каласа юрламши?» – тесе илет. Апла пулсан вăл юрă сăмахĕсене пысăка хурать. Тен, çавăнпах «Ĕмĕр сакки сарлака» юррăн шăпи телейлĕ пулчĕ, унти пурнăç философине халăх йышăнчĕ. Чăваш музыкинче тарăн шухăша ярakan юрăсен тапхăрĕ пуçланчĕ. 1990 çулта Юрий Жуковпа «Пурнăç çулĕ такăр мар» юрра кĕвĕлерĕмĕр. Вăл та пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Унтан «Телей, телей» (кĕвви А. Никитинăн, Е. Османова юрлать) палăрчĕ. Сцена çине, эфира юрă хыççăн юрă тухса пычĕ. Пĕр сăввах икĕ-виçĕ композитор юрра хывни те пулчĕ. Пьесăсем те çырса пăхрăм, малтанхисем ăнăçлах пулмарĕç курăнать. 1991 çулта вара «Пурнăç кĕнеки» ятпа прозăлла сăвăсен пуххи тухрĕ. Пьеса çырас ăсталăха алла илес тесе Л. Н. Родионов режиссёрпа, Н. Т. Терентьев драматургпа çывăхрах паллашрăм, хам çырнисене кăтартса пăхрăм. 1991 çулта пысăках мар пьесăсем иккĕ пичетленсе тухрĕç.

Пурнăç çулĕ чăнах та такăр мар çав. Çĕнĕрен те çĕнĕ хайлавсем çырас енĕпе хавхаланса ĕçленĕ вăхăтра кĕтмен çĕртенех самай пысăк чăрмав сиксе тухрĕ.

1993 çулхи нарăсăн 26-мĕшĕнче ирхине радиопа хаçатсем мĕн çырни çинчен кĕскен пĕлтернĕ чухне «Ĕмĕр сакки сарлака» юрă пирки калаçни хăлхана кĕчĕ. Сухал хырнă вăхăтра тăнланăран ниепле те ăнкарса илеймерĕм. Çăвăнса тумлансан почта ещĕкĕ патне васкарăм. Ак тамаша! «Хресчен сасси» хаçатра «Ĕмĕр сакки сарлака» юррăн сăмахĕсене Анатолий Кипеч мар, эпĕ çырнă» статья пичетленсе тухнă. Канаш районĕнчи Вăтапуçри сакăр çул вĕренмелли шкулта ĕçлекен Л. Константинова (Чĕкеç Люççи) Г. Максимов журналиста панă

интервью пулчĕ ку. Унта вăл çак сăвва «Чăваш патшалăх университетĕнче пĕрремĕш курсра вĕреннĕ чух, лекци пынă вăхăтрах пĕр хĕр ачапа пĕрле çырса лартăмăр» тесе ĕнентерме пикенет. Ку çеç те мар-ха, «темле майпа сăвă Анатолий Кибеч аллине лекнĕ» тесе мана кӳрентерекен, ман чыса варалакан шухăша пĕлтерет. Чăтса тăраймарăм, хаçат редакторĕ В. М. Савельева патневаскарăм. «Журналист ку юрă пирки темиçе çынпа та калаçса пăхнă. Мĕншĕн-ха манпа тĕл пулма вăхăт тупман?» – тесе ыйтсан вăл нимех те калаймарĕ, кăмăл пулсан хирĕçлесе çырма сĕнчĕ. Çыртăм. Çак юрă сăвви хăçан тата мĕнле сăлтавпа çурални çинчен тĕплĕн пĕлтертĕм. Çук, мана хирĕç тăракансем лăпланмарĕç, статья хыççăн статья пичетлеме тытăнчĕç. Кĕçех ман çине Юхма Мишшин сĕрĕмлĕ «Вучахĕ» сиксе ӳкрĕ. Ирĕксĕрех хам пирки суя сăмах сарнă хаçатсемпе авторсене суда пама тиврĕ. Пуçларĕç вара чупма, пĕрисем судьясем патне, теприсем хам пата хваттере те çитрĕç, заявление каялла илме сĕнчĕç. Эпĕ килĕшмерĕм. Çак ĕçре хама пулăшса пыма М. К. Антонова ыйтрăм. Ма тесен, «Вучахри» суя хушаматпа çырнă статьясене вуласанах пĕр ĕç аса килчĕ. Ун чухне Çуйăн Хĕветĕрĕ пухса хатĕрленĕ «Улăп» эпоса Юхма Мишши туртса илме хăтланнăччĕ. Юрать-ха, судра М. К. Антонов çине тăчĕ, ватă çынна сĕмсĕр Юхмапа тытăçма  сăмăлах пулмарĕ. Çуйăн Хĕветĕрĕн  автор прави сыхланса юлчĕ.

Пирĕн ĕç вара питĕ вăраха кайрĕ, явап тытакансем пăркаланнипе суда куçарса пыма тиврĕ, судьясем те ылмашăнса пычĕç. Мана Чĕкеç Люççипе мирлештерес текенсем те пулчĕç. Çак суя  автора хӳтĕлес тесе суда Юхма та пынăччĕ. Вăл вара «Ĕмĕр сакки сарлака» сăвва Кибече эпĕ тӳрлетсе патăм», тесе суйрĕ. Çапла вара çак сăввăн авторĕ пулма ĕмĕтленекен тепĕр çын тупăнчĕ. Те тарăхмалла, те савăнмалла, нимĕн калама аптраса ларатăп. Пуçра вара пĕр шухăш: «Эх, сутăнчăк Юхма, нивушлĕ сан пурнăçу суяпа та ултавпа кăна иртсе пырĕ?» Явап тытакансем хушшинче Чĕкеç Люççи майлисем Г. Максимовсăр пуçне тата университетра ĕçлекен В. Чекушкин, Г. Антонова (Матвеева) журналистка тата Н. Яковлев лифтер пулчĕç. Мана кӳрентерекен сăмахсемсĕр пуçне нимĕн те калаймарĕç. Сăвă авторĕ тепĕр çын пулма пултарнине çирĕплетекен пĕр факт та тупăнмарĕ. Судăн юлашки ларăвне  Чĕкеç Люççи хăй пымарĕ те. Ытларах ыттисем кăшкăрашрĕç, тĕрĕслĕхе хӳтĕлесе сăмах каланă Виталий Станьяла та, Юрий Сементере те, Станислав Упаççине те кӳрентерчĕç. М. К. Антонова та хăртса тăкрĕç, тытса силлеменни кăна юлчĕ. Суд вĕçленчĕ. Ун йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн хаçатсем манран каçару ыйтрĕç, мораль тĕлĕшĕнчен сиен

кӳнӗшӗн укҫа та тӳлерӗҫ. Ман чыса варалас тӗллевпе ҫыракансен те ҫавӑн пек явапах тытма тиврӗ.

Судра вара ҫакӑ паллӑ пулчӗ. Ҫак ӗҫри тӗп «геройсем» пачах урӑххисем иккен. Чӗкеҫ Люҫҫи вӑл вӗскӗртсе кӗртсе янӑскер кӑна. Илӗртнӗ ӑна, кӗнеке кӑларса паратпӑр, писательсен союзне илетпӗр тесе шантарнӑ. Суд пирки те калас килет. Вӑл ҫулталӑк та икӗ уйӑха пычӗ. Мӗн тӗрлӗ хут ҫырма тивмерӗ, судьясем ытла та ҫӑмӑл мелпе ӗҫлеме хӑнӑхнӑранах ӗнтӗ. Тӗрӗслӗх ҫак ҫын енче, ҫавна пулӑшасчӗ текен судья ҫук та пулӗ. Ҫавӑнпа та судра питӗ тимлӗ пулмалла, судья сӗнӗвӗсене йышӑнма васкамалла мар. Чылайӑшӗн право тӗлӗшӗнчен пӗлӗвӗ ҫителӗксӗррипе судьясем хӑйсене питӗ ирӗклӗн тытаҫҫӗ. Малтан хам та суккӑр ҫын пекех пулнӑ. Судья эксперт комиссийӗ йӗркелеме сӗнсен килӗшрӗм. Ӗҫ куҫ умӗнчех тепӗр майлӑ ҫаврӑнса кайрӗ, комиссие ман сӑвва мар, Чӗкеҫ Люҫҫи ҫыркаланисене тӑратрӗҫ. Ҫакӑн пирки В. Г. Родионов литературоведа каласа парсан вӑл тӗлӗннине пытармасӑр: «Ку ӗҫре чи кирли – Л. Константинова сӑвви ҫуккӑ. Ҫавӑнпа та тавлашмалли сӑлтава пачах та курмастӑп», – терӗ. Чӑнах та, комисси туса аппаланни вӑхӑта тӑсни кӑна пулчӗ. Каярах вара ыйтусене хурав панӑ чухне М. К. Антонов шухӑшне те шута илме тӑрӑшрӑм.

Ҫак суд маншӑн питӗ усӑллӑ шкул пулчӗ. Унтан эпӗ хуҫӑлса мар, вӑйланса тухрӑм. Литература ӗҫне те чакармарӑм, хаҫатсемпе журналсенче аллӑ сӑвӑ пичетлесе кӑлартӑм. П. Федоровпа кӗвӗленӗ «Тӑван ялӑм» юрӑ вара каярах конкурсра пӗрремӗш вырӑн йышӑнчӗ. Судсем тӑрӑх ҫӳренӗ вӑхӑтрах Г. Максимов композиторпа «Шурӑ Шупашкар» юрӑ ҫыртӑмӑр. Каярах вӑл Шупашкар гимнӗ пулса тӑчӗ. Кӗҫех кӗнеке хыҫҫӑн кӗнеке пичетленсе тухма пуҫларӗ: «Пурнӑҫ ҫулӗ такӑр мар» (1995), «Юратнӑ юрӑсем» (1995), «Чӑваш пулма ҫӑмӑл мар» (1996), «Хӗҫ тумалли хурҫӑ» (1997), «Думы о чувашском» (1999).

Ҫамрӑксен театрӗ ман пьесӑпа «Авлантарчӗҫ» спектакль лартрӗ. Куракансем лайӑх йышӑнчӗҫ. Сӑлтавӗ те паллӑ ӗнтӗ. Хулари чӑваш пурнӑҫне, патшалӑх тытӑмӗнче ӗҫлекенсем криминалпа явӑҫса кайнине уҫӑмлӑн кӑтартса паракан спектакль пирӗн театрсенче пулманччӗ-ха. Милици майорне япӑх енчен кӑтартнӑшӑн ӳпкелешекенсем те пулчӗҫ , мӗн тӑвӑн ӗнтӗ, пурнӑҫра ун пекки те пулать вӗт-ха.

20-мӗш ӗмӗр вӗҫленнӗ тӗле пуҫӑмра тепӗр хирӗҫӳллӗ шухӑш ҫуралчӗ. Тӗрӗс мар ӗҫлетӗп иккен. Улталаннӑ эпӗ юррӑмсем кашни кун янранине пула. Тӗрӗссипе каласан, виҫ-тӑватӑ куплетлӑ сӑвӑ ҫырма пысӑк пӗлӳ кирлех те мар. Ҫакӑ вӑл мана

çămăлттайрах çын ĕçĕ пек кăна туйăнчĕ. Хамран хам: «Вуламалли мĕнех пур вара сан?» – тесе ыйтсан нимех те калаймарăм. Апла пулсан урăхла ĕçлеме тытăнмалла. 2000-мĕш çулта вара çирĕм пилĕк калавпа виçĕ повеçрен тăракан «Юратусăр телей çук» кĕнеке пичетленсе тухрĕ, тепĕр çултан – «Улăп таврăнни» роман-халап.

Юрă çырнă чухне сăввăмсене Ю. Сементере кăтартса пăхни самай пысăк пулăшу пачĕ. Тепĕр чух тата шӳтлесе, «Эпĕ Сементер семинарне çӳретĕп», теттĕм. Валентин Урдашран вĕренмелли нумай. Чи усăлли, паллах, халăх юррисене тишкерни. Хальхи эстрада «çăлтăрĕсене», хăйсем кĕвĕлесе юрлаканнисене, ытларах халăх пултарулăхĕнчен вĕренме сĕннĕ пулăттăм. Кашни юрă искусствăри çĕнĕ сăмах пултăр тесен унччен çырнă юрăсене те пĕлмелле. Шухăшсăр, пысăк туйăмсăр юрăсем вĕсем пĕр кун пурăнакан лĕпĕшсем кăна. Виçĕ талант вăй хумасăр юрă шăпи телейлĕ пулаймасть. Сăвă вăл поэт ĕçĕ, кĕвĕ – композиторăн, юрласси те вĕренмесĕр, ăсталăха туптамасăр пулмасть. Чăваш юррине ӳкме парас марччĕ, халăх чĕринче ырă туйăм, пуçĕнче тарăн шухăш çуратасчĕ тесе çыртăм та ĕнтĕ юррăмсене.

Юрă вăл вак жанр тейĕттĕм. Пурнăçа анлăрах сăнарласа кăтартакан тарăн шухăш валли юрă кĕпи, паллах, тăвăртарах. Шăпах çакă проза еннелле пăрса ячĕ те ĕнтĕ мана. Çав çулпа тĕрĕс утма пулăшаканĕ – Юлия Силэм. Ман кĕнекесен редакторĕ пулнă май питĕ усăллă сĕнӳсем пачĕ, хăй те самай хавхаланса ĕçлерĕ. Эпĕ çырни кăштах килĕшнĕ ĕнтĕ ăна. Халĕ манăн эпĕ Силэм семинарĕнче тăратăп тесе калас кăмăлăм пысăк, анчах хальхи проза амăшĕ çакна йышăнĕ-ши?

Туятăп-ха Кибеч пичче хăй утмăл урлă каççан та каллех вĕренесси пирки çырать текен те тупăнасса. Тӳрех калатăп, вĕренме пăрахни вăл  ăс-тăн вучахĕ сӳннипе танах. Ватăласси те çавăнтанах пуçланать. Мĕн те пулин çĕннине пĕлсе хавхаланнă чухне çын хăйне çамрăкрах туять, пуç та лайăхрах ĕçлет. Çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем лартнă чух ватălма та вăхăт çук.

Çапла вара эпĕ литература лавне ыттисенчен каярах кӳлĕннишĕн нимĕн чухлĕ те пăшăрханмастăп. Хĕпĕртетĕп кăна. Тантăшсем социализмла реализм картинче кĕпĕртетсе çӳренĕ чухне эпĕ шăп лартăм, вуларăм, ăс пухрăм, демократи юхăмĕ çитсен алă хăех ручка тытрĕ. Çапла вара эпĕ çĕнĕ самана çыравçи пулса тăтăм. Пуçлăхсен аллине ларасчĕ тесе йăпăлтатса çырнă хайлавсем манăн пачах та çук, шухăшăма уçăмлăн, хăюллăн пĕлтерме тăрăшрăм. Çыравçăн ун шăпах çапла пулмалла та, ыттисенчен çӳллĕрех шайра тăмалла, влаçпа мар ĕнтĕ, ăс-тăн вăйĕпе, шухăшпа. Енчен те унччен чăваш çыравçисем ытларах

парти обкомĕн тарçисем шутланнă пулсан, халĕ самана улшăнчĕ, ирĕклĕх тапхăрĕ килчĕ. Çавна май çыравçă яваплăхĕ те ӳссе пычĕ. Хам çырнине хамах критик куçĕпе пăхма тăрăшрăм. Паллах, çитменлĕхсем çук теместĕп. Çапах та чăваш чунĕ патне çул тупрăм пуль тетĕп. Ма тесен, маншăн чăвашран хаклă, чăвашран илемлĕ, чăвашран ырă çын çук.

Искусство вăл ĕмĕрлĕх япала, эпир кайсан та юлать. Паллах, чи лайăххи, ăсталăх тĕлĕшĕнчен чи çӳллĕ шайри: ARS LONGA, VITA BREVIS.

## 7. СПОРТПА ТУСЛАШНИ

Начар пуласчĕ-ха, айван пуласчĕ-ха текен çын çук. Çакă вăл ачаранпах паллă. Ахальтен мар пĕчĕклех ăмăртса чупатпăр, вылятпăр, кĕрешсе е йывăр япала çĕклесе пăхатпăр. Манăн та вăйлă пулас килетчĕ. Чăрсăртараххисем кӳрентерсен юлташсем тӳрех аттене е пиччене калатăп тесе хăрататчĕç, манăн вара хамăнах хӳтĕленме тиветчĕ. Юлташсене ăмсанаттăм, ман хута кĕрекен тăван çуккишĕн пăшăрханаттăм.

Ача чухне тем те сиксе тухать, сывлăхшăн хăрушă самантсем те. Пĕррехинче, ун чухне эпĕ улттăраччĕ, анне мана тимĕрçре тунă вăрăм хачча асаннене кайса пама хушрĕ. Йĕлтĕр çине тăтăм та урама тухрăм. Çав хĕл юр сăрт пекех купаланса ларнăччĕ, ярăнма та аванччĕ. Теме пула сăртран аннă чухне сирпĕнсе ӳкрĕм. Тăраймастăп. Сулахай енчен пĕçерсе кайрĕ, хыпаласа пăхрăм та кĕсьери хачă кăнтарса тăрать. Пуç çаврăнма тытăнчĕ, шурă юр та хура тĕслĕн курăнма пуçларĕ...

Юрать-ха, манпа юнашар килте пурăнакан Володя Смирнов, вăрçă вăхăтĕнче Ленинградран килнĕскер, асăрханă, аннене чĕнсе пынă.

Çăлăнса юлтăм. Телее хаччи ӳпкене амантман, айккинерех кĕрсе кайнă. Çĕвви вара халĕ те паллă, чылай пысăкскерех.

Сăмах май, тепĕр хăрушлăха та аса илмесĕр иртсе кайма май çук. Ун чухне асаттепе мунчана кайнăччĕ. Ах, вăйлă çапăнатчĕ, мана та ăшалантарса илетчĕ. Вара тӳрех мунча умне тухса лараттăмччĕ. Сывлăш çавăрса илсен – каллех вĕри мунчана. Пĕррехинче асатте малтан мана çуса кăларчĕ те хăй ларса юлчĕ. Эпĕ пĕччене пӳрте кĕтĕм. Асанне çук, таçта тухнă пулмалла. Хамăн çав тери ĕçес килет, çăвар типсех ларнă. Кăмака умĕнчи пысăк чейник патне пытăм та кăнтарса тăракан сăмсинчен хыттăн ĕмсе илтĕм. Чăтайманнипе кăшкăрса ятăм. Тин çеç вучах

çекĕлĕнчен вĕçертсе лартнăскер пулнă иккен. Çĕр градус! Çăвар пиççе кайрĕ, калаçаймасăт. Ман сасса илтсех-ши асанне чупса кĕчĕ, çăвара хупайманнине курсан тавçăрса илчĕ, çенĕхрен услам çу илсе кĕчĕ те пĕр татăк хыптарчĕ, унтан кравать çине вырттарчĕ. Асатте те мунчаран тухрĕ. Мĕн пулса иртнине пĕлсен асаннене вăрçма пуçларĕ. Мĕн тăвас тен, айăпли вăл мар та-ха, чăтма тивет. Асанне маншăн тухтăр вырăннех пулчĕ. Курăк шывĕ туса çăвара чӳхеттеретчĕ. Кайран вара чылай вăхăт хушши вĕри апатран хăраса пурăнтăм.

Шкулта чухне чупассипе мала тухаттăмччĕ. Çитĕннĕ каччăсем кире пуканĕ йăтнине курсан питĕ ăмсанса пăхса тăраттăм. Пĕр вунпиллĕкелле çитсен хам та тыткаласа пăхрăм. Паллах, çынсем умĕнче мар ĕнтĕ. Икĕ пăтлă пукан Çтаппан пиччесен пурччĕ. Çавсем патĕнче аппаланаттăм. Пĕррехинче çав пукан таçта кайса кĕчĕ. Инкерен ыйтрăм та Çтаппан пиччӳ пытарса хунă терĕ, ăçтине каламарĕ. Хĕрхеннĕ ĕнтĕ вĕсем мана, ытла çамрăкла йывăр йăтма юраманнине пĕлнĕ. Пуканне вара пурпĕрех шыраса тупрăм кĕлет айĕнчен. Киле йăтса кайрăм та тăраничченех мекĕрлентĕм. Кĕçех хамран аслăраххисемпе танах çĕклеме тытăнтăм. Хама хам çĕнтерни пулчĕ ĕнтĕ.

Саккăрмĕш класра чухне шкул килкартишĕнче волейболла выляттăмăрччĕ. Çак вăйă мана питĕ килĕшетчĕ. Учительтен пĕр çĕтĕк мечĕк ыйтса илтĕм те сапласа майлаштартăм. Унтан юлташсемпе хамăр ялта лавкка хыçĕнчи çерем çинче юпасем лартса волейбол площадки турăмăр. Малтанлăха вăрăм пăяв карăнтарса çыхса вылярăмăр, каярах сетка та тупăнчĕ. Çапла вара эпĕ хамăр ялта пĕрремĕш хут волейбол команди йĕркелерĕм. Юнашар ялсене те тухса çӳреттĕмĕр, район акатуйĕнче те ăмăртнă.

Вăрман техникумĕнче волейболла выляс ăсталăх ӳссе пычĕ. Унсăр пуçне тата бокс секцине çӳреме тытăнтăм. Тренерĕ Тинĕс-Çар флотĕнче хĕсметре тăнă çынччĕ, пирĕн пата тельняшкăпа пыратчĕ. Хамăн та флота лекес ĕмĕт çуралчĕ. Çапла пулчĕ те. 1958 çулта Владивостокра бокс енĕпе ăмăртăва хутшăнтăм. Ăна подводниксем хатĕрлекен шкул шайĕнче ирттерчĕç. Ăмăрту маншăн ăнăçлă пуçланчĕ, пĕрин хыççăн теприне çĕнтерсе пытăм. Тăрăшнă ĕнтĕ. Çамăлрах виçепе ăмăртас тесе шинель тăхăнса пайтах чупнă. Финала тухрăм. Ак тамаша, мана хирĕç хамăр старшина тухса тăчĕ. Тепĕр ушкăнри çĕнтерӳçĕ вăл иккен. Кĕçех гонг янраса кайрĕ. Пĕр-пĕрне чышатпăр та чышатпăр. Сасартăк залра ларакансенчен пĕри кăшкăрса ячĕ: «Толя! Нарядсемшĕн лайăхрах пар-ха ăна!» Çакна илтсен пĕр самантлăха çухалсах кайрăм. Лешĕ чышать те чышать, вăйĕ маннех çитменнине

сисетӗп-ха, анчах техника тӗлӗшӗнчен самай ӑстаскер. Хамӑн чи юратнӑ, чи ӑнаҫлӑ мелпе усӑ кураймарӑм, выляса ятӑм, чемпион пулаймарӑм. Тен, залра ларакан матрос кӑшкӑрман пулсан ӑмӑрту урӑхла вӗҫленетчӗ, калама хӗн.

Педагогика училищинче вӗреннӗ чухне бокс вӑййине пӑрахма тиврӗ, баян калама вӗреннӗ чухне чӑрмав кӳрӗ терӗм. Ҫапах та спорт уявӗнче Канашри тепӗр спортсменпа бокс вӑййи кӑтартассине йышӑнтӑм. Калаҫса татӑлнӑ тӑрӑх тӗрлӗ мелсене кӑтартнӑ хыҫҫӑн ман теприне нокаудпа ҫӗнтермеллеччӗ. Ҫапла турӑмӑр та. Унтан ринг ҫине пӗр пӗчӗк спортсмен сиксе тухрӗ те мана паккама тытӑнчӗ, юлашкинчен ҫапса ӳкерчӗ. Пурте ахӑлтатса кулаҫҫӗ, алӑ ҫупса саламлаҫҫӗ. Унтанпа ринг ҫине тухман. Боксер ӑсталӑхӗпе те сайра усӑ курнӑ, уйрӑмах пӗр пӑтӑрмах хыҫҫӑн.

Ун чухне манӑн Шупашкартан яла каймаллаччӗ. Троллейбуса кӗрсе тӑнӑччӗ кӑна, хыҫалта тавлашу пуҫланчӗ. Пӗр арҫын киревсӗр сӑмахсемпе кӑшкӑрашса хӑлаҫланать. Пырса тӑтӑм та чарӑнма ыйтрӑм. Ман ҫине сиксе ӳкрӗ. Хӑйӗнчен эрех шӑрши перет. Аллинчен хыттӑн ярса тытса вырӑна лартрӑм. Вокзал патне ҫитсен тухрӑм та хайхи малалла утрӑм. Сасартӑк пӗри хыҫалтан пырса ҫурӑмран паклаттарчӗ. Ҫаврӑнса пӑхрӑм та леш арҫын куҫне чарса тепре ҫапма аллине ҫӗкленӗ. Мӗн тӑвас тен, хам боксер пулнине аса илме тиврӗ. Пӗрре кӑна ҫапрӑм, асфальт ҫине тӑсӑлса та ӳкрӗ. Кайран вара чылайччен кулянса ҫӳрерӗм. Хама чармалла пулнӑ ӗнтӗ. Унтанпа пӗр ҫынна та вӑйпа ҫапса курман. Малашне те ҫаплах пултӑрччӗ.

Хальхи ҫамрӑксене курсан чун ыратать. Урампа пынӑ чухнех паллӑ: пӗр аллинче сӑра кӗленчи, тепринче сигарета. Пирӗн вара ун пек йӑла пачах та пулман. Канашри чи сумлӑ ӑмӑртусене хутшӑнаттӑм. Вагонсем юсакан заводӑн волейбол командине хирӗҫ выляни хӑех мӗне тӑрать. Ҫӑмӑл атлетикӑпа пилӗк енлӗ кӗрешсе (пятиборье) хула чемпионӗ ята тивӗҫрӗм. Кӑтартусем пит пысӑках марччӗ, анчах пур енӗпе те вӑтам ӑмӑртни (калӑпӑр, ҫӳллӗшне сикесси – 1 метр та 60 см, 100 метра чупасси – 11,6 секунд) ыттисенчен иртсе кайма май пачӗ.

Пединститутра вӗреннӗ чухне ытларах волейболла выляссипе тимлерӗм, музыка факультечӗн командине йӗркелерӗм. Тӑрӑшни сая каймарӗ. Виҫҫӗмӗш курсра чухне институт чемпионӗ те пултӑмӑмӑр, финалта физкультура факультечӗпе ӑмӑртма тиврӗ. Вӑйӑ ҫав тери нумая пычӗ, йывӑр пулчӗ. Ҫапах та хам капитан пулнӑ май блок лартассине, тапӑнса ҫапассине йӗркелесе, спортсменсене вӑхӑтра ылмаштарса пырса ҫӗнтертӗмӗр, маларах музыкантсенчен тӑрӑхласа кулакансене вӗрентсе илтӗмӗр. Ун чухнехи студентсем ҫак вӑййа паянхи кун та астӑваҫҫӗ.

Юратнă вăййа кайран та пăрахмарăм, канмалли кунсенче юлташсемпе спортзала çӳрерĕм, утмăлалла çывхарнă тĕлелле тин пăрахрăм. Халĕ вара кашни кунах физзарядка тăватăп, çурран çӳреме тăрăшатăп.

Спортпа туслашни мана çав тери пысăк пулăшу пачĕ. Уйрăмах çакна диссертаци çырнă чухне сисрĕм. Кунĕпех библиотекăра е архивра ларнă чухне хăш-пĕр аспирантсем пуç ыратни çинчен калаçатчĕç. Манăн ун пекки пулман. Ку çеç те мар-ха, преподаватель çулне пĕр кун сиктермесĕр, пĕрре чирлемесĕр утса тухрăм. Урă пурнăç йĕркине тытса пытăм. «Манăн пурĕ те икĕ çитменлĕх кăна: эрех ĕçме тата табак туртма вĕренеймерĕм», – тесен никам та вăйпа ĕçтерместчĕ. Çăкăр-тăвара хисеплесе сăра кăна ĕçсе параттăм, халĕ те çавах. Эрех ĕçнинче нимĕн те лайăххине курмастăп, сывлăха хавшатни кăна. Пысăкрах виçепе пăхсан çакă вăл *хальхи чăвашăн пĕртен-пĕр чирĕ*. Çавăнтан сывалсан пирĕнтен вăйлă, пирĕнтен ăслă, пирĕнтен илемлĕ халăх урăх пулас та çук. Пире пăсăк самана арпаштарса ячĕ. Пиншер çул урă пуçпа пурăннă халăх юлашки 50–60 çул хушшинче эрех ăшне путрĕ. Халĕ вара урăлса çитесси те паллă мар.

Çын вăл чи малтан çутçанталăк ачи. Çавăнпа та унăн хăйне хăй упранмалли вăйсем пурте пур. Усă курма пĕлменни кăна чăрмав кӳрет. Çавăнпа та ман кăкăрăм çинче утюг çыпçăнса тăнинчен, аллăмсене пуç тăрринче тытсан ыратни иртсе кайнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Çакăн пек вăй вăл кашнийĕнех пур. Анчах ăна пурăнма пĕлменни, ĕçкĕпе иртĕхни сӳнтерет. Хампа пĕр çултисене илсен чылайăшĕ алла çитиччене вилсе пĕтрĕ. Утмăл урлă каçнисем те виççĕн кăна тăрса юлтăмăр. Пирĕн вара халĕ асаттесемпе асаннесене ăмсанмалли кăна юлать.

1980 çулта Болгарири паллă курортра Албенăра канма тӳр килнĕччĕ. Арăмпа аслă хĕрĕме те пĕрле илсе кайрăм. Кам кăна çукчĕ унта: акăлчансем, нимĕçсем, поляксем, шведсем... Пĕррехинче пире кăвар çинче çара уран ташланине курма илсе кайрĕç. Паллах, пысăк тĕлĕнтермĕш. Икĕ арçын йăлкăшса выртакан кăвар купине тикĕс салатса хучĕç те ташă кĕввипе килĕшӳллĕн çарранах кĕрсе кайрĕç. Вĕсем ташласа пĕтерсен эпĕ те пушмака хыврăм та чăвашла ташласа патăм. «Кун пеккине пĕрремĕш хут куратпăр», – терĕç пăлхарсем. Хамăр ăшри вăйсене тĕрĕс ĕçлеттерсен кăвар та кăвар мар, пăрлă çумăр хыççăн çарран утнă пек çеç.

Урă пурнăçăн тепĕр паха енĕ вăл – çемьери килĕшӳ. Чи хакли – упăшкипе арăмĕ хушшинчи ар çыхăнăвĕсем нумай çула пыни. Ун пек чухне чир-чĕр те ним те мар, сайра-хутра сиксе тухакан хирĕçӳсем те хăвăрт иртсе каяççĕ, тĕттĕм каç хăвăрт мирлештерет. Ашшĕпе амăшĕ юратуллă пурăннă чухне ачисем те телейлĕ ӳсеççĕ.

Çын хăй сывлăхĕпе хăй хуçа, ĕçес килсен ĕçтĕр текенсем те пур. Çакăнпа ниепле те килĕшме май çук. Ĕçке ернĕ çын вăл пĕтĕм çемье чирĕ, ачисен сывлăхне, пуласлăхне ĕмсе пурăнакан сăвăс. Кĕçех хĕрарăм илемне те асăрхами пулать. Арлăх вăйĕ пĕтнине пула кĕвĕçӳ пуçланать. Вырăнсăр ӳпкелешӳ, киревсĕр сăмахпа арăм кăмăлне хуçни, пĕр-пĕринчен сивĕнни килсе çапать. Çамрăк чух юратса пĕрлешнĕ çынсемех юттăн пурăнма тытăнаççĕ.

Çапла вара юратупа сывлăх хушшинче çав тери çывăх çыхăну пурри сисĕнет. Сывлăх юрату ĕмĕрне вăрăмлатать, юрату сывлăха упрать.

Çĕр çинче темĕн тĕрлĕ чĕрчун та пур. Анчах хăй сывлăхĕпе кĕрешекенни, ăна хирĕçле ĕç тăваканни – çын кăна. Ĕмĕр тăршшĕпех хăйне хăй улталаса, сиен туса пурăнать çавнашкалли, халĕ тата наркотикпе ухмахланать. Тĕнче ăслăланса пырать теме пултараймастăп. Хамăр та çавах ĕнтĕ, куçăмăрсем ытла хуллен уçăлса пыраççĕ. Ваттисенчен, ĕлĕкрен пыракан йăласенчен вĕренмелли те темĕн чухлех вĕт-ха. Чăваш чунĕ валли юрă кирлĕ, ӳчĕ валли – мунча. Вырăссене мунча кĕме вĕрентекенсем те чăвашсемех. Пĕрре хăнăхса çитсен çан-çурăм хăех ыйтать, эрнере пĕрре хурăн милĕкпе çапăнмаллах. Хĕлле хула мунчине çӳретĕп, çулла – пахчара хамах хутса пултаратăп. Мунчана ăна хăйне евĕрлĕ ритуал тесен те юрать, кĕме çеç мар, хутма та пĕлмелле. Вуттине хатĕрлени, çунтарни, шывне ăшăтни, милĕк пĕçерни, савăт-сапана çуса тасатни, хĕрнĕ чула шыв сапса тĕрĕслесе пăхни – çаксем пурте кăмăла çĕклекен самантсем. Апла пулсан мунча вăл ӳт уявĕ кăна мар, чун уççи те. Çăвăнса тухнă хыççăн чей ĕçсе калаçса ларни питĕ кăмăллă самант. Сывлăх культури мунчаран пуçланать тесен те ытлашши пулмасть.

Чăваш нумай çывăрмасть. Пĕчĕккĕ чухне анне пачах та çывăрмасть тесе шухăшланă вăхăт та пулнă. Эпĕ çывăрма выртнă чухне те, вăраннă самантра та ура çинчеччĕ. Халĕ хам та çавах, ултă сехете яхăн çывăрни те çителĕклĕ. Кăнтăрла выртса канас йăла пачах çук, çакна тухтăрсем сĕнеççĕ пулсан та. Ман шутпа, çын пурнăçĕ çутçанталăк йĕркипе килĕшӳллĕн иртсе пымалла: çĕрле – çывăрмалла, кăнтăрла – ĕçлемелле. Сывлăхлă çыншăн улт-çичĕ сехет çывăрни çителĕклĕ.

Эпĕ ача чухне пирĕн ялта хырăмне ӳстерсе янă мăнтăр çынсем пачах та çукчĕ. Ытларах ал-ура вăйĕпе ĕçленĕрен, кун каçиччен пиншер хускану тунăран ĕнтĕ. Çавна май тепĕр вăрттăнлăха та уçса парас килет.

Çĕр çинче темиçе пин тĕрлĕ халăх. Кашниех хăйне майлă пурăнать, апат-çимĕçĕ те пĕр пек мар, тем çиекен те пур. Çĕлен те, шапа та, ăшаланă саранча та апат иккен. Чăвашăн тĕп апачĕ – яшка. Ăна çимесен апатланнă пек те мар. Ачаран хăнăхнăран ĕнтĕ. Пирĕн несĕлсем ухмах пулман иккен, хурана янă ашпа пахча-çимĕçĕн тути те, сывлăхшăн усăллă япалисем те çавăнтах юлаççĕ. Тепĕр чухне пĕçернĕ çимĕçсенчен винегрет тăватпăр та тутлă тесех çиетпĕр. Тĕрĕссипе каласан, усăллă япалисене малтанах шывпа юхтарса янă ĕнтĕ. Яшкара ун пек мар. Çатмара çунăхтарса ăшаланă çимĕçпе танлаштарсан яшка вăл вар-хырăмшăн та çăмăлрах, ӳт ытлашши хутшăнасран та лайăх. Ман арăм яшка пĕçерме çирĕм пĕр çул хушши хамăрпа пĕрле пурăннă аннерен вĕренсе юлчĕ. Тутлă пĕçерет, мана вунçичĕ тĕрлĕ яшка çитерет. Сертине те, пултранне те, кăмпине те вăхăтра типĕтсе хуратпăр. Çамрăк чухне эпĕ метр та çитмĕл пилĕк сантиметр çӳллĕш пулнă, йывăрăш – çитмĕлпе-çитмĕл виççĕ хушшинче. Унтанпа вăтăр-хĕрĕх çул та иртрĕ ĕнтĕ, анчах пысăк улшăну çук, шăм-шакăм яш чухнехи пекех. Утма та, сывлама та çăмăл, ваттисен кунĕ ячĕпе саламлакан та çук.

Маншăн апат пĕлтерĕшĕ нумай çининче мар, çимĕç пахалăхĕнче, таса та тирпейлĕ хатĕрленинче. Анне яшки çаплаччĕ. Ачисене юратса пĕçернĕрен ĕнтĕ. Юратусăр хатĕрленĕ апат тутлă пулмасть, çисен те ăша кантармасть.

Çамрăк чухне чăрсăрлăх манăн та пулнă ĕнтĕ. Икĕ пăтлă кире пуканне чĕн пиçиххипе çыхаттăм та тепĕр вĕçне шăлпа çыртса пуç тавра çавăраттăм. Халĕ вара шăл тухтăрĕ патĕнче ларнă чухне çакă та аса килет. Ку çеç те мар-ха, шăл-çăвара тирпейлĕ тытма пĕлменнишĕн те ятлаçса илетĕп. Унччен эпĕ шăла ирпеле пĕрре тасатнипех çырлахнă. Çителĕксĕр пулнă иккен. Каçпала тасатнин уссине каярах тин пĕлтĕм çав. Çакна эпĕ хамшăн мар, ыттисем асăрхануллă пулччăр тесе çыратăп. Ватлăхри чирсене çамрăклăх йăнăшĕсем тесен те юрать.

Хальхи пек мар, хамăр тĕллĕн ӳснĕ ĕнтĕ. Ытларах кĕнекесенчи геройсемпе хавхаланнăран, нумай вуланăран паттăрлăх туйăмĕ аса илтерсех тăратчĕ. Суворов пек пулас тесе-ши, пĕррехинче сивĕ кĕркунне Сорокин Толяпа ялти пĕвере пăр ватса шыва кĕтĕмĕр. Нумай та вăхăт иртмерĕ, çăпансем персе тухрĕç. Пĕри тата шăпах парта çине лармалли вырăна килĕштернĕ. Аран чăтса ирттертĕм. Юрать-ха иксĕмĕр те хыçалти парттăраччĕ.

Хăрах купарчапа ларса ывăнсан ура çине тăраттăм. Шкула каймасăр выртас шухăш пулман.

Каллех асанне пулăшрĕ. Килти тухтăрах пулнă ĕнтĕ вăл. Тĕлĕнеттĕм унран, ăçтан пурне те пĕлнĕ-ха вăл. Хĕрелсе тăракан çăпан тăррине çу сĕрчĕ те асатте лартса ӳстернĕ табак çулçипе хупласа çыхрĕ, ăшă кăмака тăррине çывăрма хушрĕ. Табак çулçи çăпан тăррине шăтарса унти тасамарлăха туртса илет иккен. Асанне: «Юрать-ха, ăша кайман, çăпанпа тухнă», – тенине нихăçан та манас çук. Çăпан тухни усăллă пулнă иккен.

Вуннăмĕш класра чухне ытти ачасем пекех эпĕ те табак туртма пуçларăм, учительсенчен вăрттăн ĕнтĕ. Уроксем хыççăн виçĕ çухрăм утнă чух чаракан та çук. Вăрман техникумне кĕрсен юлашки хут 1954 çулхи раштавăн 31-мĕшĕнче туртрăм та тепĕр кунне портсигарпа «Прима» сигарет пачкине юлташсене салатса патăм. Кайран «Казбек» пирус сĕнекенсем те пулчĕç, чăтрăм.

Тепĕр япăх йăла та чутах хăй патне туртса илетчĕ. Каланăччĕ ĕнтĕ Канашри педагогика училищи хыççăн Йĕпреçре ĕçленине. Пĕр çур çултан интернат музыка шкулĕ пекех кĕрлесе кайрĕ: виçĕ хор, баян калакансен кружокĕ, тĕрлĕрен инструментсенчен тăракан ансамбль, солистсем...Мана хăнана чĕнме тытăнчĕç, пĕри çуралнă кун ячĕпе, тепри туя, виççĕмĕшĕ юлташсемпе тĕл пулнă ятпа. Анчах баянпа пыма ыйтатчĕç. Пĕр вăхăтра тавçăрса илтĕм: вĕсене хамран ытларах музыка кирлĕ иккен. Ман вĕсене юрлаттарса, ташлаттарса савăнтармалла, пĕрле ĕçсе-çимелле. Вăхăтра чарăнман пулсан мĕнпе вĕçленесси паллă.

Тĕрĕс çулран пăрăнса каймалли самантсем манăн та чылай пулнă, Будда пек идеал шайлă пурнăçпа ӳсмен, пурне те курнă, анчах хама вăхăтра алла илме тăрăшнă. Чи пысăк çĕнтерӳсенчен пĕри, паллах, урă та сывлăхлă пурнăç йĕркине суйласа илни. Çакă мана пурнăçа хаклама, юратма вĕрентрĕ, илем тĕнчине уçса пачĕ, пĕлĕвĕм, пултарулăхăм хăй çулне тупса халăха усăллă ĕçсем тума май пачĕ, хавхалантарчĕ.

## 8. ĔÇПЕ ПИÇĔХСЕ ӲСНИ

Çын çураличчен маларах ун кахалĕ çуралать тет. Ĕçе пĕчĕкрен хăнăхса ӳсмесен кахал ытамне кĕрсе ӳкес хăрушлăх та пур. Ман шăпа апла пулмарĕ. Çимĕк иртсен юлташсемпе вăрмантан курăк е çулçă йăтаттăмăр, йăмăкăм та юлмастчĕ. Тырă вырма тухсан çурла тытса аннепе юнашар тăраттăм.

Сулахай алӑри кача пӳрнери ҫурла хӑварнӑ йӗрпе кӑштах мухтанма та пултаратӑп. Ҫурла тытса курман ҫыннӑн ун пек паллӑ ҫук.

Юр хырасси, вутӑ татса хатӗрлесси, ҫум ҫумласси, выльӑхсене апат парасси е купӑста шӑварасси вӑл нимех те мар, кашниех пултарать. Ҫӗрулми лартнӑ чух сухапуҫ тытасси вара самай кӑткӑс ӗҫ. Ҫакна эпӗ ҫиччӗмӗш класра вӗреннӗ чухне ҫуркунне пуҫларӑм, асатте мӗнле ӗҫленине курса ӗнтӗ. Юлташсенчен маларах тытрӑм. Выльӑх пусма та вӗрентӗм. Асатте кӑтартса пычӗ. Мӗн тӑвас тен, ҫакӑн пек кӑмӑлсӑр ӗҫе те тума тиветчӗ. Атте ҫукранах ӗнтӗ.

Хӗллехи вӑхӑтра пӳртре сиксе ҫӳрекен путеке тыта-тыта ачашлатпӑр, симӗс ҫулҫӑ паратпӑр. Кӗркунне вара... Илемсӗр ӗҫсем пайтах тӑватпӑр иккен. Пӗр хӗрӗх ҫул каялла пулса иртнишӗн вара халӗ те пӑшӑрханса пурӑнатӑп, ниепле те манма пултараймастӑп.

Ун чухне хӗл каҫарнӑ пӑрӑва Канаша выльӑх йышӑннӑ ҫӗре кайса памаллаччӗ. Ирех тӑтӑмӑр та ҫула тухрӑмӑр, эпӗ ҫавӑтса пыратӑп, анне хыҫалтан утать, хутран-ситрен ҫинҫе хулӑпа хӑмсаркаласа пырать, ҫапкаласа та илет. Кайсан-кайсан самантлӑха чарӑнатпӑр, пӑрӑва курӑк ҫитеретпӗр. Йывӑрӑшӗ ан чактӑр тесе каҫпала та курӑк хурса панӑччӗ-ха. Акӑ хулана кӗтӗмӗр, кукӑрмакӑр ҫулпа леш вырӑна ҫывхартӑмӑр. Пӑру сасартӑк тап! чарӑнчӗ те хулӑпа ҫапсан та итлемест. Мӑйӗнчен ҫаклатнӑ пӑява вӑйпах туртатӑп, ҫук, хускалмасть. Ҫавӑтма аннене хушрӑм та хулла хам илтӗм. Ҫук, хӑнк та тумасть. Аптранипе ҫул айккинче выртакан чылай мӑнтӑр патака илтӗм те ҫурӑмӗнчен ҫапрӑм. Вара тин хускалчӗ, туртӑна-туртӑна утса пычӗ. Кӗҫех тараса ҫине тӑратрӑмӑр. Унтан карта алӑкӗнчен ыттисем патне кӗртсе ятӑмӑр. Вара вӑл пирӗн еннелле ҫавӑрӑнса тӑчӗ те хурлӑхлӑн пӑхса темле макӑрнӑ пек сасӑ кӑларса тӑрса юлчӗ. Ҫак самант халӗ те куҫ умӗнче, сасси те хӑлхара.

Выльӑх шӑпи ҫапларах ҫав, ун пӑхӑнмалла, ҫыншӑнах пурӑнса ирттермелле. Лешӗ вара пур ҫӗрте те хуҫаланма тӑрӑшать, хӑйне ҫутҫанталӑк патши вырӑнне хурса таҫта та кайса пайта шырать. Шыври пулӑ та, хирти мулкач та, йывӑҫ хӑвӑлӗнчи пыл та ӑна валли иккен. Килти выльӑх пирки каламалли те ҫук.

Манӑн ӗҫ кӗнекинче ҫырса палӑртнӑ чи пирвайхи вырӑн вӑл Свердловск облаҫӗнчи Санкински вӑрман хуҫалӑхӗ. Эпӗ унта десятник пулса ӗҫлерӗм. Ҫакӑ питӗ инҫе вырӑна хам суйласа илтӗм. Малтан Свердловск урлӑ Алапаевск хулине ҫитрӗм, унтан ансӑр чугун ҫулпа кайрӑм, малалла вара – тракторпа. Йӗри-тавра вӑрман. Десятникӗн вара каснӑ йывӑҫ каскисене

сортласа шута илмелле, ĕçлекенсене тӳлеме вăхăтра наряд çырса памалла. Десятник вăл ытти начальниксемпе танлаштарсан рабочисене çывăх çын. Кам мĕнле ĕçлени, мĕн калаçни веçех паллă. Çак лару-тăрура хăвна мĕнле тытмаллине пурнăç хăй кăтартса пачĕ.

Пĕррехинче рабочисем ĕçе тухмарĕç, лесопункт кантурĕ патне пухăнчĕç те виççĕшне начальник патне ячĕç. Вĕсем хыççăн эпĕ те кĕтĕм. Рабочисем ĕç нормине ӳстернĕшĕн тавлашаççĕ. Енчен те унчченхи пек хăвармасан ĕçе тухмастпăр теççĕ. Забастовка тесен те юрать ĕнтĕ. Начальникпе ним хăрамасăр калаçни те питĕ тĕлĕнтерчĕ мана. Мĕнле çынсемпе ĕçленине пĕлмен эпĕ. Чылайăшĕ кунтан инçех мар вырнаçнă колонисенчен тухнăскерсем киле укçаллă пырса кĕрес тесе тăрăшаççĕ иккен. Укçашăн тем тума хатĕр, ĕçрен пачах та хăрамаççĕ. Енчен те тĕрĕс тӳлемесен вара чăт. Питĕ тимлĕ пулмалла. Тен, çавна шута илсех начальникпе технолог чĕрре кĕрес темерĕç, ĕç нормине кивĕллех хăварчĕç.

Шăп çакăнта туйса илтĕм те ĕнтĕ çынсене лайăхрах пĕлме кирлине. Психологи тĕлĕшĕнчен манăн нимĕнле пĕлӳ те çуккă иккен. Участокра тата Украинăран вербовкăпа килнĕ çынсем те пурччĕ. Кусем те хăйне евĕрлĕскерсемччĕ. Вуласа пĕлес кăмăл çуралчĕ, анчах юрăхлă кĕнеке тупаймарăм. Клубри пĕр шкапран тăракан библиотекăра мана кирлĕ кĕнеке тупăнмарĕ.

Мĕншĕн-ха çынсем тĕрме çулĕ çине тăраççĕ, тухсан вара киле çын евĕрлĕ пырса кĕресшĕн? Ултшар, сакăршар метрлă пĕренесене лашапа сĕтĕрсе пырса вуншар ретлĕ çӳллĕ штабельсем хăпартатчĕç. Çав çынсемпе танлаштарсан самай çамрăк пулнă вĕт-ха эпĕ, çапах та мана итлетчĕç, эпĕ хушнине тăватчĕç.

Çавăнта курни мана пурнăçра питĕ пысăк пулăшу пачĕ. Çынсенчен хăрами пултăм, хама хăюллăрах тытма пуçларăм. Енчен те каярах йывăрлăхсем сиксе тухсан, эпĕ тӳрех вăрман кастарнине аса илетĕп. Лартнă тĕллеве пурнăçлама пултарнă вĕт-ха эпĕ.

Пирĕн ялăн чи пысăк нуши вăл кĕвентепе шыв йăтасси. Çăлсем çырмара çеç тухнăран инçе çӳреме тиветчĕ. Сивĕ хĕлле киле çитиччен витре хĕррисем те пăрланса ларатчĕç. Пахчаçимĕç шăварнă чухне вара шыв йăтса чун тухатчĕ. Аттесем чавса пăхнă теççĕ, вунтăватă метра çитиех, анчах тăпра типтипех пулнă.

Виçĕ витрепе йăтаттăмччĕ. Чăнкă сăртран хăпарнă чухне пит меллех те марччĕ. Вара эпĕ çамрăк юмана авса тăватă

витрепе йăтмалли кĕвенте турăм. Çакă, паллах, шыв ыйтăвне татса пани мар ĕнтĕ. Çамрăксем йăтĕç-ха, ваттисем вара?..

Çапла пĕррехинче пуçа самай хăюллă шухăш пырса кĕчĕ. Халăх мĕнле нушаланни пирки Мускава çырса ятăм. Алă пусаканни анне пулчĕ. Тепĕр икĕ çултан артезиан çăлĕ чавса яла шыв кĕртсе пачĕç. Эпир никама та шарламанччĕ. Çапах та çынсем кам çырнине пĕлнĕ, районтисем калачă пулмалла. Шыв урам варринех килнĕшĕн кӳршĕсем аннене тав сăмахĕ калатчĕç. Каярах вара çав мелпех хамăр ялти ишĕлсе ларакан клуба юсаттарма май килчĕ. Ку хутĕнче Шупашкара çырнăччĕ.

Ял хĕрринче пурăннăран вăйлă çилсем çурт тăрринчи улăма вĕçтерсе каятчĕç. Ун чухне улăм та дефицит пулнă. Çумăрлă кунсенче вара маччаран шыв тумлатчĕ. Анне макăра-макăра савăтсем лартса тухатчĕ. «Çак улăма илсе персе тимĕр витсе пулĕ-ши?» – шутлаттăм мĕн пĕчĕкренех. Канашра вĕреннĕ чухне вара ĕмĕтĕме пурнăçлас ĕçе тытăнтăм. Каникул вăхăтĕнче хамăр ял çыннисемпе çĕрулми сутма кайрăм Узбекистана çитиех. Бухарара та пултăм, виçĕ кун хушши Туркменистанри Мары хулинче ĕçлерĕм. Тепĕр çулхине Çтаппан пиччепе иксĕмĕр Краснодара кайрăмăр. Укçа кăштах пухăнчĕ, пăрушăн илнине те салатманччĕ. Вара эпĕ тимĕр шырама Урал еннелле тухса кайрăм. (Эх, тĕнче! Канаш тăрăхĕнче ниçта та тимĕр çук. Пĕрмаях вăрçа хатĕрленнине пула ун чухне халăха кирлĕ япаласем кăларасси çине пăхакан пулман). Тимĕрне вара Красноуфимскинче тупрăм, чугун çулпа тиесе ятăм, каярах Канашра кĕтсе илтĕм те машина тупса яла çитертĕм.

Юрать-ха, кăштах шăнăрлă пулнă. Эпĕ çĕрулми миххи йăтнă чухлĕ урăх никам та йăтса курман пулĕ. Йăлăхтарса çитерчĕ вăл мана, тусанне çăтса тăрантăм, хура сурчăкран аран тасалса пĕтрĕм. Тимĕр турттарса килнĕ чухне те çăмăл пулмарĕ; ах, йывăр-çке. Юрать-ха, пулăшакансем пур. Малтан юлташпа иксĕмĕр хамăр пӳрт тăррине витрĕмĕр. Улăмне илсе пенĕ чух йывăрах пулмарĕ. Асатте пӳртне витнĕ чухне вара ыvăниччeнех тапалашма тиврĕ. Улăмĕ пĕр метр хулăнăш та пуль, тăпăлтарсан та тухмасть. Аялти сийсем вара, пĕр вăтăр çул каялла хунăскерсем, пачах та йĕпенмен, сарă тĕслех. Тимĕр листисене хăпартнă чухне ватă асанне туя çине тайăнса пăхса тăратчĕ. Каярах вара асатте килĕнчи кĕлетпе лупасая шиферпа витсе патăм.

Шупашкара куçсан иккĕмĕш курсра вĕреннĕ чухне лаборантра ĕçленĕрен кооператива кĕме май килчĕ, икĕ пӳлĕмлĕ хваттере çырăнтăм. Пĕлетĕп-ха, пĕччен çынна ордер памасан та пултараççĕ. Çине тăрсах аннене паспорт тутарттартăм та (ун

чухне колхозниксен паспорт та пулман) пропискӑна Шупашкара тӑратрӑм. Ҫурт тӑвакансене пулӑшас тесе субботниксем ирттереттӗмӗр. 1967-мӗш ҫулхи ака уйӑхӗнче Гагарин урамӗнчи 15-мӗш ҫуртри вӗр-ҫӗнӗ хваттере пырса кӗтӗм, подвал та пур. Кӗҫех диван илсе лартрӑм, савӑт-сапа туянтӑм, пӗр вӑхӑт пӗчченех пурӑнтӑм, анчах нумайлӑха мар.

Ман йӑмӑкӑн вунпиллӗкрех килтен тухса кайма тиврӗ, инҫетри яла трахсестрара ӗҫлеме ячӗҫ ӑна. Ҫавӑнтах качча тухрӗ упӑшкисӗр пуҫне тата тӑватӑ хӗр пурӑннӑ киле. Ачисем те ҫуралчӗҫ, кӑмака ум хуҫи пулаймарӗ. Йӑмӑкӑм ҫав вӑхӑтра сӑнран та чакнӑччӗ. Кӗрӳ ӗҫкелесе килсен йышлӑ ҫемьере харкашусем те сике-сике тухнӑ. Тӑватӑ ҫынран тӑракан ҫемьене хам пата чӗнтӗм, хӗл каҫсан Атӑл хӗрринче пӗчӗк хӑмаран тунӑ пӳрт туянтӑмӑр. Тепӗр ҫултан хам пурӑнакан ҫуртрах пӗр пӳлӗмлӗ хваттер илтӗмӗр. Ҫавӑншӑн питӗ савӑнчӗҫ. Йӑмӑкӑм паян кун та тав тӑвать.

Вулакан мана хӑй пурнӑҫӗ ҫинчен чылай каласа пачӗ, анчах авланни пирки шарламасть теме те пултарать. Кӗскен те пулин пӗлтерем эппин.

Ҫемье ҫавӑрасси икӗ сӑлтава пула вӑраха кайрӗ. Пӗрремӗшӗ, аслӑ пӗлӳ илнӗ хыҫҫӑн аспирантура пирки кӑштах та пулин уҫӑмлӑх палӑрасса кӗтрӗм. Иккӗмӗшӗ, пурлӑх тӗлӗшӗнчен ура ҫине тӑмасӑр авланас темен. Ку ҫеҫ те мар-ха, малтан аннене илсе килес терӗм. Вӑл арӑм пур ҫӗре пырса кӗнипе мӑшӑрӑма анне патне илсе пыни хушшинче уйрӑмлӑх пурах ӗнтӗ. Вӑтӑр иккӗре авлантӑм, ҫамрӑк мӑшӑра анне хӑй тӗртсе тунӑ кавир ҫинче тӑрса, алшӑллипе тытса ҫавра ҫӑкӑрпа кӗтсе илчӗ, пил пачӗ. Унпа юнашар сӑрапа, атте вырӑнне пуль ӗнтӗ, хамӑн чи ҫывӑх тусӑм П. П. Павлов тӑчӗ.

Анне пирӗнпе ҫирӗм икӗ ҫул пурӑнчӗ, икӗ хӗрӗм те анне пӗҫернӗ яшкана ҫисе ӳсрӗҫ. Вӑл пурри ҫав тери пысӑк пулӑшу пулчӗ. Хам та, арӑм та час-часах командировкӑра пулаттӑмӑр, ачасене анне пӑхатчӗ. Йӑмӑкӑм пӗр ҫуртрах пурӑнни те ҫӑмӑллӑх паратчӗ. Ун чухне вӑл пирӗншӗн кил тухтӑрӗ вырӑннех шутланнӑ.

Хула пурнӑҫне кӑштах хӑнӑхса ҫитсен аннене путевкӑпа Кӑкшӑмри кану ҫуртне ӑсатрӑм. Тепӗр темиҫе кунтан кайса пӑхсан анне мана: «Эй, турӑ, кун пек пурнӑҫ та пулать-ҫке. Нимӗн те тумалла мар, ҫимелле те ҫывӑрмалла, вӑрманта утса ҫӳремелле», – терӗ.Нихӑҫан курманнине курнӑ ӗнтӗ вӑл. Тепӗр ҫул ӑна Шупашкарти кану ҫуртне ятӑм, каярах – «Ильинкӑна», «Волжские зори» ятлӑ сипленмелли вырӑна та.

Пӗчӗкренех йывӑҫ лартма юрататтӑм. Килкартине илемлетес

ĕç пуçартăм В. М. Черновпа, А. Г. Николаев летчик-космонавтăн çывăх тăванĕпе. Питомникрен çĕр тĕпе яхăн хура пилеш турттарса килтĕмĕр те йывăç лартассине йĕркелерĕмĕр. Урам енне тăватă çулхи хĕрĕмпе иксĕмĕр топольсемпе йăмрасем лартрăмăр шăв-шавран, тусанран сыхланас тесе. Автобус паркĕ те хирĕçехчĕ те-ха. Йăмра вăл чăваш йывăççи, ăна асаттесем те килĕштернĕ. Каярах, Энгельс урамне пурăнма куçсан, унта та йăмрасем лартрăм.

Чăваш вăл чунĕпе çĕрĕç çынни. Хулана куçсан та, пысăк чиновнике тухсан та çавăнталлах туртăнать. Çĕр пулсан чăваш пурăнать, нихăçан та выçă лармасть. Паллах, туса илнĕ çимĕç хăйне юлсан. Колхозри пек вăрлăх юлми шăла-шăла илсе тухса кайсан ĕçлес кăмăл та пĕтет. Юрать-ха, самани улшăнса пычĕ. Пахчаллă хула çыннинчен тăрăхласа кулма пăрахрĕç. Атту вĕт «кулак» сăмахпа чыхăнтаратчĕç.

1978 çулта пахча туянма май килчĕ, вырăнĕ хуларах. Ĕçлейми пулнă ватă çынсенчен илтĕм. Сăлтавĕ пирки те пĕр-ик сăмах каласа хăварас килет.

Пахчи хуняман та пурччĕ-ха, анчах унта хăв хуçа марри кашни утăмрах сисĕнетчĕ. Ыттисем шутланă пек кăна тумалла. Пуçана та çавăнтах чакалашатчĕ. Манăн вара хам пĕлнĕ пек пурăнас килетчĕ. Лайăх-и, начар-и, хамăн пултăр.

Саманчĕ те тупăнчĕ. Пĕррехинче хуняма пахчине кайсан пахча сутакан пуррине пĕлтĕм. Кайса пăхрăм, çырма урлă кăна. Вырăнĕ аптрамасть, анчах çĕрне çумкурăк пуснă, тăрăшса ĕçлени сисĕнмест. Ун чухне арăмпа хуняма карчăк теплоходпа кăнтăралла кайнăччĕ. Ыйтăва пĕчченех татса патăм. Илтĕм. Кайран вара хуняма пахчине кайнă чухне арăма пĕр çĕре кĕрсе тухма сĕнтĕм. Çитсе тăрсан: «Çакă хамăр пахча пулать», – терĕм. Вăл аптраса ӳкнипе ним каламасăрах амăшĕ патне чупрĕ. Тепĕр вунă минутран лешĕ чашкăрса çитрĕ, тарăхсах вăрçма тытăнчĕ: «Эсĕ çакна ман хĕре ĕçлеттересшĕн илнĕ. Кĕçĕрех килсе çунтарса яратăп», – тет. Эпĕ ляплантарма пикентĕм, тăвата сотка вăл пысăк пахчах мар, ăнах тытса тăма пулĕ-ха терĕм.

Тĕлĕнтĕм, питĕ тĕлĕнтĕм нихçан илтмен, кĕтмен сăмахсене илтнĕрен. Кĕрӳшĕ çине тăнине ырлас вырăнне çапла каласа хăртни самаях шухăша ячĕ. Ĕçе ăна пĕр-пĕринпе килĕштерсе туса пымалла вĕт-ха, йывăрлăхсене чăтса ирттернĕ чухне те çаплах. Хуняма килне, пахчине хаваспа çӳрес кăмăлăм хуçăлчĕ.

Пахча туяннине вара тăван аннем ырларĕ, вăй çитнĕ таран пулăшма тăрăшрĕ. Пахчана пăрăхпа шыв кĕртсе патăм, тислĕк турттарса килтĕм, тарăн ӳсекен курăк тымарĕсене витри-

витрипе туха-туха тăкрăмăр, айлăмлăрах вырăнсене тăпра йăтса хăпартрăмăр. Пахча лайăхланса, илемленсе пычĕ. Кĕçех хуняма нăрлама пăрахрĕ. Çапах та хĕрне сахалрах ĕçлеттерес шухăш пуçрахчĕ, ун пирки аса илтерсех тăратчĕ. Пĕррехинче каларăм: «Тепĕр тесен, сан хĕрĕн мĕншĕн ĕçлемелле мар вара? Ют çын валли мар вĕт, хамăршăн. Улми-çырли ачасемшĕн те усăллă»,- терĕм.

Юрать-ха арăм вăхăтра ăнланса илчĕ, пахча халĕ чи тирпейлисен шутĕнче тесен те юрать. Кӳршĕсем наянскерсем пулни кăна пăшăрхантарать. Çу вĕçнелле икĕ енчен те çумкурăк вăрри сирпĕнет, икĕ вырăс майрин парни ĕнтĕ.

Аслă хĕрĕме качча парсан тепĕр çултан кĕрӳпе иксĕмĕр пахчари пӳрте çĕнетме шутларăмăр. Халăх сăмахне те асра тытрăм. Пӳрт лартса курман арçын нихăçан та хисепре пулман. Йывăçне чылай ӳстернĕ-ха, ачасем те иккĕ, кооперативлă хваттере шута илмесен пӳрт тавраш лартман. Ĕçĕ вара йĕркеллех майлашăнса пычĕ, кĕрӳ тавçăруллă та ĕçчен пулни те пысăк çăмăллăх пачĕ. Çурт кăшăлне, тăррине ушкăнпа хăпартрăмăр, ыттине вара майĕпен кĕрӳпе иксĕмĕрех майлаштартăмăр. Ытларах хама тиврĕ. Юрать-ха, отпуск икĕ уйăха яхăн, пилĕк çул хушши ниçта тухса çӳремесĕр каскаларăм, саваларăм, пăта çапрăм. Çӳлти хучĕ йывăçран пулнăран кивĕ çурт хăмисене те вырнаçтарса пытăм. Ку çеç те мар-ха, унччен эпĕ пĕр чăвашран леш «засыпушка» текеннине пăссан тухнă хăмасене туяннăччĕ. Малтан пăтисене кăлартăм, икĕ витре çурă пулчĕ. Çавă кукăрмакăрсене тӳрлетсе тепĕр хут çапса лартрăм. Укçа çукран мар, пăтасене иккĕмĕш пурнăç парассине килĕштернĕрен. Вăлта пек кукăрскерне çурта пек тӳрĕ тăвасси çăмăл мар, чăтăмлăх кирлĕ. Çапах та эпĕ тӳрлетеймен пăта пĕрре те юлмарĕ, пурне те парăнтартăм.

Мĕн тĕрлĕ тема, сюжет çуралмарĕ пулĕ пуçра пахчара ĕçленĕ вăхăтра. Тепĕр чухне вара манса каяс марччĕ тесе кивĕ çурта чупса кĕреттĕм те шпалера чар! çурса илсе хăвăрт çыра-çыра хураттăм. Çу каçиччен чылай пухăнатчĕç. Кĕркунне вара çĕнĕ сăвăсем, калавсем çырăнатчĕç.

Халĕ ĕнтĕ пурне те туса çитернĕ тесен те юрать, мунчи те, сарайĕ те, çăлĕ те пур. Кĕрӳ газ плити лартса пачĕ. Çимĕçне мĕнле лартса ӳстермеллине те вĕренсе çитрĕмĕр. Ыттисен начар чухне те пирĕн тухăçлă пулать.

Тӳрех калатăп, çак ĕçре тупăш е услам илес шухăшăм пачах та çук. Икĕ хутлă çурт тунă çĕре хунă укçапа çимĕç илес пулсан, çĕр çулта та çисе пĕтерес çук. Тислĕк хакне, çĕршĕн тӳленине шута илсен тăкак татах ӳссе каять. Пĕлтерĕшĕ пачах урăххинче – пахчара чухне хăвна чăн-чăн çын пек туятăн.

Çутçанталăкпа туслашса пĕр чĕлхе тупни хăех мĕне тăрать! Мунча пирки вара – каламăпăр та.

Кăçал ав çулталăк çурăри мăнукăм Илюш пахчана пынă та тĕрĕслесе çӳрет, сукмакран пăрăнса йăран çине кĕре-кĕре каять, такăнса ӳксен те хăех тăрать, малаллах талпăнать. Амăшĕ ятлаçма тытăнчĕ. Чартăм. Çӳретĕр, тепĕр çул йăрана таптамалла маррине хăех тавçăрса илĕ-ха. Илюшпа мунча кĕни тата кукашшĕшĕн савăнăç мар-и-ха?

Пĕр сăмахпа каласан килти, пахчари арçын ĕçне ют çынна тутарман, япăх-и, лайăх-и, хамах тăрăшнă. Ĕçĕ вара кашни кунах тупăнса пырать. Паян та акă утюг тӳрлетсе патăм, унтан хам тунă путвала анса кишĕрпе кăшмана хăйăрпа витсе хутăм. Ун хыççăн çак йĕркесене çырма лартăм.

Ĕçе ăна эпĕ хĕвел ăшшине пĕр çĕре пухакан линзăпа танлаштарнă пулăттăм. Ма тесен çын ăсталăхĕ, пултарулăхĕ, пĕлĕвĕ, кăмăл-туйăмĕ, унăн обществори пĕлтерĕшĕ пĕтĕмпех ĕçре палăрать. Тепри хăйне хăй мухтаса калаçса çӳрет, анчах ĕçĕ çук. Сăмахпа ĕç хушшинче вăрăм çул выртать. Эпĕ вара яланах малтан ĕçне тума тăрăшнă, калаçăвĕ вăл каярах та пулĕ тенĕ. Ĕçĕ сăмахран маларах ӳкнине ырлатăп. Кĕнеке çырнă чухне те çак йăланах тытса пытăм.

Пĕррехинче Çĕнĕ Шупашкарта хамăр ял çыннине тĕл пултăм, курманни вăтăр çул та иртнĕччĕ. Çурт тунă çĕрте ĕçлет иккен. Хам ăçта вăй хунине ыйтсан эпĕ ăна: «Университетра философи вĕрентетĕп-ха, статьясем çыратăп, наукăра çĕнĕ сăмах калас ĕмĕтпе пурăнатăп», – терĕм. «Ку таранччен каламан сăмах та пур-и вара? – лаплаттарса хучĕ ентешĕм. – Философи тата мĕн тумалли япала?» Ак тамаша, мĕнле хуравламаллине те тавçăрса илеймерĕм. Çапах та философи вăл пурнăçа вĕрентет, ăс-тăна аталантарать теме пикентĕм. Ентешĕме ман сăмах килĕшмерĕ пулас, калаçăва урăх çĕрелле пăрса ячĕ: «Сана депутата суйланă тенине илтнĕччĕ, хваттер илме пулăшха?» – терĕ. Нуши, чăнах та, пур иккен, ывăлĕ авланнă хыççăн пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте пиллĕкĕн пурăнаççĕ. Кун пек чухне çынна нимĕнле философи те кирлĕ мар, ир те-каç та пĕр шухăш канăç памасть, пуçа пăралать.

Раççейре ăс-тăн вăйĕпе ĕçлекенсене: учительсене, тухтăрсене, писательсене, наука çыннисене мĕнле хисеплени ĕç укçинченех паллă-ха. Нумай çул хушши çурт тунă çĕрте ĕçлекен те пирĕн майлăскерех иккен. Укçасăр, хваттерсĕр хĕн куракансем темĕн чухлех. Хĕсĕк пурнăç пуçа та хĕсет, ăс-тăна та аталану параймасть. Апла пулсан, пирĕн паян экономикăра кăна мар, *пуçра та кризис*.

Пуҫа ӑна шухӑшлама тунӑ, ун ӗҫӗ ҫавӑ. Калпакне темӗн тӗслине те тӑхӑнма пулӗ-ха, ӑса вара сутӑн илме ҫук. Ӑна пӗрчӗн-пӗрчӗн пухмалла, вӗренсе, пуҫа лайӑх ӗҫлеттерсе. Шухӑшсӑр пуҫ кахалланма тытӑнать, ӑс ҫивӗчлӗхӗ те чакать. Ӗҫе хӑнӑхнӑ пуҫ вара ывӑнмасть те, ыратмасть те.

Ӑс-тӑн хӑватне ӳстерсе пыракан чи шанчӑклӑ мелсенчен *пӗри* вӑл – ӑнланса вуласси. Тӳрех калатӑп, вулакан нумай, ӑнланакан сахал. Ӑнланнипе пӗрлех хӑв шухӑшна асра тытса тин вуланипе танлаштарса пӑхмалла. Ҫакӑ вӑл питӗ хавхалануллӑ та савӑнӑҫлӑ самант. Ҫын пур ҫӗрте те ҫынах. Ҫавӑнпа та чылай шухӑшсем патне хӑй тӗллӗнех ҫывхарма пултарать. Ыттисем ҫырнине вулани вара ҫак ҫул ҫинче калама ҫук пысӑк ҫӑмӑллӑх парать. Моисей, Христос, Будда, Мухаммед, Конфуций, Демокрит, Сократ, Платон, Аристотель, Эпикур, Петрарка, Дидро, Вольтер, Гельвеций, Кант, Гегель тата ытти ӑслӑ ҫынсен вӗренӗвӗнче пире усӑлли темӗн чухлех. Илемлӗ литература та ҫак ретрех тӑрать. Илер-ха, К. Ивановӑн «Нарспи» поэмипе М. Шолоховӑн «Лӑпкӑ Дон» романне, унта ҫырса кӑтартни туйӑма ҫеҫ мар, пуҫ мимине те канӑҫ памасть, шухӑшлаттарать, тавлаштарать. Вулама кӑна ӳркенмелле мар. Телевизор пӑхнипех ҫырлахакансене хӗрхенетӗп. Ӑс-тӑн хӑватне аталантарас тесессӗн алла кӗнеке тытмалла.

*Иккӗмӗш мел* – ҫын каланине тӑнлама пӗлни. Шел пулин те, ҫакна чылайӑшӗ хакламаҫҫӗ. Тӑнлама пӗлекенсем сахал. Турӑ ҫынна икӗ хӑлхапа пӗр ҫӑвар панӑ. Апла пулсан ҫынпа калаҫнӑ чухне тӑнламасӑрах сӑмах пуҫарни кирлех-ши? Тӑнланӑ чухне нихӑҫанхинчен те ытларах чӑтӑмлӑх кирлӗ. Ҫамрӑк чухне ҫакна сӑнасах кайман, халӗ вара кӑштах вӗренсе ҫитрӗм. Ҫын каланине йӗркеллӗ тӑнланӑ чухне кӗҫех ӑс вучаххи йӑлкӑшма пуҫлать. Калаҫакан ҫынпа пӗрле шухӑшлама тытӑнатӑп иккен, ун шухӑшне маларах пӗлме тӑрӑшни те пур. Тепӗр чух тата калаҫаканни вырӑнлӑрах сӑмах тупасчӗ тесе кӑшт чарӑнсан хам каласа яратӑп, ӑна пулӑшса пыратӑп. Хамран нумайрах пӗлекен ҫынна тӗл пулсан вара ҫав тери хӗпӗртетӗп. Ӑна тӑнлани питӗ шӑрӑх ҫанталӑкра таса ҫӑл шывӗ ӗҫнӗ пекех туйӑнать. Хам шухӑша тата лайӑхрах ҫирӗплетекен самантсем тӗл пулсан вара савӑнмалли кӑна юлать.

*Виҫҫӗмӗш мел* – пурнӑҫри пулӑмсене тишкерни, лайӑххине те, япӑххине те ӑнланма тӑрӑшни. Сӑлтавсӑр нимӗн те пулса иртмест, ҫутҫанталӑкра та, ҫынсем хушшинче те. Хальхи ҫынна пушшех пӗлме йывӑр. Ма тесен, вӑл хӑйпе хӑй те хуҫа мар: е вӑл пӗр-пӗр партире тӑрать, е тӗн йӗркине кӑна пӑхӑнса пурӑнать, е ӗҫри пуҫлӑхӗ хушнине пула ҫапла тӑвать. Пуҫа

лайăх ĕçлеттермесĕр ăнланма çук. Хăвна хăв пĕлме тăрăшни те питĕ усăллă. Вулакансемпе тĕл пулнă чух е лекцире хама икĕ çын евĕрлĕ туятăп: пĕри çынсем умĕнче, тепри айккинчен сăнаса тăрать, лайăххине те, япăххине те куçран вĕçертмест. Çакă вăл икĕ шухăш çулĕ юнашар ĕçлесе пынă самант.

Пуçа лайăх ĕçлеттерме пулăшакан *тепĕр мел* вăл шухăшсене уçăмлăн çырса пĕлтересси. Тӳрех калатăп, калаçнă чух шухăш самай уçăмлă пек, çырма ларсан аплах мар. Теприсене грамматика пĕлĕвĕ çителĕксĕрри те пысăк чăрмав кӳрет. Логика та кирлĕ.

Нумай çыртăм тесе мухтанас шухăшăм пачах та çук. Ĕç пахалăхĕ статья е кĕнеке шутĕнче мар. Пĕр кĕнекепех тĕнчипе паллă çыравçă пулнă тĕслĕхсем те пур. Çапах та сăмах май каласа хăварас тетĕп: утмăла яхăн наука ĕçĕ çырса пичетлерĕм, хаçатри статьясен шучĕ икçĕртен те иртет, вунсакăр кĕнеке пичетленсе тухрĕ. Çак йĕркесене вулаканăн аллинчи вара вунтăххăрмĕш пулать.

Пуç мими пек вăйли, хăватли çын çумĕнче урăх нимĕн те çук. Çакă питĕ нумай енлĕ те хăвăрт ĕçлекен лабораторирен темĕн тĕрлĕ çимĕç те пиçсе, шăранса тухма пултарать. Пуç ĕçлемест е пуç вăйĕ пĕтрĕ тенипе килĕшместĕп. Ма тесен, эпир çĕр çул пурăнсан та пуç хăвачĕн пĕрре вуннăмĕш пайне те ĕçлеттерейместпĕр. Лайăххăн усă курмасăрах хамăрпа пĕрле леш тĕнчене илсе каятпăр. Пуç мимине эрехпе шĕветекенсем вара çамрăклах аптраса ӳкеççĕ, вулайми, çырайми пулаççĕ. Вĕсемшĕн тарăн шухăшлă спектакль пăхасси те йывăрлăх, камит е шоу текеннисем кăна лайăх. Искусство пусминчи чи аялти картлашкара тăракан юрăççен концертне килĕштерекенсем йышлă пулнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук. Вĕсене ытларах кĕвĕ илемĕпе асамлăхĕ мар, юрăççем сиккелени кăна илĕртет. Калаçнă чухне те çавах, çынна çуралнă кун ячĕпе йĕркеллĕ саламламалăх сăмах тупайманнисем те пинĕ-пинĕпе. Пĕтĕмпех ăс-тăн вучахĕнчи çулăм сӳнсе пынăран çапла пулса тухать.

Акă паян кăна халăх академийĕн ларăвĕнче пултăм. Районсенчен килнĕ ăсчахсем пуçтарăнса калаçрĕç, хăйсен ĕçĕпе паллаштарчĕç. Çитмĕл урлă каçнă таврапĕлӳçĕсем кăçал пичетлесе кăларнă кĕнекесене курсан ăмсанмалли кăна юлать. Ăс-тăнĕ вĕсен çаплипех çивĕч. Тен, çавна пулах час ватăлмаççĕ те. Сакăрвуннăрисем те музей уçасси пирки ĕçлеççĕ.

Вулакан ĕненет-ши, ĕненмест-ши – аслă шкулта чылай ĕçлерĕм, «иккĕ» лартса курмарăм. Хам пата пынă студента лайăх паллă илмелĕх пĕлӳ парасси маншăн яланах тĕп вырăнта пулнă. Вĕренекене хавхалантармалли мелсем вĕсем тупăнаç-

çех. Студента хăй каланă шухăшшăн хĕпĕртеме, савăнма вĕрентмелле. Тен, çавна пулах эпĕ ирттерекен семинарсенче тунсăх валли вырăн çукчĕ.

Пĕррехинче çапла яланхи пекех аудиторие кĕрсе тăтăм. Ак тамаша, хыçалти пукансем çинче пиллĕкĕн лараççĕ, désинститут ректорĕ Г. С. Сидоров та пĕрлех. Мускавран килнĕ питĕ сумлă комисси-мĕн. Нихăçан та манас çук, студентсем хăйсене çав тери лайăх кăтартрĕç; вĕрентекене пулăшас терĕç-ши?

Эпĕ ĕçлени мускавсене килĕшнĕ иккен, пĕтĕмлетӳ справкинче ырласа çырса хăварнă. Кун пирки ректор пухусенче темиçе хут та аса илнĕччĕ. Анчах ĕçпе кăна ырă пулма çук. Йăпăлтатма, курнă япалана курман пек тума вĕренмен. Ректор института йăнăш çулпа ертсе пынине те куçранах каланă, хам шухăша пухусенче палăртнă, çĕнĕлле ĕçлесси пирки сăмах хускатнă. Анчах усси пулмарĕ. Парти обкомĕ уйăрса лартнăскер самана улшăнăвне ăнланмарĕ. Кĕçех тĕлĕнмелли япаласем пулса иртрĕç. Ректор икĕ тĕрлĕ моральпе пурăнни те тăрă шыв çине тухса пычĕ.

Пединститутăн Атăл хĕрринче кану çурчĕ пурччĕ. Ректор шăллĕ çав çурта юсама тесе пиччĕшпе килĕшӳ туса укçине чикет, анчах ĕçне пуçăнмасть те. Çурчĕ паян кун та юхăнса ларать. Е тата тепĕр тĕслĕх. Пĕр вăхăтра шалу укçине вăхăтра парас ыйту самай çивĕч тăратчĕ. Ректор вара эрни-эрнипе Мускавра пурăнатчĕ укçа пирки каятăп тесе. Ыттисем пекех эпĕ те ĕненнĕ. Юрать-ха, пĕррехинче казначействăра ĕçлекен çын каласа пачĕ. Укçа Мускавран хăй тĕллĕнех киле-киле выртать иккен. Ку ĕçре ректор тӳпи пачах та çук. Каярах вара пуçлăх икĕ-виçĕ ведомоçьпе шалу илсе тăни, хăйне хăй питĕ пысăк премисем çыра-çыра пани те паллă пулчĕ. Укçана çав тери юрататчĕ вăл.

Пирĕн ректор калама çук ăста каварçăччĕ, çынсене малтан хирĕçтерсе яратчĕ те кайран хăй патне чĕнсе илсе мирлештерем пекки тăватчĕ, хăйне ырă çын пек кăтартатчĕ. Çакăн пек ĕçе кашни факультетрах туса ирттерчĕ. Музыка факультетĕнчи шăвшава вара хамăн та хутшăнма тивнĕччĕ.

Çынсем шанми пулнине хăй те сисрĕ курăнать, юлашки хут ректора суйланнă чухне эпир сĕннĕ альтернативла меле йышăнмарĕ, Мускавран ниме тăман хут татки илсе килчĕ те каллех ертӳçĕ пулса тăчĕ. Юлашки срокне больницăра выртса е курортсем тăрăх çӳресех ирттерчĕ. Кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен ирсĕр çын иккенне тепĕр ĕç те лайăх кăтартса пачĕ. Кандидат диссертацине çырнă чухне наука ертӳçи пулнă питĕ паллă профессора памалли хваттере Г. С. Сидоров хăйне валли туртса

илчĕ. Çапла тав турĕ ĕнтĕ вăл хăйне çул уçса панă çынна.

Ректор ĕçне сивĕлекенсен шучĕ ÿссе пычĕ. Уйрăмах çамрăксем кăмăлсăрччĕ. Эпĕ те вĕсемпехчĕ. Çакна лешĕ пĕлнĕ ĕнтĕ. Элекçĕсем те йышлăччĕ унăн, черетсĕрех кĕре-кĕре тухатчĕç. Ректор мана пĕр сăлтавсăрах асăрхаттарусем тума тытăнчĕ, укçа çук тесе командировкăна та ямарĕ. Ун чухне манăн тата тепĕр пилĕк çуллăха суйланмалли вăхăт çитнĕччĕ. Хам вара вĕрентÿ ĕçне пăрахса литература еннелле туртăнас шухăшпа пурăнаттăм. Апла пулин те хут çырса патăм. Ректор мĕн хăтланнине курас килчĕ. Кафедра ларăвĕнче мана пурте тата тепĕр пилĕк çуллăха суйлассишĕн сасăларĕç. Институтăн ăслăлăх канашĕнче вара кафедра йышăнăвне пачах та шута илмерĕç. Мана хирĕç тăраканни ректор пулчĕ. Ун шучĕпе эпĕ института юратмастăп иккен. Хăйне кăмăлламаннине пĕтĕм коллектива килĕштерменни пек кăтартма пикенчĕ. Манăн ĕçри ăсталăх Мускавран килнĕ сумлă комисси те лайăх хак пани çинчен нимĕн те шарламарĕ. Ректор майлă тухса калаçакансем те пулчĕç. Шутлав комисси пĕлтернĕ тăрăх икĕ сасă çитмерĕ. Суйламарĕç. Эпĕ пурне те тав турăм, нимĕн пăшăрханмасăрах сывпуллашрăм. Ĕçĕ вара 1999 çулхи юпан 1-мĕшĕнче пулса иртрĕ.

Каярах çакă паллă пулчĕ. Ректор ман пирки ăслăлăх канашĕнче тăракансене чылайăшне чĕнсе уйрăмшаррăн калаçнă иккен, хирĕç сасăлама ыйтнă. Вырăссемпе еврейсем умĕнче вара мана чи хăрушă националист пек кăтартма тăрăшнă. Чăвашлăха ытлашши çÿллĕ вырăна хуратăп иккен, факультет ертÿçи пулма чăвашсене лартманшăн ректора ятлатăп иккен.

Мана тепĕр куннех Мускаври социаллă университетăн Шупашкарти филиалне чĕнчĕç. Тархасласа ыйтнăранах килĕшрĕм, çыравçă ĕçне пысăк чăрмав ан пултăр тесе çур ставка кăна илтĕм. Икĕ çултан пăрахрăм, юлашки лекцине 2001 çулхи çу уйăхĕн 13-мĕшĕнче вуларăм.

Вĕрентÿ ĕçĕ вăл çынна питĕ тытăмлă пурăнма хистет. Чăнах та пĕр кун сиктермесĕр, пĕрре чирлемесĕр (бюллетень тавраш̆ илмен) ĕçлерĕм. Тен, хама шанса панă ĕçе хамăнах тăвас килнĕрен. Студентсене юратни те пулăшрĕ пуль. Лешсем те тăрăшатчĕç, лекцисене шăкăрин пырса ларатчĕç. Тепĕр чухне вырăн та çитместчĕ урăх факультет студенчĕсем те пырсан. Лекци вĕçленсен алă çупса ăсатса янисем те пулман мар. Пĕррехинче вара чечек айнех турĕç тесен те юрать. Кафедрăна çитсен юриех шутласа пăхрăмăр та, мана вĕсем çĕр те пĕр тюльпан парнеленĕ иккен.

Студентсемпе ĕçлени чун çамрăклăхне упрама пулăшать. Ватăлма памасть. Ку çеç те мар-ха, çакă вăл ăс-тăншăн та усăллă.

Ма тесен, чи лайăх та ăслă ачасемпе ĕçлетĕн вĕт. Çав енчен хама врачсемпе е юристсемпе танлаштарсан телейлĕрех тесе шутлатăп.

Çапла вара хĕрĕх çул хушши çамрăксен умĕнче тăтăм, илеме ăнланма, юратма вĕрентес тесе тăрăшрăм. Усси пулчĕ-ши, пулмарĕ-ши, калама пултараймастăп. Çапах та хамăр республикăра эстетика пĕлĕвне сарас ĕçре вăй хунăшăн нимĕн чухлĕ те пăшăрханмастăп.

## 9. ÇЫН ХĂЙШĔН ÇЕÇ ПУРĂНМАСТЬ

Эпир пурте хамăр вăхăт çыннисем. Çĕршывра пурри шкултa пулнă, шкулта пурри пирте пулнă. Пĕр идеологи хуранĕнче пиçсе тухнăскерсем ĕнтĕ эпир. Хамăра парти пăхса ӳстернине, пурнăçăмăр хуçи патшалăх пулнине çирĕп ĕненнĕ. «Пире парти ӳстерет, кунран-кун телей кӳрет», – тесе юрланă ĕнтĕ, хастар пионер шутланнă, хама лайăх енчен кăтартма тăрăшнă. Малтан мана отряд совечĕн председательне суйларĕç, çиччĕмĕш класра чухне дружина совечĕн председательне те тивĕç пултăм, пиншак çанни çинче виçĕ хĕрлĕ йĕр çакса çӳреттĕм. Комсомола кĕни те асрах. Ыттисемпе пĕрле мана та Шăхасана илсе кайрĕç. Малтан пуйăспа Канаша çитрĕмĕр, унтан Шăхасана çити çуранах утрăмăр. Ĕç тухмарĕ. Вун тăваттă тултарман тесе каярах килме хушрĕç. Килĕшрĕм, вăхăт çитсен тепре кайрăм. Билетне мана комсомол райкомĕн секретарĕ Юлия Архиповна пачĕ (хушаматне астумастăп). Питĕ илемлĕ сăн-питлĕ те яштака хĕрччĕ вăл. Шăхасанта ăна чипер Юля тесе чĕннĕ иккен.

Кайран та сăнанă-ха, комсомол райкомне чи хитрисене суйласа илетчĕç. Парти райкомĕнчи арçынсем вĕсене пĕрле лартса çӳретчĕç. Чипер Юля вара парти райкомĕн секретарьне М. Р. Родионова качча тухрĕ.

Ăвăспӳртри вăтам шкулта чухне уйрăмах истори, Дарвин вĕрентĕвĕ тата логика кăсăклантаратчĕ. Радиопа хаçатсăр ӳснĕ пулсан та çĕршывра мĕн пулса иртнине пĕлме тăрăшаттăм, истори учителĕ М. Т. Вуколов фронтовик пулăшатчĕ. Уроксене те питĕ ăста ирттеретчĕ. Вăрçăра курнисене каласа панă самантра хăйĕн те куççуль тухатчĕ. Паттăрлăх пирки калаçнă чухне те тунсăхчĕ вăл. Вăрçă нушине, унти йĕркесĕрлĕхе, салтаксем ним тĕллевсĕр вилнисене, паллах, калама юраман. Ун чухне кам мĕн калаçнине сăнакансем кашни ялта, кашни ĕç коллективĕнче пулнă. Енчен те кам та пулин парти е патшалăх пирки япăх сăмах каланине илтсен тӳрех çӳлтисене пĕлтернĕ. Пĕррехинче

çапла пирĕн ял çынни Е. П. Павлов, вăрçăран тинтерех çеç килнĕскер, лавккара ĕçкелесе ӳсĕрĕлнĕ те Сталин пирки япăх сăмах персе янă. Ирхине тăнă çĕре хайхи ялта çуккă та. Çĕр хутах тытса кайнă ăна. Чылай ларса тухрĕ. Питĕ хуçăлса, ватăлса таврăнчĕ. Нумай пурăнаймарĕ.

Сталин вилнине те лайăх астăватăп. Пире шкул картишне илсе тухса пĕлтерчĕç. Учительсем макăраççĕ. Вăрçăран хăрах урасăр килнĕ директор та куççуль витĕр калаçрĕ. Манăн вара макăрас туйăм çуралмарĕ. Аннен те, асаттепе асаннен те пĕр тумлам та куççуль тухмарĕ. Пурнăç нуши вĕсене тахçанах типĕтнĕ ĕнтĕ. Эпĕ вара партие шанакан комсомолецах пулнă, коммунизм тăватăп тесех тăрăшнă.

Канашри педагогика училищинче вĕреннĕ чухне пĕр вăхăт хушши комсомол секретарĕнче те ĕçлесе пăхрăм, студентсене хула шайĕнче ирттерекен ăмăртусене, конкурссене, уявсене явăçтарма тăрăшрăм. Канаш станцинчен Казахстана çерем уçма каякансене оркестрпа (ăна А. М. Михайлов композитор ертсе пыратчĕ) ăсататтăмăр, воскресниксем ирттереттĕмĕр.

Студент чухне кашни кĕркуннех колхоза хăвалатчĕç çĕрулми пуçтарма, кăшман кăларма, йĕтемре ĕçлеме. Вĕренӳ çинчен мансах тăрăшнă. Укçи-тенки вара темшĕн пире тивмен. Пĕчĕкрен тӳлевсĕр ĕçе хăнăхса ӳснĕскерсем ыйтма та хăяйман. Тĕрĕссипе каласан эпир ун чухне укçашăн мар, колхоза, патшалăха пулăшас шухăша асра тытса вăй хунă. Чăн-чăн патриотсем пулнă ĕнтĕ. Лайăх ĕçленĕшĕн панă грамота та пурччĕ ман. Çӳлтисем вара пĕрмаях кĕç-вĕç коммунизм çывхарать тесе илĕртетчĕç. Апат-çимĕç çителĕксĕрри çаплипех тертлентеретчĕ. Н. С. Хрущев та кăшкăрашнисĕр пуçне нимех те туса кăтартаймарĕ. Коммунизмĕ вăл, тен, пулнă та-ха, анчах пире валли мар, партипе патшалăх тытăмĕнче ĕçлекенсемшĕн кăна.

Апла-и, капла-и, пăшăрхану сахалччĕ. Ма тесен, пĕр пекрех пурăннă, çи-пуçран та, апат-çимĕçрен те. Пурте хăв пекех чухăн чухне кулянма та сăлтав çук. Лайăх пурнăç мĕнлине курманни те лăпкăлăх кӳнĕ. Çĕршер çынран тăракан черет те нимех те мар. Çын вăл теме те хăнăхса çитет. Хрущев пуçарнипе тунă экспериментсене те чăтса ирттертĕмĕр, анчах пурнăçĕ пĕр пуслăх та лайăхланмарĕ.

Пĕрре çапла 1964 çулхи кĕркунне КПСС историйĕпе ирттерекен семинарта: «Хрущева ĕçрен кăлармасăр пурнăç улшăнас çук. Вăхăчĕ те çитрĕ пуль те-ха», – терĕм. Юлташсем тĕлĕннипе кăнн пăхса илчĕç, В. Н. Любимов доцент пĕр самант шăп ларнă хыççăн калаçăва урăх еннелле пăрса ячĕ. Семинар хыççăн чĕнсе илчĕ те хытă асăрхаттарчĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ Хрущева

ёҫрен кăларнинé пĕлтĕмĕр. Хам та тĕлĕнтĕм. Ҫакна вара политикăри пĕрремĕш ăнкару тесен те юрать. Ыттисем пирки каярах пĕлтерĕп.

Ҫын вăл хăй пирки ыттисем мĕн шутланине пачах пĕлмест тесен те юрать. Эпĕ те ҫавах пулнă ĕнтĕ, асăрхаман. Хăш-пĕр студентсем, уйрăмах хамран чылай ҫамрăккисем, манра темле асамлă вăй пур тесе ĕненнĕ иккен. Экзамен тытнă чухне ман япалапа кĕме тăрăшнă, кĕсьене ман турана, пальто тӳмине е ручкăна чикнĕ. Ҫакна мана институт пĕтерни пилĕк ҫул ҫитнине уявланă чухне Эйзенбраун Галя каласа пачĕ.

Кăштах мухтаннă пек те пулать те-ха, анчах чăн сăмахăн суйи ҫук теҫҫĕ вĕт. Ыттисене пулăшас туртăма ачаранах сисеттĕмччĕ. Вĕренӳре кăна мар, тăлăх ачасене, айванраххисене хӳтĕлеме тăрăшаттăм. Каярах вара тăвансене аслă пĕлӳ илме пулăшасси тĕп тĕллевсенчен пĕри пулса тăчĕ. Пĕр тĕслĕх кăна илсе парам.

Ун чухне Канашра вĕренеттĕмччĕ. Каникул та иртсе пырать, вĕренме кĕрес текенсен экзаменĕсем те кĕҫ-вĕҫ пуҫланмалла, тепĕр ялта пурăнакан кукка ывăлĕ заявлени ҫаплипех памасть. Хам кайрăм. Кĕтӳ кĕтсе ҫӳрет, вĕренме пымастăп тет. Ҫавăтса килсех кĕртрĕм. Ҫур ҫула яхăн общежитире пĕр койка ҫинче выртса тăтăмăр. Диалектика йĕркипе пĕр япалах тепĕр хут ҫаврăнса килет иккен. Ҫапла пулчĕ те, хам студент чухне кукка ывăлĕ те института кĕчĕ, анчах общежити памарĕҫ. Юлташпа иксĕмĕр койкăсене юнашар тачă лартса чылай вăхăт хушши виҫҫĕн выртса тăтăмăр. Лешне хытăрах вырăн кăна тиветчĕ те-ха, шарламастчĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл самай паллă ҫын.

Манăн кашни ҫулах ялран-яла ҫӳресе тăвансене курса калаҫас йăла пур. Мĕнле пурăнаҫҫĕ, хуйхи-суйхи е савăнăҫĕ мĕнлерех, пулăшма май ҫук-ши тесе ĕнтĕ. Кăштах ăс парса калаҫни те пулкалатчĕ. Уйрăмах ашшĕ-амăшĕ ачисене пулăшма пĕлменни тарăхтаратчĕ. Вĕренме каяс текен ачан ҫулла йĕтемре е кирпĕч ҫапнă ҫĕрте ĕҫлемелле мар. Вуннăмĕш класри ачан Шупашкарта мĕнле институтсем пуррине, ăҫта мĕнле специальность илме май пуррине пĕлмеллех ĕнтĕ. Пĕррехинче тăванăм ачине кашни вырсарникун Шупашкара репетитор патне илсе пырса икшер сехет вĕрентме сĕнтĕм. Тӳрех ҫул укҫи пирки калаҫу пуҫланчĕ. Репетитора мĕн чухлĕ тӳлемеллине пĕлсен аптрасах ӳкрĕҫ. Укҫи те пур вĕт-ха, самосвалпа ĕҫлет, выльăх ӳстерсе сутса та самай пысăк тупăш илеҫҫĕ, анчах ачишĕн хĕрхенет. Хăй вара ывăннине чакарма тесе кун сиктерсе ҫутти илсе ĕҫет.

Тӳрех калатăп, ялти ҫынсем вĕсем йӳнĕ мелпех, ним тăкаксăрах лайăх ача ӳстересшĕн. Ҫук, ун пек пулмасть, ачу

ăслă та йĕркеллĕ çын пултăр тесен вăхăта та, укçа-тенкĕне те шеллемелле мар. Ку çеç те мар-ха, ял çынни вăл хула пурнăçне пачах та пĕлмест тесен те юрать, ачисене килтен кăларса яраççĕ те лăпланаççĕ. Ачам мĕнле пурăнать-ши тесе васкаса килекен питĕ сахал. Ачи пăсăлнине е киревсĕр ĕç тунине пĕлсен тин вĕçтерсе çитеççĕ. Унччен ăçта пулнă-ха вĕсем? Шупашкара куçса килнĕ тăвансене пурне те тенĕ пекех хам куç умĕнче тытма тăрăшрăм, пулăшмалли, хута кĕмелли çителĕклех пулчĕ. Анчах та тăвансене ăс панин усси пысăках пулмарĕ. Пурпĕрех хăйсем хăнăхнă йĕркепех пурăнма тăрăшаççĕ, пĕрре тунă йăнăшсенех темиçе хут тăваççĕ. Ĕçке ярăннисем чарăнмарĕç, çамрăклах леш тĕнчене кайнисем те пулчĕç, кахалтараххисем ĕçчен шутне кĕреймерĕç. Хăйсемех ăслă, хăйсемех паттăр. Çынна тĕрĕс çул çине тăратассинчен йывăр ĕç çук та пуль тетĕп. Çапах та камăн та пулин тăрăшмаллах вĕт-ха.

Арăмпа иксĕмĕр икĕ ача пăхса ӳстертĕмĕр. Килти йĕркене майлаштарса пырассине ытларах хам çине илтĕм. Тӳрех калатăп, ачасене хытă тытнă, халĕ те çавах. Шкулта вĕреннĕ чухне çапла калаттăм: «Мĕнле паллăсем илни маншăн нимех те мар. Пĕр кун сиктермесĕр çӳрĕр те лăпланса ларса ĕçлĕр. Çитĕнӳсем вара пулаççех». Чăнах та, аванах вĕренсе пычĕç. Ача ачах ĕнтĕ, юлташĕсем мĕнлерех пурăннине те кураççĕ, çав шутрах пиллĕк илнĕшĕн кучченеç е укçа панине те, ачисен илемсĕр ĕçне питех асăрхаманнине те. «Атте, эсĕ ыттисем пек мар, ытлашширех ятлатăн», – тенине те илтрĕм. Ман хуравăм çаплаччĕ: «Эпĕ сирĕншĕн çав тери ыррăн курăнасшăн та мар. Енчен те ӳссе çитсен аçу тĕрĕс каланине пĕрре аса илтĕр пулсан, çакă маншăн çителĕклĕ». Иккĕшне те музыка шкулне ятăм, аванах вĕренсе пычĕç. Аслă хĕрĕм медицина училищи хыççăн университетра вĕренчĕ, пиллĕкпе пĕтерчĕ, ача-пăча тухтăрĕнче ĕçлет. Кĕçĕнни малтан музыка училищинче вĕренчĕ, шак та пиллĕкпе. Унтан Хусан консерваторине кĕчĕ, миçе балл пухнине шута илсен пĕрремĕш абитуриент пулчĕ, кайран та ыттисенчен вăйлăраххине кăтартрĕ, хĕрлĕ дипломпа вĕренсе тухрĕ, халĕ Шупашкарти культурăпа искусство институтĕнче ĕçлет. Иккĕшĕ те пĕр тумлам эрех ĕçмеççĕ, табак та туртмаççĕ. Кĕçĕнни халĕ чăваш музыкине тĕпчес ĕçе кӳлĕнчĕ.

Çемье вăл обществăн пĕр пĕчĕк пайĕ кăна. Çине тăрсан унти пурнăçа йĕркелеме пулать-ха. Анчах йĕри-тавра йĕркесĕрлĕх, çитменлĕх хуçаланнă чухне ăшра канăç пачах çухалать. Çĕршыва шурлăхалла мĕнле вăй туртать-ши тесе пайтах пуçа ватнă.

Акă манăн сĕтел ещĕкĕнче тăватă открытка упранса юлнă,

япала туянмалли черете пĕлтерекенскерсем: палас – 1305-мĕш черет, кавир – 1348, шифоньер – 1854, диван – 1908, пылесос – 6065. Çакăнтах тата хамăр çуртри çынсене апат-çимĕç, туртмаллипе ĕçмелли япаласем илме талонсем валеççе çӳренине кăтартакан хут та пур. Çак ĕçе ман арăм хăй çине илнĕччĕ. Эрех кăна мар, кĕпе çумалли порошок та талонпаччĕ.

Мана ытларах çакăн пек пурнăç КПСС программинче кăтартнă принципсемпе пачах та килĕшсе тăманни тĕлĕнтеретчĕ, тарăхтаратчĕ. Хам коммунист пулсан та ĕççыннисемшĕн нимех те тăвайманни пăшăрхантаратчĕ. Парти пуçлăхĕсем мĕнле пурăнни те килĕшместчĕ. Вунсакăр миллион коммунистран пухнă укçа вĕсене пăсса яни питĕ уçăмлăн курăнма пуçларĕ. КПСС общество аталанăвне чăрмав кӳрекен бюрократи органĕ пулса тăчĕ. М. С. Горбачев кăштах силлесе вăратма пикенчĕ, ĕç тухмарĕ. Мĕншĕн-ха çакăн пирки парти съездĕнче уççăн калаçмаççĕ-ши тесе пăшăрханаттăм. Çапла шутлакансем татах та пулнă иккен, 28 съезда делегат суйланă чухне ман ята асăнчĕç, пединститутри партбюро секретарĕ Г. А. Яковлев сĕнчĕ. Тухса калаçма ыйтрĕç. Эпĕ вара вĕсене тахçантанпах ăшра тытса çӳрекен программăпа паллаштартăм:

– парти аппаратĕнче ĕçлекенсен нимĕнле привилеги те пулмалла мар;

– тӳлевлĕ мелпе ĕçлекенсен шутне чакарса пымалла, парти ĕçне ытларах обществăлла майпа туса пымалла;

– партаппаратри çынсен шалу укçине ӳстернине йăнăш тесе шутламалла;

– парти взносĕ пĕр процентран ытла пулмалла мар;

– парти органĕсене суйлассине альтернативлă мелпе вăрттăн сасăласа irттермелле;

– кĕске вăхăтрах парти билечĕсене улăштармалла, тивĕçсĕр çынсенчен хăтăлмалла, парти тасалăхĕшĕн кĕрешмелле;

– партин чăн-чăн историне çырмалла;

– генеральнăй секретарь çав хушăрах президент пулнине сивлемелле;

– çынсене урăхла партисем йĕркелеме ирĕк памалла;

– Совет Союзĕ çакăн пек йывăрлăха кĕрсе ӳкнишĕн, пурнăç кунран-кун япăхланса пынишĕн 28-мĕш съезд делегачĕсен парти ячĕпе халăхран каçару ыйтмалла.

Çак сăмахсене коммунистсем питĕ тĕлĕнсе тăнласа ларни куçран пăхсах паллă пулчĕ. Хăш-пĕрисем шăппăн калаçкаласа илсе кавар туни те сисĕнчĕ. Эпĕ трибуна патĕнчен кайсанах О. Д. Сушкевич пенсионер сиксе тăчĕ те: «Эпĕ тепĕр кандидата

сĕнетĕп», – терĕ. Тин çеç партие кĕнĕ хĕрачана суйларĕç. Кĕçех КПСС та, Совет Союзĕ те саланса кайрĕç. Эпĕ вара демократи юхăмне чĕртсе ярас ĕçе кӳлĕнтĕм. Тĕпчев институтĕнче пухусем ирттереттĕмĕр, митингсемпе пикетсем те пулатчĕç. Самай шавлă вăхăтчĕ. Политикăри хăюллăх ӳссе пычĕ.

1990-мĕш çул пуçламăшĕнче суйлава хутшăнтăм. Юлашки турта хула прокурорне çĕнтернĕ хыççăн Шупашкар хула Совет депутатне тухрăм. Çакă вăл чи пирвайхи чăн-чăн суйлав пулчĕ. Унччен бюллетене пĕр хушамат кăна çыратчĕç, паллах, малтан парткомра пăхса тухнă хыççăн. Ячĕшĕн ирттернĕ суйлав тесен те юрать. Альтернативлă мел пирки илтмен те.

Эпĕ тӳрех культурăпа вĕрентӳ комиссине çырăнтăм. Каярах мана çак комисси председательне суйларĕç. Çакă питĕ вырăнлă пулчĕ, хамăн тĕп тĕллеве – Шупашкарта чăвашлăха аталантарассине ăнăçлăрах туса пыма май пачĕ. Депутатсем хушшинче ман майлă шухăшлакансем татах тупăнчĕç. Вара эпир чăвашсене пĕрлештерсе тăракан «Самана» ушкăн йĕркелерĕмĕр. Ăна та хамăнах ертсе пыма тиврĕ. Депутат ĕçĕ вăл пит курăмлах мар, кайран ун ятне те часах манаççĕ. Çавăнпа та хăш-пĕр хастар чăвашсене асăнса хăварни вырăнлă пуль тетĕп. Акă вĕсем «Самана» ушкăнăн шăнăрĕсем: В. И. Андреев (ялхуçалăх институчĕн доценчĕ), Ю. Д. Аксенов (художник), Н. И. Бельцов (милици полковникĕ), В. Н. Долгов-Акташ (журналист), Н. А. Каштанов (журналист), Г. И. Кочетков (шкул директорĕ), Л. А. Краснов (рабочи), И. М. Петров (инженер), В. Н. Рыбкин (журналист), Н. И. Самойлов (педагог), Ю. М. Семенов (учитель), В. В. Шихранов (рабочи) – пурĕ хĕрĕх çынна яхăн. Малтан «Самана» ушкăн пирки тăрăхласа кулакансем те пурччĕ. Каярах шăпланчĕç. Пĕр-пĕр ыйтăва сасăласа татса панă чухне пирĕн ушкăнсăр ĕç тухманни уççăнах курăна пуçларĕ. Хисеплеме тытăнчĕç тесен те юрать. Эпĕ чăвашла калаçнине те шăп ларсах итлекен пулчĕç. Хула Советне ун чухне В. В. Алексеев ертсе пыратчĕ. Хăй чăваш пулнăран-ши, эпир тăратнă ыйтусене хăвăртрах татса пама тăрăшатчĕ.

Чи кăткăсси вара хулари шкулсенче чăваш чĕлхи вĕрентессине йĕркелесе ярасси пулчĕ. Юрать-ха, вĕрентӳ пайĕ пуçлăхĕпе Е. М. Шебаловпа пĕр чĕлхе тупрăмăр. Вырăс пулсан та вăл пире ăнланчĕ. Тем те куртăм, тем те илтрĕм. Хăш-пĕр директорсемпе культурăпа вĕрентӳ комиссине чĕнсех калаçаттăмăр. Ачасене чăвашла вĕрентни ним тума та кирлĕ мар тесе алă пуснă хутсене те вуласа курнă, чăвашсемех çыратчĕç. Учительсем те çитместчĕç, кĕнекесем те çук. Çапах та çине тăни сая каймарĕ, çак пархатарлă ĕç хуллен майлашăнса пычĕ.

Тĕрĕссипе каласан Шупашкар шкулĕсенче çитмĕл процента яхăн чăвашсем вĕренеççĕ вĕт-ха. Çавсене тăван чĕлхесĕр ӳстернинчен пысăк айăп урăх çук та пуль. Сăмах май хам кӳренĕве палăртса хăварас тетĕп. Çав вăхăтра чăваш çыравçисем те йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕччĕ гонорар тӳлеме пăрахнине пула. Хăш-пĕрисене чăваш чĕлхи вĕрентме шкула кайма сĕнтĕм. Укçасăр лараççĕ пулсан та килĕшмерĕç, учитель ĕçне тиркерĕç. Хăйсем вара тăван чĕлхе пуласлăхĕ пирки пакăлтатаççĕ, кирлĕ ĕçе кӳлĕнме хăраççĕ. Суя патриотсем ĕнтĕ.

Халĕ чапа тухнă «Классика» хора çул парасси те, «Чебоксарские новости» хаçата пуçарса ярасси те пирĕн комисси ĕçех. Уйрăмах редакторĕ пирки çивĕч тавлашусем пулса иртрĕç. Пилĕк хутчен пухăнтăмăр. 1993 çулхи авăн уйăхĕнче «Шупашкар» хаçатăн пĕрремĕш номерĕ тухрĕ. Ăна А. Н. Вражкин журналист йĕркелесе пычĕ. Питĕ шел, çакă эпир пуçарса янă ĕçе малалла тăсакансем кайран тупăнмарĕç. Хаçат тухма пăрахрĕ.

Иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсем вĕсем пирĕн çĕршывшăн калама çук пысăк пĕлтерĕшлĕ тапхăр. СССР та, коммунизм системи те арканчĕ. Раççей уйрăм патшалăх пулса демократи çулĕ çине ӳкрĕ. Пурлăх ыйтăвĕ те çивĕчленсе кайрĕ, культура учрежденийĕсен ертӳçисем хӳтлĕх шыраса ман пата пыратчĕç. И. Д. Вутлан çине тăнипе республика площадĕнчи кĕнеке лавккине упраса хăвартăмăр. Кооператив институчĕ çумĕнчи çĕре ăмсанакансем те тупăннă. Юрать-ха, В. Н. Николаев академик тавçăруллăскер пулчĕ, ыйтăва вăхăтра татса патăмăр. Ехрем хуçан тĕп килне (унччен унта В. И. Ленин музейĕ вырнаçнăччĕ) наци музейне парасси пирки те самай тăрăшма тиврĕ. Ăна педагогика институчĕн ректорĕ Г. С. Сидоров куç хывнăччĕ. Н. П. Ефремов çуртне (унччен вăл мăшăрлану керменĕччĕ) писательсен союзне панă чухне вара чăннипех те тĕлĕнмелли сиксе тухрĕ. Эпĕ комисси ячĕпе писательсем майлă тухса калаçрăм. В. Мурашковский поэт вара çав çурта предпринимательсене парассишĕн тăрăшрĕ. А. И. Дельманпа Ю. Г. Боровой депутатсем те ун майлă пулчĕç. Хула Совечĕ пайланса кайрĕ. Эпĕ вара «Самана» ушкăн ячĕпе вунă минутлăха тăхтав тума ыйтрăм. В. В. Алексеев килĕшрĕ. Пуçтарăнса канашлани тĕрĕс пулчĕ, çĕнтертĕмĕр, çав кермене писательсенех патăмăр. Анчах кайран лешсем унпала усă курма пĕлмерĕç, юхăнтарса ячĕç, пĕтĕмпех Х. Агиверпе П. Ялгир йышши айванккасене пула.

Культура çыннисене те «Шупашкар хулин хисеплĕ гражданинĕ» хисеплĕ ята пама май килчĕ. Унччен кун пекки пулманччĕ-ха. Малтан çак хисеплĕ ята Ф. М. Лукин композитор илчĕ. Ун

хыççăн комиссине В. И. Давыдов-Анатри хучĕсем çитрĕç. Йĕркеллех пăхса тухрăмăр. Чăрмав кӳрес текенсем депутатсем урлах майне тупаççĕ çав. Хула Совечĕн ларăвĕнче ура хума пикенчĕç, юрă çырни çеç çителĕксĕр, таланчĕ те пысăк мар текенсем те пулчĕç. Анчах вĕсен ĕç тухмарĕ.

Каярах Юхма Мишшине те тăратнăччĕ. Ăнмарĕ, хучĕсене тавăрса пама тиврĕ. Юхмана характеристика çырса параканĕ арăмĕ пулнине пĕлсен, унта Р. Шелепи тесе алă пуснăччĕ, депутатсем питĕ тĕлĕнчĕç. Лешсем вара хăйсен айăпне ман çине тиерĕç, паян кун та сиввĕн пăхса иртсе каяççĕ. Пичетре те тапăнса пăхрĕç, ĕç тухмарĕ. Судпа вĕрентсе илни çинчен маларах каласа панăччĕ-ха. Чăн сăлтавĕ вара татах та тарăнрах выртать пулас.

Г. Н. Волков Мускава куçса кайни наци юхăмĕшĕн те сиенлĕ пулчĕ. Лидер çукки сисĕнетчĕ. Геннадий Никандрович Шупашкара килсен пурте кар! пухăнаттăмăрччĕ, ăсатса янă чухне те перрон çинче йышлăнччĕ.

Г. Н. Волков 50 çул тултарнине Мускавра чыслани вара паян кун та куç умĕнчех. Хатĕрлентĕмĕр ĕнтĕ, тĕрĕ ăстисем те тăрăшсах ĕçлерĕç. Саламлă çыру хатĕрлессине хам çине илтĕм. Текстне юлташсене кăтартса пăхнă хыççăн ылтăн шывĕпех пичетлес ĕмĕт çуралчĕ. Çак ĕçе парти обкомĕн типографинче кăна тума пултараççĕ иккен. Директорĕ ирĕк парас çук. Çитменнине тата паллакан наборщик те çук. Çапах та пĕр хăюллă чăваш хĕрарăмĕ тупăнчĕ, Советсен çуртĕнче ĕçлекенскерех. Халĕ ятне каласан та юрать – Наталья Ефимовна Горнштейн. Вăл çине тăнипе çĕрлехи сменăра вăрттăн пичетлесе пачĕç. Ирхине вуласа пăхрăм та «пултаруллăх» сăмахра пĕр «л» ытлашшине куртăм. Тӳрлетсе пичетлеме май килмерĕ, наборне пăсса та хунă иккен. Хуратсан – илемсĕр. Çаплипех патăмăр ĕнтĕ, чăваш кĕпи тăхăнтартăмăр, чаплă тĕрĕ тата Н. Енилин ӳкерчĕкне парнелерĕмĕр. Ю. Д. Кудаковăн тин çеç кĕвĕленĕ «Пире тăван кĕтсе тăрать» юррипе саламларăмăр, баян калакан авторĕпе пĕрле эпĕ, В. А. Иванов тата Е. В. Васильев шăрантартăмăр, икĕ хут та юрлама тиврĕ. Купере хатĕрленни уссăр пулмарĕ. Г. Н. Волков тăванĕсемсĕр пуçне Мускаври ентешсем чылайăн пухăннăччĕ, чăваш юррисем татах та янăрарĕç. Шупашкара питĕ çĕкленӳллĕн таврăнтăмăр. Анчах кунта пирĕн ĕçпе кăмăлсăр çынсем те тупăннă иккен. Ю. Д. Кудакова Мускава мĕн тума кайни пирки ăнлантару хучĕ çыртарчĕç. Хама та И. Д. Кузнецов аспиранчĕ пулнă çынсем ура хума пикенчĕç.

Эпĕ яланах Г. Н. Волкова Шупашкара илсе килес ĕмĕтпе çӳреттĕмччĕ. Чăтаймарăм, парти обкомĕн секретарĕ И. П. Про-

копьев патне çыру çыртăм. Манпа пĕрле Е. В. Васильевпа В. А. Иванов та (халĕ вĕсем иккĕшĕ те профессорсем) алă пусрĕç.

*Хисеплĕ Илья Павлович!*

Чи малтан сире çирĕп сывлăх сунатпăр, ĕçре пысăк çитĕнӳсем сĕнетпĕр, пурнăçăрта телей пултăр. Эпир, педагогика енĕпе ĕçлекен ăслăлăх çыннисем, Сире хамăр шухăша çырса пĕлтерес терĕмĕр.

Илья Павлович, Г. Н. Волкова хамăр тăван хулана Шупашкара ĕçлеме чĕнсе илме май килмĕ-ши? Пирĕн шутпа ун валли Чăваш патшалăх университетĕнче вырăн тупăнассăн туйăнать. Вăл унта куçас пулсан педагогика кафедри те самаях вăйланнă пулĕччĕ, пирĕншĕн, çамрăкрах тĕпчевçĕсемшĕн те, аван пулĕччĕ. Хамăрăн малалла ӳсесси пирки те кăштах шухăшсем пур.

Геннадий Никандрович Шупашкара килесси пирки хăй пит палăртсах калаçмасть. Анчах та Эсир калаçса пăхсан кăмăлĕ улшăнассăн туйăнать. Уйрăмах çак кунсенче, Геннадий Никандровичшăн йывăр вăхăтра, Эсир чыс туса калаçни питĕ усăллă пулассăн туйăнать.

Леш Тимĕрç Иванне* те Г. Н. Волков çинчен çăхав хыççăн çăхав çырма чарасчĕ. Вăл халĕ те редакцирен редакцие ал çырăвĕ йăтса çӳрет иккен, сĕтел çине чышать тет, пичетлемесен Илья Павлович патне каятăп тесе ятлаçать тет. Чарасчĕ çав 10–15 çул хушши пĕр юрра юрлакан, хальхи наука аталанăвĕнчен кая тăрса юлнă çынна. Чирĕ ун мĕн ĕлĕкренех пырать. Республикăра ăслă, талантлă çынсем пурри ун чĕрине яланах вĕчĕрхентернĕ. И. Я. Яковлев çине мĕн чухлĕ лăпăрчăк шыв тăкман-ши вăл?! П. П. Хусанкая кăшлама пикенчĕ, анчах шăлĕ витеймерĕ. Халĕ Г. Н. Волков ĕçĕсем пирки пуш параппан çапать, суя сăмах сарать. Чарасчĕ ăна.

Г. Н. Волков пултарулăхĕпе тăван культурăна малалла аталантарас ĕçре анлăрах усă курасчĕ пирĕн.

Хисеплĕ Илья Павлович, эсир пирĕн ыйтăва тивĕçтерессе чун-чĕререн шанас килет.

15/III-79 ç.

Кĕтрĕмĕр-кĕтрĕмĕр, хурав таврашĕ пулмарĕ. Çамрăк пулнă, айван пулнă, вĕрентекенĕмĕре Шупашкартан хăваласа яракансенчен çапла ыйтни кулăшла япала çеç пулнине чухлайман эпир, мăнтарăнсем.

---

* Тимĕрç Иванĕ – И. Д. Кузнецов историк.

1980-мӗш ҫулсен вӗҫнелле хӑюлланса пытӑмӑр, И. Я. Яковлевӑн ҫуралнӑ кунне те хӑрамасӑрах уявлама тытӑнтӑмӑр. 1988 ҫулта И. Я. Яковлев обществине йӗркелес текенсем тупӑнчӗҫ. Уставне В. П. Станьял ҫырса хатӗрлерӗ. Пухӑвне те пуҫтарӑннӑччӗ, анчах ирттерме памарӗҫ, парти обкомӗнчен, хӑрушсӑрлӑх комитетӗнчен пынисем чарчӗҫ. Каярах ҫав обществӑна Ульяновскра йӗркелерӗҫ.

Шӑп ҫак вӑхӑталла Юхма Мишши уҫӑмлӑрах сас пама пуҫларӗ, парти обкомӗн секретарӗсене ятласа статьясем ҫырчӗ. Вӑл ҫине тӑнипе ЧОКЦ (Чӑвашсен обществӑпа культура центрӗ) йӗркелерӗмӗр. Правлени председателӗ пулма М. Н. Юхмана суйларӑмӑр. Мана ревизи комиссине сӗнчӗҫ. Ырӑ ӗмӗтпех ӗҫе тытӑнтӑмӑр, Юхма ЧОКЦ валли укҫа пухма тытӑнчӗ, хам та патӑм. Чылай укҫа хуракансем те, ҫӑмӑл машина парнелекенсем те тупӑнчӗҫ. Анчах ҫак пурлӑх Юхма ҫемйишӗн кӑна пулчӗ. Арӑмӗ, хӗрӗ, кӗрӳшӗ тата тӑванӗсем ЧОКЦ ячӗпе пухнӑ укҫапа иртӗхме пуҫларӗҫ. Пӗтӗм ӗҫ те Юхма кӗнекисене кӑларасси пулса тӑчӗ. Ревизи комиссийӗ тӗрӗслеме пикенсен кирлӗ хутсене памарӗҫ, ЧОКЦ пайланса кайрӗ. Чӑннипех те чӑвашлӑхшӑн, тӑван халӑхӑмӑршӑн тӑрӑшакансем чӑмӑртанса хамӑр ЧОКЦа туса хутӑмӑр, пуҫлӑхне В. П. Станьяла суйларӑмӑр. Шӑпах ҫак ушкӑнра Чӑваш наци конгресне йӗркелес шухӑш ҫуралчӗ. А. П. Хузангайпа ун майлӑ депутатсем ҫине тӑнипе Чӑваш АССР Аслӑ Канашӗн Президиумӗ ятарлӑ постановлени йышӑнчӗ, конгреса 1992 ҫулхи юпан 8–9 кунӗсенче Шупашкарта ирттерме палӑртрӗ. Чавса тавӑрсах ӗҫе пикентӗмӗр. Эпӗ те айккинче тӑмарӑм, укҫа та чылай хутӑм.

Конгресӗ вара питӗ чаплӑ та мӑнаҫлӑ иртрӗ. Ӑҫтан кӑна килсе ҫитмерӗҫ пуль пултаруллӑ чӑвашсем! США-ра та, Канадӑра та, Англире те, Австралире те пур иккен вӗсем. Тӗп докладне Аслӑ Канашӑн председателӗ Э. А. Кубарев туса пачӗ. Ҫумдокладсем те пулчӗҫ, секцисем те ӗҫлерӗҫ. Эпӗ вара «Чӑваш шкулне аталантарасси тата наци кадрӗсем хатӗрлесси» секцие ертсе пыраканӗсен шутӗнче пултӑм. Секци йышӑнӑвне те хамах вуласа патӑм. ЧНК президенчӗ пулма А. П. Хузангая суйларӑмӑр. Мана Мӑн Канаша суйларӗҫ. Каярах вара Ваттисен Канашне ертсе пыма шанчӗҫ. ЧНК ӗҫне вӑйлатас, ун ятне ҫӗклес тӗллевпе республика тулашӗнчи чӑвашсем патне тухса ҫӳрерӗм, Пушкӑртстанра виҫӗ хут пултӑм, Самар тӑрӑхӗнче, Чӗмпӗр тӑрӑхӗнче, Мускавра – икшер хут, Саратовпа Оренбург чӑвашӗсем патне те ҫитсе куртӑм. Балаково хулинче библиотека йӗркелеме пулӑшрӑм, аллӑ кӗнеке ярса патӑм. Библиотеки халӗ ман ятпа хисепленсе тӑрать иккен.

Политикăна явăçнă çынсемшĕн 1991 çулхи çурлан 19–21 кунĕсем хăйне евĕрлĕ тĕрĕслев пулчĕç. ГКЧП вăхăчĕ политиксен, чиновниксен кăмăл-туйăмне, шухăшне, ĕмĕтне уçса пачĕ. Хăшĕ-пĕрисем ГКЧП сиксе тухнăшăн пăшăрханаççĕ, кулянаççĕ. Эпĕ вара пачах урăхла шутлатăп. Питĕ кирлĕ пулнă вăл, тасалу саманчĕ вырăннех. ГКЧП патнелле çĕршыври ларутăру хăй илсе пычĕ, коммунизм режимне арканма пулăшрĕ. Япăх ĕçĕн ыра енĕ тейĕпĕр.

Хула Советĕнчи коммунистсем ГКЧП майлă пулчĕç, исполком председателĕ С. В. Шалимов та вĕсемпех. Эпир вара, демократсем, В. В. Алексеев тавра чăмăртантăмăр, çурлан 27-мĕшĕнче депутатсен черетсĕр сессийĕнче Шалимова ĕçрен кăларас ыйтăва пăхса тухрăмăр, анчах коммунистсем майлисем кăшт ытларах пулчĕç.

ГКЧП вăхăчĕ маншăн хĕвеле вупăр çинĕ пек кунсем пулчĕç. Тӳрех çакăн пек йĕркесем çуралчĕç:

Хура пĕлĕт карса илчĕ тухăça,
Шиклĕ шухăш пăчăртарĕ пуçăма,
Йывăр сывлăш пӳлсе лартрĕ кăкăра,
Мĕлкесем чупа пуçларĕç ман умра.

Çак сăвва А. Никитин композитор кĕске вăхăтрах юрра хыврĕ. Ăна эпир «Çитмĕл икĕ сехет» тесе ят патăмăр.

Хамăрăн пĕрремĕш президента суйлас енĕпе те самаях тăрăшма тиврĕ. Вăл вăхăтра пирĕн республика хĕрлисем тăрăшнипе ĕнтĕ пур енĕпе те чи кайрисен шутĕнчеччĕ. Республикăна кăштах демократи çулĕ çинелле пăрас шутпа эпĕ ун чухне РФ юстици министрĕнче ĕçлекен Н. В. Федорова пĕрремĕш президента суйламалла тесе «Советская Чувашия» хаçатра (11.09.91) пĕлтертĕм. П. С. Краснов çине тăнипе Н. В. Федорова Шупашкара чĕнсе илтĕмĕр. Калаçу тĕпчев институтĕнче С. Р. Малютин пӳлĕмĕнче иртрĕ. Николай Васильевич пирĕн сĕнĕве йышăнмарĕ. Хуравĕ вара çапла пулчĕ: «Б. Н. Ельцин çумĕнче хăшпĕр чухне ун шухăшĕпе килĕшменнине уçăмлăн калама пултаракан çын кирлех ĕнтĕ».

Кун хыççăн чăвашсене ЧНК тавра пĕтĕçтерсе А. П. Хузангайшăн ĕçлерĕмĕр. Ун чухнехи пек çĕкленӳ, хавхалану пулманччĕ-ха, кайран та пулмарĕ. Хузангай пĕрремĕш вырăна тухрĕ, анчах виçĕ процента яхăн сасă çитменнипе пула президент пуканне йышăнаймарĕ. Президент суйлавне тепĕр хут irттерме тиврĕ, Н. В. Федоров та хутшăнчĕ. Çĕнтерчĕ. Чăваш Ен президентлă республика пулса тăчĕ. Урăхла каласан чăвашсем пĕр-

ремĕш хут хăйсен патшине суйларĕç, вуншар ăрăвăн ĕмĕчĕ пурнăçланчĕ. Паллах, çакна пурте пĕр пек йышăнмарĕç. Президент ытла та çамрăк текенсем те тупăнчĕç. Манăн вара «санăн Федорову» тесе ӳпкелешсе калаçнине те илтме тиврĕ. Çапах та эпĕ йăнăшмарăм пуль тетĕп, пирĕн президент ыттисенчен нимрен те кая мар, тен, вăйлăрах та. Малтанхипе хальхи Федоров хушшинче уйрăмлăх самай пысăк. Вăл паян Европа шайĕнчи паллă политик. Пач çылăхсăр çын теме пултараймастăп, ĕçлекенĕн йăнăшсем пулаççех. Çапах та тараса çине хурса тĕрĕслесен ырри чылайрах. Каярах, президента тепĕр çын суйлансан, ăна часчасах Н. В. Федоровпа танлаштарса пăхасси пирки нимле иккĕленӳ те çук. Пĕрремĕш президент танлаштару виçи вырăннех юлĕ.

Халăх вăл пĕр йышши çынсенчен тăмасть. Çавăнпа та пурне те килĕшекен президент пулма та пултараймасть. Президент идеалĕ пурин те пĕр пек мар. Ленинран е Сталинран тĕслĕх илсе ӳснĕ çынсене паянхи пурнăç йĕркипе пĕрлех ертӳçисем те килĕшмеççĕ. Эпĕ хам та çав шкултан тухнăскерех-ха, анчах çак икĕ çулпуç суя идеал пулнине ыттисенчен самай маларах туйса илнĕскер. Вĕсем пек пулас килместчĕ. Каланăччĕ ĕнтĕ Сталин вилсен пĕр тумлам куççулĕ те кăларманни çинчен. Çылăхлă, çавăнпа та телейсĕр çынсем вĕсем. Вĕсенни пек пурнăç мана хам çӳллĕш ылтăн купи парсан та кирлĕ мар.

Чăвашсемшĕн чи сумлă ятсенчен пĕри вăл, паллах, И. Я. Яковлев. Эпĕ те çакна илтсе ӳснĕ. Вăл тунă ырă ĕçсен вышкайсăр пысăк пĕлтерĕшĕ паян кун та сисĕнет. Анчах наци шăпи çинчен шутланă чухне пуçа тем те пырса кĕрет. Акă вĕсенчен пĕри. Чăвашсен паллă çыннисен – писательсен, композиторсен, художниксен, ученăйсен, политиксен – пурин те тенĕ пекех арăмĕсем урăх халăх çыннисем. Икшер, виçшер авлансан та вырăссенех илеççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, чăваш хĕрарăмне хисеплеменни, килĕштерменни, юратманни сисĕнет. Çакă вăл Яковлев кăтартса панă çулах мар-ши? Паллах, çамрăк Яковлева хӳтлĕх кирлĕ пулнă. Ăна вăл вырăссенче курать, çав шутпах вĕсемпе тăванлашнинче те. Яковлев пурнăçĕпе çемйи вара каярах хăй вĕрентнĕ ачасемшĕн кăна мар, хальхи интеллигенцишĕн те тĕслĕх пулса тăчĕ. Çеçпĕл Мишши те çав çулпах кайнă вĕт-ха, çемьеллĕ вырăс хĕрарăмне юратса пурăннă.

Çак енчен илсен эпĕ, паллах, ыттисенчен ирĕклĕрех те, хăюллăрах та. Чăваша хăйне ятлама та именсе тăмастăп. Анчах кураймасăр мар, юратса. Маншăн пур-пĕрех чăвашран лайăх çын çук. Шăпах çакă хистет те ĕнтĕ ытти çынсемшĕн ĕçлеме, пысăкрах яваплăх илме.

Иртнĕ ĕмĕрти 90-мĕш çулсен пуçламăшĕнче Шупашкарта уйрăм районсен ентешлĕхĕсем йĕркеленме тытăнчĕç. Эпир те юлас темерĕмĕр, 1995 çулхи юпан 10-мĕшĕнче çиччĕн пухăнтăмăр та «Канашсем» ентешлĕх тăвасси пирки калаçса татăлтăмăр. Пĕрремĕш уявне Чăваш академи драма театрĕнче чӳкĕн 25-мĕшĕнче ирттертĕмĕр. Ентешлĕх ертӳçи пулма мана суйларĕç. Çак шанăçа тӳрре кăларас тесе тăрăшатăп та ĕнтĕ паянхи кунчченех. Унтанпа çичĕ уяв ирттертĕмĕр. Анчах чăн-чăн ĕçĕ урăххи – кашни кун ентешсемшĕн, тăван районпа хуламăршăн мĕн те пулин ырри тума тăрăшнинче. Халлĕхе йĕркеллех пулса пыратьха, паллах, çыннисем лайăхран, ентешлĕх туйăмĕ çивĕчрен. Шутласа пăхсан, министра, банкира, академике, çыравçа, тухтăра, артиста, фирма е завод директорне, спорт мастерне, журналиста пĕр чĕлхе тупма çăмăлах та мар пек. Çапах та пĕрлештерме пулать иккен. Канашсем шăпах çапла ĕçлеççĕ те ĕнтĕ, хирĕçмесĕр, мухтанса кăшкăрашмасăр, пĕрне-пĕри ăнланса. Ытти ентешлĕхсемпе туслă пулмаллине те манмастпăр, уявсене çитсе саламлатпăр.

Сăмах май çакна каласа хăварас килет. Ентешлĕх юхăмĕ иртнĕ ĕмĕрти 20–30-мĕш çулсенчех пуçланнă. Калăпăр, Мускавра, Ленинградра е Хусанта вĕренекен чăвашсем пĕр ушкăна чăмăртаннă, кану вăхăтне пĕрле ирттернĕ, пĕрне-пĕри пулăшма тăрăшнă. Çав йăласем хальхи ентешлĕхсенче те пур. Концертсем те, куравсем те, спорт ăмăртăвĕсем те, юбилейсем те ирттерме пулать. Лайăх япала. Анчах пĕр хăрушлăх пур, политикăна ытла шала кĕрсе каймалла мар. Ентешсем пĕр-пĕринпе хирĕççе каясран сыхланаллă пулмалла, уйрăмах суйлавсем вăхăтĕнче. Пуçлăхсем килеççĕ те каяççĕ, тăван ен хăй вырăнĕнчех юлать. Çак шухăшсене тĕпе хурса ĕçлет те ĕнтĕ «Канашсем» ентешлĕх. Çăмăл мар. Политика вăл хăй еннелле туртатех. Çавăнпа та тĕрлĕрен заявленисене ентешлĕх ячĕпе мар, хам ятпа тума тăрăшатăп. Манăн вара политикăран айккинче тăма май та çук. Пулăшу шыракансем те тупăнсах тăраççĕ. Ман сăмахăм пуш сăмах маррине чухлаççĕ вĕсем. Ку таранччен ман пурнăç принципĕсене те пĕлсе çитнĕ: чăвашлăх, ирĕклĕх, демократи, тулăх пурнăç, телей.

Тĕлĕнмелле çĕршывра пурăнма тӳр килчĕ. Мĕн кăна пулса иртмерĕ пулĕ кĕске вăхăтрах? Пĕр енчен пăхсан вăйлăн курăннă тесен те юрать – атом бомби, космос, шыв айĕнче çӳрекен кимĕсем. Çав хушăрах çыннисем чухăн пулнă. Мĕн тăхăннине, çинине, мĕнле çуртсенче пурăннине, мĕнлерех машинăпа çӳренине курсан хĕрхеннĕ пире. Хĕç-пăшалпа – вăйлисем, пурнăç шайĕпе – начаррисем пулнă эпир. Хальхи çамрăксем каласан

та ёненес çук, шăрăх кунсенче Шупашкарта сăра е пылак шыв илсе ĕçессишĕн те вăрăм черетре тăма тивнĕ вĕт-ха?! Хамăршăн мар, патшалăхшăн пурăннă. Çапла вĕрентсе ӳстернĕ те ĕнтĕ пире. Коммунизм идейине пуçа хурса патшалăхшăн ĕçлекен çынна хатĕрлесси вĕрентӳ системин тĕп тĕллевĕ шутланнă. Пĕтĕм ырлăх партирен, патшалăхран тесе ĕнентернĕ. Апла пулсан хамăр парăма ĕçлесе татмалла. «Тăрăшса вĕренĕр, вара лайăх ĕçе лекетĕр», – тетчĕç учительсем. Атте-аннесем хушшинче вара урăхла сăмах та çӳретчĕ: «Вĕренсе тух та хулана кай, ял нушинчен тар». Хăйсем мĕн курнине, тӳснине ачисем ан курччăр тенĕ ĕнтĕ вĕсем. Мĕне тата мĕнле вĕрентнине шута илсен шкулпа пурнăç хушшинче самай пысăк уйрăмлăх пурри паллă. Кĕнекесем пире чи пуян та ирĕклĕ çĕршывра пурăнатпăр, эпир чи телейлĕ çынсем тесе ĕнентернĕ. Пурнăçĕ вара пачах урăхласкер пулнă.

Унччченхи шкула хурласа каламастăп, наука тĕлĕшĕнчен илсен, тен, ытти çĕршывсенчен юлсах та кайман. Ĕçе хăнăхтарасси вара пачах тӳнтерле пулса пынă. Чи сумли вăл обществăшăн тӳлевсĕр ĕçлени, çакна чи пирвайхи тивĕç тесе вĕрентнĕ пире. «Мĕншĕн ĕçлетĕп-ха эпĕ? Çак ĕç мана тупăш парать-и-ха?» – тесе калаçни вара коммунизмла ĕç йĕркине хирĕçлени шутланнă. Хăйшĕн, çемьешĕн тăрăшса пурлăх пухни, пуянлăх пирки ĕмĕтленни хисепре пулман. Совет педагогикинче «укçа», «пуянлăх», «çитĕнӳ» сăмахсем пулман тесен те юрать. Халăх опытне тĕпе хурса çырнă этнопедагогикăра та çав çитменлĕхсемех, Турă, ĕненӳ, пурлăх, тулăх пурнăç, укçа, пуласлăх, ирĕклĕх, çитĕнӳ, çĕнтерӳ, телей пирки калани çукпа пĕрех. Кунта та ĕç тĕллевĕ ĕçленинче хăйĕнче пек курăнать.

Çапла вара унталла пăхсан та, кунталла пăхсан та пире хамăр вăйпа пурăнма вĕрентекен педагогикăпа шкул пулман.

Çĕршывăма килĕштеретĕп, юрататăп, хăваласан та тухса каймастăп. Патшалăх пирки вара çапла калама чĕлхем çавăрăнмасть, сăмахăм тупăнмасть. Ма тесен вăл пĕртте халăх валли мар, ĕç çыннине сăвăс пек ĕмсе пурăнакан чиновниксен ырлăхĕшĕн кăна. Пĕрисем кӳпсе çурăлнă хыççăн теприсем килеççĕ, кунран-кун йышланса пыраççĕ. Наян кушак пек чиновнике çитермелле, тумлантармалла, капăр хваттер лартса памалла, ачашламалла, сывлăхне упрамалла, çăмăл машина илсе памалла. Ĕçлесе илнĕ укçан пĕр пайĕ веçех çавсене валли. Самана улшăннă май чиновниксен шучĕ чакать пуль тенĕччĕ. Çук, кĕтни кăлăхах пулчĕ. Обкомсемпе райкомсем, хăш-пĕр министерствăсем пĕтнĕçем тепĕр йышши ушкăнсем чăмăртанчĕç. Каллех ĕçлĕ çынсен укçине сăптăраканнисем.

Ĕç укçи сăмаха илтсенех куç умне пĕр сăнар тухса тăрать.

Ашак хăвăртрах уттăр тесен вăрăм хулă вĕçне кишĕр çакмалла та умĕнче вылятса пымалла. Ĕç укçи те çавăн пек япалах, патшалăхшăн е уйрăм хуçашăн ĕçлеме илĕртекен вăй. Тепринчен кăшт ытларах илни те савăнăç.

Урăх çыншăн ĕçлекенĕн пурнăç шайĕ, укçи-тенки яланах теприн аллинче. Вăл ирĕклĕ мар. Унăн савăнăçĕ те, кулянăвĕ те пĕр япала – ĕç укçи. Вăл çителĕксĕрри пĕтĕм ĕмĕте хуçать – илес тенине илейместĕн, çиес тенине çиейместĕн, курас тенине кураймастăн, парнелес тенине парнелейместĕн. Ун пек чухне те ăшра лăплану шыратпăр, укçашăн кăна ĕçлеместпĕр ĕнтĕ, е телей вăл укçара мар текелесе илетпĕр. Анчах çакă вăл вăхăтлăх калаçу кăна. Тĕрĕс сăмах вара пачах урăхла.

Укçа вăл хăйне шутлама тата хаклама ирĕк паракан япала, тулăх пурнăç никĕсĕ. Укçа пурри – пысăк çăмăллăх, ирĕклĕх. Ăна хурласа калаçни ыйтăва татса пани мар. Укçа паян пĕтĕм тĕнчене тытса тăрать. Вăл калама çук пысăк власть. Çĕршыври йĕркесене, саккунсене чухăнсем мар, укçаллисем майлаштарса пыраççĕ.

Укçа пĕлтерĕшне пурнăç хăех уçса парать, пире вăратас тесе çапа-çапа та илет. Эпир вара куçа уçасшăнах мар. Самана улшăннă май укçа тумалли майсем те нумайланчĕç. Харпăрлăх ыйтăвне урăхла татса пани пулăшрĕ. Кăмăл пулсан ĕç пуçарса яр, çыншăн мар – хăвăншăн. Пĕрисем ав килти хуçалăхра ĕçлесех укçаллă пулаççĕ, теприсем суту-илӳре, фирма уçакансем те, акцисемпе, вексельсемпе, облигацисемпе тата ытти хаклă хутсемпе ĕçлекенсем те пур. Искусствăра та укçа тумалли мелсем çук мар. Укçашăн ĕçлессипе пĕрлех ăна хăвшăн ĕçлеттерессине те пĕлмелле. Укçа тарçи мар, укçа хуçи пулар. Укçаран хакли ăс пур. Çавă пулăшса пырсан укçа чăннипех те ырлăх кӳрекен вăй пулса тăрĕ. Вара ыттисене пулăшмалли майсем те лайăхрах уçăлĕç. Çакна ачасене пĕчĕкренех вĕрентсе ӳстермелле. Укçана тыткаланă çĕрте ăнкару, тавçăру кирлĕ. Укçа шута юрататать тесе ахаль каламан ĕнтĕ. Ухмаха темĕн чухлĕ парсан та пурпĕрех чухăна тăрса юлать. Тепри ав кăшт пулăшнипех вăй илсе каять. Укçана вăрçар мар, укçаллă пулма вĕренер.

## 10. ÇИТĔНӲ ТУМАЛЛИ ВĂЙСЕМПЕ МЕЛСЕМ

Ырă çыннăм, вулаканăм, сана кăштах хамăн пурнăçăмпа паллаштартăм. Унта тем те пулса иртнĕ, лайăххи те, япăххи те, йăнăшсем те темĕн чухлех. Çулсем иртсе пынăçем ытларах çамрăксем çинчен шутлатăп, вĕсем валли усăллă сăмахсем шы-

ратăп. Çавсене пулăшас килет. Тӳрех калатăп, пĕр çын та нуша курма çуралмасть, телейлĕ пулма та кашниех тивĕçлĕ. Анчах пурнăç тараси чăннипех те вылявлă çав, пĕрин ырлăхĕ йывăртарах туртать, теприн – хурлăхĕ. Халĕ ĕнтĕ тĕп шухăшăма уçса парам. Хам çинчен çырнă чухне вулакана асрах тытса пытăм, çак хайлавăн юлашки пайне тĕрĕс ăнланасса шансах ĕнтĕ. Апла пулсан, хам пĕлнĕ пек *çитĕнӳ* тума пулăшакан вăйсемпе мелсене уçса парам эппин.

Ăнăçлă туса ирттернĕ ĕç яланах çитĕнӳпе вĕçленет. Çавăнпа та хăйне майлă çитĕнӳсем кашнинех пур. Пĕрин – пысăкрах, теприн – пĕчĕкрех, анчах та пурпĕрех пур, асăрхама кăна пĕлмелле.

Çапла вара эпĕ малалла виçĕ çăлкуçĕнчен сăрхăнса тухнă шухăшăмсене пĕлтерме тăрăшăп.  Пĕрисем – хам пурнăçран сăрхăнса тухнисем, теприсем – пĕлекен çынсен ăнăçуллă пурнăçне, çитĕнĕвне тишкерсе пĕтĕмлетӳ тунă хыççăн çуралнисем, виççĕмĕшсем – тĕнчери паллă çынсен опытне çырса кăтартнă кĕнекесенчен илнисем.

*Çитĕнӳ* вăл маншăн чи илемлĕ те илĕртӳллĕ сăмахсенчен пĕри. Каланинчен ытла ăшра туйса илни паха. Ку çеç те марха, çитĕнӳ вăл мана пĕр вырăнта тăма памасть, тĕреклĕ урхамах пек пĕрмаях малалла туртать. Çитĕнӳре эпĕ хам ӳссе, тĕрекленсе пынине куратăп. Вăлах çемьешĕн, ытти çынсемшĕн татах та усăллă пулма çĕнĕ майсем туса парать. Çитĕнӳ манра хуçа туйăмĕ çуратать. Паллах, калаçу кунта пурлăх хуçи пирки мар, анлăрах пĕлтерĕшпе пырать. Чи пахи – хампа хам хуçа пулни. Çакă вăл мана хам мĕн тăвас тенине тума, пурнăçа хама килĕшнĕ пек улăштарса пыма пулăшать, тĕнчене хам куçпа курма, таврари пурнăçа хам майлă ĕçлеттерме вĕрентет. Манăн ыттисенчен уйăрălса тăракан кăмăл-туйăм, ăс-тăн, пĕлӳ, философи, тыткаларăш. Енчен те вĕсем мана пулăшса пыччăр тесен, манăн вĕсен хуçи пулмалла, пурнăç тилхепине  алăран вĕçертмелле мар.

Чылайăшĕ пĕр йышши шкултанах, пĕр институтранах вĕренсе тухаççĕ, анчах çитĕнӳсем пачах та пĕр пек мар. Мĕншĕнха пĕрин пурнăçĕ ăнса пырать, теприн – аран-аран кăна? Вăйлă, сывлăхлă, укçаллă пулма майсем кашниййĕнех пур вĕт-ха, анчах мĕн чăрмантарать-ха? Хĕрĕх çул хушши çамрăксемпе ĕçлерĕм, шкула ылтăн медальпе, института шак та пиллĕкпе пĕтерекенсене чылай куртăм. Хĕрлĕ диплом илнишĕн миçе çынна саламламан пулĕ. Анчах пурнăçра пысăк çитĕнӳ тăвакансем хушшинче вĕсем йышлăнах пулмарĕç. Сăлтавĕ – çине тăрса ĕçе кӳлĕнменнине пула. Вĕренсе пĕлӳ пухнисем те, икшер институт

пĕтернисем те темĕн чухлех, ĕçе пуçăнса ăнăçу тăвакансем сахал. Пĕлӳпе тĕрĕс усă курма пĕлмелле, вара çитĕнӳ пулатех. Ăс-тăн хуçи пулса пĕлĕве хăвшăн ĕçлеттермелле. Чи пысăк пултарулăхсенчен пĕри шăпах çакă шутланать те ĕнтĕ.

Пĕлӳпе ĕçе пĕтĕçтерме пире чĕлхе, калаçу, çынпа çын хушшинчи çыхăнăва тĕрĕс йĕркелени пулăшса пырать. Пĕр-пĕринпе калаçса татăлмасăр ĕç тума çук. Пĕччен никам та мар. Хутшăнури ăсталăх çынна хăюлăх парать, çитĕнӳ çулне те çăмăллатать. Ăслă çынсем çакна тахçанах пĕлнĕ, хăйсем палăртнă тĕллеве пурнăçланă çĕрте питĕ ăнăçлă усă курнă. Тĕнчене тепĕр майлă çавăрса яма хăтланнă ăстасем те пулнă вĕт-ха. Ульянов-Ленин кăна мĕне тăрать. Хăй шухăшне чăн пулнă япала пек кăтартса калаçни миллионшар çын пуçне арпаштарса ячĕ. Ун майлă ĕçлекенсен шучĕ ӳссе пычĕ. Пурнăç йĕрки те улшăнчĕ, пĕтĕм тĕнче пайланса кайрĕ. Кăна пысăк пĕлтерĕшлĕ тĕслĕх тейĕпĕр. Анчах эпир тĕнчене улăштарас тĕллев лартнă çынсем мар. Хутшăнури ăсталăх пире хамăр телее, юратăва, савăнăçа, пурнăçри вырăна лайăххрах йĕркелеме пулăшни те тем пекех. Тепĕр чух хампа хам калаçни те, ăна ăшри калаçу тейĕпĕр, питĕ усăллă. Пурнăçри пулăмсене мĕнлерех ăнланса илетпĕр, хамăра та çавăн манерлĕ туйма пуçлатпăр. Апла пулсан пурнăç пахалăхĕ те çаплах, ытларах хамăрпа пулса иртнине мĕнлерех йышăннинчен килет вăл.

Пуçра мĕн пулса иртнине тĕрĕслесе йĕркелесе пыма май çук тенипе те килĕшместĕп. Шухăшлав çулне те, хăвна мĕнлерех тытассине те улăштарма пулать. Енчен те тунсăх ытамне лекес тесен ăшри сасса итлесе пăх та пуçна усса утма пуçла, пусăрăнчăклă сасăпа калаç, пурнăçри хурлăхлă самантсене аса ил, вара пулчĕ те. Çак хушăра тата çине тăрсах табак туртсан, эрех ĕçсен депрессие те кĕрсе ӳкме пулать. Хăшĕ-пĕрине çакăн пек йĕрке килĕшме пуçлать, ма тесен хĕрхенекенсем, пулăшма хатĕр çынсем те тупăнаççĕ. Ыттисене йăлăнас йăла çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ.

Çын хăй кăмăлне хăех улăштарма пултарать. Хаваслă, хавхаланулла туйăм çуратас тесен шалти калаçăва урăхлатмалла, унччен пулса иртнĕ савăнăçлă саманта аса илмелле, пусăрăннă пуçа, шăм-шака тӳрлетсе утăма хăвăртлатмалла. Ӳпкери сывлăша хыттăн вĕрсе кăларса урăхларах сывлама тытăнмалла. Физиологипе ăшри лару-тăру хушшинче çирĕп çыхăну пуррине асра тытар. Кунта та килĕшӳлĕх пулмалла. Çын хăйне тытма пĕлни çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ. Унсăр çитĕнӳ пирки ĕмĕтленни уссăрах.

Çитĕнӳ çулĕ темиçе тапхăртан тăрать. Чи малтан мĕн патне çитсе тухассине, хăвна мĕн кирлине лайăх пĕлмелле. Умри

пуласлăх маяк пек çиçсе илĕртсе тăтăр. Иккĕмĕш тапхăр вăл ĕçе пуçăнни, ĕмĕте пурнăçлас тесе мĕн-мĕн тумаллине пĕлсе вăй хуни, ĕненсе, шанса тăрăшни. Виççĕмĕшĕ – тĕрĕс çулпах пынипе пыманнине тĕрĕслени. Йăнăшсем пулсан хăраса ӳкмелле мар, тĕрĕс ăнланса илсен вĕсем те усăллă япаласемех. Юлашкинчен – çаврăнăçуллăрах пулмалла, хăвна пĕр майлă çеç тытмалла мар, ĕçе пуçăнсан çитĕнӳ патне илсе тухакан улшăнусем кĕртмелле. Астăвăр, лартнă тĕллев патне темиçе енчен те çывхарма пулать: малти çул йывăрланса çитсен айккинчен пырăр, унта ĕç тухмасан – хыçалтан. Вариантсем темĕн чухлех.

Пулать-ши, пулмасть-ши тесе пуçăннă ĕç ăнăçупа вĕçленмест. Хăвна шанса пысăк хавхаланупа тытăнсан çитĕнӳ пулатех. Çын туман ĕç çук. Иккĕленсе тăмалла мар, хăрамалла мар.

Чылайăшĕ хăй мĕн тума пултарнине те пĕлмест. Малтан хăвна çĕнсе илмелле. Чăвашсен паллă тухтăрĕ Г. М. Воронцова академик ав хĕлле те Атăл пăрне ватса шыва кĕрет; Болгарире шĕл кăвар çинче çарран ташлакансем те пур (хам та ташласа курнă). Санăн вара вĕри мунчаран тухса кăпăшка юр çинче выртса йăваланмалăх та хăюллăх çук пулсан, пурнăçу ăнманнишĕн пăшăрханма та кирлĕ мар. Айван эсĕ.

Халĕ вара çитĕнӳ тума пулăшакан вăйсене уйрăммăн асăнма та вăхăт çитрĕ.

*Пĕрремĕш* вырăна эпĕ хĕрӳллĕ туйăмпа туртăма лартнă пулăттăм. Хамран илсе çапла калатăп. Ывăннине пĕлмесĕр ĕçлесси шăпах çакăнтан килет те ĕнтĕ. Вăйлă туртăм пуçа лайăхрах ĕçлеттерет, вăхăта хаклама вĕренет. Канмалли кун е отпуск вăхăтĕнче татах та тухăçлăрах ĕçлеме пулать. Пĕррехинче канма тесе Армение кайнăччĕ; çирĕм кун хушшинче эрменле вулама вĕренсе çитрĕм, çав чĕлхере чăваш сăмахĕсем те чылай тупрăм.

*Иккĕмĕшĕ* – ĕненӳ, хăвна шанни. Ĕненӳ мĕнле япала пирки ытлашши калаçма кирлех те мар пуль тетĕп. Тĕн йĕрки пĕтĕмпех ĕненӳ çинче тытăнса тăрать. Турра шанни вăл япăх мар-ха, анчах хăв мĕн тума пултарнине ĕненни тата та пахарах. Ма тесен, çакă вăл пурнăç хуçи хăв пулнине ĕнентерет.

*Виççĕмĕшĕ* – хĕрӳллĕ туртăмпа ĕненӳ çине тайăнса пĕлӳпе тĕрĕс усă курма пĕлесси. Теприн ав ăсĕ те, пултарулăхĕ те пур, анчах нимех те туса кăтартаймасть. Ма тесен çулне пĕлмест, çухалса кайнă вăл, çитĕнӳ алăкне ӳçмалли уççине тупайман. Тĕрĕс çул-йĕр суйласа илме пĕлмелле.

*Тăваттăмĕшĕ* – çынра пур пĕтĕм вăя пуçтарса ĕçри хастарлăха тытса пырасси. Енчен те çакă йăлана кĕмесен, кахал пусса лартать. Алă-ура вăйĕ, ăс-тăн хăвачĕ, биоэнерги – пурте

умри тĕллевшĕн тăрăшмалла. Çапла ĕçлессĕ те ĕнтĕ çитĕнӳ тăвакан çынсем, çапла ăмăртаççĕ те ĕнтĕ тĕнчене тĕлĕнтерекен чăваш спортсменĕсем, Олимп чемпионĕсем.

*Пиллĕкмĕшĕ* – çыхăну вăйĕ, ыттисемпе хутшăнса ĕçлени. Пĕччен нимĕн те пулмасть. Нумай енчен юхса кĕрекен шывсем пулмасан Атăл та тахçанах типсе ларнă пулĕччĕ. Çитĕнӳре те çаплах. Калăпăр, кĕнеке çырнă чухне никамах та кирлĕ марха, пичетлесе кăларас тĕллев лартсан вара такам та кирлĕ. Кашни панă пĕчĕк пулăшу пысăк çитĕнӳ патне илсе çитерет.

*Улттăмĕшĕ* – калаçури, хутшăнури ăсталăх. Çынпа çын пек пулмалла, калаçма та, хута кĕме те пĕлмелле. Çыннăн шухăш-кăмăлне, пурнăç йĕркине, ĕçри мелĕсене пĕлесси калаçуран пуçланать. Çыннине кура калаçăвĕ, уйрăмах пĕрле ĕçлес е пулăшу ыйтас тĕллевпе пуçлансан. Кун пирки тĕплĕнрех каярах каласа парăп-ха. Халĕ вара васкамасăр малалла каяр, утăм хыççăн утăм туса çӳлерех асăннă тĕп шухăшсене лайăхрах уçса парса çĕннисем патне çывхарар.

**Тĕнчене ӳпкеличчен хамăрăн улшăнма пĕлмелле.** Пурнăç çулĕ такăр марри паллă ĕнтĕ, шăпамăр та тараса пекех вылять. Пĕрисен пурнăçĕ савăнăçлă, телейлĕ, теприсен çав тери нушаллă. Пĕрисем тем пек йывăрлăх сиксе тухсан та хуçălмаççĕ, теприсем кăшт такăнсанах тӳнсе каяççĕ, пурнăçĕ ăнманшăн ыттисене вăрçаççĕ, турра та ятласа илеççĕ. Телей паман иккен. Хăйсем вара ыттисем мĕнле майпа çитĕнӳ тунине тишкерме те ӳркенеççĕ, мĕнле пурăннă, çаплипех вăхăта ирттереççĕ. Теприсем тата эрехпе шăварăнса лăплану шыраççĕ.

Вăй илсе тулăх пурнăç тăвасси мĕнрен пуçланмалла-ха? *Шухăшран*. Çын çăлăнăçĕ – пуçра. «Мĕнле пурăнатăп-ха эпĕ, тĕрĕс çулпах утатăп-ши?» – сывă пуç çакăн пек ыйту çуратма пултаратех ĕнтĕ. Хуравĕ савăнăçлах мар пулсан та хăрама кирлĕ мар. Япăх пурăннине туйса илни хăех лайăх кăтарту. Вăл сана улшăнма кирлине аса илтерĕ. Тен, ырантан пуçласа хăвна пачах та урăхла тытма пуçлăн. «Çынсем тума пултарнине эпĕ мĕншĕн тăваймăп вара?» – тесе хавхалансан пачах урăх çын пулса тăрăн, ытларах лайăх тĕслĕх еннелле туртăнма пуçлăн. Ăнăçлă пурнăç хуçисем паллакансем хушшинчех пур. Вĕсем хăйне мĕнлерех тытни, мĕнле ĕçлени, мĕнле пурăнни çĕнĕ кĕпе çĕлемелли модель вырăннех пулĕ. Çакă вăл питĕ тухăçлă мел. Пĕрремĕшĕ – вăхăта, вăя перекетлет. Иккĕмĕшĕ – йăнăшсем тăвасран сыхлать. Калăпĕ мĕнлерех – пушмакĕ те çапларах. Пурнăçра та çавах. Тепринчен илнĕ калăп вăл ют çын опычĕ. Кăштах вăхăт иртсен, тен, тивĕçтерми те пулĕ. Ăна лайăхлатасси вара хăвăнтан килет.

Пĕр тĕслĕх кăна илсе парам. Этнопедагогика ашшĕ хамăр ентеш пулнине кура пирĕн ăсчахсем пурте тенĕ пекех халăх педагогикине тĕчеме тытăнчĕç, наука кандидачĕсем, докторсем пулчĕç. Пĕр вăхăтра хам та çавсен ретĕнчехчĕ. Анчах мана çак калăп, модель тивĕçтерми пулчĕ. Халăх педагогики тĕпчевçĕне, çыравçăна пысăк аталану парайманнине сисрĕм. Çавăнпа та хама валли урăхла модель суйласа илтĕм. Халăх педагогики шайĕнче тăрса юлнă пулсан çак кĕнекене те çыраяс çукчĕ. Паянхи пурнăç валли урăхларах педагогика кирлĕ.

Çапах та тепĕр хут калатăп, ыттисен çитĕнĕвĕнчен вĕренни питĕ усăллă япала. «Мĕнле тума пултарнă-ха вăл çакна?» – тесе тĕлĕнсе ыйтсан эпĕ çапла каланă пулăттăм:

– вăл çакна хăй тума пултарнине шаннă, çав ĕненӳ ун пуçне, нервине кĕрсе вырнаçнă;

– пуçне ĕçлеттернĕ, ăс-тăн вăйне пухса çĕнĕ шухăш çуратнă, урăхла пурнăç моделĕ калăпланă;

– ӳт-пĕвне, утассине, сăн-питне, сывлассине, урăхла каласан, физиологине улăштарнă;

– хăй улшăнса шухăшпа ĕç хушшинчи килĕшĕве тупнă.

Вилнисемпе ухмахсем кăна улшăнаймаççĕ. Пирĕн вара хамăр улшăнма пултарнине питĕ тĕрĕс те кирлĕ утăм тесе хакламалла.

**Хăвна мĕнле туясси хăвăнтанах килет.** Лайăххи те, япăххи те, ырри те, усалли те çын пуçĕнчен тухнă япаласем. Телей те, пуянлăх та, чухăнлăх та çаплах. Çитĕнӳ вăрлăхĕ те малтан пуçра çуралнă, пĕчĕкрен пысăк пулса пире хавхалантарса пынă, савăнăçлă хал парнеленĕ. Çитĕнӳ халĕ пире татах та çӳлерех çĕкленме пулăшать, пысăкрах ĕçе тытăнма хистет. Чăрмав кӳрекен хал та юнашарах, хăрушлăх, шикленӳ, иккĕленӳ парнелеме те хатĕрех. Унпа кĕрешмесен пусмăрçă кĕске вăхăтрах хăй тарçи туса хурать. Çавăнпа та йывăрлăх сиксе тухсан эпĕ пĕтĕм вăя пухса пуçа хытăрах ĕçлеттеретĕп, тепĕр чух ывăниччен, ыратакан пуличчен тесен те юрать. Урă пуçра шанчăклă меле кăтартакан вăйлă шухăш çуралатех. Мĕн чухлĕ йывăртарах, çавăн чухлĕ вăйлăрах туятăп эпĕ хама.

Пуç вăйĕпе хамăр хала улăштарас ыйту вăл чи авалхисенчен пĕри. Мĕн кăна туса пăхмаççĕ пуль çынсем: типĕ тытаççĕ, эмел е эрех ĕçеççĕ, юрă-кĕвĕ итлеççĕ, кĕлĕ тăваççĕ, юрату ĕçĕпе те хавхаланаççĕ. Çак ĕçсем хыççăн çын, паллах, улшăнать. Анчах та ансатрах мелсем те пур вĕт-ха.

Пуç миминчен вăйлă компьютер çĕр çинче урăх çук. Темшĕн çке-ха çакна шута илместпĕр. Ăна ĕçлеттерекен пульт та хамăр алăрах. Ăнăçлă пусма пĕлсен кĕске вăхăтрах улшăнусем

кĕртме пулать. Пуçра унта темĕн те пур, пĕлӳ çеç мар. Пурнăç опычĕ хăех мĕне тăрать. Кирлине илесчĕ. Кирлĕ марри пирки пит калаçмасан та юрать. Хампа пулса иртнĕ ырă самантсене аса илсен туйăм та хавхалануллăрах. Çакă вăл ыттисемшĕн те лайăх. Хăй кăмăлне, халне улăштарма пултаракан ыттисене те вăй парать, шанчăк çуратать. Каланăччĕ ĕнтĕ институтра чухне финалта волейболла физкультура факультечĕпе выляни çинчен. Малтан вĕсем пире тивĕçлĕ ăмăртуçă вырăнне хуман пулнă иккен. Музыкантсем çке-ха. Пĕрремĕш партие выляса ячĕç. Унтан тавçăрса илчĕç пулас, иккĕмĕшпе виççĕмĕшĕнче çĕнтерчĕç. Тăваттăмĕшĕ пирĕн пулчĕ. Юлашки партие физкультурниксем ăнăçлăрах пуçласа ячĕç, эпир юлса пытăмăр. Куратăп, выляса ярас хăрушлăх та пур, юлташсем йăнăш хыççăн йăнăш тума тытăнчĕç, çĕнтерес шанчăка çухатни палăра пуçларĕ. Çав самантра пĕр минутлăха тăхтав ыйтрăм та юлташсене юлашки сăмахăма каларăм: «Атьăр-ха пуçа усар мар. Пирĕншĕн финала тухни те пысăк çитĕнӳ. Тепĕр тесен, Бах фугине калама вĕреннипе танлаштарсан çакă вăл нимех те мар. Апла пулсан илемлĕн те савăнăçлăн выляса ярар эппин».

Ак тамаша, вăйă пачах урăхла майлашăнса кайрĕ, кĕçех лешсене хăваласа çитрĕмĕр. Спортзал кĕрлесе кăна тăрать. Пире курма пынă хĕрсем юрласа ячĕç. Çĕнтертĕмĕр!

Пĕлместĕп, хăш сăмахсем вырăнлă пулчĕç, эпĕ калани хăй ĕçне турех. Хам та тăрăшрăм ĕнтĕ. Çавăн чухнехи пек пĕтĕм вăя хурса, ăсталăха усă курса вылянине астумастăп. Те капитан пулни яваплăха ӳстерчĕ, те музыкантсем айванккасем маррине кăтартас килчĕ.

Кирлĕ чухне ал-ура вăйне те ӳстерме пулать иккен.

**Хамăр мĕне ĕненетпĕр – çавăн евĕрлĕ пулма тăрăшатпăр.** Эпĕ П. Ф. Филипповпа туслăччĕ. Хамран чылай аслă пулсан та çак паллă виолончелистпа калаçмалли тупăнсах тăратчĕ. Мунчана та пĕрле çӳренĕ. Оперăпа балет театрĕн оркестрĕнче ĕçлетчĕ, уйрăм концертсем те паратчĕ. Пĕр сăмахпа каласан, вăл республикăри чи паллă виолончелист пулнă. Сакăрвун виççе çити пурăнчĕ, ĕçлеме пăрахмарĕ. Репетици е спектакль çук кунсенче те театра васкатчĕ, хăй класне кĕрсе ларатчĕ те виçшер сехет кĕвĕ шăрантаратчĕ. Çакăн хыççăн киле таврăннă чухне вăл пачах урăхла çын пек курăнатчĕ, савăнăçлăччĕ, шӳтлеме те юрататчĕ. Самай ватăлнине пула сывлăхĕ хавшанă çын теме çукчĕ ăна. Музыкăна хытă ĕненнĕ вăл, унпала хавхаланса, чунне тасатса пурăннă, нервсене йĕркене кĕртсе пынă. Çак ĕненӳ уншăн пурăнма пулăшакан вăй пулса тăнă.

Ĕненӳ çинчен калаçнă чухне тӳрех тĕн йăли е политикăри

идеологи аса килет. Сăлтавĕ те паллă ĕнтĕ, вĕсен тĕп ĕç хатĕрĕ яланах ĕненӳ. Коммунизм ялкăшса килессе те ĕненнĕ вĕт-ха эпир, айванккасем. Класс кĕрешĕвне кĕрсе кайса пуçне хунă çынсене те ăнланатăп, ĕненнĕ вĕсем. «И все как один умрем, в борьбе за это», – тесе юрланă вĕт-ха. Пурте вилсе пĕтсен вара пурнăç тăвакан кам юлĕ?

Эпĕ вара «ĕненӳ» сăмаха анлăрах пĕлтерĕшпе ăнланатăп. Вăл пурнăç йĕркине тытса пымалли принцип. Кашни çыннăн ĕмĕрне лайăх пурăнса ирттермелле. Кашниех телей курма çуралать. Çыннăн чи малтан хăй мĕнле тата мĕн тума пултарнине ĕненмелле. Çынсем е патшалăх мĕн туса парассине мар, хăвна шанмалла. Çавăн чухне тин ĕмĕтленни пурнăçа кĕме пуçлĕ. Ĕненӳсĕр çын вăл çав тери вăйсăр, çухалса кайнăскер тесен те юрать, кĕсменсĕр кимĕ пек çил ăçталла вĕрет – çавăнталла пăрăнать. Ĕненӳ пур çын пачах урăхла. Вăл мĕншĕн пурăннине те курать, вăй-халне те туять, чирлеме те вăхăт çук, ыратнине те çăмăллăн чăтса ирттерет. Шĕл кăвар çине çара уран кĕрсе кайнă чухне хама сивĕ пăр çинче ташлатăп тесе ĕнентерни хăюлăх пачĕ. Е тата тепĕр тĕслĕх. Профессор аллинчен илнĕ таблетка лайăхрах сыватать пек, лешĕ унччен çамрăк медсестра кĕртсе паракан эмелех пулсан та. Ма тесен эмел асамлăхĕ хăйĕнче çеç мар, чирлĕ çын пуçĕнче те. Çавăнтан тухакан сигналсем нервсем тăрăх пĕтĕм ӳт-пĕве сарăлаççĕ, кăмăла, поведенине улăштараççĕ. Мĕнле ĕненӳ суйласа илетпĕр, çапларах пурăнма пуçлатпăр. Тепри ав ниме те, никама та, хăйне те ĕненмест, шанчăкне çухатнă, аллине уснă, тупăк хатĕрлемелли кăна тăрса юлнă. Шел пулин те, çавăн пек çынсен шучĕ паян та йышлăха. Пурнăçа такам килсе туса парассине кĕтсе лармалла мар, ĕненĕве улăштарса чавса тавăрса ĕçе пуçăнмалла. Сакăрвун улттăри çын Шупашкартан кирпĕч турттарса çурт лартнине те курнă вĕт-ха эпĕ!

Мĕншĕн-ха пĕрин ĕненĕвĕ çитĕнӳсем патнелле туртать, теприн – каялла? Ĕненӳ ăçтан тупăнать-ха?

Ĕненӳ çăлкуçĕсенчен пĕри вăл, паллах, *хамăр пурăнакан тавралăх*. Унтан ниçта та тарса пытанма çук, вăл кашни кунах пирĕнпе. Шупашкарти «шанхая» çитсенех пуçа урăхла шухăш пырса кĕрет, кăмăл та хăвăрт улшăнать. Пачах урăхла пурнăç йĕрки çынсене хĕссе лартнă. Ним ĕмĕтсĕр, шанчăксăр пурăнакан та темĕн чухлех. Хăйсен шăпипе килĕшсе лăпланнăскерсем вĕсем. Çакăн пек çĕрте çитĕнӳ патне туртăнакан ĕненӳ валли вырăн çав тери хĕсĕк. Е тата тепĕр тĕслĕх. Пурте ĕçке ярăннă çĕрте урă пурнăç ӳсĕрринчен пахараххине ĕнентерме çав тери йывăр. Çирĕпленсе ларнă йăла ырă ĕмĕте шăтарса тухма памасть.

Аслисен пурнăç йĕрки ачисем çине ӳкет. Çын пуянлăхпа çитĕнĕве ачаранах курса ӳссессĕн, ăна ашшĕ çулĕ çине тăма, паллах, çăмăлрах. Çитĕнӳ çитĕнӳ патнеллех туртать.

Çапах та ĕненӳ шăпине таврари пурнăç йĕрки кăна татса памасть. Ун пек пулсан чухăн çын ачисем нихăçан та тулăх пурнăç кураяс çук, пуянсен ачисем ашшĕ-амăшĕн пурлăхне юхăнтарса ярас çук.

*Нумайлăха асра юлакан уйрăм пулăмсем.* Искусствăра хавхаланусăр ĕç тухмасть. Тен, çавăнпах шкулта ĕçленĕ чухне эпĕ ертсе пыракан хор кружокне ачасем питĕ йышлăн çӳретчĕç. Ларма вырăн çукки те пулнă. Ушкăнпа юрласси килĕшнĕ ĕнтĕ вĕсене. «Урокра тунсăх валли вырăн пулмалла мар», – çаплаччĕ ман девиз. Музыка хăех сисĕм-туйăм хуçи. Хам ĕненĕве, хам юратăва çавăн урлă кăтартма тăрăшнă. Музыка вăйĕ ачасем çине куçиччен малтан хам ăшра шăранса тасалнă ĕнтĕ. Пĕр сăмахпа каласан, искусствăпа пурăннă.

Пĕррехинче пирĕн шкула Шупашкартан унччен кунта директорта ĕçленĕ В. Н. Николаев пычĕ, учительсем умĕнче тухса калаçрĕ, аспирант пулнă май мĕнле тĕпчевсем ирттернине пĕлтерчĕ. Хăй ĕçĕпе мĕнле хавхаланнине, савăннине курсан тĕлĕнсех кайрăм. Эпĕ искусствăпа киленнинчен пĕртте кая мар. Наука енчен пăхсан тĕпчемелли шкулта та пур иккен, тĕслĕхсем те çителĕклĕ. Кĕçех хам ĕç çине сăнавçă куçĕпе пăхма тытăнтăм, çыркаласа пытăм. Кайран вара, пĕрремĕш статья пичетленсе тухсан, питĕ савăнтăм. Çакна нихăçан та манас çук.

Ĕненӳ çуратакан тепĕр вăй вăл – *пĕлӳ*. Пурнăçран кăна илнĕ пĕлӳ, паллах, çителĕксĕр. *Вĕренмелле!* Тарăн пĕлӳсĕр пысăк çитĕнӳ тума çук. Шкулта вĕренни те кивелсе пырать, пĕлĕве çĕнетсех тăмалла. Кĕнекене алăран вĕçертмелле мар.

Илер-ха Çурçĕр полюсне пĕччен çитсе килме çула тухнă çынна. (Ун пекки те пур вĕт-ха!). Мĕн кăна пĕлмелле мар унăн? Çăлăнăçĕ те, çитĕнĕвĕ те пĕтĕмпех пĕлӳре. Урăхла каласан, вăл веçех пĕлӳ аллинче.

Пĕлӳ çынна ирĕклĕх парать. Мĕн тусан мĕн пулассине пĕлни хăюлăх çуратать, ĕненĕве çирĕплетет. Пĕлӳпе юнашар ĕненӳ пулсан нимĕнле чăрмав та хăрушă мар, çитĕнӳ пулатех.

Пĕлменни пĕтерет. Пысăк тĕллевсем лартма çавă чăрмантарать.

*Унчченхи çитĕнӳ çине тайăнса ĕçлени шанчăка вăйлатать.* Енчен те эсĕ çав ĕçе пĕрре туса пăхнă пулсан, иккĕмĕш хутĕнче çăмăлрах, çитĕнӳ тăвас ĕненӳ те çирĕпрех. Каланăччĕ ĕнтĕ, ыттисем пĕрер параграф çырнă çĕре диссертацие пĕтĕмпех çырса пĕтертĕм тесе. Палăртнă вăхăтран пĕр çул маларах. Ма тесен, ыттисемпе танлаштарсан, статьясемпе кĕнекесем çырас опыт

пысăкрах пулнă. Сăмах май каласан, эпĕ вăхăта вăраха ямасăр ĕçлеме хăнăхнă. Сăвă-и, калав-и, повеç-и, роман-и – кĕске вăхăтрах хут çине ӳкет, пуçри «компьютер» хыççăн аран ĕлкĕрсе пыратăп. Çапла ĕçлеме мана ĕненӳ пулăшать. Хама шанатăп эпĕ, ыттисенчен лайăхрах, ăстарах, сăнарлăрах çырма пултарнине те ĕненетĕп. Ун пек туйăмсăр çыравçă ĕçне кӳлĕнес те çук.

Ĕненĕве çирĕпленме пулăшакан тепĕр вăй вăл *пулас çитĕнӳпе малтанах хавхаланса киленни*. Ĕçĕ вĕçленмен-ха, анчах ун тухăçлăхĕ, çитĕнĕвĕ куç умĕнче вылять, туса пĕтернĕ пекех курăнать. Мĕнле тупăш илесси те паллă. Пысăкрах укçа татах та вăйлăрах ĕçлеме хистет. Вăл çеç те мар-ха, çав укçапа мĕн илме май пурри те хавхалану парать, шанчăк çуратать. «Окаран» «Волга» çине куçса ларни хăех мĕне тăрать! Общежитирен уйрăм хваттере куçни те çавах. Институтра вĕреннĕ чухне виçĕ çĕрте ĕçлени маншăн питĕ вырăнлă пулчĕ – икĕ пӳлĕмлĕ хваттер лартса аннепе йăмăк çемйине хулана илсе килме май пачĕ.

Паллах, çитĕнӳ шак та ĕненӳпе çеç пулмасть. Чăтăмлăх та, хастарлăх та, турри панă пултарулăх та кирлĕ. Чылай çул каялла пĕр чăваш çыравçи ним именсе тăмасăр: «Эпĕ – иккĕмĕш Яковлев», – тесе пĕлтерчĕ. Хăй Яковлев пек чаплă çын иккенне ĕненнĕ ĕнтĕ вăл. Ку çын Яковлев пекех шкулсем уçать пуль-ха, вĕренӳ кĕнекисем çырать пуль-ха, учительсем хатĕрлет пуль-ха, чăваш чĕлхине хӳтĕлес, шкулта вĕрентессине лайăхлатас ĕçе кӳлĕнет пуль-ха тенĕччĕ. Çук, чăвашлăха хирĕçле çынсемпе çыхлашса кайрĕ те хăй иккĕмĕш Яковлев пулнине часах манчĕ. Ĕненĕвне ĕçпе çирĕплетеймерĕ.

Пысăк тĕллев лартса ĕçе пуçăннă çынсене çапла каланă пулăттăм.

*Пĕрремĕшĕ. Пулса иртмелли хăй çулне тупатех; сăлтавĕ çапла хушать.* Эпир ытларах ĕç мĕнпе вĕçленнине курса калаçатпăр, тĕлĕнетпĕр. Çитĕнӳ тума хăнăхнă вăйлă çынсем тӳрех сăлтавне шыраççĕ. Вĕсене çавă кăсăклантарать. Ăнăçсăр ĕçĕн сăлтавне пĕлни те хăйне майлă çитĕнӳ. Вăл та сана валлиех, тепĕр чух унчченхи çитĕнӳрен те хаклăрах. Çав сăлтавах тата пысăк çĕнтерӳ патне тухма пулăшать.

Ĕненӳ пулсан майĕ тупăнатех. Кам ĕненнĕ-ха хуçалăха А. П. Айдак ертсе пыма тытăниччен тавралăха çапла илемлетме май пуррине. Ĕçленĕçемĕн пĕр çын ĕненĕвĕ ыттисене куçса пычĕ, çитĕнӳ те куç умĕнчех.

*Иккĕмĕшĕ. Ăнăçсăрлăха пуçра тытса çӳремелле мар, часрах манмалла та ĕçе кӳлĕнмелле.* Ун пек тумасан хăравçăлăх хуçаланма пуçлать, иккĕленӳ сăхма тытăнать. Иккĕленӳ пек вăрттăн сутăнчăк çук та пуль.

Америкăра тухнă кĕнекере вуланăччĕ: пĕр çын 21 çулта бизнесра çунса каять; 22-ре Конгреса суйланма шутлать – çĕнтереймест; 24-ра бизнесра иккĕмĕш хут çунса каять; 26-ра юратнă хĕрарăмĕ вилнишĕн кулянса ухмаха тухса каясси патне çитет; 34-ра, 36-ра, 45-ре чухне виçĕ хутчен суйлава хутшăнать – çĕнтереймест; 47-ре чухне хăйне вице-президент пулма тăрататать – выляса ярать; 49-та сената суйланма пике-нет – ĕç тухмасть; 52 çулта АПШ президенчĕ пулса тăрать.

Çакă çын вăл – Авраам Линкольн. Ун пек çынсем хăйпе пулса иртнине ăнăçсăрлăх вырăнне хумаççĕ, сăлтавне тишкерсе вăйланса пыраççĕ.

Малтанах ăнăçсăрлăх пирки шухăшлани наркăмăшран та хăрушă япала: ӳт-пĕве, ăс-тăна, физиологие йăвашлатать. Тепĕр хут калатăп, ăнăçсăрлăх çук, ĕçне тума пĕлменни кăна пур.

*Виççĕмĕшĕ. Тем сиксе тухсан та яваплăха хăв çине ил.* Хам пурнăçа, хам тĕнчене хам майлаштарса пыратăп. Лайăххи те, япăххи те – ман ĕç. Урăх çынна айăплани вăл хам айванлăха кăтартни кăна. Яваплăха хăв çине илесси, паллах, çăмăл мар. Пысăк хăюлăх кирлĕ. Анчах çакна пĕрре чăтса ирттернĕ хыççăн хăвна татах та вăйлăрах туйма пуçлатăн. Çакă вăл çынна çи-рĕплĕх парать.

Анчах пурнăç урăххине кăтартса пырать: çынсем ытларах хăйне мар, ыттисене айăплаççĕ. МММ текеннине хунă укçа çунса кайнăшăн Мавродие ӳпкелешни кулăш кăна çуратать. Маншăн вара пачах урăхла. Ăнăçсăр ĕçшĕн хама кăна ятлатăп. Хама чăрмав кӳме, ура хума тăрăшнисене те асăнмастăп. Ма тесен çакă вăл вĕсемшĕн ытлашши пысăк чыс.

Пĕррехинче кĕнеке издательствине ачасене эстетикăлла воспитани парас ыйтупа алçырăвĕ тăратнăччĕ. Пичетлес мар тесен темле сăлтав та тупма пулать, рецензи пеккине вулаттарчĕç те тавăрса пачĕç. Тепĕр икĕ çултан çав ĕçе Чулхулара пичетлесе кăлартăм та кунти издательствăра ĕçлекен çынна парнелесе па-тăм. Уçкаласа пăхрĕ те пиçнĕ палан пекех хĕрелчĕ, юрăхлă сăмах та тупаймарĕ. Çухалсах кайрĕ тесен те юрать. Чылай вăхăт иртсен çапах та каларĕ, пĕр «шишкă» хушнипе тавăрса панă пулнă иккен ун чухне ман ĕçе.

*Тăваттăмĕшĕ. Хăш-пĕр япалапа усă курнă чухне пурне те пĕлмесен те юрать.* Эпĕ çакна хамшăн «электричество комп-лексĕ» тетĕп. Эсир манран кулма та пултаратăр, ĕмĕр тăршшĕпе токпа усă куратăп, анчах вăл мĕнне пĕлместĕп, пралук тăрăх мĕн чупнине пуçа илейместĕп. Тен, кирлех те мар. Маншăн усă курма пĕлни те çителĕклĕ. Пурне те пĕлме май та çук. Илер-ха,

сăмахран, влаç тытăмĕнчи пысăк ертӳçе. Пĕтĕмĕшле пĕлӳ çине тайăнсах хăй тивĕçне аван пурнăçласа пырать. Питĕ кирлĕ чух специалист пĕлĕвĕпе, ыттисен çитĕнĕвĕпе усă курать. Пултаруллă çынсемшĕн чи хакли – вăхăт. Иртсе кайнă саманта çавăрса килме çуккине яланах асра тытаççĕ. Пĕлӳ çӳпçинчен мĕн кирлине хăвăрт суйласа илеççĕ.

Тата çакна калам, пĕр-пĕр япала çинчен питĕ тĕплĕ пĕлнине унпа усă курассине пăтраштарма кирлĕ мар. Вĕсем пачах урăхла япаласем. Урай Макаçри Христофор Макаров хурт-хăмăр ăсти ав, пыл сутса тунă укçапа кил-çуртне çĕнетрĕ, ял урамне асфальт сарчĕ, вилнисене чысласа часавай лартрĕ. Пыл хурчĕсене мĕнле пăхмаллине вĕренсе çитнĕ ĕнтĕ вăл. Çак тутлă çимĕçри ферментсене, тен, пурне те пĕлмесен те юрать. Çитĕнӳ тăвакансем вĕсем тепĕр чух çав тери нумай пĕлекенсемех те мар. Çавăнпа та тăван шкул юбилейне «пиллĕк» паллăпа вĕреннисем пушă алăпах, «виççĕпе» пĕтернĕскер компьютер йăтса пынинчен тĕлĕнме кирлех мар. Çакă вăл ман шухăша тепĕр хут çирĕплетсе парать: çитĕнӳ çулĕ пуриншĕн те уçă.

*Пиллĕкмĕшĕ. Ман çитĕнӳ хампа пĕрле ĕçлекенсен пулăшăвĕнче.* Тĕнче варринче эпĕ хам тăратăп. Ыттисем пурте ман çумрисем, юнашаррисем – мана пулăшма хатĕррисем. Вĕсен ырлăхĕпе усă курасси пĕтĕмпех хамран килет. Кашни çын хисепе тивĕç. Вăрçса хăртса тăкнипе нимĕн те пулмасть. Пĕрлешсе пĕр тĕллевпе ĕçленине нимĕн те çитмест. Çакна пирĕн Японири ертӳçĕсенчен вĕренмелле. Унти йĕрке çапларах, çын ĕçе вырнаçни пурнăç ыйтăвĕсене татса панипе танах. Фирма пурне те хăй çине илет. Директорпа рабочи пĕр сĕтел хушшинче апатланнинчен те тĕлĕнмелли çук. Ертӳçĕ хăйне çав тери пысăка хурса тытасси вăл Раççейре кăна анлă сарăлнă, совет системинчен юлнă йăла.

Çакăн чухлĕ пурăнса та çăвартан киревсĕр сăмах кăларман. Калама та пĕлместĕп. Вăрçни, ятлаçни пулнă пуль, анчах усал сăмахпа хăртман, ăс парса, вĕрентсе кăна калаçнă.

Пĕччен çитĕнӳ тума çук. Пĕр çынна та ытлашши тесе шутламан, хама пулăшакансене пĕрне те кӳрентермен.

Телей алă çупса тăнă чух
Юрлама, ташлама пит аван.
Пурнăç çулĕ чăнах такăр чух
Туссене тав тума эс ан ман.

*Улттăмĕшĕ. Юратнă ĕç ывăнтармасть.* Ĕç вăл маншăн пуçра, шăм-шакра пулса иртекен *вăйă* евĕрлех, паллах, юратса, хавхаланса вăй хунă чухне. Юратман ĕçре савăнăç та, çитĕнӳ

те çук. Хӑй çулне тупнӑ çыншӑн вара пачах урӑхла, ĕç уншӑн кану евĕрлех. Ывӑнмасть вӑл. Ӑсталӑх выляма тытӑнсан вӑхӑт чупнине те туймасть. Çынна ытларах хӑйне килĕшмен е начар йĕркеленĕ ĕç ывӑнтарать. Пултаруллӑ çын темле ĕçре те мĕн те пулин çĕнни тупатех, ĕçе çӑмӑллатмалли мелсем шырать.

*Çиччĕмĕшĕ. Парӑнса ĕçлемесĕр çитĕнӳ пулмасть.* Тĕнчипе паллӑ музыкантшӑн ӑсталӑхра нимле вӑрттӑнлӑх та çук темелле. Апла пулин те вӑл кашни кунах ĕçне ача чухнехи пекех гаммӑсемпе этюдсенчен пуçлать. Пиншер хут тунӑ ĕçех юратса, парӑнса тӑвать. Ун хыççӑн тин репертуар çине куçать. Е тата Олимп вӑййинче чапа тухнӑ чӑваш спортсменĕсене илер-ха, мĕнле хатĕрленнине курсан тĕлĕнмесĕр пӑхма çук, чӑтӑмлӑхĕ ӑçтан çитет-ши. Валентина Егорова тата пĕчĕкрехскер кӑна, урисем те вӑрӑм мар, пуринчен малта çĕмĕрттерсе пырать.

Каланӑччĕ ĕнтĕ çитĕнӳсем спортра кӑштах манӑн та пулнӑ тесе. Каникул вӑхӑтĕнче ялта пурӑннӑ чухне те ирсерен вӑрман хĕррине çити чупса килеттĕм. Ĕç те тупӑнсах тӑратчĕ. Атте тунӑ нӳхреп кивелчĕ. Çĕнĕрен чавма шутларӑм. Пулӑшас текенсем пулчĕç, анчах чавтармарӑм. Ма тесен çак ĕçре эпĕ тата тепĕр тĕллев те лартнӑччĕ. Пĕчченех чаврӑм, шак та сулахай урапа тапса, самай тарӑн анса кайрӑм, çĕр чӑмӑрне шӑтарса Америка енне тухма та хатĕрччĕ пуль, юрать-ха анне чарчĕ. Çав çул çӳллĕшне сикессипе тата пилĕк сантиметр хушса Канашри педагогика училищин рекордне çĕнетрĕм. Сулахай урана çĕр чавса вӑйлатрӑм. Парӑнса вӑй хумасӑр çитĕнӳ пулмасть.

*Ӳт-пӳ, шӑм-шак хӑйне мĕнлерех туять – ĕçсем те çапларах.* Ман шутпа вӑйлӑ çын пулас тесен вӑйлӑ чухлама тытӑнмалла. Паллах, калаçу кунта тем пысӑкӑш пĕренене йӑтса ывӑтасси çинчен мар, çутçанталӑк панӑ хӑвата упраса *хӑвна вӑйлӑн туясси* пирки пырать. Темшĕн çапла туса янӑ-çке çынна, унӑн ыттисен умĕнче вӑйлӑн курӑнас килет. Çакна кӑтартас тесе теприне кӳрентерме те хатĕр. Вӑйлӑ пулас текеншĕн çул яланах уçӑ. Ма тесен, çын çумĕнче çутçанталӑкри тĕрлĕрен хӑватсемсĕр пуçне тата ӑс-тӑн вӑйĕ пур. Пурте пĕрле чӑмӑртансан ӑнӑçу тӑвасси йывӑрах та мар.

Чӑваш чĕлхинче питĕ асамлӑ пĕлтерĕшлĕ *ыран* сӑмах пур. Ӑна ĕмĕте малалла туртакан вӑй тесен те юрать. «Ыран çав ĕçе тӑвасчĕ-ха, ыран çавӑнта çитсе килесчĕ-ха, ырантан урӑхла пурӑнма тытӑнасчĕ-ха», – тенинче кашнинчех хӑйне евĕрлĕ программа пур. Паян палӑртса хунӑ ыран вара *иртен* пуçланать. Ыйхӑран вӑраннӑ тĕле çĕнĕ кун çитсе те тӑнӑ; унпа мĕнле усӑ курасси хӑвӑнтан килет. Çавна май пĕр-ик сӑмах хатĕрленӳ тапхӑрĕ çинчен калас килет. Çакӑ вӑл – *шӑм-шака вӑратасси.*

Куç уçӑлни вӑранниех мар-ха, шӑмӑ сыппиcене хускатса, тарӑннӑн сывласа юна вылятса ӳт-пӗве вӑй кӗртмелле. Мелсем вара темӗн чухлех: ялти çын ирхи апатченех пӗр çаврӑм ӗçлесе илет; хулара ав стадионра е паркра чупакансене куратпӑр, ӗçе çурран çӳрекенсем те пур; чылайӑшӗ, ман пекех, ирхи гимнастикӑпа çырлахать. Шӑмшакри улшӑнусем кӑмӑла та урӑхлатаççӗ. Çавӑн пек çын вӑл уттинченех паллӑ. Тепӗр чухне физиологие кӑшт улӑштарниех пысӑк пулӑшу парать. Калӑпӑр, макӑракан пӗчӗк ачана кантӑк патне илсе пырса урамалла пӑхтарсанах урӑхла сывлама пуçлать, макӑрма та чарӑнать. Çакӑ мелпех хам та усӑ куратӑп. Питӗ хумхануллӑ самантра куççуль капланса килсен тӳрех çӳлелле пӑхатӑп та хама лӑплантаратӑп. Çакӑ вӑл куç нервисем тӑрӑх пыракан информаци улшӑннине пула çапла.

Халӗ вара кӑштах çын питӗнче пулса иртекен улшӑнусем пирки сӑмахӑм. Яланах йӳççе, тарӑхса çӳрекен çын питне курсан хӗрхенес килет, чи малтан – кулма маннӑран. Çакӑ вӑл хӑйне хӑй пусмӑрласа пурӑннипе шаях. Кулнӑ чухне пачах урӑхла: сӑн та улшӑнать, чӗре таппи те вӑйланать, юн кислородпа пуянланса пуçа лайӑхрах ӗçлеттерет.

Кӗскен каласан, çын мӗнле «маска» тӑхӑнса çӳрет, кӑмӑлӗ те çавна май. Çынсем çине мӗнле пӑхни, калаçнӑ чух сасса мӗнле тытса пыни, шухӑша палӑртнӑ май алӑпа мӗнлерех сулкалашни кашнин хӑйне май пулса пырать. Ахальтен мар ӗнтӗ паллӑ çынсен йӑлисене килӗштерсе йышӑнсан хамӑра урӑхларах туйма пуçлатпӑр, улшӑнса пыратпӑр.

«Пирӗн кӗлеткесем – пирӗн пахчасем... Пирӗн ӗмӗтсем – пахчаçӑсем», – тенӗччӗ тахçанах Шекспир. Пӗтӗмпех хамӑртан килет, çав шутрах вӑйлӑ пуласси те. Ӳтпе чун – пире çӗкленме пулӑшакан çунатсем. Енчен те пӗри вӑйсӑртарах ӗçлесен теприне йывӑр килет. Çавна шута илсех ӗнтӗ çын сывлӑхӗ пирки тӗплӗнрех чарӑнса тӑрас тетӗп.

Çын чирлемесӗр пурӑнма пултарать-и? Пултарать. Хӑй йывӑрӑшне каччӑ чухнехи пекех тытса пыма пултарать-и? Пултарать. Усал çимӗç хыпса çӑтасран сыхланма пултарать-и? Пултарать. Тата ытти те, ытти те...

*Çын чунӗ сывлӑшпа кӗрет те сывлӑшпах тухса каять.* Çапла вара çын ӗмӗр тӑршшӗпех пӗр чарӑнмасӑр сывласа пурӑнать. Çакӑ вӑл юн çаврӑнӑшне йӗркелесе пырать, кислородпа пӗрле ытти кирлӗ япаласене клеткӑсем патне çитерсе лимфа текен тӗссӗр шӗвеке парать. Шӑпах çавӑ хупласа тӑрать те ӗнтӗ клеткӑсене. Апла пулсан çав шӗвекӗн юнран та нумайрах пулмалла. Çын сакӑрвунӑ процента яхӑн шывран тӑрать тенӗ

чухне шăпах лимфăна шута илеççĕ. Тĕссĕр пулсан та ахаль шыв мар ĕнтĕ вăл. Юна чарăнмасăр ĕçлекен чĕре хăваласа тăрать пулсан, лимфăн ун пек ятарлă насусĕ çук. Тарăннăн сывланипе ӳтри хусканусем чи малтан лимфăна кирлĕ иккен. Сывлăхшăн чи усăлли вара ӳпке калăпăшне пĕтĕмпех усă курса сывлама пĕлни. Ӳпке айĕнче кăкăра пӳлсе тăракан çӳхе çурхах пур, ăна диафрагма теççĕ. Юрăççемпе драма артисчĕсем, ăста лекторсем ĕçленĕ чухне туллин сывласа илеççĕ те ӳпкен аялти пайĕпе диафрагмăна лекме тăрăшаççĕ. Çапла сывлани лимфăшăн лайăх, ăна клеткăри сиенлĕ япаласене хăвăртрах хĕссе кăларма пулăшать. Професси тĕлĕшĕнчен илсен вара тарăн сывлани сасса янăравлă тăвать, ывăнтармасть. Çак вăрттăнлăха эпĕ юрлама вĕреннĕ чухне алла илтĕм. Халĕ ĕнтĕ пĕр вĕçрен ултшар сехет лекци вуласан та сасă ывăнмасть.

Чи кирли, паллах, кислород. Вăл çителĕксĕрри клеткăсене хавшатать. Çичĕ çулхи ачасем пĕчĕк пӳлĕмре вăтăршарăн ларнине курсан чĕрем ыратма тытăнать. Çамрăк ăрăва начарлатакан айăплă вырăн вăл – *шкул*. Хускану сахалли хавшатать.

Юлашки вăхăтра мĕнле сывламалли çинчен çырнă кĕнекесем тухсах тăраççĕ. Вулăр вĕсене. Чупма, шыва кĕме ан ӳркенĕр. Аэробика та питĕ усăллă. Çавăнпа та ĕнтĕ таса сывлăшшăн кĕрешни хамăр сывлăхшăн тăрăшниех. Шыв пирки те çакнах каламалла.

Çын шывсăр пурăнайманнине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Анчах мĕн чухлĕ кирлĕ-ха вăл? Сăлтавсем тĕрлĕрен. Шăрăх çанталăкра ытларах. Сĕтел хушшинче çырса лараканпа тарличчен вăй хурса ĕçлекенĕн уйрăмлăх пурах ĕнтĕ. Тăварлă апат та шыв ытларах ыйтать. Шыв нумай ĕçсе ăшри юрăхсăр япаласене çуса кăларатпăр текенсем те пур. Шухăшĕ япăх мар-ха, анчах юлашки вăхăтра шыв пахалăхĕ самаях шиклентерет. Мĕн кăна çук пуль унта?

Каланăччĕ ĕнтĕ, пач юрăхсăр та сиенлĕ япала çук. Ĕçмелли шыва питĕ тарăн çырмари çăлран ăсса икĕ витрепе сăртран хăпарасси, паллах, çăмăл мар. Ватă çынсем туя çине тайăнса утатчĕç, тарăхатчĕç те. Анчах шыв пахалăхĕ пирки вара иккĕленме кирлĕ пулман. Таса шывпа ӳснĕ эпир. Шел пулин те, хулана куçсан ун пек шыва ĕçсе кураймастпăр. Чылайăшĕ пăрăхпа килекен шыва тасатакан приборсемпе усă кураççĕ, çăл шывĕ ăса-ăса килеççĕ. Эпир вара кранран юхакан шыва пилĕк литр кĕрекен кĕленче савăта ярса лартатпăр. Тĕпĕнче ĕлĕкхи кĕмĕл укçасем выртаççĕ. Апат хатĕрленĕ чухне çав шывпа усă куратпăр. Вĕретмен шыва ĕçместпĕр.

Çĕнĕ кун маншăн шывран пуçланать. Тăнă-тăманах балкон алăкне уçса пăрахатăп та кухньăна васкатăп, пĕр стакан шыва

çур кашăк пыл ярса ирĕлтеретĕп те ĕçетĕп. Ун хыççăн тин физзарядкăна тăратăп...

Паллă диетологсен шучĕпе пирĕн ӳтре шыв сахал чухне юн çăралма тытăнать, клеткăри юрăхсăр япаласене каялла кăларасси те йывăрланать, хамăр ăшри япаласемех хамăра сиен кӳме пуçлаççĕ. Çавăнпа та тухтăрсем шывлăрах апатпа усă курма сĕнеççĕ. Чи вырăнли, паллах, пахча-çимĕç: купăста, кишĕр, хăяр, кăшман, çĕрулми, панулми, груша, салат... Яшка та питĕ усăллă. Маншăн вара яшка çимесен апат çинĕ пек те мар. Ахальтен вун çичĕ (!) тĕрлĕ яшка пĕçерместпĕр пуль ĕнтĕ.

Сăмах май тата çакна калас килет. Маншăн чи пысăк хисепе тивĕç выльхсенчен пĕри вăл, паллах, лаша. Курăк çисех мĕнле тĕреклĕ те вăйлă ӳсет. Кăмăлĕ те ырă, пăхма та илемлĕ. Слон та ӳсентăранпах пурăнать. Апла пулсан, пахча-çимĕçре сывлăха юрăхлă япаласем çителĕклех.

Çын мĕн кăна çимест пулĕ? Ун пекки урăх нимĕнле чĕрчун та çук. Аса илер-ха, пĕр-пĕр уявра, банкетра темиçе сехет хушши хырăма тултарнă хыççăн унчченхи пек канлĕ çывăрайманнине. Çакă вăл пирĕн сывлăха вăйлатрĕ-ши? Çук пуль çав. Апатăн йĕрки пур, *мĕнпе мĕн çимеллине те пĕлмелле*. Хырăмăн куçĕ те çук, ăсĕ те çук. Унăн пĕтĕм пултарулăхĕ те çынна хăй тарçи туса хурасси кăна. Наука пĕлĕвĕ кăштах кунта та кирлĕ иккен. Калăпăр, чылайăшĕ какайпа пĕрле ăшаланă çĕрулми хурса панине килĕштерет, çапла çиме юраманнине пĕлмест. Сăлтавĕ вара çапларах. Какайра протеин нумай, ăна шăранма пулăшаканни кислота; çĕрулмири крахмал валли вара сĕлтĕ (щёлочь) йышши шĕвек кирлĕ. Çак çимĕçсене пĕр вăхăтрах çисен кислотапа сĕлтĕ пĕрне-пĕри чăрмантарма тытăнаççĕ. Хырăмри хирĕçӳ çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ, тепĕр чух чирлеттерсе те ярать. Çакăн пек хирĕçӳ чăкăтпа çăкăр, пулăпа рис хушшинче те пур. Çĕрулми е рис вырăнне купăста, кăшман, кишĕр, хăяр хурсан сывлăхшăн чылай усăллăрах. Çĕрулми вара уйрăм апат пулĕ, калăпăр, каçпала. Ун чухне какай çимесен те юрать.

Нумай çул хушши сывлăхлă пурăнас тесен *сахалрах çиме тăрăшмалла*. Ытлашши апатăн усси çук, ӳтшĕн те сиенлĕ, час ватăлтарать. Халĕ ĕнтĕ хамăн чи пысăк вăрттăнлăха уçса парам: эпĕ апат нумай çиместĕп. Нимĕнле çимĕçе те тиркеместĕп, анчах тутлă тесе хырăма сармастăп. Апатăн усси ун шутĕнче мар, таса, тирпейлĕ хатĕрлесе вăхăтра çининче.

*Улма-çырлана та çиме пĕлмелле*. Çак çимĕç вăл пур енчен те питĕ меллĕскер. Чи пахи – унта фруктоза пурри. Вăл вара

питĕ хăвăрт глюкозăна куçать. Пирĕн пуç мимине лайăх ĕçлеттерекенни шăпах çавă пулать те ĕнтĕ. Кунта та ĕçе тӳнтерле туса пыратпăр. Улма-çырлана выçăлла çимелле! Хырăма какайпа, ветчинапа, пулăпа тултарнă хыççăн панулми çинин усси çукпа пĕрех.

Пĕчĕк пахчара ӳстернĕ улма-çырлана сутса пысăк укçа тăваяс çук. Укçаран та хакли – сывлăх. Хĕллехи вăхăтра апат умĕн пĕрер стакан груша е панулми сĕткенĕ ĕçекенсене вара ăмсанмалли кăна юлать. Улма-çырла çини вăл чĕрешĕн те усăллă, юна та лайăх вылятать.

Каллех халăх хушшинче çирĕпленнĕ йăлана хирĕçле шухăш: *сынна вăй параканни протеинпа (белокпа) пуян апат тенине пĕр майлă çеç ăнланмалла мар.* Ытлашши япалан кунта та усси çук. Белоксем те виçеллĕ пулмалла.

Тин çеç çуралнă ачан пĕтĕм апачĕ те амăш сĕчĕ кăна. Çур çула çити çавăнпах пурăнма пултарать. Тен, унта протеин питĕ нумай? Çук, пурĕ те 2,38% кăна. Каярах унтан та сахалрах. Апла-тăк çынна протеин нумай кирлĕ тени ăçтан тухса кайнă-ха? Аш-какай, сĕт-çу сутакансенчен мар-ши?

Тĕрĕссипе каласан пирĕн организм малтан пахча-çимĕçрен илнĕ глюкозăна усă курать, ун хыççăн крахмалпа çусене, юлашкинчен чи йывăррине – протеина. Çапла вара какая пит нумай çимесен те юрать. Яшка çинĕ чухне те какайĕнчен пахи – шӳрпи. Нимĕçсем ав яшкари какая çимеççĕ те.

Сĕт пирки те каламалли пур. Ĕне е качака сĕчĕ пире валли маррине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Ют чĕрчун сĕчĕ вĕт-ха вăл. Çавăнпа та пĕчĕк ачасен тепĕр чухне аллерги текенни те пулать. Ĕне сĕтне çынсем ытларах кальци тăварĕ кирлĕрен ĕçеççĕ. Енчен те çак элемент çителĕклĕ чухне сĕтлĕ апата çиесех те килмест. Эпĕ хам сырпа тăпăрча та сайра-хутра кăна çиетĕп. Пицца текеннине вара пачах та килĕштерместĕп. Мана валли кальци пахчаçимĕçре те, мăйăрсенче те темĕн чухлех. Сĕтре казеин пурри те кăштах шиклентерет.

Сĕтпе какая пачах çимесен те юрать тесшĕн мар эпĕ. Пур çĕрти пекех апатра та виçе пулмалла. Темшĕн-çке çакна сĕтел хушшине ларсанах манатпăр, алла черкке тытсан – пушшех. Апатне лайăх çисен эрех ӳсĕртмест тесе хăвалатпăр та хăвалатпăр. Кайран вара çывăрма выртсан та канăç çук, пуç та, хырăм та ыратать, ыйхи те япăх, тĕлĕкĕ те усалскер кăна.

Урăх чуна вĕлерсе çинипе, пĕчĕкçĕ пăрăва пăрса ярса амăшĕн сĕтне хăвна валли суса илнипе мухтанма кирлех мар. Хам та айăплă. Выльăх пуснă чухне алă та чĕтретчĕ, куççуль те капланса килетчĕ, чăтса ирттереттĕмччĕ. Çылăха кĕнĕ ĕнтĕ. Пифагорăн,

Сократăн, Платонăн, Аристотелĕн, Леонардо да Винчин, Исаак Ньютонăн, Вольтерăн, Бернард Шоун, Бенджамин Франклинăн, Томас Эдисонăн, Альберт Щвейцерĕн, Махатма Гандин ун пек çылăх пулман. Ма тесен вĕсем пурте вегетарианецсем пулнă. Начар ушкăн теме чĕлхем çаврăнмасть. Чылайăшĕ ватăличченех пурăнса ирттернĕ. Апачĕшĕн мар, сывлăхшăн çимеллине те пĕлнĕ вĕсем.

Чылай чухне эпир хырăм ыйтнăран мар, куç выçăран çиетпĕр. Чечеклесе илемлетнĕ торта курсан е шоколад чĕркенĕ йăлтăркка хут чăштăртатнине илтсен чăтăмлăрах пул, кăшт тутанса пăхнипе çырлахнинчен пахи çук. Çынна илĕртекен çимĕçсем вĕсем темĕн чухлех, анчах лавкаçă та, ресторан хуçи те сан сывлăху çинчен мар, кĕсйине кĕрекен тупăш пирки шутлать. Мĕнле çимĕç тата мĕн чухлĕ çимеллине хăвăн пĕлмелле.

**Умри тĕллеве курса тăни ĕçе ăнăçлă вĕçлеме пулăшать.** Çынра темĕн тĕрлĕ вăй та чăмăртаннă терĕмĕр. Унпа усă курса мĕнлерех пурăнасси пĕтĕмпех хăйĕнчен килет. Хăй пурнăçне улăштарма пултаракан чĕрчун çынсăр пуçне урăх çук. Хăнтăр та, чĕкеç те ĕçлет, анчах яланах пĕр пек, çын апла мар, мĕн те пулин çĕнни тупма тăрăшатех. Чылайăшĕ çĕнĕлĕхе пулас япалан сăнарĕнчех, моделĕнчех асăрхать те ĕç мелне те урăхлатать. Тепĕр чух çынна ахалех кахал тесе кӳрентеретпĕр. Пач кахал çын çук. Пĕчĕк тĕллевсемпе пурăннăран кăна çавăн пек курăнать вăл. Хăйне хавхалантаракан *тĕллев* тупăнмасан йăлана кĕнĕ кивĕ йĕркепех çырлахать. Ун пек чух çын хăй мĕн тума пултарнине те пĕлмест.

Пултарулăхĕ, вăйĕ мĕнле çиçсе тăнине курас тесен çĕнĕ пӳрт лартакан çине пăхса илĕр. Мĕнле хавхалануллă канăçсăрлăхпа пурăнать вăл çав тапхăрта! Пӳрт лартасси купăста йăранĕ тăвасси мар вĕт, пайтах вăй хумалла, пуçа та вирлĕ ĕçлеттермелле. Тĕллевĕ пысăкран çапла ĕнтĕ.

Тепĕр чухне тата тĕллев вылявлă пулни те чăрмантарать. Паян капла – ыран урăхла, кун пек ăнăçу пулмасть. Темĕн те тума хăтланакан çын вăл ним те юратмасть, çитĕнӳ те тăваймасть.

Ума лартнă тĕллеве çирĕпленсе пыма пулăшакан вăй та пур. Çакă вăл тунă ĕç ăнăçлă вĕçленнĕ хыççăн хăв мĕнле шая çĕкленессине туйни. Ку çеç те мар-ха, çынсем хăв çине мĕнлерех пăхма пултарнине ăнкартни те пысăк хавхалану парать, çитĕнĕве çывхартма пулăшать.

Олимпиада чемпионки Валентина Егорова çапла каласа панăччĕ: «42 çухрăм та 195 метра чупса тухиччен шухăш таçта

та çитсе çапăнать, ачалăх та аса килет, килтисем, юлташсем ăсатса яни те куç умĕнчех, кайран хама мĕнле кĕтсе илĕç-ши тени те пуçрах; чăваш ятне ӳкерес марччĕ тесе пĕтĕм вăя хурса малалла ыткăнатăп».Е илер-ха Мускаври сумлă наука центрĕнче диссертаци хӳтĕлесе Шупашкара таврăнакан чăваша. Мĕнле туйăмпа килсе кĕни пирки калаçмăпăр, вăл паллă. Çитĕнӳ, çĕнтерӳ тунă çыннăн кăмăлĕ япăх пулас çук. Хамран илсех калатăп ĕнтĕ. Пĕрремĕш кунах тĕпчев ĕçĕнче пулăшнă çынсем патне кĕрсе тав сăмахĕ каларăм, парнесем те патăм. Эпĕ çитнĕ çĕре пĕрле ĕçлекенсем ятарласа хаçат кăларнă. Вĕсене те тав турăм, сĕтел йĕркелесе хăналарăм, малтанах шухăшласа хунине пурнăçларăм. Çапла вара тĕп тĕллеве пурнăçлас енĕпе ĕçленĕ хушăрах шухăш тата малалла вăркăнать, ĕмĕте, ытти тĕллеве çул парать.

Ĕмĕтленме яланах аван, шухăш та, кăмăл та çĕкленӳллĕн туять. Анчах тĕллеве аса илсенех куç умне тӳрех ĕçĕ тухса тăрать. Çавă хăратать те ĕнтĕ чылайăшне. Тен, çакна пулах пурнăçне çĕнĕлĕхсем кĕртесшĕн мар, мĕнле пурăннă çаплипех ĕмĕрне ирттереççĕ, çимелĕх тата кăшт тумланмалăх ĕçлесе илнипех çырлахаççĕ. Çук, хăв пурăнакан вырăна, ĕçпе пурнăç йĕркине улшăнусем кĕртмесĕр çитĕнӳ çулĕ çине тухма çук. Çакна çын мĕн чухлĕ иртерех туйса илет, çавăн чухлĕ лайăхрах.

Ман хĕрĕм музыка училищинче вĕреннĕ чухне яланах пилĕк сехетре тăратчĕ те улттăра тухса каятчĕ. Çакăн пек кун йĕркине тăватă çул тытса пычĕ, консерваторие вара пуринчен лайăхрах паллăсемпе кĕчĕ. Сăмах май каласан, хам ачалăха аса илни те вырăнлă пуль тетĕп. Пиллĕкмĕш, улттăмĕш классенче чухнех тантăшсем выляма илĕртесрен, хапха питĕрмесĕр урок тума лармастăмччĕ. Пыра-пыра шаккатчĕç те лăпланатчĕç. Пĕр пĕчĕк чăтăмлă утăм кăна темелле, анчах усси пулнах çав. Лайăхрах вĕренес тĕллев çапла хушнă ĕнтĕ.

**Чи малтан сăмах пулнă теççĕ.** Чăнах та, сăмах вăл вăйлă наркотик пекех, кĕске вăхăтрах ăс-тăна, кăмăла улăштарма пултарать. Паллах, çын сăмахĕ пуçа çеç мар, чĕрене те хускатать. Енчен те çын хăй шухăшне уçăмлăн пĕлтерейместь пулсан, сăмах вăйĕ ниме те тăмасть. Калаçма пĕлекенĕн çулĕ çăмăлрах уçăлать. Çак ăсталăха хăйне майлă капитал тесен те юрать, уйрăмах политиксемшĕн. Çынсене хăвна май çавăрасси витĕмлĕ сăмахсăр пулмасть. Питĕ шел, йышлă халăх умĕнче витĕмлĕ калаçма пĕлекен чăвашсен йышĕ çав тери пĕчĕк. Çыркалама хăнăхнисем те хутсăр калаçаймаççĕ. Çакна пулах хăйне депутата е хула пуçлăхне тăратассинчен пăрăнаççĕ. Чăвашлăх пирки кăшкăрашса çӳрекенсене те çавнах каласшăн. Конгресс е Юхма

çемйи шайĕпе ĕçленипе чăвашлăха çӳллĕ шая çĕклеес çук. Влаç тытăмĕнче ытларах чăваш чунлă çынсем ĕçлемесен наци интересĕсене хӳтĕлеме çав тери йывăррине куртăмăр ĕнтĕ. Хамăрах айăплă, халăха усăллă ĕçе кӳлĕнме хăратпăр. Калаçма пĕлменни те чăрмав кӳрет.

Çын вăл халлĕхе хăй камне те лайăххăн пĕлсе çитейменха. Тĕрĕссипе каласан, эпир пурте «ыйткалакансем» кăна. Мĕн пĕчĕкрен хăнăхса çитнĕрен çакна асăрхамастпăр та. Шутласа пăхăр-ха эсир, мĕн кăна ыйтмаççĕ пулĕ çынсем пĕр-пĕринчен, вылямалли япаларан пуçласа миллиард тенкĕлĕх кредит таранах. Апла эппин ыйтма та пĕлмелле.

Ку енĕпе хама ăста çын теме пултараймастăп, килтисем вара манран та айванрах. Çакна ачамсене вĕрентеймерĕм. Уйрăмах кĕçĕн хĕрĕме хĕрхенес килет, ăсĕ те, пĕлĕвĕ те пур, анчах ыйтма пачах та пĕлмест тесен те юрать. Пурнăçĕнчи тĕп чăрмавсенчен пĕри шăпах çавă пуласснăн туйăнать.

Çак калаçăва мĕншĕн пуçларăм-ха? Çамрăксен çитĕнĕвĕсем пирĕннинчен пысăкрах пулччăр тесе. Эпир утса тухнă çула вĕсемшĕн тĕслĕх теме май та çук. Тĕрĕссипе каласан, пире валли пурнăç вăрттăнлăхне, çынсем хушшинчи çыхăнусен пуянлăхне уçса паракан уроксем те, кĕнекесем те пулман. КПСС историне вĕрентсе чуна илетчĕç, этикăпа эстетика вара программăра пачах та çукчĕ. Пулăшу ыйтасси те пĕр енлĕ кăна майлашăнса пынă, влаç тытăмĕнчи çынсене тархасланă. Шухăшласа пăхăр-ха, çĕрсĕр, лашасăр, урапасăр, сӳсменсĕр хресчен мĕнле пулăшу пама пултарĕ-ха?! Пĕтĕм пурлăха патшалăх тытса тăнă. Юрать-ха, самана кăштах урăхланчĕ, укçаллă, лашаллă, тракторлă, машинăллă çынсем те йышланса пыраççĕ, пулăшма пултаракансем те тупăнĕç. Урăхла каласан, çĕнĕлле хутшăнусен тапхăрĕ пуçланчĕ. Чылай ыйтусене влаçри чиновниксене тархасламасăрах татса пама пулать. Ыйтма кăна ан именĕр, паллах, майне пĕлсе.

Чи малтан мĕн тата мĕн чухлĕ кирлине хăвăн лайăх пĕлмелле. Ыйтăва *тĕрĕс, конкретлă* лартмалла. «Эпĕ хамăр ялта çăм арманĕ лартас тетĕп-ха, кивçен укçа параймăр-ши?» – тенипе сан ума укçа тухса выртас çук. Эпĕ вара урăхларах каланă пулăттăм: «Çак çăм арманне çичĕ ялтан та çӳреме пултараççĕ. Кĕркуннеччен ĕçе ярсан тăкакне те хăвăрт саплаштарма пулать. Çур çуллăха аллă пин кирлĕ. Процентчĕ пирки те халех калаçса татăлăпăр».

Çакă икĕ калаçура уйрăмлăх пурах ĕнтĕ. Уçăмлă лартнă ыйтăвăн пуласлăхĕ, паллах, ăнăçлăрах. Ма тесен пулас арман хуçи вырăнне те (таврара урăх çук иккен), вăхăтне те (кĕркунне тĕлне) тĕрĕс суйласа илнĕ. Шанчăк пурри те сисĕнет.

Пулăшу ыйтма *кам патне* каймаллине те пĕлмелле. Укçа

кирлĕ чухне, паллах, укçаллă çын патне, хăв шухăшна тĕрĕслесе пăхас тесен – ăслă çын патне. Пĕр сăмахпа каласан, пулăшма пултаракан çынна тупмалла. Калăпăр, хăй те çĕнĕ ĕçе пуçăннă çын патне укçа ыйтма каймалла мар ĕнтĕ. Теприн тата укçи те пур, анчах çынна пулăшас йăла çук. Çакна та шута илмелле.

Малашнехи çыхăнусем *иксĕршĕн те усăллă* пулассине систерсен çын кăмăлĕ тата хăвăртрах уçăлать, пулăшу илесси те çăмăлланать.

Пуçарнă ĕç ăнăçлă вĕçленессине чи малтан хăвăн ĕненмелле. Пулăшăва та *çирĕппĕн, хăюллăн* ыйтмалла. Хăв пач çĕнĕ ĕçе тытăннине, вăл ытти çынсене те питĕ кирлине туйăмпа, ăспа кăтартса пама тăрăшмалла.

Пулăшу ыйтасси çăмăл ĕç мар, такăнасси те пулать. Анчах чарăнмалла мар, малаллах утмалла, *хăвна кирлине тупмасăр лăпланмалла мар*. Пĕри памарĕ пулсан теприн патне кай. Хăвна ыттисемпе мĕнлерех тыткаланине тишкерме те ан ман. Çĕр çинче пĕр пек çын çук. Кампа мĕнле калаçмаллине те пĕлмелле. Вăхăтне те тĕрĕс суйласа ил. Сăмахран, ĕнер кăна çывăх тусне пытарнă çын патне пулăшу ыйтма каймалла мар ĕнтĕ.

Калăпăр, тĕллевĕ те паллă, ĕненӳ те, укçи те пур, анчах юлташсемпе (партнерсемпе) *пĕрне-пĕри ăнланса* ĕçлемесен çитĕнӳ пулмасть.

Пурăнса куртăм ĕнтĕ, анчах пĕр япалана ăнланса çитеймерĕм: мĕншĕн-ха çынсем хăй пурнăçне хăйсемех йывăрлатаççĕ? Çине тăрсах тесен те юрать. Ыттисемпе пĕр чĕлхе тупса пĕрне-пĕри пулăшса пырсан темле ыйтăва та татса пама пулать вĕт-ха.

Хирĕçле япаласем пĕр-пĕрин патнелле туртăнаççĕ тесе вĕрентетчĕç пире шкулта. Философире вара çакна пурнăçăн тĕп саккунĕ вырăннех хураççĕ. Питĕ иккĕленӳллĕ шухăш. Çынсем хушшинчи çыхăнăва илсен вара – пачах урăхла. Чун яланах шухăшпа, кăмăлпа хамăр евĕрлĕ çын патнелле туртать. Юлташлăха, туслăха çакă тытса пырать те ĕнтĕ.

Пĕрпеклĕх çук çĕрте ăнлану та сахал, пĕр чĕлхе тупасси те чăрмавлă. Илер-ха Шупашкарта пурăнакан чăвашсемпе вырăссене. Темиçе çĕр çул хушшинче мĕн тĕрлĕ хирĕçӳ сиксе тухман пулĕ. Сăлтавĕ – пысăк уйрăмлăхсем пурри: чĕлхере, культурăра, пурнăç йăлинче, тĕнре, ĕçре, канура... Пытармастăп, ман туссем пурте чăвашсем, пулăшакансем те çавсемех, ыйтасса та чăвашсенчен кăна ыйтатăп. Ма тесен мана вĕсем ыттисенчен лайăхрах ăнланаççĕ, ман ĕçе те тивĕçлипе хаклаççĕ. Маншăн чăвашла калаçса тунă килĕшӳ шанчăклăрах.

**Юрăхлă уçăсăр алăк уçăлмасть**. Аса илер-ха хваттер уççине

манса хăварнă е çухатнă саманта. Нимĕн тума аптраса тăратпăр, алăка уçасчĕ тесе ытти çынсенчен илнĕ уçăсене чике-чике пăхатпăр. Май тухманнине курсан алăка ватса кĕретпĕр. Тепĕр чух çавăн пекки çынпа çын хушшинчи çыхăнура та пулса иртет. Майне пĕлменни, кирлĕ уçă çукки чăрмав кӳрет. Енчен те тĕрĕс уçă тупсан тепĕр çынна шухăшна ĕнентерсе хăв майлă çавăрасси çав тери йывăр ĕçех те мар.

Пирĕн пуçа мĕнле кăна информаци çитмест пулĕ, кашни кунах пинĕ-пинĕпе. Хамăр кăна асăрхамастпăр. Пуç мими вара çывăрмасть, пĕр чарăнмасăр ĕçлет, пĕрисене асра хăварать, теприсене мантарать. Компьютер пекех пуç мими валли те программа кирлĕ. Çавна улшăну, çĕнетӳ программи теме пулать, пурнăç модельне, ума лартнă тĕллеве пăхăнса ĕçлекенскер. Икĕ çын ĕç пирки калаçнă чухне икĕ тĕрлĕ программа тĕл пулать. Теприн пуçĕнчи улшăну программине чухламасăр ун чĕри патне уçă тупма хĕн. Ĕçре çеç мар, юратура та çаплах. Кунта *çын ăçталла туртăннине* пĕлни питĕ усăллă. Ун пек чух мĕн кирлине ыйтма именсе тăмалла мар. Уйрăм çурт лартма çĕр лаптăкĕ е ют çĕршывра кăларнă çăмăл машина, Атăл тăрăх ярăнса çӳремелли катер е пысăк шалуллă ĕç вырăнĕ кирлĕ – çаксем пурте малашлăх туртăмне уçса параççĕ. Ун пек çыннăн утăмĕ хăюллă. Тепĕр йышши вара пурнăçне пысăк улшăну кĕртесшĕн мар. Ăна лăпкăлăх кирлĕ. Ун утăмĕ шикленӳллĕ. Малалла туртма пикенсен те сăлтав тупса унччен вырăнах йышăнать. Çапла вара пĕрисем мĕн те пулин тăвасчĕ тесе малалла туртăнаççĕ, теприсем – мĕн те пулин сиенли ан сиксе тухтăр тесе хыçалалла пăха-пăха илеççĕ.

Тепĕр йышши улшăну программи вăл ĕçри *çитĕнĕве хак парассипе* явăçса тăрать. Пĕри ыттисем, уйрăмах ертӳçĕ ырланине килĕштерет. Вăл вара тата хавхаланса ĕçлеме тытăнать. Тепри хăй лайăх ĕçленине хăй те аван туять, ыттисем мухтамасăрах пĕлет. Тепĕр чухне тата лайăх тунă ĕçех ыттисем асăрхаманни те пулать. Шыв сыпнă пек шăп çӳреççĕ, ырă хак пама хăяймаççĕ. Ун пек чух ĕçне тăваканĕ ытларах хăй шухăшне ĕненет. Çакна ăшри хак тейĕпĕр. Тĕслĕхрен, пĕр-пĕр çыравçă пач кĕтмен çĕртен питĕ паха хайлав çырса пичетлесе кăларать. Вулакансем ырлаççĕ, савăнаççĕ. Ытти çыравçăсем вара хăйсене литературăра нимĕн те пулса иртмен пек тыткалаççĕ. Ырласа калаçсанах хăйĕнчен иртсе кайнине йышăннă пек туйăнать-çке. Астăвăр, мала ӳкме хăнăхнă вăйлă çын хăй ĕçне ыттисем мĕнле хакланипе пĕрлех хăй ăшĕнче çуралнă хака та манмасть, тен, ăна маларах та хурать. Ĕçĕнче те, ăна хак панă чухне те ытларах хăйне шанать.

Уҫӑ вырӑнне усӑ курмалли тепӗр программа вӑл ҫын *камшӑн ытларах тӑрӑшнине* пӗлесси. Теприсем, ав, шак та хӑйсемшӗн кӑна тӑрӑшаҫҫӗ, укҫа-тенкӗне, пурлӑха хӑй еннелле кӑна туртаҫҫӗ, ҫынпа паллашнӑ чухне те унпа хӑйшӗн мӗнле усӑ курас шухӑш мала ӳкет. Эгоистла ҫыннӑн пурнӑҫ философийӗ ҫапларах: пурте мана валли, пурте маншӑн.

Теприсем вара ытларах ыттисемшӗн тӑрӑшаҫҫӗ, тепӗр чух хӑй ӗҫне кая хӑварсах. Ун пек ҫынсен шӑпи, паллах, йывӑртарах. Илер-ха чӑвашлӑха вӑйлатассишӗн ҫунса ҫӳрекенсене. Килтисем те мӑкӑртатаҫҫӗ пуль, влаҫ тытӑмӗнчисем те пит кӑмӑллах мар.

Паллах, шак та пӗр майлӑ ҫын ҫук. Эгоист пирки те процентпа илсе кӑна калатпӑр. Ӑна та пач япӑх ҫын темелле мар. Меллӗ уҫӑ тупсан унпа та ӗҫ тума пулать. Парӑнманлӑх туйӑмӗ вӑйлӑран ун пек ҫын чылай йывӑр ыйтусене те татса пама пултарать. Ӑслӑ ертӳҫӗ ӑна хӑйне ҫывӑхрах тытма тӑрӑшать, укҫине те хӗрхенмест.

Суту-илӳре, транспортра, вӗрентӳ е тухтӑр ӗҫӗнче эгоистсем сиен кӑна кӳреҫҫӗ. Ҫынна хисеплеме пӗлмесен бизнес ӗҫӗ те кал-кал каймасть. Чи кирли ӗҫлекенсен шанӑҫне тӳрре кӑларасси. Пуҫлӑх тӑрӑшнине курсан ыттисен кӑмӑлӗ те улшӑнать.

Ҫынсем пурте пӗр пек ӗҫлемеҫҫӗ, кашнин хӑйне юрӑхлӑ ӗҫ мелӗ, ӑслайӗ. Пӗри, ав, пӗччен тумалли ӗҫе килӗштерет, ыттисем пӑхкаласа тӑнине юратмасть. Тепри хӑйне ушкӑнра лайӑх туять, калаҫма, шӳтлеме килӗштерет. Енчен те ертӳҫӗ асӑрхаманнине пула ушкӑнпа ӗҫленӗ ҫӗре пӗчченлӗхе, ирӗклӗхе юратакан ҫын лексен, ыттисемшӗн канӑҫ пӗтет, хирӗҫӳ те сиксе тухӗ. Ун пек ҫынна уйрӑм ӗҫ памалла, унӑн пултарулӑхӗпе анлӑрах усӑ курма пӗлмелле, ирӗк пама хӑрамалла мар. Вӑл ӗҫне те хӑех йӗркелеме пултарать, пахалӑхне те хӑех тӗрӗслет. Ҫынсене тӗрӗс лартса тухасси вӑл ертӳҫӗшӗн чи кӑткӑс ӗҫ тесен те юрать. Тепӗр чухне ҫӗнӗ ертӳҫӗ килет те ҫав ҫынсемпех самай пысӑк ҫитӗнӳсем тума пуҫлать.

Ҫапла вара улшӑнусӑр ҫитӗнӳ пулмасть. Ҫитӗнӳ вӑл ӗҫӗн юлашки пайӗ, курӑмлӑ пӑнчи. Ун хыҫҫӑн пачах урӑхла япаласем пуҫланаҫҫӗ: савӑнӑҫ, чыс, чап, сумлӑ ят... Ҫитӗнӳ патне илсе пыраканнисем вара маларах асӑннӑ сӗнӳсемпе улшӑну программисем пулаҫҫӗ.

Тепӗр япалана та манас марччӗ, улшӑну программи политиксене питӗ кирлӗ. Ҫавӑнпа усӑ курса ӗҫлеҫҫӗ те ӗнтӗ пулас депутатсем, президентсем суйлавҫӑсем хушшинче. Пӗр тӗслӗх кӑна илсе парам. Калаҫу В. С. Шурчановпа Н. В. Федоров пирки.

В. С. Шурчанов программи яланах пӗр майлӑскер, республика пурнӑҫӗнчи ҫитменлӗхсем ҫине тайӑнса тунӑскер. «Япӑх», «начар» сӑмахсем суйлавҫӑсен пуҫӗнче тунсӑх шухӑш ҫуратаҫҫӗ. В. С. Шурчанов тӗрӗс мар калаҫать тесшӗн мар эпӗ, ҫитменлӗхсем чӑнах та нумай. Анчах ун пек программӑра пуласлӑх, хавхалану сахал. Тӗлпулӑва пынисем те тунсӑххӑн саланаҫҫӗ.

Н. В. Федоров программи вара пачах урӑхла – ҫитӗнӳсем ҫине тайӑнса туни сисӗнет, ҫавӑнпа та чылайӑшӗн чӗринче шанчӑк ҫуратать. Ҫын вӑл яланах лайӑххине кӗтет, пурнӑҫӗ ҫӑмӑлах мар чухне те пуласлӑха шанать.

Пуҫра ҫуралнӑ улшӑну программи чи малтан хӑй хуҫине урӑхлатать, ун ӗненӗвӗ пулса ыттисем патне ҫитет.

**Ӗҫри чӑрмавсене ҫӗнтерме пулатех.** Тӳрех каламалла, хӑвна тепӗр ҫын хирӗҫ тӑнинчен пысӑк чӑрмав урӑх ҫук. Унпа танлаштарсан тем пек ҫирӗп чула ватасси те, тем хулӑнӑш тимӗре шӑтарасси те нимех те мар. Чӑрмав кӳрекенсем те, ҫӑмӑллӑх паракансем те ҫынсем хӑйсемех. Пӗр-пӗрин хушшинчи хутшӑнусенче ҫаврӑнӑҫулӑх ҫукки чӑрмавсен йышне ӳстерни ҫеҫ. Хыттӑн, хаяррӑн калаҫнипе ӗҫ тухмасть. Хӑвна кирлӗ ҫынна пӑрса яни кӑна. Мӗнлерех ҫынпа калаҫнине шута илсе шухӑшна, кӑмӑлна улӑштарма пӗлнинчен лайӑххи ҫук. Чӑрмавсене сирсе ярасси ҫавӑнтан пуҫланать те ӗнтӗ. Хӑй шухӑшне улӑштарма хӑракан ҫынна вара шурлӑх шывӗпе танлаштарсан та юрать. «Эпӗ хам шухӑша нихӑҫан та улӑштармастӑп», – текене хӗрхенӗр; ма тесен, ҫакӑ вӑл пуҫри пӑнтӑх паллине пӗлтерни кӑна. Мухтанмалли кунта пачах та ҫук. Суйласа илмелли ҫул-йӗрсем, уҫӑлма пултаракан алӑксем, пулӑшма хатӗр ҫынсем мӗн чухлӗ нумайрах, ҫавӑн чухлӗ ҫӑмӑллӑх, ӑнӑҫу тесен те ытлашши мар. Пуҫри улшӑну пурнӑҫри улшӑну патне илсе тухатех.

Паллах, пурнӑҫра темле самант та сиксе тухать, тавлашма та тивет, анчах харкашӑва кӗрсе каясран сыхланӑр. Сӑмах ҫине сӑмах сӑнӑ пек вӗҫтерсе пӗрне-пӗри кӳрентернинче ним ырри те ҫук. Сӑмахпа ҫӗнтерни вӑл ӗҫпе ҫӗнтерни мар. Чӗлхене чи малтан ырӑ сӑмах калама туса панӑ. Тавлашура лӑпкӑн калаҫни хӑвна хирӗҫ тӑракан ҫыннӑн *хӗҫ-пӑшалне туртса илнипе танах*. Манӑн хамӑн та усал сӑмахпа ҫын кӑмӑлне хуҫас йӑла ҫук. Киревсӗр сӑмаха пачах та калаймастӑн. Ачаран ҫапла ӳснӗрен-ши? Чӑваш чӗлхи вӑл вӑрҫма меллӗ чӗлхе мар иккен. Асатте вара тарӑхнӑ чухне икӗ вырӑс сӑмахӗпе усӑ куратчӗ: «шельма», «собага» (йытӑ ӗнтӗ). Тавлашнӑ е ятлаҫнӑ чухне фактсене уҫӑмлӑрах кӑтартса калаҫсан путсӗр сӑмах кирлех те мар. Ӑс картинчен тухса кайнӑ тавлашу вӑл сиен кӑна кӳрет, сывлӑха хавшатать, нервсене пӑсать. «Ҫук! Ун пек мар! Тӗрӗс

мар!» – тесе çын сăмахне пӳлме кирлĕ мар. Каласа пĕтертĕр. Унтан тин: «Ман шутпа çапла пек», – тесе калаçма тытăн та хăв сăмахна пĕлтер. Вара хирĕçме шутланă çын та ытлашши хирĕлсе каймасть. Ма тесен, эсĕ каланинче тапăну туртăмĕ çукки сисĕнет. Çакнах урăх майлă та палăртма пулать: «Эсир каланине питĕ тимлĕ итлерĕм. Унта тĕрĕслĕх çук мар, анчах çак ыйтăва татса пама тепĕр мел те пур вĕт-ха». Асăрхăр, малтан эсĕ хăв мĕнле лайăх итленине палăртрăн, унтан – партнерăн шухăшне хисепленине, вара тин чи кирлине каларăн. Кун пек чух тавлашма, хыттăн калаçма юрататакан çын чунĕ те кăштах çемçелет.

Тепĕр вăрттăнлăх та пур. Çынна тĕрĕс çулран пăрса ярас тесе юриех хирĕçтерекенсем те çук мар. Ун пек «провокацилле» çапăçăва кĕрсе каяс мар тесен хăвна тем пек кӳрентернĕ самантра та хĕрсе ан кай, ăслă сăмахра кăна хӳтлĕх шыра. Асту, майне пĕлсен килĕшӳ тупма пулатех. Енчен те эсĕ хăв шухăшна кăна мала хурсан, пулăшакансем тупăнмасан та пултараççĕ. Çаврăнăçулăх пирки манас марччĕ.

**Япала та, шухăш та пĕр пĕлтерĕшпе кăна çырлахмасть.** Вырăнне е вăхăтне кура япалан пахалăхĕ, пĕлтерĕшĕ урăхла курăнма пуçлать. Паллах, çын виçипе пăхсан ĕнтĕ. Тĕнчере мĕн пуррине хак паракансем эпир кăна вĕт. Çава шаккаса ларакан çине ӳкнĕ çумăр тумламĕпе пысăк тухăçлă тырă туса илме ĕмĕтленекен фермер çине ӳкнĕ çумăрăн пĕлтерĕшĕ пĕр пек марри паллă ĕнтĕ. Халăх хушшинче пĕр-пĕр чир алхасса кайни эмел сутаканшăн пĕртте япăх япала мар. Çурма ӳсĕр Раççей йĕркисем эрех туса сутаканшăн савăнăç кăна. Çапла вара пĕр япаланах кашни хăйне май ăнланса йышăнать теме пулать. Япаласене кăна мар, тĕрлĕрен пулăмсене хак панă чухне те çавах. Вĕсен чăн-чăн пĕлтерĕшĕ пирĕн куçа çакланмасан та пултарать. Çитменнине тата халиччен мĕнле курма хăнăхнă, çапла йышăнатпăр. Унчченхи опыт чăрмав кӳрет. Пурнăçра та çавах. Пĕр тĕслĕх кăна илсе парам. Чылай çĕрте килти пахчара çĕрулми туса илес ĕç пачах та улшăнман тесен те юрать. Аллă çул каялла мĕнле пулнă, çаплипех. Пĕрмаях пĕр вырăна лартаççĕ, вăрлăхне улăштарманнисем те чылайăн. Пĕр тĕмрен пĕр витрене яхăн çĕрулми илме пулать тесен пачах та ĕненмеççĕ. Çимелĕх ӳстерсен çитет текенсем те пур. Тĕллевĕ çав тери пĕчĕкренех ĕнтĕ ĕçĕнче нимĕнле тăрăшулăх та çук. Тухăçлă ӳстерсе лайăх тупăш илесси пирки шутламаççĕ те. Çĕрулми пĕлтерĕшне ылмаштарсан, çакă вăл пуçра пулса иртет, ĕç йĕрки те улшăнать, тăрăшни те сисĕнет. Çак çимĕçе сутса укçа тумалли вырăнсем Раççейре темĕн чухлех вĕт-ха!

Шупашкара хут ăшне путнă хула тесен те юрать. Мĕн чухлĕ хаçат-журнал тухса пеместпĕр пулĕ?! Никам та пуçтармасть. Çак хутăн пĕлтерĕшне, хакне урăхла ăнланакан çынна кĕтсе илĕпĕр-ши?

Чăвашсен ĕлĕк-авал вилĕ пытарсан масар çинчен савăнăçлăн юрласа таврăнас йăла та пулнă. Паянхи куçпа пăхсан çакна илемлĕ япала теме çук. Вилĕм пĕлтерĕшне ылмаштарнăран çапла тунă ĕнтĕ вĕсем. Çĕр çинчи нушаран уйрăлса кайнă хыççăн çын чунĕ çӳлти тĕнчене лекет, ырлăхпа пурăнма пуçлать, пире те курсах тăрать тенĕ вĕсем. Апла эппин пĕр-пĕр япалан пĕлтерĕшне ылмаштарса пурнăçа урăхлатасси е курăмлă çитĕнӳ тăвасси ĕлĕкренпех пырать. Паян пушшех вăйлă. Çак мелпе усă курса пăркалаççĕ те ĕнтĕ халăх ăс-тĕнне хăшĕ-пĕрисем. Реклама панă чухне мĕнле калаçнине аса илер-ха. Мĕн тери чаплă эмелсем çук иккен хальхи вăхăтра, вилекен те пулас çук. Паллах, рекламăна ĕненсен. Апла пулин те япалан пĕлтерĕшне урăхлатса калани чылайăшне илĕртсе тыткăнлать, çĕнĕлле утăмсем тутарать. Асăрханулăха мансан улталанма та пулать. МММ вăлтине миçе пин çын çакланмарĕ пуль, хам та вĕсен шутĕнчех. Сăмах кунта Мавроди çулĕ çине тăрасси пирки мар, ун пеккинчен турă сыхлатăр, ултавпа тунă çитĕнӳ ыррипе вĕçленес çук. Тепĕр хут калатăп, кирек мĕнле ĕçре те, йывăрлăхран çĕнсе тухас çĕрте те лайăх вариантсемех темиçе те пур. Шырама кăна ӳркенмелле мар, хамăра мĕнле тытассине те урăхлатмалла. Темшĕн çапла туса янă-çке пире, пĕрмаях ыттисем улшăнасса кĕтетпĕр. Çук, çакна хамăртан пуçламалла.

Каланăччĕ ĕнтĕ, поведени умри тĕллеве пула улшăнса пымалла. Мĕншĕнни те паллă, çĕнĕ ĕçĕн çулĕ те çĕнĕлле, урăхла çыхăну ыйтать. Калăпăр, паян санăн ĕçлĕ тĕлпулăва каймалла, ыйтăва мĕнле татса парасси паллă мар-ха. Кун пек чухне пуç ытларах ĕç мĕнле вĕçленесси пирки шутлать, ыррине кĕтет. Çитĕнӳ тума хăнăхнă çын çак ыйтăва урăхларах курать. Вăл тĕлпулура хăйне мĕнле тытмалли вариантсене палăртса хурать. Вара калаçура йывăрлăхсем сиксе тухсан та çухалсах каймасть, урăх вариантпа усă курса калаçăва хăйне кирлĕ еннелле пăрса яма пултарать.

Халĕ кăштах урăххи пирки. Çынпа çын калаçмасăр кун иртменни паллă ĕнтĕ. Лайăх калаçу хыççăн кăмăл та аван, япăххи – чуна ыраттарать, киле çитсен те пуçран тухмасть. Анчах çак йывăрлăха та пăрса яма пулать. Усал шухăша, йывăр калаçăва киле кĕртмелле мар. Ĕçри йывăрлăхсене те ĕçрех хăварма тăрăшмалла. Çакна туса пыма *хăвпа хăв калаçма пĕлни* пулăшать. Йывăр чух кăмăла улăштарма пулăшакан мелсенчен

пĕри вăл хăвна хăв ятлаçса калани: «Мĕн пуçна усатăн çак, çĕр чăмăрĕ çурăлса чăваш çĕршывне çăтса яни мар вĕт. Унпа танлаштарсан сан йывăрлăху вăл нимех те мар». Йывăрлăха пĕчĕклетсе кăтартни ĕнтĕ. Е тепĕр йышши калаçу. «Сывă юлнишĕн турра шĕкĕр. Ытти вăл нимех те мар», – тени вара аварие лекнĕ çыншăн чи хаклă пулăшу вырăннех. Хăйпе хăй калаçса хавхалану тупни ĕнтĕ. Хăв çумма çакланнă йывăрлăх чулне вĕçертсе ывăтмасан шурлăха туртса антарĕ. Пухса пымалла мар çав чулсене. Сăмах май каласан, тунсăх та кичем самантра унчченхи савăнăçлă саманта тепĕр хут аса илниех кăмăла урăхлатма пулăшать. Ырă самантсем, ĕçри çитĕнӳсем, пурнăçри çĕнтерӳсем вĕсем пурте пуçри «компьютерта», сигналне пама кăна пĕлмелле. Иртнĕ вăхăтри опыта паянхишĕн ĕçлеттермелле. Телейлĕ самантсем те пулнă вĕт-ха пирĕн, хамăр тунă ĕçпе киленни те асра. Апла-тăк çĕнĕ тĕллевсем лартма хăрамалла мар.

**Кăмăл-сипете, этеплĕхе шута илесси.** Çын вăл питĕ кăткăс машина пекех, пур органсем те, пур вăйсем те пĕр-пĕринпе килĕшӳллĕн ĕçлемесен такăнма пуçлать. Ăшра хирĕçӳ хуçаланнă чухне тем пек пысăк çитĕнӳ те савăнăç кӳмест. Калăпăр, çитĕнӳ тăвас тесе сипетрен тухса ултавлă мелпе ĕçлесен чунри канăçлăх пирки ĕмĕтленме те кирлĕ мар. Яланлăхах çухалать вăл. Ун пек туни пуçра çирĕпленсе ларать те хăваласан та тухмасть, вăхăтранвăхăта аса илтерсех тăрать.

Темиçе çул каялла пирĕн ялта çапла пулса иртнĕччĕ. Пĕр ватă çын хăйĕн кил-çуртне пĕрле пурăнакан кĕçĕн ывăлне халаллать. Çакна пĕлсен Шупашкарта пурăнакан аслă ывăлĕ вилес пек выртакан ашшĕ патне больницăна пырать те хăй ячĕпе тунă халал хучĕ çине алă пустарать. Ашшĕне пытарсанах кил хуçи хăй пулни çинчен шăллĕне пĕлтерет. Тĕрĕссипе каласан, ашшĕн çурчĕ хăйне кирлех те пулман-ха, яла килсе пурăнма пачах та шутламасть. Каярах вара çакă паллă пулчĕ: шăллĕне кăларса ярса çав çурта сутас шухăш хуçаланнă иккен ун пуçĕнче.

Шăллĕ кĕçех Канаша куçса каять. Ашшĕ килĕ вара паян та юхăнса ларать. Ун пек тавлашуллă çурта илекен те çук. Ку çеç те мар-ха, леш ултавçăна тăванĕсем те, ял çыннисем те хисеплеме пăрахрĕç. Хулари тусĕсем те пăрăнчĕç. Пĕччен тăрса юлчĕ. Паллах, ĕлĕкрен пыракан чăваш йăлине пăснăран. Кил-çурт яланах кĕçĕннине юлнă. Умри тĕллеве пурнăçлас тесе кăмăл-сипет йĕркине таптамалла мар. Бизнесра та çавах, кам мĕнле ĕçлени часах палăрать, хыпарĕ хăвăрт сарăлать. Хальхи усламçăсене эпĕ Ехрем хуçа çинчен çырнă кĕнекесене вулама сĕннĕ пулăт-

тăм. Тем пек йывăр самантсенче те çынлăха çухатман вăл, Турă умĕнчи тасалăха яланах асра тытса пурăннă.

Çын пурнăçĕ этеплĕх паллисене пăхăнса йĕркеленсе пырать. Ĕлĕкренпех çапла. Çын ĕçне ырă е усал, тĕрĕс е тĕрĕс мар тени шăпах этеплĕх пахалăхĕсемпе усă курса хак пани пулать те ĕнтĕ. Çапла вара кашни çыннăн этеплĕх пахалăхĕсенречĕ, шкали пур. Çакă вăл кашни утăмрах сисĕнет: мĕнлерех тулманнинче те, мĕнле калаçнинче те, укçи-тенкине мĕнле мелсемпе тупнинче те, мĕнлерех хĕрарăмпа пурăннинче те, ачисене пăхса çитĕнтернĕ çĕрте те...

Этеплĕх шкулĕ, паллах, çемьерен пуçланать. Мĕн тума юрать е юрамасть, мĕншĕн ырлаççĕ е вăрçаççĕ, мĕне вĕрентеççĕ е вĕрентмеççĕ – çаксем пурте ашшĕ-амăшĕ пурнăç çине мĕнле пăхнинчен тухса пыраççĕ. Пысăкланса пынăçемĕн ача ытти çемьери йĕркене те асăрхама тытăнать: е юлташĕсем каланине илтет, е хăй курать. Ача килтен тухсанах уншăн урам йĕрки пуçланать. Кунта вара самай урăхла, ыттисем мĕн тăваççĕ – тума тиветех, пуçтахсен сăмахне итлемесен йывăрлăха лекес хрушлăх та пур. Урам вăл – урам, шкулта хунă «кирпĕчсене» те хăвăрт сирпĕнтерсе кăларать. Ачисем табак туртнине, сăра-эрехпе е наркотикпе иртĕхнине курсан хальхи урам шкула çĕнтерчĕ теме те пулать. Усалли хăвăрт çыпçăнать çав, ырри вара – хĕнпе. Ĕçре те çавах, ертӳçĕ этеплĕхĕ ыттисем çине куçатех. Енчен те вăл шавлă уявсем, банкетсем ирттерме юратать пулсан, хутшăнма тиветех. Спорта килĕштерекен ертӳçĕ çумĕнче вара урăхла йĕрке. Сăмахăма витĕмлĕрех çирĕплетме пĕр-ик тĕслĕх илсе парам.

Çĕнĕ Шупашкарта «Вăтам Атăл» ятлă фирма пур. Ун ертӳçи С. И. Шамуков, çамрăк чухне паллă спортсмен пулнăскер, сывлăха упрас йăлана халĕ те çирĕп тытса пырать. Вăл çине тăнипе кунта ветерансен волейбол командине йĕркеленĕ, ăмăртусене те хутшăнаççĕ, малти вырăна та тухаççĕ. Командине вара капитан пулса С. И. Шамуков хăй ертсе пырать. Пуçлăх табак туртманни, эрех ĕçменни ыттисенче те сисĕнет. Ку çеç те мар-ха, фирма волейболпа кăна çырлахмасть, ытти ăмăртусене те укçапа пулăшса пырать.

«Роснефтетрансăн» Чăваш Енри пуçлăхĕн П. В. Семеновăн юратăвĕ вара – ирĕклĕ майпа кĕрешесси. Тĕрĕсрех каласан, çак енĕпе ачасем хушшинче ирттерекен ăмăртусене укçапа пулăшасси. Вăл çине тăнипе кăçал кăна икĕ турнир ирттерчĕç: пĕри – Шупашкарта, тепри – Канаш районĕнче. Тăкакĕ чăнах та пысăк, анчах çĕр çинче укçаран хаклă япаласем те пур, калăпăр, çамрăк ăрăвăн çирĕп сывлăхĕ.

Кусем, паллах, ырă тĕслĕх кăтартакан пуçлăхсем. Çав хушăрах урăххисем те пур вĕт-ха, калăпăр, çемье çинчен манса кайсах çăмăлттай чиперккесемпе ĕçсе-çисе вăхăт ирттерекенсем. Укçаллă арçын иртĕхме пуçлать, хăйне мар, ытларах енчĕкне килĕштернине те чухламасть. Çакă вăл ĕçри йĕркешĕн те питĕ сиенлĕ. Йăпăлтисемпе йăкăлтисем нумайланса кайсан тăрăшса ĕçлекен сăпайлă çыншăн та чăрмавсем сиксе тухаççĕ. Пуçлăх вăл ытларах хăй пекрех çынсене килĕштерет, пысăкрах шалуллă вырăна уйăрса лартнă чухне те лайăх специалистах пăрса хăварма пултарать, калăпăр, хăйĕн илемсĕр йăлине сивĕленĕшĕнех. Нумай çул хушши пĕрле пурăннă хыççăн çемьене пăрахса урăх хĕрарăм патне каякансем те пур вĕт-ха?! Çапла вара çемье, юрату, чыс ыйтăвĕсенче те пĕр пек ăнлану çукки сисĕнет. Ĕçлĕ çыхăнура çакна та пĕлмелле. Ма тесен  çын хăйне еплерех тыткаласси мĕнле моральпе пурăннинчен те нумай килет. Çынна тĕплĕнрех пĕлни нихăçан та ытлашши мар, ĕçе илнĕ чухне те, пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйтăва татса панă чухне те. Çынпа çын хирĕçсе каясси пурлăх, укçа-тенкĕ ыйтăвĕнче кăна мар иккен, этеплĕх пахалăхĕсем килĕшӳ тупайманнинче те. Пĕр майлисем вара пĕрлешсе чăмăртанма та хатĕр. Çапла тăваççĕ те. Илер-ха «симĕссисене» – çутçанталăк паракан ырлăхпа тĕрĕс усă курассишĕн кĕрешекенсене. Вăрман касса сутса укçа тăвасчĕ е заводра усă курнă шыва тасатмасăрах юхтарса ярса пысăкрах тупăш илесчĕ тесе ĕçлекенсемпе танлаштарсан, «симĕссисем» вĕсем пачах урăхла тĕллевлĕ çынсем. Шупашкарта залив хĕррине бензин сутмалли станци лартма тытăнсан мĕнле хирĕçӳсем пулни халĕ те асрах. Сывлăш тасалăхĕшĕн тăрăшакансем пикета тухнăччĕ, йывăçсем лартнăччĕ. Хаçатсене çыракансем те пурччĕ. Анчах усси пулмарĕ, лешсемех çĕнтерчĕç, укçа мала тухрĕ. Хула пуçлăхĕсем те вĕсем майлă пулчĕç.

Çапла вара çынсем сăн-питрен, ăс-тăнран кăна мар, кам мĕне мала хунипе те уйăрăлса тăраççĕ. Çулсем иртнĕçемĕн пурнăç опычĕ этеплĕхе те  самай  пысăк  улшăнусем  кĕртсе пырать. Чи вăйли, паллах, умри тĕллев. Кĕске вăхăтрах пахалăхсене урăхлатать. Спорт мастерĕ пулма е Олимп вăййисене хутшăнма шут тытнă çыншăн чи пахи, паллах, çирĕп сывлăх, хатĕрленӳре чăрмавсем çукки. Ун пек чухне çын хăнана çӳресси çине те урăхла пăхма пуçлать. Хамран илсех калам-ха. Пурнăç йĕркине, этеплĕхри пахалăхсене улăштарма хушакан тĕллевсенчен пĕри вăл маншăн диссертаци хӳтĕлесе ĕçлеме аслă шкула куçасси пулчĕ. Малти вырăна ятарлă пĕлӳ пухасси, статьясем, кĕнекесем çырасси тухрĕ. Хăнана кайсан та çав тĕллеве пуçра тытнă. «Ма ĕçместĕн çак?» тесен: «Мана ыран та урă

пуç кирлĕ, сывлăхăм та ытлашши мар», – теттĕм. Çак сăмахсене илтсен эрех сĕнме чарăнатчĕç. Ку çеç те мар, ыттисем те сахалрах ĕçме пуçлатчĕç. Каярах вара ĕçме пăрахнă тăвансен шучĕ те ӳссе пычĕ.

Пурнăçри хирĕçӳсем ытларах икĕ сăлтава пула сиксе тухаççĕ. Пĕри вăл пурлăх ыйтăвĕ, çăткăнлăх е çитмен пурнăç. Тепри – этеплĕх пахалăхĕсем килĕшӳ тупайманни. Аса илер-ха çынсем *ирĕклĕхшĕн* мĕнле çапăçнине. Мĕн тери хаклă иккен вăл çак этеплĕх пахалăхĕ, уйрăм çыншăн та, халăхшăн та, çĕршывшăн та, тĕнчешĕн те. Ирĕклĕхшĕн çапăçса вилнĕ çын яланах хисепре. Вĕсене геройсем тетпĕр. Ирĕклĕ шухăшшăн, ирĕклĕ сăмахшăн пуç хунисем те темĕн чухлех, коммунистсем çине тăнипех. Пиншер çынна ним сăлтавсăр пере-пере пăрахнăшăн, миллионĕ-миллионĕпе тĕрмере асаплантарнăшăн *коммунистсен явап тытмаллах.*

Тепĕр йышши хирĕçӳ те пур. Вăл пĕтĕмпех ăшра пулса иртет. Ыттисем асăрхамасан та пултараççĕ. Тӳрех калатăп, эпĕ нихăçан та ĕç вырăнĕ шыраса çӳремен. Ăçта кăна чĕнмен пуль мана, министр таранах. Анчах наукăпа искусствăри пултарулăх малти вырăнта тăнăран влаç тытăмĕнче ĕçлеме шутламан. Тепĕр сăлтав та пулнă – ирĕклĕхе пысăка хунă. Эпĕ хам тĕллĕн ĕçлеме юратакан çын, мана нимĕнле начальник та кирлĕ мар. Маншăн чи пахи – *шухăш ирĕклĕхĕ*. Ун пек министр ĕçре нумай тытăнса тăраяс çук.

Тĕрĕслĕхе пăхăнса, никамран хăрамасăр ĕçлекен çынран телейли çук та пулĕ. Ун пек чухне пĕр çын тăрăшнипех самай курăмлă ĕçсем тума пулать. Сăмахран, эпĕ университета куçиччен студентсене илеме вĕрентесси çине тимлĕн пăхни пулман. Сăлтавĕ те паллă ĕнтĕ, ертӳçисем те пурте тенĕ пекех «технарьсемччĕ». Кунран-кун çине тăрса студентсене кăна мар, вĕрентекенсене те искусство еннелле çавăрма май килчĕ, Чăваш патшалăх университечĕ чăннипех паллă культура центрĕ пулса тăчĕ.

Ирĕклĕх – хĕсĕрлекен, чăрмав кӳрекен вăйсем çукки. Çав хушăрах ирĕклĕх вăл çав тери пысăк яваплăх, хăвна чарма пĕлни те. Ман ирĕклĕх тепĕр çын ирĕклĕхĕн чикки таран кăна. Апла пулсан, Эпикур калашле, ыттисене чăрмав кӳмесĕр пурăнмаллине те манма юрамасть. Ирĕклĕх вăл тем те тума юрать тени мар çав. Ыттисем те çынсемех, вĕсем те ирĕклĕхе килĕштереççĕ, уншăн çапăçма та хатĕр.

Укçа-тенкĕ çителĕклĕ чухне çын чăнах та хăйне ирĕклĕрех туять, чи малтан – пурнăçри тĕллевсене пурнăçламалли майсем тупăннăран. Укçа çукки çын ирĕклĕхне хĕссе лартать. Çакă вăл тахçантанпах паллă ĕнтĕ. Çав хушăрах укçапа тĕрĕс усă

курма пĕлмесен  хуйхи-суйхи те алăк патĕнчех. Çын ăшĕнче этеплĕх пулмасан укçа панă ирĕклĕх чăн-чăн ирĕклĕхех мар. Чун ирĕклĕхне мала хуракансемех телейлĕрех.

Çапла вара çын çумĕнче пĕлмелли темĕн чухлех. Хăйне лайăх пĕлекен ыттисенчен ăслăрах, хăйпе хăй хуçа çын ыттисенчен вăйлăрах. Ирĕклĕ туяс тесен хăв çулна тупса юратнă ĕçе кӳлĕн; колхоз йĕркинче çирĕпленнĕ чуралăх туйăмне пăрахса пурлăх хуçи пулмасăр ирĕклĕхе тутанса кураймăн.

Çакă çутă тĕнчере вырăн кашнин валлиех пур. Хамăр тăрăшсан, таврара мĕн пулса иртнине пĕлсе пырсан çитĕнӳ пулатех. Хăвна пулăшакансен йышĕ ан чактăр тесен ытларах ыттисем çинчен шутла. Çăкăр-тăвар хире-хирĕç теççĕ вĕт. Конфуций калашле, хăвна килĕшмен ĕçе ыттисемшĕн ан ту.

**Çитĕнӳпе телей – çывăх тăвансем.** Тусăм, йĕри-тавра пăхса ил-ха: пĕтĕмпех çын аллипе тунă япаласем. Апла пулсан таврари лару-тăру та çынранах килет. Урăх нимĕнле вăй та килсе туса памасть. Савăнмалли те, кулянмалли те хамăртанах тухнă. Пурнăç яваплăхне хамăр çине илсен умри йывăрлăхсене çĕнме пулатех.

Тусăм, хăв çине тепĕр хут пăхса ил-ха, маларах çырнисене вуланă хыççăн эсĕ унччен çын маррине сисрĕн пуль ĕнтĕ. Пурнăç вăл çапласкер, унран мĕн чухлĕ ыйтатăн – çавăн чухлĕ илетĕн. Ĕçсе ӳсĕрĕлмелĕх çеç пулсан – çавăн чухлĕ кăна парать. Тулăх пурнăçпа сумлă çын шутĕнче пурăнса ирттерес тесессĕн – тархасшăн. Пурнăç пама пултарнă ырлăха илесси вара хăвăнтан килет.

*Чи пĕрремĕшĕ*. Ĕç тухмасть тесе алла усса шанăça пĕтме памалла мар. Ниçта кайса кĕме çук, нимĕн тума аптранă самантра та хăвна хăв çирĕп тытма тăрăшмалла. Иккĕленӳсем, йывăрлăхсем санăн çеç пулман. Анчах та ыттисем çĕнсе илме пултарнă-çке. Ĕмĕт таталнă, шанчăк сӳнес патнех çитнĕ самантсем хамăн та чылай пулнă. Анчах пуçа усман, хама хам хавхалантарма тăрăшнă. Алла черкке тытман! Пуçа лайăххрах ĕçлеттернĕ, укçа сахал чухне икĕ-виçĕ çĕрте вăй хунă. Кăшт такăннипех умри тĕллеврен пăрăнакансене пачах та хисеплеместĕп. Çакă вăл айванлăха кăтартни кăна.

*Иккĕмĕшĕ*. «Çук» сăмаха та, хăвна пулăшма килĕшменнине те тивĕçлипе йышăнма пĕлмелле. «Çук» тенине сиенлĕ сăмах вырăнне хумалла мар. Паллах, ăна чăтса ирттерме никама та çăмăл мар. Виçĕ сасăран тăракан кĕске сăмах кăна хăй, вăйĕ вара самай пысăк. Ăна илтсенех кăмăл хуçăлать, пуç та урăхла ĕçлеме пуçлать, куç умне кичем сăнарсем тухса тăраççĕ. Ма тесен «çук» сăмах ĕмĕте амантать, тĕллеве те инçетелле хăвалать.

Çапах та çак сăмахăн усăллă енĕ те пур. Вăл çынна улшăнма пулăшать, урăхла мелсем шыраттарать. Çапла вара хамăр тунă çитĕнӳре «çук» сăмах тӳпи те пур.

*Виççĕмĕшĕ.* Укçа шута юрататть тенине манас марччĕ. Нумай чухне те, сахал чухне те çавах. Укçа тесе суеçтерӳпе кĕвĕçӳ çулĕ çине тăрас марччĕ, хыт кукар ятне те илтес марччĕ. Укçа çумĕнче ырри те, усалли те юнашарах. Çавăнпа та укçа ăса юрататть тени тĕрĕсрех пулĕ. Çитĕнӳ тума хăнăхнă çынсем, паллах, укçасăрскерсем мар. Пухма кăна мар, усă курма та пĕлеççĕ вĕсем. Ун пек укçана «ĕçлекен укçа» теме пулать. Вулакан тĕрĕс ăнланасса шанатăп, калаçу кунта ĕçлĕ çынсем пирки кăна пырать. Тупнă укçине пĕтĕмпех арăмне панипе «мухтанакансене» кунта çырни кирлех те мар. Вĕсем укçа ыйтăвĕн чи яваплă пайне – унпа усă курассине – мансăрах питĕ çăмăллăн татса параççĕ. Сăмахăм кĕске: укçасăр арçынна хĕрхенетĕп. Кам вăл? Мĕн тума пултарĕ?

Хам пирки вара çапла калатăп: пуян пулмасан та халăх умĕнче укçасăр çын пек курăнас марччĕ тесе тăрăшнă. Çынсем укçа хунă çĕре кăшт ытларах та хунă, хăнана парнесĕр çӳремен, пулăшу ыйтаканран пăрăнман. Ыттисем умĕнчи парăма кăштах та пулин тавăрса парасчĕ тесе тунă çапла. Ма тесен эпĕ çакăн пек çын пултăр  тесе ыттисем те тăрăшнă вĕт-ха, пулăшнă мана, халĕ те çаплах. Ун пек çынсем тупăнмасан çак кĕнеке те пичетленсе тухас çук. Апла-тăк ман хамăн та пулăшмалла: ăспа та, ĕçпе те, укçапа та.

Çак йĕркесене çырнă вăхăтрах пĕр ентешĕмĕр шăнкăравларĕ, хамăр ялта часавай лартасси пирки канашласа илтĕмĕр. Çав çынпах çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа тăван шкула парнесем кайса панăччĕ. Ырă ĕçе укçа хунăшăн чухăна юлас çук.

Пурлăха, укçа-тенкĕне леш тĕнчене хамăрпа пĕрле илсе каяс çук. Кунтах юлаççĕ вĕсем. Апла пулсан ыттисене пулăшас ĕçе те вăхăтра туса юлмалла, чапшăн мар, ятшăн мар, чĕре хушнипе, çынлăха чакма парас мар тесе. Çакă та хăйне майлă çитĕнӳ. Ыркăмăллăх çулĕ çине тăнă çын ыттисем çине те, хăй çине те урăхларах пăхма пуçлать, хăй мĕншĕн пурăннине те лайăхрах туйса илет.

*Тăваттăмĕшĕ.* Пĕрре тунă çитĕнӳпе лăпланса ларассинчен сыхланăр. Çĕнĕрен те çĕнĕ утăмсем пулмасан унчченхи шайран анса ларас хăрушлăх та пур. Ун пек тĕслĕхсем темĕн чухлех, калăпăр, спортра е искусствăра пысăк çитĕнӳ тунисем хушшинчех. Чап та питĕ йывăр япала иккен, тĕнче чемпионне те авса антарма хатĕр. Çĕнĕрен те çĕнĕ тĕллевсем лартмасан, *кашни кун çĕнĕрен çуралмасан* унчченхи çитĕнӳ те армути тути калама

пуçлать, умри çутă та тĕксĕмленсе пырать. Çын пурнăçĕнче япăх тапхăр çук. Спортри кăтартусем чакса пынă май çĕнĕ ĕçе кӳлĕнни вырăнлă. Вăхăт пĕлтерĕшне урăхларах ăнлансан пенсие тухнине те ырă тапхăр пуçламăшĕ теме юрать. Пĕрисем ав ял е завод историне çыраççĕ, музейсем йĕркелеççĕ, пиншер йывăç лартса тăван тавралăха илемлетеççĕ, теприсем çĕршыври паллă вырăнсене çитсе курса е унччен ĕмĕтленнĕ кĕнекесене вуласа киленеççĕ. Пенси вăхăтне хам та ырă кăмăлпах кĕтсе илтĕм. Çакă вăл мана театрсене, концертсене, куравсене ытларах çӳреме, «Канашсем» ентешлĕхе, ЧНК çумĕнчи Ваттисен Канашне ертсе пырассине ăнăçлăрах туса пыма май пачĕ. Чи пахи, паллах, литература ĕçĕнчи тĕллевсене пурнăça кĕртме вăхăт тупăнни. Повеçсемпе роман та, пьесăсем те çырăнчĕç, кĕнеке хыççăн кĕнеке тухса пычĕ. Вĕт-шакăр, вак-тĕвек япаласем вĕсем айван ăслă çынсене кăна савăнтараççĕ. Виçĕ-тăватă куплетлă сăвăсемпех ĕмĕре ирттермелле мар ĕнтĕ. Мĕн те пулин шухăша кайса вуламаллиех çырасчĕ тесе тăрăшатăп.

Çамрăксене пĕлме çакна калас тетĕп. Хăв тунă çитĕнĕве ыттисеннипе танлаштарнинчен ултавлă япала çук та пулĕ. Ма тесен хăв тунă ĕçрен начартарах тĕслĕхсене яланах тупма пулать. Лăплану туйăмĕ çакăнтан пуçланать те ĕнтĕ. Çук, апла юрамасть. Тĕрĕс çул вăл – умри тĕллеве мĕнле пурнăçланине кура хăвна хăв хак парасси. Ыттисен çитĕнĕвĕ пирки пит шутламасан та юрать. Вĕсем санăн мар.

*Пиллĕкмĕш.* Пур япалан та йĕрки пур. Çавна пăхăнма тиветех. Калăпăр, йывăç лартасси вăл нимех те мар, шăтăк чавса вырнаçтар та тăпрапа вит. Анчах пăхса ӳстересси йывăртарах, майне пĕлмелле, вăй хумалла. Пурнăçра та çавах. Çамрăк чухне ытларах илме юрататпăр, атте-аннерен те, обществăран та. Илме, паллах, çăмăл, пама – йывăртарах. Апла пулин те çак ĕçе хăвăнтан пуçла, ыттисене мĕн кирлине хăв пар, пулăш. Каярах çакă хăв патна çаврăнса килетех. Шăварса пăхса ӳстернĕ йывăç улмине паратех. «Эпĕ ăна пулăшрăм, вăл мана мĕн парĕши?» – тесе кĕтсе лармалла мар. Чылайăшĕ хăй тивĕçне пурнăçламасан та пултараççĕ. Уншăн ан пăшăрхан. Çакă вăл вĕсемпе танлаштарсан эсĕ чылай çӳллĕ шайра тăнине кăтартакан паллă кăна. Кун пирки маларах кăштах каланăччĕ-ха. Çак ыйту телейшĕн çав тери пысăк пĕлтерĕшлĕ пулнăранах тепĕр хут асăрхаттарас терĕм. Хăйшĕн çеç тăрăшакан çын çитĕнӳ пирамиди тăрринче нумайччен тытăнса тăраймасть, хăй сисмесĕрех шуса анать. Аялта вара никамах та çук, айванккасем кăна.

Çитĕнӳ çын ятне çĕклет, сарать. Сумлă ят вăл хăйшĕн çеç мар, ыттисемшĕн те усăллă, çынни мĕнлине кура ĕнтĕ. Хăй

çине пысăк яваплăх илнĕ çынсем министр е президент патне кĕрсен те халăх умĕнчи тивĕçне пурнăçласси пирки калаçаççĕ, сĕнӳсем параççĕ. Çак сăмахсене те хамран илсех калатăп. Нумаях пулмасть ача пахчисенче, шкулсенче Çĕнĕ çул парни хатĕрлесси йывăрлăхра иккенне пĕлтĕм. Президентпа калаçрăм, çак ыйту çине тимлĕрех пăхма ыйтрăм. Килĕшрĕ. Панă сăмаха пурнăçласси пирки вара иккĕленместĕп. Пулăшу пулатех.

**Ĕнентерме пĕлекенсен çулĕ çăмăлрах усăлать.** Самана хăвăрт улшăнса пырать, кашни утăмрах пĕлтерӳ, реклама, ĕнентерме тăрăшакансем. Каланăччĕ ĕнтĕ, япала пĕлтерĕшне кăшт улăштарсанах ĕненӳ те урăхланать. Çак мелпе питĕ ăнăçлă усă кураççĕ те ĕнтĕ, калăпăр, сиенлĕ тавар сутакансем. Табак сутса пуякансем тăрăшнипе темиçе çĕр çул хушшинче çынсен пуçĕнче самай илĕртӳллĕ ĕненӳ çирĕпленнĕ. Табак туртнин пĕлтерĕшĕ ăша янă тĕтĕмĕнче мар иккен, çав самантра çын хăй мĕнлерех курăннинче, мĕнле туйнинче, калăпăр, çамрăка çитĕннисен шутне кĕме, хĕрсене – каччăсене илĕртме, ĕçлĕ çынсене калаçăва ăнăçлăрах вĕçлеме пулăшать. Çакна ĕненсен табак туртни сиен япалах та мар иккен; усала ырă пек кăтартакан сăнарпа усă курнăранах мар-и-ха? Ун пек тĕслĕхсем хамăр çумрах: чăваш сăри, Шупашкар сăри, «Нарспи» тата «Сетнер» ятлă эрехсем. Илекенсене илĕртекен ятсем.

Çапла вара çынсем икĕ ушкăна пайланса кайни курăнать: пĕрисем – ĕнентерекеннисем, теприсем – ĕненекеннисем. Енчен те эсĕ иккĕмĕшсен шутĕнче пулсан, пурнăçна пĕрремĕшсене пăхăнса йĕркелесе пыма тивет, кĕçех вĕсем мĕн хушнине тума та хăнăхса çитĕн. Ун пек чухне хăв пĕлнĕ пек пурăнасси те манăçа тухса пырать. Ĕнентерес ăсталăха алла илмесĕр курăмлă улшăнусем тума çук, çитĕнӳ те пулмасть.

Америкăра пурăнакан пĕр ăсчах ĕнентерӳ вăйне пĕлес тесе ятарлă тĕрĕслев, эксперимент тейĕпĕр, ирттернĕ. Нейролингвистсен курсне вĕçленĕ хыççăн вĕренекенсене каçхине вуникĕ сехет тĕлне пухать те çумра пур япалисене хăйне пама ыйтать. Лешсем килĕшеççĕ. Вара вĕсене пĕр документсăр, укçасăр, кредит карттисĕр, машинăпа хваттер уççисĕр çула кăларса ярать. Лешсен вара çитмĕл çухрăмра вырнаçнă ют хулана çитмелле те чарăнса тăмалли вырăн тата апат-çимĕç тупса йĕркеллĕ пурăнма тытăнмалла. Пĕртен-пĕр ĕç хатĕрĕ – чĕлхе, çынсене ĕнентерме пĕлни.

Курсантсем пĕр кун хушшинчех тĕлĕнмелле çитĕнӳсем тунă. Чылайăшĕ банкран кредит та илме пултарнă, çĕр доллартан пилĕкçĕр таранах. (Нимĕнле документ та пулман вĕт-ха?!) Пĕр хĕрарăмĕ универмагра кредит картти илсе чылай япала туянма

ёлкёрнĕ. Çĕр çирĕм çынран сакăрвунă процента яхăн ĕçе вырнаçнă, çиччĕшĕ валли виçшер ĕç вырăнĕ те тупăннă. Тепĕр хĕрарăмĕ зоопарка вырнаçма шутланă. Анчах вырăн пулман. Çапах та çине тăрса калаçса шанăça кĕрсен ăна илнĕ. Нерв чирĕпе аптранă попугая сыватнă хыççăн ăна тархасласах зоопаркра ĕçлекенсем валли лекци вуласа пама ыйтнă. Тепĕр курсанчĕ, ачасене питĕ юратаканскер, шкула кĕрсе пуху ирттерет, пуян та телейлĕ пулмалли майсем çинчен сехет çурă хушши каласа парать. Пурте питĕ кăмăллă юлнă. Ытти курсантсенчи чылайăшĕ темиçе çынна хăравçă туйăмран сипленĕ. Пĕри вара кĕнеке лавккине кĕнĕ те автограф пама тытăннă, çынсем черет тăрсах кĕнеке туянма пуçланă.

Çак эксперимент мĕн кăтартса панă-ха? Çынпа çын пек пулма пĕлсен, хăвна хавхалануллă, хăюллă тытсан пурнăça укçасăр та майлаштарса яма пулать. Теприне ĕнентерсе хăв майлă çавăрасси – питĕ шанчăклă мел иккен.

Халĕ вара тепĕр шухăша та пĕлтерме вăхăт: этемлĕхĕн савăнăçĕпе хуйхи çынсем хăйне мĕнле тытнинчен килет. Вăрласси те, çын вĕлересси те, вăрçă пуçарса ярасси те чи малтан поведени ыйтăвĕ. Химипе атом хĕçпăшалĕ те çавах. Çынпа çын, президентпа президент пĕр чĕлхе тупасси те поведени. Ăс-тăнĕ вăл шалта, пуçра, хăйне мĕнле тытни вара курăмлă япала. Калăпăр, Чечняна пулăшас тесе мĕн кăна тумастпăр пулĕ, апат-çимĕçне те, укçине те шеллеместпĕр, усси сахал. Ма тесен вăрласа пĕтереççĕ. – Поведени.

Çын ăс-тăнне, поведенине тĕрĕс çулпа ямалли мелсем халĕ темĕн чухлех: шкул, искусство, хаçат-журнал, радио, телевидени... Шел пулин те, ыррине вĕрентекен япаласем çав тери çителĕксĕр. Патшалăх ертӳçисем çакăн пирки мĕн шутланине те пĕлсе çитерейместĕп-ха. Халăх пуçĕнче мĕн чухлĕ вăйлă пăтрашу, çавăн чухлĕ ертсе пыма çăмăлрах теççĕ-ши? Ăс-тăн ыйтăвне газ е нефть ыйтăвĕпе хупласа хунипе ниепле те килĕшме пултараймастăп. Çакă вăл калама çук пысăк йăнăш, преступлени тесен те ытлашши мар. Паян нихăçанхинчен те ытла пач çĕнĕ япала – *ăс-тăн политики кирлĕ!* Çакă вăл патшалăх тивĕçĕ, Березовский е Гусинский йышшисене шанса пама юрамасть. Халлĕхе пире патшалăх çынна юратма, ырă тума, пулăшма вĕрентес вырăнне ытларах хĕсĕрлеме, улталама, хĕнеме, вĕлерме кăна вĕрентет-ха. Ăс-тăн политикине хăй аллине илмесен пуласлăх валли çутă идеалсем тупăнас çук.

**Çитĕнӳ формули пиркиех тата тепĕр хут.** Кам-ха вăл çын? Хăй тума пултарнин *пĕр пĕчĕкçĕ пайне кăна* пурнăça кĕртме вăй-хал çитернĕскер. Çапла хак памалла пуль ытларахăшне. Тен,

эсӗ те ҫавсен шутӗнчех? Ҫав ушкӑнран ҫавӑтса тухас тӗллевпе ҫыртӑм та ӗнтӗ ҫак кӗнекене. Кӑмӑлу пулсан малалла кайӑпӑр. Халӗ ӗнтӗ санпала утма самай ҫӑмӑлрах. Унчченхи ҫын мар вӗтха эсӗ, ыттисем пӗлменнине вуласа пуҫа илтӗн, хӑвпа хӑв мӗнле хуҫа пулмаллине те, ҫитӗнӳ туса пурнӑҫа улӑштармалли майсемпе мелсене те пӗлтӗн. Пуҫран вӑйли ҫӗр ҫинче урӑх нимӗн те ҫуккине те тавҫӑртӑн пуль тетӗп. Унпа тӗрӗс те пӗлсе усӑ курсан пурнӑҫланман ӗмӗт ҫук та.

Халӗ вара *ҫитӗнӳ формулине* тепӗр хут аса илтерем: ҫирӗп тӗллев ларт, нимӗн иккӗленмесӗр ӗҫе пуҫӑн, мӗн патне ҫитсе тухассине ӑспа кӑна мар, туйӑмпа та чухласа тӑр, мӗн кирлине алла иличченех поведенине улӑштарса пыр.

Хальхи вӑхӑтра эпир кашни кунах ҫынсем ҫитӗнӳ туни ҫинчен пӗлсе тӑратпӑр. Юмахри пек тӗлӗнмелле ӗҫсем те пулса иртеҫҫӗ, ӗненес те килмест. Пӗр клеткӑранах сурӑх ӳстерме пулать иккен. Ҫитес вӑхӑтрах ав телевизорлӑ телефонпа калаҫма тытӑнӑпӑр. Ҫакна тума, паллах, пысӑк пӗлӳ кирлӗ. Ӗҫе хастар пуҫӑнса парӑнмасӑр вӑй хуни пӗлӳрен те хаклӑрах. Ҫитӗнӳ тума пӗлӳ кӑна ҫителӗксӗр. Ӑслисем нумай, ҫитӗнӳ кӑтартаканнисем сахал.

Пурнӑҫ пӗр вырӑнта тӑмасть, пӗр улшӑну теприн патне ҫывхартать. Ҫавӑнпа та вӑхӑтран-вӑхӑта чарӑнса тӑрса тӗрӗс ҫулпах пыратӑп-ши тесе йӗри-тавра пӑхса илни те питӗ вырӑнлӑ ӗнтӗ. Мӗнле майпа улшӑнусем кӗртмеллине халӗ пӗлетӗн пуль тетӗп. Л. Смитт калашле, чи тивӗҫлӗ тӗллевсем пурнӑҫра пурӗ те иккӗ кӑна: пӗри – хӑвна мӗн кирлине алла илесси, тепри – ҫавӑнпа усӑ курса киленесси.

Хӑй пурнӑҫне улшӑнусем кӗртме никам та кая юлман. Вӗренме те ҫавах. Ыттисен опычӗпе усӑ курни, ҫынсемпе пӗрлешсе ӗҫлеме пӗлни хӑех питӗ паха шкул.

Хӑйне вӑйлӑ та телейлӗ туйнӑ вырӑн пирки ыйтсан ҫын тӳрех пӗрле пулнӑ е пӗрле ӗҫленӗ ушкӑна аса илет. Ма тесен, ушкӑнра ҫын тӑрӑшуллӑрах ӗҫлет, ӑсталӑхӗ хӑйшӗн кӑна маррине те лайӑхрах туять. Ҫитӗнӳ хыҫҫӑн ҫитӗнӳ пултӑр тесен команда кирлӗ: ҫемье е хӑвна майлӑ шанчӑклӑ ҫынсем. Пӗрне-пӗри ӑнланса ӗҫлени пуриншӗн те усӑллӑ. Ушкӑн ҫынна лӑпланма памасть. Ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ тӗллевсем лартса малалла туртӑнакан ҫынсем хушшинче хӑв та ҫитӗнӳ тума пуҫлӑн. Асту, пысӑк улшӑну вӑл пӗчӗккинчен пуҫланать, пысӑк ӗҫ те пӗчӗк ӗҫ ачи кӑна. Хӑраса тӑмалла мар, яваплӑха туйса ӗҫе пуҫӑнмалла.

Укҫапа тулӑх пурнӑҫ пирки калаҫнисем хӑлхана йӳҫӗхтерсе ҫитерчӗҫ ӗнтӗ. Сӑмах ӑшне путрӑмӑр тесен те юрать. *Ӗҫӗ кирлӗ, ӗҫӗ!* Нумай калаҫакансенчен мар, ҫитӗнӳ тӑвакансенчен тӗслӗх

илер. Çав çул çине тăма халĕ майсем çителĕклех. Атте-аннесен вăхăчĕпе танлаштарсан пурлăх тĕлĕшĕнчен те самай ирĕклĕ эпир, темиçе тĕрлĕ налукпа пăчăртамаççĕ. Аслă ăрусем ачисене чухăнлăхсăр пуçне нимех те парса хăвараймарĕç. Пирĕн апла пулас марччĕ. Йăха вăйлатассине хамăртан пуçлар!

Пурнăçна йĕркелес ĕçре эсĕ хăвах вăйлă. Урă пуçпа çирĕп сывлăх пур чухне ыттисене тархасласа ан çӳре, пурнăç йĕркине ыранах пĕр пĕчĕк улшăну кĕрт те малалла талпăн. Вара çитĕнӳсем пулаççех. Çулу такăр пултăр, Чăваш Турри пулăшса пытăр. Çапла пултăр!

*2001*

*Ырӑ Ҫыннӑм, Вулаканӑм! Ҫыравҫӑшӑн санран хакли нимӗн те ҫук. Вулама-туйма, сисме-ӑнланма пӗлмест пулсан, министр, патша е президент мӗн тума, кама кирлӗ вӑл?*

*Эпӗ – Кибеч. Сирӗн хушӑра, сирӗнпе пӗрле пурӑнса халӑх хуйхи-суйхине лайӑх пӗлекен чӑваш: сирӗн ҫине ҫӑмӑл машина кантӑкӗнчен пӑхса иртсе каяканскер мар, ҫуран утса, лашапа, автобуспа ҫитсе калаҫса чуна пусараканскер. Мускав, Париж, Стамбул тӑрӑх чап шыраса ҫӳремерӗм. Темшӗн-ҫке ман сирӗнтен пӗр кунлӑха та уйрӑлас килмест. Куратӑп-ха, тӗнче касса ҫӳрекенсем Шупашкарта яланах сумлӑ хӑна шутӗнче: министр та пуҫ таять вӗсене, президент та йышӑнать, вулакан ҫеҫ асӑрхамасть. Ма тесен типнӗ ҫулҫӑ евӗрлӗ, чунсӑр, юнсӑр, пӑтранчӑк шухӑшлӑ хайлавсене чӑваш чунӗ йышӑнмасть. Вулакана тивӗҫтерес тесессӗн кунти пурнӑҫпа пурӑнмалла, кунти сывлӑшпа сывламалла, чӑвашӑн тӑварлӑ ҫӑкӑрне ҫимелле (шӑрттанӗ пире валли мар).*

*Эпӗ – Кибеч. Хусан леш енчен куҫса килнӗ чӑваш йӑхӗнчен тухнӑскер. (Унта халӗ те Кибеч ятлӑ ялсем виҫҫӗ). Манӑн мӑн асатте сулӑ туса Атӑл урлӑ ишсе каҫнӑ та кунта йӑва ҫавӑрнӑ, Кибеч йӑхне ӗрчетнӗ. Ҫавна пулах эпӗ тӑванпа пит пуян: йышлӑ вӗсем Канаш тӑрӑхӗнче, туслӑ эпӗ Елчӗк, Каҫал, Шупашкар енчи кибечсемпе.*

*Вулаканӑм, каҫар мана. Чӗлхем, тен, пит яках пулмарӗ. Ытларах шухӑшӑма, туйӑма уҫҫӑнрах палӑртассишӗн тӑрӑшрӑм, хам тунӑ йӑнӑшсенчен ыттисене пӑрса ярас тесе ҫыртӑм. Ҫак кӗнекери йӗркесем сан кӑмӑлна кӑштах хускатрӗҫ пулсан, эпир вара санпа пӗр шухӑшлӑ ҫынсем. Апла эппин эсӗ те, эпӗ те пӗччен мар. Малашне те пӗрле пуласчӗ, пурнӑҫ ҫулне тӗрӗс утса тухма пӗр-пӗрне ал парса пырасчӗ.*

*2001*

## КИБЕЧ КĔНЕКИСЕМ:

1. Эстетическое воспитание детей по месту жительства. Чебоксары, 1972.

2. Формирование мировоззрения школьников в процессе художественной деятельности. Чебоксары, 1974.

3. Искусство песенного края. Чебоксары, 1974.

4. Сакăр çул вĕренмелли чăваш шкулĕн программи. Музыка. I-III классем валли. Шупашкар, 1976.

5. Программы чувашской восьмилетней школы. Музыка. 4–7 классы. Чебоксары, 1976.

6. Праздники песни Чувашии. Чебоксары, 1977.

7. Народность эстетического воспитания в педагогической мысли России XVIII–XIX вв. Горький, 1988.

8. Некоторые проблемы подготовки учителя музыки в современных условиях. Чебоксары, 1989.

9. Пурнăç кĕнеки. Шупашкар, 1991.

10. Народность эстетического воспитания в наследии передовых русских педагогов второй половины XIX века и просветителей народов России. Чебоксары, 1992.

11. Пурнăç çулĕ такăр мар. Шупашкар, 1995.

12. Юратнă юрăсем. Шупашкар, 1995.

13. Чăваш пулма çăмăл мар. Шупашкар, 1996.

14. Хĕç тумалли хурçă. Шупашкар, 1997.

15. Улăп. «Хыпар» кĕнеки. 36 №, Шупашкар, 1998.

16. Думы о чувашском. Чебоксары, 1999.

17. Юратусăр телей çук. Шупашкар, 2000.

18. Улăп таврăнни. Шупашкар, 2001.

19. Пурнăç кĕнеки. Шупашкар, 2002.

## ТУПМАЛЛИ

Умĕн калани ........ 3
1987 çул ........ 5
1988 çул ........ 16
1989 çул ........ 49
1990 çул ........ 54
1991 çул ........ 61
1992 çул ........ 76
1993 çул ........ 93
1994 çул ........ 138
1995 çул ........ 166
1996 çул ........ 169
1997 çул ........ 192
1998 çул ........ 208
2000 çул ........ 231
2001 çул ........ 237
Ман пурнăçăн тытăмĕ ........ 250
1. Çуралнă вăхăт ........ 250
2. Çуралнă вырăн ........ 253
3. Пирвайхи çухатусем ........ 256
4. Пĕлӳ пухни ........ 259
5. Ăслăлăх çулĕ ........ 264
6. Илем тĕнчи ........ 270
7. Спортпа туслашни ........ 280
8. Ĕçпе пиçĕхсе ӳсни ........ 286
9. Çын хăйшĕн çеç пурăнмасть ........ 298
10. Çитĕнӳ тумалли вăйсемпе мелсем ........ 312
Кибеч кĕнекисем ........ 350
Тупмалли ........ 351

*Çак кĕнекене кăларма пулăшнăшăн
тав сăмахне тивĕçлĕ ырă çынсем:*

**Александров В. Н.** – Перекет банкĕ
**Семенов П. В.** – Роснефтетранс
**Гурьев В. В.** – Чăвашкредитпромбанк
**Тарасова И. В.** – VISION фирма
**Викторов Н. А.** – Шупашкарти 1 № ПТП
**Шамуков С. И.** – «Вăтам Атăл» фирма
**Архипов А. Г.** – «Хулари таксомотор паркĕ» УАО
**Григорьев Н. Г.** – «Чувашавтотехобслуживание» УАО
**Смирнов Л. Е.** – Автовазбанк
**Рубцов С. М.** – Шупашкарти тĕп пасар

**КИБЕЧ**

# ПУРНĂÇ КĔНЕКИ

## (Книга жизни)

*Стихи в прозе*

На чувашском языке

*

Редактор *Ю. А. Силэм*
Художник *В. Колосов*

Подписано в печать 22.05.02 г.
Формат издания 84х108/32. Печать офсетная.
Бумага писчая. Усл. п. л. 18,48.
Тираж 2500 экз. Заказ № 990.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в РГУП «Чебоксарская типография № 1».
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.